К Н56
33214 чув



Зоя Нестерова

# Ылтăн пĕрчисем

Национальная библиотека ЧР
4-033214

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ

обозначенного здесь срока

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

К С (Чув)
Н 56

Зоя Нестерова

# Ылтăн пĕрчисем

## Повеçсемпе калавсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1991

ББК 84 Чув 7-4
Н 55

ПРОВЕРЕНО
29.10

**Нестерова З. А.**
Н 55 Ылтӑн пӗрчисем: Повеҫсемпе калавсем.— Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1991.— 256 с.

«Ылтӑн пӗрчисем» повеҫри ӗҫсем Колымара пулса иртеҫҫӗ. «Тӑвӑл килсе ҫапсан» повеҫре ял халӑхӗн вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр пурнӑҫне сӑнланӑ.

ББК 84 Чув 7-4

Н $\frac{4803710201-049}{М\ 136(03)-91}$ 45—91

33214 чув

ISBN 5-7670-0445-5

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1991

# Повеçсем



# ТĂВĂЛ КИЛСЕ ÇАПСАН...

## I

Автобусран ансан, эпĕ тӳрĕ урампа тăвалла утрăм. Паллапă вырăнсем. Нумай пулать кунта килменни. Сисмесĕрех ачалăха аса илетĕн, тахçанхине хальхипе таплаштаратăн, шухăшлатăн...

Урам икĕ енĕпе те керменсем пек çуртсем ларса тухнă. Эпĕ ӳснĕ чух апла марччĕ. Ку чухнехи ялсене илемлĕ тесе пĕрех мухтас килмест манăн. Урамсем лакăмлă-тĕкĕмлĕ, çӳппи-çаппи те туллиех. Курăк ӳсни те курăнсах каймасть. Карта хĕррисемпе йăмрасем тавра çеç кăшт симĕсленет. Трактор, тĕрлĕ машина çӳрени ял хушшине çапла илемсĕрлетет те. Сăлтавĕ çакă çеç те мар. Пăхатăн та — урам тăршшĕпе мĕн-мĕн кăна купаланса выртмасть: пĕрене, хăма, кирпĕч, хăйăр, вут шаршанĕсем, пысăк чул муклашкисем. Паллах, хуçалăхра кирлĕ япаласем. Анчах та урам тĕрлĕ ăпăр-тапăр усрамалли вырăн мар-çке.

Эпир ача чухне ял хушшине çапла япăхтарман. Килçурт умĕсене тасатсах тăнă. Çурхи шыв типсен, урамсене типтерлеме ялĕпех тухатчĕç, кун пирки колхоз правленийĕ те, ял Совечĕ те аса илтеретчĕ. Халĕ сӳннĕ иккен çав ырă йăла. Шел. Питĕ шел...

Çапла шухăшлакаласа, эпĕ малаллах утатăп. Каймалли инçе мар. Çак ял витĕр тухатăн та, юнашарах — пирĕн. Пирĕн тени, тен, тĕрĕсех те мар-и, мĕншĕн тесен эпĕ кунтан кайни нумай пулать. Ялти çамрăксемшĕн эпĕ ют çын ĕнтĕ. Вĕсем мана палламаççĕ. Эпĕ те вĕсене пачах пĕлместĕп.

Тăваттăн ӳсрĕмĕр эпир пĕр çемьере. Шăпа пире Тăван çĕршывăн тĕрлĕ енне сапаларĕ. Анне пурăннă чух час-часах килеттĕмĕр. Халĕ анне çук... Ун хыççăн Саня шăллăм та, тĕпе юлни, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Ӳсĕр шофер çирĕ ун пуçне. Машина çапса хăварнă хыççăн икĕ сехет те пурăнаймарĕ. Пĕртен-пĕр хĕрĕ çамрăклах хулана тухса кайрĕ. Тăвансенчен ялта халĕ атте пиччĕшĕн хĕрĕ Верук çеç пурăнать. Çапах чун туртать çуралса ӳснĕ вырăнсене. Ял

урамĕпе утас, тахçан выляса чупнă çырма-çатрасене курас, хура тар юхтарса ĕçленĕ уй-хирсем тăрăх çӳрес, каçсерен урама тухса, пĕр-пĕр кил умне пуçтараннă ял çыннисен васкамасăр юхакан калаçăвне итлес килет.

Çапла, сисмесĕр иртеççĕ çулсем. Ĕнтĕ пуç та кăвакарчĕ. Ачасем те, ӳссе, çемьеллĕ пулчĕç. Тăван кĕтес туртăмĕ пĕрех сӳнмест. Вăл çулран-çул вăйлансах пырать.

Укăлча хапхине уçса, тăван яла кĕретĕп. Мана хирĕç ăшă çил выляса чупать, урам тăршшĕпе ӳсекен йывăç тăррисене хумхантарать. Акă атте лартнă йăмрасем. Тен, астăваççĕ вĕсем мана, тен, халĕ, лапсăркка симĕс пуçĕсене тайса, мана саламлаççĕ.

Эпĕ ӳснĕ виçĕ чӳречеллĕ пӳрт çеç курăнмасть. Çавăнпах-и, тен, чунра салху. Ун вырăнĕнче пысăк та хитре çурт ларать. Верандăллă. Чӳречисене чĕнтĕрленĕ, тĕрлĕ сăрпа сăрласа илемлетнĕ.

Инçех те мар пĕчĕк çавра кӳлĕ хĕвел çинче йăлтăртатса выртать. Ун çийĕ вĕттĕн-вĕттĕн хумханать. Çыран хĕрринче хур ушкăнĕ шăппăн тĕлĕрет. Аякрах та мар кăвакалсем нартлатаççĕ. Салам сана, тăван ялăм! Салам, çутă кӳлĕ! Ҫирек ăçта кайсан та, темле илемлĕ вырăнсене курнă пулин те, эсир ман асăмран нихçан та тухман.

Такам ятран чĕннине илтсе, эпĕ çаврăнса пăхатăп. Пĕр хĕрарăм ман хыççăн васкасах утать. Верук!

— Эх, тăванăм! Эсех пултăн-и? Аякранах асăрхарăм сана, хирпе пынă чухнех. Пăхатăп та: Чĕкеç мар-ши ку тесе шутлатăп. Ай-тур-тур! Миçе çул курманни! Мĕнле пурăнатăн? Сывах-и?

Аллинчи сăран сумкине лартса, Верук ман еннелле туртăнчĕ. Эпир ыталашса илтĕмĕр.

Аппа манранултă çул аслă, çапах та вăл ватăлни курăнмасть. Пĕвĕ те кукăрăлман, утти те çăмăл, пичĕ-куçĕ те чĕрĕ, тумĕ те типтерлĕ, таса.

— Пĕчченех килтĕн-и? Юрĕ-çке, хăвăрăнне хăвăр пĕлетĕр пуль. Атя-ха, утар. Ҫашни çулах кĕтетĕп сана. Нивушлĕ урăх кураймăп-ши тесе шутлатăп.

Эпĕ килнĕшĕн Верук чăннипех савăнать пулас. Сасси хаваслă, пичĕ-куçĕ кăмăллăн йăлкăшать.

— Улăхран таврăнатăп,— каласа парать аппа утнă май.— Ҫĕтӳссене кăнтăрлахи апат çитерме кайрăм.

— Халĕ те колхоза ĕçлеме çӳретĕн-и-ха?

— Тухкалатăп хăшпĕр чух. Усси нумаях мар ĕнтĕ манран. Шăмшак та çулран-çулах йывăрланса пырать. Чирчĕре те çулăхма пуçларĕ,— сăран сумкине Верук пĕр аллинчен теприне куçарчĕ.— Гриша ывăл колхозпа договор

турĕ кăçал. Çемйипе ĕçлесе, пăрусем ӳстерсе пама пӳлчĕç. Пĕлетĕн-ха, виçĕ ача вĕсен. Асли, Çеруш, пĕлтĕр ветеринара вĕренсе тухрĕ. Ялта пурăнмастăп, хулана каятăп текелетчĕ те — халĕ шарламасть. Тăрăшсах ĕçлет. Маттур... Пултарнă таран çавсене пулăшкалатăп-çке. Эсĕ тата? — ыйтрĕ аппа.— Сана та пенсие кайма вăхăт çитнĕ ĕнтĕ.

— Пуç ĕçленĕ, ура утнă чух килте алла тытса ларас килмест, паллах.

— Вăл çаплах ĕнтĕ, пултарнă таран ĕçлемеллех. Ĕç çĕклет тенĕ.

— Çĕнĕ пӳрт лартнă эсир. Пысăк, илемлĕ,— терĕм эпĕ, йĕри-тавра пăхкаласа пынă май.

— Пысăкки-качки, хальхи çамрăксем пирĕн пек пĕчĕк пӳртре пурăнасшăн мар çав. Уйрăм пӳлĕмсем кирлĕ вĕсене — апат çиме те, çывăрма та. Пĕр-пĕринчен курса, пĕр-пĕринпе ăмăртмалла лартаççĕ пӳрт-çуртне. Пурнăç тулăх, вăй çитет. Колхозĕ пулăшать халь. Кашни ялтах çапла.— Верук чарăнчĕ, ял çийĕн кăмăллăн пăхса илчĕ.— Шухăшласа çӳретĕп вара тепĕр чух. Пĕчĕк пӳртсенче тертленсе пурăннă асатте-асаннесене кăтартма маĭ килес пулсан çакна, ĕненес çук вĕсем. Кусем çĕр çинче мар, райра пурăнаççĕ тейĕç.

— Хупăннисем те курăнкалаççĕ,— терĕм эпĕ, çаплах унталла-кунталла пăхкаласа.

— Ун пеккисем те пур,— аллине кăмăлсăррăн сулчĕ Верук.— Ваттисем вилеççĕ, çамрăккисем хулана тухса каяççĕ. Мĕн тăвăн? Эпĕ те, вăн, хĕрĕме чараймарăм. Вунă çул пĕтерчĕ те хулана фабрикăна кайса кĕчĕ. Мăшăр тупрĕ. Икĕ ача ӳстерчĕç. Çапла, пурнăç нумай улшăнчĕ. Çыннисем те халĕ пачах урăх. Ку чухнехи çамрăксем çине пăхса тĕлĕнетĕп вара. Аптриш вĕсемпе. Те ытла ăслă вĕсем, те ытла чурăс. Тутлăрах çиесшĕн, каплĕрех пурăнасшăн. Хăвах шухăшла: вăй хумасăр, вали-шали ĕçленипе пурнăç пулать-и? Ĕç хушсан, сахал тӳлеççĕ, каймастпăр, тумастпăр тесе турткаланса тăман эпир. Каланине те килĕштермеççĕ. Ват çынсем мăкăртатма юратаççĕ теççĕ. Килтисене пурпĕрех тĕрĕлтеттеретĕп-ха эпĕ тепĕр чух. Çилленмеççĕ. «Пирĕн бригадир» тесе шӳтлеççĕ çеç,— Верукăн пичĕ-куçĕ ăшă кулăпа çуталчĕ те каллех сӳнчĕ.— Авă килет пĕр çапкаланчăкĕ, сăмах çинех...

Пăралукра çӳллĕ çамрăк курăнчĕ. Шурă кĕпине кăвапи таранах йӳле янă. Сапаланнă хура çӳçĕ хулпуççи çийĕн кăтраланса выртать. Ури çиччe çирĕп тăраймасть, унталла-кунталла тайкаланать. Пире курсан, вăл чарăнчĕ.

— Салам, Верук кинеми. Эсĕ мĕн... мана калле... каллех

вăрçасшăн-и? — терĕ вăл, çыхланакан чĕлхине аран-аран çавăркаласа.— Шалишь... Юлташа ăсатрăм. Имею право... М-да... Я жертва несправедливости... Пардон...

— Эй, ял кулли! — çиллессĕн мăкăртатрĕ Верук, малалла утнă май.

— Кам пулчĕ ку? — ыйтрăм эпĕ.

— Андрей Прокофьевичăн хĕрне, Вĕçелиса, астăватăн-и? Çавăн ывăлĕ. Аслашшĕ мĕн тери йĕркеллĕ, ăслă çынччĕ. Чи йывăр вăхăтра колхоз председателĕнче ĕçлерĕ. Ашшĕ-амăшĕ те ял тăрăх çапла çапкаланса, ятне ярса çÿремен. Ку Алеши такама пăхрĕ. Ачаранах баянпа питĕ ăста вылятчĕ. Вунă класс пĕтерсен, хулана музыкçа вĕренме кайрĕ. Çавăнтан пăсăлса килчĕ те. Вĕренме пăрахрĕ, ĕçке ярăнчĕ,— Верук ăнсăртран ура айне пулнă шĕвĕр кирпĕч татăкне пĕшкĕнсе илчĕ те карта хыçне ывăтса ячĕ.

— Ачасем пăрахнă ĕнтĕ. Урисене ыраттарасçĕ вĕт вылянă чух,— мăкăртатрĕ вăл. Унтан пуçланă сăмахне малалла тăсрĕ.— Училище директорĕ кÿрентернĕ тет-и çав. Конкурсра, баян каласа, Алеш малти вырăна тухнă тет. Директорĕ вара ун ятне туртса пăрахнă та пĕрремĕш вырăна урăх вĕренекене çырса хунă пулать. Хирĕçсе кайнă тет вара вĕсем. Кÿреннĕ ача (эй, айван!) хучĕсене илет те тухса каять. Амăшĕ: «Çара кайсан юсанĕ-и?» — тетчĕ те... Çук, таврăнсанах ĕçме тытăнчĕ. Халĕ вăл çапкаланса çÿренине куратăп та,— аппан куç харшиĕ çиллессĕн пĕрĕнчĕ,— хăш чух чун тарăхса каять. Вăйпитти арçын, унăн ырми-канми ĕçлемелле. Тепре шухăшлатăп та шеллес те килет. Эх, ухмах! Хăй ĕмĕтне хăй çапса хуçрĕ. «Мана тĕрĕсмарлăх пĕтерчĕ»,— тесе çÿрет... Те ачаран ытла мухтаса пăсрĕç ăна. Темшĕн хавшак чунлă пулчĕ вăл. Тĕрĕсмарлăх тесе унашкал хуçăлмалла-и?

Çапла калаçкаласа, эпир Веруксен тĕлне çитрĕмĕр. Аппа сăрласа илемлетнĕ алăка уçрĕ.

— Атя, кĕр.

Килкарти пысăк мар, типтерлĕ. Йĕри-тавралла тимĕрпе витнĕ хуралтăсем. Шап-шурă чăхсем уткаласа çÿреççĕ. Пысăк автанĕ те юнашарах. Хĕрлĕ киккирикне мăнкăмăллăн каçăртнă. Пĕр ури çинчен тепрпн çине юлхавлăн пуса-пуса, йĕри-тавра тимлĕн пăхкалать.

— Алеша терĕн-и-ха çав ачана? Ĕçлет-и вара вăл ăçта та пулин? — ыйтрăм эпĕ унран, малтанхи калаçăва татах пуçарса.

Верук сăран сумкине крыльца çине лартрĕ те, çулăк илсе, чăх каяшĕсене кăшт-кашт аяккалла шăлса хучĕ.

— Еçлесси-качки. Малтан хулана вырнаçнă терĕç. Унта

нумай пурнаймарě, каялла таврăнчě. Халě колхоз клубěнче заведующи тет-и, — пěлтерчě вăл.

— Лайăх тěслěх парать апла ял çамрăкěсене...

— Ан та кала,— аппа каллех аллине сулчě.— Э-э, пурнăç пурнасси вăл урам урлă каçасси мар çав. Тем те пулать... Ырлăх хыççăн — йывăрлăх тенě. Алеш вара пирвайхи йывăрлăхах тўсеймерě.

Эпир, çўллě крыльца çине улăхса, çенěке кěретпěр.

— Чи малтан пўрт кăтартам-ха сана,— терě аппа, ăшă кулăпа йăлкăшса.— Ялта эпир халě çапла пурăнатпăр.

Çенěкě пысăк, сылтăм енче чăлан, унтах верандăна тухмалли алăк. Кăшт аяккарах, мачча çине улăхма, сарлака пусма туса лартнă. Верук малти пўлěм алăкне уçать. Ку кухня. Урай варринче пысăк сěтел, йěри-тавра пукансем. Шурă кăмака чылай вырăн йышăнать. Ўн кукринче, тěпелте, газ плити, холодильник лараççě. Стена çинче савăт-сапа хумалли уçă шкап çакăнса тăрать.

— Малалла иртер-ха.

Çурма тěттěм коридора кěрсе тăтăмăр. Пур енче те алăк: умра та, сылтăмра, сулахайра. Пěрин хыççăн теприне уçса, пўлěмсене пăхатăп. Тирпейлě пуçтарнă кравατьсем, кавирсем, дивансем, сарлака çутă шкапсем. Пěринче, кěленче хупăллинче, ретěн-ретěн тăратнă кěнекесем. Сулахайра тата тепěр алăк пур.

— Кунта эпě выртса тăратăп,— кăмăллăн калаçать Верук.

Кунта пач урăхла вара. Умра, стена çинче, сарăхса кайнă сăнўкерчěксем çакăнса тăраççě. Вěсем хушшинче Верук упăшкин, Иллян, пысăклатнă сăнě тўрех куç умне пулать. Сулахайра — арча. Тимěр кравать çинчи вырăна чěнтěрленě, алăпа тěрленě çивиттипе витнě. Турăш умěнчи илемлě алшăллине те, шап-шурă чўрече каррисене те, урай саррине те — пурне те килте тěртсе тунă.

«Кăштах çырткалама хатěрлем-ха» тесе, Верук кухньăна тухсан, эпě шкапри кěнекесене иле-иле пăхма тытăнтăм. Кěнекисем вырăсла та, чăвашла та: Пушкин, Достоевский, Флобер, Гейне, Айтматов, Юхма Мишши, Александр Артемьев тата ытти писательсемпе поэтсен уйрăм произведенийěсем. Ялхуçалăх темипе çырнисем те пур.

— Кěме юрать-и? — илтěнчě хěрарăм сасси.

Пўлěме Ксени, вилнě шăллăмăн арăмě, кěрсе тăчě. Пěрре те улшăнман вăл. Вăтам пўллě, çаврака та шапшурă питлě, çурхи чечек пек кăн-кăвак куçлă. Сарă вăрăм çўçне яп-яка тураса пуçтарса çыхнă. Халě те чипер вăл, килěшўллě.

Манăн, ăна хирĕç утса, ыталамаллаччĕ е ала та пулин памаллаччĕ ĕнтĕ. Тем тесен те, чи çывăх тăванăн арăмĕ пулнă-çке. Анчах эпĕ вырăнтан та хускалмарăм.

Вунултă çул пурăнчĕç вĕсем Саньăпа. Шăллăм колхозра агрономра ĕçлерĕ, арăмĕ — бухгалтерта. Пўрт лартрĕç. Чипер, йĕркеллĕ çемьехчĕ. Эпир пурте кăмăллаттăмăр шăллăмăн арăмне. Пире те яланах вашават кĕтсе илетчĕ вăл. Аннепе те килĕштерсех пурăннă вĕсем. «Турти кĕскерех те, кăмăлĕ лайăх, хăвăрт çавăрнать. Юнтарса, тутине мăкăртса çўресси çук»,— тетчĕ анне кин пирки. Саньăна пытарсан, вăхăт нумай та иртмерĕ, ял çине ят тухрĕ. Çур çултан пирĕн кин çемьепе пурăнакан ача-пăчаллă арçынна киле кĕртрĕ. Çавна пулах хĕрĕ те çамрăклах килтен тухса кайрĕ.

— Ксения Митрофановна, эсир-çке. Килĕр. Иртĕр малалла,— терĕм эпĕ, кăмăллăрах пулма тăрăшса.

Хĕрарăм ман çине сăнаса пăхса илчĕ те çавăнтах куçне пытарчĕ.

— Эпĕ сирĕн пата килтĕм, Антонина Григорьевна,— яланхи пекех сăмахĕсене тăсарах каларĕ вăл. Йăмăх çитсăран çĕленĕ хутаçне алăран ямасăр, Ксени сĕтел çывăхне, хыçлă пукан çине, пырса ларчĕ.— Чўречерен куртăм килнине. Эсир тек пирĕн пата кĕрес çук. Хамах килем терĕм,— вăл каллех ман çине пăхса илчĕ. Кăвак куçĕнче кўренў хĕлхемĕ йăлкăшса пытанчĕ.— Сăмахĕ çапла,— калаçăвне тăсрĕ вăл.— Анне вилсен, темиçе тĕрке пир юлнăччĕ. Унтакунта тыткаласа пĕтертĕмĕр эпир вĕсене. Пĕр тĕрки юлчĕ арча тĕпĕнче. Выртать те выртать. Халĕ пир тăхăнмастпăр та, кирлех мар. Пĕлтĕр, алшăлли тăвам-ха тесе, илсе кĕтĕм çавна. Салтма тытăнтăм та, сĕтел çине шăкăлт тухса ўкрĕ. Пăхатăп: медаль. «Камăн-ши ку?» — тетĕп. Шутларăм-шутларăм та аннен пулĕ терĕм. Антонина Григорьевна, акă вăл, илĕр.

Эпĕ медале çавăркаласа пăхрăм. Пĕр енче Сталин сăнĕ, «Наше дело правое, мы победили», тепĕр енче «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941—1945 гг.» тесе çырнă. Çўлте пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр, аялта çурлапа мăлатук...

Авă ăçта пулнă медаль! Эпĕ ăна çухалнă тесе шутланăччĕ. Анне ăна сĕтел сунтăхĕнче усратчĕ. Ирина, ун чух пĕчĕк хĕрача, çав медале кĕпе çине вĕçĕмсĕр çакса çўретчĕ.

Пўлĕме Верук кĕчĕ.

— Çапла, инкен ку,— терĕ вăл, эпир калаçнине илтсе. Аппа, медале илсе, çавăркаласа пăхрĕ те каллех мана тыттарчĕ.

— Пире ăна колхоз пухăвĕнче пачĕç. Хальхи пекех астăватăп. Ун чух эпĕ бригадирта ĕçлеттĕм. Районтан килнĕ çын мана, инкене тата икĕ хĕрарăма, халăх умне пĕререн чĕнсе кăларсах парнелерĕ.

— Пĕрре те илтмен аннерен ун çинчен каланине,— терĕ Ксени иккĕленнĕн.

— Каламан та пуль. Инке ытла та сăпайлăччĕ. Хăйĕн ятне асăнса пуху умне тухма чĕнсен, вăтанса кайрĕ. «Медаль илме ытти хĕрарăмсенчен ытлашши нимĕн те туман эпĕ. Çынсем ĕçленĕ чух ĕçленĕ, каннă чух каннă»,— терĕ... Темле ĕç хушсан та, турткалашса тăмастчĕ çав. «Чăтса ирттеретпĕр, тӳсетпĕр. Пĕччен мар, мирпе. Çĕнтерсе, вăрçăран ырă-сывă таврăнччăр çеç»,— тетчĕ. Кĕтсе илеймерĕ. Иккĕшĕ те пĕтрĕç. Мăнтарăн инки,— Верук ассăн сывласа ячĕ.— Пурнăçĕ йывăрччĕ çав ун чух. Ĕçĕ урараи ӳкерет, хутма вутти çук. Ачи-пăчи выçă. Хăшĕ-пĕрисем, бригадир пынине курсан, тарса пытанатчĕç, алăкĕсене питĕретчĕç. Турчка илсе, пӳртрен хăваласа яни те пулнă. Э-э, тем те курнă, тем те илтнĕ. Асăнас та килмест çав вăрçă вăхăтне,— Верук аллине сулчĕ те каллех кухньăна тухрĕ.

«Пурне те тӳссе ирттеретпĕр. Çĕнтерсе, ырă-сывă таврăнччăр çеç»... Çапла, анне çак сăмахсене час-часах калатчĕ.

— Тавтапуç, Ксени,— терĕм эпĕ хаклă медале аларан ямасăр.

— Ку çеç мар, Антонина Григорьевна. Тата пур,— çапла каласа, Ксени сумкинчен пир тĕрки туртса кăларчĕ, ăна сĕтел çине хурса, саркалама тытăнчĕ.— Кур-ха, тата мĕн тухрĕ медальпе пĕрле...

Эпĕ ирĕксĕрех малалла ӳпĕнтĕм. Хаçатпа тирпейлĕн чĕркесе хунă икĕ тетрадь курăнчĕ. Вăхăт нумай иртнине пула хаçачĕ кивелсе, ырăнăн-вырăнăн таткаланса пĕтнĕ. Тетрачĕсем те кивĕ, сарăхнă страницисем пĕр-пĕрин çумне çыпçăнса ларнă. Мĕнле хутсем кусем? Мĕн тума çапла тĕплĕн пуçтарса хунă вĕсене анне?

Çиелти тетраде илсе, эпĕ ăна асăрханса уçатăп. Хаçатсенчен, журналсенчен касса илсе çыпăçтарнă картинăсем: вăтăрмĕш çулсен иккĕмĕш çурринче çĕршывра чапа тухнă летчиксен сăнӳкерчĕкĕсем, вĕсем çинчен çырнă статьясем. Акă Чкалов самолет çывăхĕнче хаваслăн кулкаласа тăрать. Ку ӳкерчĕкĕ çинче виççĕн — Чкалов, Байдуков, Беляков — ыталашса тăраççĕ. Водопьянов, Леваневский, Громов тата ытти летчиксен сăнĕсем.

«Валери тетрачĕ!» — тавçăрса илтĕм эпĕ. Хумханнипе ман сывлăш питĕрĕнсе ларчĕ, алă чĕтреме пуçларĕ. Çапла,

пичче ун чух летчик пулас ёмётпе çеç пурăнатчĕ... Тепĕр тетрачĕ — дневник. Ăна çирĕм иккĕмĕш июньте пин те тăхăрçĕр хĕрĕх пĕрремĕш çулта çырма тытăннă. Шăп вăрçă пуçланнă кун! Уççăнах курăнакан çавра саспаллисем. «Çак куна эпĕ виличчен те манас çук. Вăл маншăн телейлĕ пуçланчĕ, асаппа вĕçленчĕ. Ылханлă вăрçă!» — вуларăм эпĕ малтанхи йĕркесене.— «Июнĕн çирĕм виççĕмĕшĕ. Паян Валерие ăсатрăмăр. М. та кайрĕ пулĕ...» Ара, ман дневник-çке ку! Халĕ аса илтĕм. Çапла, эпĕ ăна шăп вăрçă пуçланнă кун çырма тытăнтăм. Пушă вăхăт тупса, курнине, илтнине кĕскен те пулин çыра-çыра хураттăм. Анне упраса хăварнă ăна. Ытти кирлĕ мар хутсемпе пĕрле кăларса ывăтман, çунтарса яман. Вăрçăра вилнĕ ывăлĕн тетрачĕпе пĕрле пир тĕрки ăшне типтерлĕн чиксе хунă дневника. Мĕн тума? Мĕн шутпа?..

Ман кăмăл тăруках çемçелсе кайрĕ.

— Тавтапуç, Ксени, илсе килсе панăшăн. Ырă кăмăлушăн. Ку таранччен упранăшăн,— чĕререн тав турăм эпĕ кине.

— Упрасси-качки,— сăмахне каллех тăсарах каларĕ Ксени,— эпĕ мĕн... Нимĕн те туман... Хăçан та пулин килеççех яла, ун чух паратăп тесе, каялла пуçтарса хутăм çеç. Пир тĕркине те сире валли илсе килтĕм, Антонина Григорьевна. Илĕр, илĕр. Анне хăй аллипе арласа-тĕртсе тунă-çке ăна. Асăнмалăх пултăр. Малтанах валеççе памалла пулнă пулнĕ те. Çамрăк чух ăс çитмест çав. Ну, эпĕ каям-ха. Кантăрлахи апата çеç чупса килтĕм,— васкаса тухса кайрĕ Ксени.

Эпир апата лартăмăр.

— Яшка часах пиçмест терĕм. Çĕрулми ăшăтрăм,— терĕ Верук, сĕтел çине тĕрлĕ юр-вар лартса.— Акă хăйма, ку турăх. Мĕн кăмăллатăн. Сĕт парас мар-и? Чăкăчĕ ĕнерхи ĕнтĕ. Килĕшет пулсан, çи-ха, çи, Чĕкеç. Тата шăрттан шаритлерĕм.

— Шăрттан? — ыйтрăм эпĕ, тăруках хавасланса. Ах, шăрттан! Тахçан, вăрçăччен, анне тăватчĕ ăна. Çисе тăранмалла мар тутлăччĕ. Çуллахи шăрăхра та пăсăлмасть вăл. — Ку таранччен шăрттан усратăр-и?

— Хам та тĕлĕнетĕп, Чĕкеç,— йăл кулчĕ Верук.— Эсĕ килессе чун сисрĕ пулĕ-и? Ку шăрттана ачасене çитерес тесе пĕррехинче илсе те кĕтĕм. Васкас мар, теп, хăна килĕ тесе каялла тухса хутăм.

— Ну, Верук, тавтапуç. Хăçан шăрттан çиннине те тахçанах манса кайнă. Эх, тутлă та.

— Çи, çав, çи. Ах, лайăх пулчĕ упраса хăварни.

Сĕтел хушшинчен тухсан, эпĕ каллех хамăн тахçанхи дневника вулама пикентĕм.

Валери тетрадьне Верук вăрахчен уçа-уçа ларчĕ.

— Миçе çул иртрĕ унтанпа,— терĕ вăл юлашкинчен, пуçне хурлăхлăн сулкаласа.— Куçа хупатăп та Валерие хальхи пекех куратăп. Эх, мĕн тери чипер каччăччĕ!.. Ача чухне, самолет сассине илтсенех, анкарти хыçне чупатчĕ. Ялта йывăçсем хыçĕпе курăнмасть-çке. Карта çине улăхатчĕ те кĕрленĕ сасă илтĕнми пуличченех пăхса тăратчĕ. Çавăн чухнех летчик пулма ĕмĕтленнĕ-и, тен, вăл. Ĕмĕчĕ тулчĕ, анчах савăнса вĕçесси пулмарĕ... Шеремет инки! Чи хаклă япала пек, арча тĕпне пир тĕрки ăшне хурса упранă вăрçăра пĕтнĕ ывăлĕн тетрадьне! Чăнах та, амăшĕшĕн унран хакли мĕн пултăр ĕнтĕ! Алла илсе, пайтах макăрнă пулĕ... Пăх-ха, Чĕкеç, хăшпĕр страницисенче уйрăмах хуралса ларнă вырăнсем пур. Шывпа йĕпенсе сарăхнă пек. Куççуль тумланă вырăнсем пуль вĕсем?

Эпĕ, пуçа чиксе, чĕнмерĕм...

— Ну, юрĕ, калаçар мар ун çинчен. Мĕн усси? Аса илсе, ăша çунтарни çеç,— терĕ çавăнтах Верук.— Чĕкеç, эсĕ çул çинчен канса ил кăштах. Сарса парам-ха сана çакăнта, диван çине. Простăньсем чăланта-ха. Çиччас илсе кĕретĕп.

— Ан хыпкалан, Верук, нимĕн те кирлĕ мар. Кăштах çеç выртса илетĕп. Темшĕн тăруках пуç ыратма тытăнчĕ-çке...

— Юрать, юрать. Хăвна мĕнле килĕшет, çавăн пек ту. Кап, çывăр. Пĕчĕк чĕпсем пур-ха пирĕн. Сысна çурисем илсе ятăмăр. Çавсене тăрантарам. Тата наччаслăха ачасем ĕçленĕ çĕре кайса килмелле.

Диван çине выртса куçа хупрăм çеç, асаилӳсем хура пĕлĕт пек капланса килчĕç, вăрçă çулĕсен тĕксĕм мĕлкийĕсем шăвăна-шăвăна тухрĕç. Тахçан тӳссе ирттернĕ йывăр кунсем, асаплă туйăмсем çуратса, ăша çунтарса ыраттарма тытăнчĕç... Акă вăрçа каякан атте пĕчĕк Иринăна пуçĕ çийĕн çĕкле-çĕкле вылять. Айван хĕрача нимĕн те ăнланмасть. Уншăн савăнса, ахăлтатса пултăр. Асатма пухăннă çынсем, çакна курса, пушшех хурланса йĕреççĕ. Акă каллех Ирина. Пичĕ типсе шурăхнă, куç айĕ путса кăвакарнă. «Çăкăр! Чĕкеç, çăкăр çиес килет!» — йынăшать вăл, çинçешке аллине мап енне тăсса. Темшĕн-çке аса пуринчен ытла шуранка алăсем кĕрсе юлнă. Шăммипе тирĕ кăна, кăвак юн тымарĕсем витĕрех курăнаççĕ. «Кĕлмĕçсем! Вилме маннăскерсем! — ахăрашать картишĕнче урса кайнă Алипа амăшĕ.— Халех уçнă пултăр!» Çиллипе ниçта кайма

пĕлмесĕр, вăл е чӳречерен чышкипе шанлаттарать, е пӳртум алăкне урипе тăрслаттара-тăрслаттара тапать... «Макăр, Урине, макăр! Çук тек пирĕн ывăл çут тĕнчере»,— тет атте чĕтрекен сасăпа, пире хирĕç утса. Куçĕнчен çап-çутă куççуль шăпăртатса юхать, кăвакарнă уссийĕпе сухалĕ çийĕн йăпăртатса анать.

Çук, пулмасть çыврасси. Сиксе тăрса, эпĕ алăкăн-тĕпелĕн уткалама тытăнтăм. Нимĕн те манман иккен эпĕ. Пĕтĕмпех астăватăп... Чун тăвăнса килнипе картишне тухрăм. Сирĕл, сирĕл хăвăртрах йывăр шухăш-кăмăл!

Аш вăрканă чух нумайăшĕ çынпа пулма тăрăшать. Пĕринпе калаçатăн, теприне итлетĕн, чун ерипен лăпланать. Анчах манăн халĕ никама та курас килмерĕ. Верука та. Çавăнпа эпĕ пахчана тухрăм, карта урлă каçса, хирелле утрăм.

Умра симĕс тулă ани хумханать. Пĕр тикĕс, çăра. Пучахĕсем шултра, вăрăм. Ача чухнех юрататтăм эпĕ ансăр сукмакпа çӳллĕ тырă ани тăрăх утма. Пăхатăн — пур сиче те тикĕс тырă ешерсе ӳсет. Пучахĕсем алла, уçă мăя, пите перĕнсе кăтăклаççĕ, тем калас пек, ман енне сулăнаççĕ. Йĕри-тавра симĕс хум чупать, хĕвел çинче пурçăн пек йăлтăртатса вĕлкĕшет.

Каçченех çӳрерĕм эпĕ тăван уй-хир тăрăх. Тырă-пулă анисене пăхса çаврăнтăм. Ача чух выляса чупнă кукăрмакăр, тарăн çырма хĕррисемпе утрăм, ял хыçĕнчи пысăк пĕвене кайса куртăм. Тăри юрланине итлесе килентĕм. Яла хĕвел аннă чух çеç таврăнтăм.

— Верук, ыран эпĕ çăва çине каясшăн-ха. Çула май Уйкасри палăк патне кĕрсе тухас,— терĕм эпĕ аппана çывăрма выртас умĕн.

— Ыранах-и? Апла пулсан, чуста хурас,— хыпкаланма пуçларĕ Верук.— Эсĕ килнĕ ятпа кăштах сăра лартрăм. Ирччен йӳççе çаврăнать. Юрĕ, Чĕкеç, эпĕ те сaнпа пырăп.

Аппа сăмахĕсем ман чуна çемçетсе, хумхантарса ячĕç. Ах, Верук, хаклă тăванăм! Тав тăватăп сана хисеп тунăшăн, юратнăшăн. Пуриншĕн те тав тăватăп!

Тепĕр кун эпир хĕвелпе пĕрлех тăтăмăр. Ирхи апат тĕлне кукăль-икерчĕ писсе тухрĕ. Çăва çинче çывăх çынсен вилтăприсене пуç тайрăмăр, авалхи йăлапа, вĕсене асăнса, апат ларса çирĕмĕр. Унтан Уйкас енне çул тытрăмăр.

— Верук кинемей! Вера Леонтьевна! — илтĕнчĕ хыçра сасă. Пире çамрăк хĕрарăм хăваласа çитрĕ.— Верук кинемей, чуп хăвăртрах каялла! Хăнасем çитрĕç сирĕн. Çеруш хĕр илсе килчĕ. Таксипе. Вĕсемпе пĕрле ларса килтĕм.

— Ак тамаша! — аллине шарт çапрĕ Верук.— Епле-ха

капла? Никама нимĕн каламасăр... Пĕр систермесĕр,— унăн пичĕ-куçĕнче савăнни те, тĕлĕнни те тата темле кăмăлсăр туйăм та палăра-палăра çухалчĕ.— Çапла-çке вĕсем, хальхи çамрăксем... Ну, мур ачине! Çитсен, пĕрре пăсăрлантаратăп-ха... Ах, Чĕкеç! Пыраймастăп ĕнтĕ санпа. Ан çиллене нех,— терĕ аппа, ман çине айăплăн пăхса,— пурте ĕçре. Кĕтсе илекен те çук.

Верук вăрт çаврăнчĕ те ялаллаваскарĕ. «Эх, вăхăт,— шухăшларăм эпĕ, аслă çул хĕррипе утса,— мĕн тери хăвăрт иртет. Нумаях пулмасть Верук хăй çап-çамрăк хĕр чупса çӳретчĕ. Халĕ, ав, мăнукĕ авланать».

Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнисен ячĕпе лартнă пысăках мар палăк Уйкас ялĕ вĕçĕнчи уçă вырăнта. Мĕн чухлĕ вĕсем, çакăн пек палăксем, пирĕн çĕршывăн хулисемпе ялĕсенче? Çирĕм миллион совет çыннин пурнăçне хыпса çăтрĕ тискер вăрçă. Пирĕн пĕчĕк ялта та вăтăр çичĕ арçын таврăнаймарĕ. Аманнисем, ĕмĕрлĕхех чăлах пулса юлнисем мĕн чухлĕ тата. Выçăпа асапланса вилнисем... Йывăр ĕçпе аманса юлнисем... Çапла, юнлă вăрçă— вилĕм çеç мар, вăл тата йывăр ĕç, халран яракан, ураран ӳкерекен вĕçĕмсĕр тертлĕ ĕç...

Çапла шухăшлакаласа, эпĕ палăк патне çывхартăм. Акă вăл, ман умрах, аслă çулран пăрăнса, вунпилĕк-çирĕм утăм çеç тумалла. Йĕри-тавра эрешлесе илемлетнĕ лутра карта тытнă. Виçĕ енчен ăна лапсăркка хырсем хупăрланă.

Лакăмлă-тĕкĕмлĕ çĕр çийĕн асăрханса пусса, эпĕ çывăхах пыратăп. «Мĕн тума кĕмелле пулнă-ши çакăнта тракторсен? Мĕн тесе ватмалла пулнă сип-симĕс çереме?» — шухăшлатăп утнă май. Карта ăшĕнче те тирпейлĕх çук. Кунта тахçан чечексем ешернĕ пулас, халĕ вĕсем пĕтнĕ. Кашласа ӳсекен çумкурăкĕ хушшинче унта та кунта темиçе имшер тупа кăна чĕлтĕртетсе ларать. Ансăр тенкел хуралнă, пĕр вĕçĕ çĕрме тытăннă.

Тунсăхлă туйăмпа эпĕ йĕри-тавралла çаврăнса пăхатăп. Тӳпере çап-çутă хĕвел ялкăшать, ăшă çил, вăркăшса, хыр тăррисене хуллен суллантарать. Пысăк çулпа, тусан çĕклесе, машинăсем чупаççĕ. Инçе те мар, çул тепĕр енче, клуб, библиотека, правлени çурчĕсем. Кăшт аяккарах столовăй, универмаг. Унта çынсем кускалаççĕ. Палăк патне никам та килмест пулас, сукмак мар, ура йĕрĕ те курăнмасть.

Уçас тесе, эпĕ пĕчĕк алăка тĕртрĕм, анчах вăл, чалăшса кайнăскер, вырăнтан та хускалмарĕ. Карта урлă каçса кĕмелле пулчĕ. Çапах эпĕ йăнăшрăм. Килекенсем пур иккен. Палăк никĕсĕ çинче хирти чечексенчен явнă икĕ кă-

шăл выртать. Нумаях пулмасть хурса хăварнă. Ачасем пулас. Эпĕ те юнашар чечек çыххи хутăм.

Çывăхрах тахăшĕ хуллен ӳсĕрсе илчĕ. Çаврăнса пăхрăм — йăрăс пӳллĕ çамрăк тăрать.

— Антонина Григорьевна,— терĕ вăл,— чăрмантарнăшăн каçарăр.

Эпĕ ун çине тĕлĕнсе пăхрăм. Ҫам-ши ку, мана паллакансker?

— Ан тĕлĕнĕр, Антонина Григорьевна,— ман шухăша ăнланса, ăшшăн йăлкăшрĕ çамрăк çын.— Эпĕ пĕлетĕп сире. Эсир пирĕн ял çынни. Илларион Никитича астăватăр пулĕ? Унăн ывăлĕ эпĕ. Петя ятлă.

— Илларион Никитич? Алина пиччĕшĕ-и?

— Шăп çавă,— каллех кăмăллăн кулса илчĕ вăл.— Алина Никитична аса илет сире. Çирĕм çул ытла вăл кӳршĕ районта Культура çурчĕн заведующийĕ пулса ĕçлерĕ. Халĕ канать, пенсире.

Эпĕ картаран тухрăм, умри çамрăк çине интересленсех пăхса илтĕм. Ашшĕ пек вăл, сарă çӳçлĕ, кăвак куçлă. Анчах кĕлетки-çурăмĕпе ашшĕне хывман — çӳллĕ, маттур, сăнĕ-пичĕ те килĕшӳллĕ.

— Хам эпĕ агроном. Икĕ çул каярах ялхуçалăх институтне вĕренсе пĕтертĕм. Кунсăр пуçне, колхозри комсомол комитечĕн секретарĕ пулса ĕçлетĕп,— Петя çилпе сапаланнă çӳçне алă тупанĕпе шăлса тӳрлетрĕ.— Эпĕ комсомолецсемпе ĕçлеме тытăнни çулталăк та çитмест-ха. Ман умĕнхи секретарь çак ответлă ырăна пустуй йышăннă тесен те тĕрĕсех пулĕ. Çамрăксене патриотла воспитани парас енĕпе нимĕн те туман вăл. Халĕ эпĕ çак ĕçе çĕклеме тытăнтăмха,— сăмахсене ырăсларах çавăркаласа каларĕ Петя.— Колхоз хирĕсенче ăмăртса ĕçлетпĕр, мире çирĕплетессишĕн кĕрешетпĕр, мир фондне укçа-тенкĕ хыватпăр...

«Мĕн тума мана каласа парать вăл кун çинчен?» — тĕлĕнсе шухăшларăм эпĕ итленĕ май.

— Çапах мĕн тунипе лăпланса ларма юрамасть. Çамрăксене патриотла воспитани парас ĕçе пирĕн татах та вăйлатмалла,— пырса кĕреççĕ хăлхана тахçан илтме хăнăхнă яп-яка сăмахсем.— Тăван халăх историне, пирĕн асаттесемпе аттесен мухтавлă ĕçĕсене, вĕсем юратнă çĕршывăмăра усал тăшманран паттăрла хӳтĕлесе, чаплă çĕнтерӳсем тунине пирĕн, çамрăксен, яланах асра тытмалла...

Çак сăмахсене илтсен, ман шăмшак тăрăх сивĕ сăрăлтатса чупса кайрĕ. «Пирĕн асаттесемпе аттесен мухтавлă, чаплă ĕçĕсене»... Нивушлĕ çаплах каларĕ вăл? Теп, мана илтĕнчĕ кăна? Нивушлĕ Никита Данилыч е, ялти пек ка-

ласан, Пăт Мĕкĕте мăнукне çавăн евĕр сăмахсемпе перкелешме намăс мар?..

Эпĕ çамрăк çине тинкерсе пăхрăм. Имени курăнмасть. Пичĕ-куçĕ те лăпкă, сăмахĕсем те пĕр такăнмасăр, шыв пек юхаççĕ.

— Антонина Григорьевна, сирĕн килтен Аслă Отечественнăй вăрçа иккĕн кайнă. Иккĕшĕ те таврăнайман. Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн пуçĕсене хунă...

Çак вашават, лăпкă сасă ман чуна вĕчĕрхентерме тытăнать, анчах тулашакан туйăма эпĕ çавăнтах путаратăп.

— Çапла, нумайăшĕ килеймерĕ вăрçăран,— «вăрçăран» сăмаха эпĕ юрнех витĕмлĕрех, тăсарах калатăп.— Пирĕн пĕчĕк ялтан та вăтăр çичĕ çын таврăнаймарĕ.

— Вăтăр саккăр, Антонина Григорьевна,— сăпайлăн тӳрлетет мана комсомол комитечĕн секретарĕ.— Эпир вĕсене пурне те шута илнĕ. Анчах, шел пулин те, сирĕн çывăх тăванăрсем çинчен, вĕсен ячĕсемсĕр пуçне, эпир, çамрăксем, нимĕн те пĕлместпĕр. Григорий Степанович Чапаев дивизинче çапăçнă, каярахпа ялта çĕнĕ пурнăç тăвассишĕн хытă тăнă теççĕ. Валерий Григорьевич та, ялта пĕр çын, летчик ятне илнĕ. Çак кунсенче комсомолецсен пухăвĕ пулмалла. Кĕскен те пулин каласа памăр-ши пире вĕсем çинчен? Вунпилĕк-çирĕм минут та пулин.

«Комсомолецсен пухăвĕ,—шухăшласа илетĕп çавăнтах.— Пĕлетĕп эпĕ вăл мĕнле иртессе. Хистенине пула пĕр-пĕр аслă пӳлĕме çамрăксем пуçтарăнаççĕ. Пуху пуçланнă, анчах калакана тăнлакан сахал. Пĕри чӳречерен, пуçне каçăртсах, тем пăхса ларать, тепри чĕркуççийĕ çине хунă кĕнекине вулать, кайри ретре уççăнах пăшăлтатса калаçни, чăхлаттарса кулни илтĕнет... Э-э, пайтах курнă хут çине паллă туса хăварма ирттернĕ çавăн евĕр пухусене... Палăка тирпейлесчĕ ун вырăнне. Темиçе хут усăллă пулĕччĕ. Патриотла воспитани парасси çинчен хитре сăмахсем калама ăста, ху сăмса айĕнчи япăха курмастăн».

— Сĕнӳшĕн тавтапуç,— терĕм эпĕ, кăмăлăма пытармасăр.— Паттăр ятне илмен салтаксем çинчен çамрăксем итлеме кăмăл тăвĕç-ши? Вĕсем халĕ нумай вулаççĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă çинчен вуламалли туллиех.

Комсомол комитечĕн секретарĕ ман çине тĕлĕннĕн пăхса илчĕ.

— Паттăрсене мухтав. Анчах çĕнтерӳшĕн пурте кĕрешнĕ, юн юхтарнă, темиçе миллион çын пуçне хунă. Тĕнчере пурнăçран хакли нимĕн те çук. Вĕсем ăна пĕр шеллемесĕр Тăван çĕршывшăн панă. Пирĕн, çамрăксен, çавна манмалла мар,— илтетĕп эпĕ каллех илемлĕ, тĕрĕс, анчах ытла та

час-часах усă курнипе çивĕчлĕхне çухатнă, якалса, асра тытăнми пулнă сăмахсене.

— Қаçарăр, сирĕн сĕнĕве тивĕçтерме пултараймастăп,— терĕм эпĕ, вашаватрах пулма тăрăшса.— Вăхăт нумай иртрĕ пулин те, тӳссе ирттернине аса илме çăмăл мар. Халĕ те чун ыратать. Тепĕр енчен илсен, вунпилĕк-çирĕм минутра мĕн каласа пама ĕлкĕрĕп эпĕ? Мĕн çĕнни уçса парăп çамрăксене? Қама кирлĕ вăл, итлекенĕн чĕрине хускатма пултарайман, пĕр ячĕшĕн кăна ирттернĕ калаçу?

Петя куç харшине кăмăлсăррăн вылятса илчĕ те пуçне чикрĕ. Эпĕ тек калаçса тăмарăм, сывпуллашрăм та ялалла утрăм.

Сережа авланать тенĕрен, туйра пулатăп тесе хĕпĕртенĕччĕ, анчах хĕрĕ каччин ашшĕ-амăшĕпе, тăванĕсемпе курса паллашма çеç килнĕ иккен. Туйĕ пирки каярахпа калаçса татăлма пулчĕç.

Ентĕ çуралса ӳснĕ вырăнсемпе сывпуллашса, эпĕ киле тавăрăнтăм. Пурнăç кулленхи çулĕпе шурĕ. Қăнтăрла ĕçре, каçсенче хваттерте. Юрăри пекех, кун иртет те, каç пулать. Тăван ялта ирттернĕ кунсене те вăхăт çиниттийĕ ерипен хупласа тĕксĕмлете пуçларĕ.

Пĕрре, ĕçрен таврăнса, каçхи апат çирĕм çеç, пирĕн пата кӳршĕ хĕрарăмĕ кĕчĕ.

— Антонина Григорьевна,— çатăртатма тытăнчĕ вăл, алăк урлă каçнă-каçманах.— Ывăла авлантаратпăр. Хĕрне туйпах илсе килес тетпĕр. Пурте авалхи пек пултăр тетпĕр. Çамрăксене кĕтсе илме чĕнтĕрленĕ, тĕрленĕ алшăлли кирлĕ. Сирĕн çук-и? Çук апла. Шел. Пир те пулин пар-ха эппин. Эсĕ ялтан илсе килтĕм терĕн.

— Туйшăн шел мар,— кулкаларăм эпĕ. Шкапа уçрăм та сĕтел çине пир тĕрки кăларса хутăм.— Мĕн чухлĕ кирлĕ, тархасшăн, татса илĕр...

Хĕрарăм, шавлăн тав туса, тухса кайрĕ.

Паян эпĕ хваттерте пĕчченех. Пурте çĕр выртмаллах пулла кайрĕç. Чӳречесенчен каç тĕттĕмĕ сăрхăнса кĕрет. Сĕтел çинче пир тĕрки шуррăн курăнса выртать. Эпĕ аллăма ун çине хуратăп. Шăмшак тăрăх темле ырă туйăм, чуна ăшăтса, чупса саланать. Анне пирĕ...

Çапах мĕн кансĕрлет-ха ман чĕрене? Мĕн ыйтать вăл? Мĕн аса илме хушать? А-а, Петя, леш комсомол комитечĕн секретарĕ. Çук, вăл мар... Вăл мар, унăн сĕнĕвĕ. «Çамрăксене кĕскен те пулин тăванăрсем çинчен каласа памăр-ши?» Кăмăлăма каймарĕ çав çамрăк ун чух. Сивлерĕм эпĕ ăна. Унăн сĕнĕвне те сивлерĕм. Мĕншĕн? Вăл Пăт Мĕкĕте ратти-туратти пулнăр-и? Ытти комсомолецсем çинчен те



33211чув

ырă мар шутларăм. Хальхи çамрăксене иртнĕ пурнăç интереслентермест терĕм... Эпĕ алăкăн-тĕпелĕн уткалама тытăнатăп. Çавăн евĕр шухăш епле пырса кĕнĕ-ха ун чух ман пуçа? Пур çын та пĕр пек пулма пултарать-и вара? Çук, туйăма парăнса, пуçпа шухăшламасăр сивлерĕм эпĕ Петя сĕнĕвне. Мĕн тумалла ĕнтĕ манăн йăнăшăма тӳрлетес тесен? Çитес çул яла каяймастăп. Çӳреме инçе. Сахалин утравĕ çинчех пурăнатăп-çке эпĕ. Çырса ярсан?.. Аттепе Валери çинчен çеç мар. Хам астунине, курса тӳснине. Пĕр суймасăр, тĕрĕсрен пăрăнмасăр. Анне çинчен, Верукăн телейсĕр, асаплă юратăвĕ çинчен. Çĕнтерӳшĕн ырми-канми ĕçленĕ салтак арăмĕсем, салтак амăшĕсем, çăкăр ыйтса йĕрекен ачасем çинчен. Пирĕн чечен çамрăклăха усал вăрçă, мĕн тери хĕн-хур кăтартса, тĕксĕмлетни çинчен. Вăрçă çулĕсенчи пурнăçа манман эпĕ. Лайăх астăватăп.

Анчах пултарăп-ши? Вăхăт ытла та нумай иртрĕ çав. Ун чух эпĕ çап-çамрăк хĕр пулнă, халĕ кăвакарнă çӳçлĕ асанне... Çапах та эпĕ тăрăшăп...

Тен, анне хушса хăварни ку... Çав шутпа пуçтарса хуман-ши вăл çамрăк хĕрĕн кăвак хуплашкаллă тетрадьне?

Çапла шухăшласа, эпĕ кĕнеке çӳлĕкĕ патне пыратăп. Акă, вăл, анне упраса хăварнă дневник. Сĕтел умне ларса, эпĕ унăн кивелсе сарăхнă листисене каллех асăрханса уçатăп. Кунта вăрçă кунĕсем пурăнаççĕ, кунта манăн çунатлă çамрăклăх тапаланать...

Асаилӳсем... Вĕсем те пĕр пек мар. Нумайăшне иртсе пыракан вăхăтăн тĕксĕм мĕлкийĕ ĕмĕрлĕхех хупласа пытарать. Анчах пурне те мар. Хăшпĕр асаилӳсем, тĕттĕм тӳпери çутă çăлтăрсем евĕр, нихăçан та сӳнмеççĕ, ĕмĕрлĕхех ăшра ялкăшса çунаççĕ. Теприсем кăвак кĕл айне пулса юлнă шĕл-кăвар пек. Вăл курăнмасть, ăна сӳннĕ тейĕн. Анчах хăрăк-харăк пырса ӳктĕр кăна, каллех çулăм хыпса илет, çутатать, ăшăтать е пĕçертсе ыраттарать.

Асаилӳсем... Акă вĕсем каллех ман тавра явăнаççĕ. Эпĕ ума шурă хут листи хуратăп, алла ручка тытатăп.

## II

Çырма мĕнрен тытăнас? Вăрçă пуçланнă кунран-и? Çук, малтан кĕскен те пулин вăрçăченхи пурнăçпа, хамăр çемьепе, хăшпĕр кӳршĕсемпе паллаштарас.

Манăн икĕ ят пулнине эсир пĕлетĕр ĕнтĕ. Çапла, ялта мана Чĕкеç тесе чĕнеççĕ, хут çинче эпĕ Антонина. Ачасене çемьере кайăк ячĕ парасси — чăвашсен сĕм-авалхи йăли. Юлашки вăхăтра пĕтрĕ вăл. Халĕ çамрăксем хушшинче

ялта та, хулара та ун пек ят илтейместĕн. Тантăшсем хушшинче те кайăк ятли пĕр эпĕ çесчĕ.

Аслă пичче Валери хыççăн пирĕн çемьере тата виçĕ ача çуралнă тет. Анчах темшĕн-çке вĕсенчен пĕри те вунă-вуникĕ кунран ытла пурăнайман.

«Усал куç хывнă сирĕн ачасем çине. Çав илсе каять вĕсене,— тенĕ кӳршĕ карчăкĕ эпĕ çуралас умĕн.— Улталас пулать ăна. Ку ачине кайăк ячĕ парăр. Илтет те хайхи чун илме килнĕ усал: «Э-э, ача мар-çке ку, кайăк çеç»,— тесе тухса каять.

Пирĕн атте те, анне те тĕшмĕш çынсем пулман. Чиркĕве çӳремен. Килте турăш пулнă пулин те, эпĕ вĕсем сăхсăхнине пĕрре те астумастăп. Анчах аптранă кăвакал кутăн чăмнă теççĕ. Мĕн пулать те мĕн килет тенĕ пулас.

Ман хыççăн пирĕн çемьере тата икĕ ывăл ачапа пĕр хĕрача çуралнă. Вĕсем те ыра-сывă юлнишĕн савăннă атте, кĕçĕн хĕрĕ Ириша çулталăк тултарсан, урама йăмрасем лартнă. Халĕ те ӳсеççĕ вĕсем. Çĕр ĕçне: йывăçсем лартма, пахчаçимĕç ӳстерме атте питĕ юрататчĕ.

Вăрçă пуçланнă çул эпĕ вунпилĕк, Коля вунвиççĕ тултарчĕ, Санька пĕрремĕш класа çӳреме пуçларĕ. Ириша иккĕри ачаччĕ.

Вăрçăччченхи çулсене çырса кăтартиччен çакна калас килет: ун чух эпĕ ача пулнă. Пурнăçа та, паллах, ачалла ăнланнă. Халĕ вара çав вăхăта эпĕ икĕ тĕрлĕ туйăмпа аса илетĕп.

Пĕр енчен, Аслă Октябрĕн хăватлă çути аякри тĕттĕм ялсене те çитрĕ, ырă улшăнусем илсе килме пуçларĕ. Кĕçĕн çулхи ачасем пурте вĕренеççĕ. Эпĕ астăвасса пирĕн ялта çĕнĕ шкул туса лартрĕç, вулав çурчĕ уçăлчĕ. Кӳршĕ ял ачисем: «Халĕ пирĕн вĕр-çĕнĕ клуб пур, фельдшер пункчĕ пур»,— тесе мухтанатчĕç. Çурăмĕсем хыçне пиртен çĕленĕ кутамккасем çакса, тĕрлĕ техникумсене, училищĕсене, аслă шкулсене тухса каякан çамрăксен йышĕ çулран çул ӳссе пычĕ. Комсомолецсем ял пурнăçне çĕнĕлле аталантарас ĕçе хĕрӳллĕн хутшăнатчĕç. Час-часах вечерсем ирттеретчĕç, докладсем тăватчĕç, спектакльсем лартатчĕç. Çулланнă çынсем те хавасланса пыратчĕç спектакльсем курма. Кайран ташă-юрă, тĕрлĕ вăййă пуçланатчĕ. Савăнаççĕ. Чун канниччен. Ывăниччен.

Тепĕр енчен илсен, уйрăм хуçалăхсене пĕрлештерсе çĕнĕ йĕрке туни хресченсене нушаран хăтармарĕ. Колхозсем чухăн, налогсем ытла та пысăк. Укçасăр пуçне памалли тата та нумай: çу, çăмарта, аш-какай, çăм, пахчара ӳстернĕ тĕрлĕ çимĕç. Кашни килтен пуçтарнă, никама та каçар-

ман. Çапах тырă пулнă çул çăкăрсăр ларман. Анчах çу типĕ килсен, хĕсĕк пурнăç тата хĕсĕннĕ. Çăкăр татăкĕ ыйтса, ялтан яла, килрен киле çӳрекенсем те нумайччĕ.

Апла пулин те, пурнăç асаплă, тĕксĕм туйăнмастчĕ. Çынсем, пуринчен ытла çамрăксем, çĕнĕ пурнăç тăвас ĕмĕтпе пурăнаççĕ, хавхаланса ĕçлеççĕ. Утă çулма тухнă кунсене халĕ те çутă кăмăлпа аса илетĕп. Уяв пекех кĕтсе илетчĕç çав вăхăта колхозниксем. Пăхатăн — хĕрсем, çамрăк хĕрарăмсем, акăшсем пек, шап-шурă тумпа. Пĕрне-пĕри кĕтсе, укăлча хапхи умне пуçтарăнаççĕ. Пĕр хавассăр пит-куç та курăймастăн. Вĕçĕмсĕр шӳтлеççĕ, ахăлтатса кулаççĕ. Хулпуççийĕсем çинче çавасем пулмасан, ку çынсем уява каяççĕ тейĕн. Каялла юрласа таврăнаççĕ. Урапа çулĕпе хĕрсемпе каччăсем, ретĕн-ретĕн тăрса, ялалла васкамасăр утаççĕ. Каçхи сывлăшра ирĕк юрă аслă хирсем çийĕн инçете вĕçсе саланать.

Тырă вырма тухнă кун тата... Ана ял çывăхĕнче пулсан, утайман ватăпа вĕтĕ çеç киле ларса юлать. Ыттисем пурте хире васкаççĕ: туя тытнисем те, ĕçе тухма çул çитеймен ача-пăча та. Хаваслă шăв-шав каçалăк тăршшĕпех янраса тăрать.

Çапла астуса юлнă эпĕ вăрçăччен хи пурнăçа.

Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланиччен икĕ-виçĕ эрне маларах эпир хаваслă хыпар илтĕмĕр. Валери пичче отпуска пыратăп тесе пĕлтерчĕ. Икĕ çул курман эпир Валерие. Икĕ çул вăл Краснодар хулинче çар летчикĕсен шкулĕнче вĕренчĕ. Акă ĕнтĕ вĕренсе тухрĕ, курма килет.

Вăл таврăннă кун эпир каçченех колхоз хирĕнче çĕр улми çумларăмăр. Яла кĕрсен, тахăшĕ мана:

— Чĕкеç, чуп хăвăртрах! Пиччӳ килнĕ,— терĕ. Эх, тапса сикрĕм килелле. Çенĕке чупса кĕтĕм, уçас тесе пӳрт алăкĕ хăлăпĕнчен ярса тытнăччĕ, хам çине пăхрăм та тăпах чарăнтăм. Çум çумланă алăсем хуп-хура, урасем те çĕр тĕслех. Çипуç та таса мар, тусанлă. Епле курăнма хăяс капла Валери умне? Вĕлт çаврăнтăм та, чĕрне вĕççĕн утса, каялла картишне тухрăм. Хĕвел çинче ăшăннă валашкари шывпа малтан пит-куçа, унтан урасене çурăм, чăлана кĕрсе урăх кĕпе тăхăнтăм, çӳçе тураса якатрăм — вара тин алăка туртса уçрăм. Пӳртре кӳршĕсем, ялти хурăнташсем пуçтарăннă. Хисеплесе, пиччене курма, калаçма килнĕ ĕнтĕ. Уяв-çке паян пирĕн çемьере. Валерие кĕтсе, анне пĕр кунах сăра туса лартрĕ.

— Акă Чĕкеç те килчĕ,— терĕ сĕтел çине апат-çимĕç лартакан анне, эпĕ кĕрсе тăрсанах.

Хыçлă пукан çинче çурăмпа ларакан çар тумĕ тăхăннă

çӳллĕ çын ваштах çаврăнчĕ, унтан, ура çине çăмăллăн тăрса, ман паталла пычĕ.

— Ух, ӳссе кайнă! — терĕ пичче.— Хĕр пулнă-çке эсĕ!— вăл мана ачашшăн ыталарĕ, унтан темле ăнланмалла мар савăк куçпа тĕлĕннĕн тинкерсе пăхрĕ.

— Парне илсе килтĕм сана валли. Савăнатăн пулĕ тенĕччĕ. Мĕн тăвăпăр-ха ĕнтĕ халĕ? Ай-яй-яй! — Валери сак çинчи чăматанĕнчен тĕрке кăларчĕ те, айăплăн кулкаласа, мана тăсса пачĕ. Эпĕ ăна васкаса саркаларăм.

— Епле шукăль кĕпе! — калаçса илчĕç хĕрарăмсем.— Анчах Чĕкеçе юрас çук, пĕчĕк...

Кăпăр парне юрăхлă пулманнишĕн хурланса, эпĕ кăшт çеç йĕрсе яраттăм. Вăт намăс пулатчĕ... Илме йывăр çакăн евĕр илемлĕ кĕпе-тума лавккасенче. Сахал сутаççĕ. Укçи те çителĕксĕр. Куççуле пытарса, парнене эпĕ тирпейлĕн хутлатрăм та сак çине хутăм.

— Мĕнех вара... Пур манăн çитсă кĕпе. Вĕр-çĕнĕ пекех. Пĕр-иккĕ çеç тăхăннă,— текелесе, кăмăла çавăрса ятăм.

Икĕ-виçĕ кунран Валери Шупашкара кайрĕ. Таврăнсан, каллех мана тĕрке тыттарчĕ. Салтса пăхрăм та — ай! куçпуç чарăлса кайрĕ. Пурçăн кĕпе! Мĕн тери капăр! Çавăн пек тум çинчен эпĕ ĕмĕтленме те пултарайман. Калама çук хĕпĕртесе ӳкнĕскер, парнене ярса тытрăм та пӳртрен вирхĕнсе тухрăм. Ытла та савăннипе, алăра йăпăртатакан çемçе пурçăнпа пит-куçа хупăрларăм. Унтан чăтаймарăм, чăлана чупса кĕрсе, çавăнтах тăхăнса пăхрăм. Шăп та шай мана валли çĕленĕ пекех! «Кĕçех район центрĕнче пысăк уяв — ярмарка—пуçланать. Çавăн чух тăхăнатăп»,— шухăшлатăп хам, хитре кĕпе çинчен куçа илеймесĕр.

— Укçуна нумай пĕтертĕн пуль. Пурçăнах илмелле марччĕ. Мĕне кирлĕ халех çапла капăрланса çӳрени. Иртĕхтерет кăна,— илтĕнчĕ уçă алăкран анне сасси.

— Пултăр ĕнтĕ. Пăх-ха, епле савăнать,— терĕ Валери кăмăллăн.

«Ах, пичче! Юратнă, хаклă пичче! Тавтапуç сана! Çĕр хут тавтапуç»,— çапла пăшăлтатса, чаплă парнене эпĕ анне арчине пуçтарса хутăм. Уявчен вăхăт нумай юлмарĕ ĕнтĕ.

Мĕн тери хавасланса кĕтрĕм эпĕ çав куна... Акă килсе çитрĕ вăл, пин те тăхăрçĕр хĕрĕх пĕрремĕш çулхи июнĕн çирĕм иккĕмĕшĕ. Эх, кам шутлама пултарнă ун чух, çав лăпкă та ăшă çу кунĕ мĕнпур çĕршыв халăхне тĕпсĕр асапа тытса ывăтасса! Никам та пĕлмен, никам та ăса илмен...

Анне мана хĕвелпе пĕрлех вăратрĕ.

— Чĕкеç, тăр-ха, тăр,— терĕ вăл, эпĕ çывăракан чăлан

алăкне яри уçса.— Çанталăк шăрăхланиччен пахчаçимĕçе шăварасчĕ. Çĕркаç эпĕ ĕлкĕреймерĕм. Эсĕ те хиртен тĕттĕм пулсан тин таврăнтăн. Манăн халĕ пĕр ерçӳ те çук.

Тутлă ыйха аран-аран сирсе, эпĕ вырăн çинчен ирĕксĕррĕн çĕклентĕм. Анасла-анасла, пушă витресене авăнчăк кĕвенте çине çакрăм та урама тухрăм, сывлăмпа йĕпеннĕ симĕс курăк çинче урана йĕпетсе, кӳлĕ еннелле утрăм.

Çанталăкĕ лăпкă, уяр. Çурт-йĕрсенчен, лапсăркка йăмрасенчен урам урлă тĕксĕм мĕлкесем тăсăлаççĕ. Уçă сывлăш ăшă вырăн çинчен тăрса тухнă шăмшака çӳçентерет. Укăлча хапхи патĕнче кĕтӳ хыççăн çĕкленсе юлнă чĕлтĕр тусан ирхи хĕвел çутинче хĕрлĕ тĕтре евĕр туйăнать.

Пирĕн ял пысăк мар. Ытти чăваш ялĕсем пекех, вăл симĕс, йăмраллă. Ун варринче, урапа çулĕн пĕр айккинче, пĕчĕк çавра кӳлĕ. Лапам вырăна шыв юха-юха тулнипе пулса юлнă-ши вăл е авалхи чăвашсем чавса тунă ăна — халĕ ун çинчен никам та пĕлмест. Анчах çак кӳлĕ ялшăн чăннипех хаклă. Унта выльăх-чĕрлĕх шыв ĕçет, хур-кăвакал ишет, кӳлĕ шывĕпе пахчаçимĕç шăвараççĕ, хĕрарăмсем килти хура-шурра çуса тасатаççĕ. Типме памаççĕ ăна, ăшăхлансан, ялĕпех тасатма тухаççĕ.

Кӳлĕ халĕ лăпкăн тĕлĕрет. Пĕчĕкрех чух эпĕ унăн кĕленче пек ялтăртатса выртакан тип-тикĕс шывĕ çине пăхса тăма юрататтăм. Пуç тăрринче те, кӳлĕ тĕпĕнче те кăн-кăвак пĕлĕт курăнать, унта та, кунта та хĕвел çаври ялкăшать, симĕс йăмрасем ӳсеççĕ. Анчах шывра вĕсем çӳлелле мар, аялалла, кӳлĕ тĕпнелле кармашаççĕ. Тăпра катăкĕ илсе перетĕн çеç, хумсем чупма тытăнаççĕ. Вĕсемпе пĕрле таçти аялти кăвак пĕлĕт те, хĕвел çаври те хускалать, йăмрасем авкаланма, кукăрăла-кукăрăла чӳхенме пуçлаççĕ. Мĕншĕн çапла пулнине ăнланнă пулин те, çак курăну мана илĕртетчĕ. Шывра, таçта аялта, тепĕр тĕнче пур пек туйăнатчĕ. Юмахсем пулса, тĕлĕксенче курăнатчĕ.

Халĕ эпĕ ӳснĕ. Кӳлĕ тĕпĕнче урăхла тĕнче шырамастăп, шыв çийĕ вылянине пăхса тăмастăп. Вăхăт та çук çавăн евĕр кирлĕ-кирлĕ марпа аппаланма. Витресене тултаратăп та килелле васкаса утатăп.

Пахчаçимĕç шăварса пĕтерсен, анне мана тата темĕн чухлĕ ĕç хушать: е ĕне сумалла, е çăлтан шыв ăсса килмелле, е валашкана шыв тултармалла. Хăй тĕпелтен тухаймасăр хыпкаланать. Паян атте пиччĕшĕн хĕрĕ Верук качча тухать. Кăçалапа вĕсен патне туй килмелле. Çавăнпа анне васкасах кукăль-икерчĕ, çăкăр-кулач пĕçерет.

Акă картишне атте кĕчĕ. Вăл тахçантанпах колхозра бригадир. Ĕçĕ канăçсăр пулсан та, атте ăна юратать. Çур-

кунне уй-хирте ĕç пуçлансан, ăна кăнтăрла килте сайра куратăн. Тырă-пулă вырма тухсан вара пачах çухалать. Çутăличчен тухса каять те тĕттĕм пулсан таврăнать. Анчах паян атте те килтех иккен.

— Эсĕ ярмаркăна каятăп темерĕн-и? — ыйтрĕ вăл, эпĕ чупкаласа çӳренине курса.— Мĕншĕн пуçтарăнмастăн? Çынсем утаççĕ авă.

— Пуху пасар мар. Ёлкĕрет,— терĕ ампартан кункăрапа çăнăх илсе тухнă анне.— Ашшĕ, эсĕ картиш шăлса тасат-ха. Манăн пĕр ерçӳ те çук. Коля халĕ те тăмарĕ-и? Ах, çав ачана! Ытла йывăр ыйхăллă. Вăратмасан, кăнтăрлаччен те çывăрать пулĕ вăл. Чĕкеç, кайса чĕн-ха тепре.

Коля — ман шăллăм. Çуллахи кунсенче вăл та килте лармасть. Ялти ачасемпе кашни кунах ĕне çитерме каять. Кĕтӳре ĕнесем валли курăк çителĕксĕр пирки, çемьере ачасем пур пулсан, ĕнесене алă вĕççĕн çавăтса тăрантараççĕ. Çавна пула васкатать ĕнтĕ анне Кольăна. Коля шăллăм манран икĕ çул кĕçĕн. Тӳрех калатăп — пирĕн хушăра туслăх çук. Юлашки вăхăтра вăл мана пачах итлеми пулчĕ. Эпĕ унран аслине пĕрре те шута илмест. Паян та акă... Икĕ хутчен аслăк çине улăхсах вăратрăм, вăл пур —хăлхана та чикмест, юри илтмĕш пулса выртать. Питĕ ашкăнма юрататъ, чееленме, улталама ăста. Мана тарăхтарма мĕн-мĕн шухăшласа тупмасть пулĕ. Е эпĕ вулама тытăннă интереслĕ кĕнекене пытарса хурать, е, анне кĕтет, чуп хăвăртрах тесе, хаваслă вăйăран чĕнсе илет... Каласа пĕтерес çук ун мыскарисене... Çуркунне тата мĕн шутласа тупнă. Аттепе анне кӳршĕ яла тăванĕсем патне кайрĕç. Килте эпĕ асли, йĕрке тытаканĕ пулса юлтăм. Ларатăп уроксене хатĕрленсе. Пӳртре никам та çук. Сасартăк чӳрече умĕнче Ириша çухăрса ячĕ:

— А-а-а! Чĕкеç, Чĕкеç, тетĕп!

Виркĕнсе тухрăм урама. Ах, пĕчĕк йăмăкăм! Сăмси, янахĕ, тути чĕп-чĕр юн. Чупса пырса хĕрачана çĕклерĕм те — хăвăртрах пӳрте. Ашă шывпа питне-куçне çуса тасатрăм. Пăхатăп та, нимĕнле суран та çук. Пичĕ тап-таса, яп-яка.

— Палан шывĕ вăл,— кулса ячĕ Ириша.— Эсĕ мĕн, юн терĕн-и? Коля сĕрсе ячĕ ăна... Сана хăратма.

— Мĕншĕн йĕтĕн апла пулсан?

— Коля хушрĕ. Паян апрелĕн пĕрремĕшĕ, суймалли кун, терĕ.

Ну, Коля, ну, ашкăнчăк! Мĕне кура вĕçĕмсĕр иртĕхес килет-ши? Эпĕ хам нихăçан та суймастăп, никама та улталамастăп. Пĕрре тытса вĕтелĕттĕм çапла хăтланнăшăн.

Анчах шăллăм-çке вăл... Тата юлашки çулсенче вăйе те хутшăнчĕ унăн. Кĕрешсе çĕнтереймestĕп эпĕ ăна. Килте кăна мар, шкулта та çавнашкалах пуçтахланать вăл. Лайăх вĕренет хăй. Анчах хăшпĕр учительсен урокĕсенче ытла та ирĕк тыткалать пулас хăйне. Атте питĕ çилленет ăна çакăншăн, питĕ вăрçать.

— Те ыйхи йывăр унăн, те кахалĕ пысăк,— кăмăлсăррăн мăкăртатрăм эпĕ, анне Кольăна тепĕр хут тăратма хушсан.— Паçăрах вăраннă вăл. Юри пăлахая персе выртать.

Çакна илтсен, картиш шăлма тытăннă атте çулăкне хучĕ те аслăк патнелле утрĕ. Пĕрре чĕнчĕ кăна, Коля çавăнтах сасă пачĕ.

— Э-э... юрать... халех...

Пирĕн атте çемьери йĕркелĕхе çирĕп тытать. Ача-пăча итлеменнине, ĕç хушсан турткалашнине иачах килĕштермест. Ашкăнчăк Коля та хуçкаланма хăяймасть ун умĕнче, итлет. Акă вăл картишне сиксе те анчĕ. Ыйхăллă куçне сăтăркаласа, тӳрех ман паталла утрĕ. Эпĕ валашкари шывпа васкасах ура çăватăп.

— Пĕл, мĕн пур çак алăра? — ыйтрĕ вăл, чышкине ман енне тăсса.— Пĕлсен, ахалех паратăп. Пĕлеймесен, эпĕ ыйтнине тăватăн. Юрать-и? Ну, мĕн? Пĕлейместĕн... пĕлейместĕн,— мана астарма тăрăшса, юри хаваслăн сиккелесе илчĕ вăл.

Каллех чееленет. Тем кирлĕ ĕнтĕ шăллăма манран.

— Пĕлместĕп. Пĕлесшĕн те çунмастăп,— терĕм эпĕ çапçутă пушмака тăхăнна май.

— Акă, кур,— Коля чăмăртанă пӳрнисене уçрĕ та алă тупанне саркаласа кăтартрĕ.— Укçа. Аллă пус. Хуть шутласа пăх.

— Аçтан илтĕн? Камран?— тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ. Пире ача-пăчана, укçа-тенкĕ вăр-вар тыттарман.

— Анне пачĕ. Ĕнер, пухха кайма. Эпĕ пĕр пус та салатмарăм. Паян ман вырăна ĕне çитерме кайсан, пĕтĕмпех сана паратăп.

Коля алă тупанĕсене пĕр-пĕринпе хуплаштарчĕ те вак укçине ман хăлха патĕнчех шăнкăртаттарса илчĕ.

— Илтетĕн-и?

Авă мĕн! Мана укçапа илĕртсе, каллех ярмаркăна каясшăн çунать иккен ман шăллăм. Паллах, вырсарникун уяв шавлăрах, интереслĕрех. Анчах эпир шăпа ярса килĕшрĕмĕр-çке. Паян манăн каймалла. Тата мĕн кирлĕ?

Яри уçса янă чӳречерен анне пуçĕ курăнчĕ.

— Мĕн тавлашса тăратăр эсир унта? — терĕ вăл кă-

мăлсăр сасăпа.— Коля, миçе хутчен каламалла сана? Кĕрсе апатлан та кай хăвăртрах!

Шăллăм пит-куçне кăмăлсăррăн турткаласа илчĕ те ирĕксĕррĕн пăрăнса утрĕ. Эпĕ ун хыççăн пăхса юлтăм.

Мĕн чухлĕ лавкка халĕ ярмаркăра! Ачапча чунне илĕртме мĕн тĕрлĕ япала çук-ши унта?! Çаплах чăтнă вăл, пĕр пус та салатман укçине. Манпа калаçса татăлăп тенĕ ĕнтĕ. Мăнтарăн ачи. Епле каяс килет пулĕ унăн паянхи пухха!

Çапла-çке ман кăмăл. Чуна час-часах вĕчĕлентерет пулин те, эпĕ шăллăма пурпĕрех юрататăп пулас çав. Унсăрăн мĕншĕн çилĕ тытаймастăп, хăвăрт каçаратăп, шеллетĕп? Акă халĕ те чун çемçелсе кайрĕ. «Тен, килĕшес? Кайтăр, савăнтăр. Ача-çке вăл»,— пырса кĕчĕ пуçа кĕтмен шухăш.

Çав самантра алăк уçăлчĕ те, картишне Алина кĕчĕ. Эпир унпа тахçанах пухха пĕрле каятпăр тесе шут тытнăччĕ.

Алина — ман çывăх тантăш. Эпир яланах пĕрле çӳретпĕр. Пĕр класра вĕренетпĕр, пĕр парта хушшинче ларатпăр. Алина паян чăваш тумĕпе. Шап-шурă пурçăн кĕпе çийĕн чĕнтĕрлесе илемлетнĕ пурçăн саппун çакнă, вăрăм çӳçеллĕ пурçăн тутăр çыхнă. Пуян пурăнаççĕ вĕсем. Çемйи пысăк мар. Мĕн пур ачи те ывăлпа хĕр кăна. Алина кĕçĕнни. Вăл нихçан та пир кĕпе тăхăнмасть. Уяв тумĕ те ун пĕрре кăна мар.

Алина ашшĕ, Мĕкĕте пичче, пирĕн атте пек, колхозра ĕçлесшĕн çунмасть. Ĕçкунĕ шутне тултарать те кӳршĕ ял сене ĕçлеме тухса каять. Питĕ ăста çып вăл, тем тума та пĕлет. Анчах ял çыннисем килĕштермеççĕ ăна, сивлесе калаçаççĕ.

— Алли ылтăн ĕнтĕ, анчах, хăйне усă пулмасан, урлă выртана тăрăх çаварса хумасть.

— Лавĕ-лавĕпе тырă тиесе килеççĕ. Мĕн чухлĕ укçа пулĕ вĕсен. Çаплах çитмест, çаплах выçлăхланать.

— Ахальтен Пăт Мĕкĕти темен ĕнтĕ. Е тырă виçет, е укçа шутлать.

— Арăмĕ тата... Ăçтан тупăнма пĕлнĕ çӳпçипе хупăлчи.

— Мĕкĕте каччă чух пачах урăхла çынччĕ. Вăйăсенче ташлатчĕ, юрлатчĕ, хĕрсене хĕвелçаврăнăшпе, пĕремĕкпе хăналатчĕ. Халĕ унăн сăнĕ те улшăнчĕ. Пурин çине те шанмасăр, куç айĕн пăхса çӳрет.

— Улшăнăн çавăн пек арăмпа.

Çапла пуплешеççĕ çынсем ман çывăх тантăшăн ашшĕпе амăшĕ çинчен. Çак сăмахсем мана пĕрре те Алинăпа туслă пулма чармаççĕ. Вĕсем пĕр хăлхаран кĕреççĕ те теприччен тухса каяççĕ. Чăнннипе каласан, Мĕкĕте пичче мана

та килĕшсех каймасть. Чĕмсĕр этем вăл. Пичĕ-куçĕ ялан хавассăр, çиллес. Эпĕ пĕрре те вăл кулнине курман. Праски инке вара пачах усал çын пек туйăнмасть. Манпа вăл яланах ăшшăн, кăмăллăн калаçать. Тепĕр чух, эпир Алинăпа уроксене хатĕрленетпĕр пулсан, пуçран та пырса лăпкать. «Вĕренĕр, хĕрĕмсем, вĕренĕр, служащи пулатăр. Вĕсем, капturta ĕçлекенсем, пирĕн пек тислĕк çинче йăраланмаççĕ. Кашни уйăхра укçа илеççĕ, яка тăхăнаççĕ, тӳрĕ çӳреççĕ»,— тет вăл...

— Эсĕ халĕ те пуçтарăнман-çке,— сăмах хушрĕ Алина, çывăхах пырса.

Ман тантăшăм — чипер хĕрача. Шурă питлĕ, кăвак куçлă. Паян вăл пушшех илемлĕ. Сенкер пурçăн тутăрĕ ăна питĕ килĕшет.

Шурă икерчĕ чăмласа, пӳртрен Коля тухрĕ. Эпĕ каллех ун çине шеллесе пăхса илтĕм. Шăллăм мана ăнланмарĕ, чĕлхе кăларса витлерĕ те, картиш алăкне яри уçса, ĕнене хăваласа кайрĕ.

— Тумлан хăвăртрах,— васкатрĕ мана Алина.

— Мĕн тумланмалли, эпĕ хатĕр, кĕпене ĕнерех якатса хунă. Тăхăнатăп та, пулчĕ те.

Пӳрте чупса кĕрсе, эпĕ тĕкĕр умĕнче çавăрăнкалама тытăнатăп. Чӳречерен хĕвел шăратса пăхать, ун çутинче манăн хĕрлĕ чечеклĕ пурçăн кĕпе кăвар пек йăлкăшать.

— Инке,— илтĕнчĕ урам енчи чӳречерен паллана сасă.— Пӳртре-и эсĕ?

Ку Верук. Вăл шыв ăсма каять. Хулпуççи урлă хунă авăнчăк кĕвенти вĕçĕнче пушă витресем.

— Анне çук. Пахчана тухрĕ,— терĕм эпĕ.

— Калаçмалли пурччĕ. Ну, юрĕ, каярахпа килĕп,— Верук ман çине кăмăллăн тинкерсе пăхрĕ.— Пухха кайма пуçтарăнатăн-и? Ытла пумай ан çӳре. Юрать-и? Туй пуçланиччен эсĕ мана кирлĕ пулатăн,— çапла каларĕ те кӳлĕ енпелле çавăрăнса утрĕ. Эпĕ ун хыççăн пăхса юлтăм. Верук шурă кĕпепе, пуçне чечеклĕ сарă тутăр çыхнă. Çурăмĕ хыçĕнче вăрăм çивĕт явăнать. Хĕрĕн пĕвĕ çамрăк йывăç пек йăрăс, илемлĕ. Утти çăмăл, килĕшӳллĕ.

Акăшсем пек ярăнса,
Анчĕç шыва сар хĕрсем,—

пырса кĕреççĕ пуçа «Нарспи» поэмăри сăмахсем. Чăнах та, Верук Нарспирен пĕрре те кая мар. Хитре, ырă кăмăллă, ĕçчен. Хуçалăхра вăл тума пĕлмен ĕç пур-ши? Пир тĕртет, тĕрĕ тĕрлет, чĕнтĕр çыхать. Уй-хир ĕçĕсенче те никамран та юлмасть: лашапа çӳрет, çĕмел, капан тăвать.

Ялсенче ӗҫлӗхлӗ хӗрсене питӗ хакласҫӗ. Ахальтен мар Верук чи чаплӑ хӗрсенчен пӗри шутланать. Нарспи пекех. Анчах Нарспи телейне мул тӗнчи ҫапса хуҫнӑ. Верук вара паян чи телейлӗ хӗрсенчен пӗри. Каччи те лайӑх унӑн, Сетнер пекех. Ҫӳллӗ, маттур, ӗҫчен. Юратаҫҫӗ Верукпа Илля пӗрне-пӗри. Вӗсемшӗн нимӗнле Михетерпе Тӑхтаман та хӑрушӑ мар.

Ҫапла шухӑшларӑм эпӗ, аппа хыҫҫӑн ӑмсанса пӑхса. Эх, манӑн та Верук пек хитре пуласчӗ! Ҫук ҫав. Манӑн ҫӳҫ те кӗске, темшӗн ӳсмест. Алӑ-ура та, пӳ-си те ҫинҫешке.

Акӑ пӳрте Валери кӗчӗ. Вӑл майкӑпа, ҫара уран, сапаланнӑ ҫӳҫӗ ҫумне утӑ пӗрчи ҫыпҫӑннӑ. Кӗрсе тӑчӗ те ман ҫине каллех темле савӑк куҫпа тӗлӗннӗн пӑхса илчӗ.

— Асту, йӑмӑкӑм, асӑрханса ҫӳре унта, халӑх пуххинче. Вӑрласа кайма пултараҫҫӗ,— шӳтлесе илчӗ вӑл.

— Вӑрласан, упӑшки виҫӗ кунран ларса макӑрӗ,— терӗ эпир калаҫнине илтнӗ анне, уҫӑ алӑк урлӑ каҫса.— Пӗвӗ пур ӗнтӗ. Ӑсӗ-тӑнӗ вара... Ирӗк парсан, халӗ те пуканелле вылять пулӗ вӑл.

Эпӗ тутана тӑсрӑм. Эх, анне! Пичче умӗнче ҫапла каласа вӑтантарас марччӗ. Алина амӑшӗ хӗрӗпе вӗҫӗмсӗр мухтанать. Унӑн хӗрӗ чипер те, ӗҫчен те, ӑслӑ та... Эсӗ пур, ҫынсем ачусем ҫинчен ырӑ каласан та: «Темле ҫав. Халӗ лайӑх пек те... Ӳссен темле пулӗҫ»,— тетӗн ҫеҫ. Пуканелле те вылямастӑп, тахҫанах пӑрахнӑ.

— Каччӑсем пӑхаҫҫӗ-и-ха сана? Тен, чун юратни те пур? — шӳтлӗ калаҫӑва тӑсса анне илтесрен, хӑлхаран пӑшӑлтатса ыйтать Валери.

— Тем тума кирлӗ пуль...

Пичче хаваслӑн кулса ярать.

— Ну, каях, чуп,— ачашшӑн тӗртет вӑл мана ҫурӑмран.

— Валери, эсӗ тата? Пырас теместӗн-и ярмарка курма? — ыйтатӑп эпӗ, алӑк патӗнче чарӑнса.

Ҫак шухӑш паян иртенпех ман пуҫра ҫаврӑнать. Пырсан, мӗнле лайӑхчӗ. Пурте курӗччӗҫ ман пичче мӗнлине, пурте пӑхса савӑнччӑр ун ҫине. Епле чипер вӑл. Анне пекех, пысӑк кӑвак куҫлӑ. Кӗске кастарнӑ хуп-хура ҫӳҫӗ ҫӑра, кӑпӑш. Пӗвӗ-сийӗ тата. Шӑратса тунӑ тейӗн. Сарлака хулпуҫҫиллӗ, ҫиҫе пилӗклӗ. Эпӗ пичче ирсерен пӑт пуканне ҫӑмӑллӑн ҫӗкле-ҫӗкле выляшшине пӑхса тӑма юрататӑп. Мана вӑл пуринчен те вайлӑ, пуринчен те чипер, пуринчен те ӑслӑ пек туйӑнать. Кунсӑр пуҫне, Валери вӗреннӗ каччӑ. Малтан вӑл техникум пӗтерчӗ, кӑштах район центрӗнче ӗҫлерӗ те, заявлени парса, летчиксен шкулне вӗренме кайрӗ. Тахҫанах летчик пулма ӗмӗтленетчӗ Валери. Маттур

ман пичче! Пурнăçларĕ хăйĕн хаклă ĕмĕтне. Летчик тумĕ питĕ килĕшет ăна. Тăхăнсан, пушшех чиперленет, тата та çӳллĕрех, йăрăсрах курăнать...

Ярмарка! Шавлă, хаваслă халăх пуххи. Çав çутă уяв июнĕн иккĕмĕш çурринче, уй-хире тырă вырма тухас умĕн, килет. Çулталăкра пĕрре кăна пулать вăл. Районĕпе те виçĕ-тăватă ялта çеç. Чи вăйли, чи савăкки вырсарникун район центрĕнче иртет. Эх, ярмарка! Қам чунне хускатса савăнтарман пулĕ вăл. Ирхине тухатăн аслă çул çине — таврари мĕнпур ялсенчен район центрнелле çын куçать. Лаша кӳлнĕ урапасем кăлтăртатса чупаççĕ, велосипедсем вĕлтлетсе иртеççĕ. Ытларах çуран утакансем — ватти те, вĕтти те, хĕрсем, каччăсем. Қашнин хăйĕн шухăш-кăмăлĕ, хăйĕн тĕллевĕ пур. Яш-кĕрĕмпе хĕрупраç курса çӳреме, пĕр-пĕринпе паллашма, кулма-савăнма пыраççĕ; ача-пăча карусель çине ларса ярăнма, килтен парса янă вăтăр-хĕрĕх пуспа тутлă печени, пĕремĕк е тата мĕн те пулин илме ăнтăлать; çулланнă çынсем сутма-илме, таврари ялсенчен пынă тăван-хурăнташĕсемпе тĕл пулса калаçма ĕмĕтленсе утаççĕ.

Ярмаркăра хĕр пăхаççĕ, вăрлапи те пулкалать. Ара, июнь уйăхĕ шăп туйсем пуçланнă вăхăт-çке. Чăваш енче авалтанпах туйсене тырă вырма тухиччен туса ирттернĕ. Хĕр вăрласси вара... Ĕлĕк чипер хĕрсене чăннипех вăйпа тытса кайнă теççĕ. Халĕ пĕтнĕ çав тискер йăла. Çамрăксем, малтанах пĕр-пĕринпе килĕшсе, вăрланă ятне çеç тăваççĕ.

Ĕнтĕ эпир те Алинăпа уявалла çывхарсах пыратпăр. Қĕпер урлă каçатăн та, сулахай енче, айлăмра, шап-шурă халăх кĕшĕлтетет. Қупăс сасси, параппан тӳнклетни хăй патне савăнма-кулма йыхăрать. Йăмăх çитсă татăксенчен çĕлесе капăрлатнă икĕ карусель çавăрăнни аякранах курăнать. Çынсем хушшинче тĕрткеленсе çӳренĕ хыççăн эпир Алинăпа карусель патне пырса тăтăмăр. Сăрласа илемлетнĕ йывăç лашасем çине арçын ачасем утлана-утлана ларнă. Тăваттăн лармалли çунасем çинче ача-пăча, хĕрсем, каччăсем ярăнаççĕ. Шалта кулăшла маскăсем тăхăннă икĕ çын. Пĕри, шăмшакне темĕн тĕрлĕ те выляткаласа, хуткупăс шăрантарать. Тепри те унран юлмасть. Параппанне çапнă май вĕçĕмсĕр хуçкаланать, кулăшла такмаксем каласа, пухăннă çынсене хаваслантарать, култарать.

Эх-х тет, их-х тет,
Шăна качча тухать тет.
Пăван купăс калать тет.
Нăрă ташша çапать тет.

Халăх лăк-тулли, карусель çине вăр-вар ларма йывăр. Йĕри-тавра ача-пăча хĕвĕшет, хĕрсем, каччăсем кĕпĕрленсе тăраççĕ. Хĕрĕсем чăлт-шурă кĕпепе, хул урлă туртса çыхнă, аркисене йăмăх лентăсемпе эрешлесе илемлетнĕ сappunпа, пурçăн тутăрпа. Çапла пирĕн енчи чăваш хĕрĕсен уяв тумĕ. Питĕ юрататăп эпĕ яштака хурăн пек, шурă тумлă, çинçе пилĕклĕ хĕрсем çине пăхма. Каччисем те çумрах. Хĕрсен çывăхĕнче çаврăнкаласа çӳреççĕ, шӳт тăваççĕ, хĕвелçаврăнăшĕпе, майăрпа хăналаççĕ. Çар тумне тăхăннă çамрăксем те курăнкалаççĕ. Акă иккĕн çумранах иртсе кайрĕç. Пĕри, яштака, çаврака питлĕ-куçли, ман çине чăрр пăхрĕ.

— Чĕкеç,— аларан туртрĕ çав самантра Алина,— кил хăвăртрах, вырăн пушанчĕ.

— Чĕкеç? — тăпах чарăнчĕ хайхи каччă.— Тăхта-ха... Эсĕ Валерий Степанов йăмăкĕ мар-и?

Алина мана тата чĕнчĕ, анчах епле пăрăнса каятăн-ха юри калаçма пырса тăнă çынран.

— Çапла,— терĕм эпĕ,— Валери — ман пичче. Ăçтан пĕлетĕр эсир ăна?

— У-у, хĕр пулнă-çке эсĕ! — кăмăллăн йăлкăшрĕ палламан каччă.— Мана астумастăн-и? Эпĕ Уйкасран. Миша ятлă. Эпир Валерипе летчиксен шкулне кĕме комиссие пĕрле кайрăмăр. Анчах мана илмерĕç. Сирĕн патăрта та пулнă эпĕ. Эсĕ ун чух ак çакăн пек пĕчĕк хĕрача чупса çӳреттĕн. Икĕ çул хушшинче епле ӳссе кайнă. Чăн-чăн хĕр.

«Пиччепе иккĕшĕ пĕр шут тытнă тейĕн. Хĕр те хĕр теççĕ»,— шухăшлатăп эпĕ, каччă сăмахĕсене тăнласа. Çапах итлеме кăмăллă.

Ах, ача чух хăвăртрах ӳссе çитĕннисен шутне кĕрес килет-çке.

— Ытла та шавлă кунта, карусель çывăхĕнче. Тĕрткелеççĕ тата. Ирĕклĕрех çĕре тухар мар-и? — сĕнет мана хайхи каччă.

Ку мана килĕшсех каймасть. «Каччу-качку, тем çулăхрĕ ман çума. Питĕ кирлĕ пулĕ пачах палламан çынпа ярмарка тăрăх çӳреме»,— шухăшлатăп эпĕ, йĕри-тавра пăхкаласа. Алина ăçта-ши? Пĕр-пĕр паллакан хĕрачана курасчĕ хăть. Вара пăрăнса утма та сăлтавĕ пулĕччĕ.

Çынсем хушшипе хĕсĕнкелесе, эпир юханшыв хĕррине симĕс курăк çине тухатпăр. Çанталăкĕ епле лайăх. Ăшă, лăпкă. Уяр. Кăн-кăвак тӳпере кĕмĕл тĕслĕ кăтра пĕлĕт таткисем васкамасăр ярăнаççĕ. Хуллен шăнкăртатса юхакан шыв çинче хĕвел шевли йăлтăртататать. Юханшыв леш енче ретĕн лартнă йăмрасем, пуçĕсене усса, лăпкăн тĕлĕ-

реççĕ. Тата лерелле, картасем хыçĕнче, симĕс пахчасем тăсăлаççĕ.

— Мĕнле палласа илтĕм эпĕ сана? Қалас-и? — ыйтать каччă, манпа юнашар утса.— Ятран. Эпĕ шăп сан умăнтан иртнĕ чух, пĕр хĕрупраç сана Чĕкеç тесе чĕнчĕ. Чĕкеç — питĕ хитре, килĕшӳллĕ ят. Çапах хальхи çамрăксем хушшинче сайра тĕл пулать. Çавăнпа астуса юлнă пулас эпĕ сан ятна... Тата эсĕ Верук сăнлă. Аякран курсан, Верук пулĕ тесе шутларăм. Çывăхран пăхатăп та — çук, вăл мар. Урăх хĕр... Çап-çамрăк хĕр. Верук качча тухать терĕç пулас. Чăнах-и? — каччăн хура куçĕнче савăк çутă çӳнчĕ.

— Çапла, кĕçĕр туй пулать унăн,— пĕлтеретĕп эпĕ.

— Шкулта вĕреннĕ чух эпир Верукпа пĕр-пĕрин патне çырусем çӳрететтĕмĕр,— кулкаласа, сăмахне малалла тăсрĕ Миша.— Анчах вăл мана мар, урăххине суйларĕ. Пурнăçра мĕншĕн çавăн пек пулать-ши вăл э, Чĕкеç?

Темшĕн вăтантараççĕ мана çак тинкерсе пăхакан савăк хура куçсем. Эпĕ, пуçа чиксе, ума пăхса пыратăп. Унтан сăмах Валери çине куçрĕ. Пичче каима килнине пĕлсен, Миша татах хавасланчĕ.

— Апла вăл икĕ эрне килте пурăнать. Эпĕ ĕнер кăна çитрĕм-ха. Қурасчĕ Валерие. Қалаçмалли темĕн чухлех. Сирĕн пата пырас пулсан, хуса ямăн-и мана? — каллех шӳтлеме тытăнчĕ вăл.— Апла кĕçĕр Верук туйĕ пулать. Қурма пыратăп. Тарса пытанмăн-и манран? Туй хыççăн ăсатса ямăн-и? Кăшт та пулин. Укăлча хапхине çитиччен. Қаçсенче урама тухатăн-и? Çума ларас пулсан, ватă тесе, аяккалла тăрса утмăн-и?

Çапла ниме тăман, анчах темшĕн чуна хумхантаракан сăмахсене тăнласа, хăюсăррăн шӳтлекелесе, симĕс çыран хĕррипче эпĕ çаплах каччăпа юнашар уткаласа çӳрерĕм. Қĕтмен çĕртен пирĕн ума малтан Мишăпа курнă каччă васкаса пырса тăчĕ.

— Миша,— чĕнчĕ вăл, пăлханнине пытараймасăр,— калаçмалли пур.

— Чĕкеç, эпĕ халех.

Виçĕ-тăватă утăма пăрăнса, вĕсем хуллен тем çинчен пăшăлтатрĕç. Акă Миша каллех ман ума пырса тăчĕ. Эпĕ унăн сăнĕ тăруках улшăнса кайнинчен тĕлĕнтĕм. Пичĕ-куçĕнче савăк кулă çухалнă. Куç харшийĕсем такама çилленнĕ евĕр сиввĕн пĕрĕннĕ.

— Чĕкеç,— терĕ вăл, хытă хумханса,— усал хыпар, Чĕкеç... Варçă пуçланнă... Германи пирĕн çĕршыв çине тапăнса кĕнĕ... Қаçар, манăн каймалла. Сывă пул. Тепре куриччен,— каччăн вĕри аллисем ман алăсене хыттăн чă-

мăртарĕç. Вăл вăртах çавăрăнчĕ те çывăхрах кĕтсе тăракан юлташĕ патнелле васкаса утрĕ. Эпĕ вĕсем хыççăн пăхса юлтăм. Сасартăках хытă хумханса кайнипе пулас, çак хыпарăн хăрушă пĕлтерĕшĕ ман ăса тӳрех пырса кĕреймерĕ. Акă Миша, темĕн аса илнĕ евĕр, тăпах чарăнчĕ, çавăрăнса пăхрĕ. Акă вăл каллех ман умра тăрать.

— Чĕкеç!

Вăл мана куçран тинкерсе пăхрĕ, ун вĕри алли ман алла ачашшăн перĕнчĕ.

— Вырăна çитсен, çыру яратăп. Хирĕç çыратăн-и?

Эпĕ нимĕн те калаймарăм, килĕшсе, пуçа çеç сĕлтрĕм. Кĕтмен çĕртен каччă мана ыталаса илчĕ те хăй çумне çупăрларĕ. Ун вĕри тути ман тутана перĕнчĕ... Ай, мĕн чухлĕ çын йĕри-тавра! Вăтаннипе çĕр тĕпне анса каяттăм...

Сăмах калаймасăр, хускалмасăр, эпĕ ун хыççăн пăхса юлтăм. Ăшра темле ăнланмалла мар вĕри туйăм çавăрăнса пăтранма тытăнчĕ. Питĕм-куçăм хĕмленсе çунчĕ. Чĕре пĕррре хаваслăн тапăлтатса илчĕ, тепре тунсăхлăн ыратса пăчăртанчĕ.

Каярахпа тин пуçа пырса çапрĕ çав хăрушă хыпар. Чуна хăратса, сивĕтсе ячĕ.

— Вăрçă!!!

Усал тăвăл евĕр, вăл уява пуçтарăннă çынсем хушшине вирхĕнсе кĕчĕ. Ырă, çутă ĕмĕт-шухăша, хаваслă кăмăла самантрах аркатса тăкрĕ, пухха хăваласа салатрĕ. Тискер вăйĕпе юнаса, аслă çĕршыв тăрăх, ялсем, хуласем çийĕн чупса кайрĕ.

Вăрçă!!!

Çынсем хăвăрт саланма тытăнчĕç. Эпĕ те васкасах килелле чупрăм.

## III

Вăрçă... Хĕвел тухинченех пуçланнă иккен вăл. Эпир кунта канлĕ çывăрнă вăхăтра фашист бомбисем пирĕн хуласене, ялсене ишĕлтернĕ, нимĕç танкĕсем пирĕн хирсене, вăрмансене, тырра-пулла таптанă, эпир пĕр шухăшсăр савăнса кулнă чух пирĕн пограничниксем, пирĕн салтаксем, хаяр тăшманпа çапăçса, пуçĕсене хунă, нимĕç фашисчĕсем совет çĕрĕ çинче хуçаланнă, çунтарнă, асаплантарнă, вĕлернĕ.

Кун çинчен эпир каярахпа пĕлтĕмĕр. Халĕ эпĕ ансăр сукмакпа тӳрĕрен хирсем тăрăх, çырма-çатра урлă каçа-каçа, килелле васкарăм. Мĕн пуласси çинчен шухăшласа, хама хам лăплантарма тăрăшрăм. «Сĕмсĕр Гитлер! Апла

эсӗ чӑн-чӑн вӑрӑ-хурах пекех, пӗр систермесӗр, вӑрттӑн килсе тапӑнтӑн совет ҫӗршывне. Тӑхта, кӑтартӑпӑр сана пирӗнпе мӗнле ҫапӑҫмаллине. Совет ҫӗрне тытса илме ӗмӗтленекенсем пӗр эсӗ ҫеҫ мар пулнӑ. Япони самурайӗсем те, Финлянди капиталисчӗсем те килсе пӑхрӗҫ те хӑвӑрт тӑна кӗртрӗҫ вӗсене. Сана та хуса ярӑпӑр... Вӑрҫӑ, паллах, нумая пымӗ. Валерие, тен, илсе те каймӗҫ. Отпускра-ҫке вӑл. Миша та ӗнер ҫеҫ килтӗм терӗ»,— ҫакӑн евӗр шухӑшсем ҫавӑрӑнчӗҫ ман пуҫра, килелелле чупнӑ май.

Юлашкинчен эпӗ пӗтӗмпех лӑплантӑм. «Ни в воде мы не утонем, ни в огне мы не сгорим» текен юрра ӗнӗрлекелесе, киле ҫитрӗм.

Анне крыльца ҫинче пуҫне усса ларать. Вӑл ҫапла ӗҫсӗр алӑ тытса ларнине эпӗ халиччен те курман.

— Валери килтех-и? — ыйтрӑм эпӗ тӳрех.

— Военкомата кайрӗ.

— Ярмаркӑра пулман-и вӑл?

— Ҫук. Хирелле кайса ҫӳрем-ха тесе, килтен тухрӗ те нумай та иртмерӗ вӑхӑт, каялла ҫаврӑнса кӗчӗ.

— Вӑрҫӑ пуҫланнӑ, анне... Паян ирпе Германи пирӗн ҫӗршыв ҫине тапӑнса кӗнӗ. Эпӗ военкомата каятӑп,— терӗ.

Анне йывӑррӑн сывласа ячӗ. Тарӑн шухӑша кайса, пуҫне хуллен сулкаласа илчӗ.

— Каллех вӑрҫӑ. Ылханлӑ вӑрҫӑ,— пӑшӑлтатрӗ анне.

Ҫамрӑк чух асапланса йӗнине аса илчӗ пулас вӑл ҫак самантра. Аттене вӑрҫӑран таврӑнасса ултӑ ҫул кӗтнӗ вӑл. Пӗрлешсен, нумай та пурӑнайман вӗсем, ҫамрӑк упӑшкине тӗнче вӑрҫине илсе кайнӑ. Унтан граждан вӑрҫи пуҫланнӑ. Ултӑ ҫул... Калама ҫеҫ ҫӑмӑл. Мӗн тери пистерсе ҫитерне, епле тертлентернӗ пулӗ вӗсене вӑрҫӑ? Халӗ акӑ ывӑлне ҫав тискер вут-ҫулӑма ӑсатмалла. Атте темиҫе хут аманнӑ пулин те чиперех таврӑннӑ. Халӗ те сывлӑх начар тенине илтмен. Паллах, вӑрҫӑ вӑрҫах, унта вӗлерессӗ.

— Анне, эсӗ ан кулян. Вӑрҫӑ нумая пымасть,— терӗм эпӗ пачах та иккӗленмен сасӑпа.— Хӑвах шухӑшла: мӗн вӑл, Германи, пирӗн патшалӑхпа танлаштарсан? Крылов юптарӑвӗнчи Слона вӗрекен Моська ҫеҫ. Хӗрлӗ Ҫар пӗрре витӗмлӗрех пырса ҫапать те, кайса ларать Гитлер каялла хӑй вырӑнне.

— Тем пекехчӗ те,— анне каллех ассӑн сывласа илчӗ.— Анчах Гитлер та хӑй вӑйне пӗлмесӗр тапӑнас ҫук... Хырӑму выҫрӗ пулӗ. Кӗр, ҫи.

Пӳртре пӑчӑ. Сӗтел, саксем ҫинче сарӑ питлӗ кукӑльикерчӗ, ҫавра кӑпка кулачсем выртаҫҫӗ. Тутлӑ шӑршӑ сӑмсана кӑтӑклать. Эпӗ ҫиме лартӑм. Анне кӗчӗ те, куҫлӑхне

тăхăнса, стена çинчи географи картти патне пычĕ (атте ăна пире вĕренме тесе илсе çакнăччĕ).

Октябрьти революциччен çуралса ÿснĕ ялти хĕрарăмсем хушшинче пирĕн анне çеç вулама та, çырма та пĕлнĕ, вырăсла та калаçнă. Хăй мĕнле вĕренни çинчен анне çапла каласа панине астăватăп:

— Шутсăр шкула каяс килетчĕ манăн. Кĕнеке курсан, алăран ярас килместчĕ.

Анчах патша вăхăтĕнче чухăн хресчен хĕрачи вĕренесси çинчен ĕмĕтленме кăна пултарнă. Çапах та кукаçи шелленĕ ăна. Пĕчĕк хĕрĕ йĕре-йĕре тилмĕрнинс тÿсеймен.

— Каях, кай, вĕрен эппин,— тенĕ.

Шкулĕ пилĕк çухрăмри чиркÿллĕ ялта пулнă. Сакăр уйăх çÿренĕ анне çав шкула. Хваттерте пурăннă, çанталăк лайăх чух киле утнă.

— Ну, Урине, вулама вĕрентĕн-и? — ыйтнă пĕррехинче кукаçи хĕрĕнчен.

— Пĕлетĕп,— тенĕ лешĕ хаваслăн.

Ашшĕ мĕн шутпа ыйтнине пачах та тавçăрман вăл ун чух.

— Алă пусма та пĕлетĕн-и?

— Пĕлетĕп-çке.

— Юрать. Лайăх,— тенĕ кукаçи кăмăллăн.— Эсĕ ыйтнине эпĕ турăм. Халĕ мана итле. Пурхиле хăта, Çĕрпÿ хулинче пурăнать вăл, ача пăхма, кил-çуртра тĕрлĕ ăпăр-тапăр ĕç тума лăпкă, ĕçчен хĕрача кирлĕ тет. Эпир унпа сан пирки калаçса татăлтăмăр. Çитес эрнере каймалла. Кĕнеке, шкул тавраш çинчен малашне шухăшлама пăрах. Ахаль те çур çул ытла пĕр усăсăр çăпата-тумтир çĕтсе çÿрерĕн. Эсĕ чухăн хресчен хĕрачи. Çавна ан ман. Кĕнчеле арлама, тырă вырма хут пĕлни кирлĕ мар.

Мĕн тăвăн? Тек сăмах та, куççулĕ те пулăшман.

Пурхиле хăта текен пуян чăваш килĕнче вырăсла калаçнă, ачисем шкула çÿренĕ. Телее, çыннисем усал пулман. Пĕлÿ енне чун-чĕрипе туртăнакан ĕçчен хĕрача килĕшнĕ çав çемьене. Вĕсем ăна пултарнă таран вĕренме пулăшнă, вулама кĕнекесем панă. Виçĕ çул ача пăхса пурăннă анне çав килте. Унтах вырăсла калаçма вĕреннĕ.

Чăваш хĕрарăмĕн пурнăçĕ Октябрь революцийĕ хыççăн та çăмăл пулман. Анчах кулленхи йывăрлăх анне ăшĕнчи çутă хĕлхеме — вулас, пĕлес килнине — сÿнтерме пултарайман. Анне яланах, ĕмĕрĕ тăршшĕпех, хаçат, кĕнеке енне туртăнатчĕ. Степан Разин, Емельян Пугачев, декабристсен пăлхавĕсем, тĕрлĕ патшасем, вĕсен хушшинчи тексĕм, хаяр хирĕçÿ-харкашусем çинчен эпĕ чи малтан, шкула çÿреме

тытăнимчченех, анне каласа панинчен пĕлнĕ. Анне тĕнчери лару-тăрупа та интересленет, илемлĕ литература вулама юратать. Вунтăххăрмĕш ĕмĕрти паллă писательсемпе поэтсенчен ытларах Пушкина, Лермонтова килĕштерет. Вĕсен биографийĕсене те лайăх пĕлет. Кунсăр пуçне, пирĕн килте эпĕ ача чухнех Константин Иванов, Данилов-Чалтун, Краснов-Асли, Васанкка, Элькер тата ытти чăваш писателĕсемпе поэчĕсен произведенийĕсем те сахал марччĕ. Анне пирĕн шкулта вĕренмелли кĕнекесене те тыта-тыта вулать.

— Профессор пулас тетĕн пулĕ те-ха эсĕ,— тăрăхласа илетчĕ атте тепĕр чух.

Халĕ анне стена çумĕнче çакăнса тăракан географи картти çине куçлăх витĕр пăхса тăрать. Апла тăнларĕ вăл эпĕ каланине.

— Нимĕç çĕршывĕ пысăк мар. Анчах миçе патшалăха çăтса ячĕ вăл юлашки вăхăтра.

— Совет Союзне çĕнтереймест,— çирĕппĕн хирĕçлетĕп эпĕ.

Çав самантра пӳрте ял Совет секретарĕ Иван пичче кĕчĕ. Вăл Валери патне килнĕ.

— Военкоматран шăнкăртаттарчĕç. Хăвăртрах пыма каларĕç,— кĕскен пĕлтерчĕ вăл, малалла иртмесĕр.

— Хыпарне илтсенех тухса кайрĕ. Халиччен çитрĕ те пулĕ,— хуравларĕ анне.

Çакна илтсен, манăн çутă кăмăл ирĕксĕрех тèксĕмленме пуçларĕ. Паянах, вăрçă пуçланнă кунах, военкомата васкаса чĕнеççĕ пулсан...

— Анне,— йывăр шухăша сирсе яма тăрăшса, çавăнтах сăмах хушрăм эпĕ.— Кукăльсене кайса парас пулĕ. Туй килесси нумай юлмарĕ.

— Ах, ачам, шухăшламасăр ан калаç-ха,— сӳрĕккĕн каларĕ анне.— Мĕн туйĕ пултăр çак саманара? Паян-ыран пур çамрăк арçын вăрçа тухса каять. Туй шухăшĕ-и халĕ?.. Çапах леçсе парас пулать. Çур уйăхра та çисе ярас çук эпир çакăн чухлĕ апат-çимĕçе,— анне йывăррăн тăчĕ.— Ампартан пысăк карçинкка илсе кил-ха.

Туй пулмасть тени ман кăмăла пушшех салхулатрĕ. «Эх, Верук! — шухăшларăм эпĕ, аппана шеллесе.— Паян ирхине кăна мĕн тери телейлĕччĕ вăл. Çураçнă хыççăн юрласах çӳретчĕ. Чăнах та, Илля чипер каччă ĕнтĕ. Маттур пӳ-силлĕ, хура куçĕ икĕ çăлтăр пек илемлĕ. Пурте килĕштереççĕ Илляна ялта. Хĕрупраçсем — чиперешĕн, çаврăнăçуллă чĕлхи-çăварĕшĕн. Ваттисем — ĕçченшĕн. «Хăçан çывăрать-ши çак Илля? Ир тăратăн — вăл ура çинче, ĕçе васкать. Каç тĕттĕмленет — вăл картишĕнче тĕрмешет. Аш-

шĕсĕр тăлăх ӳсрĕ. Амăшĕ чирлĕ. Пĕччен ĕçлесе пӳрт лартрĕ»,— çапла мухтаса калаççĕ Верук каччи çинчен ялти çынсем. Ача-пăча Илляна ырă кăмăлĕшĕн килĕштерет. Верук каччи лашапа çӳреме юрататъ. Вăл кӳлнĕ урапапа иртсе кайнине курсан, ача-пăча ушкăнĕпех ун хыççăп чупать. «Илля пичче, лартса ярăнтар-ха». Нихăçан та кăмăла хуçмасть вăл. Укăлча хапхине çитиччен те пулин лартса каять.

Эх, вăрçă тухман пулсан, епле чаплă туй кĕрленĕ пулĕччĕ кĕçĕр пирĕн ялта! Çав туя мĕнпур ял ăмăртса хатĕрленчĕ. Хурăнташ-тăванĕсем икĕ енчен те йышлă. Авалхи кĕпе-тум, тенкĕ-шӳлкеме таврашне пулас туй арăмĕсем таврари ялсенчен пуçтарчĕç. Манăн та хĕрçумĕ пулса юрламаллаччĕ паян туйра. Верук çураççанах систерчĕ. Çак сĕнӳ мана калама çук савăнтарчĕ. Савăнмасăр, чăн-чăн туйра аппа тантăшĕсемпе, çитĕннĕ хĕрсемпе пĕрле тăрса юрламалла-çке.

Каякан хĕртен кĕтесри шăпăр та тарса пытаннă тенĕ ваттисем. Çапла, качча каякан хĕре авалтанах нумай кирлĕ пулнă. Пĕр арча пир-авăр, тĕрлĕ кĕпе-тумтир. Çемьене кĕпейĕм туса тумлантарасси сĕм-авалтан хĕрарăмăн йывăр тивĕçĕ пулнă-çке. Çемьене кăна-и? Çитĕннĕ хĕрсене пама мĕн чухлĕ япала хатĕрлемелле пулнă. Алă вĕççĕн çавăн чухлĕ япала туса çитер-ха. Пир-авăр ĕçĕ кăткăс, йывăр. Кантăр акса кĕпе тăхăничченн ăна хĕрĕх хут алă витĕр кăлармалла тенĕ чăвашсем. Çавăнпа ĕнтĕ çемьере хĕрарăм нихăçан та канăç курман. Вăл ырми-канми тĕрмешнĕ,— хĕллехи вăрăм каçсенче çĕрĕ-çĕрĕпе кĕнчеле арланă, çурхи çутă кунсенче пир вырăнĕнчен тухмасăр, пуçа çĕклемесĕр тĕртнĕ, çулла, хирти ĕçсем пуçланиччен, çĕленĕ, тĕрленĕ, капăрлатнă. Хĕрачасене те çичĕ-сакăр çултах кĕнчеле арлама лартнă. Апла пулин те пурне те тума алă çитереймен. Çавăнпа ĕнтĕ, хĕре çураççан, ăна пулăшма тантăшĕсем пынă. Кашниех мĕн те пулин туса панă. Çĕленĕ, тĕрленĕ, чĕнтĕр çыхнă. Унтан туйра юрă юрласа, каччă килне ăсатнă.

Хĕрçум юрри çăмăл, хаваслă. Çав юрăра каякан хĕре мухтаççĕ, ăна ырă пурнăç, телей сунаççĕ, пулас упăшкаран хаваслăн тăрăхласа кулаççĕ. Илля хисеплĕ, ятлă каччă пулин те, эпир авалхи йăлана пăсас темерĕмĕр. Халĕ те астăватăп эпĕ юррăн хăшпĕр сăввисене.

Ула ēне пăрушши<br>Уçăм çисе кӳпĕннĕ.<br>Пирĕн йысна пуласси<br>Пăтă çисе кӳпĕннĕ.<br>Пирĕн аппа пит хитре,<br>Пичĕ писнĕ çырла пек,

Пĕвĕ çамрăк çăка пек,
Мĕнле пулма пĕлнĕ-ши?

Хаваслăн, янравлăн иртеççĕ чăваш ялĕсенче туйсем. Çуллахи каçсенче ун шавĕ аякранах илтĕнет, пĕрле савăнма-кулма чĕнет. Чаплă туя курма таврари ялсенчен те темĕн чухлĕ халăх пуçтарăнать. Чăнах та, туйра курмалли, итлесе савăнмалли пайтах. Купăсĕ янăрать, параппанĕ тӳнклетет, авалхи тум тăхăннă, тенкĕсем çакнă туй арăмĕсем юрлаççĕ, ташлаççĕ. Кашни туйăн хăйĕн кĕвви. Нумай пĕлетĕн вĕсен юрри-сăввисене итлесе. Çамрăк кĕрĕвĕн кăмăлĕ ырри-усаллине те, пулас кине каччин тăванĕсем килĕштерни-килĕштерменнине те, çĕнĕ çынна хунямăшĕ хисеплесси-хисеплемессине те. Туй каччисен шавĕ тата! Вĕсен юрри-ташшине, тĕрлĕ сăвă, такмак каласа ташланине итлеме мĕне тăрать. Кам чăтса ларĕ çавăн пек чух туй курма каймасăр? Пурте утаççĕ. Çамрăксем кăна мар, ваттисем те. Ахальтен мар туй тесен, тукмак та йăваннă тенĕ.

Тӳнкки-тӳнкки параппанĕ,
Çапмасăрах тӳнклетет.
Эпир туя тухсассăн,
Чĕнмесĕрех çын килет.

Кайран та темччен асăнаççĕ пысăк туйсенче курни-илтнине, вĕсен юрри-кĕввине...

Халĕ хаваслă ĕмĕт самантрах ишĕлчĕ. Туй пулмасть. Анне тĕрĕс аларĕ. Çак ылханлă хура кун кам ташласа юрлама хăйĕ? Выляса кулма камăн кăмăлĕ çĕкленĕ? «Туй курма пыратăп»,— аса илтĕм эпĕ Миша каланине. Вăл сывпуллашнине, ыталаса чуптунине аса илтĕм те, каллех пит-куç хĕмленсе пĕçерчĕ. Ăçта-ши вăл халĕ? Мĕн тăвать-ши? Пичче пекех военкоматра-ши? Е килĕнче çула кайма хатĕрленет-ши?

Çапла шухăшлакаласа, тулли карçинккана йăтрăм та Веруксен енпелле утрăм. Эпир юнашарах пурăнатпăр.

Калитке алăкне уçса, картишне кĕтĕм. Ăна тап-таса шăлса тасатнă. Туй халăхне кĕтсе илме, хăналама тесе сĕтелсем, тенкелсем лартса тухнăччĕ. Халĕ пуш-пушах. Хуçăк уралла пукан çеç йăваланса выртать.

Верук крыльца пусми çинче ларать. Йӳле янă шурă пир кĕпепе, çара пуçăн, çара уран, çӳçĕ арпашнă, çивĕт вĕçĕ çурăмĕ çийĕн сапаланнă. Эпĕ кĕрсен, Верук пуçне çĕклерĕ. Аппа куçĕсем шывланчĕç. Вăл хуллен пăшăклатса илчĕ те йăпăртатса аннă куççульне алă тупанĕпе шăлса типĕтрĕ.

— Мĕнле хăрушă хыпар килсе çапрĕ, Чĕкеç! Мĕн тери усал кун!

Пӳртрен Верук амӑшӗ, Мархва кинеми, йываррӑн таплаттарса тухрӗ. Кӗрнеклӗ хӗрарӑм Мархва кинеми. Çулӗ чылаях пулин те, çирӗп-ха вӑл, сывлӑхлӑ. Колхоз ӗçӗнчен халӗ те юлмасть, маттур, вӑрт-варт. Çамрӑк чух питӗ вӑйлӑ пулнӑ, темле йывӑр ӗçре те арçынсенчен юлман, тет, вӑл. Вӑйӑ-кулӑра каччӑсемпе кӗрешме юратнӑ теççӗ ӑна. Кинеми пилӗк ача ӳстерсе, икӗ ывӑлне авлантарчӗ, икӗ хӗрне качча пачӗ. Верук кӗçӗнни.

Мархва кинеми эпӗ илсе килнӗ карçинккана çӗклерӗ те, «хӑçан çисе ярас ӗнтӗ кӑна» текелесе, каялла кӗме тӑчӗ, анчах чарӑнчӗ, çаплах пуçне усса ларакан хӗрӗ çине кӑмӑлсӑррӑн пӑхса илчӗ.

— Айван ача пек вӗçӗмсӗр нӗшӗклесе ан лар-ха,— терӗ вӑл çиллессӗн.— Анкартине тухса ӗçлесчӗ алӑ усса ларичченн. Çӗрулми ани кӗçех çум айне пулать. Колхозра паяныран утӑ çулма тухаççӗ. Хӑçан пуçтарас тетӗн килти ӗçе? Арӑм ятне илтме ӗлкӗрейменшӗн турра тав ту... Аçу епле асап курнине мантӑн-и? — хӑй тӗллӗн тата та темӗн мӑкӑртатса, Мархва кинеми çенӗк алӑкӗ хыçӗнче çухалчӗ.

Верук ашшӗ, Лявантн мучи, пирӗн аттен тӑван пиччӗшӗ. Вӑл пин те тӑхӑрçӗр вунтӑваттӑмӗш çулта пуçланнӑ империализм вӑрçинчен йывӑр аманса таврӑннӑ. Кӑвакарнӑ шӗвӗр сухаллӑ, типшӗм пит-куçлӑ мучи, кукӑр туйи çине тӗрӗнсе, йывӑç урипе таклаттарса çӳренине эпӗ тӗлӗкри пек çеç астӑватӑп.

— Тӗрӗс калать анне. Йӗрсе ларнипе хуйха-суйха пуларас çук,— терӗ Верук. Ура çине тӑрса, вӑл çинçе пилӗкне шерепеллӗ пиçиххипе туртса çыхрӗ, шурӑ тутӑрне пуçӗ çине уртса ячӗ.

— Атя, Чӗкеç, пахчана тухар. Кунта хӗвел питӗнче шӑрӑх.

Эпир улмуççи айне çемçе курӑк çине лартӑмӑр. Çанталӑкӗ уйччерхи пекех ӑшӑ та лӑпкӑ. Кӑн-кӑвак тӳпере чӗнтӗр евӗр çӳхе кӗмӗл пӗлӗт таткисем курӑнаççӗ. Сывлӑшра чӗкеççем хаваслӑн çуйхашса вӗçеççӗ. Шурӑ хурӑн симӗс пуçне усӑ, шухӑша кайнӑн туйӑнать. Карта çумӗнче ӳсекен лапсӑркка шӑлан тӗми хӗрлӗ чечекпе витӗннӗ, аякранах куçа илӗртет. Ун çийӗн ула çурӑмлӑ пысӑк тӗкӗлтура хулӑн сасӑпа хаваслӑн нӑрлатса вӗçет.

Ах, çутçанталӑк! Темле асамлӑ ырӑ хӑват пур çав унра. Сисмесӗрех вӑл хуйхӑ-суйха йӑвашлатать, вӑркакан ӑшчике лӑплантарать. Йӗри-тавра пӑхса илетӗн те çӗршывра хаяр вӑрçӑ пырать тенине ӗненес те килмест. Верук та çавнах туять пулас. Унӑн сӳннӗ куçӗ ерипен чӗрӗлет, çамрӑк

пичĕ, хĕвеле хирĕç уçăлакан хитре чечек пек, чиперленсе çуталать.

Пер вăхăт эпир чĕнместпĕр. Акă аппа куçса ларчĕ те, аллине хулпуççи çине хурса, мана куçран сăнаса пăхрĕ.

— Лайăх эсĕ килни, Чĕкеç,— терĕ вăл çурма сасăпа.— Ман санпа каласмалли пур... Итле-ха,— аппа шăпланчĕ, каллех ман çине тинкерсе пăхрĕ. —Вăрттăн сăмах шанса калама юрать-и сана, Чĕкеç? Ыранччен никама та каламăн-и?

— Кирлĕ пулсан, ĕмĕрне те, виличчен те шăл шурри кăтартмастăп,— хĕрӳллĕн тупа турăм эпĕ.

— Пĕр ĕç пур манăн сана валли,— терĕ Верук хуллен. Çывăхра никам та çук пулин те, вăл каллех йĕри-тавра асăрхануллăн пăхса илчĕ.— Чĕкеç, эпир Илляпа... Э-э... Эпир Илляпа пурпĕрех пĕрлешме шут тытрăмăр. Вăрçă пулсан та. Анчах анне яхăнне те ямасть. Каларăм та — ахăрашса кайрĕ. «Асу çук пулсан, каях. Анчах манран пĕр япала та ан ыйт»,— терĕ те арчана питĕрсе илчĕ.—Верук ассăн сывласа ячĕ.— Аннене ăнланатăп эпĕ. Вăл хăй салтак арăмĕ пулнă... Чăлах салтак арăмĕ... Мĕн чухлĕ терт-ленне пулĕ пире, пилĕк ачана, ӳстерсе ура çине тăратиччен. Атте ĕçлеймен. Ана хăйне пăхмалла пулнă. Вĕçĕмсĕр ӳсĕретчĕ, ури ыратнипе тепĕр чух çĕрĕ-çĕрĕпе çывăраймасăр асапланатчĕ,— Верук салхуллă куçĕпе инçетелле тинкерчĕ.

— Вăрçă вăрçах ĕнтĕ... Тем пулсан та, пурпĕрех каятăп Илляна. Юрататăп эпĕ ăна. Вăл та маншăн çунать. Эрне те пулин пĕрле пурăнса курар хăть. Кайран вара мĕн чухлĕ кĕтмелле, çавăн чухлĕ кĕтетĕп. Сан аннӳ пек. Темле хаяр вăрçă пулсан та, пурне те вĕлерейместĕ. Тен, Илля та чипе-рех таврăнĕ.

— Эсĕ мана темле ĕç хушасшăнччĕ,— астутартăм эпĕ, аппа тăруках чĕнменнине кура.

— Анне кăмăлне пĕлетĕн эсĕ,— тăсрĕ сăмахне Верук.— Усал çын мар вăл. Анчах хăйĕнчен иртнине юратмасть. Çемьере пурин те ăна тăнламалла, пурте вăл шутланă пек пулмалла. Халĕ ăна тем тесен те ӳкĕте кĕртес çук. Ăнланмасть вăл ман туйăма. Уншăн юрату нимĕн те мар... Салтак арăмĕ пулсан, хăйĕн йывăр шăпи мана пырса тивесрен шикленет пулас,— Верук ĕнси çине шуса аннă тутăрне юсаса çыхрĕ.— Вăл килĕшес çуккине эпĕ малтанах чухларăм, çавăнпа чи кирлĕ япаласене арчаран илсе пытартăм. Анчах çав тĕркепе вĕсем мана килтен кăларса ярас çук. Инке те, пичче те анне майлă. Пурте сыхлаççĕ. Пулăш мана. Тĕттĕм пулсан, пахчана тух та пирĕн чăлан патне пыр... Чӳречи пĕчĕк. Япаласене пĕререн-пĕререн паратăп.

Эсӗ вӗсене пуҫтарса ҫых, вара ак ҫакӑнта хӑмла хушшине, килсе хур. Эпӗ систеретӗп сана, картишне тухса юрӑ юрлатӑп... ӑнлантӑн-и? Асту, асӑрханулла пул.

«Авӑ юрату мӗнле вӑл! Уншӑн вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗ те, пулас уйрӑлу та нимӗн те мар иккен. Маттур Верук, тӑванӗсем хирӗҫ тӑнине те пӑхмасть, тӑлӑх салтак арӑмӗ пулса юласран та хӑрамасть,— шухӑшларӑм эпӗ, аппа ҫапла ҫирӗп шут тытнинчен тӗлӗнсе.— Апла кӗҫӗр пирӗн ялта хӗр вӑрлаҫҫӗ. Халлӗхе кун ҫинчен пӗр эпӗ ҫеҫ пӗлетӗп. Верук мана ҫеҫ шанса каларӗ. Пӗр мана ҫеҫ...» Юратнӑ аппан чи хаклӑ шанчӑкне пурнӑҫлама тивӗҫлӗ пулнипе ман чуна хӑпартлантарсах ячӗ.

— Ну, Чӗкеҫ, каях ӗнтӗ. Кӗҫех хӗвел анать,— терӗ Верук.— Аннӳ кӗтет пулӗ. Тен, Валери те военкоматран таврӑнчӗ. Паян-ыран каять ӗнтӗ. Мӑнтарӑн инки! Малтан Кӗркури пичче вӑрҫӑран таврӑнасса кӗтсе темиҫе ҫул чӗрине ҫунтарса пурӑннӑ. Халӗ акӑ аслӑ ывӑлӗ ӳссе ҫитӗн пулчӗ кӑна, ӑна вилӗме хирӗҫ ӑсатса ямалла.

Ялкӑшса ҫунакан ҫулӑм ҫине сивӗ шыв сапса сӳнтернӗ евӗр, манӑн тӑруках хавхаланнӑ кӑмӑла ҫак сӑмахсем самантрах пусарчӗҫ. Эпӗ тӑтӑм, пахча витӗр, симӗс йӑрансем урлӑ сике-сике, киле васкарӑм. «Нивушлӗ Валерие халех илсе каяҫҫӗ?» — ҫаплах иккӗленсе шухӑшларӑм эпӗ. Пӳрт алӑкне уҫса кӗтӗм, пӑхрӑм та сӑмахсӑрах ӑнлантӑм.

Валери, чӑнах та, килте. Чӳрече умӗнче картишнелле пӑхса тӑрать. Аттепе анне сак ҫинче лараҫҫӗ. Пуҫӗсене уснӑ. Шӑпӑрт. Чуна хытарса, эпӗ Валери патне пытӑм.

— Ну, мӗн? Мӗн каларӗҫ военкоматра?

— Ыран каймалла,— терӗ пичче кӗскен. Анне, ахлатса ярса, тӗпелелле утрӗ.

— Мӗнле шутлатӑн, Валери? Нумая пырӗ-ши ку вӑрҫӑ? — ыйтрӗ атте вӑрахран, йывӑр шӑплӑха пӑсса.

— Пӗлместӗп, атте,— пуҫне пӑркаларӗ пичче.— Пире летчиксен шкулӗнче вӑрҫӑ пулмасть, Германи Совет ҫӗршывӗпе мирлӗ пурнасшӑн тесе ӗнентеретчӗҫ. Паян военкоматра пӗлтерчӗҫ: халӗ талккӑшпех, ҫурҫӗртен кӑнтӑра ҫитичченех, вӑрҫӑ пырать.

Ассӑн сывла-сывла, анне чуста хучӗ. Туй валли хатӗрленӗ апат-ҫимӗҫ темӗн чухлӗ пулсан та, пиччене ӑсатма вӑл пӗтӗмпех ҫӗнӗрен пӗҫерме шут тытрӗ. Эпӗ аннене пулӑшрӑм. Ӗҫ пуҫтарӑниччен вӑхӑт чылай иртрӗ...

Чӗрене йывӑр шухӑш ҫунтарчӗ пулин те, эпӗ Верук каланине асрах тытрӑм. Картишне туха-туха итлерӗм, урам алӑкне уҫа-уҫа пӑхрӑм. Ҫав каҫ ялта купӑс сасси те, ҫамрӑксем юрлани-ташлани те илтӗнмерӗ.

Юлашкинчен каç тěттěмěнче аппан уçă сасси янраса кайрě.

Сар çăка пек пěвěме
Саншăн савса ÿстертěм...

— Верук йěрет,— терě анне, чÿрече патне пырса.— Мăнтарăн хěрě. Чěри çунса тухать пулě ĕнтě унăн та...

Эпě чăлана шăвăнса кěтěм, аннен хура халатне тăхăнтăм, пуçа хура тутăр çыхрăм та пахчана шăппăн тухрăм. Йěри-тавра пăхса илтěм — никам та курăнмасть. Тÿпере кăна сайра çăлтăрсем хăюсăррăн йăлкăшаççě. Çулса пăрахнă хытхура çийěн çара урана ыраттара-ыраттара Веруксен енне каçрăм. Вěлтренě урана вěтелет. Кăнтăрла курăнмасть, халě юри мана тарăхтарма шăтса ларнă тейěн.

— Верук! — хуллен чěнтěм эпě пěчěк чÿречерен.

— Чěкеç! Эсě-и? Акă ме... тыт... хăвăртрах...

Аппа хушнă пекех турăм. Никам та сисмерě, никам та курмарě...

Тепěр кунне Валерие ăсатрăмăр. Çара каякан çынна пирěн енчи чăвашсем укăлча хапхинчен уя тухсах ăсатса яраççě. Сěм-авалтан килнě йăлах пулас вăл. Ĕнтě эпир те ял вěçнелле утрăмăр. Темěн чухлě халăх пуçтарăннă. Пичче пуринпе те алă тытса сывпуллашрě.

— Ну, Валери, ачам, лайăх кай. Гитлера çěнтерсе, чипер çаврăнса килмелле пултăр,— теççě пурте. Хěрарăмсем шывланнă куçěсене тутăр вěçěпе шăла-шăла илеççě. Арçынсем те салхуллă.

Акă Валери аттепе юнашар тăрантас çине улăхса ларчě. Верук пиччěшě Пурхиле ларкăч çине вырнаçрě. «Миша та çула тухрě пулě. Тен, иртсе кайнă чух пирěн ял çине çаврăнса пăхрě»,— пырса кěчě пуçа шухăш.

Хыçран такам тěртсе янă пек, эпě тăрантас патне ыткăнтăм.

— Атте! Валери! Эпě те... Эпě те пыратăп...

Пичче аллине ман хулпуççи çине хучě.

— Анне çине пăх-ха,— пăшăлтатрě вăл мана хăлхаран.— Пěччен хăварма юрать-и ăна халě. Эсě асли вěт...

Эпě çаврăнса пăхрăм. Хыçра шап-шурă халăх тăрать. Хěрарăмсенчен нумайăшě сасăпах ěсěклет. Вěсем хушшинче анне тăрать. Ун куçěнче пěр куççулě те çук. Кěл пек шурса кăвакарнă пичě кăна темле асаплăн турткалана-турткалана илет. Анне таврара мěн пулнине те, çумра тăракан хěрарăмсем мěн каланине те илтмест пулас. Тěпсěр хуйхăпа тулнă куçне пичче çинчен илеймест... Юратнă ывăл-

не ĕмĕрлĕхех астуса юлас тенĕн, пĕр ун çине кăна тăранаймп куçпа пăхать.

Акă Валери, ялйыш енне çаврăнса, юлашки хут пуçне тайрĕ. Тăрантас вырăнтан хускалчĕ те тусанлă çулпа чуптарчĕ. Уласа йĕрсе, Коля шăллăм ун хыççăн ыткăнчĕ. Анне, тем калас пек, аллисене малалла тăсрĕ те пĕр самант çаплах хытса тăчĕ. Çав асаплăн туртăна-туртăна илекен хуйхăллă пит-куçа аса илсен, манăн халĕ те чун ыратать.

Пирĕн пата Иришăна çĕкленĕ Верук пырса тăчĕ. Ача мăнтăркка аллисене анне енне тăсрĕ те, мăйĕнчен ыталаса илсе, ун çумне йăпшăнчĕ. Пĕчĕк хĕрне хăй çумне çупăрласан тин анне куçĕнчен куççулĕ шăпăртатса юхса анчĕ. Мĕнпур кĕлеткипе чĕтренсе, асаплăн йынăша-йынăша йĕме тытăнчĕ.

— Макăр, кинĕм, макăр! — куççульне шăла-шăла çывхарчĕ пирĕн пата Мархва кинеми.— Макăрсан ăшчике çăмăлтарах,— хăй вара, килĕнчен вăрттăн тухса тарнă хĕрне хулпуççийĕпе çиллессĕн сирсе, аннепе юнашар пырса тăчĕ.

## IV

Вăрçа каякансенчен пирĕн Валери ялта пĕрремĕш пулчĕ. Ун хыççăн вара... Кашни кун халăх укăлча хапхине пуçтарăнать, йынăшса-йĕрсе, вĕри куççулĕ юхтарса, кама та пулин юнлă вăрçа ăсатать. Ялсем-хирсем çийĕн салтак юрри хурлăхлăн янăрать.

Аçтан тухрĕ çавраçил,
Ут купине салатма?
Аçтан тухрĕ ку вăрçă,
Пирĕн пурнăçа салатма?

Шур чăланти шур сехечĕн
Çапма вăхăт çитрĕ пуль.
Сывă пулăр, тăвансем,
Кайма вăхăт çитрĕ пуль.

Вăрçă нумая пымасть тенĕ шанчăк ĕнтĕ пĕтĕмпех путланчĕ. Кĕске вăхăтрах тăшман пирĕн çĕршывăн чылай пайне тытса илчĕ. Хĕрлĕ Çар, хула хыççăн хула хăварса, каялла чакрĕ. Фашистăн юнлă алли Мускав еннелле кармашрĕ.

Кĕçех фронтран хăрушă хыпарлă çырусем килме тытăнчĕç. «Хура хут» теççĕ вĕсене халăх хушшинче. Унтан аманса таврăннисем, алăсăр, урасăр е тата мĕнле те пулин чăлахланса юлнисем курăнкалама пуçларĕç. Шанса, хăраса, çынсем фронтран виçĕ кĕтеслĕ çырусем кĕтеççĕ. Çапла

хуйхă-суйхăпа чĕрисене çунтарса, хăшпер килсенче йăваланса макăрса, халăх ыраш вырма тухрĕ.

Пĕрре ял хыçĕнчи хирте эпир аннепе çул хĕрринчех тăрмашатпăр.

— Почтальон килет,— терĕм эпĕ, пуçа çĕклесе.

Анне пирĕн енне утакан пысăк сăран сумка çакнă хĕрарăм çине пăлханса пăхрĕ.

— Ну, ташлăр! — терĕ лешĕ, аякранах кулкаласа.— Çыру сире. Валерирен,— вăл сумкине уçрĕ те виçĕ кĕтеслĕ çыру кăларчĕ.

Анне пичĕ-куçĕ хаваслăн çуталчĕ, вăл ĕçре хуралса хытнă аллине саппун аркийĕпе васкаса шăлчĕ те çырăва илчĕ.

— Килчĕ-ха апла... Юрать. Лайăх. Тавтапуç сана, кинĕм, ырă хыпаршăн... Çырсах тăрать-ха... Сывах,— терĕ вăл, чĕтрекен аллипе çырăва уçса.— Куçлăхсăр нимĕн те курмастăп çав. Чĕкеç, ме-ха, вула,— хыпкаланчĕ вăл.

Пичче çырăвĕ яланхи пекех вăрăм мар. «Чиперех, сывах. Çапăçатпăр»,— тесе çырать. Килти, ялти хыпарсене пĕлтерме, ялйыша салам калама ыйтать.

— Çакăн пек лайăх хыпар илтсен, хамăн та ăшчик лăштах каять,— терĕ почтальон.— Халĕ акă Тимĕрç Тимахви патне «хура хут» кĕрсе парас пулать. Чуна мĕнле хытарса кĕрес?

— Эй, турă! — аллине шарт çапрĕ анне.— Ванька вилнĕ тесе хут килчĕ-и? Эх, мăнтарăн ачи!

Тырă выракан хĕрарăмсем, çурлисене пăрахса, пĕрин хыççăн тепри пирĕн пата пырса тăчĕç. Почтальон хăшнепĕрне çыру пачĕ, хаçат-журнал кăлара-кăлара тыттарчĕ.

— Ма чĕнместĕн, кин? Пире каллех нимĕн те çук-и? — ыйтрĕ Сантăр пичче арăмĕ, чуна ыраттаракан тунсăхлă куçне почтальон çине тĕллесе.

— Халлĕхе çук-ха, инке. Килет пулĕ те-ха,— терĕ лешĕ, хĕрарăма хирĕç пăхаймасăр.

Сантăр арăмĕ нимĕн те каламарĕ. Пуçне усрĕ те, хăмăл çийĕн урине йывăррăн çĕклесе, каялла çаврăнса утрĕ. Çынсем ун хыççăн шеллесе пăхса юлчĕç. Икĕ ывăл Сантăрсен çарта. Вăрçă пуçланиччен иккĕшĕ те чикĕ çывăхĕнче пулнă. Иккĕшĕнчен те пĕр хыпар та çук...

Эпĕ те почтальона курмассерен ун çине вăрттăн шанчăкпа пăхатăп. Эпĕ те çыру кĕтетĕп Мишăран. Вырăна çитсенех çырса яратăп тесеччĕ. Юри шўт турĕ пулĕ çав. Чăнах та, кам вара эпĕ уншăн? Ярмаркăра ăнсăртран тĕл пулнă хĕрача çеç. Верука юратнă вăл. Хăех кларĕ-çке, Верук сăнлă эсĕ терĕ. Çавăнпа манпа калаçса-кулса кăш-

тах чунне йăпатас терĕ пуль çав. Çапла шухăшласа илтĕм эпĕ. Вара тек çыру та кĕтместĕп, аса та илместĕп тесе хама хам сăмах патăм. Эх, айван хĕрача!.. Мишăпа та инкек-синкек пулма пултарасси темшĕн пырса кĕмен çавăн чух ман пуçа.

Анчах ăнсăртран çуралнă ачаш туйăм путланасшăн пулмарĕ...

Çав çул çанталăк шăрăх тăчĕ. Ыраш вырса пĕтереймен, çурхи тырăсем пулса çитрĕç. Сĕлĕ шурса кайрĕ, пăрçа çулма тухмалла. Ман атте, бригадир, шалт антраса çитрĕ, начарланса, хуралса ларчĕ. Ĕçĕ мăй таран, ĕçлекенсем кунран-кун сахалланса пыраççĕ. Лашасем çитмеççĕ.

— Капла асапланиччен, луччĕ фронта каятăп,— терĕ атте пĕррехинче.— Унта вилсен те çĕршывшăн пуçне хунă тейĕç, ырă ятпа асăнĕç. Халĕ вара... Тьфу! Йĕреççĕ, вăрçаççĕ, ылханаççĕ. Хамшăн тăрăшатăп-и эпĕ? Хире юлать вĕт тырă-пулă. Çавна епле ăнланмаççĕ-ха хăшпĕр хĕрарăмсем? — анне айăплă пек, атте ун çине çиллессĕн пăхса илчĕ.

— Калать пуль çав ăшчикĕ тăвăннă самантра,—асăрханса, çемçен сăмах хушрĕ вăл.— Эсĕ ан çиллен ун пеккишĕн. Шухăшла-ха, çăмăл-и пĕччен юлнă темиçе ачаллă хĕрарăма çакăн пек пурнăçа тӳсме? Пĕрре самани кунран-кун йывăрланса пырать, тепре вăрçăри çывăх çынсемшĕн кунĕн-çĕрĕн ăшчикĕ çунать. Миçе çемьене усал хыпар килсе çапрĕ.

— Ана эпĕ хам та лайăх пĕлетĕп. Чунсăр мар,— çаплах вĕчĕрхенчĕ атте.— Йывăр тесе, тен, ĕçе те тухма кирлĕ мар? Кунĕн-çĕрĕн уласа выртас. Тырру-пуллу пĕттĕр, çĕртĕр, юр айне пултăр. Çапла-и?

Анне ассăн сывласа ячĕ.

— Хĕрарăмсем ирхине ĕçе тухнине куратăп та, чун ыратать,— тăсрĕ вăл хăйĕн сăмахне.— Пĕр аллипе ачине йăтнă, тепринче çăкăр-тăвар. Кĕпе аркинчен иккĕн-виççĕн çакăннă, çывăрса тăранаймансkерсем йĕре-йĕре чупаççĕ. Ӳпкелемелле-и çакăн пек ача амăшне хĕвел тухиччен ана çине çитейменшĕн?

— Тем пулсан та, хамăрăнах ĕçлемелле-çке,— йăвашланчĕ аттен сасси.— Турă çӳлтен анса туса памасть.— Кашăк илсе васкасах çиме пуçларĕ вăл.

— Пирĕн хĕрарăмсем ĕçрен хăрамаççĕ. Хуйхи-суйхи пĕтерет. Кунĕн-çĕрĕн чуна кăшлать,— анне каллех йывăррăн сывласа илчĕ.— Ĕçлет халăх, ырми-канми ĕçлет. Куççульне юхтара-юхтара тапаçланать. Алă усса ларакан никам çук.

Çапла, ĕçлене ун чух халăх, канма пĕлмесĕр, çывăрма-

сăр йывăр ĕçре тертленнĕ. Выçăллă-тутăллă пурăннă, анчах колхоз уй-хирĕсене япăха яман.

Çамрăк пулин те, эпĕ те çитĕннисенчен юлман. Аякри хирсенче эрни-эрнипе киле таврăнмасăр ĕçленĕ. Ах, çав çуллахи кĕске çĕрсем! Хĕвел тухиччен каçалăк умне тăнă, алăри çурла курăнми пуличчен тырă вырнă. «Тăрăр, ачасем, тăрăр. Қантăмăр. Выртса илтĕмĕр. Ĕçлес пулать»,— илтетĕп эпĕ кашни ирех пĕр-пĕр хĕрарăм сассине. Чăтма çук сывăрас килет. Пуç çине темле йывăр япала çакса янă тейĕн. «Темле йывăр пулсан та, тырра хирте хăварас марччĕ»,— тесе ĕçленĕ пурте.

Вуникĕ çулхи Коля шăллăмăн та колхоз ĕçне тĕплĕнех кӳлĕнме лекрĕ. Вырма тухас умĕн атте ăна сĕтел хушшине хăйпе хирĕç лартсах çапла каларĕ:

— Çитет сана урам тăрăх янккаса чупма, тек пĕчĕк мар. Қăçал вунвиççĕ тултартăн. Вăрçа кайнă арçынсем вырăнне ĕнтĕ колхозра сирĕн тăмалла. Мĕнпур йывăр ĕç сирĕн çине тиенет. Асту, ан ӳркен, ан нăйкăш, ан йĕр, чăт, тӳс. Эсĕ арçын. Çавна яланах асра тыт. Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм,— пуçне сулчĕ шăллăм.

Коля ытларах лашапа çӳрерĕ. Хăйпе тантăш арçын ачасемпе пĕрле вĕсем çав çу йĕтем çине кĕлте турттарчĕç. Кĕлтине тулли урапа çине улăхтарса хума пĕвĕ пĕчĕк хăйĕн, пуслăхне туртса çыхма вăйĕ çитмест.

Ачасене ĕç майне кăтартма хире ватă çынсем тухаççĕ. Ватăпа вĕтĕ майлаштарса ĕçлет. Чугун çул станцине тырă леçме те яланах Коля çӳрерĕ. Çав çулах ăна, плуг тытса, ака-суха тума та лекрĕ. Анне ăна питĕ шеллерĕ, анчах палăртмарĕ.

— Йывăр ĕçпе ан хуçăлтăрччĕ кăна. Ытла та çамрăкçке,— тет вăл, шăллăма час-часах тул çутипе тăратса.— Ыйхи ытла йывăр теттĕм те, халĕ темле ир вăратсан та ялтах сиксе тăрать. Эй, тур-тур! Мĕн патне пырса тухăпăр капла.

Çапла пурнăç хăй йĕркипе малаллах шурĕ. Верук упăшкине Илляна та вăрçа кайма вăхăт çитрĕ. Ку хыпара эпир хирте сĕлĕ вырнă чух илтрĕмĕр. Санька шăллăм пырса каларĕ.

— Анне, сана атте киле пыма хушрĕ. Халех, хăвăртрах килтĕр терĕ,— пĕлтерчĕ вăл.

Васкаса выракан анне вăштах тӳрленсе тăчĕ.

— Чĕнет?.. Нимĕн те пулман пулĕ вĕт? — ыйтрĕ вăл Санькаран.

— Пулнă çав... Хут килнĕ.

Анне аллинчи çурла çĕре тухса ӳкрĕ.

— М-мĕн... Мĕнле хут? Çыру-и? Ăçтан? Камран? — хыпăнса ӳкрĕ анне.

— Çыру мар. Э-э, повестка. Илля йыснан вăрçа каймалла...

Анне кĕлте çине вăйсăррăн тĕшĕрĕлчĕ. Вăл пĕр самант пуçне усса ларчĕ, чĕнмерĕ, хуралса тĕксĕмленнĕ аллисем кăна вĕттĕн-вĕттĕн чĕтрерĕç. Эпĕ шăллăма пӳрнепе çиллессĕн юнаса илтĕм.

— Мĕн? Эпĕ нимĕн те... Эпĕ военкоматран хут килнĕ терĕм çеç,— кăвак куçне айăплăн мăчлаттарса, пĕрре анне, тепре ман çине пăлханса пăхрĕ Санька.

Анне ĕнси çине анса ларнă тутăрне тӳрлетсе çыхрĕ те тăчĕ.

— Ах, Илляна ăсатма манăн ни сăра, ни кукăль-икерчĕ çук,— хыпкаланса ӳкрĕ вăл, вара кĕлтине çыхса тĕм çине хучĕ те васкасах ялалла утрĕ.

«Авă мĕншĕн хире тухман вăл паян»,— Верука чĕререн шеллесе шухăшларăм эпĕ. Хăвăртрах ун патне чупас, йăпатас, мĕнпе те пулин пулăшас килчĕ. Анчах аттерен шиклентĕм. Курсан, хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче мĕн ял тăрăх çапкаланса çӳретĕн тесе вăрçĕ терĕм.

Кăчăрт-кăчăрт касăлать çивĕч çурла айне пулнă сĕлĕ хăмăлĕ. Анчах канăçсăр шухăш мана ялах хăвалать. «Ĕçĕ темĕн чухлех пулĕ ĕнтĕ Верукăн. Пулăшакансем пур-ши? Кайса пĕлетĕп çеç. Хамах ĕлкĕретĕп тесен, каялла килетĕп»,— шут тытрăм эпĕ юлашкинчен. Çурлана кĕлте çине тăрăнтартăм та ялалла чупрăм.

Акă Илля килĕ, икĕ чӳречеллĕ пысăк мар пӳрт. Верук лаç умĕнче çĕрулми шуратать. Алăк уçăлнине илтсе, вăл пуçне çĕклерĕ. Пичĕ-куçĕ йĕнипе хĕрелсе туртăннă. Мана курсан, аппа каллех сасăсăр йĕме тытăнчĕ.

— Ун пекех вĕçĕмсĕр ан макăр-ха, ачам, хытар кăмăлна. Эсĕ кăна ăсатмастăн упăшкуна. Çур ял кайса пĕтрĕ,— терĕ пӳртрен тухнă Мархва кинеми, пирĕн пата пырса.— Каларăмăр сана. Çемйипех ӳкĕтлерĕмĕр. Итлемерĕн. Пĕлнĕ вĕт çапла пуласса. Мĕн нĕшĕклетсе ларатăн тата халĕ?

Хĕрĕ Илля патне вăрттăн тухса тарнăшăн Мархва кинеми питĕ çиллённĕччĕ. «Ĕмĕрне те ура ярса пусмастăп сирĕн пата»,— тесе вăрçнă тетчĕç. Мана та (такам курнăçке çав каç эпĕ Верук япалисене пахчара пытарса хунине) киле пырсах мăкăрлантарнăччĕ. Анчах амăшĕ амăшех çав. Хĕрне йывăр хуйхă килсе çапсан, чătайман авă, чупса килнĕ.

— Кĕрӳ таврăнсан пырăр вара. Тухса кайиччен пĕрре сĕтел хушшине ларса калаçар хăть. Чуста хунăччĕ, йӳçсе

анчӗ пулӗ,— çапла калаçкаласа, Верук амăшӗ картишӗнчен тухрӗ.

— Ăçта кайнă вара Илля йысна? — ыйтрăм эпӗ аппаран.

— Военкомата,— ассăн сывларӗ Верук.

Çав самантра урамра салтак юрри илтӗнчӗ. Пӗкӗ çине çыхнă шăнкăравсене шăнкăртаттарса, хапха умне урапа кӳлнӗ ăйăр пырса чарăнчӗ. Эпӗ картиш алăкне яри уçса ятăм. Килкартине кӗрсен, çамрăксем тăрантас çинчен анчӗç. Аллинчи тутăрӗсене хулпуççи урлă çакса, Илля хирӗç утса пынă çамрăк арăмне ыталарӗ.

Ан вӗç, чӗкеç, ан вӗç çумăр витӗр,
Эс вӗçнишӗн çумăр чарăнас çук.
Ан хурлан, тăванăм, ан макăр,
Эс макăрнипе вăрçă чарăнас çук,—

юрласа ячӗç Илля юлташӗсем.

Крыльца çине Илля амăшӗ тухрӗ. Йывăр ӗçпе, чир-чӗрпе вăхăтсăр ватăлнă типшӗм хӗрарăм ывăлӗ патне пычӗ, пуçне çӗклесе, тунсăхлă куçӗпе ун çине тинкерсе пăхрӗ.

— Каятăнах-и ӗнтӗ? Каймаллах терӗç-и? — ыйтрӗ вăл чӗтрекен сасăпа.

— Паян мар, анне, ыран тин каймалла.— Хӗрарăм куçӗнчен вӗри куççулӗ шăпăртатса юхса анчӗ.

— Ма ытла телейсӗр пултăм-ши? — йӗре-йӗре каларӗ вăл.— Аçупа çулталăк та пурăнаймарăмăр, Ярмань вăрçине кайса пуçне хучӗ. Хам çнес сăкăра çитерсе ӳстертӗм сана. Халӗ эсӗ те вăрçа каятăн. Епле кăларса ярам-ши-и-и?

Карчăк пуçне ывăлӗн сарлака кăкăрӗ çине хучӗ те ӗсӗклесех йӗрсе ячӗ.

Çапла, вăрçă терчӗ тӗпсӗр, ăна вичме виçе çук... Кайрӗ Илля. Ялта тепӗр арçын катăлчӗ, тата тепӗр салтак арăмӗ хутшăнчӗ...

Çав кун эпир ялтан чылай аякра, Çавал леш енчи улăхра, тырă выртăмăр. Каç пуласпа анне киле кайрӗ. Тӗттӗмленсен, эпӗ, лăстăр-лăстăр ывăннăскер, кӗлтесем сарса хутăм та çывăрма выртрăм. Темшӗн кӗççӗр Верук килмерӗ. Вăл та киле кайрӗ-ши? Ыйхă тӗлӗшпе такам ури айӗнче хăмăл чăштăртатнине илтрӗм.

— Çывăратăн-и, Чӗкеç? — пырса ларчӗ Верук. Хулпуççине вăйсăррăн усса, вăл пӗр вăхăт хускалмарӗ.

— Мӗншӗн выртмастăн? — ыйтрăм эпӗ, вăранса.— Нимӗн те пулман пулӗ-çке?.. Е темле хыпар илтрӗн-и?

— Ăшчик вăркать. Ытла та тунсăх,— аппа ассăн сывласа ячӗ те, кӗлтесене юсакаласа, ман çума выртрӗ. Эпӗ

ана утиялпа витрём. Ҫаҫӗ аша пулсан та, ҫӗрле ҫанҫурӑма пурпӗр сулхӑн ҫапать. Хирте шӑп. Таҫта аякра йытӑ вӗркелешни кӑна илтӗнет.

— Чӗкеҫ,— терӗ Верук, пӗр самант ҫаплах чӗнмесӗр выртнӑ хыҫҫӑн,— астӑватӑн-и, эсӗ мана ярмаркӑра Миша ятлӑ каччӑпа паллашни ҫинчен каласа патӑн.

— Астӑватӑп-ҫке,— терӗм эпӗ, пит-куҫ тӑруках пӗҫерсе кайнине туйса. Телее, тӗттӗмре Верук ӑна асӑрхамарӗ.

Ҫапла, каланӑччӗ эпӗ Верука Мишӑпа курса калаҫни ҫинчен. Каччӑ мана ыталаса чуптуни ҫинчен ҫеҫ шарламарӑм. Вӑтантӑм.

— Вилнӗ вӑл, Чӗкеҫ,— терӗ Верук пусӑрӑнчӑк сасӑпа.

Эпӗ шартах сикрӗм. Шӑмшак тӑрӑх сивӗ сӑрӑлтатса саланчӗ.

— Вӑрҫӑ хирне те ҫитеймен. Вӗсем пыракан пуйӑса нимӗҫ самолечӗсем бомбӑсем пӑрахса аркатнӑ тет. Ҫавӑнта пӗтнӗ Миша.

— Аҫтан пӗлтӗн? — ыйтрӑм эпӗ, сассӑм тӑруках хӑйӑлтатса тухнине туйса.

— Халӗ кӑна Уйкас хӗрарӑмӗпе калаҫрӑм. Сукмакпа ҫумранах иртсе пырать те.

Аппа урӑх чӗнмерӗ. Вӑл пуҫ ҫийӗнче ялкӑшса ҫунакан ҫӑлтӑрсем ҫине пӑхса выртрӗ. Манӑн та сӑмах хушас килмерӗ. Хуйхӑллӑ хыпар ыйха хуса ячӗ. «Авӑ мӗншӗн пӗр ҫыру та килмерӗ,— шухӑшларӑм эпӗ, капланса килнӗ куҫҫуле ҫӑта-ҫӑта.— Эпӗ вара... Эпӗ...» Апла Миша тек ҫут тӗнчере ҫук. Анчах чун йышӑнасшӑн мар ҫак хӑрушӑ хыпара. Куҫ умне каллех шавлӑ ярмарка шӑвӑнса тухать. Карусель хаваслӑн ҫаврӑнать. Йӗри-тавра темӗн чухлӗ ҫын: ача-пӑча, хӗрсем, каччӑсем. Вӗсем хушшинче ҫар тумӗ тӑхӑннӑ йӑрӑс пӳллӗ каччӑ. Вӑл савӑк хура куҫне ман ҫинчен илмест, тути ачашшӑн кулать. Каччӑ мана халиччен илтмен, чуна хумхантаракан хӗрӳллӗ сӑмахсем калать...

Верук та ҫывӑрмасть, вӗҫӗмсӗр пӗр аякӗ ҫинчен теприн ҫине ҫаврӑнкалать, хӑй тӗллӗн тем пӑшӑлтатать, ассӑн сывла-сывла ярать. Мӗн канӑҫ памарӗ-ши ӑна ҫак кас? Миша ҫинчен шухӑшласа чунӗ хурланчӗ-ши? Вӑрҫӑра ҫапӑҫакан ҫывӑх ҫынсене аса илсе ӑшӗ вӑркарӗ-ши? Илля халлӗхе ҫар училищинче командир пулма вӗренет. Анчах пӗр пиччӗшӗпе икӗ йыснӑшӗ вӑрҫӑра. Пирӗн Валери аллине амантнӑ, госпитальте выртать. Миша вара... Миша ҫук... «Тепре куриччен»,— тесе сывпуллашрӗ. Хӑйӗн вара пурӑнмалли те шутлӑ кунсем ҫеҫ юлнӑ пулнӑ. Ман куҫран куҫҫулӗ йӑпӑртатса анчӗ. Верук сисесрен шикленсе, эпӗ тепӗр

аяк çине çаврăнса выртрăм. Ансăртран пуçа тахçан илтнĕ хурлăхлă юрă пырса кĕчĕ.

Шăпăр-шăпăр çумăр çăвать,
Шăпăрпа шăлса типĕтес çук.
Темĕн чухлĕ кĕтсен те, йĕрсен те —
Манăн савни киле килес çук.

...Унтан, шăплăха пăсса, аякра пуйăс сасси илтĕнсе кайрĕ. Мĕнле майпа? Пирĕн çывăхра чугун çулĕ çук-çке. Лайăххрах курас тесе, эпĕ сиксе тăратăп. Аслă хирсем урлă, хаяррăн чашлатса, ман паталла пуйăс çывхарать. Акă вăл çумранах иртсе каять.

— Чĕкеç! Сывă пул! Тепре куриччен! — пырса кĕрет хăлхана такам сасси. Эпĕ вагон чӳречисенчен куç шарса кайиччен пăхатăп. Вĕсем хăвăрт вĕлтлете-вĕлтлете иртеççĕ, анчах никам та курăнмасть.

— Ан кайăр унталла! Чарăнăр! Тăхтăр! Унта нимĕç самолечĕсем! — мĕнпур вăйран кăшкăратăп эпĕ, пуйăс хыççăн чупса. Анчах мана никам та илтмест. Çил кăна тунсăхлăн уласа йĕрет, рельссем, тем ыратнă евĕр, асаплăн йынăшаççĕ.

— Чĕкеç! Вăран-ха... Вăран,— тĕртрĕ мана Верук аякран.— Усал тĕлĕк куратăн пулас эсĕ.

Эпĕ куçа уçса ятăм. Тул çутăлнă. Хĕвел курăнмасть-ха, анчах тухăç çап-çутах. Верук чавси çине çĕкленнĕ те мана куçран тинкерсе пăхать.

— Мĕн пулчĕ, Чĕкеç? Куçусем йĕп-йĕпе... Ма йĕретĕн эсĕ?

Пĕтĕмпех каласа патăм. Ярмаркăра Мишăпа тĕл пулса уйăрăлнине те, çыру кĕтсе тунсăхланине те, курнă тĕлĕкне те.

Верук шăппăн итлесе выртрĕ.

— Тĕлĕк тĕлĕкех ĕнтĕ,— терĕ вăл, ассăн сывласа.— Анчах хăшпĕр тĕлĕк ирĕксĕрех шухăшлаттарать çав. Кам пĕлет, тен, вилес умĕн сана аса илнĕ вăл... Тен, сывпуллашнă сапа... Халĕ акă, хыпар пĕлнĕ хыççăн, унăн шухăшĕ сана тĕлĕкре курăннă.. Пулать теççĕ ун пекки... Тул çутăлчĕ,— тăрса ларчĕ Верук.— Наçук аппа вырать авă.

Вăл кĕпине туртса тирпейлерĕ, саппуне çыхрĕ, тутăрне юсарĕ те каçалăк енне утрĕ. Эпĕ те, тăрса, аппа хыççăн сĕнкĕлтетрĕм.

## V

Пире, улăхран тулă вырса таврăнакансене, атте, çул çинче тĕл пулса, каялла апа çине çавăрса кайрĕ.

— Атьăр, атьăр! Кĕлтесене çĕмеле хумалла,— васкатрĕ вăл.— Ачаллă херарăмсене чармастăп. Ыттисем пурте апа çине. Кĕçĕр çумăр пулать, районтан пĕлтерчĕç.

Эпир ывăннă. Урасем килеллех туртаççĕ. Çитсе апат çиес те хăвăртрах вырăн çине тĕшĕрĕлес шутпа çеç пыратпăр. Анчах хĕрарăмсем нумай шухăшласа тăмарĕç.

— Каяр эппин. Кĕлтене кĕнĕ тырра йĕпетес мар. Салтса типĕтме тем тăрать. Пустуй ĕç вăл.

— Ну, ачасем, хĕрупраçсем, çаврăнăр каялла. Икĕ алла пĕр ĕç. Шăрт-шарт тытатпăр, вăрт-варт йăтатпăр, çиччас çĕмелсем туса лартатпăр,— хавхалантарать çавăнтах Хĕветле инке.

Çав каç атте те пирĕнпе пĕрлех ĕçлерĕ. Кĕлте йăтрĕ, çемел турĕ. Киле сĕм-çĕрле таврăнтămăр. Тӳпере çăлтăрсем йăлкăшаççĕ, хирĕç нӳрĕк çил вăркăшать, ăшăрханă шăмшака уçăлтарать.

Каçхи апат краççын çутипе çирĕмĕр.

— Коля çывăрать-и? — ыйтрĕ атте, сĕтел хушшинчен тухса.

— Ывăнтăм тесе, хĕвел анничченех кĕрсе выртрĕ.

— Ыран чугун çул разъездне эвакуированнăйсене илме каймалла.

— Аçтан, хăш вырăнтан килеççĕ-ши?

— Мускавран терĕç,— кĕскен пĕлтерчĕ атте.

— Мускавран... Авă епле! — анне, пуçне çĕклесе, атте çине тĕлĕннĕн пăхса илчĕ.

— Иртерех тăрат Кольăна. Хĕвел тухиччченех тухса каймалла.

— Каллех çутăлнă-çутăлман вăратмалла,— хаш сывларĕ анне.— Кăшт та канлĕх çук ачана. Унсăрăн никама та яма çук-и?

— Вăл пĕччен мар. Пилĕк лав каять. Пурин те çывăрас килет,— терĕ те атте пӳртрен тухрĕ.

Çав каç эпĕ çывăраймасăр чылайччен маччаналла пăхса выртрăм. Апла ыран пирĕн яла Мускав çыннисем килеççĕ. Эвакуированнăйсем... Таçта ют чĕлхере çуралнă вăрăм сăмах. Вăр-вар калама та чĕлхе çыхланать. Апла тĕп хулара юлма хăрушă...

Мускав... Географи учителе Андрей Никонорович пире çав чаплă хула çинчен час-часах каласа паратчĕ.

— Питĕ пысăк вăл, Мускав хули. Эпир куçпа виççе илме пултаракан тавралăха та вырнаçаймасть. Кунĕпе пĕр канмасăр утсан та Мускавăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне тухаймастăн. Унта нумай хутлă çуртсем темĕн çӳллĕш кармашса лараççĕ. Çĕр айĕнче пуйăссем чупаççĕ, пусмасем,

унталла-кунталла куçкаласа, çынсене е аялалла антараççĕ, е çӳлелле хăпартаççĕ. Автомат текен машинăсем çынсăрмĕнсĕр суту-илӳ тăваççĕ,— тата та темĕн тĕрлĕ тĕлĕнтермĕшсем курни çинчен каласа паратчĕ пире Андрей Никонорович. Эпир, ялтан тухса курман ачасем, ăна çăвар карсах итлеттĕмĕр.

Çавăн евĕр тĕрлĕ калаçусем ман ăшра канăçсăр шухăшсем çуратаççĕ. Ача чухне эпĕ ĕмĕтленме юрататтăм. Таçти курман-пĕлмен вырăнсем илĕртетчĕç мана. Мĕн-мĕн курмастăм-ши эпĕ шухăш-ĕмĕтсенче? «Вĕренсе тухам кăна. Ĕçлесе укçа пухатăп та чи малтан Мускава каятăп. Çĕр айĕнче çӳрекен пуйăссем çине те ларса чупатăп, юмахри пек хăй тĕллĕнех çынсене антарса хăпартакан пусма çинче те ярăнатăп. Пур çĕре те çитетĕп, пурне те куратăп. Хăвăртрах çитĕнесчĕ çеç»,— тутлăн ĕмĕтленме тытăнаттăм эпĕ.

Халĕ вара çав илемлĕ чаплă хулана, манăн чи çутă ĕмĕтсенчен пĕрне, усал тăшман ишĕлтерсе аркатасшăн тăрăшать. Кăнтăрла та, çĕрле те нимĕç самолечĕсем, сиввĕн уласа, Мускав еннелле вĕçеççĕ, Гитлер çарĕ Мускав хули патнелле талпăнать. «Нивушлĕ чарайміĕç? Нивушлĕ Мускавра та нимĕç пуçпулса тăрĕ? Епле-ха капла?»—пăшăлтатать халĕ ман ăшра шиклĕ шухăш.

Анчах мухтанчăк Гитлер шутлани тата та хăрушăрах, тата та ирсĕртерех пулнă иккен. Совет çĕршывĕн тĕп хулине вăл ĕмĕрлĕхех çынни-мĕнĕпех шыв айне путарса тĕп тума шутланине ун чух эпир илтмен-ха, пĕлмен...

Ирхине эпĕ сывăрса тăраннине туйса вăранатăп. Çумăр çăвать. Атте ĕнер тĕрĕсех каларĕ иккен. Шăпăр-шăпăр, шăпăр-шăпăр,— тем çинчен хуллен пăшăлтатса ӳкеççĕ çĕр çине çумăр тумламĕсем. Ах, мĕн тери лайăх! Тавтапуç сана, çумăр, килсе çунăшăн, ывăннă шăмшака канлĕх панăшăн! Эпĕ тепĕр аяк çине çаврăнса выртатăп та каллех куçа хупатăп.

— Чĕкеç халĕ те çывăрать-и? — илтĕнет атте сасси.

— Тăман-ха. Шăмшакĕ кăштах кантăр терĕм те,— сăмах хушать анне.

— Ирхи çумăр кăнтăрлаччен. Килти ĕç пĕтмен тесе, хире çынсенчен юлса тухмалла ан пултăр.

— Ĕлкĕретпĕр,— тет каллех анне.

Апла анне мана та шеллет. Эпĕ Кольăшăн кăна ăшчикĕ вăркать пулĕ тесе шутланăччĕ.

Чăлан алăкне уçса, эпĕ крыльца çине тухатăп. Тӳпене талккăшпех тăхлан тĕслĕ çумăр пĕлĕчĕ хупăрласа илнĕ. Лăпкă çумăр лăстăртатать, типĕ çĕре йĕпетет, сывлăша

уҫăлтарать. Пӳрт тăрринчен шултра ҫутă тумламсем юха-юха анаççĕ.

Шеп! Шеп! ӳкеççĕ вĕсем крыльца умне сарнă чул катăкĕсем ҫине.

Лаҫра вут ялкăшса ҫунать, пысăк хуранра шыв пăсланса ăшăнать. Пĕчĕк Иришка, хăй тĕллĕн тем мăкăртатса, валашкари шывра пукане кĕписене чӳхет.

— Анне ăҫта? — ыйтатăп эпĕ унран.

— Шыв ăсма кайрĕ,— тет йăмăкăм, пуҫне ҫĕклемесĕр.

— Чĕкеҫ, кил-ха кунта,— чĕнет мана  ампар умĕнче ларакан Санька шăллăм.

— Акă пăх,— ăнлантарма тытăнать вăл эпĕ пырса тăрсан.— Ку — вăрман. Унта, йывăҫсен хӳттинче, пирĕн самолетсем пытанса лараççĕ. Куратăн-и? — кăтартать вăл хĕресле ҫыхнă ҫинçе пĕчĕк патак татăкĕсем ҫине.

Саня кăмăллă, лăпкă ача. Вăл урамра шавласа чупма та юратать, пĕччен те тунсăхламасть. Хăй тĕллĕнех вылять. Юханшыв чавса шыв юхтарать е пĕве пĕвелет, е Ириша пуканисем валли ҫурт-йĕр купалать... Халĕ те акă пайтах тăрмашни курăнать. «Вăрманĕ» те пур, «самолечĕсем» те сахал мар. Пурне те тăрăшса, тĕплĕн ҫыха-ҫыха тунă.

— Самолетсем йывăҫсем хушшинче пытанма пултараймаççĕ. Сывлăша ҫĕкленме вĕсене уҫă вырăн, аэродром кирлĕ,— тетĕп эпĕ. Ҫавра питлĕ Саня ман ҫине уҫҫăнах иккĕленсе пăхать.

— Эсĕ ăҫтан пĕлетĕн?

— Вуланă.

— Пурпĕр вĕсем вăрманта,— кăмăлсăррăн хирĕҫлет вăл мана.— Ҫавăнпа гитлерсем вĕсене курмаççĕ.

— Гитлерсем мар, нимĕҫ фашисчĕсем,— тӳрлететĕп эпĕ каллех.

Шăллăм пурпĕрех мана тăнламасть. Унăн хăй шухăшласа тупнă вăййа пăсас килмест.

— Акă пирĕн самолетсем вăрмантан вĕҫсе тухаççĕ те тӳрех гитлерсем ҫине ыткăнаççĕ. Чи малта пирĕн Валери вĕҫсе пырать. Ыттисем ун хыççăн. У-у-у! У-у-у! Тра-та-та! Тра-та-та! Акă Валери пичче Гитлер танкĕ ҫине бомба пăрахрĕ. Бах! Бах! Лешĕ ҫавăнтах ҫунма тытăнать... Куратăн-и?

Арҫын ача темерĕн. Вĕҫĕмсĕр вăрҫăлла вылять. Нумаях пулмасть «шуррисемпе» ҫапăҫатчĕ, халĕ нимĕҫ фашисчĕсене «аркатать».

Анне шыв ăсса таврăнчĕ.

— Э-э, тăнă-ҫке эсĕ,— терĕ вăл, мана курсан.— Кĕпе-

сем ислетсе лартрăм. Хăвăртрах çуса пăрахасчĕ.— Ме-ха, тепĕр çĕклем илсе кил. Эпĕ кĕпе ухма тытăнатăп. Аçу мунча чĕртсе ячĕ, унта та шыв кирлĕ.

— Коля часах килет-ши? — ыйтатăп эпĕ, пушаннă витресене кĕвенте вĕçĕпе çаклатса илсе.

— Кам пĕлет. Халĕ пуйăссем расписанипе çӳремеççĕ теççĕ те. Ку йĕпепе çулĕ те лечĕркеленсе кайрĕ. Ирех, çумăр витĕрех, тухса кайрĕç вĕсем, — тет анне, ухнă кĕписене хурана вĕретме ярса.

Эпĕ урама тухатăп. Пур çĕрте те лаçсем, мунчасем çийĕн кăвак тĕтĕм йăсăрланать. Ял халăхĕ, çумăрлă вăхăтпа усă курса юлма васкать: кĕпе-тумтир çăвать, пӳрт-çуртра тасатать, мунча хутса кĕрет.

Атте каланă пекех, кăнтăрлапа çумăр чарăнчĕ. Тĕксĕм пĕлĕт татăла-татăла кайса саланчĕ. Кăвак тӳпере хĕвел йăлкăшса пăхма тытăнчĕ.

— Килеççĕ! Килеççĕ! — чупса кĕчĕ картишне пылчăкпа вараланнă Саня.— Аваку-ированнăйсем,— сыпăклăн-сыпăклăн татса кларĕ вăл халиччен илтмен йывăр сăмаха.

Манăн чĕре картах турĕ. Урама тухма сăлтав шыраса, эпĕ пушă витресене каллех кĕвенте вĕçне васкаса çакрăм. Авă вĕсем уй хапхинчен ялалла кĕреççĕ. Эпĕ тулли витресемпе каялла çитнĕ çĕре чăматансем, тĕркесем хурса тултарнă пилĕк лав, пылчăк çăрса, пирĕн тĕлелле çывхарчĕç. Кашнин çинче хĕрарăмсем, ачасем. Чи малти урапа пуçĕнче Коля ларать. Унпа юнашар типшĕм питлĕ, çивĕч куçлă вуникĕ-вунвиçĕ çулхи арçын ача тилхепе тытса пырать. Сарă çӳçлĕ виçĕ хĕрача чăматансемпе тĕркесем хушшине вырнаçнă. Хаваслă куçĕсемпе йĕри-тавра пăхса пыраççĕ. Пиллĕкмĕш ачине, чи пĕчĕккине, хĕрарăм чĕрçи çинче тытса пырать. Вăл урапа хĕррине хĕсĕннĕ. Урисене çĕрелле уснă. Ыйăннă пулас. Пичĕ-куçĕ сӳрĕк, хавассăр. Пуçне сыхнă шурă тутăрĕ ĕнси çине шуса аннă, улăм тĕслĕ сарă çӳçĕ çӳллĕ çамки çинче сапаланнă.

Пирĕн тĕле çитсен, Коля тилхепене ача аллинчен илчĕ те лашана кӳршĕ çурт еннелле туртрĕ. Урапа çулран пăрăнчĕ. Йĕпе курăк çинче хуп-хура йĕр хăварса, кӳршĕсен хапхи умне пырса чарăнчĕ. Кил-çурт хуçи урăх районта ĕçленĕ пирки, ку пӳртре темиçе çул ĕнтĕ никам та пурăнмасть. Çавăнпа ăна колхоз правленийĕ эвакуированнăйсене пама йышăннă. Ытти тăватă лавĕ аналла анса кайрĕ.

Ачине кăкăрĕ çумне супăрласа, çӳллĕ хĕрарăм урапа çинчен асăрханса анчĕ. Анчах ачи пурпĕрех вăранчĕ, çинçешке сасăпа нăйкăшса йĕме тытăнчĕ. Эпĕ тулли витресемпе иртнĕ чух хĕрарăм ман умах тухса тăчĕ.

Чи малтанах вăл мана чылай ҫулланнă ҫын пек туйăнчĕ. Халĕ ҫывăхран пăхатăп та вăтăртан иртнĕ-ши, иртмен-ши. Пĕвĕ те йăрăс, ҫамрăк пичĕ те яп-яка, кăвак куҫĕсем кăна ытла та тунсăхлă.

— Вĕретнĕ шыв ҫук-и сирĕн? Ачана ĕҫтересчĕ,— ыйтрĕ вăл.

— Юрать, халех,— терĕм эпĕ, картишне васкаса кĕрсе.

— Вĕретнĕ шыв-и? Пур, ара, пур,— ҫавăнтах сăмах хушрĕ анне.— Авă, чейникре. Акă стакан. Ме тыт. Ачисем пĕчĕк тетĕн-и? Ай, тур-тур! Сĕт кайса ĕҫтерем-ха ачисене. Паҫăрах вĕретсе лартрăм.

Анне пит-куҫне васкаса шăлса илчĕ, шурă тутăрне юсаса ҫыхрĕ, пĕр аллине катăк авăрлă тăм кăкшăма хăй ҫумне ҫупăрларĕ, теприпе стакан тытса, манпа пĕрлех урама тухрĕ. Сĕте курсан, лав ҫинчен сиксе аннă ачасем самаях хавасланчĕҫ. Пĕри, аллине ҫупса, сиккелесе те илчĕ.

— Спасибо,— терĕ асли, вунă ҫулсене ҫывхарнă хĕрача, стакана каялла парса.

— Спасибо! Спасибо! — терĕҫ ун хыҫҫăн кĕҫĕн хĕрачисем те.

— Спасибо! — сÿрĕккĕн тав турĕ амăшĕ.

Урам тепĕр енче хĕрсемпе хĕрарăмсем пуҫтарăнчĕҫ.

— Эй, мăнтарăнсем! Ҫуртне-йĕрне, мĕн пуррине пăрахса тухса килнĕ вĕт-ха вĕсем ҫакăнта,— хаш сывларĕ пĕри.

— Ан та кала. Мĕн тери нушалантарать ку усал вăрҫă халăха,— сăмах хушрĕ тепри.

— Тури каса пĕркунах килнĕ-ха вакуренсем. Аҫтанччĕха вĕсем? Э-э, Украинăран терĕҫ-ҫке.

Хĕрачасем хавaслăн кулса ячĕҫ.

— Вакуреннăй мар, анне, эвакуированнăйсем,— кăмăлсăррăн тÿрлетрĕ пĕри.

— Ара, ҫавсем тесшĕнччĕ те... Мур чĕлхи мар-и... Ниепле те ҫаврăнмасть.

— Тури касра кăна мар, ытти ялсенче те пур халĕ вĕсем. Разъезда каши кунах килеҫҫĕ.

— Ҫапла пуль ҫав. Вăрҫи темиҫе пин ҫухрăма тăсăлать теҫҫĕ те... — Ах, ачисем йышлă ку хĕрарăмăн. Пĕринчен тепри пĕчĕк. Эх, шалкă! — пырса тăчĕ ушкăна Мархва кинеми те.

Ҫав самантра тахăшĕ урам алăкне уҫса ячĕ. Тулли урапа, ерипен хускалса симĕс курăкпа витĕннĕ картишне кĕрсе ҫухалчĕ.

Кĕҫех атте васкаса ҫитрĕ. Килнĕ ҫемьене питĕрнĕ пÿрт алăкне уҫса пачĕ.

— Вырнаҫăр. Ҫимелли илсе килеҫҫĕ акă... Вĕри апат

пулать,— терӗ вӑл. Вара япаласене тирпейлесе ҫыхнӑ вӗренсене салтма тытӑнчӗ.

— Ну-ка, ачасем, килӗр-ха, япаласене пӳрте илсе кӗме пулӑшӑр,— терӗ вӑл.

Пур ҫӗре те чи малтан ҫитекен ача-пӑча, тӑруках хӑюлануса, картишне кӗчӗ.

— Ӑҫта улӑхатӑн? Эпӗ хам паратӑп,— чупса пычӗ лав патне Кольӑпа юнашар ларса килнӗ типшӗм питлӗ арҫын ача.— Ҫак тӗркене ил... Лайӑххрах тыт. Ку чӑматанӗ йывӑр. Иккӗн йӑтмалла. Иккӗн тетӗп... Вӑт ҫапла. Акӑ сумка. Ме тыт. Эсӗ ытла пӗчӗк, каях кунтан. Ан чӑрмантар....

Тепӗр самантран урапа ҫинче пӗр япала та юлмарӗ.

— Халӗ атьӑр вылятпӑр! Килӗр кунта! — кӑшкӑрчӗ ача, симӗс курӑк ҫийӗн хӗрлӗ кӑвак тӗслӗ мечӗке тапса ярса.

— Ай-яй ҫивӗч ача ку! — калаҫса илчӗҫ хӗрарӑмсем.

Пушӑ витресем илсе, икӗ хӗрача шыв патне чупрӗҫ. Мархва кинеми пӗр хутаҫ хӑяр йӑтса пычӗ.

— Акӑ,— терӗ вӑл, ҫӳллӗ хӗрарӑм патне йывӑррӑн утса пырса,— хӑяр илсе килтӗм. Кушай... швеший... Хороший. Халӗ кӑна пуҫтартӑм. На... ачасем валли... дети дай... Чӗрӗ апата юратаҫҫӗ вӗсем... Кушай... Чӗкеҫ, кала-ха, каярахпа мунча кӗме пыччӑр.

— Эпир хамӑр та мунча хутнӑ,— терӗм эпӗ, ӑшра темле кӗвӗҫ туйӑм ҫуралнине туйса.

Коля урапа ҫине улӑхса тӑчӗ.

— Алик, айда... Лошадь... на конный двор,— терӗ вӑл пӗрле ларса килнӗ арҫын ачана.

Лешӗ амӑшӗ ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗ.

— Мам, можно?

Хӗрарӑм, килӗшнине пӗлтерсе, аллине кӑна сулчӗ.

Алик урапа ҫине ҫӑмӑллӑн сиксе хӑпарчӗ. Вӗсем ыталашса тӑчӗҫ те лашине урам тӑршшӗпе аnаталла чуптарсах анса кайрӗҫ.

Ҫапла пӗрре курсах килӗштерчӗҫ вӗсем пӗрне-пӗри. Кӗҫех уйрӑлайми туссем пулса тӑчӗҫ. Халӗ те манмаҫҫӗ. Олег Николаевич, ҫар ҫынни, нумаях пулмасть отставкӑна тухрӗ. Мускавра пурӑнать. Тӗп хулана кайсан Коля яланах ун патне кӗрет...

Ҫӗр типсен, эпир хире кайма пуҫтарӑнтӑмӑр.

— Анне,— терӗ Коля, апат ҫинӗ май,— Алик атте ҫук пирӗн, ӑна вӑрҫӑра вӗлернӗ тет. Хӗрлӗ Ҫар командирӗ пулнӑ вӑл, Алик ашшӗ. Хут илнӗ вӗсем, вӑл нимӗҫ фашисчӗсемпе паттӑррӑн ҫапӑҫса вилни ҫинчен...

— Мӑнтарӑн хӗрарӑмӗ! — ассӑн сывларӗ анне.

— Александра Яковлевна тесе чĕнеççĕ ăна. Хушамачĕ вĕсен Листопадов,— хушса хучĕ Коля.

Çапла кĕтсе илчĕ пирĕн ял тăван вырăнĕсенчен вăрçă хуса кăларнă аякри вырăс çыннисене. Каярахпа тата темиçе çемье килчĕ: каллех Мускавран, Белоруссирен, Ленинградран... Чылай пурăнчĕç вĕсем пирĕн ялта. Аякран килнĕ çынсем тесе, никам сивленине те астумастăп. Пĕрле ĕçленĕ, вăрçă нуши-асапне тӳснĕ, пĕрле йĕнĕ, савăннă, кулнă. Пĕрпĕрне хисеплесе, ăшă кăмăллă пулсан, чĕлхе пĕлменни нимĕн те мар иккен.

Çывăхра пурăнакан эвакуированнăйсем, ытларах вĕсен ачисем, пирĕн пата час-часах пыратчĕç. Аннен ырă, уçă кăмăлĕ туртнă пулĕ тетĕп эпĕ вĕсене. Чăкăт тăвать-и, кулач е кукăль пĕçерет-и, анне нихăçан та çав аякран килнĕ ачасене хăпаламасăр хăвармасть, нушаланакансене мĕнпе те пулин пулăшма тăрăшать. Пуринчен ытла вăл нумай ачаллă Александра Яковлевнăна шеллет. Астăватăп, пĕрре пирĕн пата Алик кĕчĕ. Хура кĕркуннеччĕ ун чухне, кĕç-вĕç хĕл лармалла.

— И-и, ачам, санăн ботинку çĕтĕк-çке,— терĕ анне, шăннипе сиксе чĕтрекен ача ури çине пăхса.— Хыв-ха.

Алик вăтанать, килĕшмест. Анчах анне çине тăрсах ăна ботинкине хывтарчĕ.

— Эй, тур-тур! Ури пăр пек. Çӳхе нускипе çеç-çке эсĕ. Чирлесе каятăн вĕт капла,— терĕ анне, вăтаннипе пуçне усса тăракан ачана шеллесе.— Чим-ха... тăхта-ха...

Кĕçех вăл кивĕ кĕрĕк татăкĕ илсе кĕчĕ, ăна ботинка ăшне касса хучĕ, ăшă кăмака çинчен мăшăр çăм нуски илсе Алика пачĕ.

Каç пулсан, пирĕн пата Александра Яковлевна пычĕ. Ытлашши сăмах ваклама юратмасть вăл. Пирĕн пата пĕрпĕр япала патне пырсан нихăçан та алăк патĕнчен иртмест, калаçса лармасть. Ачисене хытă тытать. Лешсем ăна итлеççĕ, хушнине пĕр хирĕçлемесĕр тăваççĕ.

Хальхинче Александра Яковлевна малалла иртрĕ те аллинчи тĕркине анне еннелле тăсрĕ.

— Ачасем валли,— терĕ вăл кĕскен.

Çитсă. Пăваш, çемçе кăмăллă пирĕн анне, анчах хăй шутланинчен чакмасть. Халĕ те вăл, Александра Яковлевна темле сĕнчĕ пулсан та, унăн парнине илме килĕшмерĕ.

— Ачу-пăчу хăвăн пӳрт тулли. Вĕсене пайтах кирлĕ. Эпир килте, аптрамастпăр. Пир пур пирĕн,— терĕ.

Çавăнтан пуçланчĕ пулас икĕ çемье хушшинчи чăн-чăн туслăх. Ĕмĕрлĕхех пычĕ вăл. Аннепе Александра Яковлевна вăрçă хыççăн та нумайччен çыру çырса илчĕç. Кĕçĕн

хĕрĕпе, Ґальăпа, икĕ хутчен хăнана килсе кайрĕç. Эпир те пулнă вĕсем патĕнче Мускавра. Александра Яковлевна та, ачисем те пире яланах вашават кĕтсе илетчĕç. Çывăх тăван пекех. Александра Яковлевна аннене питĕ Мускава хăнана чĕнетчĕ. «Кил-ха пĕрре те пулин. Чĕререн хăналам сана хам килте. Мускав кăтартса çӳрем»,— тесе çыратчĕ. Каяймарĕ анне. «Сывлăх начар, хăратăп»,— текелерĕ. Каярахпа: «Ватăлтăм, ниçта та тухас килмест»,— теме пуçларĕ. Вăрçă улăштарчĕ ăна... Унччен шутсăр курса çӳрес килет манăн тетчĕ.

## VI

Иртен пуçласа каçчен йывăр ĕçре тапаланса, çу кунĕсем те иртсе кайрĕç. Август вĕçленсе пычĕ. Çанталăк сулхăнлатрĕ, каçсем сисĕнмеллех вăрăмланчĕç. Сентябре кĕтсе, эпир, ачасем, час-часах шкула аса илме пуçларăмăр. Анчах районтан хыпар килчĕ: уй-хирте ĕç вĕçленмен пирки вăтам тата аслă классенче вĕренӳ çулĕ октябрьте пуçланать тесе пĕлтерчĕç. Чăнах та, темле тимлесе ĕçлерĕмĕр пулин те, тырă-пулла пухса кĕртесси вăраха кайрĕ. Унта та кунта вырман анасем курăнкалаççĕ. «Ачасем шкула çӳреме тытăнсан, ĕç пушшех нумайланать. Епле ĕлкĕрĕпĕр»,— теççĕ хĕрарăмсем.

Çапла, ĕçĕ-хĕлĕ уй-хирте кĕркунне те пайтах çав: кантăр татмалла, çĕрулми кăлармалла. Ытти тĕрлĕ пахчаçимĕç те темĕн чухлех: кишĕрĕ, кăшманĕ, купăсти. Сивĕтиччен, каçсенче çĕр шăнтма тытăниччен, вĕсене пухса кĕртме ĕлкĕрмелле. Вăхăчĕ кĕтмест. Çынсем сахал, ĕçлекен алăсем çитмеççĕ. Кăнтăрла хирте тăрмашатăн, каç пулсан киле çитсе икĕ-виçĕ сехет канатăн та каллех ĕçе — йĕтем çине авăн çапма тухатăн. Унта кунĕн-çĕрĕн трактор кĕрлесе ларать, молотилка çаврăнать. Вăл ирхине кăвак çутăпа ĕçлеме тытăнать те сĕм-çĕрле виçĕ-тăватă сехете кăна чарăнать. Çапнă тырра çавăнтах михĕсене тултараççĕ, лавсем çине тиесе, васкасах чугун çул станцине ăсатаççĕ— фронт валли, çĕнтерӳ валли.

Ывăннипе халран кайнă çынсем, хĕрарăмсемпе ачасем, утса пынă çĕртех çывăра-çывăра каяççĕ. Пĕр каç çапла эпир, çамрăксем, кĕлте йăтатпăр. «Хăвăртрах! Хăвăртрах! Тавай! Тавай!» — çиллессĕн кăшкăрать молотилка патĕнче кĕлте ярса тăраканĕ. Эпир чупа-чупа ĕçлетпĕр. Акă умра пыракан Таня ятлă хĕрача (вăл манран икĕ çул кĕçĕн) тикĕс вырăнтах такăнчĕ те ӳкрĕ. Выртать. «Мĕншĕн тăмасть-ха ку?» — тесе пĕшкĕнсе пăхрăм та — çывăрать.

Сентябрь уйăхĕн иккĕмĕш пайĕнче пирĕн аттене те военкоматран повестка ярса пачĕç. Çав кун эпир хирте çĕрулми кăлараттăмăр. Кăнтăрлахи апат çинĕ хыççăн анне кăкланă çĕрулми аврисене пĕр çĕре купаласа хучĕ те ун хÿттине кăштах канам-ха тесе выртрĕ. Хĕрсемпе çамрăк хĕрарăмсем пĕр ушкăна пуçтарăнса ларнă. Юрлани илтĕнет. Юрă кĕвви е уççăн янраса каять, е кассăн-кассăн вĕрекен çил хăвалапипе аякка кайса çухалать. Верук сасси уйрăмах янравлă. Ялта ун пек илемлĕ юрлаканни урăх çук. Хурлăхлă кĕвĕ аслă уй-хир çийĕн ярăнса вĕçет, йынăшать, йĕрет, чĕрене тутлăн пăчăртаса ыраттарать. Çамрăксен ушкăнĕ патне çывхарнă май эпĕ юррăн сăввисене те илтетĕп. Вĕсенче те ăша çунтаракан йывăр хуйхă çаврăнать, канăçа çухатнă çепĕç чун асапланать.

Юрлать, юрлать теççĕ пуль.
Пирĕн юрлани — хурланни.
Турă лаша туртайми,
Тимĕр кĕпер чăтайми.

Эпĕ Верук çумне пырса тăратăп. Вăл, пуçĕпе сĕлтсе, мана юнашар ларма сĕнет, вара унăн шăнкăрав пек сасси каллех чĕтренсе янраса каять.

Ма кайрăм-ши вăрмана,
Çырла пĕтнĕ вăхăтра?
Ма çуралса ÿсрĕм-ши,
Телей пĕтнĕ вăхăтра?

— Кай, мĕн вĕçĕмсĕр хурлăхлă юрă тăсатăр çак? — пырса тăчĕ ушкăна Хветле инке.— Сире итлесе — йĕрес килет. Мĕн, эпир çакăнта макăрса ларнипе вăрçă чарăнать-и? Гитлер кăнса выртать-и? Есе тытăнниччен атьăр пĕр-пĕр хаваслă юрă шăратса илер, ăшчик çăмăлланса кайтăр.

— Атьăр, атьăр! — тăруках килĕшрĕ Верук та. Вăл пуçне çĕклерĕ, хăй çинчен темле йывăр япала илсе пăрахнă евĕр, хулпуççине хускатса илчĕ, пит-куçне хаваслантарчĕ.

Кай, кай Ивана,
Ма каймастăн Ивана?
Ун пек пуян, чипер каччă
Ялта тупаймастăн.

Çук, пулмарĕ савăнса юрласси. Анмарĕ юрă. Имшерленсе пычĕ те вĕçне çитеймесĕрех татăлчĕ. Пĕр вăхăт шăп пулчĕ. Çурçĕр енчен вĕрекен сивĕ çил çеç, вăраммăн шăхăрса, уй-хир тăрăх чупрĕ.

— Иван та çук, Хветӗр те аякра. Пурне те вӑрçӑ шӑлса тухса кайрӗ,— терӗ пӗр хӗрӗ, ассӑн сывласа.— Каччӑсем юлмарӗç. Кӗçех ват хӗр теме пуçлаççӗ ӗнтӗ. Кунтӑк Тимахвин качака таки пур. Çавна каяс-ши пӗрех хутчен.

— Яра пар, Анни. Хӑтине хамӑн пырас мар-и? Эпир Кунтӑк Тимахвипе хурӑнташлӑ.

— Туя чӗнетӗн-и вара?

— Эй, Анни, хӗве хупма эпӗ те çитетӗп.

— Ха-ха-ха! Хи-хи-хи!

Тинех хаваслӑ кулӑ янӑраса кайрӗ. Кӑмӑл çӗкленчӗ.

— Бригадир килет,— терӗ çавӑнтах тахӑшӗ.

— Васкасах утать. Темле хыпар илсе килет пуль.

— Нумай канатӑр тесе вӑрçма тытӑнсан...

— Чӗкеçе ятлатӑр. Эпир пурте ун хыçне пытанатпӑр та, хирӗçӳ пире тивмест,— шӳтлеме чарӑнмарӗç хӗрарӑмсем.

— Ну, ялйышсем, сывпуллашма вӑхӑт çитрӗ,— терӗ атте, çывӑхах пырса.— Хут килчӗ мана та... Ыран каймалла.

— Эсӗ те каятӑн-и? — шарт çапрӗ аллине Хветле инке.— Ак тамаша!

Хӗрарӑмсем ура çине сике-сике тӑчӗç, тӑруках шӑпланса, куçӗсене атте çине тӗллерӗç.

— Ай тур-тур! Акӑ сана хыпар! Ырӑ хыпар илтес çук ӗнтӗ вӑрçӑ чарӑниччен.

Вара каллех шӑп пулчӗ. Ман чӗре ыратса кайрӗ, куçран куççулӗ йӑрӑлтатса юхса анчӗ.

Аттене çара кайма черет çитессе пӗлнӗ эпир. Кун çиччен вӑл хӑй те час-часах калатчӗ. Военкомата та темиçе хутчен чӗнтерчӗç. «Унччен уй-хир ӗçне пуçтарасчӗ çеç»,— тетчӗ атте. Çапах та ӑшӑмра эпӗ урӑхла шухӑшлаттӑм. Ун чух мана, вунпиллӗкри хӗрачана, хӗрӗхултӑ çул тултарнӑ атте чылай ватӑ çын пек туйӑнатчӗ. Салтаксем вӗсем çамрӑк, йӑрӑс пӳллӗ. Вӗсене кинора та, картинӑсенче те çапла кӑтартаççӗ. Аттен вара çӳçӗ те, сухалӗ те кӑвакарнӑ, çурӑмӗ те кукӑрӑлма пуçланӑ. Мӗнле салтак пултӑр вӑл? Анчах эпӗ шутланӑ пек пулмарӗ. Каллех улталарӗ мана çӑмӑл шанчӑк.

Йӑпӑртатса анакан куççуль тумламӗсене эпӗ алӑ тупанӗпе шӑла-шӑла типӗтетӗп, анчах вӗсем мана итлемеççӗ, юхаççӗ те юхаççӗ.

— Еçре çиллленесси те, вӑрçасси те пулчӗ пулӗ. Каçарӑр пурпишӗн те. Хамшӑн мар. Мӗнпур сӑмахӗ колхозшӑн пулнӑ...

Атте хӑйне лӑпкӑ тытма тӑрӑшать, анчах çак сӑмахсене каласан, унӑн сасси пӳлӗнчӗ, чӗтренсе кайрӗ.

— Ху каçар, ху ан çиллен,— терӗç пӑлханнӑ сасӑсем.—

Эсĕ каланă, эпир те хирĕç чĕнмесĕр тăман. Ан шутла апла, ан хурлан. Ҫаскаланă ҫĕрте турпас пулатех.

— И-и, ара, мĕн асăнмалли пур ун ҫинчен!

— Чипер кай, Ҫĕркури, ырă сывлăхлă ҫаврăнса килмелле пултăр сана. Ун чух каллех бригадира суйлăпăр.

— Тен, ăнсăртран пирĕнне тĕл пулсан — кала, кĕтеҫҫĕ, шанаҫҫĕ те...

Хĕвелпе тĕссĕрленнĕ карттусне хывса, атте пуҫне тайрĕ.

— Сывă пулăр...

— Чĕкеҫ,— терĕ вăл, ман ҫывăха пырса,— эпир аннўпе киле каятпăр. Эсĕ юл. Ҫаҫ пуличчен вăхăт чылай-ха. Ĕҫле. Тăрăшсах ĕҫле.

Эпĕ тек чăтаймарăм, сасăпах ĕсĕклесе йĕрсе ятăм. Тăруках йывăрланнă урасене ўркенчĕклĕн пускаласа, уйăрса панă ана сине суллантăм.

— Савăнтăмăр иккен. Шутларăм малтанах, ырра мар хавасланатпăр тесе,— калаҫса юлчĕҫ пирĕн хыҫра хĕрарăмсем.

Атте сăмахĕсем малтан мана кўрентерчĕҫ. Епле-ха капла? Ыран вăл юнлă вăрҫа тухса каять. Манăн вара, ҫак юлашки сехетсене пурте пĕрле килте пулас вырăнне, каҫченех колхоз хирĕнче ҫĕрулми кăлармалла. Ҫаярахпа шухăшларăм та килĕшрĕм аттепе. «Чăнах та, пире аннепе иксĕмĕре уйăрса панă ана темĕн тăршшĕ. Кăларса пĕтермеллех-ҫке улмине. Ҫĕр айне хăвармалла мар. Ҫанталăкĕ типĕ тăрать-ха, ĕҫлеме лайăх. Анчах кĕрхи кун кĕске ăслă, кĕҫех улшăнма пултарать»,— терĕм эпĕ хама хам. Ҫарлав илтĕм те, куҫҫуле тăка-тăка, пирченнĕ ҫĕре чавма тытăнтăм.

Ирхине эпĕ такамсем хуллен калаҫнине илтсе вăрантăм. Сĕтел ҫинче краҫҫын лампи мăчăлтатса ларать, пўрт ăшчиккине тĕксĕммĕн ҫутатать. Ҫăмакара вутă кĕрлесе ҫунать. Хĕрлĕ ҫулăм ҫути тĕпелти кантăк ҫине ўксе ялкăшать. Чўречесенчен кăвак ҫутă хăюсăррăн шалалла пăхать, ҫĕнĕ кун пуҫланни ҫинчен пĕлтерет.

Мана хирĕç сак ҫинче аттепе анне лараҫҫĕ.

— Вăрҫăра темле те пулма пултарать... Тен, ачасене пĕчченнех ўстерме тивĕ,— илтетĕп эпĕ атте сассине.— Хытăрах тыт вĕсене. Ĕҫлеттер. Ҫынна ĕҫ юсать, ўркев пăсать. Ҫавна ан ман. Халăха юрăхлă ҫынсем пулччăр.

Анне хуллен пăшăклатса йĕме тытăнчĕ.

— Халĕ макăр га, ўлĕмрен хытар чунна,— терĕ каллех атте.— Ҫăмăл пулмасть сана. Вăрҫă часах пĕтес ҫук. Пурнăҫ малашне тата та йывăрланĕ. Вĕрентес теттĕмĕр ачасене...

Вăраннине систерсе, эпĕ вырăн çинче йăшăлтатса илтĕм. Анне куççульне васкаса шăлса илчĕ те тĕпеле кĕрсе çухалчĕ.

— Ашшĕ,— илтĕнчĕ çавăнтах унăн сасси,— пĕр-икĕ пуленке илсе кĕр-ха. Кăмака лайăхрах хĕртĕр. Чĕкеç, вăрантăн-и эсĕ? Çитет йăваланса выртма. Тул çутăлчĕ авă. Тăр хăвăртрах. Ĕне сумалла.

Çапла, сентябрĕн çирĕм виççĕмĕшĕнче, Валери пичче кайнă хыççăн шăп виçĕ уйăхран, пирĕн атте те вăрçа тухса кайрĕ. Вăл ăсатма пынă çынсемпе сывпуллашрĕ, юлашки хут пире ыталарĕ. Пысăк вăйлă аллипе Иришăна темиçе хут пуçĕ çийĕн çĕкле-çĕкле тăратрĕ. Питĕ савăнатчĕ пĕчĕк йăмăкăм çитĕннисем хăйпе çапла вылясан, ахăлтатса кулатчĕ...

— Тата, атте... тата... тепре çĕкле-ха? — ыйтать вăл, мăнтăркка аллисене тăсса.

Акă атте пĕчĕк хĕрне çĕре антарса тăратрĕ, хăвăрт пăрăнчĕ те хăйне кĕтсе тăракан кӳлнĕ урапа çине пырса ларчĕ.

— Кайрăмăр,— терĕ вăл тилхепе тытнă Кольăна.

Урапа, вырăнтан хускалса, анаталла чуптарчĕ. Тӳпе çийĕн хура йывăр пĕлĕтсем шурĕç. Вичкĕн çил ахăрашса вĕçрĕ, тунсăхлăн уласа макăрчĕ.

Укăлча хапхине тухнă çынсем ялалла утрĕç. Нăшăклатса йĕрсе, анне те вĕсенчен юлмарĕ.

— Атя, Чĕкеç, киле,— хулран тытрĕ мана Верук.— Ан йĕр, çырт шăлна, тӳс. Тен, чиперех çаврăнса килĕç-ха. Валерирен ĕнер çыру илтĕмĕр терĕ инке. Мĕн çырать?

— Госпитальрен янă. Суран тӳрленет, нумай выртмастăп пулĕ тенĕ.

— Ман йысна та, Татьян аппа упăшки, госпитальрен çырнă. Сылтăм аллине татнă унăнне. Таврари ялсенче каскалас енĕпе унран ăста çын çукчĕ. Халĕ чăлах... Шутла-ха эсĕ, алăсăр ăстаçă,— Верук хулпуççине çӳçенчĕклĕн хускатса илчĕ.

Урамра пире колхоз председателĕ Андрей Прокофьевич кĕтсе тăрать. Вăл та фронтран сулахай аллине çухатса таврăнчĕ. Андрей Прокофьевич вăрçăччен те колхоза ертсе пычĕ. Аманса таврăнсан, ăна каллех председателе суйларĕç. Вăл хура çӳçлĕ, çӳллĕ арçын. Çийĕнче кивелсе тĕссĕрленнĕ çар тумĕ. Пушă гимнастерка çаннине сарлака пиçиххи айне туса çыхнă.

— Калаçмалли пур,— терĕ вăл, Верукпа юнашар утса.— Хире кайиччен правление кĕрсе тух-ха.

Аппа тăпах чарăнчĕ.

— Мĕн пулнă? Темле хыпар пур-им? — Верук председателе куçран тинкерсе пăхрĕ.

— Аптрал ку хĕрарăмсемпе! — тарăхнăн аллине шарт çапрĕ Андрей Прокофьевич.— Нимĕн калама та çук, тӳрех хăраса чĕтреме тытăнаççĕ. Ну, мĕне кура шурса кайрăн? Кĕркури пиччӳ вырăнне бригадир пулма хушас тетпĕр сана. Çавă çеç...

— Бригадир... Мĕншĕн мана? — ыйтрĕ Верук тĕлĕннĕн.

— Мĕншĕн сана мар?

— Ну, урăххине... Арçынсене.

— Аçта вĕсем, арçынсем,— çиллессĕн хирĕçлерĕ Андрей Прокофьевич.— Пур аманса таврăннисем. Пĕри урасăр, тепри вĕçĕмсĕр кхм! та кхм! тăвать, тухтăр патне чупать. Тата мĕншĕн бригадирта арçыннăн çеç ĕçлемелле? Эсĕ мĕнрен начар? Çичĕ çул вĕреннĕ. Çырма, шутлама пĕлетĕн. Уй-хирте эсĕ тума пĕлмен ĕç çук. Тимлĕ, хастар. Кирлĕ пулсан, чĕлхӳпе те никама та маххă памастăн. Кĕскен каласан, пултаратăн.

— Хăратăп эпĕ, Унри пичче... Ытла тăруках пулчĕ ку,— пăлханса каларĕ Верук.— Шухăшласа пăхас пулать...

— Шухăшласан шухăшламасан та санăнах кӳлĕнес пулать. Урăх çын çук,— татса хучĕ Андрей Прокофьевич.— Кĕр правление, ыттине унта калаçăпăр...

## VII

Вăрăма тăсăлчĕ кăçал çуллахи каникул. Ĕнтĕ тулта тĕксĕм кĕр хуçаланма тытăнчĕ. Каçсем вăрăмланчĕç. Хĕвел ăшши йăвашланчĕ. Сивĕ хĕл çывхарнине пĕлтерсе, çĕрле тăм ӳкет. Ирхине пăхатăн — тĕссĕрленнĕ курăк шапшурă. Аскăнчăк çил е çумăр пĕлĕчĕсене хăваласа килет, е каллех сапаласа ярать. Йывăç çулçи тăкăнать, ура айне пулса, салхуллăн чăштăртатать.

Уй-хирте ĕç пуçтарнă ĕнтĕ. Унта халĕ пуш-пушах, ăшă çĕрелле кайма хатĕрленекен шавлă кайăк-кĕшĕк ушкăнĕсем кăна вĕçкелесе çӳреççĕ.

Октябрĕн пĕрремĕшĕнче çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланать. Шкула каймалла-ши, каймалла мар-ши текен шухăш ман пуçа нихçан та пырса кĕмен. Манăн мĕнпур çутă шухăшĕмĕт ачаранах вĕренӳпе çыхăннă: «Вĕренсе тухам кăна»... «Нумай пĕлӳллĕ çын пулатăп та акă»,— çапла ĕмĕтленеттĕм эпĕ яланах. Çавăнпа ялти вĕреннĕ çынсем — учительсем, врачсем е фельдшерсем çине — чунтан хисеплесе, ăмсанса пăхаттăм. Анчах кăçал, шăп вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн, çав çутă шухăша Мархва кинемей хускатса иккĕлен-

терсе ячĕ. Теттĕм пулсан, вăл пирĕн пата кăштăртатса çитрĕ.

— Ларма килтĕм-ха,— терĕ те, сăхманне пата çине çакса, мăчлатса çунакан шăршлă краççын лампи çывăхне пырса ларчĕ, пĕчĕк хутаçран çип çăмхи кăларса çыхма пуçларĕ. Кинемейĕн йывăр ĕçпе хытнă алли илемсĕр, пӳрни-сем кукăрăлнă, сыпăкĕсенче тăртанса пысăкланнă. Апла пулин те çап-çутă йĕпсем ун аллинче питĕ хăвăрт вылянаççĕ.

— Ачасене хронта алшыш-чăлха ярса парас тетĕп-ха,— калаçать вăл çыхнă май.— Кăçал вăрманта мăйăр-йĕкел йышлă пулчĕ, хĕл сивĕ килет. Салтаксене шалккă. Мĕнле чăтĕç.

— Ан та кала,— хаш сывларĕ кăмака çумĕнче çăм арласа ларакан анне.

Унтан кинемей, куçлăхне çĕклесе, ман çине çиллессĕн пăхса илчĕ. Эпĕ вĕренмелли кĕнекесемпе тетрадьсене тир-пейлеттĕм.

— Эсĕ мĕн, шкула кайма пуçтарăнатăн мар-и? — ыйтрĕ вăл кăмăлсăр сасăпа.—Яла ан култар-ха, Чĕкеç. Çак са-манара хĕрупраçăн мĕн шкулĕ пултăр... Колхозра ĕç йă-тăнса тăрать. Авăн çапмалла, вутă хатĕрлемелле, турттар-ма каймалла. Фермăсенче ĕçлекенсем çитмеççĕ. Сан пек мăнттайсем те шкула кайса ларсан, колхозра кам ĕçлет? Килте тата? Кĕнекепе ларса, кĕнчеле хăçан арлас тетĕн? Сире, тăвата пыра, аннӳ пĕччен ĕçлесе епле тăрантартăр? Кольăпа Санька вĕренни те çитет. Вĕсем пĕчĕк тата арçын ачасем.

Эпĕ шарламастăп. Калăттăм та, юрамасть ватă çынпа тавлашма. Анне те килĕштерес çук ун пеккине. Ял çинче те сивлеççĕ çавнашкал ача-пăчана. «И-и, тăрлавсăр! Пăх-ха, епле тавлашать. Ырă çын пулать-и ĕнтĕ çак ачаран»,— тесе тиркешеççĕ. Çавăнпа, çиллессĕн мăкăртатакан кине-мейпе килĕшместĕп пулсан та хирĕç чĕнместĕп. Ăшра хам çапла шухăшлатăп: «Ăс пама ăста эсĕ. Сăлтав тупăнтăр кăна, тӳрех пăсăрлантарма тытăнатăн. Ху вара çĕнĕ пур-нăçа виçĕ пуслăх та ăнланмастăн. Сан шутупа, шкула ар-çын ачасен çеç çӳремелле, хĕрачасен пӳртрен тухмасăр кĕнчеле арламалла. Комсомолăн Пĕрремĕш съездĕнче Ле-нин мĕн каланă? Вĕренмелле, вĕренмелле тата та вĕрен-мелле тенĕ. Çапла хушать халĕ çĕнĕ пурнăç».

Çĕнĕ пурнăç... Халиччен никам курман, пĕлмен телейлĕ çĕнĕ пурнăç. Эпĕ ачаранах çав илĕртӳллĕ сăмахсене илтсе ӳснĕ. Хăçан килĕ вăл? Мĕнле пулĕ? Мĕн тумалла пирĕн вăл хăвăртрах çывхартăр тесен? Паллах, вĕренмелле, вĕ-ренмелле тата та вĕренмелле...

Эх, çунатлă çамрăклăх! Кам-кам пулас килместчĕ-ши манăн? Учитель те, врач та, пĕр-пĕр пысăк ученăй та... Юлашки вăхăтра хуларан килнĕ артистсен концертне курса савăннă хыççăн эпир Алинăпа артистка пулас ĕмĕтпе хавхаланса пурăнатпăр. Алина ташлама ăста. Вăл пĕчĕкренех ял çыннисене илемлĕ ташшипе савăнтарать. Юрă учителĕ мана сассу лайăх тесе мухтать, хорта ялан хăй умне чи малти рете тăратать. Атте врачсене питĕ çӳле хурса хаклать. «Лазаретсенче курнă та эпĕ вĕсене, тухтăрсене. Мĕн тери пархатарлă ĕç çав. Мĕн чул çын пурнăçне çăлса хăвараççĕ вĕсем, асапран хăтараççĕ»,— тет вăл час-часах.

Çапла, çутă ĕмĕт хитре, илĕртӳллĕ. Ун патне каякан çул инçе, тертлĕ. Çакăн çинчен мана пĕрремĕш хут кинемей астутарчĕ: «Сире, тăвату пыра, аннӳ епле пĕччен ĕçлесе тăрантартăр!»

Эпĕ ăшă кăмака çумĕнче çăм арласа ларакан анне çине шиклене пăхса илетĕп. Вăл мĕн калĕ-ши?

— Чармастăп. Вĕрентĕр,— тет анне лăпкăн.— Ача ĕмĕтне татас мар.

— Пурте шкула çӳресен, колхозра кам ĕçлет тата? — каллех çиллессĕн хирĕçлет кинемей.— Вăрçă ĕмĕре пырас çук. Кайран та вĕренет.

— Кайран каю шăтать.

— Ара, хуна хĕрхенсе калатăп. Тырă-пулăран эсир те пуян мар-ха, пĕлетĕп. Вăрçă вăраха кайсан, мĕнле тăрантарса усрас тетĕн çакăн чухлĕ ачана?

— Тӳссе ирттеретпĕр. Эпир çеç мар, мирпе пĕрле. Арçынсем çĕнтерсе, ырă-сывă таврăнччăр çеç,— тет те анне йывăррăн сывласа ярать.

Ун сăмахĕсем мана лăплантараççĕ.

Тепĕр кун ирхине ман пата Алина кĕрет. Эпир вĕренмелли кĕнекесемпе тетрадьсем хунă сумкăсене илетпĕр те шкула — тăххăрмĕш класа — тухса утатпăр. Уйкас ялĕ юнашарах, кайма инçе мар.

Пĕрремĕш вĕренӳ кунĕ ялан хаваслă, çĕкленӳллĕ. Çĕнĕ çул —çĕнĕ шухăш-ĕмĕт. Ху тата тепĕр çул ӳссе, аслăрах класа куçнине çак кун уйрăмах уççăн туйса илетĕн. Эпир те акă нумай пулмасть саккăрмĕш класра вĕренеттĕмĕр. паян «Тăххăрмĕш класс» тесе çырнă пӳлĕме кĕрсе тап-таса парта хушшине вырнаçса ларатпăр. Çак кун каллех пĕрле вĕреннĕ юлташсемпе, тантăшсемпе, туссемпе тĕл пулатăн. Хаваслă, шавлă курнăçу, вăйă-кулă. Учительсем те уйрăмах кăмăллă, шӳт тăваççĕ, пирĕн çине савăк куçпа тĕлĕннĕн, тинкерсе, сăнаса пăхаççĕ. Çапла, çу кунĕсенче кăштах улшăннă эпир, кăштах ӳснĕ. Анчах вăрçă çак уяв пек çутă

куна та тĕксĕмлетрĕ. Кăçал эпир икĕ хутлă пысăк çĕнĕ çуртра вĕренме ĕмĕтленеттĕмĕр. Ăна туса пĕтерни те нумай пулмасть.

— Пирĕнни пек шкул халлĕхе районĕпе пĕрре. Классем çутă, пысăк,— тесе хĕпĕртеттеретчĕ пире шкул директорĕ. Анчах çав аслă çурта эпир кĕрсе те кураймарăмăр. Ăна Мускавран килнĕ ачасен çурчĕ йышăннă. Пире вара каллех кивĕ, тăвăр классене кайса ларма тиврĕ. Арçын учительсенчен чылайăшĕ çук. Çĕннисем нумай. Шкул директорĕ те çĕнĕ. Тин çеç институт пĕтернĕ хĕр.

Шкулта икĕ сменăпа вĕренетпĕр. Эпир, аслă класрисем, иккĕмĕш сменăра. Кĕрхи тĕксĕм, хĕллехи кĕске кунсенче класра хăвăрт тĕттĕмленет. Юлашки уроксенче вара нимĕн те курăнмасть. Учителĕн те сасси çеç илтĕнет. Вăрçа пула шкул валли вутă та çителĕклĕ хатĕрлеймен, хатĕрленине те турттарса килеймен. Классенче сивĕ, чернил шăнать. Вуттине колхозсен тиесе килмелле. Вăрманĕ инçе, ĕçлекенсем çитмеççĕ. Кама ямалла вутă патне? Паллах, чи малтан шкулта вĕренекенсен çемйисенчен каяççĕ.

Пире, вăрçă вăхăтĕнче ӳснĕ çамрăксене, пур ĕçре те çитĕннисемпе тан ĕçлеме тиврĕ. Хирте те иртен пуçласа каçчен тапаланнă, вăрман та каснă, вутă та турттарнă.

Пурте тӳсме пултараймарĕç çав йывăрлăхсене. Кĕçех аслă классенче вĕренекенсен шучĕ сайраланма тытăнчĕ. Алина та нумай çӳремерĕ, пăрахрĕ.

— Вĕренес тесе, кунĕ-кунĕпе хутман класра чĕтресе ларма ухмах-им? Шăнса пăсăлсан, кама кирлĕ эпĕ? Вĕренӳ çăкăр мар, унсăрăн та пурăнма пулать. Анне те çаплах каларĕ,— терĕ вăл.

Тантăшăма эпĕ ӳкĕте кĕртеймерĕм. Вĕренӳ çине япалах çиелтен пăхатчĕ вăл. Урокра учительсем ăнлантарнине те тăнламастчĕ, киле панă ĕçсене те тăрăшса тăвасшăн марччĕ. Манран çырса илме тăрăшатчĕ.

— Мĕн тума кирлĕ мана çакна пĕлни? Вунă класс пĕтернине кăтартакан хут пулсан, мана пĕлӳсĕрех илеççĕ артистсен шкулне. Ташласа паратăп кăна,— тетчĕ Алина, эпĕ ăна тăрăшса вĕренме сĕнсен. Халĕ акă аттестат та кирлĕ мар. Çутă ĕмĕчĕпе те çăмăллăнах сывпуллашрĕ.

Арçын ачасенчен нумайăшĕ, ытларах вуннăмĕш класра вĕренекенсем, фронта туха-туха кайрĕç. Повесткисене класах пырса параççĕ. Пĕри те таврăнмарĕ каялла. Тăван çĕршыва хаяр тăшманран хӳтĕлесе, аякри вăрçă хирĕсенче çамрăк пуçĕсене хучĕç...

Çук, çук! Этем хăйĕн ывăлĕ-хĕрне вăрçă вутĕнче çунса пĕтме çуратмасть. Çыннăн тĕп тивĕçĕ — ĕçлесе пурнăç

тăвасси, çав пурнăçа çулран-çул çĕнетесси, илемлетесси.

Тек нихăçан та курмалла ан пултăрччĕ юнлă, тертлĕ вăрçа. Ачасене те, ачасен ачисене те. Ĕмĕрлĕхех çухалтăр вăл çĕр пичĕ çинчен!

Çав вĕренӳ çулĕнче мана шкулти комсомол комитечĕн секретарьне суйларĕç. Тепĕр кунне уроксем хыççăн директор хăй патне чĕнтерчĕ.

«Мĕн тума-ши? — шухăшлатăп эпĕ учительсен пӳлĕмĕ енне утнă май. — Коля пирки мар-ши?»

Эпĕ пӳлĕме кĕрсен, сĕтел хушшинче тем çырса ларакан Людмила Тимофеевна пуçне çĕклерĕ. Чипер пирĕн шкул директорĕ. Йăрăс пӳллĕ, çамрăк. Хура куçĕ пысăк, илемлĕ. Кăпăш çырă çӳçĕ шыв хумĕ евĕр авкаланса выртать. Тумĕ те унăн яланах тирпейлĕ, килĕшӳллĕ. Вăл хăмăр кĕпепе. Яка мăйĕ çинче шап-шурă çуха. Физика вĕрентет. Эпир ăна питĕ хисеплетпĕр: чипершĕн, килĕшӳллĕ тумĕшĕн, лайăх вĕрентнĕшĕн, уроксенче хытă тытнăшăн.

— Октябрь революцийĕ çирĕм тăватă çул тултарать,— терĕ директор, мана куçран тинкерсе пăхса.— Чаплă уява кĕтсе илме шкулта лайăх вечер йĕркелемелле. Сире, комсомолецсене, шанса парас тетпĕр çак ĕçе. Халех, ыранах хатĕрленме тытăнăр,— куçне ман çинчен илмесĕр, аллинчи кăранташне выляткаласа илчĕ Людмила Тимофеевна.— Анчах астăвăр, пĕр вăйă-кулăшăн кăна йĕркеленĕ вечер ан пултăр. Самани мĕнлине пĕлетĕр. Ыранах комитет членĕсене пухăр. Сӳтсе явăр, шухăшлăр. Тепĕр эрнерен вечер планне килсе кăтартатăн.

Директор сăмахĕсем мана шиклентерсе пăрахрĕç. Айай, çĕнĕ шăпăр çĕнĕлле шăлать! Халиччен те ирттернĕ-ха ун пек вечерсем шкулта. Анчах вĕсене учительсем ертсе пынă. Эпир, вĕренекенсем; хутшăннă кăна. Халĕ пачах урăхла... «Пултарăпăр-ши? Шкул хорĕ пур, ташă кружокĕ ĕçлет. Анчах ку сахал. Çĕнĕ юрă-сăвăсем кирлĕ. Такмаксем... Самана халĕ урăх. Хăрушă тăшман Мускав патнех çывхарчĕ»,— çакăн евĕр шухăш пăтранчĕ ман пуçра, килелле утнă май.

Чылай вăй хума лекрĕ пире, комсомол комитечĕн членĕсене, çав вечера хатĕрленме.

Тавралăха каç тĕттĕмĕ хупăрласан, шкула çынсем пухăнма тытăнчĕç. Çамрăксем кăна мар, çулланнисем те кăмăлласах пыратчĕç пирĕн вечерсене. Кĕçех класс лăках тулчĕ. Мускаври ача çуртĕнчен те хăнасем пур — ачасем, хĕрарăмсем. Вĕсем валли малта икĕ рет пукансемпе тенкелсем лартса тухрăмăр.

Доклад хыççăн вечера шкул хорĕ уçрĕ. Ăна пирĕн юрă

учителĕ Василий Сергеевич ертсе пыратчĕ. Кăвакарнă çӳçлĕ, типшĕм, çӳллĕ çын вăл. Ватă учитель. Музыкăна питĕ юрататать. Пире юррăн чăн-чăн пĕлтерĕшне, унăн чунне ăнланма, ăна итлекенсен чĕрине çитерсе хумхантарма вĕрентет. Пирĕн шкул хорĕ районĕпех паллăччĕ. Радиопа та юрланă эпир, республика итленĕ пире.

Вставай, страна огромная,
Вставай на смертный бой,
С фашистской силой темною,
С проклятою ордой,—

юрласа ятăмăр эпир, малта тăракан солистсем.

Пусть ярость благородная
Вскипает, как волна,
Идет война народная,
Священная война!—

янрарĕ хорăн хăватлă сасси.

Пирĕн çĕршывра çак юрра пĕлмен çын та çук пулĕ. Вăрçăн малтанхи кунĕсенче çуралнăскер, вăл халĕ те чĕрене хăпартлантарса хумхантарать. Ун чух вара, усал фашист пирĕн çĕршывăн пысăк пайĕнче хуçаланса иртĕхнĕ кунсенче, нумайăшĕ ăна çак вечерта пĕрремĕш хут илтрĕ, мĕншĕн тесен радио пур килте те кăна мар, нумай ялта пулман. Юррăн вырăсла сăмахĕсене те, паллах, пурте ăнланмарĕç. Анчах кĕввине, мăнаçлăн янракан хаяр, хăватлă кĕввине, чĕрепе туйса илмен çын пулмарĕ пулĕ. Хускалмасăр, тимлĕн итлерĕç, тăвăллăн алă çупса саламларĕç.

Вуннăмĕш класра вĕренекен Петров Василий Лермонтовăн «Бородино» сăввине вуласа пачĕ.

Ребята! Не Москва ль за нами?

Çак тĕле çитсен, сăвă калаканăн сасси уйрăмах çĕкленсе янраса кайрĕ. Ман шăмшак тăрăх сивĕ сăрăлтатса иртрĕ. Эпĕ вулакан çине тĕлĕнсе пăхатăп. Тăрать çап-çамрăк каччă. Çинçешке пӳ-силлĕ, типшĕм пит-куçлă. Пуçне мăнкăмăллăн çĕкленĕ, чышкине çиллессĕн чăмăртанă. Ахаль те тӳп-тӳрĕ тăраканскер, вăл татах тӳрленчĕ, умри çынсене хастаррăн çуталнă куçĕпе пăхса çаврăнчĕ.

Пĕрремĕш ретре ларакан кăвакарнă çӳçлĕ вырăс хĕрарăмĕ, ачасен воспитателĕ пулас, ура çине тăчĕ те алă çупса ячĕ. Ун хыççăн ыттисем те çĕкленчĕç. Вара класри мĕн пур çын çамрăк вулакана тăвăллăн алă çупса тав тума тытăнчĕ.

Çапла çĕр çитмĕл ултă çул каялла пулса иртнĕ Пер-

ремĕш тĕнче вăрçи çинчен çырнă вырăссен паллă поэчĕн сăвви çак вечерта çĕнĕ вăйпа янраса илтĕнчĕ, итлекенсен чĕринче ырă, вăйлă туйăмсем çуратрĕ.

Василий Петрова эпĕ шкулта тек курмарăм. Вăл хăй ирĕкĕпе фронта тухса кайнă терĕç...

Çав вечерта совет поэчĕсемпе писателĕсен вăрçă çинчен çырнă малтанхи произведенийĕсем, фашист оккупанчĕсене, Гитлера питлекен юрăсем, такмаксем илтĕнчĕç.

Усал, выçă кашкăрне,
Кĕтÿ панчен хăвалар.
Усал çăткăн фашистне
Мускав панчен хăвалар.

Акă тата сăвă:

Нимĕç халăх çĕрĕнче,
Аслă Берлин хулинче
Ларать Гитлер мухтанса,
Совет çĕрне хапсăнса.
Тăхта, Гитлер, каппайма,
Тăхта, хурах, хапсăнма.
Вăхăт çитĕ — тытăпăр,
Виççĕн хыçран тапăпăр,
Çиччĕн пуçран çапăпăр,
Купташкуна ватăпăр,
Шăршлă масару çине
Анра курăк акăпăр.

Халăх йĕркеленĕ çак çивĕч, хаваслă сăвва эпир каярах ытти ялсенчи вечерсенче те кала-кала патăмăр. Питĕ кăмăлласа йышăнатчĕç ăна çынсем.

Çав вечерпа çыхăннă тата тепĕр пĕчĕк асаилÿ пуçа килсе кĕрет. Халĕ те кулас килет. Кольăпа Алик сцена çинче пĕчĕк спектакль выляса пама шут тытнă. Пьесин ятне те, авторне те астумастăп ĕнтĕ.

Икĕ салтакран пĕри — совет çынни, тепри — фашист — эсĕ мĕн тума алла хĕçпăшал тытрăн? тесе ыйтаççĕ. Фашисчĕ — вĕлерме, çаратма, хуçаланма, пуçпулма тет. Совет салтакĕ — çĕршыва хÿтĕлеме, тăван халăха фашистсен пусмăрĕнчен çăлма тет. Репетици тума тытăнчĕç те — акă хайхи! — иккĕшĕ те фашист рольне илесшĕн мар. Тавлашса та пăхрĕç, шăпа та ячĕç, кăшт çеç çапăçса каймарĕç. Çук, килĕшÿ пулмарĕ.

## VIII

Хĕл ларчĕ. Кунсем тата кĕскелчĕç. Пирвайхи сивĕсем çитсе шаккарĕç, чÿрече кантăкĕсене эрешлесе ÿкерчĕç.

Вăрçă çулĕсенчи пĕрремĕш хĕл. Мархва кинеми тĕрĕс каларĕ, ыхх сивĕ пулчĕ вăл! Çапах ял çыннисем вут-шанкăран та, çăкăр-тăвартан та ытлашши аптрамарĕç-ха çав çул. Унччченхи юр-вара çисе яма ĕлкĕреймен, вăрçăччен хатĕрленĕ вутă шаршанĕсене çунтарса пĕтермен. Апчах çĕршывшăн çав хĕлĕн пирвайхи уйăхĕсем чи хăрушă, чи йывăр кунсем пулчĕç. Хĕрӳ çапăçусенче çĕршер, пиншер салтак, тĕрлĕ техника çухатса, тăшман çаплах Мускав çывăхнелле шурĕ. «Нивушлĕ тытса илĕç? Эй, тур-тур! Мĕн пулĕ вара?» — хăраса пăшăлтататчĕç çынсем.

Пысăк япалана лайăх курас тесен, уп çине аякран пăхмалла. Эпĕ те халĕ çав тахçан иртнĕ тертлĕ кунсем çине аякран, нумай çул иртсен, тинкерсе пăхатăп. Аша çĕкленӳллĕ çутă туйăм хумхантарать. Чăннипех, сăмахпа каласа пама çук, паттăр вăхăт пулнă вăл. Фронтра кăна мар, тылра та. Пур çĕрте те ырми-канми ĕçленĕ, мĕн ĕçлесе тунине Хĕрлĕ Çара пулăшма панă.

Çанталăк сивĕтсенех фронта ăшă япаласем яма тытăнчĕç: алсиш-нуски, перчеткесем, кăçатсем. Малтан çывăх çыннисем, тăванĕсем патне. Унтан, колхоз пухăвĕнче йышăннă хыççăн, фронта, Хĕрлĕ Çар салтакĕсем патне. Кам мĕн пама пултарать: çăм, тир, ăшă кĕрĕк, кăçат. Никам хушмасăр, хистемесĕр, кашни хăй ирĕкĕпе, ырă кăмăлпа панă çав япаласене.

Шурă-шурă сурăханне
Çăмне касса илтĕмĕр,
Шур перчетке çыхрăмăр,
Фронта ярса патăмăр,—

тесе юрлатчĕç ун чух.

Шкулта та посылкăсем хатĕрлеме тытăнтăмăр. Эпир, хĕрачасем, хавасланса, пĕр-пĕрипе ăмăртса, сăмса тутрисем тĕрлетпĕр, табак хутаççисем çĕлетпĕр, перчеткесем, алсасем, нускисем çыхатпăр. Комсомол комитечĕ сĕннипе, эпир, шкул ачисем, хамăр спектакльсене, концертсене малашне билетпа кĕртес, пухăннă укçине фронта пулăшма парас тесе йышăнтăмăр.

Шкултан эпĕ халь тĕттĕм пулсан тин таврăнатăп, хутман тĕттĕм сивĕ пӳрте кĕретĕп. Анне йĕтем çинче авăн çапать, шăллăмсем, паллах, урамра, вăйăра. Мĕн тăвăн ĕнтĕ вĕсемпе? Коля мана пачах итлемест, аннене те хирĕçлеме пăхать. Саня ытларах пиччĕшĕ енне туртăнать. Ириша йăмăкăм е килте, е кӳршĕсем патĕнче.

Акă эпĕ пӳрте кĕрсе кĕрĕке хывса çакатăп та краççын çутса яратăп. Ириша сак çинче хутланса выртать, çӳхе

утиялпа пĕркеннĕ те çывăрать. Ашăрах витес тесе, эпĕ ун патне хуллен утса пыратăп. Вăл, куçне уçса, хаваслăн кулса ярать те мана măйран ыталаса илет.

— Чĕкеç, эсĕ мĕн, эпĕ çывăратăп тесе шутларăн-им? Э-э, илтрĕм эпĕ эсĕ килнине. Юри çывăрнă пек пулса вырт-рăм.

— Выртах, вырт. Пӳртре сивĕ. Акă вутă хутса яратăп. Кольăпа Санька ăçта?

— Пĕлместĕп. Кĕçех килетпĕр тесе кайрĕç те... Суйрĕç мана. Алăкне хытă хупса хăварчĕç. Эпĕ уçаймарăм,— пĕлтерет йăмăкăм салхуллăн.— Чĕкеç, манăн çиес килет.

Эх, мăнтарăн хĕрачи! Сивĕ, тĕттĕм пӳртре вăл эпĕ шкултан килессе пĕр-пĕччен, чăтăмлăн кĕтет. Анчах, шухăшласан, нумайăшĕ, ачасене çапла хупса хăварса, ĕçе тухса каять. Патшалăх умĕнчи парăма татнă хыççăн колхоза авăн çапма килнĕ трактор урăх яла кайрĕ. Юлнă тырра халĕ хĕрарăмсем алăпа çапаççĕ. Юрать-ха, эпир шкула икĕ сменăпа çӳретпĕр. Капла аннене те çăмăлтарах: шăллăмсем килти вырăх-чĕрлĕхе тăрантараççĕ, шăвараççĕ. Вутă хутса каçхи апат пĕçерме мана тивет.

Эпĕваскатăп. Анне киличчен шыв та пулин вĕретесчĕ. Вăл ывăнса таврăнать. «Ăшчик сиксех чĕтрет. Темшĕн ытла шăнакан пултăм-çке»,— тет вăл яланах, ăшăннă кăмака çумне лăпчăнса.

Эпĕ Иришăна çăкăр касса паратăп та сарайне вутă илме тухатăп. Пуленкесене çĕклесе, тĕттĕм сарайран тухма тăтăм çеç, картиш алăкĕ яри уçăлса кайрĕ те, Кольăпа Саня вирхĕнсе кĕчĕç, унтан Алик курăнчĕ.

— Коля, тăхта, калаçмалли пур,— терĕ вăл васкаса.— Коля... анне пĕлет...

Эпĕ ирĕксĕрех тӳрленсе тăтăм. Мĕн?.. Мĕн пĕлĕт Алик амăшĕ? Мĕн пытараççĕ çак ашкăнчăксем амăшĕсенчен? Паян кăна вĕсен класс руководителĕ Ирина Ивановна урамра тĕл пулчĕ те ӳпкеле-ӳпкеле мана Коля çинчен каласа пама тытăнчĕ:

— Пĕтĕмпех пăсăлса кайрĕ. Уроксене итлесе лармасть. Киле панă ĕçсене тумасть. Листопадовпа вĕçĕмсĕр тем çинчен пăшăлтатса лараççĕ.

«Кайран, вăрçă хыççăн, вĕренетпĕр, халĕ вăхăт çук», теççĕ,— типшĕм пит-куçлă Ирина Ивановна, эпĕ айăплă пек, ман çине сиввĕн пăхса илет.— Мĕншĕн халĕ вĕренмелле мар? Мĕншĕн вăрçă хыççăн тин?

Чăнах та, мĕншĕн?.. Тата мĕн пĕлет Алик амăшĕ? Эпĕ тĕттĕмелле куçса тăтăм та хăлхана чăнках тăратрăм.

— Эх, эсĕ те çав! — илтĕнчĕ Кольăн çиллес сасси.

— Эсӗ ху тата! — хирӗҫлерӗ Алик.— Сан пирки пулчӗ ку. «Хатӗрленес пулать... Ку кирлӗ... вӑл кирлӗ»,— витлесе илчӗ вӑл.— Мана итленӗ пулсан...

— Ҫапла пулмасӑр... Вӑхӑтра лараймасан, мӗн тӑвӑн? Мӗн ҫиес тетӗн? Е ыйткалама каятӑн?

— Ахалех ҫыхлантӑм санпа! — кӑшкӑрчӗ Алик.— Эсӗ пулман пулсан... — вӑл вӗлт ҫаврӑнчӗ те картишӗнчен вирхӗнсе тухрӗ.

— Чупах, чуп! Мӗн тумаллине эпӗ хамах пӗлетӗп,— терӗ Коля.

Эпӗ шухӑша кайрӑм.

Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланас умӗн пирӗн пата Алик амӑшӗ Александра Яковлевна кӗнӗччӗ.

— Шкула каясшӑн кастарать-ҫке ман ывӑл,— терӗ вӑл.— Кольӑран уйрӑласшӑн мар. Тоня, мӗнле шухӑшлатӑн, Алик чӑваш шкулӗнче вӗренме пултарӗ-ши? Тумтир, атӑ-пушмак усӑсӑр ҫӗтсе ҫӳрени пулмӗ-ши? — ыйтрӗ вӑл манран.

Алик — ҫивӗч ача. Ялти арҫын ачасем хушшинче унӑн юлташсем темӗн чухлех. Ӗнтӗ вӑл чӑвашла хӑюллах перкелешет. Ҫавӑнпа эпӗ Александра Яковлевнӑн иккӗленӗвне сирме тӑрӑшрӑм, тем-мӗн пулсан, пӗлтерме сӑмах патӑм. Мӗн калас ӗнтӗ халӗ Александра Яковлевнӑна? Аннене тата?

Акӑ анне ӗҫрен килчӗ те, эпир ҫемйипех апат ҫиме лартӑмӑр.— Ҫӑкӑра паян кӑна пуҫларӑм-ҫке... Ҫак татӑк ҫеҫ юлчӗ-и? — тӗлӗнсе ыйтрӗ анне, ҫавра ҫӑкӑр сӑмсине алӑра ҫавӑркаласа.— Е кам та пулин кивҫен илсе кайрӗ-и, Чӗкеҫ?

— Никам та килмен.

— Аҫта кайса кӗчӗ вара ҫавӑн чухлӗ ҫӑкӑр?

Санька пуҫне усрӗ те хӗрелсе кайрӗ, унтан юнашар ларакан пиччӗшӗ ҫине «ма каламастӑн?» тенӗн, йӑпӑрт пӑхса илчӗ.

— Эпӗ те курман. Никама та паман,— терӗ Коля, анне куҫӗнчен хӑюллӑн пӑхса.

— Ак тамаша. Вӑрӑ килчӗ-и вара ҫав ҫӑкӑр ҫавришӗн? — анне пирӗн ҫине сӑнаса пӑхса илчӗ.

Ҫенӗкре ура сассисем илтӗнчӗҫ. Алӑка шаккарӗҫ те, пӳрте Александра Яковлевнӑпа Алик кӗрсе тӑчӗҫ. Кӳршӗ хӗрарӑмӗ тӳрех малалла иртрӗ.

— Сирӗн-и ҫакӑ? — ҫиллессӗн ыйтрӗ вӑл, кантрапа кутамкка туса ҫыхнӑ пир хутаҫа ҫӗклесе.

Унтан ӑна салтса уҫрӗ те сӗтел ҫине пысӑк ҫӑкӑр татӑкӗ кӑларса хучӗ.

— Ку та сирӗн пулас.

Тĕлĕннĕ анне пĕрре умри хĕрарăм, тепре çăкăр татăкĕ çине пăха-пăха илчĕ.

— Пирĕн... хутаççи те, çăкăрĕ те... Анчах мĕнле майпа?..

— Куратăр пулĕ, çула кайма хатĕрленнĕ,— каллех кутамккине çиллессĕн силлесе кăтартрĕ Александра Яковлевна.— Акă пăхăр. Улăштарса тăхăнма таса кĕпе-йĕм, алшăлли, тура. Тĕкĕр татăкĕ те пур. Тата апат-çимĕç,— Алик амăшĕ мăчăлтатса çунакан краççын лампи çывăхне пычĕ те хутаçра мĕн пуррине сак çине силлерĕ, малтан Коля, унтан алăк патĕнчен иртмесĕр тăракан ывăлĕ çине уççăнах тăрăхласа пăхса илчĕ.

— Ĕнер пасарта çур кило услам çу илтĕм,— тăсрĕ вăл сăмахне.— Паян пăхатăп та — пĕчĕк татăк выртать. Ачасем нумай манăн, анчах ыйтмасăр вăрттăн илес йăла çук. Халиччен ун пек йĕркесĕрленнине курман. Кашниччен ыйтса тухрăм — пĕри те илнине каламасть. Юрать-ха пĕчĕкки курнă — çав кăтартрĕ хутаç тĕлне.

— Ăçта кайма пуçтараннă вара вĕсем? — тата та ытларах тĕлĕнчĕ анне.

— Сехет ытла тĕпчерĕм ĕнтĕ çавна пĕлесшĕн,— Александра Яковлевна каллех ывăлĕ çине çаврăнса пăхрĕ.— Чĕлхи çĕтнĕ тейĕн, шăпăрт та чĕнмест. Ну, мĕн тĕттĕмре пытанса тăратăн? Ирт кунталла. Е Ирина Константиновна куçĕнчен пăхма намăс-и?

Алик амăшĕпе юнашар пырса тăчĕ.

— Намăс мар,— мăкăртатрĕ вăл, анчах пуçне çĕклемерĕ.

— Акă хайхи, уçăлчĕ çăварĕ.

— Коля, ачам, кала, ăçта кайма пуçтараннă эсир? — ыйтрĕ анне, пăлханса.

— Ниçта та мар,— ирĕксĕррĕн сăмах хушрĕ шăллăм.— Алика: «Мускава кайса курасчĕ манăн»,— терĕм те...

Ман пуçра шухăш çиçĕм пек вĕлтлетсе иртрĕ.

— Пĕлетĕп... Пĕлетĕп. Мускава мар, фронта тухса тарма шут тытнă вĕсем! — çавăнтах чăтаймасăр персе ятăм эпĕ.

Анне ахлатса ячĕ, çăкăр тытнă алли чĕтрерĕ. Икĕ мăшăр куç самантрах ман çине тирĕнчĕ: тĕлĕннĕ Алик, тем калас пек, çăварне уçрĕ, Коля куç айĕн сăнаса пăхрĕ.

— Ну, ма чĕнместĕр? Тĕрĕс калать-и Тоня? — ыйтрĕ Александра Яковлевна, ывăлĕ çиччен куçне илмесĕр.

— Ахалех хыпкаланатăр,— кулкаларăм эпĕ.— Илмеççĕ сире фронта. Эсир вуннисçĕре кăна.

Аликăн куç харшийĕсем çиллессĕн пĕрĕнчĕç.

— Илеççĕ,— терĕ вăл çирĕп сасăпа.— Полк ывăлĕсем

çинчен вуланă-и эсĕ? Гайдар тата... Вăл вунулттăра полк командирĕ пулнă.

— Илмеççĕ! Илмеççĕ!

Темшĕн ман вĕсене çĕтĕлтерес, çиллентерес килчĕ. Кĕвĕçрĕм пулĕ-ши.

— Пире илеççĕ,— терĕ Коля вăрахран.— Сире, хĕрачасене, илмеççĕ.

— Эсĕ нимĕн те пĕлместĕн. Халĕ фронтра темĕн чухлĕ хĕр çапăçать. Вунсаккăрта пулнă пулсан, тен, эпĕ те...

— Тем тума кирлĕ пулĕ сан пеккисем вăрçăра,— пӳлчĕ мана шăллăм.— Эсир, хĕрачасем, пурте хăравçăсем... Шăши курсан та çухăрашса таратăр...

Ух, мĕн тери кӳрентерчĕç мана çак сăмахсем. Ансăртран хыпса илнĕ вут пекех, ăша пĕçертсех ыраттарчĕç.

— Илмеççĕ сире! Пурĕпĕр илмеççĕ! — терĕм эпĕ тарăхнипе урăх сăмах тупаймасăр.

— Пирĕншĕн ан кулян. Эпир пĕлетпĕр. Пурин çинчен те малтанах шухăшласа хунă. Ман унта кукка пур. Илмесен...

Алик тăруках шăпланчĕ, хăй ытлашши персе янине тавçăрса илчĕ те хĕрелсе кайрĕ.

— Авă епле! — тĕлĕнчĕ Александра Яковлевна.— Илтетĕр-и, Ирина Константиновна? Чăннипех пурне те шута илнĕ: апат-çимĕçе кăна мар, Гайдара та... куккăшне те. Ман шăллăм вăл. Мускаври пысăк завод директорĕ пулса ĕçлет... Ну, юрĕ,— хĕрарăм каллех пуçне суллакаласа илчĕ.— Калаçрăмăр. Мĕн кирлине пĕлтĕмĕр... Халĕ марш киле! — Александра Яковлевна алăк патнелле утрĕ.

— Пурĕпĕр каятпăр,— амăшĕ çине куç айĕн пăхса, çиллессĕн мăкăртатрĕ Алик.— Эпир тупа тунă. Чăн-чăн пионер сăмахĕ панă...

— Калаç-ха, калаç...

Вĕсем тухса кайма ĕлкĕреймерĕç, пӳрте колхоз председателĕ килсе кĕчĕ. Сывлăх сунса, пасарса шуралнă çĕлĕкне хыврĕ.

— Килех. Иртсе лар малалла,— сĕнчĕ анне.

— Çук, иртместĕп,— терĕ председатель, алă тупанĕпе кăвакарма пуçланă çӳçне шăлкаласа.— Çула май кĕтĕм. Военкоматра пултăм та. Хут парса ячĕç сире... Ан хăрăр, лайăх хут. Валери аттестат янă. Укçа илме каймалла.

— А-а, килчĕ-и? Валери çырса пĕлтерчĕ-ха,— анне тăсса панă хут листине илчĕ.

— Мĕн пулнă сире? Мĕн эсир пурте ытла та... шăпărт? — ыйтрĕ колхоз председателĕ.

— Пуласси-качки,— терĕ анне пусăрăнчăк сасăпа.—

Ача-пăча пуçа пăтрататъ... Фронта тухса тарма пуçтарăннă ак çак икĕ шĕвĕр.

— Ну-у! — терĕ Андрей Прокофьевич, Кольăпа Алик çине тĕлĕнсе пăхса.— Мухтатăп... Чăннипех мухтатăп. Маттур ачасем! Уй-хирте мĕнле хастар ĕçлерĕç вĕсем кăçал! Хăвăрах шухăшлăр, ака-суха тума пултараççĕ пулсан, мĕншĕн эсир вĕсене фронтра, хĕçпăшал тытса, çапăçма пултараймаççĕ пулĕ тетĕр? — мĕн калĕç-ха тенĕн, Андрей Прокофьевич малтан анне, унтан Александра Яковлевна çине тинкерсе пăхрĕ.

Тĕлĕнмелле çын иккен вăл, пирĕн колхоз председателĕ. Эпĕ вăл арçын ачасене ӳпкелеме, тĕрлĕ канашсем пама тытăнать пулĕ тенĕччĕ. Чăнах та, мĕнле салтаксем пулĕç вĕсем, вунвиççĕри ачасем? Вăл пур — мухтать... Тен, шӳт тăвать? Çук, уи пек те туйăнмасть. Аннепе Александра Яковлевна та тăруках шăпланчĕç. Пĕр сăмах та пулин хирĕçлесе каласчĕ хуть. Вăт тĕлĕнтермĕш!

— Ачисем ĕçлерĕç-ха. Çăвĕпех ĕçлерĕç,— терĕ те анне шăпланчĕ. Алик амăшĕ пачах та чĕнмерĕ.

— Акă мĕн, маттурсем,— терĕ Андрей Прокофьевич, çĕлĕкне тăхăнса.— Пуçтарăнăр. Колхоз правленине, ман кабинета, кайăпăр. Унта пире виççĕн юнашар ларса каласма чăрмантаракан çук. Тата ман сирĕнпе канашламалли пур. Вăрçă вăхăтĕнче колхоз председателĕ пулса ĕçлеме йывăр, ытла та йывăр. Сӳтсе явăпăр пур ыйтăва та. Фронта каяс пирки те... Виççĕн, чăн-чăн арçынсем пек.

Курасчĕ сирĕн, ачасен сăнĕ-пичĕсем епле çуталса кайнине! Чăн-чăн вăрçăра нимĕç фашисчĕсемпе çапăçса аманнă Хĕрлĕ Çар командирĕ вĕсене мухтать-çке, хĕçпăшал тытса çитĕннисем пекех хастаррăн çапăçма пултараççĕ тет. Алик Андрей Прокофьевич çумне пырса тăчĕ. Коля, апат çиесси çинчен манса, йăпăр-япăр сĕтел хушшинчен сиксе тухрĕ, вăрт-варт тумланчĕ.

Тем калаçнă вĕсем колхоз правленинче. Ыйтсан, Коля ман çине кăшт тăрăхларах пăхса илчĕ кăна.

— Военная тайна. Разглашению не подлежит,— терĕ Алик хаваслă сасăпа.

Çемьере фронта каяс пирки тек сăмах хускалмарĕ.

* * *

Иккĕмĕш сменăра уроксем пуçланман-ха. Партăсем хушшине лариччен кăшт та пулин ăшăнас тесе, эпир тĕккелешетпĕр, вылятпăр, пĕр-пĕрин хыççăн хăваласа чупатпăр. Акă Алексей Матвеевич, пирĕн класс руководителĕ,

кукăр туйп çине тĕрĕнсе, уксахласа кĕчĕ. Вăл пирс историпе вĕрентет. Урине граждан вăрçинче амантса таврăннă теççĕ. Алексей Матвеевич сĕтел патне васкаса çывхарчĕ те пире темле уйрăмах хаваслăн çуталнă пит-куçпа пăхса çаврăнчĕ. Эпир, самантрах шăпланса, учитель çывăхне пырса тăтăмăр.

— Ачасем! Юлташсем! — терĕ класс руководителĕ, сиксĕнмеллех хумханса.— Хаваслă хыпар пĕлтерме килтĕм сире! Пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕç оккупанчĕсене Мускав патĕнчен каялла хăвалама тытăннă. Тарать усал фашист! Илтетĕр-и, тусăмсем, тарать! Çапла пулнă, çапла пулĕ те! Çур çул кĕтрĕмĕр эпир çак хыпара. Раççей халăхĕ ĕмĕрне те хăй çĕрĕ çинче тăшмана хуçаланма паман. Акă вăл, пуçланчĕ наступлени! Савăнăр, ачасем!

— Урра! — тесе кăшкăрас килчĕ манăн.

Çак кĕске самантра пирĕн класс руководителĕ те улшăнса кайнăн туйăнчĕ. Кĕлетки-сурăмĕ тӳрленсе çамрăкланнă, перкеленнĕ пичĕ çуталнă, кăвак куçĕнче хаваслăх çиçет. Ман хыçра тахăшĕ хуллен пăшăклатса илчĕ. Пурте харăсах çав сасă енне пуçĕсене çавăрчĕç. Марье йĕрет. Ёнер кăна ашшĕ Мускав çывăхĕнче тăшманпа çапăçса вилни çинчен хыпар илнĕ вĕсем. Тата тепĕр икĕ хĕрача куççене шăлкаласа тăраççĕ. Алексей Матвеевич сăнĕ тăруках тĕксĕмленчĕ, ансăр хулпуççийĕ усăнчĕ. Вăл нимĕн те каламарĕ, çавăрăнчĕ те, йывăррăн уксахласа, алăк патнелле утрĕ. Унăн хăйĕн те хуйхи пысăк пулнă иккен. Çуркунне çара кайнă ывăлĕнчен вăрçă тухнăранпа та çыру килмен.

Анчах ыра хыпар ыра хыпарах. Вăл пусăрăнчăк шухăшкăмăла хăваласа, ăшра çута ĕмĕтсем çуратрĕ. Çак хаваслă хыпара эпир, вĕренекенсем, хĕрӳллĕ сӳтсе яврăмăр. Темле тапаласан та, тăшман пирĕн çĕршывăн тĕп хулине илеймерĕ. Халĕ Мускав патĕнчен каялла тарать. Апла пирĕн Хĕрлĕ Çар фашист çарĕнчен вăйлăрах. Кĕçех çăткăн оккупантсене совет çĕршывĕнчен пĕтĕмпех кăларса сирпĕтĕç. Вара вăрçă пĕтет. Ах, хăçан килĕ-ши вăл, çав хаваслă çĕнтерӳ кунĕ? Хăçан? Паллах, çулла. Нимĕç оккупанчĕсем пилĕк-ултă уйăхран Мускав патне çитрĕç. Пирĕн Хĕрлĕ Çар та вĕсене çур çултан хамăр çĕршывран хуса ярĕ. Вара салтаксем таврăнĕç, вĕсемпе пĕрле атте те, тен, Валери те курма килет. Акă вĕсем иккĕшĕ те юнашарах утса пыраççĕ. Атте çурăмĕ хыçĕнче симĕс салтак кутамкки, вăл темшĕн кăштах уксахлать. Валери ыра-сывах, вăл вĕр-çĕнĕ летчик тумĕпе, йăрăс пӳллĕ, чипер. Ун аллинче чăматан. Акă, укăлча хапхине уçса, яла кĕчĕç. Эпир, вĕçнĕ пек, вĕсене хирĕç вирхĕнетпĕр. Коля, Саня,

пӗчӗк Ириша. Анне те пирӗнтен юласшӑн мар. Тата кам-ши ҫавӑ, питӗ васкаса утать? Ку та ҫар тумӗпе... Ҫавра питлӗ, хура куҫлӑ, ҫӳллӗ ҫамрӑк. Вӑл хаваслӑн йӑлкӑшса кулать, аллипе сулса, мана аякранах саламлать... Ҫук, ҫук! Ан ултала мана, суя шанчӑк. Вӑл тахҫанах ҫук ҫутӑ тӗнчере, вӑл нихӑҫан та килмест...

Ҫакӑн евӗр шухӑш-кӑмӑлпа пуҫа пӑтратса, яла ҫитни-не сисмен те... Урамра шавласа вылякан ача-пӑча сасси ман шухӑшсене татрӗ.

— Чегесь!

Мана хирӗҫ Аликпа Коля чупаҫҫӗ, тумӗсем шап-шурӑ юр.

— Чӗкеҫ,— калама тытӑнчӗ Коля, анчах ӑна ҫавӑнтах Алик пӳлчӗ.

— Тоня, —ҫамки ҫине анса ларнӑ ҫӗлӗкне ҫӳлелле тӗртсе илчӗ вӑл.— Красная Армия... Э-э-э... Хӗрлӗ Ҫар фашист-сене Мускавран хӑваласа янӑ. Драпают фрицы. Понимаешь? Чупаҫҫӗ... Только пятки сверкают. Здорово, да, Тоня? — чӑваш, вырӑс сӑмахӗсене пӑтраштарса, хаваслӑн пӗлтерет Алик.— Знаешь, пирӗн танксем халӗ вӗсенчен вӑйлӑрах. Бух! Бух! переҫҫӗ те, чупаҫҫӗ проклятый фашистсем. «Ҫитет чакса! — терӗ Сталин юлташ.— Малалла та наступлени тӑватпӑр. Пӗр фриц юлмиччен весь кӑларса сирпӗтетпӗр совет ҫӗршывӗнчен!» Вот ҫапла каларӗ Сталин юлташ.

— Наше дело правое! Мы победим! — кӑшкӑрчӗ халӗ кӑна чупса ҫитнӗ Санька. Вӑл хӑма татӑкӗсенчен ҫапкаласа тунӑ автоматне ҫӗклерӗ те каллех ачасен ушкӑнӗ еннелле чупрӗ.— Урра! Вперед! В атаку!

Кольӑпа Алик та ун хыҫҫӑн вӗҫтерчӗҫ. Эпӗ килелле утрӑм. Тавралӑх паҫӑрах тӗттӗмленнӗ. Шӑнса пӑрланнӑ пӳртсен чӳречисенчен сарӑ ҫутӑсем имшеррӗн сӑрхӑнаҫҫӗ. Пирӗн кантӑк та ҫутӑ мар-и? Эпӗ ҫӑмӑллӑн сывласа ятӑм. Апла анне килте. Манӑн паян вут хутас, апат пӗҫерес шухӑш ҫук.

— Килтӗн-и? — терӗ анне, мана хирӗҫ тӗпелтен тухса. Вӑл ҫӗнӗ кӗпе тӑхӑннӑ, пуҫне шап-шурӑ якатнӑ тутӑр ҫыхнӑ.

— Эпир аннепе Александра Яковлевна патне хӑнана каятпӑр,— пырса тӑчӗ ман ума пӗчӗк Ириша.— Сахӑрпа чей ӗҫме. Чӗнчӗ вӑл аннене. Мана та чӗнчӗ. Эсӗ те пыр терӗ. Куратӑн-и, кӗпе мӗнле хитре манӑн? Чӗнтӗрлӗ,— мухтанчӑклӑн кулкаласа, ҫаврӑнкаларӗ вӑл.— Ана мана ӗнер Валери пичче парнелерӗ.

— Ӗнер мар. Ҫулла. Унтанпа темиҫе ӗнер те иртнӗ.

Анланатăн-и? — эпĕ йăмăкăма хул айĕнчен тытатăп та вăр та вар çавăратăп.

— Кĕпипе мухтанать-и-ха? Хĕрача темерĕн,— кулать анне.— Апат кăмакара. Эпир çирĕмĕр,— тет вăл мана.— Паян кăнтăрлаччен çеç ĕçлерĕмĕр. Правленире çапла йышăннă терĕ бригадир. Хыпарне пĕлетĕн ĕнтĕ...

Çав хĕллехи кунсенче пурте нимĕç çарне Мускав патĕнчен хуса яни çинчен хавасланса калаçрĕç.

— Пăкки шанчĕ нимĕçĕн. Малалла эпир хăвалама тытăнатпăр ун салтакĕсене.

— Ах, тем пекехчĕ!

— Хăвăртрах хуса яччăрччĕ.

— А мĕн? Халĕ ĕнтĕ...

Анчах пурнăç ĕмĕт мар. Йывăр пулчĕ Çĕнтерӳ çулĕ, ах, йывăр. Час килмерĕ çав чунтан кĕтнĕ кун... Пайтах юн юхрĕ, пайтах тертленчĕ халăх, пайтах вĕри куççулĕпе çăванса, ăшчикне çунтарчĕ.

## IX

Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх пĕрремĕш çул вĕçленчĕ. Пурнăç хĕрĕх иккĕмĕш çине пусрĕ. Тулта сивĕ, калама çук сивĕ. Тӳпере пĕлĕт те хăйĕн ялкăш кăвак тĕсне çухатнă, вăл та шăнса пăрланнăн туйăнать. Пӳртри ăшша кăшт та пулин тытас тесе, хаяр Хĕл Мучи çӳлтенех тĕрлесе шуратнă чӳречесем, пасарнă пӳрт алăкĕ çине анне утиял, çивиттисем çака-çака ярать.

— Эпир кунта ăшă пӳртре ларатпăр. Ах, салтаксем мĕнле тӳсеççĕ-ши? Кăнтăрла та, çĕрле те тулта,— тет вăл час-часах.

Телее, вăхăт вырăнта тăмасть. Вăл малаллах шăвать. Кунсем ерипен вăрăмланаççĕ. Хĕвел çӳлерех те çӳлерех çĕкленет. Ун ăшшине çĕнме хаяр хĕл тек вăй-хал çитерейместь. Каçсенче унчченхи пекех хуçаланма пăхать пулин те, хăвачĕ йăвашлансах пырать. Çуркунне çывхарать.

Çавăн пек çутă кунсенчен пĕринче тĕпче тăрăх канмасăр лăскаса чупакан вăрçăн хура хыпарĕ Верук килне те пырса шаккарĕ.

Çав вырсарникун эпĕ анне вырăнне тырă вăрлăхĕ тасатма кайрăм.

— Илля хыпарсăр çухалнă тесе хут килнĕ,— пырса пĕлтерчĕ тахăшĕ.

— Ак тамаша! Енер кăна çыру илтĕм терĕ-çке Верук!

Хĕрарăмсем, ахлата-ахлата, çак хыпара сӳтсе яврĕç. Унтан каллех ĕçе тытăнчĕç. Тĕттĕм пуличчене тăрмашрă-

мăр колхоз ампарĕсем патĕнче. Верук бригадир ĕçленĕ çĕре пымарĕ.

Ĕç вĕçленсен, эпĕ киле кĕмесĕрех ун патне кайрăм. «Татăлсах йĕрет пулĕ ĕнтĕ. Мĕн калас? Мĕн сăмах тупас йăпатма?» — пăлханса шухăшларăм эпĕ, çутă кантăксем çине пăхса. Пӳрт алăкĕ уçăлса хупăннине илтсе, Верук тĕпелтен пуçне кăларса пăхрĕ.

— А-а, Чĕкеç, эсĕ-çке! Атя, иртсе лар. Ну, мĕнле унта? Сăвăрса пĕтертĕр-и? Анне сасартăках чирлесе ӳкрĕ те, пыраймарăм паян,— терĕ вăл, нимĕн пулман пекех. Хăй вырăн çинче хутланса выртакан хунямăшĕ еннелле пуçне сĕлтрĕ.

Эпĕ аппа çине тинкерсе пăхрăм. Пичĕ-куçĕнче йĕнĕ палли курăнмасть, сасси те лăпкă, çунакан кăмака умĕнче тăнăран, пичĕ çырла пек хĕрелнĕ. Акă вăл, çирĕп аллисемпе ухват тытса, кăмакаран чугун кăларчĕ, яшка антарса, пăсланакан чашăка сĕтел çине пырса лартрĕ.

— Анне, тăр, каçхи апат çийĕпĕр,— хунямăшĕ патне пырса, хуллен чĕнчĕ вăл.

Карчăк сас-хура памарĕ, хускалмарĕ те. Çумне ларса, аппа аллине ун хулпуççийĕ çине хучĕ.

— Анне, тăнла-ха калаинне. Хыпарсăр çухалнă тени вилнĕ тени мар-çке. Ма аплах хуçăлатăн. Тури касра Мăн Тимух Ваçли вилнĕ тесе хут килнĕ, хăй вара икĕ уйăхран киле курма таврăнчĕ. Вăрçă вăрçах, темле те пулма пултарать. Атя тăр. Кăшт та пулин вĕри яшка сып. Пулăшас мар-и?

Килĕшменнине пĕлтерсе, Илля амăшĕ пуçне сулкаларĕ, анчах каллех пĕр сăмах та хушмарĕ.

— Мĕн тăвас ĕнтĕ? — терĕ Верук салхуллăн, манпа крыльца çине тухса.— Паян кунĕпе те хĕлхем ăша ямарĕ. Хыпарне пĕлсен, айлата-айлата вырăн сарса выртрĕ те урăх тăмарĕ. «Тĕлĕк куртăм. Аларп лаша, йĕвенне хывсах, картишĕнчен тухса тарчĕ. Хыçран чупрăм — тытаймарăм... Лаша вăл килти арçынна пĕлтерет. Çук тек Илля çутă тĕнчере... Шеремет ачи. Ашшĕпе иккĕшне те пĕр шăпах пӳрнĕ иккен. Çамрăклах вăрçа кайса пĕтрĕç. Мана та çитет пурăнса. Черет çитрĕ кайма... Кĕтеççĕ»,— терĕ. Выртрĕ те урăх сăмах чĕнмерĕ. Тĕлĕке çаплах ĕненме юрать-и вара? Мĕнле сăмах тупса ӳкĕте кĕртес? Çук, эпĕ кĕтетĕп,— кăштах чĕнмесĕр тăнă хыççăн сăмахне тăсрĕ Верук.— Вилнĕ темен. Апла пулсан, чĕрĕ вăл. Аннене çеç шел. Сывлăхĕ ахаль те хавшак. Хăратăп. Инкек-синкек ан пултăрччĕ.

Верук шиклении ахаль пулмарĕ. Чăнах та, Илля амăшĕ йывăр хыпара тӳссе ирттерме пултараймарĕ. Хут килнĕ

хыççăн нумай та пурăнаймарĕ, çĕре кĕчĕ. Чăвашсен авалхи йăлипе ăна ялĕпех пытартăмăр.

— Эх, анне, кĕтсе илеймерĕн ывăлна. Қаçар, упраса хăвараймарăм сана,— терĕ Верук, тупăка пӳртрен йăтса тухнă чух. Йăпăртатса аннă куççульне шăлса типĕтрĕ те, пуçне усса, упăшкин амăшне юлашки çула ăсатма утрĕ. Çын çинче хуйхи-суйхине кăтартасшăн пулмарĕ вăл. Илляна асăнса, хурланса-макăрса çӳремерĕ. Анчах усал чĕлхе пур чухне те кăлтăк шырать. Верука та çакăншăн питлекенсем тупăнчĕç.

— И-и, ма хуйхăртăр вăл упăшки çухалнăшăн? — терĕ Алина амăшĕ.— Мĕнле пӳрт-çуртра, мĕнле хуçалăхра хуçа пулса юлчĕ те. Çынсем çавăн чухлĕ пурлăхшăн ĕмĕр тăршшĕпе ăшталанса ĕçлеççĕ. Верукăн вара, юмахри пек, шик шăхăрсах пурте пулчĕ. Эх, пĕлеççĕ хăшĕ-пĕрисем пурăнма. Пирĕн пек ухмах мар.

Çакна эпĕ аннене каласа патăм. Вăл ман çине кăмăлсăррăн пăхса илчĕ.

— Эсĕ ан тăнла ун пек сӳпĕлтисене,— терĕ вăл.— Верука курмасăр пĕр кун пурăнаймастăн  ху, ун çинчен тĕрлĕ ырă мар пакăлтатнине итлесе, калаçса çӳретĕн.

Хунямăшне пытарсан, килти выльăх-чĕрлĕхне амăшне пăхма хушса, Верук вăрман касакансем патне тухса кайрĕ. Таврăнсан, çав кунах пирĕн пата кĕчĕ.

Аннепе пĕр вăхăт халапласа ларнă хыççăн Верук ман енне çавăрăнчĕ.

— Ытла та кичем пĕччен. Пӳрте те кĕрес килмест. Чĕкеç, сана çывăрма илсе каяс тетĕп. Инке, чармастăн-и Чĕкеçе каçсерен ман пата пыма?

Çапла эпĕ кашни каçах Верук патне çӳреме пуçларăм.

— Пăх-ха, мĕн чухлĕ такмак çырса килтĕм сан валли вăрмантан,— терĕ Верук малтанхи каçах. Вăл сентре çинчен кăвак хуплашкаллă тетрадь илсе, мана тăсса пачĕ. Эй, чăнах та, мĕн чухлĕ! Чăвашли те, вырăсли те пур. Эпĕ вĕсене хăвăрт вуласа тухрăм, кăмăла кайнисене çавăнтах çырса илме тытăнтăм. Нумайăшне юри пире валли концертсем хатĕрлеме, шкулти вечерсенче тухса юрлама шутласа тупнă тейĕн.

> Урса кайнă йыттине
> Сăмса урлă çапрăмăр.
> Çăткăн усал фашистне
> Шăлне хуçса ятăмăр.
>
> Посмотрела на часы —
> Половина пятого.
> Все равно мы разобьем
> Гитлера проклятого.

Эх, такмаксем, такмаксем! Мӗн-мӗн ҫинчен юрламастӑрши эсир? Такмак — вӑл халӑх кӑмӑлӗ, унӑн кулленхи пурнӑҫӗ. Такмак кулать те, тӑрӑхлать те, кулянать, йӗрет. Кӗске вӑл, пурне те ӑнланмалла, ҫавӑнпа часах асра юлать. Пурте пӗлеҫҫӗ ӑна, пурте юратаҫҫӗ: ачасем те, ҫамрӑксем те, ваттисем те.

— Сантӑр Петӗрӗ таврӑннӑ. Пленра пулнӑ тет вӑл. Курса калаҫасчӗ ман унпа. Пымастӑн-и манпа? — ыйтрӗ пӗррехинче Верук, эпӗ пӳрте кӗнӗ-кӗменех. Эпӗ хаваслансах килӗшрӗм. Ҫаҫхи урампа эпир Сантӑр пиччесен еннелле утрӑмӑр. Хӗрӗҫ вичкӗн сивӗ ҫил вӑркӑшать, пит-куҫа чӗпӗтет. Авӑ умраултӑ кӗтеслӗ пысӑк ҫурт. Унӑн пӗр пайӗнче колхоз правленийӗ, тепринче лаша пӑхакансем выртса тӑраҫҫӗ.

Ҫаҫ пулсан, кунта яланах ҫынсем пуҫтарӑнаҫҫӗ: арҫынсем, хӗрарӑмсем, ачасем. Радио итлеме, хаҫатсенче мӗн ҫырнине пӗлме, тӗнчери лару-тӑрӑва сӳтсе-явма, ҫӗнӗ хыпарсем илтме.

— Атя, кӗрсе тухар. Тен, Петӗр кунта,— терӗм эпӗ, ҫутӑ чӳрече енне пуҫа сӗлтсе.

Эпир конюхсен пӳлӗмне кӗтӗмӗр. Хальхинче те кунта ҫын темӗн чухлех. Ларма вырӑн ҫитмен пирки, нумайӑшӗ ура ҫинчех тӑрать. Петӗре эпӗ алӑк урлӑ каҫсанах асӑрхарӑм. Вӑл сӗтел хушшинче ларать. Икӗ ҫул ҫеҫ иртнӗ ӑна курманни. Анчах епле улшӑнса, ватӑлса кайнӑ вӑл. Пичӗ типсе саралнӑ, хӗрсен чуне илӗртекен сарӑ кӑтра ҫӳҫӗ мӑк евӗр тӗссӗрленнӗ.

Сӗтел ҫине, йӑсӑрланса ҫунакан краҫҫын лампи ҫывӑхне, хаҫат сарса хунӑ. Пӗри вулать, ыттисем итлеҫҫӗ. Тыткӑнран ҫӑлӑнса тухнӑ совет салтакӗ хӑй мӗн курни, мӗн тӳссе ирттерни ҫинчен ҫырать.

Ҫапла, тӑшман пирӗн ҫӗрсем ҫинче хуҫаланса иртӗхни ҫинчен эпир пӗлетпӗр. Нимӗҫ фашисчӗсем тыткӑна лекнӗ пирӗн салтаксене пере-пере пӑрахни, асаплантарса вӗлерни, крематорисенче ҫунтарни, совет ҫыннисене чуралӑха тытатыта кайни ҫинчен хаҫатсемпе журналсенче час-часах ҫыраҫҫӗ. Чуна шӑнтса яраҫҫӗ ҫавнашкал хыпарсем. «Этемехҫке вӗсем, нимӗҫсем. Нивушлӗ ҫын ҫавӑн пек чунсӑр, тискер пулма пултарать?» — шухӑшлатӑп эпӗ. Хаҫатра ҫырнине итлесе тӑнӑ май, пуҫа каллех ҫавӑн евӗр шухӑш пырса кӗрет.

— Пустуй халап. Ӗненес килмест,— сӑмах хушрӗ кӗтесре чӗлӗм паклаттарса ларакан Караҫ Кавӗрли.— Эпӗ хам Германире пленра пулнӑ. Нимӗҫсем мӗнле пурӑннине хам куҫпа курнӑ. Культурӑллӑ, ӗҫчен халӑх...

— Мĕн сӳпĕлтететĕн çак эсĕ, мучи? Мĕн пĕлетĕн эсĕ фашистсем çинчен? — янрарĕ шăплăхра çиллес сасă. Сĕтел хушшинче ларакан Петĕр ура çине сиксе тăчĕ те Карас Каверли умне утса пычĕ.— Эсĕ иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче Германире нимĕçсем мĕнле пурăннине курнă, эпĕ вĕсем халĕ совет çĕрĕнче епле иртĕхнине тӳссе ирттертĕм. Этемсем мар вĕсем, фашистсем. Урнă тискер кайăк кĕтĕвĕ. Ялсене пĕр кил юлмиччен, пĕр çын юлмиччен çунтара-çунтара ярассĕ, ачасене вутта тытса ывăтассĕ. Эпĕ... Эпĕ вĕсене... Ы-х-х-х!

Петĕр чышкисем шурса кайиччен чăмăртанчĕç, пичĕ хут пек шурса кайрĕ. Тата тем каласшăн пулса, вăл çăварне уçрĕ, анчах пырĕнче асаплăн хăйăлтатни çеç илтĕнчĕ. Каччă тайăлса кайрĕ, ӳкетчĕ пулĕ, ăна çавăнтах темиçе алă ярса тытрĕ, сак çине пырса лартрĕ. Петĕр пуçĕпе стена çумне вăйсăррăн тайăнчĕ, куçне хупса, нумайччен хускалмарĕ. Çинçешке мăйĕ çинче юн тымарĕ чĕтресе тапрĕ, пичĕ-куçĕ темиçе хут асаплăн туртăнса илчĕ. Çынсем, чĕнмесĕр, пĕрре Петĕр, тепре Каверле мучи çине пăхапăха илчĕç. Тахăшĕ ассăн сывласа ячĕ. Карас Каверли те хускалмарĕ. Чĕлĕм тытнă шăнăрлă вата алли халĕ сиксех чĕтрерĕ. Унтан вăл хуллен ура çине çĕкленчĕ те, çаплах куçне хупса, хускалмасăр ларакан Петĕр патне пырса тăчĕ.

— Каçар, ывăлăм, ватă çынна,— терĕ вăл хăйăлтатакан сасăпа.— Ман сăмаха йывăра ан ил. Эпĕ чăннипех темĕн ăнланмастăп пулас. Усал шутпа каларĕ тесе ан шухăшла. Хам курнине çеç,— вара çавăрăнчĕ те, никам çине пăхмасăр, пуçне усса, алăк патнелле кăштăртатрĕ.

Эпир те ун хыççăнах тухрăмăр. Çанталăк тата та сивĕтнĕ. Тĕпсĕр тӳпе ирĕкĕнче тулли уйăх ярăнать, ун çути шурă юр çинче сиввĕн йăлтăртатса вылять. Пире хирĕç вичкĕн çил вĕрет.

Верук чĕнмест. Манăн та калаçас килмест. Петĕр сăмахĕсем ăшран тухмассĕ. Тăван ял, шурă юрпа витĕннĕ пысăк мар йывăç пӳртсем...

Акă пĕринче хĕрлĕ çутă ялкăшса илчĕ... Унтан тепринче... Хăранипе йĕри-тавра çавăрăнса пăхатăп. Мĕнпур ял çунать. Кашни пӳрт, кашни кил çийĕн вут çулăмĕ алхасса хăпарать, хаяррăн кĕрлесе çӳлерен те çӳле кармашать. Тинĕ пĕренесем шатăртатса çунассĕ, чӳречесенчен хура тĕтĕм палкаса тухать. Пур енчен те уласа йĕни, хаяррăн кăшкăрни, пулăшма чĕнни илтĕнет. Çап-çутă урамра тимĕр каскăсем тăхăннă ют салтаксемваскамасăр уткаласа çӳресçĕ. Вăхăтран вăхăта автоматпа шатăртаттарса пени илтĕнет. Акă картишĕнчен Ириша сиксе тухрĕ. Хăраса ча-

рӑлнӑ куҫӗпе вӑл унталла-кунталла пӑхса илчӗ, ниҫта кайса кӗме пӗлмесӗр тарӑн юр ҫийӗн ял хысӗнчи сырма енне тапӑлтатрӗ. Вара... салтаксенчен пӗри, ҫӳхе питлӗ, вӑрӑм сӑмсаллӑ фашист, Иришӑна хуса ҫитрӗ, икӗ аллипе тытса, ҫӳле ҫӗклерӗ те... кӑшкӑрса йӗрекен ачана кӗрлесе ҫунакан ҫулӑм ӑшне ывӑтрӗ... Хӑранипе ман куҫ хуралса килчӗ, сывлӑш питӗрӗнсе ларчӗ...

Ай, мӗн эпӗ? Хӑрушӑ курӑма хӑваласа, хама алла илме васкарӑм.

— Верук, — сӑмах хушрӑм эпӗ, хӑвӑртрах лӑпланма тӑрӑшса,— эсӗ Петӗрпе калаҫасшӑнччӗ...

Пуҫне усса тарӑн шухӑша кайнӑ Верук йывӑррӑн сывласа ячӗ.

— Петӗрпе? — ыйтрӗ вӑл сӳрӗккӗн.— Мӗн тери ларатӑра пӗлмен, хавасла, ҫивӗч каччӑччӗ... Халӗ вара... Нивушлӗ Илля та плена лекрӗ-ши? Нивушлӗ усал тӑшман ӑна та ҫаплах асаплантарать... тапать, хӗнет, шӑмми-шаккине хуҫать?

Урӑх Верук киле ҫитиччен те сӑмах чӗнмерӗ, пуҫ ыратать тесе, тӳрех сывӑрма выртрӗ. Нумайччен пӗр аякӗ ҫинчен теприн ҫине ҫаврӑнкаларӗ, ассӑн сывларӗ, тем пӑшӑлтатрӗ.

Пӗрле иртгернӗ каҫсем пире татах та ҫывӑхлатрӗҫ. Лайӑх мана Верукпа пӗрле. Тем ҫинчен те калаҫатпӑр эпир унпа. Анчах вӑл урӑх нихӑҫан та Илля пирки сӑмах хускатмарӗ.

Хӑшпӗр чух Верук тантӑшӗсем, хӗрсем, ҫамрӑк хӗрарӑмсем пырса ларать: кӗнчеле арлама, алсиш-чӑлха ҫыхма, ытларах, пӗрле калаҫса, чуна йӑпатма. Юрӑсем юрлатпӑр. Хурлӑхлӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ҫамрӑксен юррисем.

Тутри шурӑ теҫҫӗ пуль,
Шур пурҫӑнне пӗлмеҫ пуль.
Юрлать, юрлать теҫҫӗ пуль,
Ҫын хуйхине пӗлмеҫ пуль.

Пӗрре ҫапла ларма пынӑ хӗрарӑмсем тухса кайрӗҫ кӑна, алӑк шартлатса уҫӑлчӗ те, пӳрте Алина пиччӗшӗ, Ларивак кӗрсе тӑчӗ. Вӑл вӑрҫӑччен те ҫара каяймарӗ. Вӑрҫӑ тухсан, икӗ хут та йӗре-йӗрех ӑсатрӗҫ ӑна, анчах Ларивак каллех ҫаврӑнса килчӗ. Пӗчӗк, имшеркке пӳ-силлӗ, чӗлтӗр сайра ҫӳҫлӗ, вӑл халиччен те йӗркеллӗ каччӑ шутӗнче пулман. Ӗҫре те кахал теҫҫӗ ӑна, ырӑ кӑмӑлӗпе те, чӗлхи-ҫӑварӗпе те хӗрупраҫа илӗртеймен пулӗ ҫав. Каҫсерен урамра ҫамрӑксем выляса-кулнине аякран тӗмсӗлсе пӑхса тӑратчӗ. Шеллеттӗм эпӗ ӑна. «Эх, мӗскӗн! Вӑййа хутшӑнма та име-

нет. Чирлё пулнишён вăл айăплă мар-çке»,— тесе шухăшлаттăм. Э-э, мĕнле улшăнса кайрĕ Лариван юлашки вăхăтра. Ялĕпе пĕртен-пĕр каччă-çке. Халĕ вăл хăюллă, чăрсăр. Хĕрсем, çамрăк хĕрарăмсем çине имменсе, аякран пăхса тăмасть. Лешсем те унран унччен пек пăрăнса утмаççĕ.

— Ман килес! — терĕ Лариван. Вăл пĕрре Верук, тепре ман çине хаваслăн йăлкăшса пăхса илчĕ.

— Килех,— хирĕç чĕнчĕ вырăн саракан аппа, тӳрленсе тăрса, таса, шурă çамкине картлантарса, вăл кĕтмен хăна çине тĕлĕнсе пăхрĕ. Унтан саланнă вăрăм çивĕтне ĕнси çине пуçтарса тирпейлерĕ, салтса хунă шурă тутрине çыхрĕ, саппунне тӳрлетрĕ.

— Тем ĕçпеччĕ ĕнтĕ капла çĕрле? — ыйтрĕ Верук лăпкăн.

Лариван каллех лĕхлетсе илчĕ.

— Мĕн ĕçĕ пултăр çак вăхăтра яш-кĕрĕмĕн? Улаха,— терĕ вăл.

Сĕнмесĕрех тумтирне хывса çакрĕ, сайра çӳçне тураса якатрĕ, мăнкăмăллăн кулкаласа, хăюллăн малалла иртрĕ. Унтан тĕпеле кĕме тăнă Верука икĕ аллипе те пилĕкĕнчен ыталаса илчĕ.

— Кил-ха, лар юнашар.

Аппа ни савăннине, ни тарăхнине палăртмарĕ.

— Кай, ан çыпçăн,— терĕ те качча çăмăллăнах хăй çумĕнчен сирчĕ. Унтан сĕтел хушшине ларса, вăрлăх тулла тасатма тытăнчĕ.

— Эх, Верук, Верук! Ваcкарăн качча тухма! Çĕртрĕн хĕр ятне,— хаш сывларĕ Лариван, çамрăк хĕрарăм çинчен куçне илмесĕр.— Çапах та темшĕн-çке ăшран тухмастăн. Ачаранах юратнă эпĕ сана. Калама хăяйман çеç... Халĕ те юрататăп. Ну, кил ĕнтĕ... Лар юнашар.

Верук пуçне çĕклерĕ те умра тăракан каччă çине чăрр пăхрĕ.

— Юрă илтрĕм паян. Юрласа кăтартас-и? — терĕ вăл.

— Яра пар. Сассу лайăх сан, уçă,— хаваслăн килĕшрĕ каччă.

Чунтан савнă мăшăра
Вăрçă хирне ăсатрăм.
Юрататăп, кĕтеп тесе,
Чĕререн тупа турăм.

— Э-э, пĕлетпĕр-çке эсĕ ăна мĕнле юратнине,— кулса ячĕ Лариван.— Ял çинче ахаль каларçмаççĕ. «Хут килсен, амăшĕ хуйха тӳсеймесĕр çĕре кĕчĕ, арăмĕ куççулĕ те кă-

тартмарĕ»,— теççĕ. Çумра чух, тен, юратнă пулĕ. Миçе уйăх пĕччен пурăнатăн-ха? Тата хыпарĕ килнĕ. Апла ма урăххине савас мар? Кам чăрмантарать? Кам ÿпкелет?..

Аппа куçĕнче хаяр хĕлхемсем ялкăшса илчĕç.

— Ĕмĕр пĕччен пурăнас пулсан та,— сăрхăнтарчĕ Верук кашни сăмахне,— илтетĕн-и, Лариван, тепĕр хут калатăп: ĕмĕр пĕр-пĕччен пурăнма тÿр килсен те, эсĕ мана кирлĕ мар... Ăнлантăн-и? Халĕ çаврăн та таплаттар, ăçтан килтĕн — унта. Тасал хăвăртрах.

Верука эпĕ пĕлетĕп. Çынна вăл хур тумасть, анчах кÿрентерсен, парăмра юлмасть.

Хăйне çапла йышăнасса Лариван кĕтмен пулас. Вăл Верук çине куç айĕн çилленсе пăхрĕ.

— Юриех шÿт турăм. Мĕн калать-ха тесе,— ирĕксĕррĕн кулса ячĕ вăл.— Сан пек инке-арăм ман тавра мĕн чухлĕ, пĕлетĕн-и? Куç хĕсетĕп çеç, хăйсемех чупса пыраççĕ,— Лариван аппа енне алă сулчĕ те ман çума пырса ларчĕ.

— Сан пата мар, Чĕкеç патне килтĕм эпĕ. Унпа калаçса кулма та кăмăллă. Вăл чăн-чăн хĕр. Таса, чипер. Çапла-и, Чĕкеç? — Лариван аллине ман хулпуççи çине хучĕ, пăтранчăк куçĕпе йăл кулса, мана сăнаса тинкерсе пăхрĕ. Сăмсана сăмакун шăрши пырса çапрĕ.

— Ларас килмест ман санпа,— терĕм эпĕ. Сиксе тăтăм та аяккалла пăрăнса утрăм. Мăнкăмăллăн кулкаласа, Лариван каллех ман çума пырса тăчĕ.

— Тухса тасал терĕм-çке,— сăмах хушрĕ Верук, çаплах çиллине чарса.— Мĕн çыхланатăн хĕрача çумне? Сан валли мар вăл. Кайса выля ху пеккисемпе, куç хĕссен, чупса пыраканнисемпе.

Лариван каллех кÿренчĕ. Ихĕлтетме чарăнчĕ, ман çумран пăрăнчĕ те сак çине кайса ларчĕ.

— Каппайчăксем... Тем вырăнне хураççĕ хăйсене,— мăкăртатрĕ вăл. Пăтранчăк куçĕсем каллех Верук çине тирĕнчĕç.

— Ытла çÿле сикетĕн. Тăхта. Вăхăт çитĕ: ун чух хăвах чупса пырăн-ха.

— Эп сан хыççăн чупăп-и? — Верук пуçне çĕклерĕ те ахăлтатса кулса ячĕ.— Эх, Лариван! Эх, айван! Хăвна арçын тесе шутлатăн-и-ха? Вăрçă пулман пулсан, кам пăхатчĕ-ши сана? Ним çукран нимĕр вĕт эсĕ...

— Эсĕ те апат мар, юлашки яшка кăна. Тăхта, ан вĕç ытла çÿле. Хуçăлать çунатту. Вăрçă халех чарăнмасть-ха... Унччен...

Шăртланнă Лариван çапла персе яман пулсан, Верук кулкаласа тавлашнипех ирттерсе яратчĕ пулĕ. Анчах каччăн

юлашки сӑмахӗсене илтсен, вӑл, такам пушӑпа ҫапнӑ евӗр, картах сикрӗ.

— Мӗн? Мӗн терӗн эсӗ? — ыйтрӗ аппа, ерипен ура ҫине тӑрса. Чарӑлса кайнӑ куҫӗнче хаяр ҫулӑм ялкӑшрӗ, питҫӑмартисене хӗрлӗ сӑн ҫапрӗ.— Эсӗ... эсӗ,— тарӑхса кайнӑ Верук пӳлӗнчӗ, унтан тӗпелелле вирхӗнчӗ, йӗтӗр ярса тытрӗ те ӑна сак ҫинче сарӑлса ларакан каччӑ енне сулса ячӗ.

Лариван самантрах шӑпланчӗ, шурса кайрӗ, ансӑр хулпуҫҫине шиклӗн хутлатса, умри хӗрарӑм ҫине сехӗрленсе пӑхса илчӗ.

— Мӗн эсӗ?.. Мӗн? Тӑнран тухрӑн-им? — мӑкӑртатрӗ вӑл, ҫӑлӑнӑҫ шыранӑ пек унӑн-кунӑн пӑхкаласа.

— Апла эсӗ вӑрҫӑ тухнишӗн хӗпӗртетӗн? Тӗнче шарилетсе макӑрать, эсӗ савӑнса ҫӳретӗн. У-у, путсӗр! Йӗрӗнчӗк! Акӑ сана! — сула-сула ярать Верук йӗтӗрне.— Иллятшӑн! Йыснашӑн! Вӑрҫӑра асапланакан пур арҫынсемшӗн!

Ҫапать те ҫапать Верук Лариване. Аллинчен, хулпуҫҫинчен, пуҫӗнчен. Пичӗ хӗмленсе ҫунать, куҫӗсем хаяррӑн ялкӑшаҫҫӗ. Стена ҫумне лӑпчӑннӑ Лариван имшер аллисемпе хӑлаҫланать, хӗрарӑмран йӗтӗрне туртса илме хӑтланать.

— Халӑх куҫҫулӗшӗн! Тӑлӑха юлнӑ салтак арӑмӗсемшӗн! Тӑлӑх ачасемшӗн!

Ҫапла пуласса кӗтменскер, эпӗ малтан ним тума аптӑрарӑм. Чупкалатӑп Верук хыҫӗнче. Ман юратнӑ, ырӑ аппа ҫакӑн пек хаярланса тулашнине эпӗ халиччен те курман.

— Верук, чарӑн! Тӑна кӗр, Верук!

Юлашкинчен эпӗ йӗтӗре ярса тытрӑм та ӑна аппа аллинчен туртса илтӗм.

— Чарӑн, Верук! Лӑплан!

Анчах вӑл мана итлемест, курмасть те-и, тен.

— Халех тасалнӑ пултӑр! Тепре килсе ура ярса пус кӑна! — кӑшкӑрать Верук, ҫаплах каччӑ енне талпӑнса.

Лариван алӑк патне ыткӑнчӗ, пӑтари кӗрӗкне, ҫӗлӗкне васкаса вӗҫертсе илчӗ те пӳртрен тухса сирпӗнчӗ.

Эпӗ чӑтаймарӑм, ахӑлтатса кулса ятӑм.

— Ну, Верук, ӗмӗрлӗхех асӑнтартӑн каччӑна. Ларма пӗлмен Лариван сикнӗ тӑнӑ — ҫупкӑ ҫинӗ.

Анчах аппа эпӗ каланине хальхинче илтмерӗ те пулас. Ун хулпуҫҫийӗсем лӑштӑрах усӑнчӗҫ, хаяррӑн ялкӑшакан куҫӗсем сӳнсе тӗксӗмленчӗҫ. Вӑл пукан ҫине йывӑррӑн тӗшӗрӗлчӗ, пуҫне сӗтел ҫине хучӗ те, мӗнпур кӗлеткипе чӗтренсе, ӳлесех йӗрсе ячӗ.

— Куҫҫуль ӑшчике лӑплантарать. Ан чарӑр ҫынна ма-

кăрма,— тет яланах Мархва кинеми. Çакна астуса, эпĕ чĕнмерĕм. Нумайччен, асаплăн йынăша-йынăша йĕчĕ Верук.

Юлашкинчен лăпланчĕ, хĕрелсе шыçнă куçĕсене шăлса типĕтрĕ.

— Ашăнта ӳпкелетĕн пулĕ ĕнтĕ мана çакăншăн, Чĕкеç,— терĕ вăл вăрахран.— Хам та пĕлместĕп, тем пулчĕ тăруках. Лариван каланăшăн тесе ан шутла. Суратăп эпĕ çав катăк каччă сăмахĕсем çине... Тунсăх чĕрене çиет. Пиччерен икĕ уйăх çыру илмен. Илля çинчен шухăшласа ăшчик çунать. Чĕрĕ пулсан, ăçта, хăш вырăнта асапланса пурăнать-ши?.. Тем тĕрлĕ шухăш та пырса кĕрет пуçа. Тепĕр чух вăл та тахçанах пĕтнĕ пек туйăнать... Кунта ак ăçтиçук Лариван аскăнса çӳрет, арçынсем пĕтнишĕн савăнать. Ахалех чартăн,— терĕ вăл, куççульне шăлса,— хĕнемеллеччĕ лайăххрах. Çӳретĕрччĕ кăвакарнă пит-куçпа яла култарса. Ирсĕр!

Эпĕ ялта Верук çинчен ырă мар сăмах çӳренине аса илтĕм. Э-э, çын ăшчикĕ кĕрĕк çанни мар çав, тавăрса пăхма çук.

## XI

Çур кунĕсем çывхарса пычĕç. Шăнна çĕре хупăрласа витнĕ шурă юр васкасах ирĕлчĕ, шăнкăртатса шавласа çырма-çатра тăрăх юхса кайса çухалчĕ. Унтан уй-хирте, пахчасенче çурхи ĕçсем пуçланчĕç. Нӳрĕк типиччен çĕре хăвăртрах сухаласа, тырă-пулă акса, пахчаçимĕç лартса хăварас пулать... Çамрăк, вăйлă, çирĕп лашасене тахçанах фронта ăсатнă, юлнисем е ватă, е чирлĕ, имшер. Хăмăтйĕвен тавраш те кивĕ. Вăл та çитмест, ку та çук, ĕçлекенсем те сахал. Вăхăт кĕтмест. Верук бригадир кунĕн-çĕрĕн чупать. Канлĕхе çухатрĕ, начарланса кайрĕ, мăнтарăн. Эпĕ хире суха тума кайман, анчах килтн пахчана сухаланине питĕ лайăх астăватăп. Пĕр лăпкă çутă ир аннепе Коля плуг туртса килчĕç те ăна анкартине илсе тухса лартрĕç. Кĕçех кӳршĕ хĕрарăмĕсем пычĕç. Кӳлĕнтĕмĕр тăваттăн-пиллĕкĕн плуг умне. Туртатпăр. Хулпуççи урлă çакнă вĕрен ӳте кассах кĕрет тейĕн. Ыратнине тӳсеймесĕр эпĕ ăна кăкăр çине куçаратăп. Пурпĕрех çăмăллăх çук. Сывлăш питĕрĕнет, пит-куçа хура тар хуплать, çанçурăм тăрăх йăпăртатса юхать. Ытла та ывăннипе, умри çĕр унталла-кунталла сулкаланнăн туйăнать.

— Эй, кĕрнсем! Тихисем! Мĕн аран-аран йăралапатăр? Хăвăртрах! Но! Но-о! Акă эпĕ сире, пушăпа! — вĕçĕмсĕр шӳтлет плуг тытса пыракан Хветле инке, хĕрлĕ питлĕ çамрăк хĕрарăм. Пур чухне те, пур çĕрте те, темле йывăр ĕç вăхăтĕнче те вăл яланах хаваслă, шӳт тăвать, култарать,

кăмăла çěклет. Сухаласа пěтерсенех сӳрелерěмěр. Тăнчă-тăнчă ывăннăскер, эпě чăтаймарăм, хěрарăмсем кайсанах сарай çумěнчи улăм купи çине тăсăлса выртрăм. Алă ту-панěсем хěрелсе тăртаннă, хулпуççи тěлкěшет, пěтěм ӳт-тир ыратать... Çапах йывăр ěç хыççăн çапла канса выртма ыт-ла та лайăх. Нимěн те кирлě мар, нимěн çинчен те шухăш-лас килмест. Çав самантра пěтěм шăмшака ытарайми кан-лě туйăм çавăрса илет. Çӳлте кăн-кăвак пěлěт пурçăн евěр йăлтăртатать, ылтăн хěвел ялкăшса çунать, кěмěл тěслě çӳхе пěлěт таткисем курăнаççě. Ăшăннă çěр çинче йывăç-курăк симěсленет, çěмěрт шап-шурă чечекре, улмуççисем çурăлма хатěрленеççě, яштак хурăн çап-çамрăк çулçисене сапаласа янă. Халě кăна сухаласа пăрахнă çěр хуп-хура курăнать. Ун çийěн чěлтěр çӳхе пăс çěкленет. Мěн тери илемлě çут тěнче! Ăçта пăхатăн, пурте куçа савăнтарать. Анчах çын пурнăçě мěншěн ытла та йывăр-ха? Мěн çитмест этеме тěнчере? Мěншěн çапăçать вăл? Мěне кура çынсем пěрне-пěри вěлереççě? Тěрлě патшалăх хушшинче вăрçă ан пултăр тесен мěн тумалла-ха? Е май çук-и çав тискер йěркене тěп тума? Камсем вěсем, фашистсем? Ăçтан тупăн-нă? Маркс та, Энгельс та нимěçсем... Гитлер та нимěç...

Юлашки вăхăтра çакнашкал тěрлě кăткăс ыйту ман пуçра час-часах пăтранма тытăнчě.

Ахаль те йывăр пурнăç çав çул татах та йывăрланчě. Ĕнтě çынсене тепěр тăшман — выçлăх — юнама пуçларě. Иртнě çул ěçкунěпе тырă пачах илеймерěмěр. Пур-çук çă-нăха перекетлесе, нумай килсенче халě çăкăр чустине çěр-улми хырса яма пуçларěç. Каярахпа вăл та пěтрě. Çапах çу кунěсенче эпир аптрамарăмăр-ха. Выçă хырăмпа нумай ěçлеймěн. Çавăнпа уй-хир ěçне тухакансене колхоз прав-ленийěнче кашни кунах икçěр-виççěр грамм çăнăх пама йышăннă. Çав çăнăхран икерчě пěçереттěмěр. «Нуша икер-чи» тетчěç ăна ялсенче. Çак çул эпир колхозра тăваттăн ěçлерěмěр. Кěçěн шăллăм Санька та фермăна кěтӳ кěтме кайса кěчě. Хăйпе тантăш ачапа вěсем иртен пуçласа каç-чен уй-хир тăрăх пăрусем çитерсе çӳререç. Мěн тăвăн? Хы-рăм выççи каçармасть. Çапла çу кунěсенче эпир çемйипех колхозра ырми-канми ěçлерěмěр. Анчах тěксěм кěр çит-сен, шкула çӳреме тытăнтăмăр кăна, çăткăн выçлăх пирěн киле те пырса кěчě.

— Тырă пěтрě. Çăнăх та нумай юлмарě,— терě пěрре-хинче анне. Унăн йывăр ěçпе хуралса хытнă алли чěркуççи çине вăйсăррăн усăнчě.— Мěнле пурăнмалла малашне? Мěнле хěл каçмалла?— Çапла каларě те салхуллă куçěпе ман çине темле айăплăн пăхса илчě.

Вăл мĕн каласса эпĕ çавăнтах тавçăртăм. Чĕрем тупсăхлăн пăчăртанчĕ. Акă вăл, Мархва кинемей асăрхаттарни килсе çитрĕ. Тăвата ача пирĕн çемьере. Эпĕ асли... Пĕр çул кăна юлнăччĕ вĕренмелли. Юлашки çул кăна.

Чӳрече патне пырса, эпĕ урамалла пăхатăп. Тӳпери пĕлĕтсем, мĕншĕн ытла та тĕксĕм эсир паян? Канăçсăр çил, мĕншĕн çаплах тулашатăн? Кама çилленетĕн? Кам кӳрентерчĕ сана? Çанталăкăм, мĕншĕн йĕретĕн эсĕ? Мĕншĕн çутă куççульне çĕр çине вĕçĕмсĕр тăкатăн?

— Пурнăçĕ ытла та йывăрланчĕ-çке,— илтетĕп эпĕ аннен йăваш сассине.

Анланать вăл манăн шухăш-кăмăла. Пĕлетĕп: унăн та ăшчикĕ вăркать, анчах, чӳрече енне çурăмпа тăрса, сасăсăр йĕрекен хĕрне йăпатма сăмах тупаймасть. Чăнах та, мĕн каласа йăпатăн? Вунултă уйăх ĕнтĕ вăрçă пуçланни. Унăн вĕçĕ-хĕррийĕ те курăнмасть. Кăнтăрта тăшман каллех наступлени пуçларĕ. Мĕн тери хаяр çапăçусем пыраççĕ унта Сталинград хулишĕн! «Пĕр утăм та каялла чакмалла мар!» — тесе приказ панă совет салтакĕсене. Хаçатсенче пире, тылра пурăнакансене, мĕнпур вăя хурса ырми канми ĕçлеме чĕнеççĕ. «Колхоз уйĕ-хирĕсенче тăрăшса ĕçлени фронтра çапăçнипе пĕрех»,— тесе çыраççĕ. Тахçанхинчен витĕмлĕ янраççĕ халĕ ăшра çак сăмахсем: «Фронтра çапăçнипе пĕрех». Мана çара илмеççĕ. Çул çитмест. Апла, тăшмана хăвăртрах çĕнтерме пулăшас тесен, вăй çитнĕ таран колхозра ĕçлемелле. Анне пек. Ялти ытти хĕрарăмсем, хĕрсем пек. Çакă манăн чи çывăх тивĕç... Эпĕ комсомолка...

Çавăн евĕр шухăшсем мана ерипен лăплантарчĕç. Тепĕр кунне ирех эпĕ колхоз правленийĕнче пултăм, вара çав кунах фермăна сыснасем пăхма кайса кĕтĕм.

Çапла, хăрушă вăрçă, тертлĕ пурнăç пире çутă ачалăхран васкасах уйăрчĕ. Ĕçпе те, шухăш-кăмăлпа та эпир, вăрçă вăхăтĕнче ӳснĕ çамрăксем, ытла та хăвăрт çитĕннисен шутне кĕтĕмĕр.

Фермăра эпир иккĕн ĕçлетпĕр. Пилĕк-ултă витре кĕрекен пысăк хуранпа кунне темиçе хут вĕтĕ çĕрулми пĕçеретпĕр: ăна валашкасем çине ярса, йывăç тукмаксемпе тĕветпĕр те шывпа шĕветсе пăтрататпăр. Пĕчĕк пӳртре вĕри пăс маччаранах явăнать, сывлама йывăр, тăвăннă çанçурăм тăрăх, мунчари пекех, тар юхать. Çапах çав шутлă апат сыснасене çитмен çав. Вĕсем ялан хыçран çуйăхса чупатчĕç, çиме ыйтса, тĕрте-тĕрте яратчĕç.

Выçлăх, пур çĕрте те выçлăх хуçаланать...

Ĕнтĕ ман пурнăç пĕтĕмпех улшăнчĕ. Эпĕ халĕ иртен

пуҫласа каҫчен фермăра ĕҫлетĕп. Киле таврăнсан, уроксем хатĕрлемелле мар, ыран учительсем, мĕн пĕлни-пĕлменнине тĕрĕслесе, начар паллăсем лартĕҫ тесе шикленмелли ҫук. Каҫсенче кĕнчелеҫҫи илетĕп те улаха каятăп. Хĕрсем пуҫтарăнаҫҫĕ. Ҫара кайма ҫул ҫитеймен яш каччăсем пыраҫҫĕ. Ну, ҫамрăксен улахĕ вăйă-кулăсăр, юрă-ташăсăр иртмест... Ҫапах ҫакăн евĕр пурнăҫ ман чуна илĕртмест. Вăл кĕрхи кун пекех тĕксĕм, хавассăр. Ирĕксĕрех шкул ҫинчен шухăшласа тунсăхлатăп. Ирхине шкула каякан ачасем ҫине тĕмсĕлсе пăхатăп. Вĕсем уроксенче лараҫҫĕ, кунран-кун ҫĕнĕрен те ҫĕнĕ пĕлӳ илеҫҫĕ. Эпĕ вара... Эпĕ... Эх, вăрҫă тухман пулсан.

Ҫапла виҫĕ эрне иртрĕ. Пĕррехинче эпĕ киле кăнтăрлахи апата чупса килтĕм. Хирĕҫ ҫурҫĕр енчен вичкĕн ҫил кĕрлесе вĕрет, ҫумăр ҫукалать, сайра шурă юр пĕрчисем вĕҫеҫҫĕ. Шăнса кайнăскер, эпĕ пӳрте васкаса кĕтĕм. Кĕтĕм те алăк патĕнчех хытса тăтăм. Кăмака ҫумĕнче пукан ҫинче пирĕн класс руководителĕ Алексей Матвеевич аннепе каласса ларать. Темшĕн эпĕ тăруках пăлханса кайрăм, хăюсăррăн сывлăх сунтăм та тĕпелелле иртме васкарăм.

— Ма пытанатăн, Тоня? — илтрĕм эпĕ ҫавăнтах учитель сассине.— Кил-ха, лар юнашар. Калаҫар.

Эпĕ тĕпелтен тухрăм. Юратнă учителе курнипе-ши е вăл мĕн шутпа килнине туйса-ши, чĕрем хавассăн тапрĕ. Алексей Матвеевич ман ҫине тинкерсе пăхрĕ, анчах ăшă кулă унăн пĕркеленчĕк питĕнчи, кăвак куҫĕнчи салхулăха сирсе яраймарĕ.

— Эпĕ сана шкула чĕнме килтĕм, Тоня,— терĕ вăл.— Вĕренмелли сакăр уйăх ҫеҫ юлчĕ-ҫке. Вăтам шкул пĕтеретĕн. Каллĕ-маллĕ шухăшласа ан тăр. Кĕнекӳсене сумкуна чик те — пыр ыран. Кĕтетпĕр. Юрать-и?

Эпĕ пуҫа усрăм. Шкула ҫӳреме пăрахнин чăн сăлтавне уҫса пама хăяймарăм. Мĕн уҫса памалла ăна? Вăл хăй те лайăх ăнланать халăх нушине. Учительсем те халĕ пирĕн пекех выҫăллă-тутăллă пурăнаҫҫĕ. Тырă хакĕ тăруках ӳссе кайрĕ, ĕҫ укҫи нумай мар. Мĕн илетĕн унпа? Ахальтен мар Алина ĕнер мана ҫапла каласа хучĕ:

— Тем тума кирлĕ пуль вĕренни. Пĕр пăт тырă илес тесен те, халĕ учителĕн виҫĕ-тăватă уйăх ĕҫлемелле.

Эпĕ класс руководителĕ ҫине вăрттăн сăнаса пăхатăп: кивелсе тĕссĕрленнĕ пальто ҫаннийĕ унăн ҫĕтĕлсе сӳтĕлнĕ, ботинкин кĕлийĕ чалăшса кайнă.

— Колхозра ĕҫлекенсем ҫитмеҫҫĕ,— тетĕп эпĕ кĕскен.

— Пĕлетĕп, халĕ пур ҫĕрте те ҫапла,— Алексей Матвеевич пичĕ-куҫĕ пушшех салхуланчĕ.— Апла пулин те ҫам-

ăксен вĕренес пулать, Тоня. Çĕршыва вĕренни çынсем кирлĕ. Малашне тата ытларах кирлĕ пулаççĕ. Сан евĕр шутласан, хальхи вăхăтра ачасем шкула çӳрени çĕршыв-шăн ытлашши расхут кăна темелле. Хуçалăхра та ĕçле-кенсем хутшăнаççĕ. Çапла-и? Анчах çаврăнса пăх-ха йĕри-тавра. Пĕр шкул та пулин хупăнчĕ-и? Çук. Вăрçăченхи пекех пуринче те вĕренеççĕ. Мĕншĕн? Пурнăç çулĕпе утнă чух, Тоня, ура айне кăна мар, ытларах малалла пăхмалла. Ăнлантăн-и? Çапла. Çĕршыва, халăх хуçалăхне хăвăртрах аталанма пулăшас тетĕн пулсан, вĕренме тăрăш. Çакă вăл хальхи вăхăтра санăн чи пысăк тивĕçӳ. Эсĕ комсомолка, комсомол комитечĕн секретарĕ. Тата шкулта чи лайăх вĕ-ренекенсенчен пĕри. Çакăн çинчен те манма юрамасть.

Пĕлет Алексей Матвеевич витĕмлĕ, ĕнентерӳллĕ калама. Ăна итлесе, ирĕксĕрех ун пек шухăшлама тытăнатăн, ун пекех çĕкленсе хĕрсе каятăн.

— Ашшĕпе иксĕмĕр те ачасене питĕ вĕрентес тесе ĕмĕт-ленеттĕмĕр те... Нуша шутсăр асаплантарать-çке,— сăмах хушрĕ аннс.— Самани юсанасси те курăнмасть. Нимĕç-сене Мускав патĕнчен хăваласа ярсан, питĕ хĕпĕртерĕ ха-лăх. «Тек фашиста пĕр утăм та малалла ямастпăр. Кĕçех тасататпăр çĕршыва тăшмансенчен»,— тетчĕç ун чух. Халĕ авă кăнтăрта каллех темĕн чухлĕ çĕр тытса илчĕ.

— Çапла, кăçал каллех пирĕн темиçе çĕр çухрăм чакма лекрĕ,— Алексей Матвеевич пуçне салхуллăн сулкаласа илчĕ.— Çапах хытă лăскать Хĕрлĕ Çар фашистсене. Кăш-ни хулашăн, кашни ялшăн, кашни утăм çĕршĕн калама çук хаяр çапăçусем пыраççĕ,— учителĕн хавассăр куçĕсем çу-талчĕç, вĕсенче вĕри хĕлхем ялкăшса илчĕ.— Пытармалли çук, тăшман халлĕхе тĕрлĕ хĕçпăшалпа та, техникăпа та пирĕнтен вăйлăрах. Апла пулин те Севастополь хулине тытса илме унăн икçĕр аллă кун çапăçма тиврĕ. Шухăш-лăр-ха эсир, çавăн пек вăйлă тăшмана хирĕç хула сакăр уйăх ытла паттăррăн кĕрешрĕ. Гитлер пире çĕнтереймест. Çĕн-те-реймест! — такама хирĕçленĕ евĕр, хыттăн, хĕрӳл-лĕн татса хучĕ Алексей Матвеевич.— Наполеон салтакĕсем пекех, Гитлер çарĕ те вырăс çĕрĕ çинче хăйне валли вилĕм тупать. Эпĕ ватă салтак... Эпĕ пĕлетĕп,— учителĕн кăвак куçĕсем халĕ хаяррăн ялкăшса çунчĕç, шуранка пичĕ çин-че хĕрлĕ пăнчăсем курăнчĕç.

Эпĕ ун çине куç илмесĕр пăхатăп, унăн кашни сăмахне мĕнпур чун хавалĕпе тăнлатăп. Эх, манăн çавăн пек ви-тĕмлĕ, илемлĕ калаçма пĕлесчĕ!

— Çапла,— терĕ Алексей Матвеевич кăштах лăплансан, унтан пĕрре аннс, тепре ман çине пăхрĕ те, ытла та хĕрсе

кайнăшăн каçару ыйтнă пек, ăшшăн, кăмăллăн кулса илчĕ.

Вара, кайма пуçтарăнса, тăчĕ, хăрах аллипе кукăр туйи çине тĕренчĕ, тепринпе алăк хăлăпĕнчен тытрĕ.

— Çак кунсенчех шкулта буфет уçăлмалла,— терĕ вăл, анне енне çаврăнса.— Пиçнĕ çĕрулми, çăкăр пулатех терĕç. Эпир директор кабинетĕнче йышлă çемьесене уйрăм шута илтĕмĕр. Сирĕн ачасене те кĕртрĕмĕр çав списока.

Тавтапуç çав кĕрхи куна! Тавтапуç Алексей Матвеевича пирĕн пата килнĕшĕн. Тавтапуç аннене, мана каллех шкула çӳреме ирĕк панăшăн.

Çав каç манăн килтен ниçта та каяс килмерĕ. Аннепе иккĕн эпир сĕм-çĕрлеччен кĕпчеле арласа лартăмăр. Пӳртре шăп. Кăмака хыçĕнче шăрчăк юрлать, йĕке хуллен кăлтăртатса çаврăнни илтĕнет.

— Ёнене сутмалла пулать пулĕ,— шăплăха пăсрĕ анне.— Выльăх апачĕ сахал. Пурпĕр хĕл каçараяс çук. Тырăпа улăштарас тетĕп. Сĕтсĕр-çусăр чăтса ирттерĕпĕр, çăкăр çитмесен кансĕр пулать. Мĕнле те пулин йӳнеçтеркелесе хĕл каçăпăр. Вăрçăран арçынсем ырă-сывă таврăнччăр çеç,— терĕ вăл каллех...

— Чĕкеç, пирĕн пата паян палламан хĕрарăмсем килчĕç те ĕнене çавăтса тухса кайрĕç,— пĕлтерчĕ Ирнша, эпĕ шкултан таврăнсанах. Вăл ман çине салхуллăн пăхрĕ те тутăр вĕçĕпе шывланнă куçне шăлса илчĕ.

— Эсĕ çавăншăн макăратăн-и? — ыйтрăм эпĕ, пĕчĕк йăмăкăм çине тĕлĕнсе пăхса.

— Чи малтан эпĕ мар, чи малтан анне макăрчĕ. Вара... вара ăна курса, манăн та йĕрес килчĕ...

Сĕтлĕччĕ пирĕн ĕне. Чăнинпех выльăх апачĕ çитменнипе сутрĕ-ши ăна анне е мана шкул вĕренсе тухма май парас тесе-ши, çавна эпĕ халĕ те тĕплĕн калама пултараймастăп.

Çапла çĕр çине пин те тăхăрçĕр хĕрĕх виççĕмĕш çул çитсе пусрĕ. Вăл малтанхи кунсенчех фронтран хаваслă хыпарсем илсе килме тытăнчĕ. Радио, хаçатсем Совет Çарĕ çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туни çинчен савăнса пĕлтерессĕ. Тарать фашист, Европăна пăхăнтарса таптанă Гитлер çарĕ тӳсеймест пирĕннисем хĕсние — мĕнпур фронт талккăшĕпех — кăнтăртан пуçласа çурçĕре çитиччен каялла чакать. Ĕнтĕ Сталинград хулинче те çапăçу шавĕ вĕçленчĕ.

Сталинград! Епле тĕрмешрĕ тăшман çав хулана илесшĕн. Çур çул ытла çапăçрĕ. Гитлер çарĕн миллион çурă çынни ун çĕрĕнче вилĕм тупрĕ. Аманнă салтак каланине астăватăп. Госпитальрен киле таварăннă чух вăл кайма пулас (халĕ лайăх астумастăп ĕнтĕ) пирĕн пата кĕчĕ.

— Ача чух пире атте-анне тамакпа хăрататчĕ. Çав тамăка эпĕ виличченех Сталинград хулинче хам куçпа куртăм, хам чĕремпе тӳссе ирттертĕм,— терĕ вăл.— Бомбăсем, снарядсем, минăсем, çурăла-çурăла, хăлхана хуплаççĕ; çĕр вакланса сирпĕнет. Пур енче те вут-çулăм алхасать, хура тĕтĕм явăнать. Кашни утăмра вилĕм, кашни утăмра этем юнĕ юхать. Пурте çунать: шыв та, йывăç-курăк та... çынсем те. Вĕçĕмсĕр, пĕр чарăнмасăр, кăнтăрла та, çĕрле те... Мĕн курса тӳснине каласа пама сăмахăм та, халăм та çитмест,— салтак шывланнă куçне тасамарланнă тутăрĕпе шăлса илчĕ.— Вăт Гитлер, сволочь, мĕн туса хучĕ, э?.. Ну, ничаво... Черет çитет ăна та... Шел, тек эпĕ... — вăл тăруках пӳлĕнчĕ те чыхăна-чыхăна, вăрăммăн, асаплăн ӳсĕрме тытăнчĕ. Пичĕ хĕрелсе, кăвакарса кайрĕ, куçĕнчен куççулĕ юхрĕ, ăшчиккинче тем хăйăлтатрĕ, хăрăлтатрĕ.

— Пуля унта манăн... ӳпкере,— терĕ вăл, аран-аран сывлăш çавăрса ярса.

Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх виççĕмĕш çул... Ёнтĕ аслă совет çĕршывĕ çийĕн пулас çĕнтерĕвĕн савăк çути уççăнах ялкăшса çунма пуçларĕ. Халĕ ăна пурте кураççĕ, ĕненеççĕ, кĕтеççĕ. Анчах хăçан, миçе уйăхран килĕ-ши вăл, Аслă Çĕнтерӳ кунĕ? Час çитмерĕ вăл, ах, час килмерĕ. Тата та пиншер салтак уншăн пуçне хучĕ, пиншер ача ашшĕсене кĕтсе илеймерĕ, пиншер салтак арăмĕ, салтак амăшĕ, хăрушă хыпар илсе, вĕри куççулĕпе çăвăнчĕ.

## XII

Çуркунне еине пире каллех выçлăх аптратма пуçларĕ... Алексей Матвеевич каланă пекех, ноябрь уйăхĕнче шкулта буфет уçăлчĕ. Малтанхи вăхăтра чиперех ĕçлерĕ вăл. Кашни вĕренекен ачана çĕр аллă грамм çăкăр параççĕ, хуппипе пĕçернĕ çĕрулми илсе çиме пулать. Анчах виçĕ-тăватă уйăх иртрĕ-и, иртмерĕ-и, темшĕн-çке, хупăнчĕ çав буфет.

Килте çу пĕтрĕ, какай çук. Ир те, каç та, кăнтăрла та çĕрулми яшки çеç пĕçерсе çиетпĕр. Пур-çук çăнăхран анне çăмах туса ярать. Кашнине пĕрер çăмах. Анне пичĕ типсе сарăхса ларчĕ, кăвак куçĕ путса кĕчĕ. Шăллăмсем начарланса шурăхса кайрĕç. Пĕчĕк Иришка, чăвашсем калашле, пĕтĕмпех юхса тухрĕ. Епле мăнтăркка ачаччĕ вăл вăрçăччен. Тулăх пичĕ таса та сывлăхлăччĕ. Çамки хĕррипе кăшт кăтраланакан çӳçĕ пурçăн пек илемлĕ те çемçеччĕ. Йăмăкăм çине пăхсан, чун ыратать. Алли-ури шăрпăк пек çиңçелсе юлчĕ, куç айне кăвак ункăсем тухса вырнаçрĕç.

Çапла вăл выçлăх сăнĕ-пичĕ.

«Хăвăртрах кайса пĕттĕрччĕ ку юр. Вĕлтрен тухсанах, урăх апат пулать те-ха»,— тет анне.

Телее, çав ытла та асаплă кунсенчен пĕринче атте аппăшĕнчен, Лисук мăнаккаран, çыру килчĕ. Мĕн тери хаваслантарчĕ вăл пире! Миçе хутчен вуласа тухмарăм-ши эпĕ çав шултра саспаллисемпе çырнă хут татăкне.

Çемьене, тăван-хурăнташсене салам калама ыйтнă хыççăн, мăнакка пин те тăхăрçĕр çирĕм пĕрремĕш çулхи выçлăха аса илет. «Урине кинĕм, теп, эсĕ маннă пулĕ, унтанпа çирĕм çул та иртрĕ. Анчах эпир манман. Нихăçан та манас çук эсир пире ырă тунине. Выçлăх çул пирĕн ачасене вилĕмрен çăлса хăвартăр. Хăвăр çиес çăнăха пирĕн ачасене шеллесе патăр. Парăмне тепĕр çулнех татрăмăр пулин те, эпир хамăра сирĕн умра пурпĕрех парăмлă тесе шутлатпăр. Чăнах та, мĕнле виçепе виçĕн, мĕнле хакпа хаклăн çав калама çук тертлĕ вăхăтра панă пăт çурă çăнăха? Унăн хакĕ çук. Ылтăн, кĕмĕл пуянлăх теççĕ, анчах вĕсем хырăма тăрантармаççĕ. Çын пурнăçĕ ылтăнран та, кĕмĕлрен те хаклă. Çапла шутларăм эпĕ ун чух, халĕ те çаплах шутлатăп. Çăкăр çыншăн чи хакли, çăкăртан асли çук. Халĕ эпир старикпе иккĕнех пурăнатпăр. Ачасем ӳссе пурте çемьеленчĕç. Аркăран тытса, макăра-макăра çăкăр ыйтакан çук. Эсĕ вара тăвата ачапа пĕччен асапланса пурăнатăн. Чун сисет, выçăхатăр эсир. Çавăнпа та сире çав хаклă парăма тавăрса пама вăхăт çитрĕ пулĕ тетĕп. Тимахви те çаплах каларĕ. Эпир халлĕхе апат-çимĕç енчен аптрасах каймастпăр. Тимахви, çулĕ чылай пулин те, чиперех çӳрет-ха. Халĕ те тимĕрçĕрех ĕçлет. Хам та колхоз ĕçĕнчен юлман. Выçă лармастпăр. Ĕне те сăватăп. Кил, Урине кинĕм, кĕтетпĕр сана. Питĕ курса калаçас килет. Хамах пырăттăм та, урасем ыратаççĕ-çке. Çуран çитеймесрен шикленетĕп. Лашасем, хăвах пĕлетĕн, хальхи вăхăтра çук. Пирĕн Петĕр сылтăм урине амантса таврăнчĕ. Халĕ ял Советĕнче ĕçлет. Ыттисем çыраççĕ. Кĕркури мĕнле? Валери тата сывах пулĕ? Турă пулăштăрах вĕсене çак усал вăрçăран ырă-сывă таврăнма. Çакăнпа çырăва вĕçлетĕп. Салампа сирĕн тăванусем Тимахвипе Лисук».

Унтан çĕнĕ йĕркерен «Ку çырăва, асанне ыйтнипе, мартăн иккĕмĕшĕнче çиччĕмĕш класра вĕренекен Лидия Иванкина çырнă»,— тесе хушса хунă.

— Паян мартăн çирĕм саккăрмĕшĕ,— терĕ анне, виçĕ кĕтеслĕ çырăва çаплах алăра тытса.— Яни тăвată эрне çитет. Ăçта çухалса çӳренĕ-ши ку таранччен? Эх, ма кăшт маларах килмерĕ-ши ку çыру? Çавалта пăрĕ шанчăклă мар,

кĕç-вĕç хускалмалла... Халлĕхе каçса çӳреççĕ те,— хăйпе хăй калаçса илчĕ вăл.

Лисук мăнакка пирĕнтен пилĕк çухрăмра, Çавал тепĕр енче пурăнать. Çырми пысăк мар, ăшăх. Çулла ун урлă çерçи те утса каçать пуле. Анчах, ытти пĕчĕк юханшывсем пекех, çуркунне вăл, çырантан тухса, таçта çитиех сарăлса каять. Шыв типсе, çӳремелле пуличчен, пайтах вăхăт иртет. Анне тӳрех çавăн çинчен шутласа илчĕ пулас. Çавăнпа ĕнтĕ пĕр тăхтамасăр çула пуçтарăнма тытăнчĕ.

— Ир-каç шăнтать-ха. Çĕр выртмалла каятăп та ыран ирех килетĕп,— терĕ вăл. Пушă михĕ илчĕ те каça хирĕçех тухса кайрĕ.

Çурхи кун çурма ăслă тесе ахаль каламан çав. Халиччен уяр, лăпкă çанталăк тăчĕ. Анчах çав çĕр çил кĕрлесе тухрĕ, тăруках ăшăтса пăрахрĕ. Малтан йĕпе юр, унтан çумăр чашлаттарса çума пуçларĕ. Çĕрĕпех чарăнмарĕ вăл, çĕрĕпех шăпăртатрĕ.

Тул çутăлчĕ, çĕнĕ кун пуçланчĕ, анчах анне килмерĕ. Сĕлкĕш юр çийĕн çăпатапа чаплаттарса, эпĕ юханшыв еннелле чупрăм. Пăхатăп — Çавал туп-тулли, унăн таткаланнă çийĕ талккăшĕпех шăвать... Ку енче темиçе çын пăр кайнине пăхса тăрать, леш енче, тĕксĕмленнĕ юрпа витĕннĕ улăхра, никам та курăнмасть... «Каçма тăрса, шыва анса кайрĕ пулсан»,— пырса кĕчĕ пуçа калама çук хăрушă шухăш. Сивĕ шывпа сапнă пек, ăшчик сăрăлтатса кайрĕ.

Эрне кĕтрĕмĕр эпир аннене. Çулталăкран вăрăм туйăнчĕ мана çав вăхăт. Чипер, йĕркеллĕ пурăннă чух, çулталăк мĕн вăл. Сисмесĕрех иртсе каять. Кун хыççăн кун чупать, тĕксĕм кĕр килет, унтан кăпăш шурă юр çăвать те хĕл ларать. Çĕнĕ çул урлă каçатăн çеç, сисместĕн те, çуркунне персе çитет... Анчах çав эрнере вăхăт чăтма çук ерипен шурĕ. Пĕрре анне çинчен шухăшласа кунĕн-çĕрĕн ăш вăркать. Аçта вăл? Мăнакка патĕнче пулсан, юрĕччĕ. Тепре выçлăх асаплантарать. Пĕччен мар-çке. Манран кĕçĕнни тата виççĕн. Эпĕ асли, анне вырăнне юлнă. Икĕ кун эпир яланхи пекех çăмах яшки пĕçерсе çирĕмĕр. Анчах, çăнăх ытла та хăвăрт сахалланса пынине курса, эпĕ ăна пĕрер ывăç çеç пăтратса яма тытăнтăм. Сыпатăн-сыпатăн çав шĕвек яшкана, сĕтел хушшинчен тухатăн çеç, каллех хырăм выçă.

— Чĕкеç, анне хăçан çăкăр илсе килет? Ыран-и? — вĕçĕмсĕр ыйтать пĕчĕк Ириша.

— Анне килсенех çимелли пулать те-ха,— тет час-часах Санька та.

Коля шарламасть. Анчах эпир пурте вĕçĕмсĕр, иртен

пуçласа каçчен, анне килессе кĕтетпĕр. Кун иртет, шанчăк ырана юлать. Çав шанчăк выçăхса çитнĕ ăшчике пушшех асаплантарать. Çапла ыран хыççăн ыран...

Ĕнтĕ Çавал пăртак тасалма пуçларĕ. Кимĕпе каçма пулать. Ах, çав талккăшĕпех шыв сарăлса кайнă улăх пулмасан! Анатра, вунпилĕк-çирĕм çухрăмра, кĕпер пур теççĕ. Анчах тет сăмахăн теçетки те çур пус тăмасть теççĕ çав. Те пур, те çук. Çурхи шывпа вăл та ишĕлме пултарнă...

Ĕнтĕ эпĕ икĕ кун шкула каяймастăп... Ириша имшерленсех çитрĕ. Чупма, выляма пăрахрĕ. Ялан выртасшăн. Урама тухсан та: «Ывăнтăм, атя кĕретпĕр»,— тет. Пукане хăй çумне хурать те е тĕлĕрсе каять, е уппа хуллен пăшăлтатса калаçма тытăнать:

— Кĕçех анне килет. Анне çăкăр илсе килет, пысăк çăкăр. Акă çакăн пек. Ун чух эпĕ сана та паратăп тутлă çăкăр...

Манăн йĕрес килет çакна илтсен.

Шăллăмсем тӳсеççĕ-ха. Шкула та кашни кунах каяççĕ.

Пĕрре эпир каçхи апат çиме лартăмăр çеç, Алина пырса кĕчĕ. Шкулта вĕреннĕ чух вăл пирĕн пата вĕçĕмсĕр килсе çӳретчĕ. Халĕ сайра хутра çеç кĕркелет. Каç пулсан, капăрланать те урама вăййа тухать е ялти пĕр-пĕр çитĕннĕ хĕр патне кайса ларать. Манăн та вĕсем патне каяс килмест. Выçă хырăмпа сак çинчи пĕр-пĕрин çумне тайăнтарса тăратнă çăкăр çаврисене курма йывăр, сисмесĕрех çăвара сĕлеке тулать, алă-ура чĕтреме тытăнать.

Алина малалла иртрĕ.

— Чĕкеç, наччаслăха алшăлли парса яр-ха, леш хитре тĕрĕллине. Ӳкерсе илесчĕ,— терĕ вăл, вара саппун кĕсйинчен çăкăр татăкĕ кăларчĕ те юлхавлăн чăмлама тытăнчĕ.

— Çăкăр! — йынăшса ячĕ Ириша, çакна курса.— Манăн та çăкăр çиес килет!

Вăл çавăнтах сĕтел айне чăмрĕ. Эпĕ нимĕн калама та елкĕреймерĕм, йăмăкăм Алина умне пырса та тăчĕ. Пуçне çĕклерĕ те çăлтăр пек таса куçĕпе умри хĕр çине йăлăнса пăхрĕ.

— Çăкăр пар,— терĕ вăл, шуранка аллине ун енне тăсса.

— Ах, çисе ятăм... Пĕтрĕ,— Алина хĕрелсе кайрĕ.— Ытларах илсе килмеллеччĕ-иç...

Ман ăшчик пĕрре ăшăрхаса, тепре сивĕнсе кайрĕ.

— Ирина, яр аллуна! Эсĕ ыйткалакан мар! — терĕм эпĕ çиллессĕн.

Хăвăрт утса пырса, эпĕ йăмăка аллинчен ярса тытрăм та хам енне туртрăм. Каплансa килнĕ çилле чараймасăр,

тантăшăм çине калама та çук тарăхса пăхса илтĕм эпĕ.

— Урăх вырăн тупаймарăн-и çăкăр чăмлама?

— Мĕн? Мĕн турăм вара эпĕ çапла кăшкăрма? — чĕрре кĕме тăчĕ Алина.

— Нивушлĕ ăнланмастăн? Чунсăр мар вĕт эсĕ...

Куçне çиллессĕн хĕссе, хĕр пĕрре ман çине, тепре типсе хытнă Ириша çине пăхса илчĕ, унăн куçĕсем пушă сĕтел çийĕн шуса иртрĕç, Алина пуçне чикрĕ.

— Чăннипех шутламан эп ун çинчен,— терĕ вăл, сассине чылаях йăвашлатса.— Эсĕ те çав, нимĕн те каламастăн,— терĕ вăл, пĕр ури çинчен теприн çине пускаласа.

— Çăкăр çиес килет,— чĕрене ыраттарса, каллех йынăшрĕ имшеркке сасă.

— Илтместĕн-им? Кай хăвăртрах тухса!

— Каятăп-çке... каятăп. Мĕн ахăрашатăн? Ун çăкăрне туртса илмен эпĕ.

Алăк çиллессĕн шартлатса хупăнчĕ.

— Чĕкеç, çăкăр пар,— кĕперен туртрĕ мана Ириша. Ман чун кӳтсе çитрĕ. Каллех чăтаймарăм, хальхинче йăмăка кăшкăрса пăрахрăм.

— Аçтан тупас ман? Кай кунтан, ан çулăхнă пултăр!

Аллинчен тытрăм та хуллен тĕртсе ятăм. Мăнтарăн хĕрачи! Вăл нимĕн те каламарĕ, кĕтессе кайса ларчĕ те, икĕ аллипе те питне хупласа, чун-чĕререн хурланса макăрса ячĕ. Эпĕ ун патне ыткăнтăм. Чĕре калама çук ыратса кайрĕ. Мĕншĕн вăрçса тăкрăм-ха эпĕ ăна? Мĕн-ăнланать вăл пĕчĕкскер? Йăмăка хăвăртрах ачашлама, лăплантарма пикентĕм.

— Ан йĕр, Ириша. Ан йĕр. Кĕçех анне килет. Ун чух пирĕн те çăкăр пулать. Анне пĕçерет те сана ак çакăн пысăкăш татăк касса парать.

Тек ĕненмерĕ пулас йăмăкăм мана, йĕме чарăнмарĕ.

— Çăкăр çиес килет. Çăкăр çиес килет,— вĕçĕмсĕр нăшăклатрĕ вăл.

— Юмах ярса парас-и? Атя вырăн çине. Пĕрле выртăпăр. Юрать-и?

Васкаса вырăн сартăм. Иришăна салантарма тытăнтăм. Çара урисем çине пăхрăм та хăраниие шанках хытса тăтăм. Ман пĕчĕк йăмăкăн урисем шыçма тытăннă. Выçăхнă çын вилес умĕн шыçăнса каять тенине тахçанах илтнĕччĕ эпĕ. Акă вăл, çав выçă, пире пĕтерме шутларĕ пулас. Чи кĕçĕннинчен, чи имшерккинчен тытăнчĕ. Мĕн тăвас? Камран пулăшу ыйтас? Çăкăрлисем ялĕпе те икĕ-виçĕ килрен ытла мар. Çак кунсенче анне килмесен, пĕтет ача. Çавăн свĕр шухăш ман чĕрене кăвар пекех хыпса çунтарчĕ.

— Чĕкеç, юмах ярса пар...

— А-а... Юрать, юрать. Итле... Тахçан авал пĕр старикпе карчăк пурăннă. Вĕсен виçĕ ывăл пулнă...

Ириша тĕлĕрсе кайрĕ, куçĕ хупăнчĕ, мана мăйран ыталанă пĕчĕк алли ерипен вырăн çине шуса анчĕ.

Ун çумĕнчен хуллен тăрса, эпĕ сĕтел çинчен пуçтартăм, уптан, чӳрече патне пырса, урамалла пăхрăм. Қаç пулать. Хĕвеле хирĕç ларакан пӳрт чӳречисем, çулăм хыпнă пек, хĕрлĕ сарă тĕспе ялкăшаççĕ. Урам урлă хура мĕлкесем кармашнă. Хуллен, шăппăн шуса, вĕсем кĕçех мĕнпур тавралăха хупăрласа илеççĕ. Тата тепĕр кун иртет. Анне паян та çук...

«Килет, пурĕпĕрех килет, ырă-сывă пултăр çеç»,— шиклĕ шухăша сирсе, хама хам лăплантаратăп эпĕ. Мĕн чухлĕ улшăнчĕ çанталăк анне кайнăранпа. Ун чух çурхи шыв тин кăна тапраннăччĕ. Унта та кунта шурă юра сирсе, вăл пĕчĕк çăлкуçĕ евĕр, шăнкăртатса юхатчĕ. Халĕ çĕр типет. Сивĕ юр хĕвел курман вырăнсенче кăна пытана-пытана юлнă. Пĕр-икĕ кунран вăл та тасалать... Шăллăмсем таçта çӳреççĕ ĕнтĕ. Сурăхсене апат памалла, путексене тăрантармалла.

Çапла шухăшлакаласа лараттăм чӳрече умĕнче, сасартăк урамра Санька курăнчĕ. Тĕлĕннипе, темшĕн тăруках хăраса ӳкнипе эпĕ сиксе тăтăм. Шăллăм мĕнпур вăйран килелле чупать. Ун хыççăн Алина амăшĕ тапăлтатать. Инçе те мар. Акă, ярса тытма хăтланса, аллине те тăсрĕ. Çав самантра вĕсем патне Коля вирхĕнсе çывхарчĕ. Те ура хучĕ вăл Праски инкене — лешĕ тăруках такăнса, нӳрлĕ çĕр çине лаплатса ӳкрĕ. Кольăпа Санька сиккипех килелле чупрĕç. Акă картиш алăкĕ хыттăн шалтлатса хупăнчĕ. Ура сассисем крыльца çине тĕпĕртетсе хăпарчĕç, çенĕке васкаса кĕчĕç. Унчčен те пулмарĕ — пӳрт алăкĕ яри уçăлса кайрĕ, шăллăмсем хашкаса кĕрсе тăчĕç. Санька тӳрех тĕттĕм кăмака хыçне чăмрĕ, Коля та ун хыççăн талпăнчĕ, анчах çавăнтах каялла тухрĕ, малалла иртмесĕр, ман çине кăштах айăплăн, анчах хăй хумханнине палăртмасăр, лăпкăн пăхса илчĕ.

Эпĕ сăмах хушма та ĕлкĕреймерĕм, картишĕнче Праски инке курăнчĕ. Вăл та крыльца çине вирхĕнсе хăпарчĕ, çенĕк алăкне тĕртрĕ. Шалтан питĕрнĕ иккен, кĕреймерĕ.

— Халех уçнă пултăр! — илтĕнчĕ хаяр сасă.

— Коля, Саня! Мĕн пулчĕ? Ма хăвалать вăл сире? — ыйтрăм эпĕ, темшĕн тăруках чĕтреме тытăнса.

— Уçăр, уçăр тетĕп! Ы-ы-ы, кĕлмĕç раттисем! Вăрăсем!

Кӳршĕ хĕрарăмĕ çенĕк алăкне мĕнпур вăйран тĕртсе

силлеме, урипе тăрслаттара-тăрслаттара тапма пуçларĕ.

Уçас тесе, эпĕ пӳрт алăкĕ патнелле пытăм çеç, Коля çавăнтах ман ума тухса тăчĕ.

— Ан çывхар! Илтетĕн-и? Кай кунтан! Пурĕпĕр кĕртместĕп эпĕ ăна.

— Ан уç, Чĕкеç! Ан уç! — илтĕнчĕ кăмака хыçĕнчен Санькăн тилмĕрекен сасси.

Картишĕнче кӳршĕ хĕрарăмĕ урать, темтепĕр каласа вăрçать, çаплах кĕресшĕн тапаланса, е çенĕк алăкне силлет, е чышкипе чӳречерен шанлаттарма тытăнать.

— Чĕкеç! Мĕн хытса тăратăн, каптăрма хĕрĕ?! Уç, кĕрт халех! И-и, эсрел çурисем! Вилме маннăскерсем! Тăхтăр, кăна эпĕ капла хăвармастăп. Халех милиције кайса пĕлтеретĕп. Тыттарса яратăп пурне те! Тьфу! Тьфу сире! Тьфу!

Шăв-шава илтсе, Ириша вăранчĕ. Имшеркке аллисене ман енне тăсса, каллех йĕрсе ячĕ.

— Чĕкеç, кил кунта, эпĕ хăратăп,— терĕ вăл, чарăлнă куçĕпе чӳрече çине пăхса.— Праски инке мар вăл. Вăл тухатмăш, пире вĕлересшĕн,— шиклĕн пăшăлтатрĕ йăмăкăм, ман çума йăпшăнса.

«Чăннипех усал тухатмăш пекех. Паян пĕр евĕр, ыран пачах урăхла», — шухăшларăм эпĕ, кӳршĕ хĕрарăмĕн çилĕпе тискерленнĕ пичĕ-куçĕ çине пăхса.— Эпир Алинăпа туслă чух, вăл манпа пачах урăхла калаçатчĕ. «Э-э, Чĕкеç, килтĕн-и? Килех, ачам, кил. Иртсе лар малалла. Шăнтăн пулĕ. Акă кунта, кăмака çумне лар. Кунта ăшă». Сасси ачаш, çемçе, мăчăлти куçĕ кăмăллăн йăлкăшса пăхать... Халĕ Алина шкула çӳремест, манран тек усă çук. Авă епле урать, туртса çурма хатĕр... Анчах мĕн тунă-ши шăллăмсем?

Тулашсан, тулашсан, Праски инке картишĕнчен тухрĕ, кăшкăра-кăшкăра, сурса-ылханса, урам урлă каçса кайрĕ. Хирĕç пулнă кашни çыннах пирĕн кил çине пӳрнипе тĕллесе, нумайччен тем кала-кала пачĕ.

Шăв-шав лăплансан, Санька кăмака хыçĕнчен тухрĕ. Пиншак айĕнчен аллине кăларчĕ те сĕтел çине çавра чĕл çăкăр пырса хучĕ.

— Ириша валли,— терĕ вăл кĕскен. Вара аяккалла пăрăнса тăчĕ.

Эпĕ пĕтĕмпех ăнлантăм. Анчах: «Мĕн туса хутăр эсир? Халех каялла кайса парăр»,— темс вăй-хал çитереймерĕм. Чĕлхе çаврăнмарĕ. Куç тӳрех çăкăр чĕлли çине тăрăнчĕ. Çăвара сĕлекс тулчĕ. Епле кăпăшка вăл! Мĕн тери тутлă шăршлă! Ярса тытса, пĕр самантрах çăтса ярăттăм. Пытармастăп, çавăн евĕр шухăш та пырса кĕчĕ ун чух ман

пуҫа. Кӗске самантлӑха кӑна, анчах пырса кӗчӗ. Ҫук, юрамасть апла тума... Юрамасть... Куҫа вӑйпа ҫӑкӑр ҫинчен илсе, эпӗ пуҫа ҫӗклесе пӑхрӑм. Ириша каллех тӗлӗрет. Кӑмака кӗтессине кайса тӑнӑ Санька ҫӑкӑр ҫинчен куҫне илеймесӗр пӑхать. Ҫинҫелсе юлнӑ мӑйӗнче карланки канӑҫсӑррӑн куҫкалать. Вӑл мӗнпур кӗлеткипе сӗтел енне ӳпӗннӗ. Анчах чӗнмест, тӳсет шеремет... Коля та юнашарах. Нимӗн пулман пек, ҫӑкӑр татӑкӗ енне ҫурӑмӗпе ҫаврӑннӑ та урамалла пӑхса тӑрать... Эпӗ ӗнтӗ хама алла илтӗм. Ҫӑкӑр чӗллине васкамасӑр тӑвата пая уйӑртӑм. Чи пысӑкки, паллах, Ириша валли. Вӑратмасӑр, эпӗ ӑна хӗрачан алӑ тупанӗ ҫине хутӑм. Тӗлӗнмелле. Пӗчӗк йӑмӑкӑм ҫавӑнтах куҫне уҫрӗ, ҫӑкӑр татӑкне ярса тытрӗ те, чыхӑна-чыхӑна, чӑмлама тытӑнчӗ. Санька сӗтел енне ярса пусрӗ, анчах ҫавӑнтах чарӑнчӗ. Эпӗ ӑна чӗлӗн тепӗр пайне патӑм.

— Коля, ме, ку сана,— терӗм эпӗ ҫаплах чӳречерен хускалмасӑр пӑхса тӑракан шӑллӑма.

— Ириша ҫитӗр,— сӑмах хушрӗ вӑл кӗскен. Тухса каймА тӑчӗ, анчах ҫӑкӑр татӑкӗ ҫине пӑхрӗ те тӳсеймерӗ, чӗтрекен аллине ман енне тӑсрӗ. Юлашки чи пӗчӗк касӑкне эпӗ ҫӑвара хыпрӑм. Ҫу татӑкӗ евӗр, вӑл сисмесӗрех ирӗлсе анса кайрӗ. Кун хыҫҫӑн ҫиес килни пушшех асаплантарма тытӑнчӗ.

Ҫӑкӑр чӗлне ҫисе ятӑмӑр кӑна, ман пусӑрӑннӑ ӑстӑнӑм ҫавӑнтах вӑраннӑ пек пулчӗ. Пуҫра канӑҫсӑр шухӑшсем пӑтранма тытӑнчӗҫ. Эпӗ шӑллӑмсем ҫине хӑюсӑррӑн пӑхса илтӗм. Тӗрӗсе вӗрентсе, кирлӗ канаш парас вырӑнне, паян эпӗ вӗсем вӑрласа килнӗ ҫӑкӑра пӗрле пайласа ҫирӗм.

— Килсен, аннене мӗн тейӗпӗр-ха?

Ума Саня пырса тӑчӗ.

— Аннене кун ҫинчен нимӗн те ан кала, Чӗкеҫ,— терӗ вӑл, ман ҫине тилмӗрсе пӑхса.— Юрать-и? Эпир те шарламастпӑр. Ҫапла вӗт, Коля?

— Аха, каламастпӑр,— пуҫне сӗлтсе килӗшрӗ Коля.

Саня мана паян тӗлӗнтерчӗ. Хӑюсӑр вӑл, пуринчен те хӑрать. Ҫуллахи кунсенче аслати хаяррӑн халтӑртатма тытӑнать ҫеҫ, Саня сӗтел айне пытанса ларать, урамра ӳсӗр кӳршӗ ахӑрашма тытӑннине илтет кӑна — пурччӗ ялта уп пекки пӗр ҫын — хӑвӑртрах картиш алӑкне питӗрет, ҫӗрле те тула пӗччен тухасшӑн мар. Анчах паян... Ют пӳрте кӗрсе, ҫӑкӑр илсе тухма епле хӑйнӑ-ха вӑл?

— Мана Алина譯 каларӗ: «Пыр пирӗн тӗле. Ириша валли ҫӑкӑр паратӑп»,— терӗ,— кӑвак куҫне айӑплӑн мӑч-мӑч хупкаласа, ӑнлантарчӗ мана шӑллӑм.—Эпӗ урамра кӗтрӗм-

кĕтрĕм... Алина тухмарĕ. Вара чӳрече патне пытăм та, văл уçăлчĕ. Çăкăр чĕлли сĕтел çинчех выртать. Алинăна чĕнтĕм, никам та сăмах хушмарĕ. Вара эпĕ... Вара... Эпĕ ăна Ириша валли-çке... Ириша пĕчĕк. Çăкăр çимесен, вилме пултарать. Иришăна шалккă,— каллех куçран тилмĕрсе пăхрĕ Саня.— Аннене каламастăн-и, Чĕкеç?

Эпĕ ăна ӳпкелеме хăяймарăм. Тулса çитнĕ куççуле çăтса, чĕнмесĕр, пуçа сĕлтрĕм çеç.

Çапла, пулни-иртнине эпир аннене пĕлтерместпĕр тесе килĕшрĕмĕр. Хăраса мар, вăтанса. Атте-анне пире хĕнемен. Айăпа кĕрсен, аттен вăрçса илесси пурччĕ. Анне вара кăмăлсăррăн мăкăртатнипех ирттерсе яратчĕ: «Ну, ку ачапăчапа! Хăçан ăс кĕрĕ!»

Ĕнтĕ кун вĕçленчĕ. Тавралăха çурхи каç сăнĕ çапрĕ. Эпĕ картара путексене типĕтнĕ симĕс çулçă çитеретĕп. Верук пырса кĕчĕ. Паянхи шăв-шав ун патне те çитнĕ иккен.

— Ах, ку бригадир ĕçĕпе. Ниепле вăхăт тупса килейместĕп. Эй, Праски (инке тесе те калас килмест ăна). Эй, тур-тур! Тырри-çăнăхĕ кĕлетĕнче йăтăнса выртать теççĕ. Чĕл çăкăршăн çакăнта выçăхнă ачасем хыççăн чупса килет-и-ха... Эй, чунсăр этем! Алина тата! Сăмах çитмест ман вĕсем çинчен калаçма,— вăрçса илчĕ вăл, мĕн пулса иртнине пĕлсен, унтан мана ӳпкелеме тытăнчĕ.— Эсĕ те çав... Ма халиччен каламастăн? Çăкăртан эпĕ те пуян мар, анчах çĕрулми пур. Атя пĕрле, халех парса яратăп.

— Каярах пыратăп, ĕç пуçтарсан,— терĕм эпĕ.

— Выçăпа аптракан çемье миçе ĕнтĕ ялта,— терĕ Верук, ассăн сывласа.— Ыранах кун пирки колхоз правленийĕнче калаçу хускатмалла. Юрамасть капла. Шкулта вĕренекенсен те, килти пĕчĕк ачасен те хăйсен тӳпи пулмалла. Ютран килмен, хамăр колхоз ачисемех. Эй, пурнăç! Ашшĕсем фронтра çапăçаççĕ, амăшĕсем канма пĕлмесĕр колхоз ĕçĕнче тĕрмешеççĕ. Ачисем выçă. Çăкăр татăкĕ ыйтса йĕреççĕ... Ну, эпĕ чупам-ха. Вутă хутман, выльăх-чĕрлĕх выçă. Пыр, Чĕкеç, кĕтетĕп,— Верук чупсах тухса кайрĕ.

Пушă хутаç илсе, эпĕ картиш алăкне уçрăм та урама тухрăм. Пăхатăп — пирĕн еннелле хĕрарăм утать. Çурăмĕ хыçĕнче кутамкка, пĕр аллинче пĕчĕк хутаç, тепринче туя. Анне!.. Кĕтмен çĕртен пыра куççулĕ капланчĕ. Хавaслăн кăшкăрса ярса, пырса ыталас вырăнне, эпĕ пĕр вырăнта хытса тăтăм, унтан ĕсĕклесе йĕрсе ятăм.

— Нимĕн те пулман пулĕ вĕт? Пурте сывах-и? Чиперех-и? — хыпăнса ӳкрĕ анне, ман çине канăçсăррăн тинкерсе пăхса.

— Лайăхах... Сывах... пурте,— терĕм эпĕ, çаплах куççу-

лёпе чыхăна-чыхăна.— Эсĕ час килмерĕн... Пăр айне анса кайрăн пулĕ тесе...

Юлашки сăмахсене эпĕ ирĕксĕр, сисмесĕр персе ятăм. Çав хăрушă шухăш эрне каярах ман ăша, сивĕ çĕлен евĕр, шăвăнса кĕчĕ. Кĕрсе вырнаçрĕ те, темле хăваласан та, тухасшăн пулмарĕ. Мĕн тĕрлĕ асаплантармарĕ-ши вăл ман чуна... Тискер тĕлĕксем пулса, миçе хутчен чĕрене çурса ярас пек ыраттармарĕ-ши. Халĕ ĕнтĕ тасал ман çумран, пĕт, усал хура шухăш. Акă вăл, ман анне, кунтах, ман умрах тăрать! Сывах, чиперех!

— Ну, юрать. Пурте йĕркеллĕ пулсан лайăх,— анне çăмăллăн сывласа ячĕ.

Эпир пӳрте кĕтĕмĕр. Саланмасăр, кутамккине хывмасăр, анне тӳрех çывăракан ачисем патне пычĕ. Вĕсем сывланине итлесе тăчĕ. Пĕрне питĕнчен аллипе ачашшăн перĕнчĕ, теприн утиялне тӳрлетрĕ.

— Лăстăр-лăстăр ывăнтăм. Чĕкеç, пулăш-ха. Вĕçертсе ил кутамккана,— терĕ анне юлашкинчен.— Паян ирех тухнă эпĕ. Кĕпер патне çирĕм çухрăм пулать пулĕ, киле çитме те çавăн чухлех. Çулĕ типмен, начар. Утма йывăр.

Чăнах та, сăхман аркийĕсем, çăпата сырнă ури тăрпылчăк.

Анневаскамасăр саланчĕ. Сак çине ларса, стена çумне тĕшĕрĕлчĕ те куçне хупрĕ. Эпĕ ăна кăмака çинчен ăшă кăçат илсе тăхăнтартрăм.

Ириша вăранчĕ. Аннене курсан, хĕрача хаваслăн кулса ячĕ, сиксе тăчĕ те, чупса пырса, ыталаса илчĕ.

— Анне, çăкăр илсе килтĕн-и? — ыйтрĕ вăл.

— Илсе килтĕм, хĕрĕм, илсе килтĕм. Халĕ пурăнатпăр пĕр хушă. Тавтапуç йыснапа аппана.

— Чĕкеç, салт-ха çак хутаçа. Касса хур сĕтел çине. Вăрат Кольăпа Санькăна. Апат çийĕпĕр.

Паян пирĕн уяв. Сĕтел çинче урпа çăнăхĕнчен пĕçернĕ икĕ пашалу, икĕ чăкăт выртать, чейник пăсланса ларать.

— Çийĕр, ачасем, çийĕр,— хăналать анне. Пирĕн çине ытараймн пăхакан куçĕ е ăшшăн, ачашшăн çуталать, е салхуланса тĕксĕмленет.

Вăрçă хыççăн ӳснĕ ачасем пашалу мĕнне пĕлмеççĕ те пулĕ. Халĕ урпа çăнăхĕнчен нимĕн те пĕçермеççĕ. Çăнăхне вĕтĕ алапа алласан та, хылчăкĕ пĕтĕмпех тасалаймасть унăн. Тата чылай вăхăт пашалу кăна çисе пурăнсан, çăвар маччийĕ хĕрелсе ыратма тытăнать... Анчах çав каç пирчек, хылчăклă урпа пашалăвĕ мана тутлă кулачран та тутлăрах туйăнчĕ.

Анне! Сана асăнса пуç таятăп. Атте вăрçа тухса кайсан,

килти, колхозри мĕнпур йывăрлăх, мĕнпур хĕн-хур санăн имшер хулпуççийу çине тиенчĕ. Вăрçа пула пурне те тӳссе ирттерме тиврĕ сана. Нушаллă пурнăçа та, выçăллă-тутăллă кунсене те, йывăр арçын ĕçне те. «Чăтса ирттеретпĕр. Пĕччен мар, мирпе пĕрле. Вăрçăран ырă-сывă таврăнччăр çеç»,— теттĕн эсĕ. Анчах килмерĕç вĕсем. Ывăлу хаяр вăрçă вутĕнче чĕрĕллех çунса кайрĕ, мăшăру — пирĕн атте — Украина çĕрĕнче пуçне хучĕ. Нумай куççулĕ юхтартăн эсĕ. Кĕлеткӳ кукăрăлса ларчĕ, илемлĕ кăвак куçу тĕссĕрленчĕ, путса кĕчĕ. Хут килнĕ пулин те, кĕтрĕн эсĕ аттене. Вăрçă та вĕçленчĕ. Демобилизаци пуçланчĕ. Чĕрĕ юлнă салтаксем таврăнчĕç, тыткăнра пулнисем те килсе пĕтрĕç. Эсĕ çаплах, ялтан тухса, тунсăхлă куçпа аслă çул çине нумайччен пăхса тăраттăн. Çук, кĕтсе илеймерĕн. Тăвата ачапа пĕччен юлса, эсĕ çаплах ырми-канми ĕçлерĕн, пирĕншĕн, пирĕн пуласлăхшăн пурăнтăн, çитĕнтертĕн, тăрантартăн, тумлантартăн. Ялан ырă тĕслĕх парса, ĕçе юратма, тĕрĕс пурăнма, çынна хисеплеме вĕрентрĕн, пултарнă таран пĕлӳ илме пулăшрăн.

Йăвари кайăк чĕпписем пек, ӳссе, эпир пĕрин хыççăн тепри килтен туха-туха кайрăмăр. Эсĕ пирĕн, çамрăк ăрăвăн, шухăш-кăмăлне, интересĕсене ăнланма тăрăшаттăн, хисеплеме пĕлеттĕн. Маншăн, çук, маншăн кăна мар, пирĕншĕн пуриншĕн те эсĕ яланах чи хисеплĕ, чи хаклă çын пулнă. Тав сана, юратнă анне, пуриншĕн те ĕмĕрлĕхех тав!

— Анне,— терĕ çисе тăраннă Ириша, куçне хаваслăн йăлкăштарса.— Чĕкеç мана ак çакăн пысăкăш çăкăр пачĕ. Санькăна та, Кольăна та...

— Çăкăр? — тĕлĕнчĕ анне.— Мĕнле çăкăр?

Санька хĕрелсе кайрĕ те пуçне чикрĕ.

— Ай-яй, Ириша! Ах, пĕчĕк пакăлти! Вăл çапла персе ярасса эпир пачах шута илмен.

— Мĕн сӳпĕлтететĕн пустуя? — куç харшине çиллессĕн пĕрсе, Коля йăмăк çине кăмăлсăррăн пăхрĕ.— Тĕлĕкре курăннă сана çăкăр!

— Э-э, тĕлĕкре мар çав! Эсĕ ху суятăн. Аннене тĕрĕссине калас пулать,— хĕрсе кайсах хирĕçлерĕ Ириша.

Мĕн тăвăн! Тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пама тиврĕ. Анне пуçĕ усăнчĕ. Çӳп кĕнĕ евĕр, вăл куçĕсене темиçе хут тутăр кĕтессипе шăла-шăла илчĕ. Вăрçмарĕ вăл пире, ӳпкелемерĕ, мана та пĕр кăмăлсăр сăмах та каламарĕ.

— Пулни ирттĕр. Тек асăнар мар кун çинчен,— темле йывăр япала йăвантарса янă пек, анне тăруках хулпуççине хускатса илчĕ, тӳрленчĕ.— Халĕ аптрамастпăр. Пĕр хушă пурăнатпăр ку çăнăхпа. Кĕçех вĕлтрен, серте тухать... Ывăнтăм эпĕ паян. Атьăр, ачасем, çывăрар.

— Анне, Праски инке тухатмӑш пулса килмест-и пирӗн пата? — ыйтрӗ Ириша, тӗттӗм чӳречесем ҫине шиклӗн пӑхса.

— Килет, хӗрӗм, ыранах килет. Анчах эсӗ ан хӑра. Эпӗ ӑна тек тухатмӑш пулма ирӗк памастӑп,— йӑл кулчӗ анне.

— Мӗнле майпа? Эсӗ, мӗн, асамлӑ сӑмах пӗлетӗн-им?

— Ӗнер пирӗн Санька парӑма кӗтӗм терӗ. Акӑ паратӑп вӑл кивҫен илнине тетӗп ҫеҫ, Алина амӑшӗ вара тухатмӑш пулаймасть.

Ириша кулса ячӗ. Саня пуҫне ҫӗклерӗ те анне ҫине тӗлӗннӗн пӑхса илчӗ. Унӑн шуранка пичӗ-куҫӗ хаваслӑн ҫуталчӗ. Ӗненчӗ вӑл, тӳрех ӗненчӗ анне юри лӑплантарма каланӑ сӑмахсене.

— Аха... Эпӗ вӑрламан... Эпӗ чӑнах кивҫен илнӗ. Эпӗ Праски инкене те ҫапла каласшӑнччӗ. Вӑл темшӗн-ҫке мана тӑнламарӗ...

Мӑнтарӑн ачи! Хытӑ пӑтратнӑ пулас ун чӗрине вӑрӑ тенӗ ырӑ мар ят.

Кайран, ҫитӗнсен, сайра хутра сӑмах майӗн аса илетчӗ Саня ҫав хӑрушӑ куна.

— Хам ӗмӗрте эпӗ пӗрре вӑрланӑ: ҫӑкӑр чӗлли илсе тухнӑ кӳршӗсенчен,— тетчӗ.

Ҫав кунсенче эпӗ час-часах Алина ҫинчен шухӑшларӑм. Малтан, выҫӑхнӑ ачасене юри йӗкӗлтенӗ пек, ҫӑкӑр чӑмласа килчӗ. Кайран Санькӑна астарса улталарӗ...

«Ҫук, юри туман вӑл ӑна... Юри мар,— хӑвалатӑп эпӗ хура пӗлӗт пек капланса килекен кӳренчӗк шухӑша.— Алина ырӑ хӗрача. Анчах ҫӑмӑл шухӑшлӑ вӑл. Тутӑ пурӑнать, выҫлӑх мӗнне пӗлмест. Ҫавӑнпа пӗр шухӑшсӑр ҫӑкӑр чӑмласа килсе кӗчӗ. Кӑмӑлӗ усал пулсан, Санькӑна «Ҫӑкӑр паратӑп, пыр» тесе чӗнмест ӗнтӗ».— «Чӗнессе чӗннӗ, анчах паман, улталанӑ,— хирӗҫлет ӑшра тепӗр туйӑм.— Ӑна пула епле шӑв-шав пулса иртрӗ. Яла усал хыпар сарӑлчӗ».— «Тен, улталаман. Тен, майӗ пулман унӑн ҫав самантра. Амӑшӗнчен вӑрттӑн илсе тухма шутланӑ-ҫке вӑл ҫӑкӑрне. Тен, пӗр-пӗр васкавлӑ ӗҫпе ӑҫта та пулин каймалли пулнӑ унӑн»,— ҫаплах тантӑшӑма хӳтӗлеме тӑрӑшатӑп эпӗ.

Ахалех хӳтӗленӗ. Вунҫичӗ ҫула ҫитнӗ ҫамрӑк — ача мар. Хӑй мӗн тунине ӑнланмаллӑх ҫитӗннӗ вӑл.

«Алинӑпа манӑн калаҫмаллах, пӗлмелле мӗншӗн ҫапла пулса тухнине»,— ҫирӗп шут тытрӑм эпӗ юлашкинчен.

Анчах ҫав кунсенче, май уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче, Алинӑсен килӗнче пурнӑҫ айӑн-ҫийӗн ҫаврӑнса кайрӗ. Таврари мӗнпур ялсенче вӗсем ҫинчен нумай питлесе калаҫрӗҫ, куҫ умӗнчех, ҫав кирлӗ, шалчи тулчӗ текенсем те пайтах пул-

чёç. Çакăн хыççăн манăн та Алинăран чун ютшăнчĕ. Калаçас кăмăл çухалчĕ. Сивĕнтĕмĕр эпир, ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрăмăр...

Ирхине ирех, хĕвел те тухман ун чух, пирĕн пата Мархва кинемей васкаса пырса кĕчĕ. Шăллăмсем çывăраççĕ, эпĕ те вырăн çинчен тăман.

— Мĕкĕтесем патне икĕ милици кĕрсе кайрĕ. Курмарăн-и? — ыйтрĕ кинемей аннерен, тӳрех тĕпелелле иртсе.— Эпĕ çăлтан шыв кăлараттăм. Пырса тăчĕç ман пата.

— Никита Семеновăн килĕ хăшĕ? — тесе ыйтаççĕ.

— Пăт Мĕкĕтин-и? Авă тимĕр витнĕ пысăк пӳрт. Килте çук вăл, Мĕкĕте вăрçăра тетĕп хайхисене. Хирĕç шарламарĕç. Утрĕç малалла... Хĕллех каларăм сана. Сăмах çӳрет терĕм. Астăватăн-и? Эсĕ ĕненмерĕн. Халăх ахаль калаçмасть çав. Акă хайхи, тĕрĕсех пулчĕ.

— Тен, унпа мар, урăх ĕçпе килчĕç,— иккĕленчĕ халĕ те анне.

Эпĕ те илтнĕ ку хыпара, пĕлетĕп. Малтан Праски инке çинчен пăшăлтатма тытăнчĕç.

«Вĕçĕмсĕр пасара чупать. Вĕçĕмсĕр сут тăвать. Хутаçĕ-хутаçĕпе йĕке, тура, çĕçĕ сутать. «Мĕкĕте туса хăварни»,— тет. Вăрçă тухсан, кĕркунне салтака кайрĕ. Хăçан, мĕн вăхăтра тума ĕлкĕрнĕ вара вăл çавăн чухлĕ?»

Каярахпа: «Мĕкĕте вăрçăра мар, тарса çӳрет»,— текен усал хыпар сарăлчĕ.

— Тет сăмахпа Мускавра чăх сăваççĕ, тет,— хуравларĕ анне ун чух. — Кам курнă ăна? Тĕплĕн пĕлмесĕр çын çинчен çапла сӳпĕлтетсе çӳрени лайăх мар. Ячĕ мĕн тери усал, йывăр.

Çавăнпа килте эпир Алина ашшĕ çинчен сăмах хускатман.

— Акă тухрĕç! Илсе тухрĕç хайхине! — ялтах хускалчĕ чӳречерен пăхса тăракан кинемей.— Эй, Мĕкĕте! Ăçта пытанса пурăннă-ши? Тĕпсакайĕнче ĕнтĕ. Урăх ăçта пултăр... Арăмĕ: «Пĕр çыру та ямарĕ, те чĕрĕ, те вилĕ»,— тесе йĕрем пекки туса çӳрет çынсен куçĕ умĕнче. Тьфу, кĕççе пит!

Анне чӳречерен пăхрĕ те çавăнтах пăрăнчĕ.

— Тĕнче юн юхтарса çапăçать. Çул çитмен çамрăксем военкомата кая-кая, хăвăртрах фронта яма ыйтаççĕ. Хĕрарăмсем, хĕрсем вăрçăра. Вăл пур, усал йĕкехӳре пек, тĕпсакайĕнче пытанса пурăнать,— терĕ анне çиллессĕн.

— Вăт-вăт. Тĕрĕс каларăн. Чăн-чăн йĕкехӳре пекех,— çирĕплетрĕ Мархва кинемей ун сăмахне.

Урамваррипе виççĕн утаççĕ. Икĕ милиционер — пĕри çамрăк, яштак пӳллĕ. Вăл малта. Тепри çулланнă, лутака

арçын. Вĕсем хушшинче аллисене каялла тытнă Алина ашшĕ пуçне усса пырать. Çийĕнче тĕссĕрленнĕ, вырăнăн-вырăнăн татăла-татăла кайнă кивĕ фуфайка, шăлаварĕ те кивĕ, саплăк çине саплăк.

— Аçтан тупса тăхăнтартнă-ши кун пек çĕтĕк-çатăка? Ырăрах тум шелленĕ ĕнтĕ. И-и, пулать хĕрарăм! И-и, хыт кукар! Ялйышран кăштах вăтанасчĕ,— калаçса илчĕ кинеми.— Авă тухрĕ картишĕнчен. Хыçран чупать.

Куçĕсене саппун аркипе шăла-шăла, Праски инке васкамасăр пыракан арçынсене хуса çитрĕ те упăшкипе юнашар утрĕ. Тем каларĕ пулас. Лешĕ арăмĕ çине пăхмарĕ те. «Кай кунтан!» тенĕн, аллине çиллессĕн сулса ячĕ çеç.

Виçĕ çын уй хапхи патне çывхарсан, вĕсене кӳлнĕ çара урапа хуса çитрĕ. Ми́лиционерсем ларчĕç. Алина ашшĕ ял енне çаврăнчĕ те пуçне çĕре çитиех тайрĕ. Тăван ялпа сывпуллашрĕ-ши вăл, ялйышран каçару ыйтрĕ-ши? Кам пĕлет. Анчах ун патне пĕр çын та пымарĕ, сывă пул тесе калакан пулмарĕ. Картиш алăкĕсенчен тухса тăнă хĕрарăмсем тĕлĕннипе аллисене шарт та шарт çапа-çапа юлчĕç. Урампа çывăхран иртекенсем кури куçа курмăш туса утрĕç. Ывăлĕ те, хĕрĕ те ашшĕне ăсатма картишĕнчен тухмарĕç. Арăмĕ кăна урам варринче йĕрсе юлчĕ. Ун патне те никам та пымарĕ, ăшă сăмах каласа йăпатакан пулмарĕ.

Çав ир укăлча хапхи Мĕкĕте пиччешĕн юлашки хут уçăлса хупăнчĕ... Таврăнмарĕ вăл. «Таркăн салтак пулнă», «вăрçа каясран пытанса пурăннă» текен ырă мар ят ял çине юлчĕ.

## XIII

Ансăр сукмакпа эпĕ шкултан килелле утатăп. Шăмшак çăмăл, кăмăл хаваслă. Май пулсан, вĕçсе çĕкленĕттĕм сывлăша. Вĕренӳ çулĕ пĕтрĕ. Паян маншăн уроксем яланлăхах вĕçленчĕç. Экзаменсене ăнăçлă парсан, тепĕр уйăхран эпĕ вăтам шкул пĕтерни çинчен пĕлтерекен аттестат илетĕп. Савăнатăп эпĕ паян. Темле йывăр пулсан та, ĕмĕтĕм пурнăça кĕчĕ. Каллех класс руководительне ăшă кăмăлпа аса илетĕп. Тавтапуç сире, Алексей Матвеевич, çав тĕксĕм, çумăрлă кун пирĕн пата пынăшăн. Тавтапуç аннене те, мана шкула çӳреме ирĕк панăшăн.

Ансăр сукмакпа эпĕ пĕр-пĕччен утатăп. Кунĕ уяр, ăшă. Кăвак тӳпере, аслă çĕре мухтаса, тăрисем юрлаççĕ. Уйхирте кĕрхи калча ешерсе çĕкленет. Нумаях пулмасть çурхи тырпул акса хăварнă анасем халлĕхе хура. Кĕçех вĕсем те симĕсленме тытăнаççĕ. Мĕн чухлĕ илем таврара!

Мĕн тери лайăх пурăнма! Анчах вĕрену паллисем кăçал кăштах начарланчĕç çав. «Пиллĕксем» катăлчĕç, «тăваттăсен» шучĕ ӳсрĕ. Выçлăх асаплантарман пулсан, ун пек пулмастчĕ-ха. Учитель хĕрсех урок ăнлантарать, эсĕ пур, «хăçан пĕрре вăрçăчченхи пек тăраниччен çиес-ши?», тесе шухăшласа ларатăн. Кĕнеке вуланă чух та çавăн евĕрех, пĕлӳ пуçа кĕресшĕн мар.

Çапах телейлĕ эпĕ паян. Вăтам шкул хыçала юлчĕ. Умри ĕмĕт çутă çăлтăр пек ялкăшать. Малалла вĕренес шухăш мана канлĕх памасть. Анчах кăçал килтен кайсан, анне виçĕ ачапа пĕччен юлать. Йывăр пулать ăна. Хам çинчен çеç мар, манăн кĕçĕннисем çинчен те шухăшламалла. Кун пирки эпир аннепе ларсах канашларăмăр. Институт — вăтам шкул мар. Унта вăтăр пилĕк çулхисене те илеççĕ.

Çакăн евĕр шухăшсемпе хавхаланса, эпĕ киле çитрĕм. Пăхатăп: сĕтел çывăхĕнче, сак çинче, арçын ларать. Çар тумĕпе, кăвакарнă çӳçне кĕске кастарнă. Чĕрçийĕ çинче Ириша вылять. Санька та ачашшăн йăпшăннă. Çывăх, палланă пит-куç, анчах сухалсăр, янахне яп-яка хырса тасатнă.

— Атте!

Икĕ эрне кĕтетпĕр ĕнтĕ эпир аттене. Юлашки çырура вăл, госпитальре выртатăп, çĕр-шыв типсен, тен, киле пыратăп тесе çырнăччĕ. Акă кĕтсе илтĕмĕр.

— Чĕкеç, эпĕ аттене тӳрех палласа илтĕм. Уй хапхинчен кĕнине куртăм та тӳрех хирĕç чупрăм. Çапла вĕт, атте?

Ириша аттене вĕçĕмсĕр ачашлать, чуптăвать, пĕчĕк аллисемпе питне çупăрлать, кăвакарнă çӳçне шăла-шăла якатать. Санька та утăм та хăпмасть. Мĕн тери тунсăхласа çитнĕ вĕсем. Эпĕ тек ун пек ачашланма хăймастăп. Эпĕ хама тахçанах çитĕннисен шутне кĕртнĕ.

— Чĕкеç, пĕл, атте мĕн илсе килнĕ? — телейлĕн чĕвĕлтетет Ириша.— Пĕлместĕн-и? Çă-кăр. Пăх сентре çине.

Çăкăр... Ылтăн тĕслĕ çăкăр çаврисене кăмакаран кăларса хурсан, тутлă шăршă урамĕпех сарăлатчĕ. Хăçантанпа çимен эпир таса ыраш çăнăхĕнчен пĕçернĕ тутлă çăкăр? Икĕ çул вăрçă пырать. Икĕ çул колхозран пĕр пĕрчĕ те тырă илмен... Пĕтĕмпех выçăхса çитрĕ халăх. Кăçал, çĕр кăштах кушăрхарĕ кăна, çынсем, сенĕксем, кĕреçесем илсе, пĕлтĕрхи çĕрулми анисем çине тухрĕç. Тăпра айне пулса юлнă çĕрĕк çĕрулмине чавса пуçтарса, килĕсене йăтма тытăнчĕç. Пĕтĕмпех çĕрсе пĕтмест иккен вăл, çĕр айне пулса юлнă çĕрулми. Крахмалĕ упранса юлать. Эпир те халĕ, çав тасатса типĕтнĕ крахмала çăнăхпа хутăштарса, икерчĕ пĕçеретпĕр. Серте-вĕлтрене те ырăпа асăнас килет.

Миçе çын пурнăçне çалса хăварчĕç пулĕ вĕсем, çуркуннe чи малтан тухакан çав сиплĕ курăксем?!.

Атте илсе килнĕ çăкăра куртăм кăна, ирĕксĕрех çăвара сĕлеке тулчĕ.

— Аннӳпе Коля хирте çĕрулми лартаççĕ. Кĕçех килеççĕ вĕсем. Вара апат çийĕпĕр,— тет атте, çакна асăрхаса.

— Атте, эсĕ урăх каймастăн-и? — ыйтать Санька.

— Аманнă ура тӳрленсе çитиччен килтех пулатăп. Тухтăрсем: «Ĕнтĕ сурану иртрĕ, эсĕ сывă»,— тесен, каймалла.

— Эпĕ тек ямастăп сана. Ниçта та ямастăп,— вĕçĕмсĕр калаçать пĕчĕк йăмăкăм, аттене икĕ аллипе те мăйĕнчен ыталаса.

— Каймасан юрамасть, хĕрĕм. Халĕ вăрçă пырать. Арçынсен фронтра пулмалла, тăшманпа çапăçса, ăна çĕнтермелле. Унсăрăн фашистсем кунта та килеççĕ. Автоматпа тр-тр-тр! тутарса, пурне те персе вĕлереççĕ,— тет атте.

— Мана та... аннене те... Чĕкеçе те... Санькăпа Кольăна та-и? — Ириша шуранка пичĕ пушшех шурса кайрĕ, куçĕсем хăраса чарăлчĕç.

— Эсĕ ан хăра,— лăплантарма васкарĕ ăна атте.— Ямастпăр эпир фашистсене кунта. Тек пĕр утăм та малалла ямастпăр. Кĕçех пурне те хамăр çĕршывран кăларса сирпĕтетпĕр. Вара вăрçă пĕтет, çĕнтерӳ кунĕ çитет. Кун хыççăн эпир пурте киле таврăнатпăр. Ăнлантăн-и?

Пĕчĕк хĕрача пит-куçне кăмăлсăррăн турткаласа илчĕ, тутине тăсрĕ, анчах, килĕшнине пĕлтерсе, пуçне сĕлтрĕ.

Çу кунĕсем йĕркеллех иртсе пычĕç. Малтанхи кунсенче хытах уксахлатчĕ пулин те, атте тӳрех колхоз ĕçне хутшăнчĕ. Ăна, юри сывалма киле янă салтака, апат-çимĕç енчен колхозран пулăшсах тăчĕç. Çăнăх та пачĕç, пĕр-икĕ хут услам çу та, сĕт те илсе килчĕ вăл. Уçă сывлăш, çемьепе пĕрле пурăнни, ачаран хăнăхнă хресчен ĕçĕ, ялйыш, чун туртакан тăван вырăнсем — çаксем пурте, паллах, атте сывлăхне хăвăртрах çирĕпленме пулăшрĕç.

Анчах кайма ĕлкĕреймерĕ вăл — çыру килчĕ. Каç пулсан почтальон ăна урамра пачĕ. Виç кĕтеслĕ çыру. Çавăнпа эпĕ малтан пĕрре те хумханмарăм. «Валерирен пулас»,— тесе шухăшларăм та саппун кĕсйине чикрĕм. Тулли витресене çенĕке лартрăм та çырăва кĕсъерен кăлартăм. Çук, алли Валерин мар. Почта номерĕ те урăх. «Камран-ши?»— тесе вулама тытăнтăм. Вырăсла çырнă. «Хисеплĕ Ирина Константиновна! — чупрĕ куç йĕркесем тăрăх.— Ку çырăва эпĕ госпитальрен ывăлăр Валери ыйтнипе çыратăп, Валери йывăр аманнă. Халлĕхе ăна хускалма юрамасть. Вăл сире, май пулсан, кунта, ун патне килме ыйтать. Чулхула

сирĕнтен инçех мар. Хăвăртрах килсен лайăхчĕ. Халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, çул çӳреме кăткăсрах ĕнтĕ... Тен, малтан военкомата кайса калаçатăр. Вĕсем пулăшма пултарĕччĕç...

Салампа, Валери ыйтнипе... Августăн 12-мĕшĕ, 1943 ç.»

Манăн алăсем лăштăрах усăнчĕç... Валери виçĕ хут госпитальре выртса тухрĕ ĕнтĕ. Ку тăваттăмĕш. Хальхинче йывăр аманнă. Хăвăртрах пыма ыйтать...

Пӳрте кĕрсе, эпĕ çырăва аннене патăм.

— Юлташĕ çырать,— пĕлтертĕм кĕскен.

Ырă мара анне ман çине пăхсах ăнланчĕ.

— Мĕн? — ыйтрĕ вăл, хăйăлтатакан сасăпа, чĕтрекен аллипе хут листине çавăркаласа.— Мĕн пулнă? Кала хăвăртрах! Ăçта?.. Куçлăх ăçта?

Унтан атте килчĕ. Вăл çырăва вуласа тухрĕ, вара, пуçне усса, пĕр вăхăта чĕнмесĕр ларчĕ. Эпир те чĕнмерĕмĕр. Пӳртре шăп. Стена çинчи сехет кăна, вăхăт шутласа, хуллен шаккарĕ.

Тепĕр кунне аттепе Верук, кутамккасем çакса, чугун çул разъездне тухса кайрĕç. Пуйăссем çине ларма питĕ йывăр теççĕ çӳресе курнисем. Анăçалла васкакан составсемшĕн çеç яланах çул уçă, вĕсем пĕр чарăнмасăрах ирте-ирте каяççĕ.

Кăткăс çулта аттене пĕччен йывăр пулать тесе, Валери патне Верукпа иккĕшĕ кайма шут тытрĕç. Верук хăй кăмăл турĕ.

— Ырă хыпарпа таврăнччăрах,— терĕ анне, вĕсем хыççăн пăхса юлса.

Сакăр кун иртрĕ вĕсем каялла çаврăнса çитиччен. Çав вăхăт пире тем тăршшĕн туйăнчĕ. Ир ĕçе тухса каятпăр, укăлча хапхи еннелле çаврăнса пăхатпăр — килни курăнмасть-ши? Хиртен ĕçлесе килнĕ чух, ялалла васкаса утатпăр — таврăнман-ши? Мĕнле-ши унта пиччен сывлăхĕ?

Питĕ ырă пуласса шанас килет... Алăк яри уçăлса каять те, пӳрте ывăннă, анчах хаваслă сăнлă атте çăмăллăн утса кĕрет. «Йывăр аманнă Валери. Халĕ сывалать»,— тет пек вăл.

Çавăн евĕр çутă ĕмĕтсемпе чуна çĕклентерсе, эпĕ шăппăн çӳретĕп. «Çапла пултăр»,— хĕрӳллĕн пăшăлтататăп эпĕ, усал шухăшсене çывăха ямасăр.

Сакăр талăкран аттепе Верук таврăнчĕç. Çав кун эпир аннепе ялтан аякри вăрман хĕрринче тулă выраттăмăр. Выраттăмăр мар, çумлаттăмăр тени тĕрĕсрех пулĕ. Ытла та лутра, начар пулнăран, ăна çурлапа вырма май çук. Эпир тулла тымарĕпе тăпăлтаратпăр. Тăпраран силлесе

тасатса, кӗлтесем ҫыхатпӑр. Васкаса, пуҫа ҫӗклемесӗр тӗрмешетпӗр пулин те, ӗҫ ӑнмасть, уйӑрса панӑ ана пысӑк. Тусан вӗҫет. Алӑ-ура, пит-куҫ ҫӗр тӗслӗ хуп-хура.

— Ҫӗркури пичче тавраннӑ, сире киле пыма хушрӗ,— илтӗнчӗ хыҫра ача сасси.

Анне тӳрленсе тӑчӗ те умри ача ҫине пӑлханса пӑхрӗ.

— Урӑх... урӑх нимӗн те каламарӗ-и? — ыйтрӗ вӑл.

— Ҫук, каламарӗ,— терӗ лешӗ. Вӑл пуҫӗ ҫинчи пысӑк карттусне тӳрлетрӗ те амӑшӗ патнелле чупрӗ.

Эпир пӗр тӑхтамасӑр киле васкарӑмӑр. Пӳртре карчӑксем, стариксем тем ҫинчен шӑппӑн калаҫса лараҫҫӗ. Эпир кӗрсен, вӗсем шӑпланчӗҫ. Атте, ура ҫине ҫӗкленсе, пире хирӗҫ темиҫе утӑм турӗ.

— Макӑр, Урине, макӑр,— терӗ вӑл чӗтрекен сасӑпа, вара ӗсӗклесех йӗрсе ячӗ.— Пӗтрӗ пирӗн ывӑл, тек ҫук! Тек ҫук пирӗн Валери ҫут тӗнчере. Пытарсах таврӑнтӑмӑр.

— А-а-а-х-х! — йынӑшса ячӗ анне. Куҫне хупса, вӑл стена ҫумне тайӑлчӗ.— Ах-х-х! — чуна ҫурса ячӗ каллех асаплӑ сасӑ. Унтан анне хуллен ҫӗре тӗшӗрӗлсе анма тытӑнчӗ. Ҫӑшкӑрса ярса, эпӗ ӑна пырса тытрӑм. Аттепе иккӗн эпир ӑна сак ҫине лартрӑмӑр. Урайӗнче выляса ҫӳрекен Ириша, ҫакна курса, йӑпӑр-япӑр анне патне чупса пычӗ, ыталаса тытрӗ, куҫӗнчен хӑраса тинкерчӗ.

— Анне, ан вил! Ан вил! Уҫ куҫна! Ан вил тетӗп! — ҫухӑрса ячӗ вӑл юлашкинчен.

Кӳршӗсем сике-сике тӑчӗҫ, нӑшӑклатса йӗни илтӗнчӗ. Верук чупса кӗчӗ. Тахӑшӗ хуллен ӳлесех макӑрма тытӑнчӗ.

Унтан Мархва кинеми пычӗ. Хурӑнташсем, ялйышсем пӗрин хыҫҫӑн тепри кӗре-кӗре тухрӗҫ. Пӳртре шӑп. Сайра хутран ҫеҫ пӑшӑлтаткаласа калаҫса илеҫҫӗ. Пурте пуҫӗсене успӑ, сӑнӗсем пурин те салху. Хуллен, сасӑсӑр йӗрекенсем те пур.

«Сирӗн хуйхӑ-асап пирӗншӗн те хуйхӑ. Йывӑр самантра эпир те сирӗнпе»,— тенине пӗлтерет ӗнтӗ ҫак авалтан пыракан ырӑ йӑла. Ҫапла, йывӑрлӑха йышпа ҫӗнме ҫӑмӑлтарах.

Каҫалапа эпӗ Верук патне кайрӑм. Вӑл сарайӗнче вутӑ ҫурать. Мана курсан, аппа пурттине пӑрахрӗ те хирӗҫ утрӗ. Хулпуҫҫинчен ачашшӑн ыталарӗ, вара эпир иксӗмӗр те ӗсӗклесех йӗрсе ятӑмӑр.

— Каласа пар, Верук. Пӗлме килтӗм,— терӗм эпӗ, куҫҫуле шӑла-шӑла.

Верук каска пуканӗ ҫине пырса ларчӗ, пуҫне чикрӗ.

— Аса илме те йывӑр. Чӗре ҫурӑлсах тухать,— терӗ вӑл, ассӑн сывласа.— Итле эппин... Ана, йывӑр аманнӑ-

скерне, юлтăшĕсем çунакан самолетран туртса кăларнă иккен. Пичĕ, алли-ури курăнмасть, пĕтĕмпех бинтпа çыхнă. Куçĕ те курмасть. Савăнчĕ хăй эпир пырсан. Шӳт тума та пăхрĕ. «А-а, чипер йăмăкăм! Эсĕ килнĕ-çке»,— терĕ. Эпир Валерипе пĕр çулта, пĕр уйăхра çуралнă-çке. Икĕ кун кăна уйрăмлăхĕ. Çавăнпа вăл мана шӳтлесе «йăмăкăм», «чипер йăмăк» тесе чĕнетчĕ. Пиччерен килтисем, ялти пурнăç çинчен ыйтса пĕлчĕ. Вара — эх, мăнтарăн! — ашшĕне çывăхрах туяс килчĕ пулĕ çав, аллине пичче аллийĕ çине çĕклесе хучĕ. Кăшт хускални те юрамарĕ хăйне, йынăшса ячĕ. Унтан çывăрса кайнă пек пулчĕ-ши, шăпланчĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, асаплăн кăшкăрма, турткалашма, çапкалашма пуçларĕ. Сестра чупса кĕчĕ, укол турĕ. Лăпланчĕ... вара тăна кĕмесĕрех вилсе кайрĕ,— Верук пуçне вăртах аяккалла пăрчĕ, каллех пĕр вăхăт чĕнмерĕ.

— Сехет ытларах çеç пурăнчĕ вăл эпир пырсан,— илтрĕм эпĕ унăн пусăрăнчăк сассине.— Сестра калать: «Мĕнле тӳсрĕ вăл çак таранччен? Врач курсанах: «Пилĕкултă кун çеç юлнă ку çамрăкăн пурăнмалли»,— терĕ. Паян вуннĕрмĕш талăк... Сире кĕтнĕ вăл. Вилес умĕн тăванĕсемпе калаçса юлас килнĕ ĕнтĕ унăн... Çав вăй-хал панă ăна». — Урăх нимĕн те ан ыйт, Чĕкеç,— терĕ Верук, сасартăках ура çине сиксе тăрса.— Урăх ан ыйт нимĕн те... Ан тăр кунта. Кай киле. Халех кай,— вăл çĕрте выртакан пуртта ярса тытрĕ те, мĕнпур вăйран пуçĕ çийĕн çĕклеçĕкле,васкасах вутă çурма пуçларĕ.

Çапла пин те тăхăрçĕр хĕрĕх виççĕмĕш çулăн иккĕмĕш çурринче вăрçă асапĕ хăйĕн мĕнпур хăрушă вăйĕпе пирĕн çемьене те пырса çапрĕ, усал тăвăл евĕр силлерĕ, ласкарĕ, ишĕлтерчĕ, хуçрĕ, ăшра нихăçан сывалми тарăн сурансем хăварчĕ...

Фронтра калама çук хаяр çапăçусем пыраççĕ. Çăва тухсан, тăшман Курск хули патĕнче каллех наступлени пуçласа ячĕ. Çук, хальхинче те ăнăçлă пулмарĕ Гитлер планĕ. Совет Çарĕ фашистсене каллех анăçалла хăвалама тытăнчĕ. Совинформбюро кашни кунах темĕн чухлĕ ял, хула хыççăн хула ирĕке кăларни çинчен пĕлтерчĕ.

Çĕнтерӳ! Хаваслă, çутă Çĕнтерӳ! Асап, хĕн-хур тӳссе, хаяр вăрçă çулăмĕ витĕр вăл ăнăçлăн хĕвеланăçнелле талпăнать. Анчах иçе утмалла-ха унăн, нумай тӳсмелле. Фашистсен тĕп йăвинче — Берлинра — тин вĕçленет çав аслă, мухтавлă та тертлĕ çул.

Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх виççĕмĕш çулта эпир кун çинчен, паллах, пĕлмен, пĕлме те пултарайман. Çапах Совет

Çарӗ сӗмсӗр тăшмана çӗршывран хуса ярасса, фашист йăхне тӗпренех аркатасса пурте шаннă, ӗненнӗ, савăннă.

Августăн çирӗм çиччӗмӗшӗнче военкоматран аттене повестка ярса пачӗç. Çав кун аттепе Коля картишӗнче вите мăклатчӗç. Тулта çумăр вӗтӗртетет. Эпӗ, пушă вăхăтпа усă курса, чӳрече умӗнче кӗнеке вуласа ларатăп. Атте пӳрте кӗчӗ, саланчӗ. Куçлăх тăхăнса, чӳрече патне пычӗ те, тутине сасăсăр хускатса, алăри хут татăкне вуласа тухрӗ. Тем шухăша кайса, пӗр вăхăт урамалла пăхса тăчӗ. Вăл мӗн каласса кӗтсе, эпир те чӗнмерӗмӗр.

«Инкек пуласса чун сисрӗ»,— теççӗ. Хальхинче вăрçăран каялла таврăнас çуккине атте чӗри те туйнă пулӗ çав.

— Килӗр, ачасем. Ларсах калаçар,— терӗ вăл, чӳрече патӗнчен пăрăнса. Эпир çаплах ăна хирӗç шăппăн пырса лартăмăр.

Атте пичӗ-куçӗ салхуллă.

— Йывăр вăхăтра ӳсме тиврӗ сире,— терӗ вăл, пирӗн çине ăшшăн пăхса.— Нушине те, хуйхă-суйхине те ачаранах ытлашшипех тӳсме лекрӗ. Асапӗ халӗ те нумай, малашне те пайтах тупăнӗ. Те килетӗп, те çук. Çавăнпа каласа хăварас тетӗп. Пӗр-пӗринпе туслă пурăнăр, инкексинкекре пӗрле пулăр.

Коля тутине шурса кайиччен çыртрӗ, асаплăн турткалама пуçларӗ, юлашкинчен чăтаймарӗ, йӗрсе ячӗ.

— Атте, мӗншӗн çапла калатăн эсӗ? — ыйтрӗ вăл, куççульне шăла-шăла.

Эпӗ те тӳсеймерӗм, нăшăклатма тытăнтăм.

— Вăрçăри пурнăç икӗ телейлӗ. Паян пур та ыран çук,— терӗ атте салхуллăн. — Эсир пӗчӗк мар, çакна ăнланма тивӗç... Куççулӗпе инкеке сиреймӗн. Коля, хытар чунна. Арçынна макăрни килӗшмест... Ӗмӗр сакки сарлака. Сирӗн пурнăç тин пуçланать-ха. Темле пулсан та, пур чухне те, пур çӗрте те халăх хисепне тивӗçлӗ çынсем пулма тăрăшăр. Чыслă пулăр. Ырăпа асăнччăр сире. Ырă ят ылтăнран та хаклă. Тата çакна астăвăр. Эсир аслисем. Ӳссе, çирӗп ура çине тăрсан, Санькăпа Иришăна ан пăрахăр. Пулăшăр вӗсене... Аннӳне хисеплӗр. Ан кӳрентерӗр ăна.

Çапла халалласа хăварчӗ пире атте, ӗмӗрлӗхех килтен тухса каяс умӗн. Чăнах та, уйăх ытларах çеç пурăнчӗ вăл. Эпир ăна августăн вăтăрмӗшӗнче ăсатрăмăр. «Октябрӗн çиччӗмӗшӗнче Степанов Григорий Степанович Киев хулине нимӗç фашисчӗсенчен ирӗке кăларнă чух паттăрсен вилӗмӗпе вилнӗ» текен хут илтӗмӗр...

* * *

Эпĕ кивелсе саралнă тетрадĕн юлашки страницине уҫатăп.

«Октябрĕн вунулттăмĕшĕ, пин те тăхăрҫĕр хĕрĕх виҫҫĕмĕш ҫул. Иккĕшĕ те пĕр ҫултах пуҫĕсене хучĕҫ. Валери ҫирĕм виҫҫĕре, атте хĕрĕх ҫиччĕре. Тăпрăр ҫăмăл пултăр, юратнă, хаклă тăвансем. Ах, вăрҫă пулман пулсан!..» — хумханса вуларăм эпĕ тахҫан ҫырса хунă йĕркесене.

Дневник вĕҫленчĕ. Ёнтĕ манăн та калава вĕҫлес пулать. Анчах асаилӳсем ҫаплах сирĕлмеҫҫĕ-ха. Кĕскен те пулин вĕсене ҫырса хăварас пулĕ.

Вăрҫă хăрушлăхĕ анăҫалла чакнă май, эвакуированнăйсем те килĕсене кайма пуҫларĕҫ. Чи малтан Мускав ҫыннисем сывпуллашса тухса кайрĕҫ. Александра Яковлевна ҫемйипе эпир ҫывăх тăвансем пекех уйрăлтăмăр. Кӳлнĕ урапа ҫине тиенĕ чăматансемпе тĕрлĕ тĕркесене Кольăпа Алик, ҫитĕннĕ арҫынсем пекех, тирпейлĕн вырнаҫтарса хучĕҫ, вĕренсемпе ҫыхса ҫирĕплетрĕҫ. Асатма Коля кайрĕ.

Пин те тăхăрҫĕр хĕрĕх тăваттăмĕш ҫулта Совет Ҫарĕ Тăван ҫĕршыва оккупантсенчен пĕтĕмпех тасатрĕ. Вăрҫă анăҫри патшалăхсене куҫрĕ.

Аслă Ҫĕнтерӳ кунне паянхи пекех астăватăп... Ёнтĕ иккĕмĕш кун эпĕ, пыр шыҫнипе аптраса, вырăнпах выртатăп. Ҫавăнпа пулĕ ыйхă килмест, ирех вăрантăм. Лăпкă ҫутă ир. Халĕ кăна ҫĕкленнĕ хĕвел чӳречерен йăлкăшса пăхать. Пурте ҫывăраҫҫĕ. Анне кăна пӳртре ҫук. Акă вăл васкаса кĕчĕ.

— Тăрăр, ачасем! Тăрăр! — терĕ вăл пăлханнă сасăпа.— Вăрҫă пĕтнĕ. Тек пемеҫҫĕ. Вĕлермеҫҫĕ... Ҫĕнтерӳ кунĕ ҫитрĕ.

Ăшăма калама ҫук хаваслă туйăм ҫутатса ячĕ. Савăннипе, ҫавăнтах сиксе тăрса, ташлас килсе кайрĕ. Вăрҫă чарăннă! Вăрҫă чарăннă!.. Нивушлĕ? Ёненес те килмест. Тен, анне шӳтлет кăна? Ҫук.. Ҫук... Анне кăмака ҫумне пуҫĕпе тайăннă та шăппăн, асаплăн ĕсĕклет... Мĕн калăн? Мĕнле сăмах тупса йăпатăн ăна? Ҫук ун пек сăмах этем чĕлхинче. Пулма та пултараймасть. Йĕрех, анне, йĕр... Тен, вĕри куҫҫулĕ ҫунакан чунна кăшт та пулин лăплантарĕ.

Ҫапах паян уяв. Пысăк уяв. Кунĕ халĕ кăна пуҫланнă пулин те, урамра халăх шавлать. Ҫентерӳ! Вăрҫă пĕтнĕ! Гитлер капут!

Ирхи апат хыҫҫăн пӳртре никам та юлмарĕ. Эпĕ пĕчченех выртатăп. Тулта шăв-шав вăйланнине илтсе, чăтаймарăм, вырăн ҫинчен тăрса, чӳречерен пырса пăхрăм.

Урамра темĕн чухлĕ çын. Арçынсем, хĕрарăмсем, ача-пăча. Колоннăпах иртеççĕ. Малта хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Юнашарах Андрей Прокофьевич, пирĕн колхоз председателĕ утать. Тĕссĕрленнĕ кивĕ карттусне çамки çине пусарса лартнă, пуçне мăнкăмăллăн çĕкленĕ. Мнçе çул халăх çапла хавасланса курман...

Анса кайрĕç анаталла, клуб патне, митинга... Эй, чирӳ-качку! Эпĕ те... Эпĕ те каятăп... Сиксе тăтăм... Хăпăлхапăл тумлантăм та крыльца çине сирпĕнсе тухрăм. Çук çав. Чун хавалĕ картиш алăкĕ патне çеç çитерчĕ. Куç хуралса килнипе чутах çĕре тĕшĕрĕлсе анаттăм. Аран-аран каялла кĕрсе выртрăм. Пулмарĕ ял çыннисемпе пĕрле савăнасси.

Кунĕпех хаваслăн сĕрлерĕ ял халăхĕ. Савăнăçлă шав кaç пулсан та чарăнмарĕ. Купăс кĕвви, такмаксем каласа ташлани, тĕрлĕ вăйă-кулă çамрăк чунăма нумайччен канлĕх памарĕ. Чӳречерен ман çине çутă çăлтăр йăлкăшса пăхрĕ, куç хĕсе-хĕсе, тем ăнлантарчĕ, таçта чĕнчĕ, илĕртрĕ...

Унтан салтаксем таврăнма пуçларĕç. Пĕрерĕн, икшерĕн... Кашни кунах кам та пулин килни çинчен пĕлетĕн. Эпир никама та кĕтместпĕр. Анне çапах, урама тухса, час-часах укăлча хапхи енне чĕнмесĕр пăхса тăрать...

Верук, упăшкине кĕтсе, сăра туса лартрĕ.

— Шăрттан усратăп-ха. Ансăртран килсе кĕрĕ те, мĕн лартас сĕтел çине хаклă çын умне? — тет вăл, хăйне хăй хавхалантарса.— Илля пек çухалнисем тупăнса киле таврăнни çинчен халĕ нумайăшĕ калаççĕ. Килтĕрччĕ кăна. Урăх нимĕн те кирлĕ мар,— аппа хăмăр куçĕнче шанчăк е хĕвел шевли пек йăлкăшса илет, е каллех сӳнсе тĕксĕмленет.

Анчах кун хыççăн кун, уйăх хыççăн уйăх иртрĕ. Илляран хыпар пулмарĕ. Хăтана та пычĕç аппа патне, киле кĕрес текенсем те пулчĕç. Мархва кинеми те ӳкĕтлерĕ хĕрне мăшăр тупма. Верук яхăнне те ямарĕ. «Эпĕ упăшкана кĕтетĕп»,— тетчĕ çеç. Чăнах та, кĕтсе илчĕ вăл ăна. Вăрçă пĕтсен çулталăкран Илляран çыру килчĕ. (Эпĕ килте пулман ун чух, çынсем каласа панине астăватăп çеç.) «Таван çĕршыва таврăнтăм. Шахтăра ĕçлетĕп. Киле хăçан пырассине халлĕхе пĕлместĕп-ха»,— тесе çырнă.

— Урамра пачĕç çырӳне Верук аппана,— каласа пачĕ мана кӳршĕ хĕрачи.— Вуласа тухрĕ те, хĕпĕртенипе ним тума пĕлмест. Йĕрет, кулать, çырӳне чуптăвать. Аллисем чĕтреççĕ, пичĕ-куçĕ хĕмленсе çунать.

Вара аппа тепĕр кунах çурăм хыçне кутамкка çакать те Донбаса упăшки патне тухса каять.

— Эх, асап куртăм çав çул çинче,— халĕ те аса илет Верук.— Валери патне кайса килме те çăмăл пулмарĕ те... Çапах ун чух иккĕн пулнă. Ытларах Кĕркури пичче çӳрерĕ, вăл майлаштарчĕ. Халĕ вара... Вокзалсенче халăх лăках. Билетсем сутмаççĕ. Йĕретĕп, вырăсла пĕлнĕ-пĕлмен чĕлхепе хам ăçта, мĕншĕн кайнине ăнлантаратăп, Илля çыруне кăтартатăп. Пур тĕнчере ырă çынсем. Тавтапуç вĕсене. Кирлĕ чух пулăшрĕç, кирлĕ çĕрте хута кĕчĕç. Çитрĕм-çитрĕмех.

Пленра пулнă иккен Илля. Америка çарĕ ирĕке кăларнă ăна.

Чăнах та, тепĕр çулталăкран Илля яла таврăнчĕ. Анчах часах сӳнчĕ юратнă мăшăрăн телейĕ. Хура пĕлĕтсем айĕнчен самантлăха шуса тухнă хĕвел пек, вăл Верукпа Илля пурнăçне кĕске вăхăта çутатса ăшăтрĕ те ĕмĕрлĕхех сӳнчĕ. Тăвагă çул та пилĕк уйăх çеç пурăнчĕç вĕсем пĕрле...

Аса илме çăмăл мар кун çинчен халĕ те. Çапла хурлăхлăн вĕçлес теменччĕ эпĕ калавăма. Тем тесен те, Çĕнтерӳ, пысăк Çĕнтерӳ кунне кĕтсе илтĕмĕр-çке!.. Анчах мĕн тăвăн? Эпĕ пурин çинчен те пĕр суймасăр, тĕрĕс каласа кăтартма сăмах патăм...

Вăрçă пуçланас умĕн Илля трактористсен курсĕнче вĕренчĕ. Çарта та вăл танкист пулнă. Çавăнпа, яла таврăнсан, тракторпа ĕçлеме кăмăл тунă. Анчах районтан ирĕк паман ăна. Каярахпа пирĕн колхоз машина илчĕ. Шофер пулма та шанман Иллянa. Куçранах çапла каланă тет. Фашист тесе питлекенсем те пулнă имĕш. Усал чĕлхе çине чарак лартма çук-çке... Вара пĕрре, шартлама сивĕ кун Илля çунашка илет те вăрмана хăрăк вутă пухма каять. Верук кĕтет-кĕтет. Қаç пулать, упăшки таврăнмасть. Тепĕр кунне тарăн çырма тĕпĕнче тупнă ăна... Виллине кассан, тухтăр «Çывăрмалли эмел нумай ĕçнĕ» тесе хут çырса панă.

Çак хăрушă хыпара мана Саня шăллăм çырса пĕлтерчĕ. Эпĕ темиçе кун урăх нимĕн çинчен те шухăшлама пултараймарăм. Епле-ха капла? Ах, Илля, Илля! Мĕн чухлĕ нуша, мĕн тĕрлĕ мăшкăл тӳссе ирттернĕ, чиперех киле таврăннă. Малашне çемьере савăнса пурăнас вырăнне, акă сана — мĕн тери ăссăр вилĕм. Арăмĕпе икĕ ачи çинчен те шухăшламан-ши вăл çавăн евĕр усал шут тытиччен?

Отпуска киле таврăнсан, эпĕ çак шухăша анне умĕнче хускатрăм.

— Усĕр Ларивам сӳпĕлтетнине тăнламан пулсан, çапла хăтланмастчĕ пулĕ те,— хаш сывларĕ анне.

— Лариван? Пăт Мĕкĕте ывăлĕ-и? Мĕн тенĕ вăл Илляна?

— Хам илтмен. Çынсем калаçаççĕ. Ларианĕ чышкине кăтартса, «Пулас шăпу ăçтине пĕлетĕн-и? Акă çакăнта,— тенĕ имĕш.— Кирлĕ пулсан, ыранах тыттарса яратăп сана. Пĕр хут татăкĕ çырса паратăп çеç. Анчах халех тивместĕп-ха. Пурăн чĕтресе»,— тенĕ-мĕн. Чăтайман Илля...

— Хăрама чăннипех сăлтавĕ пулнă пулĕ апла Иллян? Анне, манпа килĕшмесĕр, пуçне сулкаласа илчĕ.

— Арăмне каласа хăварнă вăл. «Çын тем халапласан та, ан ĕнен. Манра нимĕнле айăп та çук»,— тенĕ.

— Мĕне кура çапла хăтланнă вара вăл? Çав ӳсĕр çын сăмахĕшĕн.

— Эй, ачам, авсан-авсан, хурçă та чăтаймасть, вăл та хуçăлать,— хуравларĕ анне салхуллăн.

— Лариванĕ тата? Мĕн тесе çапла сӳпĕлтетнĕ-ши? — ыйтрăм эпĕ каллех.

— «Шӳт турăм çеç. Ӳсĕр пулнă»,— тет вăл. Ялта урăхла калаçаççĕ... Лерен... милицирен хушнă пулать ăна Илля çинчен пĕлтерсе тăма,— терĕ анне шăппăн.

Çапла, ун чухнехи йывăр, тĕксĕм çулсенче тыткăнра пулнисем çине пур çĕрте те шанмасăр, тӳртĕн пăхатчĕç çав...

Вăрçă пĕтсен çав çулах эпĕ, экзаменсем тытса, аслă шкула вĕренме кĕтĕм. Август уйăхĕн вĕçĕнче, çурăм хыçне кутамкка çакса, хулана тухса кайрăм. Укăлча хапхинче мана Алина хирĕç пулчĕ.

— Юлтăм санран. Ахалех аннене итлерĕм çавăн чух,— терĕ вăл салхуллăн. Унтан, тем аса илсе, хаваслăн йăлкăшса илчĕ.— Çĕркаç ман пата хăтана килчĕç. Эпĕ кĕçех качча тухатăп пулмалла,— хушса хучĕ вăл.

Эпĕ ăна телей сунтăм та, ялтан тухса, малалла утрăм. Çутă ĕмĕте хирĕç, çĕнĕ йывăрлăхсене хирĕç. Мана хулара каллех выçăллă-тутăллă пурнăç, хутман общежити, сивĕ аудиторисем кĕтсе илчĕç.

Институт пĕтерсен, виçĕ çул шкулта истори учителĕ пулса ĕçлерĕм. Малашне те çаплах ĕçлеттĕм пулĕ, анчах пĕррехинче ман хваттере вĕренекен ачасен ушкăнĕ пырса кĕчĕ.

— Антонина Григорьевна, çак мĕн вăл? — ыйтрĕç вĕсем, пысăках мар тĕксĕм чул катăкĕ тăсса парса.

Пăхрăм та, чĕре картах турĕ. Чул мар-çке ку! Мамонт шăлĕ! Эпĕ ăна çавăркаласа пăхма тытăнтăм. Темиçе пин çул çĕр айĕнче выртнăскер, вăл, паллах, хуралнă, чылаях хавшанă.

— Ăçтан тупрăр? — ыйтрăм эпĕ куçран пăхса тăракан ачасенчен.

— Ял хыçĕнчи çырмара... Çурри çĕр айне пулнă. Мĕнши ку тесе, урапа тĕртрĕм çеç, вăл çиеле кăпăрт тухса выртрĕ,— пĕлтерчĕ ачасенчен пĕри.

— Урăх нимĕн те курмарăр-и? Çывăхра пысăк шăмăсем выртмаççĕ-и?

— Çук, курман.

— Ăçта, хăш тĕлте тупрăр? Мана та илсе кайăр-ха.

Эпĕ кĕреçе йатрăм. Ачасемпе тарăн çырма тĕпне антăмăр, анчах, шел пулин те, хальхинче нимĕн те тупаймарăмăр.

Çав самантран мамонт шăлĕ ăшран тухмарĕ. Çĕр çинче тахçан иртнĕ пурнăçа тĕпчес, тĕплĕн пĕлес килни тек мана кĕске вăхăта та канăç памарĕ. Умра каллех илемлĕ ĕмĕт çăлтăрĕ çуталчĕ, каллех илĕртрĕ, чĕнчĕ. Эпĕ кĕнекесем вулама тытăнтăм, унтан, хатĕрленсе, аспирантурăна вĕренме кĕтĕм. Археологи экспедицийĕсем аслă çĕршывăн нумай вырăнĕсенче, тĕрлĕ хуласемпе ялсенче пулса курма май пачĕç, пĕлĕве ӳстерме, тарăнлатма пулăшрĕç. Халĕ эпĕ истори наукисен докторĕ.

Верук патĕнче темиçе кун хăналаннă хыççăн, эпĕ каллех çула хатĕрленме пуçларăм. Кольăна курманни нумай пулать. Ирина та кĕтет. Кӳршĕ район центрĕнче пурăнать вăл. Коля — çар çынни, полковник. Отставкăна тухсан, ăна Ленинград облаçĕнче хваттер панă. Ĕççĕр лармастьха вăл та. Çулла дачăра тăрмашать, вĕренӳ çулĕ пуçлансан, шкул ачисене çар ĕçне вĕрентет. Обществăлла ĕç те нумай унăн.

Эпĕ япаласене чăматана вырнаçтарса хунине курсан, пӳлĕме кĕнĕ Верук тăпах чарăнчĕ.

— Чĕкеç, эсĕ кайма пуçтарăнмастăн пулĕ те! Ай тур-тур! Пĕрре те çапла час ярас килмест ман сана. Ма васкатăн?

— Васкамăттăм та, вăхăт хăвалать-çке. Ытти тăвансене те курас килет. Ирина патне пырас теместĕн-и? Кăмăлу пулсан, унтан Ленинграда кайăпăр. Пĕрле çӳреме мана та кăмăллăрах,— сĕнтĕм эпĕ аппана.

— Ленинград таран çӳреес çук эпĕ, Чĕкеç,— пуçне сулкаларĕ Верук.— Ачасене йывăр пулать. Килти хуçалăх ман çинче-çке. Ирина патне пырсан лайăхчĕ. Пĕр çĕр выртмалла. Нумай пулать курманни. Хăй те темшĕн вăрвар килесшĕн мар.

— Ĕçленĕ чух унта-кунта тухма ытлашши вăхăт çук

çав. Отпускра ачисем патне кайса курас тет пулĕ. Унăн та вĕсем тĕнче тăрăх саланчĕç,— терĕм эпĕ.

— Вăл çаплах ĕнтĕ,— килĕшрĕ Верук.

Автобус çăмăллăн чуптарать. Умра яп-яка çул хирĕç виркĕнсе пырать, урапасем айне чăмса, хыçала юлать. Икĕ енĕпе кашласа ӳсекен йывăçсем те унран юласшăн мар, вĕсем те васкасах çывхараççĕ. Çумранах машинăсем хыттăн вăшлатса иртеççĕ. Ялсем шăваççĕ. Аслă хирсенче унта та кунта выльăх кĕтĕвĕсем çӳрени курăнать.

Акă автобус аслă çулран пăрăнчĕ те, хăвăртлăхне чылаях чакарса, малтан виçĕ-тăватă чӳречеллĕ капăр пӳртсем, унтан икĕ хутлă пĕр пек кутамас, илемсĕр чул çуртсем ларса тухнă урампа кĕмсĕртетрĕ. Чарăнчĕ. Алăксем шалтлатса уçăлчĕç.

— Çитрĕмĕр-и? — ыйтрĕ Верук.— Ай тур-тур, урасем итлеми пулчĕç, пĕр вырăнта хускалмасăр ларса.

— Ириша çĕнĕ хваттере куçрăмăр тесе çырнăччĕ. Гагарин урамĕ ăçтарах-ши? — терĕм эпĕ, йĕри-тавра пăхкаласа.

— Атьăр пĕрле. Кăтартатăп,— хуравларĕ çумранах иртсе пыракан хĕрарăм. Утнă май вăл пирĕн çине пăхрĕ.

— Хăнана килетĕр-и? Такам патнеччĕ ĕнтĕ?

— Ирина Григорьевнăна пĕлетĕр-и? Ача врачĕ вăл.

Хĕрарăм пичĕ-куçĕ çуталса кайрĕ.

— И-и, кам пĕлмест ăна, Ирина Григорьевнăна? — терĕ вăл кăмăллă сасăпа.— Тăванĕсем пулĕ-ха... Манăн çакăнталла каймалла та... Юрĕ, ăсатсах ярам сире. Ирина Григорьевна ман ачана вилĕмрен çăлса хăварчĕ. Эпĕ ăна ĕмĕрне те манас çук. Пурте хисеплеççĕ ăна кунта.

— Анчах пуçлăхсем савсах каймаççĕ пулас çав,— шӳтлерех каларăм эпĕ, икĕ çул каярах йăмăк çырса пĕлтернине аса илсе.

— Çапла, çапла. Ун пекки те пулнă,— сассине тăруках шăплантарса, манпа юнашар утрĕ хĕрарăм. — Эпĕ ултă çул санитаркăра ĕçлерĕм больницăра. Лайăх пĕлетĕп çав шăв-шава. Канăçсĕр çын вăл, Ирина Григорьевна. Ĕçри тĕрĕсмарлăхсене курсан, чĕнмесĕр тăмасть. Пухусенче те тухса калать, тĕрлĕ кабинетсене кĕрсе, тӳррĕн сăмахлама та вăтанмасть,— хĕрарăм, сумкине çĕре лартса, пуçĕ çинчи пушаннă тутрине юсаса çыхрĕ.— Юратаççĕ-и ун пеккине? Пирĕн главнăй врач, ĕçе тытăннă-тытăнман, Ирина Григорьевнăна йĕрлеме пуçларĕ. Акă хайхи ятсăр çырусем килме тытăнчĕç. «Начар ĕçлет», «Взятка илет», «Чирлĕ ачасен сывлăхне юсасшăн тăрăшмасть»,— тата темĕн те пĕр элеклесе çырса тултарнă. Эй, тур-тур, комисси хыç-

çăн комисси пырать больницăна. Тĕрĕслеççĕ-тĕрĕслеççĕ — айăпне тупаймаççĕ. Суя кăна... Апла пулин те, кăшт çеç партирен кăлармарĕç вĕт пирĕн Ирина Григорьевнăна. Шухăшлăр-ха эсир, çав вичĕ пус тăман усал çырусене пулах... Пĕр айăпсăр... Хăйсем çыраççĕ те... Юрать-ха, самана улшăнчĕ, — хĕрарăм чарăнчĕ, шĕвĕр пӳрнипе сывлăшра такама юнаса илчĕ.— Халĕ хăйне кăларса шаплаттарчĕç вырăнтан. Чух кирлĕ терĕм. Ма шеллемелле çавăн евĕр путсĕрсене?.. Вăт çапла. Акă çак çуртра иккĕмĕш хутра пурăнать Ирина Григорьевна. Ну, сывă пулăр-ха.

— Сывă пулăр. Тавтапуç ăсатса янăшăн.

Иккĕмĕш хута хăпарса, эпĕ алăкран шаккарăм.

— Кĕрĕр,— илтĕнчĕ арçын сасси.

Пире хирĕç кухньăран саппун çакнă яштака пӳ-силлĕ чылаях çулланнă арçын тухрĕ.

— Коля!

— О-о, ман аппасем çитрĕç! — терĕ вăл хаваслăн, аллисене хăлаçларĕ те Верукпа иксĕмĕре те ытамне çавăрса илчĕ.

— Хăçан килтĕн? — ыйтрăм эпĕ.

— Ĕнер. Ирина телефонпа шăнкăртаттарсах вĕтелентерчĕ. «Миçе çул ĕнтĕ пĕрле пулаймастпăр. Эсĕ халь ирĕклĕ çын. Килнĕ пултăр»,— терĕ. Мĕн тăвăн? Ĕçе пăрахсах чавтарса çитрĕм.

— Ай, лайăх килни. Эпĕ те курса каятăп. Яла вăр-вар пымастăр,— хуравларĕ Верук.

— Пыратпăр, Верук аппа, пыратпăр,— хулпуççийĕнчен ачашшăн ыталарĕ ăна шăллăм.— Акă паян калаçса татăлатпăр та хамăр та, ачи-пăчи те — пурте пĕрлех персе çитетпĕр. Ытла та пумаййăн кусем тесе, ан тарса пытан çеç... Пыратпăр,— терĕ вăл каллех, тăруках шӳтлеме пăрахса.— Пирĕн ачасен ашшĕ-амăшĕсем ăçта, хăш вырăнта çуралса ӳснине пĕлмеллех. Аякра пурăнатпăр пулсан та, манма юрамасть йăх тымарĕсем ăçтине. Унсăрăн йĕрке пулмасть. Çапла-и, Чĕкеç? Саньăна шел. Ӳсĕр çапкаланчăка пула, çамрăклах çĕре кĕчĕ.

— Ан та кала,— ассăн сывларĕ Верук.— Эрехĕ ăсран кăларать çав. Мĕн чухлĕ шар кăтартать этеме.

— Хуçисем ăçта?

— Сергей Сергейч командировкăра. Ирина чирлĕ ача патне чупрĕ. Мана каçхи апат пĕçерме хушса хăварчĕ,— Коля саппунне хывса çакрĕ те пире малалла иртме сĕнчĕ.

Ирина васкаса кĕчĕ.

— Каларĕç мана урамра, хăнасем килнĕ сирĕн терĕç.

Эсирех пулĕ тесе шутларăм,— хаваслăн пĕлтерчĕ вăл, алăк урлă каçнă-каçманах.— Ну, тавтапуç килнĕшĕн. Миçе çул кĕтетĕп эпĕ çак куна.

Çулĕсем сахалах мар пулин те, Ирина ватăлăха парăнмасть-ха. Яланхи пекех чĕрĕ, вăрт-варт. Пичĕ те пĕркеленмен, çырă çӳçĕ кăна çамка хĕррипе шуралма пуçланă. Йăмăк самантрах сĕтел çине апат-çимĕç лартса тултарчĕ. Эпир каçхи апат çирĕмĕр. Кайран, çаплах сĕтел хушшинчен тухмасăр, чылайччен халапланса лартăмăр. Шăллăмпа йăмăк умне эпĕ Ксени панă пир тĕркине кăларса хутăм, пăхăр медальпе кивелсе таткаланма пуçланă икĕ тетраде кăтартрăм.

Каллех вăрçă кунĕсем çывхарчĕç, каллех унăн сивĕ хăрушă мĕлкийĕ пирĕн тавра çаврăнма пуçларĕ.

— Эпĕ аттене те, Валери пиччене те астумастăп,—терĕ Ирина салхуллăн, пуçне тетрадь çинчен çĕклесе.— Илля йысна таврăнни пуçа кĕрсе юлнă,— вăл Верук çине пăхса илчĕ.— Хĕрĕх çиччĕмĕш çулта сентябрĕн пуçламăшĕнче килчĕ-çке вăл. Эпир, ачасем, уроксем хыççăн ушкăнĕпех шкултан тухнă та килелле утатпăр. Пăхатăп: урапа çинче Верук аппапа юнашар çӳллĕ, хыткан арçын ларса пырать.

— Илля йысну вăл, ачам,— ăнлантарчĕ анне.— Килчĕ апла. Кĕтсе илчĕ Верук.

— Килесси килчĕ те... Упаран тарнă кашкăра тенĕ пек, пĕр асапран çăлăнчĕ çеç, теприне кĕрсе ӳкрĕ. Пĕр айăпсăр пĕтерчĕç сынна,— Верук салхуллăн пуçне усрĕ.

— Верук аппа, тахçанах ыйтас тетĕп санран çав йысна инкекĕ çинчен,— терĕ Ирина.— Эпир ача пулнă. Илтсен те, курсан та, пурне те ăнланман ун чух. Тĕплĕнрех каласа пар-ха.

— Мĕн калас? — çаплах салхуллăн хуравларĕ аппа.— Тыткăна лекнĕ. Унта чăн-чăн чура вырăнĕнче пулса ĕçленĕ, пайтах мăшкăл, асап тӳснĕ. Хамăр енне каçсан, икĕ çул ытла, киле килеймесĕр, шахтăра ĕçленĕ. Лайăх ĕçленĕ, ударниксен ретĕнче пулнă вăл унта. Темиçе хут допроса чĕнтерсе, мĕнпур пурнăçне, хăçан мĕн пулса иртнине, тĕпĕ-йĕрĕпех шĕкĕлчесе ыйтса пĕлчĕç тетчĕ. Вăрçă хирĕсенче пĕрле çапăçнă, тыткăнра пĕрле пулнă, пĕрле ĕçленĕ юлташсен адресĕсене веçех çыра-çыра илнĕ унран. Тĕппипех тĕрĕслесе пĕлнĕ темелле ĕнтĕ... Кайса куртăм-çке эпĕ ун патне Донбаса. Хамăр çĕршыва таврăннăшăн калама çук хĕпĕртенĕ хăй. Киле килме пуçтарăнсан, уйрăлнă чух йĕретĕп те: «Тек хăрамалли çук. Ĕнтĕ эпĕ айăпсăррине пĕлеççĕ. Кĕçех яраççĕ пулĕ тетĕп. Тен, кăçалах пĕрле пулăпăр. Çĕр çула çитиччен савăнса, ташласа-юрласа пу-

рăнатпăр вара»,— тесе йăпататӑть мана. Чăнах та, çулталăк иртсен таврăнчĕ... Унта, тыткăнра, тăшман, фашист асаплантарнă тейĕпĕр. Кунта хамăрăннисем-çке,— Верук пӳлĕнчĕ, тăруках чĕнмерĕ, унтан кӳренӳпе тулнă куçне шăллăм çине тĕллерĕ.— Эсĕ, Коля, çар çынни, аслă командир. Кала-ха, тыткăнсăр вăрçă пулма пултарать-и? Апла мĕншĕн çаплах мăшкăлларĕç вĕсем Илляран? Суранланнă чĕрине мĕншĕн сывалма памарĕç? Мĕншĕн ун çине вĕçĕмсĕр тăвар сапса тертлентерчĕç?

— Çавăн пек йĕркесĕрлĕхсем вăл вăхăтра нумай пулнă, Верук,— терĕ Коля шăппăн.— Пиншер, миллионшар айăпсăр çынна айăпласа, пурнăçĕсене татнă. Эсĕ пĕлетĕн ăна. Ун çинчен халĕ пур çĕрте те çыраççĕ.

— Илляна пытарнă хыççăн чун кӳтнипе тĕнче илтмелле кăшкăрса ылханас килет, анчах шăла çыртатăп. Чăтаймасăр ăнсăртран çын умĕнче шухăшăма персе ярăп та, хама та тытса кайĕç, вара ачасем те пĕтеççĕ тесе, йĕме те хăратăп. Лариван евĕр, НКВД хушнипе, кам мĕн халапланине тăнласа çӳрекенсем кашни ялтах пур тесе пăшăлтататчĕç ун чух. Чĕкеç, эсĕ астăватăн-и çавна? — ман енне пуçне пăрчĕ Верук.

— Паллах,— сăмах хушрăм эпĕ.— Çавăнпа никампа та уççăн шанса калаçман. Чи çывăх çынсем те пĕр-пĕринпе пăшăлтатнă чух: «Шăппăнрах эсĕ, хальхи вăхăтра стенасем те итлеççĕ»,— тетчĕç.

— Тĕлĕнмелле пулин те, халĕ те пур çав хăрушă вăхăта хӳтĕлекенсем, каялла çавăрса килме ĕмĕтленекенсем.

Кăна Ирина каларĕ.

— Шухăшласа çӳретĕп вара,— хуравларĕ каллех аппа.— Кама чăрмантарчĕ-ши ман Илля çут тĕнчере пурăнни? Кама кирлĕ пулчĕ ун вилĕмĕ? Епле ĕçчен çынччĕ. Пурăннă пулсан, мĕн чухлĕ усă паратчĕ вăл колхоза? — Верук саппун кĕсйинчен шурă тутăр кăларчĕ те йăпăртатса аннă куççульне шăлса илчĕ.

Ирина, тăрса, пукан çинче ларакан Верук патне пычĕ.

— Çаплах йĕретĕн-и, Верук аппа? — терĕ вăл, ăна каллех хулпуççийĕнчен ачашшăн çупăрласа.— Кăçар пире, чĕрӳне хускатрăмăр санăнне.

— Э-э, чĕре,— сулчĕ Верук аллине.— Хуйха-суйха пула хуралса-çунса ларчĕ пулĕ вăл. Вăрçă мĕн тери ăшталантарчĕ. Пурхиле пичче таврăнмарĕ. Валери асапланнине курсан, темччен ăш хыпса çунчĕ. Кĕркури пичче вилнĕ тесе хут килчĕ. Илля çинчен шухăшласа, мĕн чухлĕ куççулĕ юхтартăм. Юлашкинчен таврăнчĕ, анчах пурăнма памарĕç. Санькăна çамрăклах пытартăмăр...

Нумайччен калаçса лартăмар эпир çав каç. Ирхине Верук килне кайрĕ. Эпир ăна автобус çине лартсах ятăмăр. Кĕçех эпĕ те, тăвансемпе сывпуллашса, инçе çула тухрăм...

Телефон шăнкăртатни асилӳсене татрĕ.

— Але. Антонина Григорьевна,— илтĕнчĕ трубкăра паллашнă сасă.— Çаплах çыратăр-и? Çитет сире сĕтел хушшинче вĕçĕмсĕр ларма. Қанмалли кун канас пулать. Атьăр йĕлтĕрпе уçăлма каятпăр. Çанталăк калама çук чипер паян.

— Юрĕ,— хаваслансах килĕшрĕм эпĕ.— Кĕт, тухатăп.

Ман умра кивелсе сараннă кăвак хуплашкаллă тетрадь выртать. Эпĕ ăна асăрханса хупатăп. Хут листи илсе, тирпейлĕн чĕркетĕп те кĕнеке шкапне хуратăп. Хваттерте шăп. Сехет кăна вĕçĕмсĕр пĕр сасăпа шаккать, вăхăт йĕпписене малалла шутарать. Стена леш енче, ача выляса чупни, ахăлтатса кулни илтĕнет.

Эпĕ чӳрече патне пыратăп. Тулта хĕллехи хĕвеллĕ кун хуçаланать. Çĕрле юр çуса кайнă. Халĕ вăл пур çĕрте те: урамра, çуртсем, йывăççем, пралуксем çинче — шап-шуррăн йăлтăртатса, куçа илĕртсе выртать. Эпĕ çăмăллăн сывласа яратăп. Пысăк ĕç вĕçленчĕ. Хама панă сăмаха пурнăçларăм. Халĕ уçăлма кайма та юрать.

# ЫЛТĂН ПĔРЧИСЕМ

## I

Ăсталла пăхатăн, унта вĕçĕ-хĕррисĕр сăрт-ту. Пĕрисем лутра та сарлака, теприсем çӳллĕ те шĕвĕр тăраллă. Вĕсем çинче е чăтлăх вăрман кашласа ларать, е сайра пĕчĕк йывăç тĕмисем ӳсеççĕ, е тĕксĕм чул катăкĕсем купаланса тăраççĕ, ирĕлсе пĕтеймен шурă юр лаптăкĕсем курăнаççĕ.

Çав сопкăсем хушшипе, калама çук вăрăм та анлă çул çĕлен пек унталла-кунталла авкаланса тăсăлать. Ку вăл — Колыма трасси. Унăн тăршшĕ пин çухрăм ытла. Вăл Магаданран тухать те, облаçе икĕ пая уйăрса, Якутие çитет. Çак çул Колымана хăйĕн аслă тăванĕпе, «материкпа», çыхăнтарать, тăрантарать, пурнăç парать. Аслă çулпа кăнтăрла та, çĕрле те машинăсем вĕçĕ-хĕррисĕр чупаççĕ.

Умра шурă çуртсем курăнса кайрĕç. Поселок тĕлне çитсен, автобус чарăнчĕ. Уçă алăкран икĕ çамрăк тухрĕ. Иккĕшĕ те çар тумĕпе. Пĕри çӳллĕ, чипер. Кăвак куçлă, сарă кăтра çӳçлĕ. Тепри кăшт лутрарах, имшертерех, юлташĕпе танлаштарсан, ăна хитрех теме çук. Анчах ку малтанлăха кăна çапла туйăнать. Унăн хуп-хура куç харшийĕсем айĕпе пăхакан хăмăр куçĕсем илемлĕ, уçă кулли килĕшӳллĕ. Хăйне тыткаланинчен вăл ырă кăмăллă, лăпкă, вăйĕ тапса тăни сисĕнет.

Чăматанĕсене çул хĕррине лартса, çамрăксем иккĕшĕ те пĕр харăсах йĕри-тавралла пăхса илчĕç.

Май уйăхĕн юлашки кунĕсем. Сăрт-ту юртан тасалса пĕтмен-ха. Çывăхри юханшыв та пăртан тасалман. Хĕвелĕ хĕртсех пăхать пулин те, хуллен вăркăшса вĕрекен çил шăмшака çӳçентерет. Вăрăм хаяр хĕл ытамĕнчен çăлăннă çутçанталăк симĕс тум тăхăнма васкать. Васкасах пулать. Кунта, çурçĕрте, çу кĕске.

— Игорь, миçе сехет çитнĕ? — ыйтрĕ хура çӳçли.— Сехетсене кунти вăхăтпа куçарса лартăпăр та хамăра Колыма çынни теме те пултаратпăр.

— Çур çĕр иртни икĕ сехет те вунпилĕк минут,— терĕ Игорь.— Мускаврa халĕ сĕм-çĕрле, кунта вара хĕвел хĕртсе пăхать. Эх, Тăван çĕршывăм, мĕн тери аслă эсĕ!.. Атя,

Толя, туртса ярар килсе çитнĕ ятпа,— Игорь портсигарне кăларса юлташĕ еннелле тăсрĕ.

— Эпĕ туртмастăп,— пуçне сулкаларĕ Толя.

— Пăрах кирлĕ мара! Мĕне кура хуна çапла асаплантаратăн?

— Ан ўкĕтле. Пурпĕрех туртмастăп,— татса каларĕ Толя. Вăл пирус тĕтĕмĕнчен аяккарах пăрăнса тăчĕ те çул çинче тусанланнă гимнастеркине хывса силлерĕ. Кукленсе ларса, чăматанĕнчен щетка кăларчĕ, тумне шăла-шăла тасатма пуçларĕ. Игорь пирус туртнă май йĕри-тавралла пăхкаласа тăчĕ.

— Пăх-ха, Толя, çав сăрт енне. Епле çўллĕ вăл. Ун çинче пĕр йывăç та, нимĕнле ўсентăран та курăнмасть. Çапçара, пĕр пек тĕксĕм, мăнаçлă. Тепри вара лаптак та лутра. Мĕншĕн çапла-ши вăл, э? Ку вара тўркесрех пулас. Ыттисенчен уйрăлса, пĕр-пĕччен кайса ларнă.

— Эсĕ малтан çипуçна тасат-ха,— чарчĕ ăна Толя.— Курмастăн-им, хулпуççи çинче мĕн чухлĕ тусан?

— Толя, тăванăм,— терĕ Игорь, щеткине илсе.— Пăхас, курас килмест-и вара санăн халиччен пулман вырăнсене?

Толя тăруках чĕнмерĕ. Ну, мĕн курмалли пур ĕнтĕ çак тавралăха хупăрласа тăракан тĕксĕм сопкăсем çинче? Анчах Игорь вĕсен кашнин «кăмăлне» уçса пама хатĕр. Итле кăна. Ку вара çăмăлттайланса мар. Çынни çавăн пек вăл. Çутçанталăка ытла та юратать.

— Вăхăт пире кĕтмест, Игорь. Малтан ĕç пирки пĕлер.

— Ĕç упа мар, вăрмана тарас çук,— хирĕçлерĕ Игорь.

— Яша патне кайма килĕшмерĕн. Якутсем мĕнле пурăннине кураттăмăр. Пăлансем çине ларса чупаттăмăр.

— Эпир туристсем мар. Кунта ĕçлеме килнĕ. Кайран, отпуск илсен, кайса курăпăр.

Чăматанĕсене йатса, каччăсем поселока кĕчĕç.

— Ăçта, хăш еннелле каймалла? — терĕ Игорь, йĕритавра пăхкаласа.— Пĕр çын курăнинччĕ хуть...

Çав самантра çывăхри çуртран çамрăк хĕр тухрĕ. Игорь куçĕсем хаваслăн çуталчĕç. Вăл гимнастеркине кăрт-карт туртса юсарĕ, сапаланнă çўçне алă тупанĕпе шăлса илчĕ.

— Каласам, чиперкке, ăçтарах-ши геологи разведкин управленийĕ? — ыйтрĕ вăл, илĕртўллĕн кулкаласа.

Хĕр, ăшшăн йăлкăшса, çывăхри пысăк çурт çине пуçĕпе сĕлтсе кăтартрĕ.

Игорь ун хыççăн пăхса юлчĕ.

— Хитре хĕр! — хĕрўллĕн пăшăлтатрĕ вăл.

— Пырать,— терĕ Толя лăпкăн.— Анчах сан валли мар, ытла та çамрăк.

Кадрсен пайӗн начальникӗ Тольӑпа Игорӗн докуменчӗсене васкамасӑр тӗрӗслерӗ.

— Ӗҫ нумай пирӗн...

Вӑл сӗтел ҫинче сапаланса выртакан хутсене сирчӗ те пӗр вӑхӑт хулӑн кӗленче айӗнчи карттӑ ҫине пӑхса ларчӗ.

— Кунтан вуникӗ ҫухрӑмра, тайгара, Глубокий ятлӑ участок пур. Унта шурфовщиксем кирлӗ. Кайма килӗшетӗр-и?

— Килӗшетпӗр,— терӗҫ каччӑсем харӑсах.

— Аван. Эппин, ларӑр та халех заявлени ҫырӑр... Михаил Васильевич,— чӗнчӗ начальник сӗтел хушшинче ҫурӑмпа ларса темле хут листисене вулакан арҫынна.— Акӑ сана рабочисем. Пӗрле илсе каятӑн,— унтан каллех умри каччӑсем ҫине пӑхса илчӗ те,— инженер вӑл пирӗн, прораб, паллашӑр,— терӗ.

Михаил Васильевич вӑртах ҫаврӑнчӗ. Кӗре сӑнлӑ, типшӗм питлӗскер, ҫамрӑксем ҫине сӑнаса пӑхрӗ.

— Ҫар службинчен-и? Колымара халиччен пулман апла? Мӗншӗн кунта килме шутларӑр? Тӑвансем е юлташсем чӗнеҫҫӗ-и?

— Тӑвансем те, юлташсем те ҫук,— терӗ Толя.— Эпир кунти вырӑнсенче ҫуралса ӳснӗ ҫамрӑкпа ҫарта пӗрле пултӑмӑр. Якут вӑл. Пӗлтӗр килне таврӑнчӗ. Халӗ колхозра ӗҫлет. Ҫав нумай каласа кӑтартатчӗ.

Михаил Васильевич пысӑк пӳрнисемпе сӗтеле шакӑртаттарса илчӗ.

— Ӗҫ йывӑр пирӗн, тӳрех калатӑп,— терӗ вӑл, ҫаплах каччӑсене сӑнаса.— Пурнӑҫӗ те чаплах мар. Хӗлле те, ҫулла та, упасем пек, сӗм вӑрманта пурӑнатпӑр. Хӗлӗ кунта вӑрӑм, хаяр. Пирӗн ҫуртсенче тимӗр кӑмака кӑна. Электричество ҫук. Ӗҫӗ те ҫавнашкал — тулта ӗҫлемелле... Малтанах тӗплӗн шухӑшласа пӑхӑр, кайран унталла-кунталла пӑрӑнасси ан пултӑр.

— Темле уйрӑмах расна ҫынсем ӗҫлемеҫҫӗ пулӗ вӗт сирӗн кунта? — ыйтрӗ Толя, ҫакна илтсен.

— Паллах.

— Апла пулсан, эпир те пултаратпӑр.

Михаил Васильевич ҫамрӑксем ҫине пӗр хушӑ ӑшшӑн пӑхрӗ.

— Юрӗ, пӗрле кайӑпӑр эппин. Анчах сирӗн кӑшт тӑхтама тивет. Бухгалтера курмалла-ха манӑн, ӑна кӗтетӗп. Унччен канӑр. Тен, столовӑя кайса килетӗр? Чӑматансене кунтах хӑварӑр. Паян-ыран ҫимеллисем илсе пымалла, хурса пырӗҫ. Ан хӑрӑр, нимӗн те ҫухалмасть. Техничкӑна калӑп, асӑрхатӑр. Халлӗхе вӗсене ак ҫакӑнта, чӑлана лар-

тăпăр,— çапла каласа, Михаил Васильевич тачĕ те пĕр чăматанне çĕклерĕ.

— Ух, йывăр! Мĕн чыхса тултарнă вара кунта? Чул мар пулĕ те?

— Кĕнекесем,— терĕ Толя, кулкаласа.

Вĕсем, аслă çулран пăрăнса, вăрмана кĕчĕç. Ансăр сукмак, унталла-кунталла авкаланса, е мăк пусса илнĕ шурлăхсем урлă, е сопкăсем хĕррипе чупать. Кунта, Аякри Çурçĕрте, тайга Çĕпĕрти пек мар. Çӳллĕ йывăçсем айлăм вырăнсенче, тусем хушшинче, юханшыв хĕррипе çеç ӳсеççĕ. Ытларах пĕчĕк лутра тĕмсем тĕл пулаççĕ. Сопкăсем çинче кедрач, урăхла каласан, стланик, кашласа ларать. Тĕреклĕ кедрăн çывăх тăванĕ. Тĕлĕнмелле йывăç вăл. Çурçĕрти хаяр сивĕсенчен сыхланма унăн хăйне евĕр меслет пур иккен. Хĕл пуçлансан, стланикăн пиçĕ турачĕсем çĕр çине выртаççĕ (ячĕ те çавăнпа стланик). Хĕлле тайгара пĕр кедрач тĕми те курăймăн. Çуркунне çитсен вара вăйлă туратсем юр кайса пĕтессе кĕтмесĕрех вăшт та вăшт тӳрленсе лараççĕ.

— Михаил Васильевич, эпĕ хамăн пулас ĕçе лайăхах ăнланаймастăп-ха. Эпир ылтăн кăларакансем пулатпăр-и? — ыйтрĕ Толя, пĕр вăхăт чĕнмесĕр пынă хыççăн.

— Çук, ылтăн шыракансем.

— Шыраса тупрăмăр тейĕпĕр. Вара?

— Вара тепĕр вырăна каятпăр. Çавăнпа пире разведчиксем теççĕ. Ылтăн нумай тупăннă вырăнсенче каярахпа приисксем ӳсе-ӳсе лараççĕ.

Çулсăр-мĕнсĕр утма кирек ăçта та çăмăл мар. Тольăпа Игорь та тайгари çак малтанхи çула нумайлăха астуса юлчĕç. Е шурлăх урлă пружина пек авăнакан пĕр тĕм çинчен теприн çине сике-сике пыратăн, е мăй таран кашласа ларакан курăк хушшипе çыхлана-çыхлана утатăн, е талккăшпех ӳсекен çурçĕрти çатракаллă вĕтĕркке тĕмсем çула пӳлсе лартаççĕ, е пысăк йывăç вуллисем йăваланса выртаççĕ. Çитменнине тата, Михаил Васильевич ытла та çăмăл уралла çын пулчĕ. Унран юлас мар тесе, каччăсен чылаях вăй хума лекрĕ.

Акă инженер пысăк та çӳллĕ сопка умĕнче чарăнчĕ.

— Çакăн çине улăхмалла,— терĕ вăл, пуçне каçăртса.— Урăх çул çук. Таврара пырса кĕмелле мар шурлăх. Ывăнтăр-и? Канар пĕр-икĕ минут.

Улăхма, чăнах та, çăмăл пулмарĕ. Утнă май йывăç-курăк сайраланса пычĕ, унтан пачах пĕтрĕ. Ура айĕнче чул катăкĕсем типпĕн кăчăртатаççĕ. Хăшпĕр чух кăшт перĕнсессĕн, аялалла шуса, çынсене те сĕтĕре-сĕтĕре анаççĕ.

Ниçтан та тытăнса тăма çук. Акă умра тем пысăкăш шурă чул курăнса выртать. Тепĕр виçĕ минутран йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ, хашкаса сывлакан каччăсем ун çине хăпарса тăчĕç.

— Шыв! — савăнса кăшкăрчĕ Игорь.

Пысăк чул хыçĕнче çăлкуç палкаса юхать. Тĕттĕм çĕр ытамĕнчен ирĕклĕ çĕре тухнăшăн савăннă пек, шывĕ хаваслăн шăнкăртататъ, çăмăллăн сике-сике, хăйĕн кукăрмакăр çулĕпе малалла васкать. Йĕкĕр ывăçĕпе ăса-ăса, Игорь ăна эхлете-эхлете ĕçме пикенчĕ.

— Эх, шывĕ те! — хаваслăн калаçрĕ вăл, пит-куçне, аллине сăмса тутрийĕпе шăлса типĕтнĕ май.— Хĕр куççулĕ пек таса, юр пек сивĕ, шерпет пек тутлă!

— Килĕр хăвăртрах кунта! — чĕнчĕ çамрăксене сăрт тăррине улăхса тăнă Михаил Васильевич.— Акă эпĕ пĕлекен чи илемлĕ вырăнсенчен пĕри.

Кунтан тавралăх таçта çитиех курăнса выртать. Ниçта та тикĕс вырăн çук. Йĕри-тавра сăрт-ту, путăклă-шăтăклă çĕр. Умрах çап-çавра пĕчĕк кӳлĕ. Ун çийĕ кĕленче пек тикĕс. Кăн-кăвак шывра кĕмĕл тĕслĕ кăпка пĕлĕт таткисем ишеççĕ. Кӳлĕ тавра çăра вăрман кашласа ӳсет. Çывăхри сăрт çинче ушкăн хурăн ларать. Такам юри илемлетсе лартса тухнă пек, вĕсем пĕр карта пулса çаврăннă.

— Толя, пăх-ха, хĕрсем вăййа тухнă,— кăтартрĕ Игорь шурă хурăнсем çине.— Епле йăрăс пӳллĕ, çамрăк, хитре вĕсем!

— Пирĕн енче хĕрсем уявсене çавăн пек чăлт-шурă тумпа тухаççĕ,— терĕ Толя. Каччă чĕри çав тери тунсăхласа ыратса кайрĕ. Ытла та аякра-çке эсĕ халĕ, çуралса ӳснĕ тăван çĕршывăм! Вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлакан пĕр тикĕс тăван уй-хирсем...

— Михаил Васильевич,— терĕ Игорь, кăшт аякрах тăракан инженер патне пырса,— нивушлĕ çак хурăнсем хăйсемех çапла пĕр çавра ӳснĕ? Тен, кам та пулин лартнă вĕсене?

— Темле,— терĕ Михаил Васильевич, шухăша кайса.— Колыма историне пĕлместĕр пулĕ-ха эсир? Чи малтан, 1928 çулта çакăнти вырăнсене Билибин экспедицийĕ килсе каять. Ун чух Магадан хули те, трасса та, поселоксем те — нимĕн те пулман. Унта-кунта старательсен палаткисем çеç курăнкаланă,— прораб, кутамккине вĕçертсе, çĕре лартрĕ, унтан, кĕсйинчен тутăр кăларса, тарланă пит-куçне шăлса типĕтрĕ.— Кĕскен каласан, Колыма историйĕ трассăран пуçланать. Ăна пĕрремĕш Дальстрой директорĕ Эдуард Берзин ертсе пынипе 1932 çулта тума тытăннă. Шутлăр-ха, пумай-и вăл çав вăхăт? Анчах епле улшăнса кайрĕ

Магадан облаçĕ çак кĕске вăхăтрах? Мĕнле илемлĕ хула ÿссе ларчĕ! Карттă çине пăхатăн — кашни çулах темиçе çĕнĕ прииск çуралать...

— Ай! Пăхăр-ха, пăхăр! — пÿлчĕ прораба Игорь, умри сопка çине кăтартса.

Унта, чи çÿллĕ вырăнта, сăрт-ту качаки тăрать. Çывăхах мар пулин те, кăвак пĕлĕт çинче унăн кĕлетки кăна мар, каялла илемлĕн кукăрăлнă мăйраки те, çинçе йăрăс урисем те уççăнах курăнаççĕ. Хускалмасăр тăнăран, халĕ вăл питĕ ăста чутласа тунă чул кĕлетке пекех туйăнать.

— Пуçлăхĕ,— терĕ Михаил Васильевич.— Пĕччен çÿремеççĕ вĕсем.

Ун сăмахĕсене çирĕплетнĕ пекех, кĕç юнашар тата темиçе качака курăнчĕ. Пуçĕсене çынсем енне çавăрса, вĕсем кĕске вăхăт тапранмарĕç. Унтан пĕри вĕлт хускалчĕ. Унччен те пулмарĕ, качака ушкăнĕ çавăнтах куçран çухалчĕ.

— Хам ĕмĕрте пĕрремĕш хут куртăм ку сăрт-ту выльăхне,— терĕ Игорь хаваслăн.

— Эпĕ те,— кĕскен пĕлтерчĕ Толя.

— Пуян вырăнсем,— хуравларĕ Михаил Васильевич, йĕри-тавра кăмăллă куçпа пăхса.— Мĕн тĕрлĕ чĕрчун, тискер кайăк-кĕшĕк пурăнмасть-ши çак çĕрсенче! Шывра мĕн чухлĕ пулă! Çырла, кăмпа, сиплĕ çăлкуçсем! Пирĕн Талая курорта темиçе çĕр çухрăмран сывалма килеççĕ.

— Çĕр айĕнче те пуянлăх сахал мар пулас. Эсир геолог: ылтăнсăр пуçне тата мĕн шыраса тупаççĕ кунти вырăнсенче? — ыйтрĕ Михаил Васильевича тимлĕн итлекен Толя.

Вĕсем çÿллĕ сопка çинчен анма тытăнчĕç.

— Ытларах ылтăн кăларатпăр. Анчах кĕмĕл те тупăнать. Ртуть, тăхлан, вольфрам, тимĕр, нефть тĕл пулать. Торф та, çĕркăмрăкĕ те пур, çуртсем тунă çĕрте усă курмалли чул, тăм, хăйăр та турттараççĕ,— ăнсăртран ури шуса кайнипе, Михаил Васильевич кăшт çеç ÿкмерĕ.

— Авă ăçта килсе пытарнă ăслă çутçанталăк хăйĕн пуянлăхне. Сивĕ çурçĕре, сăрт-чул айне! — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Игорь.

— Çапла, Магадан облаçĕ пысăк. Ун çĕрĕнче Англи, Франци, Германи патшалăхĕсем вырнаçма пултараççĕ. Мĕн чухлĕ тупăш парать вăл çĕршыва! — пуçланă сăмахне малалла тăсрĕ Михаил Васильевич.— Çав пуянлăхшăн юрататăп пулĕ ĕнтĕ эпĕ çак чуллă-сăртлă, сивĕ çĕре. Отпускра чухне те тунсăхлатăп. Чун кунталлах туртăнать.

Аннă май çÿллĕ сопка сĕвекленсе пычĕ. Стланик тĕмисем патне çитсен, утма та çăмăлланчĕ.

— Нумайранпа ĕçлетĕр-и эсир кунта? — каллех ыйтрĕ Толя, инженерпа юнашар утса.

— Кăçал юбилей. Çирĕм пилĕк çул тулать. Институт пĕтернĕренпех çакăнта. Килнĕ çулах хамăн Татьяна Ивановнăна тĕл пултăм. Йывăрччĕ ун чух пурнăç. Анчах сисмерĕмĕр те, ĕнтĕ ачасем ӳссе çемьеллĕ пулчĕç. Каллех иккĕнех юлтăмăр.

— Эсир яланах çакăнта... çак вырăнсенче ĕçленĕ-и?

— Паллах, шăп çакăнтах мар. Чукоткăра та пулнă, Магаданра та пурăннă, юлашки çулсенче, ачасем шкул вĕренсе пĕтерсен, кунта, тайгана килтĕмĕр. Тĕрлĕ управленисенче, конторăсенче хутсем çырса ларасси — ман ĕç мар. Эпĕ геолог.

— Колыма хăрушă вырăн пулнă теççĕ. Мĕнле пурăннă эсир ун чух кунта? — ыйтрĕ Игорь.

Михаил Васильевич туссем çине сăнаса пăхрĕ.

— Хăрушă вырăн тетĕн,— тăхтарах каларĕ вăл.— Хм... Темиçе çул каялла Колыма çинчен шарлама та юраман. Çапла, ун чухне мĕнпур Магадан облаçĕ йĕплĕ пралук ăшĕнчеччĕ... Тĕрĕсмарлăх пайтах пулнă. Совет законĕсене уççăнах пăснисене те нумай курнă эпĕ кунта. Пĕр сăмахпа каласан, çынна хакламан, çын пурнăçне шеллемен... Эпĕ хам пирки каламастăп... Мана Колымана конвойпа илсе килмен.

— Толя, Колыма çинчен Яша мĕнле юрă юрласа пачĕха пире?

— А-а... Кĕввине астăватăп, анчах сăмахĕсене...

Толя малтан хурлăхлă юррăн кĕввине ĕнĕрлеме, унтан хуллен юрлама тытăнчĕ:

Будь проклята ты, Колыма,
Что названа чудной планетой,
Сойдешь поневоле с ума,
Возврата отсюда уж нету.

Сасартăк тайга çийĕн тупăпа пенĕ евĕр хăватлă сасă çине-çинех кĕрлесе кайрĕ. Çамрăксем шăп пулчĕç.

— Мĕн ку? — ыйтрĕç вĕсем харăсах.

— Шурфовщиксем шăн çĕре сирпĕтеççĕ.

— Епле шăн çĕре? — Толя çамки çинчи тарне шăлса илчĕ.

— Çаплах. Кунта çĕр сийĕ çулла та çур метртан ытла ăшăнмасть. Аялалла вара пĕтĕмпех шăн.

— Ак тĕлĕнтермĕш! Епле апла?

— Пĕлместĕп çав. Наука тĕпчесе çитереймен-ха çак тĕлĕнмелле япалана.

Умра, сайра йывăççем хушшинче, палаткăсем куранчĕç, йытă хаваслăн вĕрсе ячĕ.

— Вăт çитрĕмĕр,— терĕ Михаил Васильевич.— Ывантăр пулĕ? Паян канăр. Ыран вара ĕçе. Акă пирĕн кил. Пысăк палаткисенче çамрăксем пурăнаççĕ, пĕчĕккинче эпир, арăмпа иксĕмĕр. Унта авă склад. Апат-çимĕç, тĕрлĕ ăпăр-тапăр усратпăр,— кăтартрĕ вăл вакун евĕрлĕ çурт çине.

## II

Çамрăксем чылаях пысăк палаткăна кĕчĕç. Икĕ чӳрече. Пуçтарнă вырансем. Сĕтел çинче чашăк, темиçе кашăк, типсе кушăрханă çур çăкăр, уçса хунă кĕнеке. Пĕчĕк чӳречесенчен çутă çителĕкле кĕреймест. Тĕксĕм. Пăчă.

Толя чĕри каллех ыратса кайрĕ. Юлашки çырура Валя: «Хăвăртрах кил. Чунтан кĕтетĕп»,— тесе çырнăччĕ. Мĕн шухăшлĕ ĕнтĕ кунта килнине пĕлсен?

— Акă çак койкăсене йышăнăр,— терĕ Михаил Васильевич.— Завхоза курсан калăп, простыньсемпе утиялсем илсе килтĕр. Çиес килет пулсан, авă апат-çимĕç склачĕ,— шӳт туса, фанер арча çине кăтартрĕ вăл.— Вăтанса ан тăрăр. Кунта манăн-санăн çук. Пурин те пĕрле. Канăр. Эпĕ ĕçленĕ çĕре каятăп.

Игорь гимнастеркине хывса хыçлă пукан çине çакрĕ, кравать çине ларса, шăхăркалама тытăнчĕ.

— Çывăрас килет,— терĕ вăл, анасласа. Аттисене хыврĕ те тăсăлса выртрĕ.— Канас теместĕн-и?

— Çук. Эпĕ çыру çыратăп.

— Тунсăхлатăн-и?

— Тунсăхлатăп.

— Тĕлĕнтермĕш! Мĕн тума килтĕн эппин? — вăштах тăрса ларчĕ Игорь.

— Ухмах мар-и? Сана итлерĕм.

— Мĕнлескер-ши вăл, курасчĕ ман ăна. Нивушлĕ эпĕ çавăн пек чип-чĕререн килĕшекен хĕр тупаймăп?

Çырма чарăнса, Толя пĕр вăхăт шухăша кайрĕ. Мĕн тăвать-ши Валя çак самантра? Тата икĕ-виçĕ çул кĕтсе пурăнма килĕшĕ-ши вăл? Виçĕ çул виçĕ уйăх мар çав. Мĕншĕн чĕре ытла ыратать-ха? Вальăна ĕмĕрлĕхех çухатасса сисмест-ши вăл?..

Палаткăра шăп. Игорь каплĕн мăшлаттарса сывлани çеç илтĕнет. Акă алăк чĕриклетсе уçăлчĕ те, чылаях çулланнă хулăн кĕлеткеллĕ лутра арçын кĕчĕ. Малтан вăл тирпейлĕн чĕркенĕ простыньсене кравать çине хучĕ, унтан, Тольăна сывлăх сунса, алă пачĕ.

— Иван Степанович Капуста. Кунти дневальнăй,—тачка кĕлеткине кăштах тайрĕ вăл.

Мĕн тĕрлĕ хушамат çук пулĕ! Хăшĕ-пĕрисене илтсен, прĕксĕрех кулса ярас килет. Капуста... купăста. Толя умри пукан çине йывăррăн пырса ларнă дневальнăя сăнаса пăхрĕ. Ăна халĕ çыннипе унăн хушамачĕ хушшинче те темле пĕрпеклĕх пур пек туйăнса кайрĕ. Самăр лутака кĕлеткe, çавра пит-куç, пайтах тура курман сапаланчăк кăтра çӳç. Лăкăш-лакăш тумĕ-çийĕ çурăлса-татăлса пĕтнĕ купăста пуçĕ евĕрлех.

— Ыйтнăшăн каçарăр та. Эсир вырăс-и? Хушамат сирен вырăссенни пек мар,— терĕ Толя сăмах майĕн.

— Хушамачĕ, чăн та, паллă ĕнтĕ,— хуравларĕ Иван Степанович, мăнкăмăллăн кулкаласа.— Таврара пĕрре. Капуста тесен, пурте пĕлеççĕ... Украинăран эпĕ. Унта çуралса ӳснĕ. Эсир тата?..

— Эпĕ чăваш. Илтнĕ пулĕ?

— Илтмесĕр. Пĕлетпĕр. Андриян космонавтăн ентешĕ апла. Юлташăр та чăваш-и? — ыйтрĕ Капуста, çывăракан Игорь çине çаврăнса пăхса.

— Çук. Вырăс вăл. Воронеж облаçĕнчен.

— Пурĕ сакăр тĕрлĕ халăх пулчĕ ĕнтĕ пирĕн кунта. Вырăссем, украинецсем, белоруссем, тутар, таджик, ингуш, эвен, халĕ тата чăваш... Эсир килнĕ-килменех темĕн çырма та тытăннă,— Иван Степанович каччă умĕнчи хут листи çине кармашса пăхрĕ.— Çыру пулĕ çав. Хĕр патне ĕнтĕ. Киле ун пекех васкаса çырас çук-ха,— Капуста, сарă шăлĕсене кăтартса, йăлкăшса кулчĕ.

— Çыру, — терĕ Толя. Вăл хут листине хутлатрĕ те гимнастерка кĕсйине чиксе хучĕ.

— Юрать, юрать. Мĕнпур йăпанни-савăнни те яш чухне çеç. Сирĕн пек чух эпĕ хам та вăл енчен маххă паман,— Иван Степановичăн шалалла тарса кĕнĕ пĕчĕк куçĕсем хаваслăн йăлкăшма тытăнчĕç.— Эх, хĕрарăмсем, хĕрарăмсем! Чун илĕртмĕшсем! Хам ĕмĕрте мĕн чухлĕ çӳрерĕм-ши? Аса илсен, вĕçне-хĕрне тупас çук. Пĕрре çапла кино курма каяс тесе тухрăм çеç...

— Иван Степанович,— пӳлчĕ ăна Толя.— Сирĕн çемье çук-им вара?

Ансăртран такам тутлă ыйхăран вăратнă пек, Капуста каччă çине кăмăлсăррăн пăхса илчĕ. Унăн ичĕ-куçĕ самантрах тĕксĕмленчĕ, хулпуççийĕ сиссĕнмеллех усăнчĕ.

— Пулмасăр,— терĕ вăл вăрахран.— Ман çула çитнĕ çын çемьесĕр пулать-и? Арăм, ачасем те пур. Кунтан утмăл çухрăмра, поселокра пурăнаççĕ.

— Мĕншĕн пĕрле мар?

— Мĕнле калас сана? — Иван Степанович ĕнсине хыçса илчĕ.— Манăн арăм питĕ канăçсăр çын. Унпа пĕрле пурăнас пулсан, ыйхă та ан çывăр, ларса та ан кан. Ĕçле, вĕçĕмсĕр ĕçле. Пахчи уй пек, темиçе парник. Эпĕ хам çирĕп сывлăхлă çын мар, час-часах чирлекелетĕп. Вăл пур — ĕнепмест. Кунта ĕçĕ ытла йывăр мар. Кирлĕ таран канатăп, кирлĕ таран ĕçсе-çиетĕп. Хам хуçа. Çемье вăл камшăн мĕнле. Пĕрисемшĕн — телей, теприсемшĕн — чĕр-тамăк. Ман юлташ авланчĕ те çапла...

Шăмшакĕ йывăрланнине туйса, Толя ирĕксĕрех темиçе хутчен те анасласа илчĕ. Юлашкинчен кăна Иван Степанович та асăрхарĕ.

— Çывăрас килет-и? Апла пулсан, эпĕ каям. Акă сире утиял, простынь, минтер пичĕ. Миргалим пама хушрĕ. Завхоз вăл пирĕн,— Капуста, тăрса, сĕтел хушшинчен тухрĕ.

Толя чăлт-шурă простыне илсе сарма тăчĕ, анчах çавăнтах каялла хучĕ.

— Çул çинче эрне ытла йăваланса килнĕ хыççăн, кун пек таса вырăн çине выртма пĕр кăмăл та çук. Эх, мунча кĕресчĕ халь.

Кайма тăнă Иван Степанович Капуста тепĕр хут малалла иртрĕ.

— Халлĕхе мунча çук çав,— терĕ вăл.— Кĕçех илсе килеççĕ пулĕ те-ха. Пирĕн партийĕ çĕнĕ-çке. Ĕçлеме тытăнни те уйăх çурă кăнă. Тăруках пурне те туса хатĕрлеме çук çав. Ирĕкре çăвăнма килĕшместĕр-и? Шыв ăшăтмалла кăна. Атя кăтартам. Витресем илĕр.

Йывăççем хушшипе чупакан ансăр сукмак вĕсене Сухахэ ятлă пысăк мар юханшыв хĕррине илсе пычĕ.

— Акă пирĕн мунча,— терĕ Иван Степанович, йĕритавра чăтлăх вăрман хупăрланă пĕчĕк уçланкăра чарăнса.— Килĕшет-и?

Уçланкă варринче икĕ вучах. Пĕрне çĕр чавса тунă. Ун çинче темиçе витре кĕрекен бак. Тепĕр вучахне чултан купаланă. Кунтах якатса шуратнă пысăк йывăç вулли выртать. Ура айĕнче яка вĕтĕ чул кăшăлтатать.

— Мунчи чаплă пирĕн,— çаплах шӳтлерĕ Иван Степанович.— Пурин кăмăлне те çырлахтарма пултарать. Кăшт-кашт çăвăнса илес тесен, шыв ăшăтатпăр та, пулчĕ те. Милĕкпе хĕртĕнме юратакансем валли çапăнмалли те тума пулать. Ну, мĕнле? Хăшне кăмăл тăватăр?

— Çапăнмалли? — ыйтрĕ Толя, çара уçланкă йĕри-тавра пăхса.— Мĕнле?..

— Куратăн акă, ан васка,— кăмăллăн пӳлчĕ ăна Капуста.— Ҫолымара Иван Степаныч халиччен курман тĕлеимелле мунча кĕртрĕ тесе ĕмĕр асăнса пурăнăн.

Вăл йывăç вулли çине ларчĕ те кĕсйинчен лӳчĕркеннĕ пирус пачки кăларчĕ.

— Тем, паян кунĕпех ăшчик уçăмлă мар,— терĕ дневальнăй, пит-куçне асаплăн пĕркелесе.— Кăшт хускалсанах аяк ыратма тытăнать... Туртас теместĕн-и? Ҫук? Эппин, мĕн кирлине хăвах майлаштар-ха. Ĕçĕ нумай мар. Кунта хăрăк вутă темĕн чухлех. Пухса кил. Акă пуртă.

Мĕн хушнине туса пĕтерсен, Толя Иван Степановичпа юнашар пырса ларчĕ.

— Ҫамрăксем нумай-и кунта?

— Пурте пекех çамрăк. Ҫемьеллисем Михал Васильч та эпĕ çеç. Ыттисен арăмĕсем пур тенине илтмен. Вунултă арçын. Усал-тĕсел ересрен пĕр хĕрарăм пур. Вăт çапла пурăнатпăр. Ачасем лайăх пирĕн. Те Михал Васильч тупма пĕлет ун пеккисене, те, ун телейне, хăйсемех çапла пуçтарăнчĕç. Пурте, пĕр çемьери пек, кăмăллăн килĕштерсе пурăнатпăр. Ĕçре те хастар вĕсем. Шăн çĕре алă вĕççĕн чавма çăмăл мар. Анчах ӳркенсе, пăрăнса çӳрекенсем çук. Ĕçе иличчен Михал Васильч вĕсемпе кашниппех калаçать, кунта пурнăç мĕнлине пытармасть. Пурпĕрех, хăраса тăракансем пулманпа пĕрех.

Капуста пирусне вучаха ывăтрĕ, вăрăм патакпа хĕмленсе çунакан вутпуççине шалалла тĕртсе хучĕ.

— Ĕçлесси йĕркелесе пыракансем та нумай килет çав. Михал Васильч хăй питĕ тимлĕ, çыншăн тăрăшакан этем. Хисеплеççĕ ăна çамрăксем, тĕрĕс çын теççĕ,— хушса хучĕ вăл.

— Михаил Васильевич арăмĕ кам пулса ĕçлет тата?

— Татьяна Ивановна-и? Врач вăл. Халлĕхе çывăхра ун валли ĕç çук. Инçете, упăшкинчен уйăрăлса, каяс килмест тет. Анчах ахаль лармасть. Чирлесен е мĕн те пулин урăх инкек-синкек пулсан, тӳрех ун патне чупатпăр. Патшалăх ăна, паллах, куншăн укçа тӳлемест. Пирĕн хамăрăн та фельдшер пур-ха. Саккун тăрăх, унăн кашни эрнерех пулмалла кунта. Анчах Татьяна Ивановна çине шанать пулас, килсе çӳремест. Татьяна Ивановнăна эпир хисеплетпĕр,— çаплах пакăлтатрĕ Капуста.— Врач темерĕн. Больницăри пекех, кашни кунах килсе тĕрĕслет: «Чирлисем çук-и? Мĕншĕн паян палатăра тирпейлĕ мар? Кам дежурнăй?..» Ун вырăнĕнче урăх çын пулсан, тен, тăнламĕччĕç, анчах Татьяна Ивановнăна епле итлемĕн?

Иван Степанович тăчĕ. Вучах çывăхĕнче выртакан хă-

рӑмлӑ куркана пӗшкӗнсе илчӗ те, чӳхемесӗрех, шыв тултарса, хӗмленсе выртакан вучаха тӗртсе лартрӗ.
— Тем ыйӑх пусса киле пуҫларӗ-ҫке. Чифир ӗҫес пулать.
— Мӗн ӗҫес тетӗр? — ӑнланаймарӗ Толя.
— Чи-фир! — татса каларӗ Капуста.— Пӗлместӗр-и? Кунта ӗлӗкрех ӑна ӗҫмен ҫын та ҫукчӗ. Мӗн тӑвӑн? Пурнӑҫ чӑтма ҫук йывӑр... Анчах пӗр хӑнӑхсан, эрех пекех усал ҫав. Сывлӑха ҫиет.
— Нумайранпа-и эсир кунта?
— Ҫирӗм тӑватӑ ҫул каярах илсе килчӗҫ,— Иван Степанович ассӑн сывласа ячӗ.— Лагерьте пулнӑ эпӗ.
— Мӗншӗн? — ыйтрӗ Толя.
— Пӗлместӗп. Влаҫа хирӗҫ темле сӑмах каланӑ тет-и ҫав... Хам астумастӑп. Ӳсӗр пулнӑ. «Халӑх тӑшманӗ» туса ӑсатрӗҫ вара Колымана...
Шатӑртатса ҫунакан вут ҫулӑмӗ ҫине пӑхса, вӗсем пӗр вӑхӑт чӗнмерӗҫ. Унтан Капуста сиксе вӗрекен куркана вучахран аяккарах туртса лартрӗ.
— Эх, Толя! Мӗн тӳсмен пулӗ эпир кунта! — терӗ вӑл, хӗмленсе ҫунакан вучаха татах вутӑ пӑрахса.— Шартлама сивӗ, сывлама йывӑр. Хурҫӑ тӳсеймест. Кӗреҫесем хуҫӑла-хуҫӑла каяҫҫӗ. Эпир трасса тӑватпӑр. Выҫӑ, ҫӗтӗк-ҫатӑк... Эх, аса илсен... Тем те курнӑ эпӗ: хавшаса ҫитнӗ юлташсем виле-виле выртнине те, айӑпсӑр ҫынсене пере-пере пӑрахнине те, тӗрлӗ вӑрӑ-хурах пусмӑрланине те,— Иван Степанович пуҫне салхуллӑн усрӗ.— Иртрӗ ӗмӗр. Пурӑнатӑп, хирти тунката пек, пӗр-пӗччен. Ни йӗркеллӗ ҫемье ҫук, ни ачасене ӳстерсе савӑнаймарӑм.
— Епле апла? Эсир халӗ кӑна...
— Ман ачасем мар вӗсем,— Толя мӗн калассине ӑнланса, пӳлчӗ Иван Степанович— Лере, «материкра», ман тӑван ывӑл юлчӗ. Упаленме кӑна тытӑннӑччӗ. Арӑм качча тухнӑ, ывӑлӑм чӑн-чӑн ашшӗне пӗлмест терӗҫ. Кайса, ача шухӑш-кӑмӑлне пӑтратас мар терӗм. Мӗн тума? Пурпӗрех уншӑн эпӗ ют ҫын...
Иван Степанович каллех йывӑррӑн сывласа илчӗ те кӗсйинчен канфет кӑларчӗ.
— Акӑ пулчӗ те чифир,— терӗ вӑл, тулли куркана пишак аркийӗпе тытса, вара тикӗт пек хуп-хура шыва вӗре-вӗре ӗҫме пикенчӗ.— Эх, ҫапталӑкӗ паян,— каллех калаҫма тытӑнчӗ сӑмах ваклама юратакан Капуста, хӗрелсе тарланӑ пит-куҫне тӗссӗрленнӗ пӗчӗк тутӑрпа шӑла-шӑла илнӗ май.— Хӗвел ӑшши, мӑнтарӑн, кама савӑнтармасть-ши. Анчах сахал пулаҫҫӗ ҫав кунта ҫакӑн евӗр ырӑ кунсем.

Çу кунта кĕске. Уйăх çурă, нумай икĕ уйăх тăрать — каллех сивĕтет. Ĕç пуçланать вара. Вутă хатĕрле, кăмака хутса тăр, шурф чавакансем килнĕ çĕре ăшă шыв пултăр. Хĕлле шыв çук. Пăр вакламалла. Çапталăкĕ сивĕ, сывлама йывăр. Шутласа пăх-ха эсĕ. Мĕн чухлĕ вутă кирлĕ çавăн пек йыш валли пăр ирĕлтерсе шыв тума? Вĕсен пĕр ĕç, манăн кунта çĕр ĕç. Хыпкаланатăн кăна. Çакна шута ил те, ыттисем пек, дневальнăйра кахал çынсем ĕçлеççĕ тесе ан шутла.

Анчах, тĕрĕсрех каласан, ытларах çывăрма тата вăхăта тĕлсĕр сутма юратакан Капуста ĕçшĕн пĕрре те çунман. Вăл нихăçан та вутă хатĕрлемен, пӳрте ытларах хăйне сивĕ пулнăран кăна хутса ăшăтнă, шывне те аран-аран çитмелле çеç хатĕрленĕ. Мĕн тăвăн? Кахалтарах ĕнтĕ, анчах çынни кăмăллă, çилленме пĕлмест. Çулĕ те сахал мар. Вăйпитти çамрăка пĕр-икĕ витрелĕх пăр вакласа килсе вĕри кăмака çине лартасси мĕн вăл.

Акă бакра шыв вĕреме кĕчĕ. Чул кăмака патне çывăха пыма çук, хĕмленсе кăна ларать.

— Ну, мунча пулчĕ тейĕпĕр,— Иван Степанович ура çине йывăррăн тăчĕ.— Халĕ çапăнмалли тăвăпăр. Эсĕ, Толя, çамрăк. Касса кил-ха çулçăллăрах туратсем. Эпĕ çăвăнмалли ăпăр-тапăр илсе килем. Игоре те вăратас пулать.

Тепĕр çур сехетрен вĕсем виççĕшĕ вĕри чул кăмака тавра ӳпле туса лартрĕç. Иван Степанович ăна брезентпа витрĕ, шала фонарь çутса лартрĕ, «алăкне» пысăк утиялпа картларĕ.

— Ну, мĕнле? — ыйтрĕ вăл, çамрăксем çине мухтанчăклăн пăхкаласа.— Чаплă вĕт, э? Кам шухăшласа кăларнă тетĕр эсир çакăн пек мунчана таежниксем валли?.. Толя!.. Хăшне малтан çапса ярас?

Çапăнма килĕштерсех каймасть пулин те, Тольăн халиччен курман мунча мĕнлине пĕлес килчĕ. Кунсăр пуçне, тараватлă хуçа кăмăлне хуçас темерĕ вăл.

— Иван Степаныч мунчине тутанса пăхас пулать,— шӳтлерех каларĕ вăл.

Утияла сирсе, ӳплене кĕрсе çухалчĕç.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, хĕремесленсе кайнă Толя сиксе тухрĕ. Ун хыççăн Иван Степанович та курăнчĕ.

— Ух! — терĕ каччă, пит-куçне сивĕ шывпа уçăлтарса.— Чăтма çук вĕри.

Капуста пăр пек сивĕ Сухахэ шывне чăмса тухрĕ.

— Игорь, атя кĕр,— пуçне сулчĕ вăл, кăштах уçăлсан.

— Эпĕ çапăнмастăп,— терĕ вĕри шывпа эхлете-эхлете çăвăнакан Игорь.

Хаваслăн çиçекен Иван Степанович пичĕ-куçĕ самантрах тĕксĕмленчĕ. Хĕпĕртесе тав тăвас вырăнне, ак сана, «çапăнмастăп» тесе хучĕ. Пăсăлчĕ дневальнăй кăмăлĕ, йывăра илчĕ вăл каччă сăмахне. Ķамшăн, мĕн тума ларса ирттерчĕ-ши вăл çур кулпа вучах патĕнче? Кăна пĕлнĕ пулсан...

Иван Степанович йывăррăн тăчĕ, никам çине пăхмасăр, хурăн çулçисем сыпçăннă кĕлеткине çуса тасатма манса, тумланма тытăнчĕ.

— Иван Степаныч,— терĕ Толя, дневальнăй кўреннине ăнланса.— Тăхтăр-ха кăштах. Манăн тепре çапăнасчĕ...

Пăртак ўкĕтлесен, Ķапуста килĕшрĕ, анчах хаваслă кăмăлĕ çаврăнмарĕ, калаçас та килмерĕ пулас. Пушă витре илчĕ те юханшыв енне уттарчĕ.

— Ахалех кўрентертĕн ырă çынна,— терĕ Толя, тусне аякран тĕртсе.— Пăх-ха, мĕн чухлĕ тăрăшрĕ вăл паян пирĕншĕн. Йывăр-им сана кĕрсе тухма?

Игорь Толя çине çиллессĕн пăхса илчĕ.

— Ун кăмăлĕшĕн манăн асап курмалла-и? Сывлăх начар тесе пăлахая перет тата. Чирлĕ çын пĕр минут чăтаймасть çав шăтăкра.

— Ķилĕш ĕнтĕ,— çурри шўтлесе, çаплах хистерĕ Толя.— Ырă ача пул. Унсăрăн каллех манăн кĕмелле.

Игорь кĕске вăхăт нимĕн те шарламарĕ, унтан каччă куçĕнче ашкăнчăк çутă выляса илчĕ, тути çинче çăмăл кулă палăрчĕ.

— Юрĕ. Çывăх тусшăн мĕн тумăн,— Игорь, Иван Степановича хирĕç утса тем каларĕ, ун аллинчи тулли витрене илсе, «мунчана» кĕчĕ.

Пуçларĕç çапăнма. Вунă минут иртрĕ... вунпиллĕк, çирĕм... Çаплах çапăнаççĕ. Ўпле пăсланса çеç тăрать. Юлашкинчен, хĕрлĕ пустав пек хĕремесленсе кайнă Игорь сулкаланса тухрĕ те юри сарнă симĕс мăк çине йăванса кайрĕ. Ун хыççăн тăвата уран упаленсе тухакан Ķапуста пуçĕ курăнчĕ.

— Толя, шыв, сивĕ шыв... Хăвăртрах,— йынăшса ячĕ вăл.— Яр! Витрипех яр!

Шăрăхпа аптăранă сурăх пек пашкаса выртакан Игорь пуçне йăвăррăн çĕклерĕ те Ķапуста çине çаврăнса пăхрĕ, унтан, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе, сасăсăр кулакан Тольăна куçне чеен хĕссе илчĕ.

— Ах, чĕре! Çурăлать пулĕ терĕм. Чĕррĕн тухассăн туйăнмарĕ,— терĕ Иван Степанович, кăштах уçăлса, сывлăш çавăрса ярсан.— Итле-ха, Толя,— пăшăлтатрĕ вăл, хускалмасăр выртакан Игорь çине шиклентерех пăхса.—

Вăл, мĕн-и... вăхăтран вăхăт кăштах улшăнса каймасть-и?

— Кам пĕлет ăна. Ку таранччен сисмен те,— сăмах хушрĕ Толя, кулса ярасран аран чăтса.

— Итле-ха,— каллех пăшăлтатрĕ Иван Степанович.— Пуçĕнче кăштах пур пулас унăн... Çапрăм-çапрăм. «Çитет-и?» — тетĕп. «Ăшши пар-ха, витмест»,— тет... Татах çапатăп. Вăй пĕтрĕ... Урасем чĕтреме пуçларĕç. «Çитет пулĕ»,— тетĕп. Çухăрашма тытăнчĕ. «Çап тенĕ сана... Хытăрах! Мĕн аран-аран тĕрткеленсе тăратăн!» — тет. Çавăн чух тавçăрса илтĕм.«Тем тесен те, ăслă-пуçлă çын мар ку»,— терĕм. Куç хуралса килчĕ. Çаплах çапатăп вĕт. Ун пек çынна итлемесĕр тăма юрать-и? Вĕри чул çине тытса лартсан! Мен тăвăн унпа, ухмахпа! Тĕшĕрĕлсе ансан тин тухса сулланчĕ, пĕтменскер!

Толя тек чăтаймарĕ. Мĕнпур кĕлеткипе каялла сулăна-сулăна, хыттăн ахăлтатма тытăнчĕ. Тăруках нимĕн те ăнланса илеймен Капуста малтан Толя çине, унтан сасăсăр чĕтренсе кулакан Игорь çине пăхрĕ те сасартăках çилленсе кайрĕ.

— Вĕлеретĕн вĕт çынна, ухмах! «Çап! Çап!» — витлесе илчĕ вăл.— Сапа лайăх упта çухăрашса тăма! Сивĕ шыва хăв аллуна çавăрса илтĕн те вĕçĕмсĕр пуçна йĕпетсе тăтăн!

Игорь, чăн-чăн артист тейĕн, çавăнтах куллине путарса, тарăхнă Иван Степанович çине тĕлĕннĕн пăхса илчĕ:

— Вăт этем! Малтан çапăнма килĕшменшĕн кӳренет, халĕ çапăннăшăн хирĕлет. Тĕлĕнтермĕш!

Толя вĕсем тавлашнине итлесе лармарĕ. Пуçланă çырăва çырса пĕтерес тесе, васкасах çăвăнчĕ, тумланчĕ те палатка еннелле утрĕ. Çыру çырасси пулмарĕ, шăмшак йывăрланнине туйса, тумне хыврĕ, пуçне минтер çине хурсанах, куçĕ хупăнчĕ. Каччă тарăн ыйха путрĕ.

Хăлхана ĕçрен килнĕ çынсем шавласа калаçни пыра-пыра кĕчĕ, унтан хĕрарăм сасси илтĕнчĕ. Тахăшĕ: «Пуртте сывах, Татьяна Ивановна... Алă-и? Ыратмасть, тӳрленчĕ»,— терĕ. Каччă темиçе хут та куçне уçма хăтланчĕ, анчах тутлă ыйха çĕнтерме пултараймарĕ.

## III

Толя вăранчĕ, хăй ăçтине тăруках аса илеймесĕр, пуçне çĕклесе, йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ. Палатка. Ретĕн ларакан кравацсем çинче палламан çынсем çывăраççĕ. Чӳрече умĕнче ӳсекен хурăн çулçисем хĕвелпе йăлтăрта-

таҫҫӗ. Каччӑ тӑрса ларчӗ, пукан ҫине ҫакнӑ гимнастерка кӗсйинчен сехетне кӑларса пӑхрӗ. Улттӑ кӑна ҫитет-ха. Ҫывӑрас пулать. Выртса, каллех куҫне хупрӗ.

— Толя!

Игорь, ҫӑмӑллӑн сиксе тӑрса, тусӗ ҫумне пырса ларчӗ.

— Мӗншӗн ҫывӑрмастӑн? — шӑппӑн ыйтрӗ Толя, куҫне уҫса.

— Эпӗ паҫӑрах вӑраннӑ. Ҫӗнӗ вырӑнтан пулӗ-ши, ыйхӑ килмест. Колыма ҫинчен шухӑшласа выртрӑм. Интереслӗ, пумай-ши ҫак вырӑнсенче ылтӑн? Кам пӗлет, тен, эпир халӗ ун ҫинчех ларатпӑр, ун ҫийӗнчех утса ҫӳретпӗр? Эх, тупасчӗ манӑн пӗр пуян вырӑн!

— Ш-ш-ш! — хулран тытрӗ ӑна тусӗ.

Сапаланчӑк ҫӳҫлӗ хура пуҫ минтер ҫинчен ҫӗкленчӗ те, такама шыранӑ евӗр, йӗри-тавра пӑхкаларӗ, вара, кӑмӑлсӑррӑн тем мӑкӑртатса, каллех выртрӗ.

— Атя тухар! — пӑшӑлтатрӗ Толя. Шӑппӑн тумланчӗҫ. Алшӑллисем илчӗҫ те, чӗрне вӗҫҫӗн утса, палатка алӑкне уҫрӗҫ.

Сӑрт-ту хыҫӗпе кармашса пахакан хӗвел ҫерлехи сивве хуса яма ӗлкӗреймен-ха. Халӗ ӑшӑ вырӑн ҫинчен тӑнӑ ӳт-пӗве чылаях ҫӳҫентерет. Ҫывӑхри сопка ҫумӗпе ирхи шурӑ пӗлӗт таткисем шӑваҫҫӗ. Сухахэ икӗ хӗррипе те вӗҫӗмсӗр тӑсӑлакан сӑртсем ҫийӗн кӑвак тӗтре явӑнать.

— Сывлӑшӗ мӗн тери таса, мӗнле ырӑ шӑршлӑ! — Игорь, кӑкӑр тулли сывласа, йӗри-тавра пӑхса илчӗ.— Лиственница йӗпписене кӑларать. Малтанхи чечексем ҫурӑлаҫҫӗ. Ҫутҫанталӑк, ҫутҫанталӑк, ытла та илемлӗ-ҫке эсӗ!

— Мана вара кунти вырӑнсем пӗрре те килӗшмеҫҫӗ,— терӗ Толя, умри чул катӑкне атӑ вӗҫӗпе тӗртсе.— Йӗри-тавра сӑрт-ту ҫеҫ. Куҫа ирӗк ҫук. Чуна тӑвӑр. Эх, вӗҫӗ-хӗррисӗр ирӗклӗ хире тухса сулса ярӑттӑм халӗ ҫавана!

— Вальӑпа юнашар тӑрса-и?

Толя чӗнмерӗ. Темиҫе пин ҫухрӑмра пурнакан юратнӑ хӗрне курас пек, таҫта инҫете, хӗвеланӑҫнелле тунсӑхлӑн тинкерчӗ...

— Сисмен ку таранччен эсӗ унпӑн ҫапла ҫунниие,— терӗ Игорь, тусӗн шухӑша кайнӑ хавассӑр пичӗ-куҫӗ ҫине пӑхса.— Вӑт мур юратӑвӗ.

— Хуллентерех, ҫын килет,— чарчӗ ӑна Толя.

Утма ҫулпа каччӑсене хирӗҫ, пысӑк аттисене йывӑррӑн сӗтӗркелесе, ҫӳллӗ йӗкӗт юханшыв хӗрринелле утать. Шыв ӑсма анать пулас, аллисенче мӑшӑр витре. Туссене курсан, вӑл аякранах йӑлкӑшса кулчӗ.

— Алло! Салам Аврора тусĕсене! Мĕн çывăрма пĕлместĕр çак эсир?

— Салам! — терĕ Игорь.— Эсĕ ху тата мĕн тума ирех тăрса тухрăн?

— Дежурнăй. Апат пĕçермелле манăн,— пĕлтерчĕ каччă юлхавлăн. Вăл витрисене лартрĕ те Тольăна алă пачĕ.

— Михаил Анин... Ох, çывăртăр вара ĕнер. Вилнĕ пекех. Каçхи апат çиме те тăмарăр,— терĕ вăл, каччăсене кăмăллăн сăнаса пăхса.

Миша çамрăк. Куçĕсем пысăк, çурхи тӳпе пек кăн-кăвак, куç хăрпăкĕсем çăра, вăрăм. Анчах кĕлетки çинçешке те илемсĕр, тăсланкă. Тураса якатман çырă çӳçĕ, пайăркан-пайăркан усăнса, çамкине хупласа тăрать. Туссем иккĕшĕ те питĕ типтерлĕ, çăт-çăт тумланнине курса, вăл сасартăках аванмарланчĕ, çӳçне шăлкаласа илчĕ, кĕпе çуххине тӳмелерĕ.

— Хăнăхнă та эпир кунта, сĕм вăрманта,— мăкăртатрĕ вăл именчĕклĕн. Витрисене илчĕ те кайма васкарĕ.

Каярахпа вичĕ каччă çатăртатса çунакан кăвайт умĕнче каласса ларчĕ.

— Омскран эпĕ,— хуравларĕ Миша сăмах майĕн.— Кунта ĕçлеме тытăнни уйăх çурă кăна-ха. Эпир те иккĕн килтĕмĕр. Пĕр заводра, пĕр цехра ĕçлеттĕмĕр. Пушă вăхăта та час-часах пĕрле ирттереттĕмĕр... Пултаруллă, маттур пек туйăнатчĕ вăл мана ун чух. Çывăх юлташ, тус тесе шутлаттăм ăна. «Атя Çурçĕре, Магадана каятпăр»,— терĕ пĕррехинче. «Мĕн тума?» — ыйтрăм эпĕ. «Ĕçлеме. Чăн-чăн пурнăçа курма. Пывăрлăхсемпе кĕрешме»,— терĕ. Мана ун сĕнĕвĕ килĕшрĕ. Чăн та, атте-анне патĕнче пурăнса, ăшă, çутă цехра ĕçлеме кам пултараймасть? Ĕнентĕм эпĕ ăна. Килтĕмĕр... Вунă кун та ĕçлеймерĕ... — Мишăн илемлĕ кăвак куçĕсем тĕксĕмленчĕç, çăра куç хăрпăкĕсем чĕтренсе, çине-çинех хупăнса илчĕç. Капланса килнĕ кӳренӳ куççульне пытарса, вăл вăртах пăрăнчĕ, умра выртакан вăрăм патака ярса тытса, ахаль те ялкăшсах çунакан кăвайта темиçе хутчен çиллессĕн пăтратса илчĕ.

— Халĕ район центрĕнче, Ягоднăйра пурăнать,— юрнех сӳрĕккĕн каларĕ вăл.— Нумаях пулмасть военкомата кайсан куртăм. «Кил, мĕн асапланса пурăнатăн çав сĕм вăрманта? — тет. —Ĕçĕ те кунта тем чухлех. Лайăх çĕре вырнаçма пулăшатăп»,— тет... Намăс ăна халĕ. Вăл мана та хăй пек тăвасшăн. Çу-ук! Михаил Анин унашкал лĕнчĕрленчĕр çын мар. Ăна ĕненме, шанма пулать.

«Лĕнчĕр-ленчĕр... Каяс пулсан, ман çинчен те çапла калаççĕ ĕнтĕ»,— шухăшласа илчĕ Толя. Вара хăй шухă-

шĕнчен хăй тĕлĕнчĕ. Ăçтан сиксе тухрĕ-ха кунашкал шухăш?

Куç харшийĕсене кăмăлсăррăн пĕркелесе, Миша сăмахне малалла тăсрĕ.

— Эпĕ çапла шутлатăп... Сăмах парсан, тытма пĕл. Темле йывăр пулсан та, чăт, ан чак. Çакă вăл пурнăçра чи кирли. Тĕрĕс калатăп-и?

— Тĕрĕс, Миша,— терĕ Толя.— Тĕрĕс шутлатăн эсĕ.

Игорь те чĕнмесĕр пуçне сĕлтсе илчĕ. Хăйне пăлхантаракан шухăша Мишăн пĕтĕмпех каласа парас килчĕ пулас. Пуçланă сăмаха вăл каллех малалла шутарчĕ:

— «Пурнăçран юлатăн унта»,— тет. Курăпăр-ха, хăшĕ юлĕ. Акă пăхăр,— Миша кăкăр кĕсйинчен симĕс хуплашкаллă пĕчĕк блокнот кăларчĕ.— Ют сăмахсен словарĕ... Инсинуация, фиаско, идиллия... Халлĕхе пурĕ виççĕр сăмах. Çитес уйăх укçипе костюм илсен, юри калаçмах каятăп. Курса тĕлĕнтĕр-ха таежниксем пурнăçран епле юлнине. Каллех ӳкĕтлеме, астарма тытăнать ĕнтĕ. Ун чух калатăп вара. «Ĕçе кĕме мана сан протекцию кирлĕ мар. Эпĕ хамах вырнаçма пултаратăп. Анчах тайгаран ниçта та каймастăп. Тек санпа пĕрле пулса ятăма яма шутламастăп. Эсĕ фанфарон вĕт!» Çапла калатăп та çаврăнса утатăп. Ой, тĕлĕннипе епле чарса пăрахĕ-ши алтăр пек куçне! Ха-ха-ха! — Миша хаваслăн ахăлтатса кулса ячĕ. Игорьпе Толя та кăмăллăн йăлкăшса илчĕç.

Толя Миша блокнотне уçа-уça пăхкаласа ларчĕ.

— Санăн кунта сăвăсем те пур иккен.

— Пĕр сăвă çеç.

— Юрату çинчен-и? — хавхаланчĕ Игорь.— Вула-ха, Толя, итлем.

— Çук, юрату çинчен мар. Ман шухăшсем, ĕмĕтсем çинчен вăл,— терĕ Миша пĕр кулмасăр.— Эпĕ ăна пăхмасăрах пĕлетĕп. Итлĕр.

Вăл ӳсĕрсе илчĕ, тӳрленсе ларчĕ, куçне пĕр çĕре тĕллесе, васкамасăр калама пуçларĕ:

И пусть звенят морозы злые —
Все выше факелы костров.
Здесь мы творим дела такие,
Что не страшимся громких слов.

Не присягали мы на верность,
И наша жизнь — не напоказ.
Здесь мы не думаем про вечность —
Пусть вечность думает про нас!

Игорь Миша çине тĕлĕнсе пăхрĕ.

— Нивушлĕ хăвах çыртăн?

— Çук,— имение пек пулчĕ Миша.— Кĕнекерен. Магадан издательстви кăларнăскер. Нумай пулмасть илтĕм. Аркадий Малашенко сăввисем.

— Вулама паратăн-и? — ыйтрĕ Игорь.

— Паллах,— пуçне хаваслăн сулчĕ Миша.— Манăн сăвă кĕнеки темиçе те.

Толя та кăмăлларĕ Мишăна. Лайăх каччă. Анчах çулĕпе кăна мар, шухăш-кăмăлĕпе те çамрăк-ха.

— Ют сăмахсене пĕлме кирлĕ ĕнтĕ,— терĕ Толя, блокнота каялла парса.— Анчах ку сахал, Миша. Чăннипех пурнăçран юлас темесен, вĕренес пулать. Миçе класс пĕтернĕ эсĕ?

— Саккăр. Вăл та саккăр çеç...

— Малалла вĕренес пирки мĕн шутлатăн? Вăтам шкул е техникум пĕтерес пулсан, э?

Миша тăруках чĕнмерĕ.

— Кунта ăçтан вĕренен? — терĕ вăл кăмăлсăррăн.— Пĕр палаткăра миçен пурăнатпăр та. Электричество çук. Краççын çутинче çав йышпа нумаях вĕренеймĕн.

— Вĕренекенсем пур тенĕ пек илтрĕм-ха эпĕ,— хирĕçлерĕ Толя.

— Пур пĕрре. Володя... Анчах унпа ăçтан танлашан? Вăл çынни урăх йышши. Уншăн пулсан, туй ту, вăл пурĕпĕр вуласа ăнланма пултарать. Çĕрле те темччен ларать, ирхине те пуринчен малтан тăрать, ĕçленĕ чух та урок вĕренет. «Мĕн мăкăртататăн çак?» — тесе ыйтсан, «Вуланине аса илетĕп-ха»,— тет.

Хĕвел нумаях çӳле çĕкленнĕ ĕнтĕ. Айлăмсенче талккăшпех тăсăлакан ту мĕлкийĕсем халĕ чылаях пĕчĕкленсе кĕскелнĕ. Хĕвел çутатнă тавралăхра вĕсем уйрăм саплăксем пек курăнса выртаççĕ.

Тайга та вăранчĕ. Авă çывăхри йывăç турачĕсем çинче пакшан хура çурăмĕ вĕлтлетсе илчĕ. Унччен те пулмарĕ, пысăк çуначĕсене сулмаклăн вăшлаттарса, пуç çийĕнех ăмăрткайăк вĕçсе иртрĕ.

Игорь, пуçне каçăртса, ун хыççăн пăхса юлчĕ.

— Толя, çав сопка çине хăпарса курас килмест-и санăн? — ыйтрĕ вăл.— Атя кайса килетпĕр.

Тольăн пуçланă калаçăва татас килмерĕ.

— Эсĕ кай, Игорь. Манăн паян темшĕн çӳреме пĕр кăмăл та çук... Апла Володя çеç вĕренет çак пысăк йышра?— терĕ вăл Мишăпа иккĕшех юлсан.— Маттур! Паллах, пурте ун пек пултараймаççĕ ĕнтĕ. Анчах мĕншĕн вĕренме май çук тетĕн-ха эсĕ? Ман шутпа, çине тăни кăна кирлĕ. Тепĕр виçĕ уйăхран сивĕтет. Ун чух пурăнма палаткăсен-

чен çуртсене куçатпăр. Михаил Васильевич кашнинче ултă-çичĕ çынран ытла пулмасть терĕ. Апла вĕренес текенсене пĕр çурта вырнаçтармалла кăна. Çутă çинчен калаçмалли те çук. Кирлĕ пулсан, кашнин валлиех лампа туянма пулать. Эпĕ хам та кăçал института кĕме заявлени ярас тетĕп.

Миша шухăша кайрĕ.

— Ха,— терĕ вăл, ăшшăн кулса.— Чăн та...

Анчах тем аса илчĕ пулас, самантрах унăн çамки кăмăлсăррăн картланчĕ, кăн-кăвак куçĕ тĕксĕмленчĕ. Вăл Толя çине хăвăрттăн пăхса илчĕ те темшĕн тăруках айккинелле пăрăнса ларчĕ.

— Сăмахпа эпир пурте маттур, тем те тăватпăр,— хуллен, хăй ăссĕн мăкăртатрĕ вăл.— Пурăнса пăхар-ха, курăпăр.

Çав самантра палатка алăкĕ уçăлчĕ те, шап-шурă алшăллине хулпуççи урлă çакнă патвар арçын тухрĕ.

— Салам! — терĕ вăл çирĕп уçă сасăпа.— Çĕнĕ çынсемпе паллашиччен малтан çăвăнса тасалас пулĕ,— илемлĕ шурă шăлĕсене кăтартса, вăл кăмăллăн йăлкăшса кулчĕ те пысăк йывăç çумне çакса янă умывальник патне утрĕ.

— Кам пулчĕ ку?

— Миргалим. Завхоз,— кĕскен ăнлантарчĕ Миша.

Темиçе минутран, йĕпеннĕ хуп-хура çӳçне туракаласа, завхоз каччăсем патне пычĕ.

— Паллашма ирĕк парăр. Миргалим Багаутдинов,— вăл çемçе аллине Толя еннелле тăсрĕ.— Ĕнер курса калаçма май килмерĕ. Отчетпа лартăм.

«Ну, мĕнле?..» «Ăçтан?..» тата ытти çавăн евĕрлĕ ыйтусемпе перкелешкеленĕ хыççăн Миргалим чĕнмесĕр итлесе ларакан Миша енне çаврăнчĕ.

— Мĕн пĕçеретĕн, дежурнăй?

— Пăтă пиçрĕ акă. Кăнтăрла валли купăста яшки.

— Пăтă, яшка... Вĕçĕмсĕр пĕр апат,— терĕ Миргалим кăмăлсăррăн.— Эх, хăçан çынсем пек йĕркеллĕ пурăнакан пулас? Хамран хам тĕлĕнетĕп,— Миргалим каллех Толя çине пăхса илчĕ,— мĕн тесе пурăнатăп-ши эпĕ çак сĕм тайгара? Суту-илӳ техникумĕ пĕтернĕ вĕт. Стаж та çителĕклĕ, опыт та сахал мар. Кирлĕ пулсан, паянах ăçта чун кăмăллать, çавăнта ĕçе кĕме пултаратăп. Пур енчен те чĕнеççĕ. Çук, тайгасăр пуçне урăх ниçта та каяс килмест манăн.

Миргалим çине пăхма кăмăллă. Çийĕнче таса пурçăн майка, çĕнех мар, анчах типтерлĕ якатнă шăлавар. Сар-

лака питне яп-яках хырнă, кăшт хĕсĕкрех хура куçĕсем хăюллă, илемлĕ.

— Мухтанса каламастăп,— тет вăл, тап-таса çутă чĕрнисене пăхкаласа,— ĕçлекенсем кăмăллаççĕ мана. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен эпĕ пур çĕртс те, пур чухне те вĕсене ырă тăвасшăн, вĕсем валли тутлăрах апат-çимĕç илсе килесшĕн тăрăшатăп. Халлĕхе, хăвăрах куратăр, базăран пире типĕтнĕ пахчаçимĕç, консервланă аш-какай кăна параççĕ. Эпĕ вара,— Миргалим, тăруках хавхаланса кайса, аллине шартлаттарса çапрĕ,— çак кунсенчех чĕрĕ какай, çĕрулми илсе килетĕп. Нумай чупмалла пулчĕ, çапах хам шутланине турăмах. Ĕç йывăр кунта, çиччĕр лайăхрах.

Палатка алăкĕ каллех уçăлчĕ. Малтан иккĕн, унтан тата темиçе çын тухрĕç. Хăшĕ-пĕри вут умĕнче ларакан юлташĕсем патне пырса тăчĕ, теприсем çăвăнма е вăрманалла утрĕç.

— Володя текенни хăшĕ? — шăппăн ыйтрĕ Толя Мишăран.

— Авă, шур майкăлли. Çăвăнма пырса тăчĕ.

«Пăхма нимĕн те мар. Ни кĕлетки-çурăмĕ, ни илемĕ. Анчах çирĕп кăмăллă çын пулас вăл»,— шухăшларĕ Толя, çамрăк çине хисеплесе пăхса.

## IV

Апат çиме лариччен те, сĕтел хушшинче те, сарлака хулпуççиллĕ лутака каччă пĕрре те калаçăва хутшăнмарĕ. Юлташĕсем ун-куншăн ахăлтатнă чух та пикенсех чăмларĕ. Вăл пуриччен малтан сĕтел хушшинчен тухрĕ, ĕçри тумне, карттусне васкаса тăхăнчĕ те, каяс тесе алăк хăлăпĕнчен тытрĕ кăна — ăна хирĕç прораб васкаса кĕчĕ.

— Сывлăх сунатăп, юлташсем! Мĕнле çывăртăр? Пурте сывах-и?

— Тавтапуç, Михаил Васильевич, — терĕ Миргалим.

— Пурте Геркулес пекех сывлăхлă,— хушса хучĕ Миша.

— Григорий, тăхта-ха, ан тухса кай,— чарчĕ инженер чĕмсĕр качча.— Калаçмалли пур.

Алăк хăлăпĕнчен тытса тăракан Гриша, прораб мĕн каласса кĕтсе, ун çине пăхса илчĕ.

— Эсир тăваттăн ĕçлетĕр вĕт? Паянтан тата тепĕр звено хутшăнать. Тольăпа Игоре ху патна илетĕн.

Гриша чĕнмерĕ. Тем шухăша кайнăн, сылтăм атти пуçне выляткаласа, ун çине пăхса тăчĕ.

— Ĕçлеччĕр иккĕшĕ,— терĕ вăл вăрахран, пуçне çĕклемесĕр.

— Мĕн?!

Каччă çаплах, урн çине пăхкаласа, хускалмасăр тăчĕ, унтан алăка çиллессĕн тĕртсе уçрĕ те тухрĕ.

Тольăн хура куç харшийĕсем кăмăлсăррăн турткаланса илчĕç. Кӳреннĕ Игорь малтан прораб, унтан юлташĕсем çине пăхса илчĕ. Пĕр вăхăт шăп пулчĕ.

— Хăй чухлĕ ĕçлеймесрен хăрать ĕнтĕ,— çурма сасăпа каларĕ тахăшĕ.

— Пулать унăн тепĕр чух чăхăмласси,— терĕ Михаил Васильевич.— Кăштах шухăшласан, ăнланса илет акă. Спецтумтирсем пур-и сирĕн? — сăмаха тăруках урăх енне пăрса ыйтрĕ вăл Игорьпе Тольăран.— Миргалим...

— Халех паратăп,— терĕ завхоз.— Хăйсене виçеллине суйласа илччĕр тесе... Ĕнер çывăраççĕ те, вăратас темерĕм. Атьăр, пырса илĕр.

Ансăр сукмакпа çамрăксем склад еннелле утрĕç.

— Кӳрентерчĕ апла сире Гриша? — терĕ Миргалим, туссем çине куларах пăхса.— Çак юлашки çулсенче пăсăлчĕ унăн кăмăлĕ.

Миргалимăн хура куçĕсем хаваслăн йăлкăшаççĕ, çӳхе тути кĕç-вĕç кулса ярас пек хуллен сиккелет.

— Мĕн пулнă вара? — ыйтрĕ Игорь.

— Хăйне ан калăрах,— Миргалим йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ.— Питĕ çиллепет вăл çавăн çинчен асăнсан. Çынни мĕнлине куртăр ĕнтĕ. Эрнере пĕр сăмах те калать, те каламасть,— завхоз каллех лăхлатса илчĕ.— Виçĕ çул каялла авланма шут тытнă çавă. Пĕр хĕрпе çыру çырса тăнă вĕсем. Паллашасса та хут урлă паллашнă, тет. Хут çинче сăмахне шеллемен пулĕ çав, унта сасăпа калаçмалла мар-çке. Килĕшнĕ хĕрĕ. Иккĕшĕ пĕрлешсе пурăнма калаçса татăлнă. Акă хайхи хĕртен телеграмма килчĕ. Гриша лаша кӳлчĕ те хирес илме кайрĕ. Ун чух эпир, хальхи пекех, трассăран инçех мар ĕçлеттĕмĕр. Тухать хайхи пике автобусран, пăхать йĕри-тавра — кĕтсе илекен çук. Гриши вара аллă-утмăл метрта çуна çинчен пăхса ларать, тет. Пырса тăрать хĕр ун патне.

— Эсир мана кĕтместĕрччĕ-и? Манăн çавăнта каймалла та...

Гриша чĕнмест, чăнах çаплине пĕлтерсе, пуçне сĕлтсе илет кăна. Вунпилĕк çухрăм юнашар ларса пынă вĕсем... Ну, мĕн те пулин каличчĕ хăть, шăл шурри те кăтартман вĕт.

— Чăнах çаплах пулнă-и? — çамрăксем ахăлтатса кулса ячĕç.

— Пĕр сăмах та хушса каламастăп.

— Тĕлĕнтермĕш! Ой, Гриша! Ой, çамрăк упăшка! — чарăнма пĕлмесĕр кулчĕ Игорь.— Вара?

— Вырăна çитсен пĕлет хĕр вăл мĕнлерехскер пулнине. Эрне пурăнчĕ-и, кăшт ытларах-и, чăтаймарĕ, тухса кайрĕ.

— Миргалим Багаутдинович,— илтĕнчĕ çав самантрах сасă. Йывăç тĕмисене сиркелесе, каччăсен умне вăтам пӳллĕ хĕрарăм тухса тăчĕ. Çамрăк мар пулин те, вăл килĕшӳллĕ сăн-питлĕ. Хĕвелпе пиçнĕ пичĕ çинче пĕр пĕркеленчĕк те çук. Çырă çӳçне тирпейлĕн пуçтарса çыхнă. Кăвак куçĕ кăмăллă.

— Хисеплĕ Татьяна Ивановна, салам! — терĕ Миргалим. Çăмăл кулăпа йăлкăшса, вăл хĕрарăма хирĕç утрĕ.— Мĕн туса усă кӳме пултарăп-ши?

— Базăна каятăр-и паян? Исакова курма тăрăшăр-ха. Эмелсем илсе парса ятăр. Акă хут. Мĕн кирлине çырнă унта.

— Юрать, Татьяна Ивановна. Чи малтан эсир ыйтнине тума тăрăшăп. Урăхла пулма та пултараймасть. Пĕртенпĕр хĕрарăм, эсир пирĕншĕн çутă хĕвел пекех хаклă-çке.

— Ах, Миргалим! — кăмăллăн кулса, пуçне сулкаларĕ Татьяна Ивановна.— Чĕлхĕр çу пекех вара. Юрать çамрăк мар. Унсăрăн тахçанах чĕреме çухатнă пулăттăм.

Унтан вăл чĕнмесĕр итлесе тăракан каччăсем çине ăшшăн тинкерсе пăхрĕ.

— Çар службинчен тӳрех кунта килтĕр апла? Киле кайса курас темерĕр-и?.. Пирĕн Вадик та кĕркунне таврăнмалла та. Те килет ĕнтĕ, те вăл та ăçта та пулин кайса вырнаçать. Атте-анне пĕчĕк чух çеç кирлĕ çав,— йывăррăн сывласа ячĕ хĕрарăм.

Каччăсем пуçĕсене усрĕç. Толя амăшне аса илчĕ. Вăл та çаплах тунсăхлать ĕнтĕ.

«Каçар, анне, кӳрентертĕм пулсан»,— шухăшларĕ вăл, Татьяна Ивановна хыççăн салхуллă куçĕсемпе пăхса.

Шурă брезентран çĕленĕ шалпар тум тăхăннă каччăсем ĕçленĕ çĕре çулсăр-мĕнсĕрех пырса тухрĕç. Вăрмана икĕ метр сарлакăш касса тухнă прачак пысăк чуллă сăрт патĕнчен пуçланать те, Сухаҳэ урлă каçса, тепĕр сопка патне çитиех тăсăлать. Ун тăршшĕпех сакăр-тăхăр метр тарăнăш чавнă шурфсем. Кашнин тавраллах чуллă-хăйăрлă пысăках мар кăвак тăм куписем.

— Ылтăн тăпри,— терĕ Толя иртсе пынă май.— Кусем тата мĕн тума-ши? — ыйтрĕ вăл, пĕр пек татса-çурса купаланă пысăк пуленкеллĕ вутă шаршанĕсем çине кăтартса.

— Шурф ншӗлсе анасран тӗкӗлесе ҫирӗплетме,— хуравларӗ Игорь.

— Ăҫтан пӗлетӗн эсӗ?

— Ӗнер килсе куртăм.

Ҫынсем ӗҫе тытăннă ӗнтӗ. Хашӗ-пӗри тарăн шурф патӗнче тăрмашать, теприсем тин ҫӗҫ чавма тытăнаҫҫӗ, виҫҫӗмӗшсем шăтăкран шăн ҫӗр катăкӗсем тултарнă сарлака бадьяна, кулатаран тулли шыв витри кăларнă пек, ҫавăрса кăларса тăкаҫҫӗ.

— Кунта! Кунта килӗр! — аякранах кăшкăрчӗ Михаил Васильевич йӗри-тавра пăхкаласа утакан ҫамрăксене.— Ҫакăнта ӗҫлемелле сирӗн,— терӗ вăл, каччăсем пырса тăрсан.— Авă, йӗркипе тăрăнтарса кайнă шурă патаксене куратăр-и? Вӗсен вырăнӗнче шурфсем пулмалла. Виҫсе парам-ха. Метр та ҫирӗм сантиметр — ку тăршшӗ, урлăшӗ — пӗр метр пулать. Чавнă чух ҫак виҫене яланах асра тытмалла. Кӗреҫепе, лумпа ӗҫлеме пӗлетӗр-и? Апла пулсан, аптрамастăр. Шурфовщиксем звеносене уйрăлаҫҫӗ. Кашнинче виҫӗ ҫын. Асли Гриша пулать,— инженер, ҫурăмпа тăрса, чуллă ҫӗре пикенсех лумпа хирекен шурфовщик ҫине пăхса илчӗ. Хыпăнчăк Михаил Васильевич ӗҫ йӗркине васкамасăр, тӗплӗн ăнлантарса пачӗ.

— Пуринчен ытла ҫӗр сирпӗтнӗ чух питех те сыхлануллă пулăр.

— Михаил Васильевич, эпӗ ăнланаймарăм-ха. Ҫӗре аммоналпа сирпӗтетпӗр пулсан, ăна мӗншӗн алăпа чавмалла? — ыйтрӗ Толя, прораб каласа пӗтерсен.

— Алăпа чавса вырăн тумасан, аммонала ăҫта хурас тетӗн? Ҫӗр ҫийӗ хулăнрах сирпӗнтӗр тесен, ăна хире-хирӗҫ шăтăксене тарăнрах чавса хумалла. Ăнлантăр-и? — сехечӗ ҫине пăхса илчӗ инженер.— Тен, часах ҫаврăнса килеймӗп. Магаданпа калаҫмалла. Хăш вăхăтра чӗнессине пӗлместӗп. Ыйтса пӗлмеллисем пулсан, Гриша ăнлантарса парӗ.

Шурфовщик ӗҫӗ питӗ йывăр. Ҫур метра яхăн чавсанах, кӗреҫе шăн ҫӗре пырса тăрăнать. Малалла лумпа е кайлопа ӗҫлемелле. Темиҫе ӗмӗр тăршшӗ пирченсе, шăнса выртнă чуллă ҫӗр парăнасшăн мар. Пиншер ҫул пытарса усранă пуянлăха вăл вăр-варах ҫынна кăларса пама васкамасть. Пӗтӗм вăя хурса ҫапсан та, упăн сийӗ пӗчӗккӗн, ирӗксӗррӗн кăна хăйпăнать. Ҫавăн пек ӗҫе хăнăхман алăсене алса тăхăнни те пулăшмарӗ, вӗсем кӗҫех хӗрелсе хăпарса тухрӗҫ. Пӗр-икӗ сехет ӗҫлесен, каччăсем халран кайрӗҫ.

— Толя,— терӗ Игорь, юлташӗ патне пырса.— Урăх

пултараймастăп. Вăй-хал çитмест,— вăл пăрăнчĕ те çатрака купи патне пырса ларчĕ.

Толя малтан тусĕ енне, унтан юнашарах тĕрмешекен Гриша çине пăхса илчĕ, тарланă çамкине шăлса типĕтрĕ, карттусне хывса тăхăнчĕ. Игорьтен кая мар ывăннă пулин те, вăл ăна хавхалантарма тăрăшрĕ.

— Эсĕ ывăнни çинчен ан шухăшла. Апла çăмăлтарах. Пăх-ха йĕри-тавра. Пурте ĕçлеççĕ, канакан çук. Эпир авă çурри те чаваймастпăр. Сисместĕн-и, Гриша сивĕ куçпа çаврăна-çаврăна пăхать? Темле йывăр пулсан та, тимлесех ĕçлемелле пирĕн.

Игорь ахлата-ахлата тăчĕ, ыратакан пилĕкне тытса, каллех хăй вырăнне пычĕ, хĕмленекен аллисем çине пăхса хаш! та хаш! сывларĕ.

«Мĕнле питĕ хăвăрт чавать-ха вăл? — шухăшларĕ Толя, Григорие сăнаса.— Темĕн чухлĕ васкасан та, манăн пулмасть-çке ун чухлĕ. Игорĕ тата. Унăн, пăйкăшса, чуна вĕчĕрхентерес марччĕ».

Акă хавасла шăхлич сасси янраса кайрĕ. Ывăннă каччăсем çăмăллăн сывласа ячĕç. Тарăн шурфсенчен, воротоксене васкаса çавăрса, çынсене кăларма тытăнчĕç. Пилĕк-ултă минутран шурфсенче пĕр çын та юлмарĕ.

Кĕçех çĕре кисретсе, çине-çинех виçĕ хутчен хăватлă сасă кĕрлесе илчĕ. Вакланнă шăн çĕр, шурфран сирпĕнсе тухса, темиçе метр çӳллĕш тӳпенелле çĕкленчĕ.

Кун каçиле çапла темиçе хут та аяккалла кайса тăма тивет. Хăнăхнă çынсем çак вăхăтра канма та, чĕлĕм туртма та ĕлкĕреççĕ. Анчах мĕнпур вăйран васкаса ĕçлекен Тольăпа Игорьшĕн пирвайхи кунсем чăннипех ытла та йывăр пулчĕç.

Гриша кун каçа пĕр сăмах та чĕнмерĕ, çамрăксем çине çаврăнса та пăхмарĕ. Кӳреннĕ каччăсем хăйсем те унран пăрăнма тăрăшрĕç. Ĕç кунĕ вĕçленнĕ тĕле Григорий Корнелюк виçĕ-тăватă метра яхăнах чаврĕ. Тольăпа Игорь вара çын çӳллĕшĕнчен кăна ирттерчĕç.

Акă ĕç кунĕ вĕçленчĕ. Çитсе хăвăртрах вырăн çине тăсăлса выртас ĕмĕтпе Толя юлташĕсемпе пĕрле палаткăсем еннелле утрĕ. Такам хĕненĕ пек пĕтĕм шăмшак пăйкăшать, утнă май çĕр унталла-кунталла сулкаланнăн туйăнать.

Анчах çăвăнса тасалса çне урăх тум тăхăнсанах, каччă хăйне чылаях çăмăл туйрĕ. Вăл, митер çине хунă кĕнекине илсе, вулама ларчĕ. Игорь, ахлата-ахлата, пит-куçне çурĕ те тӳрех вырăн çине йăванчĕ.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, Михаил Васильевич ялахи

пекех васкаса пырса кӗчӗ. Вӑл малтан Игорь, унтан тимлӗн вуласа ларакан Толя ҫине пӑхса илчӗ те, инженерӑн кӑвак куҫӗсем ӑшшӑн йӑлкӑшрӗҫ.

— Михаил Васильевич, мӗнле ӗҫленӗ эпир паян? — ыйтрӗ пӗри. Шурфовщиксем прораб тавра пуҫтарӑнса тӑчӗҫ.

— Аван, юлташсем, аван ӗҫлетӗр,— мухтарӗ прораб. Вӑл тетрадьне уҫрӗ те васкамасӑр вулама тытӑнчӗ:

— Журавлев звени — ҫӗр утмӑл процент. Григорий Корнелюк...

Толя нрӗксӗрех пуҫне усрӗ. «Нивушлӗ ҫур норма та тултараймарӑмӑр? Намӑс!»

— Корнелюк — ҫӗр вӑтӑр виҫӗ процент.

— Охо! — терӗ тахӑшӗ.

— Только звени...

Михаил Васильевич вуласа пӗтерсен, Толя пиншакне хулпуҫҫи ҫине уртса, тула тухрӗ. Пысӑк процент ӑна лӑплантармарӗ. «Охо!» — тенине те каччӑ хӑйне май ӑнланчӗ. «Маттур, Корнелюк, икӗ юлташӗ нимӗн чухлӗ ӗҫлеймерӗҫ пулин те, ҫапах ҫӗр вӑтӑр виҫӗ процента ҫитерне»,— тенине пӗлтерчӗ пулас вӑл.

Кӗсйинчен ҫӗҫӗ кӑларса, Толя вӑрӑм хулӑ касрӗ, ӑна, шитлесе, метра пайларӗ, вара ӗҫленӗ ҫӗре уттарчӗ. Унта виҫрӗ, шутларӗ, каялла кӑмӑллӑ пит-куҫпа таврӑнчӗ.

Халӗ кӑна палаткӑран тухнӑ Михаил Васильевич, ӑна курсан, чарӑнса тӑчӗ.

— Ӑҫта ҫӳретӗр ҫак эсир? Мӗншӗн апат ҫиме кӗместӗр?

— Шурфсене виҫрӗм.

— Вара? — терӗ прораб, каччӑ ҫине куларах пӑхса.

— Метрсӑр тӗрӗс виҫме йывӑр ҫав. Нормӑран кӑштах ирттернӗ пек туйӑнчӗ.

— Мӗншӗн манран ыйтмарӑр? Эпӗ сирӗн шурфсене юри уйрӑм виҫсе ҫыртӑм. Санӑн ҫӗр тӑхӑр процент. Игорьӗн — тӑхӑрвун пӗрре. Малтанлӑха начар мар,— прораб, тетрадьне хутлатса, пиншак кӗсйине чикрӗ.— Ывӑнтӑр-и? — ыйтрӗ вӑл ӑшшӑн.

— Питӗ ывӑнтӑм,— хуллен кулса илчӗ Толя.

— Ӑнланатӑп. Килнӗ ҫул эпӗ хам та кӑштах ӗҫлесе куртӑм шурфовщикра. Хальхи пекех астӑватӑп: малтанхи кун аран-аран вырӑн ҫине сӗтӗрӗнсе ҫитсе выртрӑм... Кӗҫех ҫак йывӑр ӗҫ пӗтет. Шӑн ҫӗре чавакан машинӑсем кунта та илсе килмелле текелеҫҫӗ-ха... Юрӗ, кӗрсе канӑр, тытса тӑрам мар сире.

«Лайӑх ҫын, мӑн кӑмӑллӑ мар,— шухӑшларӗ Толя, ун хыҫҫӑн пӑхса юлса.— Капуста тӗрӗс каларӗ. Питӗ тимлӗ,

ĕçлеттерме те пĕлет. Пĕр звено та çĕр çирĕм процентран сахалрах тултарни çук».

## V

— Игорь! Тăхта кăштах! — чĕнсе илчĕ Толя юлташĕсемпе палатка енне утакан тусне.

Вăл хăяккăн выртакан вороток патне пычĕ.

— Тыт-ха тепĕр пуçĕнчен, вырăна кайса лартар.

— Кам хăвалать каплах? Е ыран кун çук-и? — тĕлĕнчĕ Игорь.

— Ыран валли ыранхи ĕç пур. Мĕн кирлине паянах хатĕрлесе лартар. Килсен вăхăта ан тыттăр. Ĕçлес-тĕк ĕçлес. Мĕншĕн пирĕн малти вырăнта пулмалла мар? Эпир камран кая?

Кĕреçе илсе, Толя ирĕлсе исленнĕ тăм купине сирме тытăнчĕ. Ĕçре тимлĕ çынна кам хисеплемест? Игорь тусне пуринчен ытла çак тимлĕхшĕн, пур ĕçе те çине тăрса тума тăрăшнăшăн юрататъ. Тĕрлĕ туйăмлă икĕ каччă, тепĕр чух вĕсем тавлашса та илеççĕ. Анчах ку сайра пулать. Ытларах туссем пĕр-пĕрне ăнланма тăрăшаççĕ. Халĕ те акă, Тольăпа сăмахсăрах килĕшсе, Игорь ăна пулăшма пикенчĕ.

— Малтанхи кунсенче епле ывăнаттăмăр,— терĕ вăл, ĕçлемелли хатĕр-хатĕрĕ пĕр вырăна пуçтарса хурса.— Хăнăхрăмăр вĕт. Нимĕн те мар халĕ.

— Эсĕ ĕçе кăна мар, ытти йĕркесене те питĕ хăвăрт хăнăхатăн-ха,— тăрăхларĕ Толя.

— Эсĕ куна мĕн пирки? — ăнланаймарĕ Игорь.

— Картла выляма тытăннă пирки.

Вĕсем палатка енне утрĕç.

— Мĕнех вара? — кăмăлсăррăн хирĕçлерĕ Игорь.— Укçалла вылямастпăр вĕт.

— Тĕлĕнетĕп. Çамрăк каччăсем. Вăтăра çитмен пĕри те. Ĕмĕр иккĕ килмест теме юратаççĕ хăйсем. Хаклă вăхăта усăсăр картла выляса ирттереççĕ. Урăх ним шухăш та çук-ши?

Игорь ассăн сывласа илчĕ.

— Мĕн тăвас-ха апла? — тӳрре тухма тăрăшрĕ вăл.— Ăçта кайса кĕрес? Кино çук. Клуб çук, театр çук. Хĕрсем çук! Пĕрмай кĕнеке вуласа лараймăн, йăлăхтарать. Эсĕ, акă, института кайма ĕмĕтленетĕн. Мана вĕренӳ илĕртмест. Эпĕ, сан пек, инженер пулма шутламастăп.

— Инженер пулма çеç вĕренмелле-и? Эх, эсĕ те çав! «Пурнăçа ытларах пĕлес килет, тĕнче курса çӳрес килет»,—

тетĕн тата ху. Кĕнекерен ытла кам уçса кăтартĕ сана тĕнче мĕнлине? Акă Колыманах илер. Мĕн пĕлетпĕр эпир ун çинчен? Сопкăсемсĕр пуçне мĕн куратпăр?..

— Пăх-ха, Толя,— пӳлчĕ Игорь тусне, тăпах чарăнса.— Лини çинче вĕт çавсем,— вăл йывăççем хушшипе курăнакан сынсем çинелле кăтартрĕ.— Мĕн тăваççĕ вĕсем унта?

— Пĕлместĕп. Темле палламан çынсем.

Çамрăксем, сукмакран пăрăнса, Сухахэ урлă каçрĕç, унтан чи малтан чавнă шурфсем патне тухрĕç.

Çыннисем виççĕн. Пĕри шыв тултарнă тăватă кĕтеслĕ сарлака ăшăх тимĕр савăтра тем пăтрататать, тепри çывăхри купаран ылтăн тăприне пысăк ещĕке тултарать, виççĕмĕшĕ алăри вăрăм аврлă ăскăч çине, тем шыранă пек, тинкерсе пăхать.

— Ылтăн çăвакансем,— тавçăрса илчĕ Игорь.

— Салам,— терĕç икĕ каччă, ĕçлекенсем патне пырса.

Лешсем, пуçĕсене çĕклесе, пĕрин хыççăн тепри сывлăх сунчĕç.

— Ну, мĕнле, металл нумай-и? — ыйтрĕ Игорь. Ăскăч тытса тăраканни, çӳллĕ хыткан арçын, хура куçне хĕссе, çамрăксем çине тинкерсе пăхрĕ.

— Мĕн тума кирлĕ вара ку сире? — ыйтрĕ вăл сиввĕнреххĕн.

— Эпир вăрăсем мар, ан хăрăр,— терĕ Толя тăрăхларах, лешĕ çаплах кăмăлсăррăн пăхнине курса.— Кунта ĕçлетпĕр. Колымана килни те икĕ эрне кăна-ха. Çĕр айĕнчен тухакан ылтăн мĕнлине курас килет. Çавăнпа килтĕмĕр.

— А-а! Акă, пăхăр эппин,— ылтăн çăваканĕ аллинчи ăскăчне çамрăксен умне тăсрĕ. Унта, пĕчĕк чул катăкĕсемпе хăйăр хушшинче, ясмăк пек лапчăк, сарă вĕтĕ пĕрчĕсем курăнса выртаççĕ.

— Çакăн пек-и вара ылтăн? — тĕлĕнчĕ Игорь.— Пăхма нимĕн те мар. Эпĕ ăна çĕр айĕнче те çуталса выртать тесе. Каламасан, пĕлес те çук. Хм, интереслĕ... Çак хаклă, чаплă металл та чыслă, ырă çын пек сăпайлă иккен.

Ылтăн çăваканĕ каллех Игорь çине пăхса илчĕ, унтан, ăскăчне ерипен шыва ярса, савăт умне пĕшкĕнчĕ. Ыттисем калаçăва хутшăнмарĕç. Каччăсем вĕсем ĕçленине кăштах пăхса тăчĕç те, сывпуллашса, палаткăсем енне утрĕç.

Алăк хăлăпĕнчен тытсан, Толя, чарăнса, Игорь çине пăхрĕ.

— Ну, мĕн шут тытрăн вĕренме кĕрес пирки?

— Чăн-чăн куршанак эсĕ, Толя,— терĕ тусĕ, ирĕксĕррĕн кулса.— Пĕр çынçăнсан, уйрăлма пĕлместĕн.

Сётел хушшиче хёрсе картла вылякан шурфовщиксем, апат ҫиме пуҫтараннӑ Тольӑпа Игоре, пӑрӑнса, вырӑн пачӗҫ.

— Капуста! Дневальнӑй! — чӗнчӗ Миша, пушӑ бак тӗпне кружкӑпа кӗмсӗртеттерсе.— Каллех шыв ҫук.

Иван Степанович мӑшӑлт та тумарӗ.

— Камӑн ӗҫес килет, ҫав кайса ӑстӑр,— терӗ вӑл юлхавлӑн.— Пурпӗр выляса яратӑн, санӑннах каяс пулать. Кил-ха, вит ҫак карта. Халӗ ак кусене ил. Лайӑх. Офицер ятне парас тетӗп сана,— Иван Степанович Миша хулпуҫҫийӗ ҫине алӑри картне шаплаттарса хучӗ.— Ну, куртӑн-и, Капуста мӗнлине? Мана ҫӗнме пайтах тӑвар ҫиес пулать санӑн, ывӑлӑм. Атя, витре тыт та вӗҫтер шыв патне! Хе-хе-хе! — кулчӗ Иван Степанович.

Миша, пуҫне кӑмӑлсӑррӑн хыҫкаласа, алӑк патнелле утрӗ. Ҫапла калаҫса татӑлнӑ. Нимӗн те тӑваймӑн.

Ӗҫрен таврӑннӑ упӑшки палаткӑна кӗрсен, Татьяна Ивановна кӗнекине хупрӗ, типме сапаласа пӑрахнӑ темле курӑка сётел ҫинчен хӑвӑрт пуҫтарса илчӗ те, нӳрӗ тутӑрпа шӑлса тасатса, ҫӑкӑр, чашӑк-кашӑк хучӗ.

Ҫав самантрах тахӑшӗ алӑка хыттӑн шаккарӗ. Сарлака хулпуҫҫиллӗ, вӑтӑралла ҫывхарнӑ ҫӳллӗ арҫын алӑкран пӗшкӗнсе кӗчӗ. Хӗвелпе тӗссӗрленнӗ карттусне хывса, сапаланчӑк сарӑ ҫӳҫне пысӑк аллипе шӑлса якатрӗ.

— Сывлӑх сунатӑп! — терӗ вӑл хулӑн сасӑпа.

— Салам,— прораб палламан ҫын ҫине сӑнаса пӑхса илчӗ. — Малалла иртсе ларӑр.

Патмар кӗлеткеллӗ арҫын, ку пукан мана чӑтайӗ-ши тенӗ евӗр, ӑна пысӑк аллипе тӗртсе пӑхрӗ, вара тин ларчӗ. Карттусне малтан алӑра йӑваласа пӗтӗркелерӗ, унтан чӗркуҫҫи ҫине хучӗ.

— Хушаматӑм манӑн Козырев,— терӗ вӑл, хуллен ӳсӗрсе илсе.— Нуша хӑваласа килчӗ сирӗн пата. Тӑваттӑмӗш кун ӗҫсӗр ҫапкаланса ҫӳретӗп. Пулӑшмӑр-ши тесе килтӗм,— кӑвак куҫсем прораб ҫине тилмӗрсе пӑхрӗҫ, сарӑ вӑрӑм куҫ харпӑкӗсем хӑвӑрт-хӑвӑрт сиккелерӗҫ.

Михаил Васильевич Козыревӑн докуменчӗсене тимлӗн тишкерчӗ. Калаҫу вӑраха тӑсӑласса систерсе, кӗсйинчен пирус кӑларчӗ. Унтан кӗтесре пӗчӗк сётел ҫине эмел кӗленчисем вырнаҫтарса тӑракан арӑмӗ ҫине пӑхса илчӗ. Лешӗ ӑна пӗр сӑмахсӑрах ӑнланчӗ, кӗленчисем ҫине шапшурӑ марля татӑкӗ витрӗ те тухса кайрӗ...

* * *

Пĕчĕк тĕкĕр умĕнче хыранакан Капуста, кăнтăрлахи апата тавраннă çынсем палаткăна кĕрсенех, вĕсене хирĕç çавранса ларчĕ. Пĕр питне вăл тап-таса хырса тасатнă, теприне бритва тивмен, ун çинче шап-шурă супăнь кăпăкĕ.

— Куртăр-и? — хаваслăн ыйтрĕ вăл, юлташĕсем çине хăвăрт пăхса.— Никама та курмарăр-и иртсе килнĕ чухне? Эх!

— Мĕн пулнă? Кама курмаллаччĕ?

— Çĕнĕ шурфовщик килнĕ — Козырев.

— Вара?

— Пĕччен мар, арăмĕпе.

— А-а,— çамрăксем харăсах кулса ячĕç.— Çавăнпа хыранас тетĕн пулĕ ĕнтĕ. Якал, якал!

— Мĕн тери чипер хĕрарăм! — Капуста тутине чаплаттарса илчĕ.— Çамрăк, çирĕме те çитнĕ, те çитмен. Куçĕсем çăлтăр пек çунаççĕ. Пичĕ вара... Ну, мĕнле калас сире? Халĕ кăна çуралакан роза чечекĕ евĕр. Пĕвĕ, пĕвĕ тата! Ох!

— Ну, Капуста! Илтетĕр-и, епле шăрантарать чĕлхи! «Çăлтăр пек... Роза чечекĕ евĕр!» Поэт тейĕн. Хĕрарăм мĕн тăвать, э?

— Ĕненместĕр-и? Авă Миргалим килчĕ, ыйтăр эппин унран...

Миргалим, кулкаласа, Иван Степановича хулпуççийĕнчен тĕртсе илчĕ.

— Туять иккен кушак аçи какай шăршине. Асту...

Вăл каласа пĕтереймерĕ. Чӳрече патĕнче ларакан Миша ура çине сиксе тăчĕ.

— Авă! Авă иртсе пырать! Хăвăртрах килĕр! — терĕ вăл, тулалла пăхса.

Пурте чӳрече патне ыткăнчĕç.

— Ăçта? Эй, мур! Иртсе кайрĕ,— терĕ Игорь, пуçне хыçкаласа.— Пĕвĕ, чăн та, илемлĕ вара...

— Пĕвĕ çеç-и? Сăн-питне курасчĕ санăн. Ун чух мĕн калăттăн...

— М-да! — терĕ Миргалим, шухăша кайнăн.— Илтнĕ эпĕ Козырев çинчен. Çынни çавах пулĕ тетĕп... Арăмĕ те хăй евĕрлех пулсан, çитрĕ пурнăç!

Вăл алăк патнелле утрĕ.

— Мĕн каласшăн вара эсĕ? — ыйтрĕ пĕри.

Лешĕ хулпуççине сиктерсе илчĕ.

— Нимех те мар. Кунта, Колымара, темĕн тĕрлĕ çын та пур, çавна ан манăр тесшĕн çеç.

Хӗвел анса пытанман-ха. Яри уҫса янӑ палатка алӑкӗ патӗнче мотор кӗрлесе ларать: кино килнӗ. Чӳречесене утиялсемпе карса хупланӑ палаткӑра ҫап-ҫутӑ.

Акӑ тулта Михаил Васильевич сасси илтӗнчӗ. Ҫак самантрах уҫӑ алӑк патӗнче Татьяна Ивановна курӑнчӗ. Тем ҫинчен хаваслӑн кулкаласа калаҫакан ҫамрӑксем тӑруках шӑпланчӗҫ. Татьяна Ивановнӑпа пӗрле палаткӑна йӑрӑс пӳллӗ ҫамрӑк хӗрарӑм кӗчӗ. Ансӑр хулпуҫҫийӗ ҫине ҫӑм кофта уртса янӑ. Хура куҫӗсем пысӑк, илемлӗ. Кӑтралатнӑ ҫӳҫне килӗшӳллӗ тураса якатнӑ. Ҫара мӑйӗ ҫинче ярӑм шӑрҫа йӑлтӑртатать. Ҫакна курса, кравать ҫинче выртакан ҫамрӑксем ваштах тӑрса ларчӗҫ.

Ҫамрӑк хӗрарӑм сывлӑх сунчӗ те йӗри-тавра пӑхса илчӗ. Хӑй ҫине тинкернӗ ытараймн куҫсене курсан, унӑн ҫӑра вӑрӑм куҫ хӑрпӑкӗсем аялалла сӑпайлӑн усӑнчӗҫ.

— А-а, килӗр, килӗр! Хапӑл тусах кӗтетпӗр,— хӗрарӑмсене хирӗҫ йӑлкӑшса утрӗ Иван Степанович.— Татьяна Ивановна, Наташа, кунталла иртӗр, ларӑр акӑ пукансем ҫине...

Капуста хӗрарӑмсем хушшине вырнаҫрӗ. Вӑл Наташа енне кӑштах тайӑлчӗ те, кӑмӑллӑн кулкаласа, ӑна тем каларӗ. Ҫамрӑк хӗрарӑмӑн куҫӗсем кулса ячӗҫ, унтан хӗретнӗ пӗчӗк тути уҫӑлчӗ.

«Мӗн тери чипер!» — шухӑшларӗ Игорь, Наташа ҫинчен куҫне илмесӗр. Кино шухӑшӗ-и халӗ?! Унӑн ҫак илемлӗ хӗрарӑм ҫине вӗҫӗмсӗр пӑхса ларас килчӗ. Анчах ҫутӑ сӳнчӗ, каччӑ ирӗксӗрех ассӑн сывласа ячӗ. Шухӑш вара пӗр самантлӑха та ҫамрӑк хӗрарӑм ҫинчен каймарӗ.

Наташа килӗшӳллӗ пулни те, ытла хӳхӗм тумланни те, ҫамрӑксем пурӑннӑ ҫӗре пӗччен, мӑшӑрӗсӗр килни те каччӑ чӗрине пӑлхантарчӗ.

«Тен, юратмасть упӑшкине? — шухӑшларӗ вӑл, чӗри хыттӑн тапма тытӑннине туйса.— Мирлех пурӑнмаҫҫӗ пулас. Унсӑрӑн пӗччен килмелле мар-ҫке...»

Анчах Игорь ҫеҫ ҫапла хумханать-ши? Кӗтесре камӑн кӑвар куҫӗсем ҫамрӑк хӗрарӑма ҫунтарса ярасла сӑнаҫҫӗ? Миргалимӑн мар-и-ха!

Толя та Наташӑна сӑнарӗ. Анчах ӑна урӑхла шухӑш канӑҫ памарӗ. Мӗнле ҫын-ши вӑл Козырев? Мӗншӗн кино курма килмерӗ? Ҫӗнӗ шурфовщик ҫинчен темшӗн Михаил Васильевич та, Татьяна Ивановна та калаҫасшӑн пулмарӗҫ. «Илтнӗ эпӗ Козырев ҫинчен. Арӑмӗ те хӑй пекех пулсан, ҫитрӗ пурнӑҫ»,— япарӗҫ пуҫра Миргалим каланисем. Козырев усал ҫын пулсан, меншӗн Михаил Васильевич ӑна купта ӗҫлеме илчӗ-ха? Вырӑссем упӑшкипе арӑмӗ пӗр

шуйттан теççĕ. Нивушлĕ çакăн пек чипер хĕрарăм та путсĕр çын пулма пултарать?

Тепĕр ирхине шурфсем патне утакан çамрăксен ушкăнне Михаил Васильевич пырса хутшăнчĕ.

— Толя, Игорь, малалла сирĕн звенона Козырев хутшăнать.

— Козырев? — ыйтрĕç каччăсем пĕр харăс.

— Кам вара вăл? — терĕ Игорь, кăштах тăхтаса. Çамрăксем чарăнса тăчĕç, прораб мĕн каласса кĕтсе, ăна куççăн пăхрĕç.

— Кам тетĕн-и? — Михаил Васильевич Игорь çине сăнаса пăхрĕ.— Шурфовщик. Пирĕн пек çынах. Икĕ алăллă, икĕ ураллă,— темле ирĕксĕррĕн шӳтлесе илчĕ прораб.— Хăй те кунтах авă. Халех паллаштаратăп. Николай Федорович!

Çынсем вăл кăшкăрнă еннелле çаврăнса пăхрĕç, вара çирĕм-çирĕм пилĕк утăмра, йывăçсем хушшинче, вĕсем пекех спецтумтир тăхăннă, аллисене шăлавар кĕсйине чиксе таçталла пăхса тăракан патвар çынна асăрхарĕç.

Хăйне ятран чĕннине илтсен, Козырев çаврăнчĕ, вара, аллисене çаплах кĕсъерен кăлармасăр, пысăк утăмсемпе шурфовщиксем патне çывхарчĕ, ушкăнĕпе тăракан çынсем çине сăнаса пăхса илчĕ. Кăвак куçсем сивĕнчĕç, çӳхе тути çинче темле ырă мар кулă палăрса çухалчĕ. Козырев ирĕксĕррĕн сывлăх сунчĕ те, прораб мĕн каласса кĕтсе, ун çине пăхрĕ. Михаил Васильевич ăна Тольăпа Игорь çине кăтартрĕ.

— Çак икĕ маттур каччă сирĕнпе пĕр звенора пулаççĕ. Паллашăр.

Козырев пуçне сĕлтрĕ.

Хăйсемпе калаçса пăхмасăрах пĕрле ĕçлеме çавăн пек тĕксĕм çынна янăшăн Тольăпа Игорь чылаях кăмăлсăрланчĕç, анчах шухăш-кăмăлне никама та пĕлтермерĕç... Каярахпа çĕнĕ шурфовщик кайлона е лума çĕкле-çĕкле çапнине малтан тĕлĕнсе, унтан савăнса сăнарĕç.

— Вăт ĕçлет-тĕк ĕçлет! — хĕрӳллĕн пăшăлтатрĕ Игорь, хаваслăн çиçекен куçне Козырев çинчен илмесĕр.— Вăйлă пулас мур илесшĕ!

Чăнах та, Козырев тăрмашнине курсан, такам та савăнмалла. Нимĕнле шăн çĕр те, нимĕнле чул та çав шăнăрлă çирĕп аллăсен вăйне тӳсеймест. Якалса çуталнă, шĕвĕр вĕçлĕ лума сулса ярать кăна, чуллă-сăртлă шăп çĕр сийĕн-сийĕн хайпăнса вакланать.

— Çав усал Миргуша сăмахне итлесе,— мăкăртатрĕ Игорь.— Çапла ĕçлеме пĕлекен çын киревсĕр пулать-и?

Малтанах шухăшларăм — Наташа пек чипер хĕр ниме тă-ман арçынна качча тухас çук.

Çав кун вĕсен звени чи малти вырăна тухрĕ. Çак ятпа Михаил Васильевич Игорьпа Тольăна хаваслăн саламларĕ. Козырев ĕç кунĕ вĕçленсен шурфсем патĕнче пĕр самант та тытăнса тăмарĕ. Лумне пăрахрĕ те пысăк утăмсемпе палатка еннелле таплаттарчĕ.

— Çамрăк арăмĕ патне васкать,— кулкаласа пăхса юлчĕç ĕçлекенсем. Анчах Козырев палаткăра та нумай тăмарĕ. Кĕçех, пушă сумка тытса, çулсăр-мĕнсĕр, вăрмана кĕрсе çухалчĕ. Кашни кунах çапла. Ăçта, мĕн тума тухса каять вăл каçа хирĕç сĕм тайгана? Кун пирки ĕçлекенсем хăйсем хушшинче пĕрре кăна мар сăмах хускатрĕç, анчах нимĕн те татса калама пултараймарĕç.

— Вăрă вăл,— терĕ пĕррехинче Григорий Корнелюк юлташĕсем халапланине чĕнмесĕр итлесе ларнă хыççăн,— тĕрмесем тăрăх çапкаланса çӳрекенскер.

— Сана кам каларĕ?

— Пур пĕлекенсем,— кĕскен тавăрчĕ пуплеме юратман каччă.

## VII

— Эсир курман-и ман сехете? — ыйтрĕ Миргалим, хале çеç ĕçрен таврăннă шурфовщиксем çине сăнаса пăхса.— Кăнтăрлахи апата килсен, çакăнта салтса хутăм та илме маннă, халĕ пăхрăм — çук.

— Хунă пулсан, ăçта кайтăр. Ӳкнĕ-и, теп. Шыра.

— Ӳксен те çĕр тĕпне анса каймасть вĕт вăл,— сиввĕн хирĕçлерĕ Миргалим, хускатнă япаласене вырнаçтарса лартса.— Пăхман вырăн хăвармарăм.

— Кам илтĕр вара? Халиччен нимĕн те çухалман,— терĕ Игорь, Миргалим çине кăмăлсăррăн пăхса.

— Сан сехетӳшĕн вăрă килнĕ тесе шутлатăн-и? — хутшăнчĕ калаçăва Миша та.— Манăн та акă тумбочка çинчех выртать. Никам та илмен.

— Мĕн танлаштаратăн? Такама кирлĕ пулĕ сан сехетӳ. Ун пек ăпăр-тапăра эпĕ ахаль парсан та илместĕп,— татса хучĕ Миргалим мăнаçлăн.— Эх, каларăм Михаил Васильевича — итлемерĕ. Халь акă ме, паян сехет, ыран костюм, виçмине тата мĕн те пулин,— Миргалим алăкăн-тĕпелĕн уткалама тытăнчĕ.

Пĕр вăхăт шăп пулчĕ.

— М-да, кӳршĕ шанчăксăрри — усал япала вăл. Пирĕн мĕнпурри пĕтĕмпех кунта,— терĕ пĕри, йĕри-тавра пăх-

каласа.— Тепĕр чух укҫа та пинĕ-пинĕпе выртса юлать.

Миргалим, куҫне хаяррăн хĕссе, тем шухăша кайса тăчĕ.

— Хăнăхнă ун йышшисем ыттисем хайсен умĕнче хăраса чĕтренине курма. Ҫăтартмалла ăна хамăр камне. Ҫынсем пек йĕркеллĕ пурăнас килмест пулсан, тухса сирпĕнтĕр шуйттан патне. Ҫам пырать манпа? Атьăр!

Ҫамрăксем пĕр-пĕрин ҫине пăхса илчĕҫ. Хăшĕ-пĕрисем, темрен вăтаннă пек, пуҫĕсене усрĕҫ, анчах нихăшĕ те вырăнтан хускалмарĕ.

— Хăраса ӳкрĕр-и? — уҫҫăнах тăрăхларĕ Миргалим.— Эх, эсир те ҫав!.. Юрĕ, апла эпĕ пĕчченех каятăп.

— Тăхта! — илтĕнчĕ уҫă та ҫирĕп сасă.

Хай мĕн тунине лайăх ăнланса илеймесĕрех, ăшри темле туйăма пăхăнса, Толя завхоз хыҫҫăн ыткăнчĕ.

— Миргалим, асту, кун пек чух васкама кирлĕ мар. Мĕн пирки эсĕ сехете Козырев илнĕ тесе шутлатăн?

— Эсĕ мана ан вĕрент,— терĕ Миргалим сиввĕн.— Колымара эпĕ ултă ҫул пурăнатăп. Пайтах курнă ун йышшисене. Ăнлантăн-и?

— Ҫук, ăнланман,— хирĕҫлерĕ Толя, Миргалим ҫинчен куҫне илмесĕр.— Пĕлмесĕр ҫынна вăрăпа тытма кам ирĕк пачĕ сана? Ăҫта курнă эсĕ ун пек йĕрке?

— Кунта пирĕн хамăрăн йĕрке,— шăл витĕр сăрхăнтарчĕ Миргалим.— Пăрăн ҫул ҫинчен! Мĕн алăка картласа тăратăн? Ан хăра, тивес ҫук эпе сан Козыревна, кăштах калаҫса илетĕп ҫеҫ,— вăл вăйлă аллипе каччăна сирме тăчĕ, анчах лешĕ вырăнтан та хускалмарĕ.

Хайне пысăка хурса, шурфовщиксем ҫине ҫиелтен пăхма вĕреннĕ Миргалим ҫак ҫирĕп шухăшлă ҫамрăка кунран-кун ытларах та ытларах курайми пулса пычĕ. Халĕ вара, пурин умĕнче те ун сăмахĕсене уҫҫăнах сивлесе, ҫула картласа тăнине курсан, Миргалим вĕресе тăракан ҫиллине тек чарма пултараймарĕ. Унăн пичĕ пĕрре шурса, тепре хĕрелсе кайрĕ.— Пăрăн тетĕп! Ну!

Ҫапатчĕ-ши вăл е хăратма кăна чышкине ҫĕклерĕ, анчах ҫакна курсан, халиччен ушкăнра чĕнмесĕр тăракан Игорь тусĕпе юнашар пырса тăчĕ.

— Хуллентерех,— терĕ вăл, Миргалим ҫывăхнех пырса.— Пире чышкăпа ан хăрат. Эпир хамăр та аптрамастпăр.

— Мĕн, эсĕ те ҫав вăрă майлă-и?

— Вăрă тейиччен малтан тытас пулать. Кам та пулин курнă-и Козырев Миргалим сехетне илнине? — ыйтрĕ Толя, итлесе тăракан юлташĕсенчен.

— Мĕн ыйтатăн? Пурте ĕçре пулнă вĕт,— терĕ пĕри.
— Козырев та пирĕнпех пулнă.
— Çук, вăл ыттисенчен каярах пычĕ.
— Мĕн тавлашмалли пур апла пулсан? Унсăр пуçне кам илтĕр?
— Ан калаç-ха кирлĕ мара. Манăн авă укçа та минтер айĕнчех выртать.
— Тата хурса хăвар.
— Ман шутпа, Толя тĕрĕс калать. Илнĕ-и, илмен-и — тытмасăр ăна вăрă темс пултараймастпăр. Тахçан ĕлĕк пулнишĕн çынна çапла ĕмĕр кӳрентермеççĕ.
— Çитет, ан тавлашăр. Çав сехет вĕçне юлман. Пĕттĕр. Пурпĕр каялла тавăрса парас çук вăл,— сасартăк аллине сулчĕ Миргалим.— Çакна çеç асăрхаттарасшăн сире: çав çапкаланчăк кунта юлсан, ыррине ан кĕтĕр. Ун хутне кĕрекенсем кайран аса илĕç-ха. Кашкăртан сурăх пулас çук.
— Мĕншĕн, эппин, вăрă пулнă çынсем юсанписем çинчен хаçат-журналсенче çыраççĕ? — ыйтрĕ Миша.
— Хаçатра кăна мар-ха. Ун пеккисем кунта та сахал мар,— сăмах хушрĕ халиччен чĕнмесĕр итлесе ларакан Капуста.
— Хăçан ача ăсĕ кайĕ-ши сан, Миша? — терĕ Миргалим, Иван Степанович сăмахĕсене илтмĕш пулса.— «Хаçат-журналсенче»,— тăрăхласа илчĕ вăл.— Кам пĕлет, тен, хаçатра сан тайгаран тухса тарнă тусу тупа тунине те çырса кăларнă. «Комсомолец», «патриот». Пурнăçра вара авă мĕнле пулса тухрĕ.
Çук, çамрăксенчен нумайăшĕ Миргалимпа мар, Тольăпа килĕшсе, ун майлă пулчĕ. Çавăнпа завхоз, çиллине пытарса, сăмах-юмахне урăхла май шутарчĕ.
— Кам пĕлет, тупăнаççĕ пулĕ тепререн пĕрре юсанакансем те. Анчах вĕсем Козырев пеккисем мар. Эсир вăл халлĕхе хăйне йркеллĕ çын евĕр тыткаланине ан пăхăр. Пуçлать акă, ун чух куратăр. Пĕрре пулать, тепре,— терĕ завхоз, хирĕçлекен çуккипе хавхаланса.— Чĕнмесен, вăл пĕтĕмпех çаратса тухать. Тытатпăр тетĕр-и? Ун йышшисене хăшпĕр чух милици те темиçе çул шырать.
— Вăл чăнах ĕнтĕ,— терĕ тахăшĕ, йывăррăн сывласа ярса.
— Ну, комсорг, мĕншĕн шăплантăн? Ма хӳтĕлеместĕн Козырева? — тăрăхларĕ Миргалим, Толя çине хаяррăн пăхса.— Атя, яра пар! Пĕлсен, куншăн мухтаççех. Сан йышши чапа тухасшăн çунса çӳрекен çыншăн ыттисем никек курин мен вăл?

Çак сăмахсене илтсен, халĕ те алăк патĕнче тăракан Толя пуçне ялтах çĕклерĕ, кӳреннипе унăн шăмшакĕ чĕтресе, вĕриленсе кайрĕ. «Хуллен, ан пăлхан»,— чарчĕ вăл хăйне хăй çавăнтах.

— Чĕлхен шăмми çук. Эсĕ ман сăмахсене тем тĕрлĕ те пăсса калама пултаратăн. Анчах çынна айăпсăр кӳрентернине эпĕ нихăçан та чĕнмесĕр пăхса ларас çук.

Урăх пĕр сăмах та каламарĕ. Лăпланас тесе, уçă сывлăша тухма васкарĕ. Çăра вăрăм курăка сире-сире, тайга тăрăх çулсăр-мĕнсĕр утрĕ, юлашкинчен, шавлă Сухахэ хĕррине пырса, пĕр вăхăт хĕвел çинче ялтăртатса выляканн таса çутă шыв çине пăхса тăчĕ. Ытла та кукăр-макăр, ытла та йывăр-çке тусем хушшипе юхакан шыв çулĕ! Толя çĕр çийĕн усăнса ӳсекен йывăç çине ларчĕ.

Миргалимпа хăçан та пулин пурпĕрех тытăçса илессе вăл тахçанах сисет. Ытла та тĕрлĕ шухăш-кăмăллă çынсем çав вĕсем. Темшĕн-çке завхоз хăй тавра пĕр лайăх çын та курмасть, никама та ĕненмест, ун шучĕпе, темле ырă ĕçе те çын хăйне усă пултăр тесе çеç тăвать... Козырева, чăнах та, ăнланма йывăр ĕнтĕ. Арăмĕпе мĕнле пурăнать-ши? Кайкаласа ларсан, тен, тупсăмне тупма пулĕччĕ. Анчах çынни ытла сивĕ-çке. Кунĕпех чĕнмест. Никампа та хутшăнмасть. Миргалим калани тĕрĕс пулсан?..

Хыçра курăк чăштăртатнине илтсе, Толя çаврăнса пăхрĕ, вара хăй патнелле çурăм хыçне кутамкка çакнă Володя пынине курчĕ.

— Фу, ывăнтăм,— терĕ Володя, тарланă çамкине шăлса илсе.— Мĕн каçа хирĕç пĕр-пĕччен ларатăн эсĕ кунта?

— Çухалса каймарăн пулĕ-çке, çулсăр-мĕнсĕр çаврăнса çӳретĕн? — ыйтрĕ Толя юлташне ответлемесĕр.

Володя кулса ячĕ.

— Кайăк улталаса илсе килчĕ. Темле эпĕ халиччен курман вĕçен кайăк. Пăрр! вĕçет те ларать, лайăхрах курас тесе ун хыççăн йăпшăнатăп, вăл каллех темиçе метра кайса ларать. Çакăнта çитиччененех астарса килчĕ. Йăви пулнă пулмалла. Темле кайăк пулчĕ, пĕлеймерĕм. Ыйтса çырса ярас пулать. Кунти хăшпĕр чĕрчунсем çинчен кĕнеке çырас шухăш пур-ха. Халлĕхе пĕчĕккĕн материал пухатăп,— Володя тарлă пит-куçие сăмса тутрипе шăлса типĕтрĕ те Тольăпа юнашар ларчĕ.

— Ну, ĕçсем мĕнле санăн вĕренме кĕрес пирки? — ыйтрĕ вăл.

— Хатĕрленетĕп,— кĕскен хуравларĕ Толя.

— Эпĕ пĕр курс пĕтертĕм. Иккĕмĕшне куçни çинчен

хыпар илтём. Акă,— Володя пиншак кĕсйинчен хут листи кăларса юлташне пачĕ.

— Уральский лесотехнический институт имени Ленинского комсомола,— вуларĕ Толя.

— Тепĕр çул ĕçлесен, виççĕмĕш курса очно каятăп,— терĕ Володя, хут листине каялла хурса.— Пĕлмен ыйтусем темĕн чухлех. Кунта никамран ыйтма çук. Кирлĕ кĕнеке те тупма йывăр.— Володя, пĕшкĕнсе, кутамккине салтрĕ.— Акă,— терĕ вăл, Тольăна кăвак хуплашкаллă кĕнеке парса.— Хăçантанпа шыратăп. Мускава çырса ятăм — çук, Ленинграда — çук, Свердловскран ярса пачĕç. Питĕ лайăх кĕнеке. Вăл маншăн ылтăнран та хаклă... Кăна Миша валли илтĕм,— хушса каларĕ каччă, кутамккинчен тата темиçе кĕнеке кăларса.— Ют чĕлхери сăмахсен словарĕ. Кусем геометрипе литература учебникĕсем. Кăçал Миша та вĕренме кĕрес тет-çке.

— Базăра пултăн-и? Çыру пур-и мана? — ыйтрĕ Толя, Володя шăплансанах.

— Э-э, пур, пур. Мансах кайнă. Кăçар.

Толя чĕри картах турĕ. Анчах савăнни ахалех пулчĕ иккен. Каччă конверт çине пăхрĕ кăна — куçĕсем самантрах салхуланса тĕксĕмленчĕç. «Хабаровск»,— вуларĕ вăл çыраканĕн адресне. Кам вара ку? Тольăн унта пĕр паллакан çын та çук-çке... Эх, Валя, Валя! Мĕншĕн çырмастăнши? Нивушлĕ чăннипех мантăн-и?

— Володя,— терĕ Толя, çырăва пиншак кĕсйине чиксе.— Козырев мĕнле çын пек туйăнать сана?

— Козырев-и? — Володя, кĕнекисене каялла хурса, кутамккине туртса çыхрĕ. Унăн хĕвелпе, çилпе хуралнă çамки кăмăлсăррăн картланчĕ.— Килнĕренпе, сывлăх сунни сĕр пуçне, пĕр сăмах та илтмен пулсан, мĕн калама пĕлĕн ĕнтĕ ун çинчен? Тем çитмест ăна, темшĕн ялан кăмăлсăр вăл...

— Миргалим килĕшет-и тата?

— Миргалим — укçа çынни. Ăна урăх нимĕн те кирлĕ мар,— каччă кушăрханă йывăç хуппине хăйпăтса илчĕ те шавласа юхакан шыва пăрахрĕ.— Сăмахĕпе пирĕншĕн тăрăшать, ĕçĕпе ытларах хăй кĕсйине туртать.

— Миргалим, чăн та, лайăх завхоз,— терĕ Толя.— Çӳреме ӳркенмест. Мĕн кирлине пĕтĕмпех тупать. Пăх-ха, çу кунĕнче какай, çĕрулми илсе килчĕ.

Володя, юлташĕ çине пăхса, йăл кулчĕ.

— Вăл базăран кăна мар, складран та палаткăна хăех ыырса парать. «Акă илĕр, çакăн чухлĕ тăрать»,— тет кăна. Пурте шанатпăр. Шанмасан та тĕрĕслеме хăяймастпăр.

Аван мар-ҫке. Кӳренме пултарать. Хӑй вӑл никама та шанмасть, виҫӗ минутлӑха тухсан та складне питӗрет.

— Контроль йӗркелесен?

— Апла тусан, вӑл кунта виҫӗ кун та ӗҫлемест,— терӗ Володя.— Миргалим пек завхоз эпир урӑх тупаймастпӑр. Хӑйне усӑ пулсан, вӑл ҫӗр тӗпӗнчен чавса кӑларӗ. Ун евӗр ҫынсене ӗҫ укҫи сахал, кашни уйӑхра преми илни те ҫитмест, тем тесен те, улталаса тупӑш тӑвас пулать,— Володя тӑчӗ, кайма пуҫтарӑнса, кутамккине ҫакрӗ.— Анчах темшӗн-ҫке вӑл хулара е поселокра пысӑк магазинсенче ӗҫлемест. Унта тата тупӑшлӑрах вырӑн пулмалла пек те... Эсӗ мӗн питӗ тӗпчесех ыйтатӑн ҫак? Нимӗн те пулман пулӗ?

Толя паянхи хирӗҫӳ ҫинчен каласа пачӗ.

— Сехечӗ чӑннипех палаткӑра ҫухалнӑ пулсан, ҫаплах хӑвӑрт лӑпланӗ-ши вӑл? — терӗ Володя, чылаях иккӗленсе.— Темле...

— Унсӑрӑн мӗн тума шав пуҫлать пулӗ?

— Кам пӗлет ӑна? Тен, Козырева хуса яма сӑлтав шырать. Вӑл килнӗренпе, ҫарагасран хӑраса, пӗр каҫ канлӗ ҫывӑраймарӗ пулӗ.

Володя кайсан, Толя пӗр вӑхӑт унӑн сӑмахӗсем пирки шухӑшласа ларчӗ. «Козырева Миргалим яланах вӑрӑ теттха, хӑй унран мӗнпе уйрӑлса тӑрать вара? Ҫиччӗмӗш класс пӗтерсен, лавккара ӗҫлекен ашшӗне пулӑшма пуҫланӑ. Вунсакӑр ҫултан хӑй суту-илӳ енӗпе ӗҫлеме тытӑннӑ. Унтанпах хальхи пек «майлаштарма» пӗлет пулсан, миҫе пин ҫын кӗсйине ҫаратнӑ пулӗ вӑл?»

Толя йывӑррӑн сывласа илчӗ. Эрне каярах пухура ӑна комсорга суйларӗҫ. Унтанпа канлӗх ҫухатрӗ вӑл. Козыревпа Миргалим кӑна пуҫа ҫӗмӗреҫҫӗ пулсан тата... «Пирӗн никама та ҫулран пӑрӑнса кайма памалла мар»,— тет Михаил Васильевич. Вӑл, паллах, ҫапла пулмалла та. Ҫыннисем нумай мар... Анчах кунта пурнӑҫӗ те йывӑр ҫав. Юрать волейбол пур. Унсӑрӑн ниҫта тухмасӑр ҫӗрӗ-ҫӗрӗпех картла ҫапаҫҫӗ вӗт. Мӗншӗн ӑна Володя вырӑнне комсорга суйларӗҫ-ха? Михаил Васильевич сӗннипе-ши? Вӗсемшӗн, кирек кам ӗҫлесен те, ятне туса пултӑр. Миргалим чӑрмантармасан, тен, йӗрке тума пулать те пулӗ. Анчах Толя юлташӗсемпе калаҫма тытӑнсан, вӑл тӳрех пырса хутшӑнать, шухӑшласа хунӑ ӗҫе пӗтӗмпех айӑн-ҫийӗн пӑтратса ярать.

Шӑмшак ҫӳҫенине туйса, каччӑ тӑчӗ. Хӗвел анса ларайман-ха, анчах тавралӑха сӑрт-ту мӗлкисем талккӑшпех хупӑрласа тӗксӗмлетнӗ. Сухахэ тӑрӑх пӳрӗк сивӗ ҫил вӑр-

кăшать, вăрăм курăк тем ҫинчен салхуллăн кăштăртатса пăшăлтатать.

Толя сапаланнă ҫӳҫне турарĕ. Ҫипуҫне кăрт-карт турткаласа юсарĕ. Кĕсъере хут чăштăртатнине туйса, Володя парса хăварнă ҫыру ҫинчен аса илчĕ. «А-а, Яша ҫыратьнҫ»,— шухăшларĕ вăл, малтан ҫырăвăн юлашки йĕркисене пăхса. Вăл ҫак вырăнсенче ҫуралса ӳснĕ кĕре сăнлă, хуп-хура та хĕсĕк куҫлă якут каччине аса илчĕ.— Ҫолхозрах юлатăп тетчĕ-ҫке. Хабаровска мĕнле лекнĕ тата?

«Толя, Игорь, сывă-и? — вулама тытăнчĕ каччă.— Паян юлашки экзамен парса, ялхуҫалăх техникумне вĕренме кĕтĕм. Ҫавăнпа хама ҫав тери телейлĕ ҫын тесе шутлатăп. Пурĕ виҫĕ ҫул вĕренмелле, анчах эпĕ иртерех пĕтерсе таврăнма тăрăшăп. Пĕр усăсăр выртакан ҫĕр ҫинче купăста, ҫĕрулми тата ытти хăшпĕр культура ҫитĕнтерме вĕрентĕмĕр ĕнтĕ. Анчах ку пирвайхи утăм ҫеҫ. Ученăйсем ҫурҫĕрте ӳсекен ҫырласенче витамин нумайрах теҫҫĕ. Эпир, ҫав ирĕкре пулакан ҫырла сорчĕсене ҫĕнетсе, тата та лайăхрах, тутлăрах ҫимĕҫсем туса илме вĕренĕпĕр, ытти ҫĕрсенчи ҫырласене илсе килсе, сивĕ ҫанталăкра ӳсме хăнăхтарăпăр. Эсир пĕлетĕр, стланик Ҫолыман пур кĕтессинче те ӳсет. Халлĕхе вăл хуҫалăхра нимĕнле усă та памасть. Эпир ăна кедрпа сыпса шултра тутлă мăйăр илме вĕренĕпĕр. Ĕмĕтсем пысăк, пĕтĕмпех ҫырас тесен, кунĕпе те пĕтерейĕмĕн. Куҫа хупатăп та ҫав усăсăр сарăлса выртакан ҫĕрсенче тĕрлĕ тутлă ҫимĕҫсемпе ешерсе ларакан пуян ҫĕршыва куратăп...»

Толя юлташĕн ҫырăвне тулли кăмăлпа вуласа тухрĕ, шухăша кайса, палаткăсем еннелле утрĕ. Чăнах та, питĕ тараватлă ҫак чуллă-сăртлă ҫурҫĕр ҫĕрĕ. Мĕн чухлĕ пурлăх! Анчах ăна ҫын, хăйне пĕтĕмпех пăхăнтарса, кирлĕ пек усă курма вĕренсе ҫитеймен-ха.

Хăрăк турат шартлатса хуҫăлнине илтсен, Толя пуҫне ҫĕклерĕ те ҫывăхрах ҫамрăк хĕрарăма курчĕ. Вăл ҫунă япалисене кантра ҫине саркаласа ҫакать. Шухăша кайса, Толя сисмен те Ҫозыревсен палатки патне пырса тухнă иккен. Николай та кунтах. Вăл тирпейсĕррĕн сапаланса выртакан вутă пуленкисене шаршана купалать. Тепĕр чух Толя пăрăнса утнă пулĕччĕ, анчах халĕ ирĕксĕрех чарăнса тăчĕ. Ҫаллех иртнĕ харкашу, Миргалим асăрхаттарнисем аса килчĕҫ. Ҫозыревсемпе ҫывăхрах паллашса, чĕрене канлĕх паман иккĕленĕве сирсе яма май пулсанччĕ... Нимĕн пулман пек пырса тăрас та... Анчах темшĕн хăюлăх ҫитмест, аван мар пек...

Акă Наташа, ĕҫне пĕтерсе, упăшки патне пычĕ, ăна

тем каларĕ, вара иккĕшĕ те хаваслăн кулса ячĕç.

«Юратаççĕ»,— шухăшларĕ Толя, темшĕн пĕтĕм чунтан хавасланса. Вăл, каяс тесе, пĕр утăм кăна турĕ. Çав самантра Николай пуçне çĕклерĕ. Вĕсен куçĕсем тĕл пулчĕç.

— Толя? — терĕ Козырев, сасартăках аванмарланса, хĕрелнĕ каччă çине тĕлĕнсе пăхса.— Ман пата-и?

— Ой! — Наташăн илемлĕ куçĕсем хаваслăн йăлкăшса илчĕç. Вăл каччă енне утăм ярса пусрĕ.— Эсир чăнах пирĕн пата-и? Килĕрех, килĕр! Коля, çитет паяплăха, пăрах. Сивĕ мар-и? — ыйтрĕ вăл, Толя çине пăхса.— Эпĕ, çăм кофтăпа пулин те, шăнса кайрăм. Атьăр, кĕрĕр! — хĕрарăм алăка ярп уçса ячĕ.

Пĕчĕк палаткăра самаях тĕттĕм, çапах таса, ăшă. Сĕтел çинче илемлĕ шурă якăш — ку пирус тĕпĕ пăрахмалли савăт. Унтах пысăк пукане стаканри чечек патне кармашать.

Козыревсем, каччă тем каласса кĕтнĕ пек, уп çине пăха-пăха илчĕç. Тольăна халĕ Николай час-часах хаваслăн шӳт туни тĕлĕнтерчĕ. Анчах хăйне сăнанине сисрĕ вăл — хăна çине пĕр-икĕ хут сиввĕн, куç айĕн пăхса илчĕ. «Мĕн кирлĕ сана кунта? Ырăпа килтĕн-и е усалпа?» — ыйтрĕç шăтарасла пăхакан канăçсăр куçсем.

«Мĕншĕн темрен хăранă пек тыткалать вăл хăйне? — шухăшларĕ Толя та, çакна асăрхаса. Кӳршин кăмăлсăрланнă сăнĕ-пичĕ унăн ăшĕнче халь кăна çуралнă ырă туйăма каллех сирсе ячĕ.— Нивушлĕ çавах илчĕ-ши Миргалим сехетне?»

Наташа арçынсем сăмах тупайманнине сисрĕ, Тольăна хирĕç пырса ларчĕ те уп çине ăшшăн пăхрĕ.

— Эсир комсорг терĕç пулас? — ыйтрĕ вăл.— Ĕçлеме йывăр пулĕ кунта?

Пулаççĕ вĕт çавăн пек çынсем: темшĕн-çке вĕсене пĕрре курсах шанас, ĕненес килет. Толя та çак ăшă кăмăллă пит-куçа курчĕ те сасартăках лăпланчĕ.

— Çăмăл мар,— терĕ вăл, ассăн сывласа.— Йывăр, Наташа. Кӳлĕнессе кӳлĕнтĕм, анчах лава хускатса яма нимĕнле мел те тупаймастăп.

Наташа, итлеме хатĕрленсе, хăрах аллипе сĕтел çине тайăнчĕ. Толя ăна ĕçри йывăрлăхсем çинчен каласа пачĕ. Козырев шăппăн итлесе ларчĕ. Халĕ те вăл каччă çине сăнаса пăхрĕ, анчах сăнĕ-пичĕ çемçелсех пычĕ.

— Миргалима эпĕ çавăн пек киревсĕр тесе шутламан,— терĕ Наташа, Толя шăплансан.— Вăл каланине итлетĕп те, тĕнчере упран ырă этем урăх çук. Тăруках пĕлме йывăр çав çын кăмăлне,— пысăк хура куççем каллех каччă çине

ăшшăн пăхрĕç.— Тен, эпĕ сире мĕнпе те пулин пулăшма пултарăп? Ӳкерме юрататăп эпĕ. Паллах, чаплă мар ĕнтĕ.

— Тавтапуç, Наташа,— терĕ Толя.— Кирлĕ пулсан — калăп.

Каяс тесе, вăл ура çине тăчĕ.

— Çавăн пекехваскатăр-и? — ыйтрĕ хĕрарăм.— Тăхтăр. Каçхи апат çийĕпĕр. Çисе курман пулĕ-ха эсир кунти пулла. Питĕ тутлă. Коля çĕркаç кăна тытса килчĕ. Эпĕ халех хатĕрлетĕп,— хыпаланчĕ вăл.

— Аçта, инçете çӳретĕр-и пулă тытма? — ыйтрĕ Толя Козыревран.

— Çук,— хуравларĕ лешĕ, сĕтел çине савăт-сапа лартса.— Икĕ-виçĕ çухрăмра шыв авăрĕ пур. Ĕç хыççăн çавăнта кайкаласа ларатăп. Пĕрре çимелĕх илсе килетĕп. Çитет. Кунта вĕтĕ çав. Чăн-чăн пулă тытас тесен, аяккарах, çĕр выртмаллах каймалла.

«Апла пулла çӳрет вăл каçсерен»,— шухăшласа илчĕ Толя. Тăруках унăн пĕтĕм шăмшакĕ уçăлса, çăмăлланса кайрĕ.

Тутлă апатшăн хуçисене тав туса, каччă тăчĕ. Çав самантра ун пуçне тем перĕнчĕ те хуллен янраса кайрĕ.

— Гитара пур-çке сирĕн.

— Гитара пур, анчах выляканĕ çук. Усăсăр çакăнса тăрать,— терĕ Козырев.— Çуркунне юлташ «материка» кайрĕ. Çав парса хăварчĕ. Кăларса ывăтма шел.

Çакна илтсен, Толя тăруках хавасланса кайрĕ.

— Апла пулсан, мана памăр-ши? Вăхăтлăха та пулин...

— Илĕр, ара. Пуçĕпех илĕр. Пире мĕн тума? — Николай гитарăна пăтаран вĕçертрĕ те, тутăр татăкĕпе тусанне шăлса, Тольăна тăсса пачĕ.

— Тавтапуç,— чунтан хĕпĕртерĕ каччă. Вăл хĕлĕхсене пĕрерĕн янратса, гитара сассине тĕрĕслерĕ, унтан çинеçинех темиçе кĕвĕ каласа пăхрĕ.

— Асти юпашарах пурăннă иккен. Пĕлмен, тахçанах пырса памалла пулнă,— кулчĕ Наташа.

— Çук, чăн-чăн ăсти эпĕ мар. Игорь питĕ лайăх вылять. Эпĕ унран вĕрентĕм каштах пăнтăртаттарма. Баянист вăл. Музыкăна юратать. Эх, савăнать ĕнтĕ!..

Каç пулнă. Тавралăха тулли уйăх çутатать. Вăл, пысăк шĕвĕр сăрт тăррипче курăннăран, кĕç-вĕç ура айне кăлтăртатса анассăн туйăнать. Унта та кунта çăлтăрсем хаваслăн ялкăшаççĕ. Хĕвел анса пытаннă çĕрте талккăшпех çап-çутă. Тĕксĕмленнĕ сăрт тăррисем халĕ çав тери яруççăн курăнса выртаççĕ, кашни шăтăк-путăк палăрать. Вĕсем çинче сайра ӳссен çӳллĕ йывăççем шурă хут çине

хура кăранташа сăрласа тупă ўкерчĕксем пек туйăнаççĕ.
Ансăр сукмакпа Толя хăйсен палатки еннелле утрĕ.
«Игорь вĕсен çемьери пурнăçĕ ырă мар пулĕ тесе калаçать те, анчах эпĕ ăна-кăна туймарăм»,— шухăшларĕ Толя Козыревсем çинчен.

Палаткăра нумайăшĕ çывăрма хатĕрленнĕ. Хывăнмасăрах тăсăлса выртнă Игорь, тусĕ кĕрсен, пуçне çĕклерĕ те ун çине пăлханса пăхрĕ. Лешĕ, кулкаласа, гитарине çĕклесе кăтартрĕ.

— Ой! — ялтах сиксе тăчĕ Игорь.— Толя, тăванăм! Ăçтан тупрăн? Пар-ха, пар, чун ирĕлсе кайиччен вылям пĕрре.

Пукан çине меллĕн вырнаçса ларса, вăл гитарине çав тери юратса, ачашшăн сăтăрса илчĕ, вăрăм пўрнисем хĕлĕхсене асăрханса сĕртĕнчĕç. Акă каччăн кăвак куçĕсенче сиксе вылякан хаваслăх хĕлхемĕ çухалчĕ. Çурма тĕттĕм палаткăра çинçе, ачаш сасă хуллен йынăшса, чĕтренсе кайрĕ. Çакна илтсе, çынсем пĕрин хыççăн тепри пуçĕсене Игорь енне çавăрчĕç, вăл халиччен никам илтмен, калама çук темле илемлĕ япала çинчен каласа парасса кĕтнĕн, ун çине чĕнмесĕр, тĕлĕнерех пăхрĕç.

Тепĕр самантран палаткăра чуна пырса тивекен çепĕç кĕвĕ янраса кайрĕ. Вăл шăппăн-шăппăн çынсем патнелле йăпшăнчĕ, чĕрене шыраса тупса, ăна сĕртĕнчĕ те хумхантарса ячĕ. Выртакан шурфовщиксем тăра-тăра ларчĕç.

Илĕртўллĕ кĕвĕ чĕрере ырă ĕмĕтсем, çутă туйăмсем çуратать. Гитара юрлать, гитара тунсăхлать, такама йыхăрать вăл, такама кĕтет. Е хурлăхлăн йынăшать, е, çутă шанчăкпа хавхаланса, кăвак тўпенелле вирхĕнекен кайăк пек, хыттăн, хаваслăн янраса каять.

— Толя, мĕн хытса тăратăн? Юрла,— чавсипе тĕртрĕ Игорь тусне.

Лешĕ шартах сикрĕ, тарăн шухăша путнăскер, хăйне мĕн каланине ăнланмасăр, юлташĕ çине пăхса илчĕ.

— Юрла тетĕп,— шăппăн пăшăлтатрĕ Игорь.

Каччă тепре каласса кĕттермерĕ.

— «Ночь тиха, над рекой ярко светит луна»,— илтĕнчĕ уçă çепĕç сасă. Пурте лайăх пĕлекен тахçанхи юрă. Чĕрене юрату тунсăхĕ нихçанхиччен те ытларах çунтарса ярттарнă чух, Толя пĕтĕм чун хавалĕпе хумханса юрларĕ. Сăмахĕсене те, кĕввине те ятарласа Толя валли çырнă тейĕн. Юрăра таса пысăк юрату кĕске вăхăта та асран каймн аякри савнине кĕтсе тунсăхлать.

> К тебе в грезах лечу,
> Твое имя шепчу.

Милый друг, нежный друг,
О тебе я грущу.

Чĕререн тухакан çирĕп сасă çынсен шухăш-кăмăлне пĕтĕмпех парăнтарчĕ. Акă Миша Толя çинчен тӳпе тĕслĕ кăн-кăвак куçне илеймесĕр пăхса ларать. Сĕтел çине чавсаланнă Володя умĕнче яланхи пекех кĕнеке. Анчах унăн тунсăхпа тĕтреленнĕ куçĕ умри йĕркесене курмасть. Миргалим, темрен вăтаннă евĕр, пысăк алă тупанĕпе пит-куçне хупланă, пуçне уснă. Чĕмсĕр Гриша такама тарăхать тейĕн. Унăн çамки час-часах картланать, куçĕсем çинех анса ларнă пысăк хура куç харшийĕсем çиллессĕн турткаланса илеççĕ. Пурте хумханса итлеççĕ, пĕр Капуста кăна кĕтессе харлаттарса çывăрать.

— Браво! Маттур, Толя! — хаваслăн алă çупса ячĕ Миша, Толя шăплансанах.— Ку юрра çапла илемлĕ юрлanине пĕрремĕш хут илтетĕп. Чăн-чăн артист пекех, тупата!

Игорь, кăмăллăн кулкаласа, пӳрнисемпе каллех хĕлĕхсене перĕнчĕ. Тепĕр самантран палаткăра хаваслă ташă кĕвви янрама пуçларĕ. Тунсăх тарса пытанчĕ, шăмшак çăмăллanса кайрĕ.

— Э-э-э! И-и-ихх! — чуна çĕклентерекен сасăпа кăшкăрчĕ тахăшĕ. Çамрăксем сиксе тăчĕç, кравaтьсене пĕр çĕре тĕртсе лартса, ташлама вырăн хатĕрлерĕç.

Çак каç шурфовщиксене Гриша Корнелюк тĕлĕнтерсе савăнтарчĕ. Пуçне çӳле çĕклесе, вăл ушкăн варрине чи малтан тухрĕ. Ялан кăмăлсăр, çиллес пичĕ-куçĕ халĕ хаваслăн çуталнă, пĕвĕ тӳрленсе çамрăкланнă. Кĕвве тимлĕн итленĕ пек, Игорь енне пуçне тайса, вăл пĕр вăхăт хускалмасăр тăчĕ, унтан янравлăн эх! терĕ те урине тăрст! тапрĕ. Такама ыталаса илес пек, кăштах малалла ӳпĕнсе, аллисене саркаларĕ, атă кĕлисем çине тăрса, хăвăрт утса кайрĕ, унтан çил-тăвăл пек çаврăнма тытăнчĕ. Акă вăл кукленсе ларать, кĕвĕ май урисене малалла ывăтса, чупса çаврăнать, каллех сиксе тăрать те аллисене атă кунчи çумне шапăртаттарса çапать...

Ун вырăнне Миргалим йышăнчĕ. Сарлака хулпуççине мăнаçлăн хускаткаласа, вăл малтан васкамасăр утса çаврăнчĕ. Тем аса илнĕ пек, тăп чарăнчĕ, йĕри-тавра пăхса илчĕ, вара кăкăрне каçăртрĕ те пĕр вырăнтах урисемпе хăвăрт-хăвăрт тапăртаттарма тытăнчĕ. Акă вăл каллех утать, утмасть, ярăнать тейĕн, кĕлеткинче пĕр сыпă та хускалмасть. Атă кĕлисем кăна тем çинчен çăмăллăн шакăлтатса калаçаççĕ. Миргалим хыççăн ташлакансем татах та пулчĕç.

— Атьăр Украина юррисене юрлар! — пырса тăчĕ Игорь патне Гриша.

— Юрать,— терĕ Игорь, умри каччă çине тĕлĕнсе пăхса, вара унăн вăрăм пӳрнисем каллех хĕлĕхсене çепĕççĕн перĕнчĕç.— Килĕр кунта, ушкăнпа юрлăпăр,— чĕнчĕ вăл юлташĕсене.

— Акă юрă кĕнеки, тытăр,— хаваслăн хыпкаланчĕ Гриша.— Тупăр сăмахсене.

— Дивлюсь я на небо и думку гадаю,

— янраса кайрĕ унăн уçă сасси.

— Чему я не сокол, чему не летаю? —

— пĕр харăс хутшăнчĕ ушкăн сасă.

Чему же мне, боже, ты крыльев не дал?
Я б землю покинул и в небо взлетел?
Далеко за хмары подали вид свиту,—

палаткăна чĕтретсе, çĕкленчĕ нумай сасăллă хăватлă юрă.

Çак каç сĕм тайгара тĕрлĕ халăх юррисем янрарĕç. Вĕсене е пĕрле, е темиçен, е пĕччен юрла-юрла пачĕç...

— Толя,— пăшăлтатрĕ Игорь çывăрса каяймасăр,— итле-ха, Толя, тăрăшсан, лайăх концерт лартса пама пулать вĕт! Пăх-ха, мĕн чухлĕ пултаруллă çын! Тĕплĕн хатĕрленетпĕр те çывăхри поселоксене, приисксене каятпăр. Теп, Магаданра юрлама тивĕçлĕ пулăпăр. Э, Толя?

— Мĕнех вара? — терĕ лешĕ ыйхăллă сасăпа.— Çине тăрсан, паллах, пултаратпăр.

Кун пирки Игорь юлташĕсемпе тепĕр кунах калаçса татăлчĕ. Малтан, паллах, иккĕленекенсем те, хирĕçлекенсем те тупăнчĕç, анчах нумайăшĕ каччăпа хаваслансах килĕшрĕ.

Иккĕмĕш репетици ирттерме палăртнă кун ĕçрен таврăнакан Игоре юханшыв хĕрринче Татьяна Ивановнăпа Наташа тĕл пулчĕç.

— А-а, сăмах çинех килсе тухрăн,— терĕ Татьяна Ивановна, каччă вĕсем патне çывхарсан.

Наташăн илемлĕ куçĕсем Игорь çине ӳпкелесе пăхрĕç.

— Калăр-ха, эсир мĕншĕн пире кӳрентеретĕр?

Хĕрарăмсем шӳт тунине тăруках тавçăрса илеймен каччă малтан аванмарланса кайрĕ.

— Эпĕ-и? — ыйтрĕ вăл, тĕлĕнсе.— Хăçан, мĕн туса кӳрентертĕм?

— Каçсерен ташлатăр, юрлатăр, пире чĕнместĕр. Е

пирĕн пултарулăх çук тетĕр-и? Е хĕрарăмсене хисеплеместĕр?

— Татьяна Ивановна! Наташа! — Игорь, шÿтлесе, аллисене кăкăрĕ çине хучĕ.— Тархасшăн каçарăр. Маншăн тĕнчере сирĕнтен хисеплĕ çын урăх çук.

Çамрăк хĕрарăм кулкаласа калаçнипе хăюлланнă каччă, тем пĕлес пек, ун çине тинкерсе пăхрĕ, анчах икĕ çăлтăр куç çавăнтах вăрăм куç хăрпăкĕсем айне пытанчĕ.

— Тепĕр сехетрен пыратпăр, кĕтĕр,— терĕ илемлĕ тута, кăмăллăн кулса.

Палаткăна хаваслă Игорь ывăç тулли чечек илсе кĕчĕ.

— Ăçта çапкаланса çÿретĕн ку таранччен? — кăмăлсăррăн мăкăртатрĕ Капуста. Вăл паян дежурнăй.— Апат тахçанах сивĕнсе кайрĕ. Кирлĕ-тĕк, хăвах ăшăт. Эсĕ çухалса çÿренĕшĕн эпĕ пĕр ĕçе темиçе хут тăвас теместĕп.

Капустăна тăнламасăр, Игорь чечек çыххине кĕленче банкăна вырнаçтарса лартрĕ.

— Иван Степанович, палаткăра тасат-ха кăштах. Темĕн чухлĕ çÿп-çап,— терĕ вăл, йĕри-тавра пăхса.— Татьяна Ивановна килме пулчĕ репетицие. Каллех, таса мар тесе, тиркеме тытăнĕ.

Дневальнăй ĕнсине хыçса илчĕ те ирĕксĕррĕн çĕкленчĕ.

— Татьяна Ивановна — ырă чунлă хĕрарăм. Ун пекки сахал таврара. Ăна итлемесен юрамасть.

Хыттăн мăшлатса, Капуста урайĕнчи çÿп-çапа алăк патне шăлса пуçтарчĕ.

— Наташа та килет-и? — ыйтрĕ вăл, чечек çыххи çине пăхса.

— Килет,— кĕскен хуравларĕ каччă.— Миргалим,—завхоз енне çаврăнчĕ вăл,— илсе кил-ха шоколад... Чей ĕçме. Тата канфет, чи лайăххине.

Миргалимăн хура куçĕсем çамрăк шурфовщика вăрттăн сăнаса пăхрĕç.

— Шоколад? Миçе?.. Тата мĕн кирлĕ?

Çав каç Игорь çывăрса каяймасăр нумайччен пĕр аякĕ çинчен теприн çине çаврăнкаласа выртрĕ. Темле хуйхă пур пек, йывăррăн сывларĕ. Каç тĕттĕмĕнче каччă пичĕкуçĕ е телейлĕн йăлкăшса çуталчĕ, е салхуланса тĕксĕмленчĕ, е çиллессĕн турткалана-турткалана илчĕ. Чăтаймарĕ, тăрса, пирус чĕртрĕ, унтан пиншак кĕсйинчен блокнот кăларчĕ те, чÿрече çывăхне ларса, чĕркеле-чĕркеле тем çырма тытăнчĕ.

Ирхине, шурфовщиксем ĕçе кайсан, çав блокнота Миргалим илсе уçрĕ, турта-турта юсаса çырнă сăвă йĕркисене вуларĕ.

Кăнтăрла та, каç тĕттĕмĕнче те
Пуçăмра пĕр шухăш çаврăнать:
Пĕр сана курасшăн, пĕр санпа пуласшăн
Çамрăк чунăм çулăмпах çунать.
Хаклă ĕмĕтĕм! Телей çăлкуçĕ!
Мĕншĕн сана куртăм пурнăçра?
Çывăхрах пулин те, маншăн эсĕ
Çутă çăлтăр евĕр аякра!..

— Тăмсай! — темшĕн тăруках çиллленчĕ Миргалим. Унăн куçĕсем хаяррăн йăлкăшса илчĕç.— Курăпăр-ха!..

## IX

Игорь ури шăннине туйса вăранчĕ. Тĕттĕм. Çӳлте, шăпах пуç тĕлĕнче, пĕчĕк хушăкран çутă курăнать. «Ăçта капла эпĕ? — шухăшларĕ каччă, хăвăрт тăрса ларса. Хăй тавра хыпаласа пăхрĕ — алла типсе кушăрханă çулçăллă турат лекрĕ.— Ӳплере иккен,— аса илчĕ вăл.— Ара, ĕнер Козыревпа пулла килтĕмĕр-çке. Анчах ăçта-ха вăл? Нивушлĕ мана вăратмасăрах кайса ларчĕ?» Игорь, фуфайкипе карттусне илсе, тулалла тухрĕ те пуртă тытса таракан Козырев çине кăшт çеç пырса тăрăнмарĕ.

— Эсĕ мĕн? — тĕлĕнчĕ каччă.

Лешĕ çийĕнчех чĕнмерĕ. Ӳпле патне пырса пĕшкĕнчĕ те пурттине шалалла пăрахрĕ.

— Вăлта вуллисем касса килтĕм,— терĕ вăл хулăн сасăпа.— Авă, суйла хăвна кирлине.

Çӳллĕ те патварскер, вăл, пысăк атă тăхăнна урисене чулсем çийĕн васкамасăр илсе пусса, кӳлĕ еннелле кайрĕ.

Куçĕсене кăмăлсăррăн хĕскелесе, Игорь ун хыççăн уттарчĕ. Чĕмсĕр çыннăн тĕксĕм пит-куçне куриччен, сарлака çурăмне пăхса пыма кăмăллăрах.

Чăн та, мĕнле çын-ха вăл? Мĕншĕн яланах кăмăлсăр? Чăннипех вăлта хулли касма кайнă-ши çĕрле? Миргалим каланисем аса килчĕç: «Икĕ эрне ĕçсĕр çапкаланса çӳренĕ тет вăл. Никам та илесшĕн пулман ăна. Çавăнпа кунта малтанлăха тăрăшса ĕçленĕ пек тăвать ĕнтĕ... Шайккă пулнă вĕсен унта. Виçĕ кун ĕçре, икĕ эрне ĕçкĕре. Пĕр-икĕ кунлăха таçта кайса çухалаççĕ тет те, кайран эрни-эрнипе ĕçме тытăнаççĕ тет».

«Мĕн шуйттанне курса килтĕм-ха эпĕ унпа?» — шикленерех шухăшларĕ Игорь. Пĕчĕк кукăр тупса, вăл чул катăкĕ çине вырнаçса ларчĕ. Лайăх кунта, шăпах пулă туртмалли вырăн. Козыревăн тĕксĕм кĕлетки те куç умĕнче çук. Вăхăт виçĕ сехет çитесси çирĕм минут. Хĕвел тухман-

ха, анчах тавралăх çап-çутах. Кунта халĕ çĕрĕпех тĕттĕмленмест. Çутă каççем.

Игорь фуфайкине тӳмелерĕ, карттусне çамки çине пусарса лартрĕ. Сивĕ. Ку лайăх-ха. Вăрăмтунасем аптратмаççĕ. Каччă вăлтасем çине каçхине тытса пуçтарнă шăрчăксене тире-тире шыва ывăтрĕ те кĕтме тытăнчĕ. Çук, туртмасть.

Мĕн тери пысăк кӳлĕ. Таçта çитиех тăсăлать. Пĕр пуçĕ сарлака, тепри кăштах шĕвĕрĕлсе ансăрланать. Шыв çийĕн çăра сивĕ тĕтре явăнать, ирĕлсе пĕтеймен пăр катăкĕсем курăнаççĕ. Лере, сарлака пуçĕнче, пысăк сăрт пĕлĕтелле кармашать. Йĕри-тавра çухрăма яхăнах нимĕнле йывăç-курăк та ӳсмест. Тем пысăкăш çара чул катăкĕсем кăна йĕркесĕр купаланса выртаççĕ. Аçтан килсе выртнă-ши вĕсем кунта? Сӳннĕ вулкан вырăнĕ мар-ши. çак кӳлĕ? Е тахçан ĕлĕк пăр куçнă чух пулса юлнă вăл? Ытла та тĕксĕм, хавассăр вырăн.

Каччă, куçĕсене чышкипе сăтăрса, хыттăн, вăрăммăн анасларĕ. Пĕр пулă та пулин туртасчĕ хăть. Кичем капла ларма. Чăтаймарĕ, Козырев патне кайса пăхма шут тытрĕ. Унăн та ĕç ăнмасть иккен.

— Пулă нумай кунта,— терĕ Николай,— анчах инепле те вĕсен вăхăтне пĕлсе çитерейместĕп-ха. Тăхтаса пăхар.

Хĕвел тухрĕ. Унăн шупка пайăркисем сопка тăррисене çутатрĕç. Çӳлте, пуç çийĕнче, темĕн вăшлатса иртрĕ, инçе те мар мăшăр кайăк кăвакал кӳлĕ çине вĕçсе анчĕ.

— Эх, пăшал çук! — сиксе тăчĕ Игорь.

— Пулсан та юрамасть пеме. Чĕпписем пĕчĕк,— терĕ Козырев.— Хăвалас пулать вĕсене кунтан. Пулла хăратса тартаççĕ. Кша! — вăл кайăксем енне темиçе чул катăкĕ илсе печĕ.— Тăхта, кĕркунне çиттĕр акă. Хур-кăвакал кунтан кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе вĕçсе иртет. Хир чăххи мĕн чухлĕ тата! Çӳреме ан ӳркен кăна. Ман Наташа вăрçса та илет тепĕр чух. «Кайăк-кĕшĕк тĕкне иртсех кунçулăм иртсе каять пулĕ»,— тет. Кăларса ывăт эппин тетĕп те — килĕшмест.

Козыревăн кăвак куççсем ăшшăн çуталчĕç, тута хĕррипчи икĕ салху йĕр çухалчĕ.

— Туртать! Туртать! — хумханса пăшăлтатрĕ Игорь, ăна чĕркуççийĕнчен тĕртсе.

Николай вăртах малалла ӳпĕнчĕ, вăлта хуллине ярса тытрĕ. Çутă кӳлĕ çийĕ кăштах хумханчĕ, çăмăл хумкай хускалса выляма тытăнчĕ, унтан пăч путрĕ. Вĕлт çӳлелле ывтăнчĕ вăлта хулли, сывлăшра хура çурăмлă пысăк пулă авкаланса илчĕ.

— Пулчӗ! — терӗ Козырев, ача пек хавхаланса.—Игорь, вӗҫтер! Пуҫланчӗ! Халӗ ӗҫ каять!

Каччӑ хӑй вырӑнне васкарӗ. Акӑ хайхи! Кӳлӗ ҫийӗн пӗчӗк шыв ункисем чупаҫҫӗ, вӑлта хулли тикӗс мар ҫыранран ерипен шуса анать. Игорь ун патне ыткӑнчӗ. Ялт ҫӳлелле ҫӗкленчӗ алӑ — вӑлта аври сывлӑшра ҫаврӑнса илчӗ те ҫырана пырса ӳкрӗ. Чул ҫинче пысӑк пулӑ хӳрипе ҫапса сиккелеме тытӑнчӗ.

— Лекрӗн, тӑванӑм! — мӑкӑртатрӗ Игорь, чунтан киленсе.— Ан тапӑлтат, пурпӗр ямастӑп.

Пӗр-икӗ минут та иртмерӗ, тепри куранчӗ, унтан татах... Халӗ Игорь хӗвел чылаях ҫӗкленнине те, тавралӑх ҫуталса илемленсе пынине те, тӗксӗм чул купаланчӑкӗсене «сӑн кӗнине» те курмасть, хырӑм выҫнине те туймасть.

— У-у-у, ӗҫ ӑнать иккен! — тесе пычӗ ун патне Козырев.— Атя апат ҫиме. Пулӑ шӳрпи пӗҫертӗм. Атя, атя,— васкатрӗ вӑл, юлташӗ ҫаплах вырӑнтан хускалманнине курса.— Кӳлӗри пулла тытса пӗтерейӗмӗн. Ҫиетпӗр те каллех килетпӗр.

«Темле хуйхӑ пулӗ унӑн. Ҫынни лайӑх пек туйӑнать»,— шухӑшласа илчӗ Игорь, Козыревпа юнашар утнӑ май.

Пӗчӗк вучах ҫинче хӑрӑмпа хуралнӑ витре ҫакӑнса тӑрать, унта шӳрпе сиксе вӗрет, ҫунса пӗтеймен вутпуҫҫи, йӳҫӗ тӗтӗм кӑларса, йӑсӑрланса выртать.

— Ку акӑ сӗтел пулать,— терӗ Козырев, пысӑк тӑваткал чул ҫине кӑтартса.— Пуканӗсем те унтах, ил те лар.

Ирӗкре апат яланах тутлӑ. Пулӑҫсем киленсех ҫиме пикенчӗҫ. Козырев ытларах пуллине ӑса-ӑса илет, Игорь вӗсене кашниччех кашӑкӗпе тӗртсе ярать.

— Мӗншӗн ҫиместӗн? Тутлӑ вӗт.

— Кама пулӑ килӗшет, кама — шӳрпи. Эпӗ вара уншӑн та, куншӑн та ҫунмастӑп,— терӗ Игорь, кашӑкне хурса.— Эпӗ, Николай Федорович, курса ҫӳреме юрататӑп. Май пулас пулсан, ҫӗр ҫинче ҫитсе курман кӗтес хӑвармӑттӑм. Кунта ӗҫлесе укҫа кӑштах пухатӑп та — тепӗр ҫӗре каятӑп. Колыма пысӑк пулин те, пӗр виҫӗ ҫул ҫӳресен, урлӑшне-тӑршшӗне тухатӑп пулӗ тетӗп. Унтан Камчаткӑна каяс шухӑш пур. Ну, унччен вӑхӑт нумай-ха, пурнӑҫ кӑтартӗ мӗн тумаллине. Мӗншӗн художник мар-ши эпӗ? — терӗ Игорь кӑштах чӗнмесӗр ларнӑ хыҫҫӑн.— Ӳкерсе илӗттӗм ҫак кӳлле, Мускава выставкӑна ярса панӑ пулӑттӑм. «Материкра» нумайӑшӗ Колымана пачах пӗлмеҫҫӗ. Тӗлленмеҫҫӗ те вӗсем кунти вырӑнсенче ҫутҫанталӑк ҫакӑн пек илемлине. Е сӑвӑ ҫырма пултарас пулсан...

Каччӑ калаиине итленӗ май Козырев шухӑша кайрӗ.

Вал та юрататъ ирĕкре çуреме, çутçанталăка та юрататъ, анчах унăн куçа курăнакан илемне кăна мар, ытларах кăмăлне килĕштерет. Ирĕклĕ тайгара ăна никам та унăн пĕр тĕлсĕр иртнĕ пурнăçĕ çинчен аса илтермест, ӳпкелемест, юнамасть, никам та ун çине шанмасăр иккĕленсе пăхмасть.

— Такам килет,— терĕ Игорь çурма сасăпа.

Козырев çаврăнса пăхрĕ.

— Паллакан пулăç.

Унăн пичĕ-куçĕ самантрах тĕксĕмленчĕ. Тепĕр минутран, чул катăкĕсене чакăртаттарса, вĕсем патне хĕрĕхелле çывхарнă, вăтам пӳллĕ тапчам арçын пырса тăчĕ.

— Апачĕ тутлă пултăр! — терĕ вăл, Игорь çине тинкерсе пăхса. Козырев ответ памарĕ.

— Çиме те чĕнес теместĕн-и? Юрĕ, эпĕ мăн кăмăллă мар, сĕнмесĕрех ларма пултаратăп, — халь кăна килнĕ çын тĕссĕрленнĕ лучăркаичăк карттусне хывса çĕре пăрахрĕ те çывăхри чул катăкĕ çине вырнаçса ларчĕ.— Ма юлташупа паллаштармастăн? Зверев Семен Петрович. Николай Федоровичăн çывăх юлташĕ. Тусĕ тесен те юрать. «Ай-яй, шăрăх сирĕн кунта!» — çапла каласа, вăл ăшă кипкине хывса печĕ те таса мар майкăпа тăрса юлчĕ.

Игоре пĕрре те килĕшмерĕ ку çын. Ансăр çамкаллă, вăрăм янахлă пит-куç. Хура шăрт сухал куçĕсем айĕнче кăна çук. Пĕр куçĕ пĕчĕк, тепри, такам çаклатса аялалла туртнă пек, чармак, шывланса, хĕрелсе тăрать. Сарлака çăмламас кăкăрĕ, çирĕп хулĕсем çинче тĕрлĕ ӳкерчĕк.

«Чăп-чăп вăрă-хурах»,— çӳçенсе шухăшларĕ Игорь.

— Арăму каласшăн пулмарĕ эсĕ ăçтине,— терĕ Зверев, çаплах чĕнмесĕр ларакан Козырев çине кулкаласа пăхса.— Ну, эпĕ вăл енчен йĕр йĕрлекен йытă пекех вĕт. Хамах тавçăрса илтĕм.

— Киле ан пыр тесе асăрхаттарнине мантăн иккен эсĕ. Тата тăнлантарас-и? — терĕ Козырев, Зверев çине уççăнах юнаса пăхса.

— Юрĕ, юрĕ. Лăплан, ан хирĕл,— «чармак куç» сумкинчен икĕ çур литр эрех, стакан кăларса лартрĕ.— Росомахăна кĕтеççĕ. Çавна пĕлтерме килтĕм,— хушса хучĕ вăл, такам илтесрен шикленнĕ пек, çурма сасăпа.— Тата курманни нумай пулать. Ёлĕкхи пек пĕрле ĕçсе-çиес, чунтан калаçас килет.

«Тупрăм иккен пушă вăхăта ирттерме юлташсем,— шухăшларĕ Игорь.— Ёлĕкхи пек тет. Пĕр шайккăра пулнă апла. Ку «чармак куçĕ» ытла та сивлек çын. Вĕлерме те пултарĕ. Козырев та çавнашкалах ĕнтĕ. Ахальтен мар

туслă вĕсем. Тем çитмест ĕнтĕ, темшĕн хирĕçеççĕ. Миргалим ахаль каламарĕ. Мĕншĕн малтан тĕплĕнрех ыйтса пĕлмерĕм-ха?»

Акă «чармак куç» эрех кĕленчине çапса уçрĕ. «Пĕр тумлам та ĕçместĕп»,— шухăшларĕ Игорь. Тулли стакана Зверев малтан Козырева пачĕ. Лешĕ пуçне кăштах каçăртрĕ те пĕр сывламасăр тĕппипех янклаттарчĕ. Эрех хуçи каллех тултарчĕ. Куçĕсене каччă çинчен илмесĕр, стакан тытнă çăмламас аллине ун енне тăсрĕ.

— Ӳпĕнтерсе пар-ха...

Унăн пĕр куçĕ, пĕчĕкки, ĕçме хăяймасăр ларакан вăйнитти каччăран уççăнах йĕкĕлтесе кулать. Тепри тĕксĕм, сивĕ. Вăл Игорь çине, тискер кайăк йĕрлесе тупнă чĕрчуна тытма хатĕрленсе сăнанă пек, пĕр сиккелемесĕр шăтарасла пăхать. Çакна курсан, Игорь çӳçенсе илчĕ, хăюсăррăн кулкаласа, тулли стакана тытрĕ. Халиччен хĕрлĕ эрех те ĕçме хăнăхманскер, вăл çак самантра Козыревпа «чармак куç» умĕнче ĕçеймесĕр мăшкăл курасран çеç хăрарĕ. Ача мар-çке тек, ӳссе çитнĕ арçын...

Игорь, Козырев пекех, пуçне каçăртрĕ те стакана тӳрех çăварне тӳнтерчĕ. Анчах нумай та ĕçеймерĕ, тăруках сывлăш питĕрĕннипе малалла ӳпĕнчĕ, куçĕсенчен куççулĕ сирпĕнсе тухрĕ, чыхăнса кайса, вăл самантлăха сывлаймиı пулса ларчĕ.

— Маттур-çке эсĕ,— терĕ «чармак куç», чееп кулкаласа. Вăл каллех стакана туп-тулли тултарчĕ.— Ме, тепре шăлса пар-ха... хăнăхмалла...

— Çитет, урăх юрамасть,— терĕ Игорь, ăшчикре пĕçертсе кайнине туйса.

— Э-э-эй! Çакнах ĕçетĕн ĕнтĕ. Эпир кăна мар, тĕнче кӳпет вĕт. Мĕнле арçын пулăн вара эсĕ, кăшт та сыпса параймасан? Хăнăхас пулать,— çине тăрсах сĕнчĕ эрех хуçи.

Хăйĕн каллех пĕр куçĕ кулать, йăпăлтатать, тепри тимлĕн, сиввĕн сăнать.

Игорь парăнчĕ. «Мĕнех вара пĕрре ӳсĕр пулнăшăн? Камран хăрамалла манăн? Тем тусан та, халĕ эпĕ хам хуçа»,— шухăшларĕ вăл, чĕтрекен аллипе стакан тытса.

— Ларт каялла, — терĕ ăна Козырев сиввĕн. Унăн çӳхе тути кăмăлсăррăн пăчăртаннă, сарă куç харшийĕсем çиллессĕн пĕрлешнĕ. Вăл пĕр аллине Игорь хулпуççийĕ çине йывăррăн хучĕ, тепринпе стакана илсе, хуçине каялла тăсса пачĕ.

— Эсĕ те пăрах çав ирсĕр йăлана,— терĕ вăл, «чармак куç» çине хаярrăн пăхса.— Мĕн тума çине тăрсах ӳсĕртме тăрăшатăн эс ăна?

Зверев йёрёнчёклён кулса ячё.

— Хăнăхтăр. Эпир ĕçетпĕр-çке.

— «Эпир»,— тăрăхласа илчĕ Козырев.— Эсĕ ăна хăвпа ан танлаштар. Унăн пурăнас пулать. Аплантăн-и? Ы-ых! Ытла киревсĕр этем вĕт эсĕ! — пысăк чышкипе «сĕтеле» çапрĕ шăртланнă Козырев.

— Мĕн... мĕн терĕн? — Зверев самантрах ура çине сиксе тăчĕ. Куçĕсем хаяррăн ялкăшрĕç, çирĕп чышкисем шурса кайиччен чăмăртанчĕç.— Мĕн терĕн эсĕ? Тепре кала-ха.

— Лар!— кăшкăрчĕ Козырев.— Тĕкĕн кăна! Çапса лапчăтатăп!

Телее, «чармак куç» тăруках лăпланчĕ.

— Хăвна çитеймесрен хăратăн-и-ха, шампа хырăм! — шӳт тăванçи пулчĕ вăл, йĕрĕнчĕклĕн кулкаласа.— Ме, кӳп эппин,— тăсрĕ вăл стаканне Козырев енне.

— Кирлĕ мар. Çитет мана та.

— Юрĕ, ан ĕç. Хама йӳнĕ ӳкет,— «чармак куç» çинеçинех икĕ стакан тултарса ĕçрĕ те сивĕннĕ шӳрпене васкасах çиме пикенчĕ. Анчах çиесси те пулмарĕ. Тăруках ӳсĕрĕлсе кайса, каллех Козыревпа харкашма тытăнчĕ.

— Бандит вĕт эсĕ! Вăрă! Кам пĕлмест сана? Хăйне йĕркеллĕ çын пек тыткаласшăн тата! Ниçта та каяймăн! Пире пĕр тăлăпа тăлланă. Ахалех тапăлтататăн. Росомаха килтĕр кăна. Вăл сана... Ха-ха-ха!

Кĕтмен çĕртен вăл Игоре кĕпе çухинчен ярса тытрĕ. Каччă ăна çăмăллăнах тĕртсе ячĕ. «Чармак куç» месерле кайса ӳкрĕ, тăма хăтланчĕ, вара тепĕр икĕ-виçĕ минутран харлаттарса çывăрса кайрĕ.

Козырев нумай вăхăт хускалмасăр, таçта аяккалла пăхса ларчĕ. Унăн хавассăр кăвак куçĕсем пушшех салхуланчĕç. Сасартăках шăмшак йывăрланса кайнине туйса, Игорь тăчĕ, кӳлĕ хĕррине кайса, савăт-сапа çуса тасатрĕ.

— Атя кайса пăрахар хӳшше,— терĕ Николай, «чармак куç» çине кăтартса.— Çĕр сивĕ, шăнса пăсăлĕ. Шăнапăвап та çисе ярать капла хăварсан. Çĕкле урисенчен,—вăл Зверева лĕнчĕркеленсе кайнă хулпуççийĕнчен тытрĕ. Вырнаçтарса вырттарсан, хӳшше кĕмелли шăтăка тирпейлĕн питĕрчĕ. Вара каллех хăй вырăнне ларса, пуçне усрĕ. Унăн кăмăлсăр пичĕ-куçĕ Игоре чылаях шиклентерчĕ.

— Пулă тытма каятпăр-и, Николай Федорович?

Козырев чĕнмерĕ.

— Тен, эсир выртса канас тетĕр?

— Çук, ĕççен çывăрас килмест ман. Лар. Акă кунта, хирĕç лар... Тăнла каланине,— терĕ вăл чылаях сиввĕн.

— Ну... Пĕлтĕн-и халĕ эпĕ камне? Илтрĕн-и? — Игорь

çине тĕтреленнĕ куçĕпе тинкерчĕ Козырев.— «Вăрă-хурах»... Анчах суять вăл. Суять! — Козырев каллех чышкипе «сĕтеле» туртса çапрĕ.— Çук, халĕ эпĕ вăрă-хурах мар!

Унтан ассăн сывласа илчĕ те пуçне салхуллăн усрĕ.

— Вунпилĕк çул каярах лекрĕм вĕсен серепине. Шутланă-и ун чух эпĕ вăрă пулатăп тесе? Эсĕ вĕсене ухмах тетĕн пулĕ... Тĕрĕс, ухмаххисем те пур. Анчах ăслисем те сахал мар... Ӳсĕр эпĕ халĕ. Ун пек чух яланах ытлашши палкатăп. Итле, тен, усси пулĕ. Кашни кунах сăнатăп сире. Толя та сан пекех çамрăк, анчах çирĕп. Ăна вăр-вар аваймăн... Пĕр пытармасăр кала-ха, паян вăл сан вырăнта пулсан, çапла ĕçме килĕшĕччĕ-ши?

Козырев чылаях ӳсĕр, анчах сăмахĕсем тĕрĕс.

— Мĕншĕн чĕнместĕн? Е тӳрĕ калани килĕшмест-и? Витĕрех куратăп сана. Хам çавăн пек, çын хыççăн каяканскер пулнă. Тăнла,— Козырев пирус туртса ячĕ,— çирĕм саккăрта эпĕ. Манăн çур пурнăç тĕрмесем тăрăх çапкалансах иртсе кайрĕ. Эрех çирĕ пурнăçа. Пĕтĕмпех çав усалтан пуçланчĕ. Шăп вунтăватă çул каялла. Çиччĕмĕш класра вĕренеттĕм. Ăс çитмен çав ун чух. Хăвăртрах ӳссе çитĕннĕ çынсем шутне кĕрес килетчĕ. Чĕлĕм туртма вĕрентĕм, унта-кунта çапкаланса çӳресе, çĕнĕ юлташсем тупрăм. Вĕсем мана эрех ĕçме вĕрентрĕç. «Эсĕ арçын вĕт»,— тетчĕç, кăшт иккĕленме тытăннине сиссенех... Шăп та шай паян сана астарса ĕçтернĕ пекех,— Козырев, Игорь çине пăхса, сиввĕн кулса илчĕ.— Çавсем çирĕç те ман пурнăçа,— Николай пирусне çине-çинех вăраммăн ĕмрĕ те аяккалла ывăтса ячĕ.

— Вăл ахаль ĕçтерет тетĕн-и? — ыйтрĕ Козырев, кĕске вăхăт чĕнмесĕр ларнă хыççăн хӳшĕ енне пуçĕпе сĕлтсе кăтартса.— Çук, каярахпа вĕсем пурте «çăкăр-тăвар хирехирĕç» теме тытăнаççĕ. Манăн укçа çук. Ăçтан тупас? «Ăна пирĕнтен ан ыйт, хăвах шутла»,— терĕ пĕри. Вара анне сехетне вăрласа пытăм, каярахпа пĕрле вĕреннĕ юлташ килĕнчен ылтăн хăлха алки çаклатса тухрăм. Унтан каллех... Акă хайхи тĕрме, ачасен колонийĕ. Нумай шухăшларăм унта хам пурнăç çинчен. Ирĕке тухсанах ĕçе кĕтĕм. Икĕ эрнере икçĕр çирĕм, хальхи укçапа çирĕм икĕ тенкĕ ĕçлесе илтĕм. «Туссем» мана каллех шыраса тупрĕç. «Ĕçе ухмахсем кăна юратаççĕ. Пăх-ха, эпир ĕçлеместпĕр, пирĕн вара ĕçме те, çиме те çитет, сана валли те пур. Ме!» — тесе, ман ума пачкипех укçа кăларса хучĕç. Чăтаймарăм, каллех çыхланса кайрăм. Унтан хваттер çаратнăшăн вунпилĕк çуллăха хупрес. Пиллĕкĕшне амнистипе каçарчĕç, вунă çулне лармалла пулчĕ.

Козырев, пуçне кăштах çĕклесе, çамки çине ÿкнĕ сарă çÿç пайăркисене çÿлелле çавăрса хучĕ. Сивĕ куçĕсем, кăмăлсăррăн хĕсĕнсе, таçта инçетелле тинкерчĕç.

— Йывăр пулчĕ малтанхи вăхăтра ĕçе хăнăхма. Ĕмĕрне те хам ирĕкпе чунтан ĕçлесе курман вĕт.

— Наташăпа хăçан пĕрлешнĕ эсир? Вăл та сирĕн пекех...

— Çук,— хăвăрт пÿлчĕ ăна Козырев.— Наташа ман пек çапкаланчăк пулман,— арăмĕн ятне асăнсан, унăн тĕксĕм сăн-пичĕ çуталчĕ, тем шухăша кайса, вăл пуçне пĕр-икĕ хут сулкаласа илчĕ, хуллен йăлкăшса кулчĕ.— Интереслĕ паллашу пулчĕ вăл... Юрĕ, итлеме кăмăл пулсан, пĕр тытăннăскер, пĕтĕмпех каласа парам эппин... Ун чух эпĕ Ягоднăй поселок çывăхĕнче приискра ĕçлеттĕм. Вăрлама пăрахрăм, ĕçлеме хăнăхрăм, кĕçех нормăна та тултарма пуçларăм. Пĕрле ĕçлекенсем те ман çине этемле пăхма тытăнчĕç. Е çавăн пек туйăнатчĕ-ши?.. Анчах Наташăпа мĕнле паллашни çинчен каласа парас тенĕччĕ-çке эпĕ...

Пĕррехинче ĕç хыççăн юлташсемпе сăра ĕçме кĕтĕмĕр. Халĕ астумастăп, тем пирки-çке пĕринпе тавлашса кайрăмăр. Вăл мана «вăрă-хурах» терĕ. Çак сăмах хальхинче мана чун-чĕререн кÿрентерчĕ. Эпĕ вĕриленсе кайрăм. Чăтаймарăм, алăри сулăмлă куркана тÿрех ун çине вăркăнтартăм. Вăл пĕшкĕнме ĕлкĕрчĕ. Курка вара сăра тултарса тăракан хĕр пуçĕ çумĕнченех вăркăнса иртрĕ. Савăтсапа чăнкăртатса ванни илтĕнчĕ.

Хальхи пекех астăватăп çав минутсене. Хĕр малтан йĕркесĕррĕн сапаланса выртакан савăт ванчăкĕсем çине, унтан сасартăках шăпланнă арçынсем çине пăхса илчĕ. Пысăк хура куçĕсем куççулĕпе тулчĕç. Вăл питне аллисемпе хупларĕ те шăппăн нăшлатса йĕме тытăнчĕ. Çакна курса, ман ăшра темле халиччен пĕлмен çутă туйăм хускалчĕ. Эпĕ хĕре чун-чĕререн шеллерĕм...

— Каçарăр,— терĕм эпĕ, çывăхах пырса.— Айăпран пулчĕ. Акă ваннă савăт-сапашăн укçа.

Козырев шăпланчĕ. Кăвак куçĕсене инçете тинкерсе, кĕске вăхăт шухăша кайрĕ.

— Наташăпа тĕл пуличчен манăн çывăх çын пулман,— каллех калама тытăнчĕ вăл,— çемьере эпĕ пĕччен ÿснĕ. Хама йĕркесĕр тыткаланине пула ачаранах килтен тухса кайма лекрĕ. Малтан анне çырсах тăратчĕ. Пĕр çырура атте урăх хĕрарăм патне кайни çинчен пĕлтерчĕ. Каярахпа кÿршĕ хĕрарăмĕнчен хут килчĕ. Çав уйăхра, çав кун аннÿне пытартăмăр тесе çырнă. Ĕсĕклесех макăртăм эпĕ çав

çырăва илсен. Çынсен ачисем пек чипер пурăннă пулсан, тен, атте те килтех юлатчĕ, анне те вилместчĕ. Капла, йĕпе сине сапа тенĕ пек, уншăн умлă-хыçлă икĕ пысăк хуйхă сиксе тухрĕ. Унччен те чирлекелетчĕ те, тӳсеймерĕ пулас,— Козырев куçĕсене сылтăм аллипе хупларĕ те, пуçне усса, каллех пĕр вăхăт чĕнмерĕ.

— Çав каçран Наташа чĕрене кĕрсе вырнаçрĕ. Çак кĕтмен çĕртен çуралнă ырă туйăм ман ăшра сарăлса çирĕпленсех пычĕ. Çавăнпа хĕрĕн малаллахи пурнăçĕ çинчен шухăшласа, эпĕ шикленме тытăнтăм.

— Мĕншĕн? — ыйтрĕ Игорь, Козырев каллех шăплансан.

— Çав вăхăтра принска халĕ кăна тĕрмерен çăлăнна тепĕр каччă ĕçлеме пырса кĕчĕ. Эпир пĕр шайккăрах пулнă, пĕр преступленишĕнех лекнĕ. Апла пулин те, эпĕ унăн чăн-чăн ятне те, хушаматне те пĕлместĕп. Росомаха — вăрман кушакĕ — теççĕ ăна вăрăсем хушшинче, поселокра Леша тесе чĕнетчĕç. Илемлĕ каччă, хăюллă, çивĕч. Тумĕ яланах шукăль. Анчах калама çук чее те усал. Юлашки вăхăтра эпĕ Леша Наташăна куç хывнă тенине илтнĕччĕ.

Росомаха — чăн-чăн тискер чĕрчун. Вăл хĕрхенме пĕлмест. Миçе хĕр ĕмĕтне татман, мăшкăлласа кулман пулĕ вăл! Епле систерес Наташăна? Анчах ĕненĕ-ши каласан? Кам эпĕ уншăн? Сăра ĕçме юратакан арçын. Кашни кун курса калаçас, пушă вăхăта кăшт та пулин пĕрле ирттерме май пулас пулсан, вăл, паллах, хăнăхнă пулĕччĕ. Анчах халĕ вăхăт çук. Росомаха хĕр тавра явăнать. Мĕн тăвас? Мĕнле пулăшас? Телее, пурнăç хăех май тупса пачĕ.

Çав кунсенче пĕрле ĕçлекен хĕрарăм çуралнă кун тесе хăнана чĕнчĕ. Эпĕ унччен вăл мĕнле çынне пачах та пĕлмен. Ĕçре маттур теме çук, анчах çынсенчен юлмасть. Хаваслă, калаçать, кулать. Тамара тесе чĕнетчĕç пулас. Пӳрчĕ пысăк, пĕчченех пурăнать. Эпĕ пынă çĕре хăнасем пуçтарăннă. Пăхатăп, сĕтел хушшинче Наташа ларать. Илемлĕ тумпа, çӳçне-пуçне килĕшӳллĕ тураса пуçтарнă. Ытла та чипер. Унпа юнашар — Росомаха. Вăл хĕре тем каласа култарать, çав самантрах çăткăн куçĕсем унăн пит-куçне, çара мăйне, кĕлетки-çурăмне çисе ярас пек сăнаса пăхаççĕ. Хĕсĕнкелесе, мана сĕтелĕн пĕр вĕçĕнче вырăн пачĕç. Кил хуçи юнашар ларакан хĕрлĕ çӳçлĕ, çӳллĕ кăкăрлă хĕрарăмпа паллаштарчĕ. «Тахçанах саншăн çунать»,— пăшăлтатрĕ вăл хăлхаран.

Ĕçмелли-çимелли темĕн чухлех. Тараватлă кил хуçи çине тăрсах хăналать. Кĕçех хаваслă шăв-шав пуçланчĕ, юрлама-ташлама тытăнчĕç.

Акă Тамара Наташа çумне çулăхрĕ.

— Ĕç тетĕп! Тĕппипех никлаттар! Унсăрăн пурĕпĕр хăнмастăп. Сана чунтан юратса ченнĕ, эсĕ паян манăн чи хаклă хăна. Урараи ӳкиччен ĕçетпĕр кĕçĕр. Киле çитеймĕп тесе кулянмалли çук. Вырăн пумай, выртăпăр та çыврăпăр,— вара, Росомаха çине пăхса, куçне йăлт! хĕссе илчĕ.

Çакна курсан, ман шăмшак сăрăлтатса кайрĕ. «Апла,— шухăшласа илтĕм эпĕ,— ку вечер хĕре улталама шутласа тупнă сăлтав кăна». Росомаха пирки тата çакна калас пулать: мĕн те пулин килĕшрĕ пулсан, ăна алла çавăрса илме нимĕн те шеллемест вăл, тем тума та хатĕр.

Çаксене шута илсе, эпĕ çаплах Наташăна ĕçме ӳкĕтлекен Тамарăна ташлама чĕнтĕм.

— Кăмăла каймарĕ-им? — ыйтрĕ вăл, пуçне пĕр-пĕччен ларакан хĕрлĕ çӳçлĕ хĕрарăм енне сĕлтсе.— Ахалех тиркетĕн.

— Чее иккен эсĕ. Çуралнă кун тесе улталатăн,— терĕм эпĕ юрнех, пĕлнĕ пек.— Мĕн чухлĕ тӳлерĕ Леша паянхи вечершăн?

Хĕрарăм сăнĕ самантрах улшăнчĕ. Чеен кулакан куçĕсем тĕксĕмленсе хĕсĕнчĕç, хаярланса сивĕнчĕç.

— Сана мĕн ĕç?

— Шел мар-и хĕре?

— Эпĕ те çамрăк пулнă. Мана никам та шеллемен. Вунсаккăртах, атте-аннерен уйăрса, Колымана илсе килчĕç. Мĕншĕн унăн манран лайăхрах пулмалла? Куртăр, пĕлтĕр.

— Путсĕр хĕрарăм,— терĕм эпĕ, ăна хам çумран тĕртсе ярса.

Телее, ырă марра юлашкинчен Наташа та сисрĕ пулас. Мĕн пулса иртнине кĕç-вĕç тавçăрса илес пек, вăл канăçсăр куçĕсемпе йĕри-тавра пăхкаласа ларчĕ. Эпĕ малти пӳлĕме чĕлĕм туртма тухрăм. Акă, алăк яри уçăлса кайрĕ. Наташа çакнă пальтоне вăртах вĕçертсе илчĕ те тăхăнмасăрах тулалла вирхĕнчĕ.

— Ната! Наталья! — сиксе тухрĕ хыçранах Росомаха.— Тăхта, итле эсĕ малтан!

Курткине хулпуççи çинĕн уртса, вăл хĕр хыççăн васкарĕ. Эпĕ, ăна тухма памасăр, алăка картласа тăтăм.

— Росомаха хăй çулне пӳлекенсене юратмасть,— сăрхăнтарчĕ вăл, çиллине аран-аран чарса.— Эсĕ ăна пĕлме кирлĕ,— терĕ.

Эпĕ хускалмарăм. Росомаха васкамасăр тумланчĕ.

— Атя калаçар,— терĕ вăл, алăк еннелле утса.

Кĕрхи каç тĕксĕм, сивĕ. Сайра йăлкăшакан электричество ламписем урама имшеррĕн çутатаççĕ. Пуç çийĕн хура пĕлĕт таткисем шăваççĕ. Урам икĕ енĕпе тăсăлакан çара тополь турачĕсем, темрен шикленнĕ пек, хуллен кăштăртатса калаçса илеççĕ...

Козырев шăпланчĕ. Йывăррăн çĕкленчĕ те вĕрекен шыва пуçламан чей пачки уçса силлерĕ, унтан каллех ларчĕ.

— Куратăн-и? — кăтартрĕ вăл сылтăм пичĕ çинчи суранран юлнă йĕре.— Çав усал кинжалпа чĕрсе илме ĕлкĕрчĕ.

— Вара? — васкатрĕ Игорь.

— Ну, Росомаха евĕр çынсем, тискер кайăксем пекех, вăя кăна пăхăнаççĕ,— тăсрĕ Козырев самахне.— Çавăнпа эпĕ чи малтан унăн çĕççине туртса илтĕм, унтан тумтирĕ çухинчен ярса тытрăм та, хăрах алăпах çӳле çĕклесе, антарса тăратрăм.

— Тепре курам хĕр çывăхĕнче! Чунна кăларса илетĕп! — терĕм эпĕ çилĕпе.— Ăнлантăн-и? Халĕ тасал куç умĕнчен!

— Асту, Тăсланкă! (Ку манăн вăрăсем панă ят),— юнарĕ Росомаха, çиллине нисçта хураймасăр.— Пирĕн урамра та уяв пулĕ-ха. Ун чух калаçăпăр.

— Урăх эпĕ ăна курман, илтмен ун çинчен. Семен паян акă каллех çав ята асăнчĕ,— Козырев аллипе чĕркуççийĕ çине тайăнчĕ те кăвак куçне умри кӳлĕ çине тĕллесе шăпланчĕ.— Вăт çапла ман пурнăç. Уçса патăм çылăхлă чуна чиркӳри пекех.

— Епле хăрамастăр эсир сĕм тайгара пĕччен çӳреме? Ăнсăртран хăшĕ те пулин...

— Вĕсенчен пĕри те манпа хире-хирĕç тăрса çапăçма хăяймасть. Сăлтавĕ те çук мана пĕтерме. Ну, Росомаха çавнашкал шут тытнă пулсан... Çук, вăл вăрттăн, куç хыçĕнче вĕлермест. Унăн малтан мăшкăлласа кулас, çын чунне асаплантарса киленес шухăш... Çапла тума Росомаха умĕнче манăн айăп çук. Хĕршĕн харкашса илни шутра мар. Сахал пулать-и ун пекки каччăсем хушшинче? — йăсăрланса выртакан вутпуççине Козырев вучаха тĕртсе хучĕ.— Малалла вара пурнăç кунран-кун улшăнса, юсанса пычĕ. Наташăпа час-часах тĕл пулма тăрăшрăм. Малтанхи кунсенче шанмасăр пăхатчĕ, пăрăнма тăрăшатчĕ, каярахпа ютшăнма пăрахрĕ. Пĕррехинче, киноран ăсатса янă чух, эпĕ ăна хамăн иртнĕ пурнăç çинчен пĕр пытармасăр каласа патăм. Каярахпа эпир пĕрлешрĕмĕр.

Ĕçре те хаклама пуçларĕç. Пĕррехинче пухура лайăх ĕçлекенсем хушшинче ман ята та асăнчĕç. Куншăн питĕ

хаваслантăм, «Тинĕх кĕтĕм йĕркеллĕ çын ретне»,— тесе шутларăм. Анчах савăнăç нумая пымарĕ. Иртнĕ пурнăç мана хăйĕнчен çаплах çăмăллăн вĕçертесшĕн пулмарĕ. Пĕррехинче сейфран ылтăн çухалнă тенĕ хыпар сарăлчĕ. Мана темиçе хут допроса чĕнтерчĕç, халлĕхе прииискран ниçта та каймастăп тесе, хут çыртарса, алă пустарчĕç. Эпĕ каллех пур çĕрте те тӳртĕн пăхнине, хыçра сиввĕн пăшăл-пăшăл калаçнине туя пуçларăм,— Козырев ассăн сывласа илчĕ.— Çавăн чухне тин «вăрă» тени ман пурнăçра... çук, манăнне кăна мар, Наташăнне те... çав ирсĕр ят пирĕн пурнăçа ĕмĕр тăршшĕнех вараласа пырасса ăнланса илтĕм. Ниçта та тарса пытанаймăн унран. Пĕрлех çӳрет, тепĕр чух хамран малта чупать,— Николай кĕленче тĕпĕнчи эрехе ярса ĕçрĕ, кĕпе çуххине вĕçертсе ячĕ.— Лайăхрах тишкерсе тĕрĕсленĕ хыççăн, эпĕ çак ĕçе хутшăнманни палăрчĕ,— тăсрĕ вăл сăмахне.— Следователь каçару ыйтрĕ. «Ĕçлĕр, урăх чăрмантармастпăр»,— терĕ. Анчах каллĕх пулмарĕ. Прииск начальникĕ хăй патĕнче çавăн пек шанчăксăр çынна тытас темерĕ пулас. Ĕçе те вăл мана прĕкпе мар, хушнипе çеç илме килĕшрĕ те. Следстви вĕçленсен, икĕ уйăх та иртмерĕ, тĕрлĕ сăлтав тупса кăларса ячĕç. «Суда пар»,— текенсем те тупăнчĕç, анчах çыхланас килмерĕ. Темиçе кун поселоксенче тĕрлĕ предприятисем тăрăх усăсăр сулланса çӳрерĕм. Документсене вуласа тухаççĕ те каялла тавăрса параççĕ — вырăн çук... Пĕччен пулсан тата... Наташăна шеллетĕп. «Вăрă арăмĕ»,— теççĕ халĕ ун пирки. Тата ача кĕтетпĕр эпир. Нивушлĕ çак усал ят çав айăпсăр чуна та вараласа ыраттарĕ?

## X

Çамрăксем патне Михаил Васильевич час-часах пырса çӳрет: ĕç пирки сӳтсе явма, шахматла выляма е ахаль халапланса ларма.

Пĕррехинче вăл уйăхри ĕç çитĕнĕвĕсемпе паллаштарса тухса кайсан, калаçу Козырев çине куçрĕ.

— Телей Игорьпе Тольăна. Николай Федорович килнĕренпе нормăна кашни кунах иксĕр процента яхăн тултараççĕ,— терĕ Миша, ĕнсине хыçкаласа.— Маначчĕ çавăн пек юлташ.

— М-да. Козырев ĕçлеме хастар. Пирĕн ăна çитме ниçе,— сăпайлăн сăмах хушрĕ Игорь, çырса пĕтернĕ çырупе конверта чикнĕ май.

— Козыревĕ чăнниех маттур ĕнтĕ,— яланхи пекех тăрăхласа каларĕ Миргалим.— Пурне те пултарать: ĕçлеме

те, вăрлама та, суйма та. Игоре хăй çинчен епле илемлĕ юмах ярса панă вăл. Итлесен, куççулĕ тухмалла.

— Мĕншен юмах? Мĕн пĕлетĕн эсĕ ун пурнăçĕ çинчен çапла калама? — ыйтрĕ Игорь кăмăлсăррăн.

— Пĕлместĕп пулсан, шавламăттăм. Вăл кунта киличченех илтнĕ эпĕ çав маттур шурфовщик мĕнле çын пулнине. Прииск начальникĕ каласа пачĕ. Хăвăрах шухăшлăр: лайăх ĕçлекен çынна пĕр айăпсăр кам хăваласа ярать. Михаил Васильевичран тĕлĕнетĕп. Тупнă аппаланмалли. Ун вырăнĕнче пулсан... — завхоз каласа пĕтермерĕ, пичĕкуçĕ кăна усаллăн турткаланса илчĕ.— Вăрлама пăрахса ытти çынсем пек йĕркеллĕ пурăнас тет пулсан, мĕншĕн вăл халĕ те ĕлĕкхи тусĕсене манмасть? — терĕ вăл каллех, йĕри-тавра ларакан юлташĕсене пăхса çаврăнса.— Мĕн тесе хутшăнать вĕсемпе? Çĕркаç кăна пĕри килсе кайрĕ. Тополь айĕнче самаях мăкăртатса тăчĕç.

— Пулĕ,— терĕ Толя, кĕнекине хупса.— Анчах, сăлтавне пĕлмесĕр, уншăнах епле айăплас? Пăхатăп та эпĕ Козырев çине — пирĕн пек этемех вăл: иртĕхсе-ашкăнса çӳремест, çемьере те шăкăл-шăкăл. Кунсăр пуçне, тата виçĕ çыншăн ĕçлет. Çаратнă тенине вара никамран та илтмен. Эсĕ кăна шавларăн пĕррехинче сехет вăрланă тесе. Халĕ хăшĕ-пĕри Миргалим хăех кăларса ӳкернĕ, браслечĕ вĕçерĕнсе каякан пулнă тенине темиçе те илтнĕ теççĕ... Сехетне тупнă текенсем те пур,— юриех хушса хучĕ каччă.

Миргалим Толя енне пуçне ялтах çаврăнчĕ.

— Кам каларĕ? — ыйтрĕ вăл çиллессĕн.— Сехет пĕрене мар. Туп-ха ăна вăрманта.

— Апла эсĕ ăна хăвах çухатнă. Мĕншĕн Козырев çине яратăн? — çавăнтах сиксе ларчĕ Игорь.

Миргалим хăй ытлашши персе янине туйрĕ те сăмахне тепĕр çулпа чуптарчĕ.

— Илтетĕр-и, епле хӳтĕлеççĕ вĕсем Козырева? Шăл шурри те ан кăтарт. Сăлтавĕ паллă-çке. Пĕр звенора ĕçлеççĕ, укçа нумай илеççĕ ăна пула.

— Санăн мĕнпур шухăшу та укçа çинче кăна. Урăх нимĕнле тĕллев те çук,— тавăрчĕ Толя.

— Тен, эсĕ ахаль ĕçлеме килĕшетĕн? Çапла пулмасăр. Пĕлетпĕр сирĕн пек чапа тухасшăн вĕтеленсе çӳрекенсене. Сăмахпа ти-ти-ти, пуринчен те лайăх, ăшра вара...

Тавлашу хĕрсе каясса сиссе, калаçăва Игорь хутшăнчĕ.

— Миргалим, сана, чăн та, питĕ пуян теççĕ. Тĕрĕс-и? Интереслĕ, ăçта пытарса усратăн вара мулна? Чӳлмекре, çĕр айĕнче мар пулĕ те? — шӳт тума тăчĕ вăл.

Завхоз чĕри картах турĕ. Ăçтан пĕлет Игорь унăн пу-

иилăхĕ çиччен? Мĕнле майпа? Камран илтнĕ? Çук, ахаль çеç каларĕ пулас. «Анчах укçа пирки тек калаçу хускатма кирлĕ мар»,— шиклĕн шухăшласа илчĕ Миргалим.

— Акă тепĕр ваккачĕ тытăнчĕ,— терĕ вăл, Игорь çине куç айĕн пăхса.— Э-э, чухлатăп эпĕ, Козырев саншăн мĕн тери хаклине. Вăл кунтан каяс пулсан, ун çумĕнчи çутă çăлтăр та куçран çухалать-çке. Поэт! Ха-ха-ха!

— Авă епле! — тăсарах каларĕ тĕлĕннĕ Игорь. Каччă васкамасăр тăчĕ, чышкисене чăмăртаса, завхоз çывăхнех пычĕ.

— Эпир çук чух кĕсъесене ухтаратăн апла?!

Ах, Миргалим, каламалла марччĕ сăвă пирки. Анчах сăмах çерçи мар çав, çăвартан тухсан, тытаймăн.

— Кĕсъесене? Эпĕ-и? Ан култар. Ха-ха-ха! — каллех ахăлтатсах кулса ячĕ чее завхоз.— Урайĕнче выртать блокноту. Камăн-ши тесе, уçса пăхрăм çеç. Лăплан. Шӳт турăм вĕт. Нивушлĕ ăнланмастăн? — вăл Игоре хулпуççинчен кăмăллăн шартлаттарса çапрĕ те, алăка яри уçса, ирĕке тухрĕ.

Миргалим пирус чĕртсе ячĕ, куç харшийĕсене çиллессĕн хускаткаласа, шухăшласа тăчĕ. Татах хирĕçӳ сиксе тухрĕ. Каллех Козырев пирки пуçланчĕ. Завхоз вăл килнĕренпе канăçне çухатрĕ.

Халĕ акă ĕнертенпех пĕр шухăш пуçран тухмасть. Мĕн тума килнĕ-ши çĕркаçхи çын? Миргалим ăна çывăрма выртиччен кăштах уçăлас тесе тухсан курчĕ. Каçĕ çап-çутах. Малтан хăлхана такамсем мăкăртатса калаçни пырса кĕчĕ, унтан çыннисене те курчĕ. Пĕри Козырев — вăл палаткине кĕрсе çухалчĕ, тепри — вăтам пӳллĕ, тапчам арçын шавлă Сухахэ енне утрĕ. Кам вăл? Мĕн тума килнĕ сĕмçĕрле? Склада çаратма шут тумаççĕ-ши? Ăмсанмалла хаклă япалах çук, анчах илес текенсем валли тупăнатех. Ку та нимех те мар. Суту-илӳ хучĕсем Миргалимăн яланах йĕркеллĕ. Хăрамалли çук. Анчах милици килет, тĕрĕслеме тытăнаççĕ. Протокол... акт... тĕрлĕ хут... «Çапах документсене тепĕр хут пăхса тухас. Тем пулĕ»,— шикленерех шухăшларĕ завхоз, аясăр сукмакпа склад енне утса.

Çанталăк лăпкă мар. Тавралăха вичкĕн çил хумхантарать, тайга, такама ӳпкеленĕн, кăмăлсăррăн шавлать. Миргалима хавассăр шухăш шăртлантарать, унăн ăшчикĕ тăвăнать. Мĕнле шуйттан çавăрттарса килчĕ çав Козырева кунта? Халĕ хăраса пурăн унпăн.

Склада кĕрсен, Миргалим алăка яри уçса пăрахрĕ. Хура сатинран çĕленĕ чӳрече каррине хăпартса, йĕри-тавра тимлĕн пăхса çаврăнчĕ. Пурте йĕркеллех, ют çын алли пыр-

са тӗкӗнни курӑнмасть. Завхоз пӗчӗк сӗтеле чи ҫутӑ вырӑна — уҫса пӑрахнӑ алӑк патне — лартрӗ те хутсене тӗрӗслеме тытӑнчӗ. Шӑп. Счет шӑрҫисем кӑна хуллен шаклатаҫҫӗ.

— Чв-и-ик! Чв-и-ик! — илтӗнчӗ ҫывӑхрах ҫинҫе сасӑ. Пысӑк хӑрӑк турат хыҫӗнчен Миргалим ҫине пакша евӗр ҫӑмламас вӑрӑм хӳреллӗ пӗчӗк чӗрчун тинкерсе пӑхрӗ. Ҫутӑ тирӗ тӑршшӗпех темиҫе ҫинҫе хура йӗр тӑсӑлать. Шиклӗ куҫӗсем ҫынна пӑлханса сӑнаҫҫӗ. Хӑрушӑ-ҫке. Анчах курас, пӗлес килет.

— А-а, пӑрӑнтӑк! — сасса илтсе, пуҫне ҫӗклерӗ Миргалим.— Каллех килтӗн-и?

Чӗрчун ҫын сӑмахӗсене хускалмасӑр итлет, пӗчӗк куҫӗсем кӑна канӑҫсӑррӑн выляҫҫӗ.

— Тайгара мӗн пурри сахал эппин сана, ыйткалама килетӗн,— терӗ завхоз, пӗчӗк чӗрчун ӑна ӑнланас пек.— Ҫапла ҫав. Ҫӑткӑн эпир пурте... Ну, сана хӗл каҫмалӑх ҫимӗҫ хатӗрлесен — ҫитрӗ те. Анчах ҫын ун пек мар... Атя, вӗҫтер кунтан, ан чӑрмантар ӗҫлеме,— Миргалим хускалчӗ кӑна — ҫивӗч чӗрчун йӑлт ҫеҫ тарса пытанчӗ.

Шутласа пӗтерсе хутсене вырӑнне хурсан, завхоз алӑка таччӑн хупса ҫаклатрӗ. Краҫҫын лампи ҫутса, пӗчӗк чӳрече каррине антарчӗ.

— Ҫынна апат-ҫимӗҫпе ҫемье пурри сахал ҫав,— пӑрӑнтӑка курса, пуҫа пырса кӗнӗ шухӑша малалла тӑсрӗ завхоз.— Ӑна нумай кирлӗ. Кермен пек чаплӑ пӳрт-ҫурт аякранах ҫуталса лартӑр, тухса ҫӳреме машина — пурте ӑмсанса пӑхчӑр. У-у-у, шутласа та пӗтерес ҫук... Кунсӑр пуҫне, чыс, хисеп. Укҫа пулсан — пурте пулать,— ҫапла мӑкӑртатса, Миргалим сейфа уҫрӗ. Акӑ вӑл укҫа! Пилӗк кун суту-илӳ тунӑ уншӑн. Пӗр пайӗ патшалӑхӑн, ӑна каялла хурас пулать. Теприи — Миргалим кӗсйине чӑмать. Ку — тупӑш. Нумай мар, хулара е пысӑк поселокра ӗҫлес пулсан, паллах, ытларах тупма пулать. Анчах купта шанчӑклӑ, хӑрушлӑх сахалтарах.

Суту-илӳре Миргалим — ватӑ ҫерҫи. Йӗрки-йӗркине аван пӗлет. Вунтӑватӑ ҫултан лавккара ӗҫлеме тытӑннӑ.

Хӗсӗнкелесе, завхоз кӗтесре ларакан ещӗк патне пычӗ, хупӑлчине уҫрӗ. Акӑ вӑл, Миргалимӑн ӗмӗчӗ, ун пурнӑҫӗн тӗп тӗллевӗ. Ещӗк тӗпӗнчен туртса кӑларнӑ пӗчӗк тимӗр коробка хуллен чӑнклатса уҫӑлчӗ те, сӗтел ҫине яка хупӑллӑ перекет кӗнекисем сапаланса ӳкрӗҫ. Пурлӑхне ҫапла час-часах кӑларса тӗрӗслет пулин те, Миргалим кашнинчех хумханать. Халӗ те унӑн сарлака кӑкӑрӗ хаваслӑн ҫӗклене-ҫӗклене анать, аллисем палӑрмаллах чӗтреҫҫӗ,

пичĕ-куçĕ кăмăллăн ялкăшать. Вăл кăвак хупăллă пĕчĕк кĕнекесене пĕререн-пĕререн асăрханса илет, уçса пăхать, пӳрнисемпе хуллен сĕртĕнсе ачашлать. Пуçра çутă ĕмĕт çиçет, куç умне калама çук пуян, илĕртӳллĕ картинăсем туха-туха тăраççĕ...

Анчах кĕнекесене тек кунта хума юрамасть. Козырев йышшисем тупсан, пĕрне те хăвармаççĕ. Çĕнĕрен илес тесен, заявлени çырмалла. Милици пĕлме пултарать. Тĕплĕ вырăна пытармалла. Лайăх шухăш пачĕ Игорь. Миргалим темшĕн тавçăрса илмен ун çинчен ку таранччен. Ещĕке куçарса лартса, вăл кĕске авăрлă кĕреçе илчĕ те васкасах чавма тытăнчĕ. Кунта, çĕр айĕнче, шанчăклă пулĕ.

Тата тепĕр ĕç пур... Кун пирки Миргалим тахçанах шухăшлать. Урăх кĕтме юрамасть. Мĕн пулать те мĕн килет. Е Козырев, е Багаутдинов... Завхоз сĕтел хушшине ларчĕ, умне хут листи хурса, аллине ручка илчĕ. Тутине ерипен хускаткаласа, пĕр вăхăт шухăшласа ларчĕ, унтан ручкине таса хут çийĕн васкамасăр шутарма тытăнчĕ. «Милици начальникне...»

Ответ нумай кĕттермерĕ. Район центрĕнчен таврăннă Михаил Васильевич Козырева ĕç хыççăн хăй патне кĕме чĕнчĕ...

— Мĕн çинчен калаçрăр эсир Николайпа? Питĕ пăшăрханчăк пит-куçпа тухса кайрĕ-çке? — ыйтрĕ Татьяна Ивановна, пиçнĕ апатне палаткăна илсе кĕрсен.

Тем шухăша кайса чӳречерен пăхса тăракан Михаил Васильевич арăмĕ енне çаврăнчĕ.

— Милицие чĕнеççĕ ăна,— пĕлтерчĕ вăл кĕскен. Татьяна Ивановна ун çине тĕлĕнерех пăхрĕ.

— Мĕн пулнă?

— Иртнĕ шăматкун район центрĕнче çăмăл машина çухалнă. Çав каçах çĕрле кӳршĕ районта универмаг çаратнă.

— Вара?

— Милицире çак икĕ преступление те пĕр çынсемех тунă тесе шутлаççĕ.

— Пулма пултарать. Анчах мĕншĕн Николая чĕнеççĕ? Вăл мĕнрен айăплă?

— Халлĕхе ăна никам та айăпламасть-ха. Çак ĕçе вăл та хутшăнма пултарнă тесе шутлаççĕ.

— Ăнланмастăп. Мĕн пирки?

— Жалоба пынă милицие. Кунти шурфовщиксен ушкăнĕ ячĕпе. Ну, кам çырнине чухлатăп-ха эпĕ,— Михаил Васильевич çӳлĕк çинчен пирус илсе туртма тăчĕ.

— Пăрахатăп терĕн вĕт,— ӳпкелесе пăхрĕ ун çине Татьяна Ивановна.

— Ара-çке. Мансах кайнă,— пĕр хирĕçлемесĕр килĕшрĕ Михаил Васильевич, пирусне вырăнне хурса, унтан сăмахне малалла тăсрĕ.— «Ĕç хыççăн кашни каçах таçта кайса çухалать, канмалли кунсенче килте сайра пулать. Çĕрле ун патне темле çынсем килеççĕ. Тĕслĕхрен, кĕçнерникун каçпа пурте çывăрса лăплансан, хăй палаткинчен инçе мар такампа нумайччен калаçса тăчĕ»,— тесе çырнă. Вăт шутла: кĕçнерникун Козырев патне çын килнĕ, шăматкун вăл пĕччен çĕр выртмаллах пулла тухса кайнă. Çав каçах магазин çаратнă.

— Темле,— пуçне сулкаларĕ хĕрарăм.— Ĕненес килмест... Анчах пулма пултараймасть теме те çук... Жалоба пулман пулсан?

— Е пулла кампа та пулин пĕрле кайнă пулсан,— арăмне ăнланса, хушса хучĕ прораб.

— Наташăна шел. Епле шанса качча тухма пултарнăха вăл çавăн пек çынна? Чăннипех айăпсăр пулсан тем пекехчĕ. Ĕçе иличченех каларăм сана — итлемерĕн.

Михаил Васильевичăн куç харшийĕсем кăмăлсăррăн хускалчĕç.

— Ĕненместĕп эпĕ Николай айăплине. Ыйтса пĕлеççĕ те яраççĕ акă.

Анчах темиçе кун та иртрĕ — Козырев çаплах таврăнмарĕ.

## XI

Еçрен килекен шурфовщиксем халĕ кăна базăран таврăннă завхоза палатка умĕнче тĕл пулчĕç.

— Салам, Миргалим! — сылтăм аллине çӳлелле çĕклесе, аякранах кăшкăрчĕ Миша.— Мĕнле çĕнĕ хыпарсем илсе килтĕн?

Миргалим çаврăнса та пăхмарĕ, лаша çурăмĕ çине çакнă икĕ тулли миххе çĕклерĕ те çĕре антарса хучĕ.

— Çыру пур-и? — ыйтрĕ Игорь, завхоз çывăхнех пырса.

Лешĕ каллех чĕнмерĕ. Лашине тăлларĕ те алăри йĕвенĕпе ăна пĕтĕм вăйран çиллессĕн туртса çапрĕ.

— Кай, çи!

— Çыру пур-и тетĕп? — каллех ыйтрĕ Игорь.

— Суккăр мар вĕт эсĕ! — тăруках кăшкăрса пăрахрĕ Миргалим.— Куратăн пулĕ мĕн тунине? Çук сана çыру! Çук!

— Тольăна тата?

— Ак çак михĕрс, çиелтех, кăларса ил те сирĕл хăвăртрах,— Миргалим тунката çине ларчĕ.— Ывăнтăм паян. Йытă пекех, купĕпех чупрăм. Хамшан мар, пĕтемпех сыншăн асап куратăп. Тавтапуç тенине илтес çук. Мĕншĕн çавăн пек канăçсăр-ши ман кăмăл? Ма эпĕ, ыттисем пек, пуррипе лăпланма пултараймастăп-ши? Мĕн пăтрататăн унта? Е куçу курмасть-и? Журнал хушшинче çырусем,— терĕ вăл, Игорь çине кăмăлсăррăн пăхса.

Каччă тусĕн çырăвне суйласа илчĕ, ыттисене хăй тавра пуçтарăнса тăнă юлташĕсене пачĕ те аяккалла пăрăнчĕ.

— Ха, — мăкăртатрĕ вăл, конверта хыпаласа.— Сăнӳкерчĕк пур пулас. Урăх çырмастăп текенскер... Юрату çĕрулми мар тесе ахальтен каламан çав. Толя, хăвăртрах кил! — кăшкăрчĕ вăл.— Ташла! Унсăрăн памастăп,— йĕкĕлтерĕ Игорь, конверта тусĕн пуçĕ çийĕн çавăркаласа.— Кама-кама-кама-как, кама-нуша, кама-как!

«Вальăран!» — тавçăрса илчĕ Толя. Вăл ташланçи турĕ те, ялт! сиксе, çырăва карт! туртса илчĕ. Валя! Валюша! Мĕн çырать-ши?

Каччă, çырăва васкаса уçса, вăрманалла утрĕ.

Игорь палаткăна кĕме тăнăччĕ, анчах йывăçсем хушшипе кăвак кĕпеллĕ хĕрарăм çывхарнине курсан чарăнчĕ.

— Сывлăх сунатăп, юлташсем! Çыру çук-и пире? — ыйтрĕ çынсем патне пырса тăнă Наташа.

Миргалимăн хырса çинçелетнĕ хуп-хура куç харшийĕсем кăмăлсăррăн турткаланса илчĕç.

— Çук,— терĕ вăл сиввĕн, вара умра тăракан хĕрарăмран пăрăнса ларчĕ.

Наташа темиçе хаçат суйласа илчĕ те кайма тăчĕ.

— Ăçта çавăн пекех васкатăр вара, Наташенька? Кăштах каласса тăрăр ĕнтĕ пирĕнпе,— терĕ Иван Степанович, çамрăк хĕрарăм çинчен куçне илеймесĕр. Ыттисем те, ăшшăн кулкаласа, шӳтлеме тытăнчĕç.

Хăй çине арçынсем уççăнах ăмсанса пăхнине курсан, Наташа пуçне чикрĕ.

— Тавтапуç. Вăхăт çук тăма,— вăл çаврăнчĕ те, çав куççенчен хăвăртрах пытанас тенĕн, каялла васкарĕ. Хăяккăн ларакан Миргалим чăтаймарĕ, хĕрарăм çине хапсăнчăклăн йăпăрт пăхса илчĕ, вара каллех пирус мăкăрлантарма пикенчĕ.

Игорь вырăнтан та хускалмарĕ, Наташăпа, ыттисем пек, кулкаласа калаçмарĕ, анчах хĕрарăм кайса çухаличченех тунсăхлă куçне ун çинчен илмерĕ.

— Шурса кайрĕ юлашки вăхăтра. Хуйхăрать пулас упăшки çинчен шухăшласа,— терĕ Иван Степанович, хĕр-

арăмăн кăвак кепи йываçсем хушшинче куранми пулсан.— Анчах пурпĕрех чипер. Çамрăк чух малалла мĕнле пурăнасса шутламастпăр çав. Эрне çитет ĕнтĕ Николай кайни. Те килет, те çук. Шел хĕрарăма,— Капуста йывăррăн сывласа ячĕ.

— Ниушлĕ Козырев чăннипех айăплă?

Чĕнмесĕр итлесе ларакан Миргалим пирусне вăраммăн, антăхса туртрĕ.

— Гриша, эсĕ-и паян дежурнăй? Илсе юл мĕн кирлине, ыттисене склада кайса хуратăп,— терĕ вăл, ура çине тăрса.— Илтрĕн-и эсĕ? Мĕн çăварна карса ларатăн тата?— кĕтмен çĕртен каллех хаяррăн кăшкăрса пăрахрĕ завхоз аттине хывса тăхăнакан шурфовщика, унтан умра выртакан миххе пĕтĕм вăйран тапса ячĕ те палаткăна сирпĕнсе кĕчĕ. Мĕн тума кĕнине манса, çавăнтах каялла сиксе тухрĕ, вара çĕрте выртакан миххе аннчен ярса тытрĕ те ансăр сукмакпа склад çине сĕтĕрсе кайрĕ. Çынсем ун хыççăн тĕлĕнсе пăхса юлчĕç.

— Мĕн пулнă çак ăна паян?

Капуста, чеен кулкаласа, янахне пӳрнипе шаклаттарса кăтартрĕ.

— Ĕçнĕ,— пăшăлтатрĕ вăл,— яланах усалланать вăл ун пек чух....

Çук, хальхинче завхоз ăшчикне эрех мар, çамрăк хитре хĕрарăм тулаштарнă... Наташăна пĕрре курсанах Миргалим канлĕхне çухатрĕ. Анчах ун чĕрине юрату мар, ăмсану, хура çĕлен пек, сиввĕн шăвăнса кĕчĕ. Çапкаланчăк Козыревăн çавăн пек чипер арăм. Мĕнле тивĕçпе?... «Анчах телей, çурхи çанталăк пек, улшăнуллă, вылянчăк. Паян Козырев аллинче, ыран, тен, ман çине çаврăнĕ»,— шухăшларĕ ун чух Миргалим.

Ку таранччен вăл Наташăпа ăнсăртран тĕл пулнă пек туса кăна юмахлакаларĕ, тишкерчĕ, сăнарĕ, кăвар куçĕпе, ачаш сăмахсемпе çамрăк хĕрарăм чĕрине хускатма тăрăшрĕ. Акă тĕплĕн калаçса татăлма меллĕ вăхăт çитрĕ: Козырев таврăнмарĕ, тен, таврăнмасть те. Анăçлă пулчĕ пĕлтерни. Мĕнле-ха вăл шăп кирлĕ вăхăтра çырса яма пĕлчĕ?

Наташа хăйне савас çуккине Миргалим çак самантра шутласшăн та пулмарĕ. Мĕн тесе тиркетĕр-ха ăна çамрăк хĕрарăм? Миргалим сăнран чипер, маттур пӳ-силлĕ арçын. Козырев пек пылчăкра çăрăлмасть. Унăн тумĕ те ялан типтерлĕ, килĕшӳллĕ. Чĕлхи-çăварĕпе те вăл хĕрарăма килĕшме пĕлет. Тата мĕн кирлĕ? Çапла шухăшласа, завхоз палаткăран тухрĕ. Вăхăт вуннă та çитмен-ха. Çынсем ĕçре. Капуста харлаттарсах çывăрать. Татьяна Ивановна

Сухахэ тăрăх темле сиплĕ курăксем пуçтарма кайрĕ. Çынмĕн курасран шиклenмелли çук. Çапах Миргалим малтан склад еннелле утрĕ, унтан хăвăрт пăрăнчĕ те, йывăç тĕмĕсем хушшипе йăпшăнса, пĕчĕк палатка патне пырса тăчĕ. Анчах алăк хăлăпне перĕнсенех, унăн хăюлăхĕ таçта кайса кĕчĕ. Килнĕренпе миçе хутчен курса калаçрĕ Миргалим Наташăпа. Миçе хутчен хăй килĕштерни çинчен систерсе каларĕ. Çапах хĕрарăм ку тарана çитсе те нимĕнле шанчăк та памарĕ. Те тархаслаттарасшăн, те упăшкинчен хăрать. Нивушлĕ халĕ те ахалех пулĕ? Эх, мĕн иккĕленсе тăмалли пур вара? Чипер хĕрсен, çамрăк хĕрарăмсен пуçне сахал çавăрнă-и Миргалим? Мĕн чухлĕ куççулĕ юхтарнă пулĕ уншăн айван хĕрсем... Анчах вăл алăк хăлăпĕнчен тытрĕ кăна... сасартăк, темрен хăраса, каялла чакрĕ. Тĕлĕннипе унăн хуп-хура куç харшийĕсем çӳлелле çĕкленчĕç. Пĕр вăхăт вăл шалтах хытса тăчĕ. Чăннипех арçын сасси илтрĕ-ши вăл е ăна çавăн пек туйăнчĕ? Нивушлĕ Козырев килчĕ? Миргалим кăштах тăхтарĕ, унтан, чĕрне вĕççĕн утса, хăлхине кăшт уçăлса тăракан алăк çумне тытса итлерĕ. Тарăхнипе унăн хура куçĕсем тĕксĕмленчĕç, пичĕ пĕрре шурса, тепре хĕрелсе кайрĕ.

— Сансăр пурăнма пултараймастăп! — илтĕнчĕ шалтан чĕререн йăлăнакан арçын сасси.— Кăшт та пулин юратсам.

Миргалим итлеме урăх вăй-хал çитереймерĕ. Ав епле! Ун патне еркĕнсем çӳреççĕ иккен! Акă каллех пăшăлтатать, каллех йăлăнать! Кам-ши? Нивушлĕ Игорь? Анчах вăл ĕçре пулмалла-çке? Урăх çĕртен килнĕ пулас. Шăртланнă Миргалим пĕчĕк палатка патĕнчен вăртах çаврăнса утрĕ. Ара, тарăхма сăлтавĕ пурах ĕнтĕ. Çăткăн тилĕ те тĕсенĕ кайăка сăмса умĕнченех вĕçсе тарнăшăн çилленет теççĕ.

Анчах Миргалим нумай каймарĕ, чарăнчĕ, шухăшласа тăчĕ. Унăн халĕ кăна хаяррăн ялкăшакан куçĕнче, çӳхе тути çинче ирсĕр кулă выляса илчĕ.

«Мĕнех вара? Пулин, — шухăшларĕ вăл.— Качча илес хĕр мар вĕт. Тепĕр тесен, капла пулса тухни пушшех лайăх. Тек хуçкаланма хăяймĕ. Е манпа пурăнма килĕшĕ, е эпĕ мĕн курни-илтнине пĕтĕмпех упăшкине пĕлтерĕп. Акă хайхи хитре кайăк çакланчĕ те читлĕхе».

Çаплах йĕрĕнчĕклĕн кулкаласа, Миргалим палатка патне пычĕ, каллех итлерĕ. Шăп. «Калаçса татăлчĕç пулас. Кĕрсех курас-ха. Унсăрăп тунма пултарĕç. Алăкне çаклатасчĕ хăть»...

Вăл хыттăн шаккарĕ те, ответ кĕтмесĕрех, шалалла ярса пусрĕ.

Çурма тĕттĕм палаткăра, пĕчĕк чӳрече умĕнче Наташа тимлесех çĕвĕ çĕлесе ларать. Тĕлĕннĕ Миргалим, хăй куçне хăй ĕненмесĕр, йĕри-тавра хăвăрт пăхса çаврăнчĕ. Таса, пĕчĕк пӳлĕм. Кăвак çивитти витнĕ тирпейлĕ вырăн...

— Сывлăх сунатăп, Наташа! — терĕ нимĕн те тавçăрса илеймен Миргалим хăйăлтатакан сасăпа.— Пĕчченех-и?

Наташа Миргалим çине тинкерсе пăхрĕ те, ĕçне аяккалла хурса, ура çине тăчĕ.

— Коля çук. Паллах, пĕччен,— терĕ вăл.

Çав самантра сылтăмра тем чăнклатрĕ, палаткăра хĕрарăмăн уçă сасси янраса кайрĕ.

— Мускав калаçать. Юлашки хыпарсем итлĕр...

Радио! Авă кам калаçнă иккен. Фу! Епле малтанах тавçăрса илмерĕ-ха Миргалим? Каласан, никам ĕненес çук. Хăй çинчен темле йывăр япала илсе пăрахнă пек, Миргалим çăмăллăн сывласа ячĕ, унăн куçĕсем каллех выляма тытăнчĕç, тути хаваслăн кулкаларĕ.

— Ах, Наталочка, пĕлесчĕ, мĕн тери хăратрăн эсĕ мана!

— Эпĕ-и?

— Çук, эсĕ мар. Радио....

Миргалим, çаплах кулкаласа, радио ăна епле улталани çинчен шӳтлесе каласа пачĕ.

— Вĕлеретĕп тесех кĕтĕм. Чăннипех çапла пулас-тăк, чĕррĕн тухаймастчĕ вăл кунтан.

Наташа, пуçне çĕклесе, умри арçын çине тăрăхласа пăхрĕ.

— Авă мĕнле çын иккен эсĕ,— терĕ вăл тĕлĕннĕн.— Мана упăшка пĕрре те хĕсĕрлемест. Урăххи килĕшсен, кай, чармастăп тет.

— Çапла ĕнтĕ вăл,— терĕ чее Миргалим, хĕрарăм сăмахĕсене урăхла ăнлананçи пулса.— Ун пек çынсем телее хаклама пĕлеççĕ-и? Вĕсемшĕн çемье мар, тĕрлĕ юлташсемпе ăçта кирлĕ унта çапкаланса çӳрени хаклă. Пур чух упрамастпăр, çухатсан йĕретпĕр тесе ахаль каламан çав.

Наташа каллех çĕлеме пикенчĕ. Миргалим ăна выçă куçĕпе сăнаса пăхса тăчĕ. Вара пукан илсе çывăхнерех ларчĕ те, çĕлекен аллине ярса тытса, хĕрӳллĕн чăмăртарĕ.

— Чунăм!

— Эсĕ мĕн! — аллине картах туртса илчĕ хĕрарăм. Илемлĕ куç харшине кăмăлсăррăн хĕссе, вăл каллех сиксе тăчĕ. Çав самантрах арçыннăн вăйлă аллисем унăн çинçе пилĕкне ыталаса, хĕрӳллĕн чăмăртарĕç.

— Ната!.. Наталочка! — антăхса кайсах пăшăлтатрĕ Миргалим.— Сансăр телей те, хаваслăх та пулас çук...

Кунěн-çěрен пěр сан çинчен кăна шухăшлатăп. Эпě сана алăра йăтса çӳрěп. Мěн пурри пěтěмпех саншăн. Мěн тăватăн çав вăрăпа? Пăрах эсě ăна...

— Яр халех! Яр тетěп! — тарăхса каларě çирěп ытамран çăлăнма хăтланса кěрмешекен хěрарăм. Анчах Миргалим унăн сăмахěсене тăнламарě, хирěçленине пăхмасăрах, ăна тата хытăрах ыталаса чăмăртарě.

Наташа икě аллипе те унăн сарлака кăкăрне тěртсе хирěнчě, мěнпур вăйне пухса, ытамран çăлăнчě, вара çаплах хăй енне туртăнакан арçынна тěртсе ячě.

— Çывхар кăна! — Миргалим çинчен куçне илмесěр, вăл темиçе утăм каялла чакрě. Кěтесре тăракан турчка ун ури айне пулчě.— Çывхар кăна,— терě Наташа каллех, сулмаклă турчкана ярса илсе.— Пуçна çапса çуратăп!

— Наталочка! — йынăшса ячě Миргалим çаплах тăна кěмесěр.— Хěрхенсем кăштах. Манăн хěрӳ юрату саншăн нимěн те мар-и?

— Сана юрату мар, хěрарăм кирлě,— терě Наташа сиввěн.— Ăнланмасть тетěн пулě. Тек ман тавра выçă кушак аçи пек çаврăнса çӳретěн. Тепре çулăх кăна, пěтěмпех Кольăна каласа паратăп. Вăл сана...

«Çук, юри йěкěлтесе пуççаптарас текенсем çапла хăтланмаççě. Ах, епле кураймасăр пăхать вăл халě! Нивушлě ахалех тухса кайма тивет? Вăт мăшкăл! Тепěр майлă калаçса пăхсан...»

Алăк хăлăпěнчен тытнă завхоз çамрăк хěрарăм çине салхуллăн пăхса илчě.

— Ахалех кěтетěн,— терě вăл.— Николай килмест. Ямаççě ăна. Эпě следовательпе калаçрăм.

— Суятăн! Хупма унăн айăп çук!

Миргалим сӳрěккěн кулса илчě.

— Нимěн те пěлместěн иккен эсě. Козырев ахаль вăрă мар, вăл çав йăх-яха канашсем парса, вěрентсе пыраканě пулнă. Эсě ăна канмалли кунсенче е каçсерен пулла каять тесе шутланă. Вěсем вара, пěрле пуçтарăнса, хăйсен ěçěхěлěсене сӳтсе явнă. Ĕненместěн пулсан, Игорьтен ыйт. Вăл пěрле пулнă пулăра Козыревпа, курнă... Çěрле, çынсем çывăрсан, хăшпěр чух кунта та чупса килеççě. Складра, хăвах пěлетěн, темиçе пин тенкěлěх тавар. Çавăн çинчен шухăшласа, юлашки вăхăтра эпě йěркеллě çывăраймастăп. Кашни сас-чěвě хăлхана кěрет. Час-часах тухса пăхатăп. Куркаланă Козырев темле палламан çынсемпе калаçса тăнине... Наточка! — терě Миргалим, аллисене хěрарăм енне тăсса.— Пěрре курсах эсě ман чěрене ěмěрлěхех кěрсе лартăн. Йăлăнатăп!

Çук, Миргалимăн чыссăр тухса сулланма тиврĕ. Мĕн тăвăн? Кашни кашăках аш турамĕ лекмест çав... Акă мĕн пирки урать иккен халĕ Миргалимăн ăшчикĕ.

Ун хыççăн пăхса юлнă шурфовщиксем çынна эрех епле улăштарса яма пултарни çинчен калаçкаласа саланчĕç. Игорь калаçăва хутшăнмасăр, пĕр вăхăт пуçне усса, тем çинчен шухăша кайса тăчĕ, вара пысăк тирек çумне тайăнса çыру вулакан тусĕ патне утрĕ.

— Ну, мĕн çырать Валя?

— Акă, кур,— Толя ăна сăнӳкерчĕк тăсса пачĕ.

— О-о-о,— терĕ Игорь, тăруках хавасланса. Каччă пĕр вăхăт сăнӳкерчĕке чĕнмесĕр пăхса тăчĕ.

— Чăваш хĕрĕсем,— терĕ те ассăн сывласа ячĕ.

Икĕ хĕр. Пĕри хулăн çивĕтне пуç тавра тирпейлĕн кăшăлласа хунă. Темрен тĕлĕннĕ пек, куçĕсем таçта инçете тинкернĕ. Тепри çавракка тулли питлĕ. Кăпкалатса туранă çӳç пайăркисем çамка хĕррипе упкăланса усăннă. Вăл тантăшĕ енне тайăннă та Игорь çине илĕртӳллĕн кулкаласа пăхать.

— Хăшĕ? — ыйтрĕ Игорь, кăтра çӳçлĕ хĕр çине ытларах пăхса.

— Пĕл.

— Иккĕшĕ те чипер.

— Акă,— пӳрнипе тĕртсе кăтартрĕ Толя çивĕтлĕ хĕр çине.

— Телейлĕ эсĕ, Толя,— Игорь каллех ассăн сывласа ячĕ, унăн хитре сăнĕ салхуланчĕ. Вăл тем калас тесе тусĕ çине пăхрĕ, анчах лешĕ хăй ăссĕнех йăлкăшса кулнине курсан, чĕнмерĕ, хăрăк турат илчĕ те, умри курăка сиресирс, чуллă çĕре чĕркелеме тытăнчĕ.

— Тепĕр хĕрĕ мĕнлескер тата?

— Пĕлместĕп. Çывăх тантăш тесе çырать. Шупашкарта слетра паллашрăмăр тет.

Телейлĕ Толя Игорь яланхи пек мар салхуллине те, вăхăтран вăхăт йывăррăн сывла-сывла янине те сисмерĕ. Унăн вĕçĕмсĕр савнă хĕрĕ çинчен калаçас килчĕ.

— Чылай улшăннă вăл,— терĕ каччă, сăнӳкерчĕке хăй куçĕ умĕнчех тытса.— Анчах мĕнрен улшăннине шепле те тавçăрса илейместĕп. Куçĕ те, сăмси те, тути те çавах, анчах пурпĕр унччен Валя мар.

— Ватăлнă пулĕ,— ирĕксĕрех ăмсанса, тĕртсе илчĕ Игорь.

— Çук, — хаваслăн кулчĕ Толя,— пушшех чиперленсе кайнă вăл, тупата.

— Мĕн çырать?

— Пӗл.

— Юрататӑп, кӗтетӗп тет пулӗ ӗнтӗ. Ахальтен мар ҫуллӑ икерчӗ пекех йӑлкӑшатӑн.

— Ҫук, пӗлеймерӗн. Кунта килетӗп тет.

— Ӑҫтан илтрӗн? — тӗлӗнчӗ Игорь.— Ҫакӑнта, тайгана килет-и? Эсӗ ху вара?.. Мӗн? Хирӗҫ мар пулӗ-ҫке?

— Айван,— кулса ячӗ Толя, тусне хуллен чышса илсе.— Кунтан ытла мӗн кирлӗ тата мана? Килме халлӗхе укҫа ҫук пирки ҫеҫ тытӑнса тӑрать.

— Эх, Толя! Апла кӗҫех туй тӑватпӑр! Урра! — кӑшкӑрса ячӗ Игорь. Вӑл тусӗн аллинчи сӑнӳкерчӗке туртса илчӗ те палатка еннелле вӗҫтерчӗ.

— Игорь! Пар сӑнӳкерчӗке. Мӗн тума? — чарасшӑн пулчӗ ӑна Толя.

— Тӗлӗнтермӗш! — терӗ лешӗ, ун енне ҫаврӑнса.— Мӗн тесе пытарасшӑн эсӗ ҫавӑн пек телее юлташусенчен? Сан вырӑнта пулсан, эпӗ пӗтӗм тӗнчене кӑшкӑрса пӗлтермелле!

Палаткӑра ку хыпара хӗрӳллӗн сӳтсе яврӗҫ.

Кама мӗн. Капуста тӳрех пулас арӑмӑн тивӗҫлӗхӗсем ҫинчен калаҫма пуҫларӗ.

— Чипер хӗр. Кун пеккине илме юрать,— терӗ вӑл Тольӑна.— Мӑн кӑмӑллӑ пек туйӑнать. Ют арҫын вӑр-вар ҫыхланма хӑяс ҫук. Кунта, тайгара, шӑп ҫавӑн пекки кирлӗ те.

— Тепри тата? — ыйтрӗ Капустӑна тимлесе итлекен Миша.— Тепри мӗнлескер?

— Тепри? Ку сан пек халь кӑна сӑмса шӑлма вӗреннӗ каччӑ ҫине пӗрре йӑлкӑшса пӑхать те чӗресӗр хӑварать. Куратӑн-и, епле чее, илӗртӳллӗ унӑн кулли. У-у, пӗлетӗп эпӗ вӗсене, витӗрех куратӑп. Вӑхӑт иртрӗ ҫав, сӳнчӗ телей ахалех...

Кӑшт аяккарах тем ҫинчен хӗрӳллӗн канашласа тӑракан ҫичӗ-сакӑр шурфовщик Тольӑна хӑйсем патне чӗнсе илчӗҫ.

— Апла кӗҫех хусах каччӑ шутӗнчен тухатӑн?

— Ара. Акӑ укҫа илетӗп те тӳрех ярса паратӑп.

— Укҫа пирки ӗҫ тӑмӗ,— терӗ вӗсенчен пӗри.— Мӗн чухлӗ кирлӗ? Паянах тупса пама пултаратпӑр. Халӗ санӑн укҫа ҫинчен мар, хӗр килсен ӑҫта пурӑнасси ҫинчен шухӑшламалла. Кӗҫех сивӗтет вӗт.

— А мӗн, кунта, тайгара, ҫеҫ пурӑнмалла-им? Поселокра хваттер тупма пулать,— калаҫӑва хутшӑнчӗ ушкӑна пырса тӑнӑ Миша.— Пумайӑшӗ ҫапла пурӑнаҫҫӗ.

— Ытла айван-ҫке эсӗ, ачам,— тӑрӑхларӗ Капуста, ӑна пуҫӗнчен шӑлкаласа илсе.— Чуп-чуп уйӑхне кам уйрӑм

пурӑнать? Каччӑ тесе шутлатӑп хӑвна, ҫавна ӑнланмастӑн.

— Козырев пӳрт лартма хатӗрленет авӑ. Вӑл хӑй платник те.

— Эпир те лартма пултаратпӑр. Вӑрман пур, мӑк пур, пӑчкӑ-пуртӑ пур, ӗҫлеме алӑ пур. Урӑх мӗн кирлӗ? Пӗлменнине Николайран ыйтатпӑр. Эпир те, ун пекех, куҫса ҫӳремелле тӑватпӑр. Урӑх вырӑна каймалла пулсан, ҫунана трактортан ҫаклататӑн та яра пар. Лартса паратпӑр. Туя чӗнчӗр кӑна. Илтетӗн-и, Толя? Чаплӑ туй тумалла вара!

Юлташӗсем ҫемьеллӗ пурнӑҫа йӗркелесе яма ҫапла, чи ҫывӑх тӑван пек, хӑйсем ҫине илни, пулӑшу сӗнни Тольӑна чун-чӗререн хумхантарса ячӗ.

— Тавтапуҫ, тусӑмсем... Туй пирки тавлашу пулмӗ... вӑй ҫитнӗ таран,— терӗ вӑл, сасартӑках капланса килнӗ куҫҫульне ҫӑтса.

— Игорь, эсӗ тата мӗн пуҫна усса ларатӑн? Е санӑн та авланас килсе кайрӗ-и?— тӑрӑхласа илчӗ Капуста.

— Мӗн, авланас тесен, санран ыйтмалла-им? Апла пулсан, ан ҫыпҫӑн,— Игорь тӑчӗ те палаткӑран тухрӗ.

Толя халӗ тин тусӗ ытла та салхуллине асӑрхарӗ.

— Тӑхта, эпӗ те пыратӑп! — терӗ вӑл, ун хыҫҫӑн вӑрманалла утса. Хуса ҫитсе, Толя аллине Игорь хулпуҫҫийӗ ҫине хучӗ, тунсӑхлӑ куҫӗнчен тинкерсе пӑхрӗ.

— Мӗн пулнӑ сана?

Игорь чӗнмерӗ.

— Халиччен эпир пӗр-пӗринчен нимӗн те пытарманччӗ.

Игорь каллех шарламарӗ, утнӑ май, кармаша-кармаша, йывӑҫ ҫулҫисене таткаларӗ. Унтан чарӑнчӗ те Толя ҫине салхуллӑн пӑхса илчӗ.

— Наташӑна юрататӑп эпӗ,— терӗ вӑл шӑппӑн.

Тольӑн тӗксӗм куҫ харшийӗсем кӑмӑлсӑррӑн хускалса илчӗҫ. Игорь калани ӑна тӗлӗнтермерӗ. Ҫапла пуласса вӑл Наташӑна чи малтан курсанах чухларӗ.— «Ах, Игорь, Игорь! Лайӑх ҫын эсӗ, шанчӑклӑ тус. Анчах, ман шутпа, пӗр ҫитменлӗх пур санӑн. Кашни чиперкке ҫинех ӑшӑ куҫпа ӑмсанса пӑхатӑн. Юрату-и вӑл? Тунсӑх пирки ҫуралнӑ ҫӑмӑл туйӑма пула арлӑ-арӑмлӑ, ача кӗтекен хӗрарӑм шухӑшне пӑтратни, ҫемйине аркатни чӑнни пех путсӗр япалаҫке. Нивушлӗ ҫавна ӑнланмастӑн?» — шухӑшларӗ Толя. Вӑл тусне хӑтӑрса тӑкасшӑнччӗ, анчах, унӑн куҫӗсем ытла та салхуллине курсан, хӑйне хӑй чарчӗ.

— Эсӗ ухмаха ан ер-ха. Шухӑшла кӑштах пуҫупа,— хуравларӗ вӑл чылаях йӑвашшӑн.

— Шухӑшламан тетӗн-и? — сӑмах хушрӗ пуҫне сал-

хуллăн усса пыракан Игорь.— Килнĕреппех вăл ăшăмран тухмасть. Çĕрле те, кăнтăрла та канлĕх çук... Толя, тăванăм,— каччă тусĕн кăмăлсăр пит-куçне курса, ун çине йăлăнса пăхрĕ.— Ан вăрç, тархасшăн. Эсĕ те ăнланмасан, кам ăнланĕ ĕнтĕ? Хам та пĕлетĕп,— унăн сасси чĕтресе кайрĕ.— Анчах мĕн тăвас-ха? Аякран куратăп кăна — чĕре çулăмпах çунма тытăнать. Эх, пурнăç! Вăл та телейсĕр, эпĕ те кăлăхах асапланатăп!

Игорь сăмахĕсем Толя чĕрине пырса тиврĕç, каччă кăмăлĕ сасартăках çемçелчĕ. Унăн çепĕç туйăмлă тусĕпе чунчĕререн калаçас, ăна йăпатас килчĕ, анчах вăл пурпĕр чĕлхе вĕçне килнĕ сăмахсене каламарĕ.

— Юрату,— терĕ Толя, хăйпе хăй калаçнă пек хуллен,— инкек кăтартма, куççулĕ юхтарма çуралнă юрату мĕн тума кирлĕ-ши вăл?

Игорĕн салхуллă куçĕсем самантрах сивĕнчĕç.

— Козырев йĕресрен хăратăн-и? Наташа йĕрсе асапланни саншăн нимĕн те мар эппин?

— Йĕрет-и, йĕмест-и — эпир курман, пĕлместпĕр,— татса хучĕ Толя çирĕппĕн.— Анчах Козырев Наташăна мĕнле юратнине эсĕ пĕлетĕн. Тивĕçлĕ, лайăх мăшăр çын çемйине аркатмасăрах тупма пулать. Николайшăн вара, Наташăсăр пуçне, никам та пулман, пулас та çук. Арăмĕ пăрахса каяс пулсан, мĕн пулать ăна? Çавăн çинчен шухăшланă-и эсĕ?

Игорь чĕнмерĕ.

— Атя ларар,— терĕ Толя, çилпе ӳкнĕ йывăç çине кăтартса.— Пĕлтерме ĕлкĕреймерĕм юлташсене. Михаил Васильевич халĕ кăна раципе хыпар илнĕ. Суд следствийĕ Козырев преступление хутшăннă тенине çирĕплетмен.

Пуçне усса ларакан Игорь хускалмарĕ.

— Е сана ку хыпар хаваслантармасть-и? — ыйтрĕ Толя, тусĕ çине сăнаса пăхса.

Игорь пирус кăларчĕ, аякри сопкăсем çине куçĕсене тĕллесе, нумайччен чĕнмерĕ.

— Николая эпĕ усал сунмастăп,— сăмах хушрĕ вăл вăраххăн.— Кирлĕ пулсан, уншăн тем тума хатĕр. Лайăх çын вăл. Вăйлă, харсăр. Анчах Наташа унпа пурпĕр телей тупас çук.

— Хăй телейĕшĕн кăна пурăнакан хĕрарăм çавăн пек çынна качча тухмасть,— хирĕçлерĕ Толя.— Кунсăр пуçне Наташа ыттисем шеллессе, хӳтĕлессе кĕтекен çын мар. Упăшкине шанмасть пулсан, вăл унпа çапла асапланса пурăнас çук. Юрататъ Наташа ăна. Çемьери телейшĕн мĕн пултарнă таран кĕрешет. Михаил Васильевич та ĕненет Козырева. Манăн та питĕ ĕненес килет.

— Эпĕ ĕненместĕп пулĕ çав,— ассăн сывларĕ Игорь.— Унсăрăн чĕрем çапла ыратмĕччĕ. Темшĕн Наташа мана халĕ кунĕн-çĕрĕн йĕнĕ пек, вĕçĕмсĕр хуйхăрнă пек туйăнать. Эх, мĕн кăна тумăттăм-ши эпĕ унăн телейĕшĕн!

— Тӳррипе кала-ха,— терĕ Толя, тусне куçран тинкерсе пăхса.— Козырев малтанхи пекех йĕркеллĕ ĕçленĕ пулсан, эсĕ ун арăмĕ çинчен çапла шухăшласа, чĕрӳне çунтарнă пулăттăн-и?

— Эсĕ ман туйăмсене те манран лайăхрах пĕлетĕн апла,— сиввĕн хуравларĕ Игорь.— Тен, кама юратассине те каласа парăн,— вăл тăчĕ те палатка еннелле утрĕ. «Чăнах та, Козырева милицие чĕниччен, чĕре çапла çуннине астумастăп»,— шăвăнса тухрĕ пуçра кĕтмен шухăш.

Çĕрте сĕткен пулмасан, йывăç-курăк ешереймест, юрату та çавăн пекех: шанчăк çук пулсан, вăл ӳссе аталанаймасть. Анчах... юратăвах пулчĕ-ши ку?

— Ан çиллен, йăнăшрăм пулсан,— терĕ Толя, тусне хулпуççийĕнчен хуллен çапса.— Çапах шухăшла. Хытă шухăшла...

## XII

Çав çу пĕрле ĕçлекенсене Козырев хăй çинчен нумай калаçтарчĕ, Михаил Васильевича та чылай шухăшлаттарчĕ. Следствинчен таврăнсан, нумай та ĕçлеймерĕ, каллех...

— Мĕншĕн иккĕнех? Николай ăçта? — пырса тăчĕ прораб Тольăпа Игорь ĕçленĕ çĕре.

— Темшĕн халĕ те килмерĕ.

— Хм... Чирлемерĕ пулĕ-çке. Игорь, чупса кайса килха. Мĕн унта?..

— Хĕвелпе пĕрлех тăрса тухса кайнă. Арăмне систермен. Аçта, мĕн тума кайнине Наташа пĕлмест,— терĕ Игорь салхуллăн.

— Ак тамаша,— тĕлĕнчĕ прораб.— Ну, юрĕ. Килсен каласа парĕ. Ĕçлĕр,— вăл вара васкасах малалла утрĕ.

Хĕвел анса, тавралăха каç мĕлкийĕ хупăрласан, Михаил Васильевич палаткине Наташа чупса кĕчĕ. Пичĕ çинче юн тумламĕ юлман тейĕн, хут пекех шурă, пысăк куçĕсенче хăрани, пăлхани.

— Татьяна Ивановна! Хăвăртрах! — терĕ вăл чыхăначыхăна.— Коля таврăнчĕ. Чĕп-чĕр юн! — вара çавăнтах каялла тухса вирхĕнчĕ.

— Акă тата! — хыпăнса ӳкрĕ хĕрарăм. Мĕн кирлине пĕчĕк ещĕке васкаса хурса, вăл алăк патне утрĕ.

— Миша, шприцсем вĕрет. Халех. Эпĕ чупрăм.

Пĕчĕк палаткăра эмел шăрши сăмсана перет. Вырăн çинче выртакан Козырев патĕнче Татьяна Ивановна хыпкаланать. Урайĕнче татăлса çĕтĕлсе пĕтнĕ ваткăллă телогрейка, юнлă кĕпе, майка тирпейсĕррĕн сапаланса выртаççĕ.

Наташа васкаса чейникпе вĕретнĕ шыв илсе кĕчĕ.

— Михаил Васильевич,— терĕ Козырев, прораб çывăха пырса тăрсан.— Сире пĕлтермерĕм. Паян эпĕ...

— Кайран каласа паратăн. Халĕ шăп вырт. Ан чăрмантар ĕçлеме,— чарчĕ ăна Татьяна Ивановна.— Миша, шприц ăçта? Пар-ха,— терĕ вăл упăшкине.— Наташа, çутă кирлĕ. Лампа пур-и? Çутат, Миша.

— Татьяна Ивановна, ун пекех ан хыпкаланăр,—каллех сăмах хушрĕ Козырев.— Манăн хулпуççи çеç кăштах ыратать. Ывăнтăм пулас. Çавă кăна.

— Юрать. Халĕ хулпуççине пăхăпăр. Суран уçă, пысăках мар, анчах тарăн. Юн нумай юхнă. Шыçса хĕрелсе кайнă,— хăй тĕллĕн мăкăртатрĕ врач.— Николай, ыратать пулин те, хускат-ха аллуна. Юрать... Шăмă тĕрĕс-тĕкелех пек, анчах пурпĕр рентгенпа пăхас пулать... Наташа, шыв сивĕнчĕ-и? Пулăш-ха. Пуç вĕçне пыр. Сурана çăвăпăр. Чăт, Николай. Пĕлетĕп: хытă ыратать... Маттур! Хисеплетĕп тӳсĕмлĕ çынсене. Халĕ çыхăпăр.

Ĕçне пĕтерсен, Татьяна Ивановна пукан çине йывăррăн тĕшĕрĕлчĕ, алă тупанĕпе çамки çинчи тарне шăлса илчĕ.

— Лăплан, Наташа. Хăрамалли çук пек туйăнать. Ыран ирех больницăна леçмелле. Миша, систер тракториста. Машина юсавлă мар тесе, тытăнса тăмалла ан пултăр.

Козырев лăпкăн сывланине илтсе, вăл юлашкинчен кайма пуçтарăнчĕ.

— Çывăрса кайрĕ. Çĕр йĕркеллех иртме кирлĕ,— пăшăлтатрĕ вăл.— Ансăртран кансĕрленме тытăнсан, пырса чĕнетĕн.

— Юрĕ.

— Наташа,— чĕнчĕ арăмне Козырев, иккĕшех юлсан.

Çамрăк хĕрарăм, пукан илсе, упăшки çумне пырса ларчĕ, унăн сапаланнă çӳç пайăркисене çемçен шăлса ачашларĕ.

«Турăçăм! Мĕн чухлĕ кăвакарнă çӳç! Хăш вăхăтра? Енер кăна çукчĕ-çке. Мĕн тӳссе ирттернĕ вăл паян?» — шухăшларĕ Наташа, йăпăртатса аннă куççульне хăвăрт шăлса илсе.

— Лăплан. Ан йĕр. Эпĕ сывах,— Козырев арăмĕн аллине хуллен чăмăртарĕ.— Паян вĕсемпе ĕмĕрлĕхех татăлса килтĕм. Урăх çулăхма хăяймĕç.

— Каçар мана,— терĕ Наташа, куççульне çăтса.— Тав-

çăратăп, упта эсĕ ĕнерхи калаçу хыççăн кайма шут тытнă. Çапла пулса тухасса пĕлнĕ пулсан...

— Çук, Наташа, уншăн мар. Хăйсем чĕнчĕç... Миргалимăн, паллах, курнине сана каламалла пулман. Анчах вĕсенчен хăшĕ-пĕри кунта килсе кайниччe манăн айăп çук... Итле, ĕнтĕ пĕтĕмпех каласа паратăп. Росомаха... Çавă... Э-э-э...

Николай шăпланчĕ, каллех çывăрса кайрĕ. Сарлака кăкăрĕ хуллен çĕклене-çĕклене анчĕ. Анчах лăпкă ыйхă нумая пымарĕ. Акă Козырев асаплăн туртăнса илчĕ, йынăшса ячĕ. Пуçра тӳссе ирттернĕ хăрушă картинăсем вĕçĕмсĕр пăтранчĕç, канлĕ çывăрма памасăр пĕрин хыççăн тепри куç умĕнче курăна-курăна иртрĕç...

— Мĕнле çынсем килеççĕ сан патна çĕрле? Мĕн тума? — ыйтать Наташа кăмăлсăррăн.

— Сана Росомаха кĕтет. Юлашки хут чĕнетĕп теме хушрĕ,— пĕлтерет кĕтмен çĕртен йывăç тĕми хыçĕнчен тухса тăнă палламан çамрăк...

Акă Николай тайга тăрăх васкамасăр утать. Çӳллĕ сопка тăррисене хупласа, ăна хирĕç хура йывăр пĕлĕт шăвать. Кĕçех унăн тĕксĕм çивиттийĕ тавралăха талккăшпех хупăрласа илет. Шурă юр пĕрчисем вĕçкелеме тытăнаççĕ. Сивĕ... Козырев сопка айĕнче ӳсекен сапаланчăк туратлă ватă лиственница патне çывхарать. Авă вĕсем... Виççĕн. Варринче Росомаха. Яланхи пекех шукăль тумланнă. Аллисене пилĕке тытнă. Хура кăтра çӳçĕ çамки çине сапаланса аннă. Козырев çывхарнине хускалмасăр пăхса тăраççĕ.

— Курманни нумай пулать. Темиçе пĕлтерсе те килесшĕн пулмарăн-çке. Мантăн апла ĕлĕкхи юлташсене,— тет Росомаха, Николая хирĕç икĕ-виçĕ утăм туса.— Ну, мĕнле пурăнатăн?

Пичĕ-куçĕ кăмăллă, сасси çемçе. «Ох, ахальтен мар ку! Росомаха çапла йăвашшăн калаçма тытăнсан, ыррине ан кĕт. Мĕн тума чĕнчĕ-ха вăл ăна? Пулса иртнĕ харкашушăн тавăрма-и? Анчах унтанпа кĕçех икĕ çул çитет. Козыревăн Росомаха умĕнче урăх айăп çук».

Бандит, çаплах кулкаласа, сивĕ куçĕпе Козырев çине сăнаса пăхать.

— Маттур, вăйлă эсĕ. Ытла та вăйлă,— сăрхăнтарать вăл сăмахĕсене.— Астăватăп тытăçса илнине. Эпĕ те имшеркке мар та, çапах анчăк çурине çĕкленĕ пекех йăтса таратрăн вĕт... Кам çĕнме пултарать-ха сана? — ыйтать вăл, Козырев çине ытарлăн пăхса.— Шел, пирĕн хушăра санпа кĕрешме тивĕçли çук. Пăхса тăма питĕ интереслĕ пулĕччĕ...

Николай çинчен çаплах кӳçне илмесер, вăл куртка кĕсйинчен пистолет кăларать, васкамасăр авăрлать...

Алă-ура самантрах çемçелсе вăйсăрланать, шăмшака сивĕ тар тапса тухать. Росомаха пăшал таврашне алла ахаль тытмасть.

— Кунта ытла уçă вырăн. Ансăртран çын курма пултарать. Атя ут, ав çавăнта, стланик тĕмисем патнелле,— кăтартать Росомаха, пуçĕпе сĕлтсе.

«Апла çитрĕ пурнăç вĕçĕ...» Козырев хăранине туймасть. Анчах чĕрене калама çук йывăр тунсăх çавăрса илет. Хирĕç вичкĕн çил вĕрет. Стланик тĕмĕсем, унпа сывпуллашнă пек, симĕс пуçĕсене çĕре çитиех усаççĕ.

Кĕрс! янраса каять хыçрах пăшал сасси.

Кашни утăмрах вилĕм кĕтсе пынă пулин те, Козырев шартах сикет, чарăнать, унтан ерипен каялла çаврăнса пăхать. Мĕн пулчĕ? Росомаха камран чупсах тарать? Сывăхранах печĕ-çке. Мĕншĕн вĕлермерĕ вăл ăна? Аманни те туйăнмасть...

Ытла та хытă хумханнă Николай пăшал сасси хыççăнах такам хаяррăн мĕкĕрсе янине те, сывăхрах типĕ турат шартлатса хуçăлнине те илтмерĕ. Вилĕм пачах тепĕр енчен сывхарнине вăл умри йывăç тĕмĕ хыçĕнчен сăмламас кĕлетке сиксе тухсан тин ăнланса илчĕ. Çынна курсан, упа тата хăрушшăн мĕкĕрсе ячĕ. Акă вăл кайри урисем çине çĕкленчĕ. Сывăхрах, умрах. Николай унăн хаяр кӳçне, сарă çивĕч шăлĕсене курать, пĕр хăлхинчен юн йăпăртатса юхнине асăрхать. Тискер чĕрчунран хӳтĕленес пек, Николай сарлака алă тупанĕпе питне хуплать, икĕ утăм каялла чакать, вара, хăй те сисмесĕрех, тискер сасăпа кăшкăрса ярать. Аманнă упа, çаплах хăрушшăн мĕкĕрсе, çын çине ыткăнать, ăна хăй айне туса лутăркать. Пит-куçа вăрăм çăм хуплать, сывлăш питĕрĕнет. Тăвăннă Козырев мĕнпур кĕлеткипе тапăлтатма тытăнать, пуçне пăра-пăра питне аран-аран ирĕке кăларать. Кăкăр тулли сывласа ярать çеç, сылтăм хулпуççийĕ çĕçĕпе чикнĕ пек ыратса каять. Упан вăрăм, çивĕч чĕрнисем, ваткăллă тумтире шăтарса, ӳте тирĕнеççĕ. Телогрейка çатăртатса çурăлать. Акă вилĕм. Юнашарах. Кĕске самантра Козырев пуçĕнче пĕтĕм пурнăç вĕлтлетсе иртрĕ: ачалăх, аşшĕ-амăшĕ, тĕрме, лагерь, юлташсем... Наташа. Вĕсен кĕçех ача çуралмалла. «Ниушлĕ кураймăп?» Юлашки шухăш ăна вăй-хал пачĕ. «Çеçĕ! — çиçĕм пек ялтлатрĕ пуçра телейлĕ шухăш.—Çеçĕ пур-çке!» Каллех тумтир çатăртатса çурăлать, каллех çивĕч чĕрнесем ӳт-пĕве тирĕнсе чĕрмелеççĕ. Анчах шанчăкпа хавхаланнă, атă кунчинчен çĕççине туртса кă-

ларма тĕрмешекен Козырев хальхинче ыратнине туймасть. Хăвăртрах! Хăвăртрах!

Акă упа, тискеррĕн мĕкĕрсе, çынна карт туртса çĕклерĕ — çĕçĕ аврinчен çатăртаттарса тытнă алă çӳлелле ыткăнчĕ. Халĕ хаяр чĕрчунпа çын пуçĕ пĕр шайрах, унăн куçĕсем, çивĕч шăлĕсем умрах... Сăмсана вĕри йывăр сывлăш пырса çапăнчĕ. Çав самантрах сывлăшра çивĕч хурçă ялтлатрĕ. Пĕтĕм вăйран сулса янă вăрăм çĕçĕ упа пырне аври таранах шăтарса кĕчĕ. Куç умĕнчи лапсăркка ура картах туртăнчĕ. Упа сиксе тăчĕ — çын та унран юлмарĕ. Вăл йывăррăн хăрăлтатрĕ. Юлашки вăйне пухса, упа каллех тăшманĕ çине ăнтăлчĕ, анчах чĕрине лекнĕ çĕçĕ ăна ĕмĕрлĕхех лăплантарчĕ. Упа çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ, пĕр-икĕ хут туртăнса илчĕ те урăх хускалмарĕ. Хаяррăн ялкăшакан куçĕсем тĕксĕмленсе хупăнчĕç.

Çак тытăçăва сопка çинчен виççĕн пăхса тăчĕç. Çавна туйса, Козырев вĕсен енне пуçне çĕклерĕ. Упа çын ури умне лаплатса ӳксен, бандитсем пĕрин хыççăн тепри çаврăнса утрĕç. Сасартăках çĕçĕ вăйсăрланнă аларан чуллă çĕр çине чăнклатса ӳкрĕ. Пĕтĕм шăмшака сӳрĕклĕх çавăрса илчĕ. Чăтма çук çывăрас килсе кайрĕ...

Мĕн чухлĕ выртнă-ши вăл? Алăри сехет пĕтĕмпех арканнă. Ремень çинче кăшкарĕ кăна. Кăвак тӳпене хупăрлакан çӳхе тĕксĕм пĕлĕт витĕр хĕвел хăюсăррăн çутатать. Унран шутласан, кăнтăрла иртнĕ. Каçчен киле çитмелле. Анчах кăшт хускалсанах, сылтăм хулпуççи çĕçĕпе чикнĕ пекех ыратать. Çурăлса таткаланнă телогрейка витĕр ӳтпĕве вичкĕн çил хыпалать. Юнпа исленнĕ хулпуççи пăр пек сивĕ... Анчах Козырев чĕрĕ! Чĕрĕ! Çак туйăм халран кайнă ӳт-пĕве вăй парать, шăмшака калама çук хаваслă туйăм çавăрса илет.

Николай тăрса ларчĕ. Суранĕ ыратнипе унăн куçĕ хуралса килчĕ, çамки çине пăчăр-пăчăр тар тапса тухрĕ. Çапах та вăл ерипен ура çине тăчĕ, икĕ-виçĕ утăм ярса пусса, хурăн вулли çумне вăйсăррăн таянчĕ. Таврара пĕр чун та курăнмасть. Пилĕк-ултă утăмра упа вилли выртать.

— Ав мĕн шутласа тупнă эсĕ ман валлли, Росомаха,— пăшăлтатрĕ Козырев, тепĕр хут сопка çинелле пăхса.—Эпĕ чăннипех персе пăрахма илсе каятăп тесе. Пистолет сана упана амантма çеç кирлĕ пулнă. Урса кайнă тискер чĕрчун Козырева татăкăн-татăкăн çурса, таптаса пăрахнине курас килнĕ санăн. Çук, эсĕ шутланă пек пулмарĕ, Росомаха.

Кĕçех Николай хăйне чылаях çирĕп туйрĕ. Чĕркелесе пĕтернĕ ӳт-тиртен юн сăрхăнма пăрахнă. Телее, сивĕ çил

те лăпланчĕ, тӳпене хупăрлакан тĕксĕм пĕлĕт хĕвеланăç еннелле кайса кĕпĕрленчĕ. Тавралăха çутатса хĕвел пăхма пуçларĕ. Вăл çăмăллăн сывласа ячĕ...

Козыревăн тарпа йĕпеннĕ çамкине такам çемçе тутăрпа шăлса типĕтрĕ. Вăл куçне уçрĕ.

— Наташа, эсĕ çывăрмастăн-çке,— терĕ Николай.— Вăхăт мĕн чухлĕ?

— Хĕвел тухрĕ.

— Аташмарăм-и эпĕ, Наташа?

— Питĕ вĕриленсе асаплантăн. Татьяна Ивановна икĕ хутчен килсе укол турĕ.

— Халĕ мана çав тери çăмăл, лайăх. Сылтăм хулпуççи ыратмасан, сывă теме те юрать... Мĕн пулса иртни çинчен те сана каласа парас тепĕччĕ...

— Кирлĕ мар халь уи çинчен аса илме,— терĕ çамрăк хĕрарăм, упăшкине ачашласа.— Кайран, сывалсан, ахаль те çĕрĕпех аташрăн, хăрушшăн кăшкăртăн. Эпĕ пĕтĕмпех ăнлантăм...

## XIII

Колымăра çанталăк хăвăрт улшăнать. Ирхине тăратăн— лăпкă, ăшă, хĕвел хĕртсе пăхать. Анчах нумай та вăхăт иртмест — сивĕ çил вĕрме тытăнать, тӳпене хура пĕлĕт хупăрласа илет. Самантрах сивĕтсе ярать.

Çак çуллахи кун та кăнтăрлаччен ăшă, лăпкă çанталăк савăнтарчĕ. Анчах каçалапа çурçĕр енчен вичкĕн çил кĕрлесе тухрĕ. Инçетри çӳллĕ ту хыçĕнчен хура пĕлĕт кармашса хăпарчĕ. Вăл кĕçех тавралăха хупăрласа илчĕ. Сопка тăррисем талккăшпех капланса килекен пĕлĕт ăшĕнче курăнми пулчĕç. Шултра сивĕ çумăр çапса çума тытăнчĕ.

— Шурфсене витĕр! Хăвăртрах! Шыв анса тулать! — кăшкăрчĕ тахăшĕ.

Исленнĕ тăма çăра-çăра, йĕпеннĕ çынсем пĕрин хыççăн тепри ансăр сукмакпа палатка еннелле чупрĕç.

Лапсăркка йывăç хӳттине тăрса, Игорь карттусне хывса силлерĕ, сăмса тутрипе пит-куçне типĕтрĕ, унтан йĕритавралла пăхса илчĕ.

— Кур-ха, Гриша,— чарчĕ вăл çумăр витĕр васкамасăр утакан шурфовщика.— Сопкăсем пĕр самантрах шурса кăвакарчĕç.

Лешĕ юлташĕ кăтартнă еннелле çаврăнса пăхрĕ. Унтан, мĕн каламалла-ши тенĕ пек, хулпуççине хускаткаласа илчĕ.

— Юр мар-ши ку? Тепĕр чух июнь уйăхĕнчех чĕркуççи таран çуса лартать,— терĕ вăл юлашкинчен юлхавлăн.

Сивӗ ҫил палаткӑри ӑшша хуса кӑларма ӗлкӗреймен-ха. Йӗпеннипе шӑннӑ ҫынсем типӗ тум тӑхӑнма васкаҫҫӗ.

— Ой, тинех чун кӗчӗ,— терӗ Миша, хулпуҫҫийӗ ҫине хулӑн пиншак уртса ярсан.

— Эккей ҫанталӑкупа! Епле урса кайрӗ,— Капуста, чӳрече патне пырса, тулалла пӑхрӗ, унтан алӑка уҫса шартлаттарса хупрӗ.— Володя мӗнле ҫитӗ-ха? Ҫӳхе кӗпе вӗҫҫӗнех тухса кайрӗ.

Тольӑпа Игорь тимӗр кӑмака вырнаҫтарса лартма пикенчӗҫ.

— Ҫилӗ ытла ахӑрашать. Кун пек ҫанталӑкра вӑрманта йывӑҫ айне пуласран хӑрамалла,— терӗ Толя.— Паян Козырев та больницӑран таврӑнмалла.

— Унӑн йӗрес мар-ха. Козырев пеккисем тӗнче пӗтсен те темеске ҫине ларса юлӗҫ,— калаҫӑва хутшӑнчӗ чӳречерен пӑхса ларакан Миргалим.— Володя вӑт... Каччи маттур-ха. Шӑннишӗн хӑрамалли ҫук. Хӗрӗх градуслине парсан, пӗр чир те юлмасть. Укҫа илсе килнӗшӗн литр та шел мар.

Колымара икӗ-виҫӗ уйӑх хушши каҫ пулмасть. Хӗвел, кӑштах каима выртнӑ ҫын евӗр, кӗске вӑхӑта анса ҫухалать те каллех тепӗр ҫӗртен йӑлкӑшса хӑпарать. Анчах паян икӗ пӗчӗк чӳрече ҫумӑр пӗлӗчӗсемпе хупӑрланса килнӗ каҫ тӗттӗмне хуса яма пултараймарӗ.

— Нимӗн те курӑнмасть. Лампа ҫутӑр-ха,— терӗ апат хатӗрлекен Толя.

— Лампа? Аҫтан тупас ӑна?

— Миргалим, складра пур вӗт?

— Мӗн, ҫак ҫанталӑкра лампа патне ярасшӑн-и эсир мана?

— Уҫӑ пар эппин, хам кайса килетӗп? — терӗ Толя.

— Манӑн унта хӗрӗх пин тенкӗлӗх тавар. Ҫухалсан, кам, эсӗ явап тытӑн-и?

Консервӑ банки уҫма хӑтланакан Толя яштах тӳрленсе тӑчӗ.

— Эсӗ мӗн? Мана та вӑрӑ тесе шутлатӑн-и?

— Ҫын мӗнлине ҫамка ҫине ҫырса хуман,— татса хучӗ Миргалим лӑпкӑн.— Пӗрне уҫӑ пар, теприне... Унтан хоп! ревизи килсе ҫапать. Вара Багаутдинова ӗнсерен тытаҫҫӗ те — кирпӗч шутлама...

Миргалим мӗнлине пӗлеҫҫӗ пулин те, ҫак сӑмахсене илтсен, пурте тӑруках аванмарланса кайрӗҫ. Пӗр вӑхӑт шӑп пулчӗ.

— Пивушлӗ пикама та шанмастӑн эсӗ, Миргалим? — кӳренчӗ Миша.— Ман шутпа, пирӗн хушӑра ун пек кирев-

сĕр шухăшлă çын çук. Пурне те хама шаннă пекех шанатăп эпĕ...

Миргалим пуçне пăрчĕ те каччă çине уççăнах тăрăхласа пăхрĕ.

— Анланатăп, Миша. Çамрăк ăрăван çавăн пек пулмалла та. Пире, пурнăçран юлнă çынсене, ăçта ĕнтĕ сирĕн пек пархатарлă пулма...

Шурфовщиксем, тен, каллех тавлашса каятчĕç пулĕ, анчах çав вăхăтра алăк чĕриклетсе уçăлчĕ те палаткăна Володя кĕрсе тăчĕ.

— Килчĕ! Урра! — кăшкăрса ячĕ Миша, уп патне чупса пырса.— Халĕ кăна сана асăнса пăлханса лараттăмăр. Ай, алли пăр пек! Хывса пăрах хăвăртрах йĕпе тумна. Кăмака çывăхнерех ирт.

Миша пакăлтатнине тăнламасăр, Володя чӳрече патнелле иртрĕ. Вăл çара пуçăн, çумăрпа йĕпеннĕ çӳçĕ тирпейсĕррĕн сапаланнă. Кĕлетки, ватă çыннăнни пек, кукăрăлнă, ахаль те типшĕм пичĕ пушшех ырханланса шурăхнă. Йĕп-йĕпе кĕпе çанни чавсаран аяларах çурăлнă.

— Эсĕ мĕн, чирлеместĕн пуль те? — ыйтрĕç, çакна курса, темиçен пĕр харăс.

Володя çийĕнчех чĕнмерĕ. Унăн пичĕ турткаланса илчĕ, кăвакарнă тути асаплăн хускалчĕ.

— Укçа çухатрăм эпĕ,— терĕ вăл хуллен.

— Мĕн?!

Пурте сиксе тăчĕç.

— Пĕтĕмпех-и?

Володя пуçне сĕлтрĕ.

— Ултă пин! — ахлатрĕ тахăшĕ.

Миргалим Володя патне васкамасăр утса пычĕ те, вăйлă аллисемпе ăна кĕпе çухавинчен ярса тытса, хăй патне хăвăрт туртрĕ.

— Суятăн!.. Пытарнă эсĕ ăна! — янрарĕ шăплăхра унăн çиллес сасси.— Çĕкле пуçна! Пăх мана куçран!

Володя упран пăрăнма тăрăшмарĕ, тĕртсе те ямарĕ, пĕр хирĕçлемесĕр Миргалим çине куçне сиктермесĕр пăхрĕ.

Çакна курсан, Тольăн чĕри сиввĕн пăчăртанчĕ. Вĕсенче кӳренни те, хăрани те курăнмасть. Вĕсем чуна çӳçентермелле лăпкă. Мĕне пĕлтерет ку?.. Çакна Миргалим та туйрĕ пулас. Унăн пӳрнисем вăйсăррăн вĕçерĕнчĕç, сăнĕ самантрах тĕксĕмленчĕ. Вăл пăрăнчĕ, кравать çине сӳрĕккĕн кайса ларчĕ, питне аллисемпе хупласа, пуçне усрĕ.

— Каçар, Володя,— терĕ вăл пусăрăнчăк сасăпа,— эпĕ сана... шӳтлетĕн тесе.

Шăп... Сӳннĕ кăмака трубин вăрăммăн, тунсăхлăн улать.

Вичкĕн ҫил вăрмана хаяррăн ласкать, палаткăна ҫавăрса ҫапас пек силлет, йĕри-тавра чупса ахăрашать, пĕчĕк шăтăк-ҫурăк тупса, шалалла шăвăнса кĕрет. Ана туйса, сĕтел ҫинче имшеррĕн ялкăшакан ҫутă чĕлхи, темрен хăрана пек, чĕтреме тытăнать.

— Мĕнле пулчĕ? Каласа пар,— терĕ Толя, шăплăха сирсе.

Пĕр вырăна тĕлсĕррĕн пăхса ларакан Володя малтан пуҫне, унтан хулпуҫҫине хускаткаласа илчĕ, сӳрĕк сасăпа васкамасăр калама тытăнчĕ:

— Укҫана эпĕ, ялансем пекех, полевăй сумкăна чикнĕччĕ. Поселокра ăнсăртран ҫывăх тусăма куртăм. Отпускран таврăнать. Тĕл пулнă ятпа хĕрлĕ эрех илсе ĕҫрĕмĕр. Вара, унпа сывпуллашса, лаша ҫине утлантăм та тӳрех кунта килме тухрăм. Сумкăна хулпуҫҫи урлă ҫакнăччĕ. Ҫул ҫинче хыпаласа пăхатăп та — ҫук. Эпĕ каялла... Анчах ăҫта тупатăн унта?

Йывăр хыпар ҫынсене хытă хумхантарчĕ пулин те, ывăннă шăмшак ерипен-ерипен тутлă ыйха парăнчĕ. Юлташсем ҫывăраҫҫĕ. Толя ҫеҫ ҫаплах лăпланаймасть. Килĕшмест ăна Володя ытла та лăпкă пулни. Куҫĕсем те килĕшмеҫҫĕ. Сӳннĕ вучах пек, вĕсенче пĕр пурнăҫ хĕлхемĕ те курăнмасть... Ҫак ҫĕр йĕркеллĕ ирттĕрччĕ кăна.

Толя Михаил Васильевич патне кайса килчĕ.

Малтан прораб тарăхса кайрĕ.

— Каллех эрех,— вăрҫса тăкрĕ вăл, алăкăн-тĕпелĕн уткалама тытăнса.— Хăҫан пĕтĕ-ши ҫав ăссăр йăла? Савăнмалли пулать — эрех кӳпеҫҫĕ, хуйхă килсе ҫапать — каллех эрех, юлташпа тĕл пулсан та эрех ĕҫмелле... Шел Володьăна, питĕ шел,— терĕ вăл, ерипен-ерипен лăпланса.— Ҫынсемпе калаҫсан мĕнле-ши?Тен, кивҫен пама килĕшĕҫ. Сахал илмеҫҫĕ, укҫа пулма кирлех вĕсен,— унтан, пӳрнисемпе сĕтеле шакăртаттарса, кăштах шухăшласа тăчĕ.— Кунтан ҫирĕм-ҫирĕм пилĕк ҫухрăмра тепĕр парти ĕҫлет. Ыран ирех ҫавăнта каяс. Нумайăшне пĕлетĕп. Лайăх ҫынсем. Хамăрăннисемпе эсĕ калаҫса пăх,— вăл каллех уткалама тытăнчĕ.— Володя ĕҫрен пăрăнса ҫӳрекен ҫын мар. Кирлĕ пулсан, ҫĕр ҫывăрмасăр ĕҫлеме пултарать. Парăмне тӳлесе тататех. Уншăн иккĕленмелли ҫук.

Ултă пин... Миҫе ҫул ĕҫлемелле Володьăн уншăн? Килес ҫул вĕренме кайма ĕмĕтленетчĕ... Халĕ акă... Тен, юлташсем пĕр пайне те пулин пуҫĕпех пама килĕшĕҫ? Кун пирки Тольăпа Игорь калаҫса татăлчĕҫ ĕнтĕ. Игорь костюмне сутатăп терĕ. Анчах Тольăн нимĕн те ҫук. Ҫакă каччăна чылаях пăшăрхантарать...

Володя та çывăрмасть. Вăл аллисене пуç айне хӳтлатса хунă та маччаналла пĕр хускалмасăр пăхса выртать.

Тулта çумăр çаптарса çăвать, çил çаплах ахăрашать. Вăхăтран вăхăта вăл, тем тăнланă пек, шăпланать. Вара тĕттĕмре вăрăмтуна нăйлатса вĕçни, эрешмен картине лекнĕ шăна асаплăн нăйлатни илтĕнет.

Тĕттĕм, хăрушă çĕр. Анчах каччă шухăшĕсем тата та хăрушăрах, тата та тĕттĕмрех. Шанчăк çук. Вунă-вуниилĕк çул тĕрмесем тăрăх çапкаланса çӳриччен... Пăшал пуç вĕçĕнчех... Авăрланă... Лайăхрах тĕлле те курока турт... Хăш тĕлте перĕнессине хут çине çырнă. Ирччен тискер кайăк тивес çук.

Чӳречере, авă, шупкаланма тытăнчĕ. Кĕçех хĕвел тухĕ, çĕнĕ кун пуçланĕ...

Колымара хăшпĕр чĕрчунсем çинчен кĕнеке çырма тытăннăччĕ вăл. Пĕтерме ĕлкĕреймерĕ. Çыракансем урăх та тупанĕç. Амăшĕ патне паян ирхине кăна çыру ячĕ. Вăл сакăр-тăхăр кун каять. Вилĕм хыпарĕ вара ыранах çитет... Пĕр-пĕччен юлать тĕнчере. Кам шеллĕ ĕнтĕ ăна, мĕскĕне? Кам йăпатса пулăшĕ йывăр хуйха тӳссе ирттерме?..

Володя куçне хупрĕ. Вара ун умне амăшĕн сăнĕ шăвăнса тухрĕ: çӳçĕ шап-шурă, пуçĕ çĕрелле усăннă, алăри тутăрĕпе вăл куçне хупланă...

«Каçар, анне,— пăшăлтатрĕ Володьăн типсе кушăрханă тути.— Сана темле юратнă пулин те, пурăннă чух кирлĕ таран çепĕç те, кăмăллă та пулаймарăм пулĕ. Ывăлун вараланнă ятне асăнса, ĕмĕр тăршшĕпе хĕрелсе, намăсланса пурăниччен, капла сана та çăмăлтарах пулĕ».

Вăл ерипен чавси çине çĕкленчĕ. Тимлĕн итлерĕ. Шăплăхра çынсем мăшлаттарса çывăрни çеç илтĕнет. Вăл тăрса ларчĕ. Сас-чĕвĕ тăвас мар тесе, шăлаварне иличчен, чĕн пиçиххи тăхине хыпаласа тупса, аллипе чăмăртаса тытрĕ. Тумланчĕ. Çывăракан юлташĕсем çине пăхса, кăштах итлесе тăчĕ. «Сывă пулăр. Ан ӳпкелĕр мана çапла пулса тухнăшăн».

Тулта та çил лăпланнă. Çумăр кăна вĕçĕмсĕр тем пăшăлтатать. Стена енне аллине тăсса, Володя пĕр утăм ярса пусрĕ. Акă пăшал... Анчах алă унăн сивĕ кӳпчекне перĕнчĕ кăна, пĕтĕм шăмшак чĕтресе-çӳçенсе кайрĕ. Володя хăй те сисмерĕ, аллине хăвăрт туртса илчĕ. Ах, вилĕм! Ытла та хăрушă-çке эсĕ! Анчах шикленсе ӳкме юрамасть. Пĕтĕм вăй-халне пухса, каччă каллех малалла ӳпĕнчĕ, пăшала такамран тăпăлтарса илнĕ пек, икĕ аллипе çатăрласа тытрĕ те хăй енне туртрĕ. Халĕ алăк патнелле пилĕкултă утăм тумалла çеç. Пĕррс... Иккĕ...

Такам кравачĕ хуллен чĕриклетрĕ. Каччă каялла сулăнчĕ, сывлама чарăнса, стена çумне лăпчăнчĕ.

Тул енче, пылчăклă çĕре чалтлаттарса, тахăшĕ палатка патне çывхарчĕ. Алăк чĕриклетсе уçăлчĕ те, палаткăна сарлака хулпуççиллĕ, çӳллĕ арçын кĕрсе тăчĕ.

— Володя! — чĕнчĕ вăл хуллен.— Çывăрмастăн-и? Укça илсе килтĕм эпĕ.

Каччăна сасартăках чĕри тапма чарăннăн туйăнчĕ. Алли-ури вăйсăрланса кайрĕ. Шăмшакĕ тăрăх пĕрре сивĕ, тепре вĕри чупса иртрĕ. Пăшал кравать пуçĕ çине ӳксе чанклатрĕ, унтан, хыттăн шалтлатса, çĕре персе анчĕ.

Ыйхăллă сасăсем илтĕнчĕç. Тахăшĕ сиксе тăрса, çурта çутса ячĕ.

Вăраннă çынсем пĕрре алăк патĕнче тăракан Козырев, тепре стена çумне йăпшăннă Володя çине тĕлĕнсе пăхрĕç.

— Илтетĕн-и, Володя? Укça тупăнчĕ тетĕп. Мĕншĕн чĕнместĕн? — ыйтрĕ Николай çаплах хускалмасăр тăракан каччăран.— Пыратăп çулпа утса,— калама тытăнчĕ вăл,— вырта парать пĕр сумка. Уçса пăхатăп — туллиех укçа. Санăн паспорту, ытти хутсем... Акă тыт,— тăсрĕ Козырев сумкăна каччă еннелле.— Шутласа пăх, пурте тĕрĕстĕкелех.

Сумкине илмесĕрех, Володя Козырев патне ыткăнчĕ, унăн аллине тытса хĕрӳллĕн пăчăртарĕ, тем калас тесе çăварне уçрĕ, анчах шарламарĕ, хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайрĕ, вара пуçне унăн сарлака кăкăрĕ çине хучĕ те ĕсĕклесех йĕрсе ячĕ.

— Ну-ну, — терĕ хумханнă Козырев,— Эх, эсĕ те çав!...

Çынсем, сике-сике тăрса, вĕсене çавăрса илчĕç. Пуçĕ çийĕн витĕнсе выртнă Миргалим çеç вырăнтан хускалмаре.

## XIV

Разведчиксем пурăнакан çуртсем тултан та, шалтан пăхма та вакун евĕрлĕ. Вĕсем шурлăхсем çийĕн çӳреме юри тунă сарлака тупанлă пысăк çунасем çинче лараççĕ. Хĕлле те, çулла та çав çуртсене тракторсем тайга тăрăх сĕтĕрсе вырăнтан вырăна куçараççĕ. Çанталăк сивĕтсен, шурфовщиксем палаткăран çавăн евĕр темиçе çурта пурăнма куçрĕç.

Каçхи апат хыççăн Наташа çĕвĕ çĕлеме ларчĕ, çитсă татăкĕсене сĕтел çине сарса, апла та капла та виçкелесе пăхрĕ.

— Пĕчĕк пулмасть-ши? — мăкăртатса илчĕ вăл хăй тĕллĕн.

— Тем терĕн, илтмерĕм,— пуçне çĕклерĕ хаçатсем пăхкалакан Козырев.

— Çук, эпĕ хампа калаçатăп-ха.

— Мĕн ку? — ыйтрĕ Николай, арăмне хирĕç пырса ларса.

— Курмастăн-им? Калпак.

— Чăнах-и? Ытла пĕчĕк-çке. Кунта ман çур чышкă та вырнаçаймасть.

Наташа хаваслăн кулса ячĕ.

— Ку акă аялти кĕпе, ăшă кипке... Шăп хĕл ларсан, сивĕсем пуçлансан, çуралать. Пирĕн вара тимĕр кăмака кăна.

— Уншăн ан кулян. Майлаштаратпăр. Паллах, поселокра хваттерсем пур. Анчах пĕччен сана йывăр пулать. Каярахпа, вăл çуралсан, пушшех. Эпĕ е сансăр... çук, халĕ ĕнтĕ сирĕнсĕр, питĕ тунсăхлăп. Авă мĕн чухлĕ вутă татса çурса хутăм. Юр хĕвсе кайиччен тата хатĕрлетĕп. Шăнмастпăр, Наташа, ан хăра. Кăмака...

Алăк нăтăртатса уçăлни калас сăмаха татрĕ. Пӳрте «чармак куç» кĕчĕ. Сывлăх сунчĕ те, алăк патĕнчен иртмесĕр, йĕпеннĕ карттусне хывса силлерĕ. Наташăн хаваслă сăнĕ самантрах салхуланчĕ. Вăл малтан чĕпмен хăна, унтан упăшки çине ӳпкевлĕн пăхса илчĕ. «Мĕне пĕлтерет ку?»,— ыйтрĕç ун куçĕсем.

Козырев Зверева хирĕç алăк патнелле темиçе утăм турĕ.

— Ну, кала, тата мĕн кирлĕ Росомахăна манран? — ыйтрĕ вăл, килнĕ çынна иртсе ларма сĕнмесĕрех.

— Росомаха тĕрмере. Суд пуласса кĕтет... Эсир мана кăмăлламаннине пĕлетĕп-ха. Анчах пурпĕр килтĕм,— терĕ Зверев, тутине кулнă чухнехи пек хускатса.— Юлашки хут. Сывпуллашма. Тен, урăх килеймăпăр.

— Ăçта каятăн?

— Материка. Йăлăхтарса çитерчĕ кун пек пурнăç. Ни канлĕх çук, ни кил-çурт, ни çемье. Эсĕ манăн пĕртен-пĕр шанчăклă юлташ пулнă. Хисеплетĕп сана, çавăнпа килтĕм.

— Ырă сăмахушăн тавтапуç. Апла, хисеплесе, ман çине упа вĕслетсе яма канаш турăр пулать. Ха-ха-ха! — сиввĕн кулса ячĕ Козырев.

— Уншăн ан айăпла. Тупа туса калатăп, эпир нимĕн те пĕлмен. Пĕтĕмпех Росомаха шутласа кăларнă, упине те вăлах шыраса тупнă. Пĕрле пынă юлташĕсене те хăй мĕн шутланине вырăна çитсен тин каланă. Сопка тăррине улăхсан, аялта çӳрекен упа çине кăтартса, çапла каларĕ тет:

— Кĕçех эпир те, авалхи Рим çыннисем евĕр, гладиатор çапăçнине курăпăр. Тискер кайăкĕ те кунтах. Эрне ĕнтĕ, кашни кунах киле-киле пăхатăп. Кăçал çырла нумай, пĕр вырăнтах çӳрет. Тутă чух упа çынна тапăнмасть, анчах шăртлансан... Çавна курма чĕнтĕм сире. Тăрнаккай: «Эпĕ вăйлă, мана Росомаха нимĕн те тăваймасть»,— тет пулĕ. Çук, Росомаха парăмра юлмĕ. Паян тавăратăп мăшкăл кăтартнăшăн».— Кайран тин пĕлтĕм çав. Унсăрăн, паллах, систерме тăрăшнă пулăттăм,— вĕçлерĕ «чармак куç» сăмахне.

— Темле,— иккĕленчĕ Козырев.— Хăравçă вĕт эсĕ. Росомаха пеккисем умĕнче ташласа çеç тăратăн. Юрĕ. Мĕн пулни иртнĕ.— Николай пичĕ-куçĕ каллех çемçелчĕ.— Салан, ирт. Çнес килет пулĕ-ха. Наташа, эсĕ çĕле, эпĕ хамах...

«Чармак куç» эрех кĕленчи кăларчĕ.

— Çук,— терĕ Козырев çирĕппĕн.— Манăн кĕçех пухăва каймалла. Юрамасть. Сана та хушмастăп. Кĕрхи кас тĕттĕм. Çухалса кайма пултаратăн.

Зверев аллине сулчĕ.

— У-у, кунти вырăнсем маншăн — тăван кил. Пĕрре кăна çӳремен,— апла пулин те, пĕччен ĕçмерĕ.— Эсĕ маттур,— терĕ вăл сăмах май, апатне чăмласа.— Шутларăн та касса татрăн. Эпĕ вара... Эх!... Кунта юлсан, пурпĕр вĕсенчен уйрăлаймастăп. Лере çитсенех ĕçе кĕретĕп. Специальность темиçе те. Ăçта та пулин вырнаçатăпах.

Козырев сехечĕ çине пăхрĕ.

— Манăн каймалла. Ан çиллен. Атя, кăштах ăсатса ярам.

Тавралăха кĕрхи кас хупăрланă. Лăпкă, ăшă. Йĕпхӳ вĕтĕртетет. Чӳречесенчен ӳкекен çутăра йывăç турачĕсем çине çакăннă шыв тумламĕсем шăрçасем пекех йăлтăртатаççĕ. Тĕксĕм пĕлĕт çинче сопка кӳлепнсем хуп-хура пысăк тĕмескесем пек туйăнаççĕ.

Кӳршĕ пӳртрен темиçе çын тухрĕ. Вĕсем йывăçсем хушшинче курăнса ларакан çап-çута чӳречеллĕ çурт еннелле утрĕç. Вĕсенчен пĕри, Миргалим, Козырев пĕччен маррине курса, юлташĕсенчен пăрăнчĕ те йывăç хыçне тăчĕ. Икĕ арçын ун çывăхĕнченех иртсе кайрĕ.

— Çитсе вырнаçам кăна—пĕтĕмпех çырса пĕлтеретĕп,— илтĕнчĕ Зверев сасси.

— Эх-хе-хе! Каллех çав çын. Халĕ те тĕл пулаççĕ-çке вĕсем! — шухăшларĕ Миргалим, сукмак çине тухса.— Хăвăртрах пĕлтерес ку хыпара,— вара васкасах юлташĕсем хыççăн утрĕ.

Бригада членĕсем паян пурте пĕр çĕре пуçтарăннă. Пу-

ху пуçланасса кĕтсе, пĕрисем хаçат-журнал пăхкаласа лараççĕ, теприсем радио итлеççĕ, темиçе çын шахмăтла вылять. Миша, сĕтел хушшинче хăй тĕллĕн мăкăртатса, çыру çырать.

Михаил Васильевич яланхи пекех васкаса пырса кĕчĕ.

— Пурте пухăнчĕç-и? — ыйтрĕ вăл, çамрăксене хăвăрт пăхса çаврăнса.

— Николай килеймерĕ-ха. Ыттисем пурте пур.

— Вăл тăхтарах çитет пулĕ. Юлташне ăсатма кайрĕ. Леш, чармак куçлине. Игорь лайăх пĕлет-ха ăна, курнă. Мана хирĕç пулчĕç,— терĕ Миргалим, малалла иртсе.

Юлашки вăхăтра завхоз Козырева юлташĕсем умĕнче уççăнах сивлеме хаяймасть, анчах ăшра курайманлăх куп-ран-куп ӳссе пырать. Халиччен хисепре пулман çын, ăнсăртран хăйĕнчен лайăхрах, чыслăрах пулнине пĕлни, нумайăшĕн кăмăлне пăсать. Хăшĕ-пĕри ăна çакăншăн ĕмĕр тăршшĕпе те каçарма пултараймасть. Миргалима та халĕ çав туйăм канăç памасть... «Çапкаланчăк», «вăрă» Козырева ниепле те йĕркеллĕ çын вырăнне хурса хисеплес килмест унăн. Епле савăнса пĕлтерчĕ вăл Козырев вăрăсемпе халĕ те çыхăну тытни çинчен! Анчах хальхинче çак хыпар шурфовщиксене пĕрре те хумхантармарĕ.

— Михаил Васильевич,— терĕ завхоз, прораб çывăхне пырса,— нивушлĕ бригадăра Козырев та юлать?

— Эсĕ тивĕçлĕ мар пулĕ тесе шутлатăн-и? — ыйтрĕ çырса ларакан инженер, пуçне çĕклемесĕр.

— Козырев... ун ячĕ, иртнĕ пурнăçĕ... Ку çеç-и? Тусĕсем, авă, халĕ те килсе çӳреççĕ. Ахальтен-ши?

— Укçа тупса килнĕ пирки мĕн калăн? — каллех ыйтрĕ Михаил Васильевич, пĕчĕк çĕçĕпе кăранташне шĕвĕртсе.

— Ну... Эпĕ ыйтса пĕлес терĕм çеç... Маншăн пулсан... тархасшăн... хăть пĕтĕм шайккине йышăнăр,— кӳреннĕ пек пулса, Миргалим пукан илчĕ те чӳрече çывăхне кайса ларчĕ. Михаил Васильевич çĕççине хуçлатса чикрĕ, умри çӳп-çапа тĕплĕн пуçтарчĕ.

— Ирĕк пулсан, Николая мар, сана хуса ярăттăм эпĕ.

Шурфовщиксем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç. Прораб çапла татса хурасса никам та кĕтмен. Вăл çамрăксем тĕрлĕ ыйтусем сӳтсе-явнине, тавлашнине итлесе ларма юратать, анчах хăй шухăшне çакăн пек тӳрех каласа хунине нихăçан та илтмен. Çавăнпа пулас, Миргалим та пĕр самант сăмах тупаймасăр тăчĕ.

— Ман пек завхоза хăваласа ямаççĕ,— терĕ вăл юлашкинчен.— Тĕрĕс каларăр, апла тума сирĕн ирĕк çук. Анчах пĕлес килет, мĕнпе юраймарăм? Мĕншĕн çавăн пекех кă-

мăлламастăр? Тăрăшнăшăн-и? Қанма пĕлмесĕр кунĕн-çĕрĕн чупнăшăн-и?

— Кун та иртмест пулĕ ху епле тăрăшни çинчен пире пĕлтерменни,— шахмăтла вылякан Толя Миргалим енне çаврăнса пăхрĕ.— Йăлăхтарсах çитерчĕ. Пĕлетпĕр-çке мĕншен чупнине. Қĕсйӳ тĕпсĕр санăн. Укçаран тăранма пĕлместĕн. Миçе тенкĕлĕх çарататăн-ха пире уйăхра?

— Мĕ-ĕн? — мĕкĕрсе ячĕ завхоз.— Эпĕ çаратрăм-и? Хăçан? Тытрăн-и эсĕ?

— Тытмасăрах чухлатпăр. Тавар хакне ӳстерсе сутнине те, ун вирçине хăпартнине те. Қирлех пулсан, пĕр-икĕ тĕслĕх илсе пама пултаратăп.

— Çапла, çын кусĕнчи çӳпе асăрхать, хăй умĕнчи пĕренене курмасть,— Володя кĕнеки çинчен пуçне çĕклерĕ те завхоз çине сиввĕн пăхса илчĕ.— Эсĕ вăрă, Қозырев мар.

— Юрĕ. Çитет. Илтрĕм тав тунине,— терĕ Миргалим, ура çине сиксе тăрса.— Пĕрре çеç мар асăнăр-ха мана,— пуçне мăнаçлăн çĕклесе, вăл алăк патнелле утрĕ.— Шырăр урăх завхоз.

— Таси паха. Адью! — илтĕнчĕ Мишăн хаваслă сасси.

Çилĕпе сулса янă алăк хыттăн шатлатса хупăнчĕ.

Михаил Васильевич пӳрнисемпе сĕтеле шакăртаттарса илчĕ.

— Қилеймерĕ-çке Николай,— теме ĕлкĕрчĕ кăна, уçăлса кайнă алăкра Қозырев курăнчĕ.

— Сехет пекех эсир, Николай Федорович, шăп та шай калана вăхăтра çитрĕр,— шӳт турĕ прораб.— Иртсе ларăр. Пухăва пуçлатпăр...

# ЭПИЛОГ

Қозырев, ăшă утиялпа чĕркенĕ ывăлне çепĕççĕн çĕклесе, пӳртне кĕчĕ те тĕлĕнниле алăк патĕнчех хытса тăчĕ.

Пӳртре тап-таса. Кĕске хăмасенчен çапкаласа тунă урайне çунă. Сĕтел çинче çĕнĕ çивитти. Чӳрече каррисем те шап-шурă.

— Ай! — терĕ Наташа, алăк урлă каçса кĕрсенех, йĕри-тавра хаваслăн пăхкаласа.— Қоля, кам, эсĕ çапла тирпейлерĕн-и?

Қозырев пуçне пăркаласа илчĕ.

— Çук, Наташа, эпĕ мар.

Хĕрарăм каллех йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ.

— Апла каллех вĕсем... Мĕн тери ырă çынсем! Ылтăн

та ылтăн тетпĕр. Акă ăçта вĕсем, ылтăн пĕрчисем! — Наташа йĕпеннĕ куçне ал тупанĕпе шăлса илчĕ.

Николай сӳнеймен кăмакана вутă пăрахрĕ, арăмне çул çинчен килнĕ хыççăн канма сĕнсе, кастрюле шыв ячĕ те апат пĕçерме лартрĕ. Акă ача хуллен нăшăклатма тытăнчĕ, унтан çинçе сасăпа çухăрса ячĕ.

— Пĕчĕк пепкем, манăн пĕчĕк ылтăнăм! Пакки выçрĕ пулĕ,— тата та темĕн тĕрлĕ ачаш сăмахсем каласа, çамрăк хĕрарăм ачине алла илчĕ, вырнаçса ларса, ăна кăкăрне пачĕ.

Тулта ура сасси, калаçни илтĕнчĕ. Тахăшĕ алăка шаккарĕ.

— Кĕрĕр, кĕрĕр,— терĕ Козырев, алăк патнелле утса.— У-у-у! Нумаййăн-çке эсир!

— Чĕнмен хăнасене йышăнăр. Бригадипех килтĕмĕр,— терĕ Михаил Васильевич. Вăл çĕлĕкне хывса пăтаран çакрĕ те малалла иртрĕ.— Чăрмантартăмăр-и?

Уяв чухнехи пек капăр тумланнă хăнасем, хаваслăн калаçкаласа, шӳт туса, ача ашшĕпе амăшне саламлама тытăнчĕç.

Козыревпа Михаил Васильевич аяккарах пăрăнса тăчĕç.

— Паян милицире ĕçлекен лейтенанта куртăм,— терĕ Николай çурма сасăпа.— Сирĕнтен вăл Миргалим çинчен тем ыйтса пĕлесшĕн. Паян-ыранах кунта килетĕп терĕ.

— Мĕн пулнă?

— Тухса тарнă вăл. Шыраççĕ ăна.

— Ну? — тĕлĕнчĕ инженер.— Мĕн тунă вара вăл?

— Алимент тӳлеме хут килнĕ. Арăмĕпе икĕ ачине пăрахса, ултă çул пытанса пурăнать, тет. Шыраса тупнă çеç, тухса шăвăнма та ĕлкĕрнĕ.

— Вăт ирсĕр!

— Кунсăр пуçне, пирĕн çамрăксем вăл мĕнле ĕçленине тĕрĕслеттерес шутпа хут çырса янă. Унăн укçа нумай теççĕ. Лейтенант çавăнпа килет пулас.

Наташа патне Тольăпа йăрăс пӳллĕ хĕр пырса тăчĕç.

— Чĕререн саламлатăп сире, Наташа,— терĕ Толя, хĕрарăм аллине хĕрӳллĕн чăмăртаса.— Паллашăр. Ку манăн мăшăрăм — Валя. Эсир кайсанах килчĕ. Туйне сирĕнсĕр тăвас мар терĕмĕр.

— Пĕлетĕп. Коля каласа пачĕ. Тавтапуç, Толя. Сире те пĕтĕм чĕререн саламлатăп.

Хумханнă Наташа кăштах именчĕклĕн кулкаласа тăракан Вальăна ыталарĕ те çине-çинех чуптуса илчĕ.

— Телей сунатăп сире,— терĕ вăл.

— Ну, хуçисем, пур-и сирĕн сĕтел çине лартмалли?

Эпир выçă, халĕ кăна ĕç пăрахса кĕгĕмĕр,— терĕ Михаил Васильевич.

Козыревсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç, анчах нимĕн калама та ĕлкĕреймерĕç. Çав самантрах пкĕ каччă сĕтел патне пысăк бак пырса лартрĕ. Татьяна Ивановна хупăлчине уçрĕ те тутлă шăршă пĕтĕм пӳрте сарăлчĕ.

— Аннерен кучченеç илтĕмĕр. Чăваш апат-çимĕçне тутанса пăхăр,— терĕ Толя, сĕтел çине пысăк шăрттан хурса.— Валя, кас. Асту, пурин валли те çиттĕр.

— Ну, тусăмсем, паян пирĕн пысăк уяв, çут тĕнчере тата тепĕр çын хутшăнчĕ,— терĕ Михаил Васильевич, пурте сĕтел тавра вырнаçсан.— Ырă-сывă çитĕнтĕр. Пурнăçĕ çутă, таса, ăнăçлă пултăр.

Пурте ура çине тăчĕç.

— Ой, мансах кайнă,— терĕ Козырев, шăв-шав кăшт лăплансан.— Михаил Васильевич, çак çырăва сире пама хушрĕç,— вăл кĕсйинчен хутлатнă кавак конверт кăларса инженера тыттарчĕ.

— Таня, хатĕрлен,— терĕ прораб, çырăва вуласа тухсан.— Кĕçех Африкăна негрсене вĕрентме каятпăр.

— Тинех,— терĕ Татьяна Ивановна,— йăлăхтарчĕ ĕçсĕр пурăнса. Хапăл тусах каятăп. Ачасемшĕн хуйхăрмалли çук. Ывăл, çартах юлатăп тесе, çыру ячĕ, хĕрĕм, каччă тухса, упăшкипе кăнтăрта ĕçлет.

— Эх, эпĕ те кайăттăм! — терĕ Игорь. Каччă куçĕсем харсăррăн çуталчĕç.— Мана илмеççĕ-ши? Михаил Васильевич, мĕн кирлĕ сирĕн пек урăх çĕршыва ĕçлеме кайма?

— Сывлăх, пĕлӳ, ĕçлес килни...

— Сывлăх пур. Ĕçлеме пултаратăп. Анчах пĕлӳ... — Игорь пуçне хыçкаласа илчĕ.— Пĕлӳ çук çав. Мĕнех вара? Вĕренме кĕретĕп,— хушса хучĕ вăл çирĕппĕн.

— Игорь, ăмăртăва чĕнетĕп,— Миша юлташне хулпуççийĕнчен пырса тĕртрĕ.— Асту, ан юл!

— Атьăр юрлатпăр... Çĕнĕ çынна саламласа,— Игорь еннелле çаврăнса ларчĕ чĕмсĕр Гриша.

— Атьăр! — Игорь сĕтел хушшинчен тухрĕ, чехолран çутă тӳмеллĕ вĕр-çĕнĕ баянне туртса кăларчĕ. Çамки çине усăнса аннă сарă кăтра çӳçне каялла шăлса хучĕ те, унăн пӳрнисем çутă тӳмесем тăрăх вĕтĕртетсе чупса кайрĕç.

Хаваслă кĕвĕ тăвăр пӳртрен ирĕке ярăнса тухрĕ, ĕмĕрхи йывăççем çийĕн вĕçсе сарăлчĕ. Юрпа витĕннĕ ватă тайга илемлĕ юрра хуллен хумханса итлерĕ.

# Калавсем



# КĔТМЕН ÇЫРУ

Сăрт-тăва çил ишĕлтерет,
туслăха çын сăмахĕ пĕтерет.

*Ваттисен сăмахĕ*

Ĕçрен таврăннă Нина Николаевна алăк çумне çапса хунă почта ещĕкĕнчен хаçат-журналсем илсен, вĕсен хушшинче шурă конвертлă çыру курчĕ. Адресне вуласан, шартах сикрĕ, çыру тытнă алли чĕтреме пуçларĕ. Хĕрарăм пÿрте кĕчĕ, конверта уçма хăраса, пĕр вăхăт ун çине пăхса тăчĕ. «Мĕн шутпа? Мĕншĕн çырать вăл халĕ ман пата?» — вăйлă çил-тăвăл вăхăтĕнче сывлăш хумĕсем чупнă пекех, хăвăрт-хăвăрт вĕлтлетсе иртеççĕ чĕрене хумхантаракан ыйтусем. Хăйне лăплантарма тăрăшса, хĕрарăм конверта васкамасăр уçрĕ, хитре почеркпа çырнă хут листине туртса кăларчĕ.

«Хаклă Нина!» — вуларĕ вăл.

Пырне тăруках тем капланса ыраттарчĕ, ăшчикĕ тăвăнчĕ, анчах Нина Николаевнăн хыпăнчăк куçĕсем йĕркесем тăрăх малаллах ыткăнчĕç.

«Эпир пĕр-пĕринпе темиçе минутлăха çеç курса калаçнăранпа икĕ уйăх иртрĕ ĕнтĕ. Нумайччен пăхса тăтăм эпĕ ун чухне сана манран аякка уйăрса каякан пуйăс çине. Акă вăл курăнми пулчĕ. Хăлхара вагон урапisен сасси çеç. Унтан вăл та шăпланчĕ. Çавăн чухне тин эсĕ маншăн мĕн тери хаклине пĕтĕм чунпа туйса илтĕм. Пăрăнса утас тесе çаврăнтăм çеç — таçта аякра пуйăс вăрăммăн кăшкăртни илтĕнчĕ. Чĕре чăтма çук ыратса кайрĕ! Тунсăхлă сасă эсĕ маншăн ĕмĕрлĕхех ют пулса уйрăлни çинчен пĕлтернĕн туйăнчĕ. Вăл мана халиччен те канăç памасть. Сан çинчен шухăшланă вăхăтсенче хăлхара янăрама тытăнать. Куç умне рельс тăрăх чупакан вагон чÿречи умĕнче санăн салхуллă кулăпа ялкăшакан куçусем, сывпуллашса алă сулни тухса тăрать. Асилÿсем хыççăн чĕрем пăчăртанса ыратать.

Нина! Нина! Пирĕн юратупа Ира теттепе выляннă пекех вылярĕ, ăна пĕр шелсĕр çĕмĕрсе таптарĕ. Каникула таврăнсан, эсĕ, отпуск илсе, тăван ялна васкасах тухса кайни çинчен, санăн урăх каччă пурри çинчен пĕлтерчĕ вăл,

унăн çырăвне те кăтартрĕ. «Хăй кайсанах килчĕ»,— терĕ. Çук, эпĕ ăна ĕненмерĕм. Анчах темшĕн-çке çиллентĕм, кӳлешрĕм. Эсĕ ялтан виçĕ кун каярах юлса таврăнни çав туйăмсене татах та вăйлатрĕ. Эпĕ Ира сăмахĕсем те пĕтĕмпех суя, эсĕ мана юратни, асапланса йĕни çинчен темиçе çул иртсен Анна Ивановна каласа парсан тин пĕлтĕм. Санăн чăн-чăн туйăмусене ăнланас тесе, улталанса юласран хăраса, эпĕ хама ытла та айванла тыткаларăм. Çапла вара телейĕме çумран хамах тĕртсе ятăм.

Икĕ уйăх каялла иксĕмĕр тĕл пулса калаçман пулсан, пулни-иртнине, тен, манаттăм-и. Асаплӳсем юлашки вăхăтра чĕрене ыраттарма пăрахнăччĕ. Эсĕ качча тухнă тенине илтсен те пăлханмарăм. Анчах çак тĕлпулу шухăш-кăмăлăма пĕтĕмпех айăн-çийĕн çавăрттарса ячĕ. Сӳнме ĕлкĕреймен юрату кăварĕ, вĕлкĕшсе, чĕрене çĕнĕрен вут хыптарчĕ.

Эсĕ хăвăн çемйӳ, телейӳ çинчен каларăн. Ĕлĕкхине мантăн тесшĕн пултăн. Çук, çук, ĕненместĕп эпĕ. Эсĕ пăлханнине сисрĕм эпĕ, куçусем тунсăхпа çуннине куртăм. Çемье... Ача... Паллах, шухăшлаттарать вăл... Анчах телей тепĕр хут çывхарчĕ, чĕнет пулсан, мĕншĕн унран татах пăрăнас? Çавăнпа ĕнтĕ, мĕнпур шухăша сирсе, пĕртен-пĕр ĕмĕтпе йăлăнатăп: илтсем манăн тунсăхлă сассăма, ан тĕртсе ярсам сан еннелле тăснă аллăмсене. Чĕнетĕп сана, кĕтетĕп. Çыру çырса та пулин сассуна пар.

Виктор».

Кĕтмен çыру çамрăк хĕрарăма çавраçил пекех килсе çапрĕ.

Лăпкă тинĕсе пĕр енчен тепĕр еннелле çавăрттарма тытăннă шавлă шурă кăпăклă хумсем евĕр шухăшсем пуçа пăтратрĕç. Çав шавра тĕлĕнни те, савăнни те, сӳнсе ларма тытăннă юратăвăн çулăмĕ тепĕр хут хыпса илме хатĕрри те, чĕрери тӳрленсе çитеймен сурансем ыратни те, кӳренӳ те илтĕнчĕ. Таçта аякран пĕр хăюсăр сасă, чĕре туйăмĕсене хирĕçлесе, çемье чысне вараламалла марри çинчен те систерчĕ.

Хĕрарăм пукан çине вăйсăррăн тĕшĕрĕлчĕ. Иртнĕ кунсен мĕлкисем пĕрин хыççăн тепри шăва-шăва иртрĕç...

Пединститут пĕтерсен, учитель дипломне илнĕ Нина хăйне ĕçлеме янă яла август уйăхĕнче, вĕренӳ çулĕ пуçланиччен икĕ эрне маларах, çитрĕ. Шкул директорĕ çамрăк учительницăна кăмăллăн кĕтсе илчĕ.

— Паян канăр. Инçе çул ывăнтарать. Хваттере Анна Ивановна патне вырнаçтаратпăр. Вăл шкул библиотекин-

че ĕçлет. Пӳрчĕ унӑн пысӑк. Тата пĕчченех пурӑнать. Çынни те кӑмӑллӑ. Атьӑр паллаштарам.

Çак кунран Нинӑшӑн çĕнĕ пурнӑç пуçланчĕ. Вӑл ĕнтĕ аслӑ шкул пĕтернĕ учительница. Ӑна урамра тĕл пулнӑ ачасем те, çитĕннисем те карттусĕсене хывсах сывлӑх сунчĕç, ашшĕ ячĕпе хисеплесе чĕнчĕç.

Килнĕ кунах, савӑт-сапа туянас тесе, Нина лавккана кайрĕ. Укçа тӳлеме тӑнӑ самантра ун хӑлхине çурма сасӑпа каланӑ сӑмахсем пырса кĕчĕç: «Учительница, вырӑс чĕлхи вĕрентет». Ял ялах ĕнтĕ. Ют çын çинчен нумай калаçаççĕ, хытӑ пӑхаççĕ. Çавӑнпа та хĕре çак сӑмахсем пĕрре те тĕлĕнтермерĕç. Çапах та вӑл, куç хĕррипе те пулин, сасӑ еннелле пӑхса илчĕ те, икĕ çамрӑка курчĕ, лавккаран тухса кайиччене вĕсем ун çине сӑнаса пӑхнине туйрĕ.

Каç еннелле сулӑннӑ хĕвел, ялтӑркка пайӑркисене пуçтарса илсе, шĕл-кӑвар тумне тӑхӑнчĕ, васкамасӑр шуса, инçетри çĕрсем хыçне пытанчĕ. Кĕçех пӳлĕме çуллахи каç тĕксĕмĕ йӑпшӑнса кĕчĕ. «Ывӑнтӑм пулас. Çывӑрас килет»,— шухӑшларĕ Нина, тирпейлĕн сарса хунӑ вырӑн патне пырса. Çав самантрах тахӑшĕ алӑка хуллен шаккарĕ те, пӳрте вӑтам пӳллĕ çамрӑк хĕр кĕрсе тӑчĕ.

— Сывлӑх сунатӑп,— терĕ вӑл хӑюллӑн, Нина çине кӑмӑллӑн кулкаласа пӑхса.— Эпĕ сирĕнпе паллашма килтĕм. Ира,— тӑсрĕ вӑл пĕчĕк аллине.

Нина хĕр çине кӑшт ӑмсанарах пӑхса илчĕ: çав тери ӑста, ятуллӑ çĕленĕ чечеклĕ пурçӑн кĕпепе вӑл, урисенче çӳллĕ кĕлеллĕ илемлĕ пушмак. Пукане пекех чиперскер хӑй. Сарӑ кӑтра çӳçлĕ, питне çуллахи хĕвел пайӑрки тивмен тейĕн, шап-шурӑ, таса. Пĕкĕ пек авӑнса тӑракан çинçе куç харшийĕсем айĕпе пысӑк кӑвак куççем хаваслӑн пӑхаççĕ. Кулнӑ чух мӑкӑнь чечекĕ евĕр хĕрлĕ тути илемлĕн уçӑлать, тип-тикĕс шӑлĕсем курӑнаççĕ.

— Эпĕ çапла килсе кĕни сире тĕлĕнтерет пулĕ-ха. Каçарӑр,— терĕ Ира, каллех кӑмӑллӑн кулкаласа.— Эпир кунта, тĕттĕм ялта, хулари йĕркесене пĕлсех çитерейместпĕр-çке.

Ира, паллах, чееленет. Вӑл, тип кӑна килнĕ учительница унӑн юлашки сӑмахĕсене хирĕçлесе, хӑйне мухтасса кĕтет. Нина ӑна туйрĕ, анчах пач пĕлмен çынна ниме тӑман пуш сӑмахсемпе мухтаса савӑнтарма пултараймарĕ.

— Ялти çамрӑксем сирĕн çинчен çеç калаçаççĕ. Питĕ чипер теççĕ,— пĕлтерчĕ хĕр хаваслӑн.

— Н-у-у? Аплах мар пуль-ха,— Нина пичĕ самантрах пĕçерсе хĕрелчĕ.

— Эсир килнине пӗлсен, питӗ савӑнтӑм. Хӑвӑртрах паллашас килчӗ,— Ира ҫывӑхри пукан ҫине ларчӗ.— Шутсӑр кичем пирӗн ялта. Пӗр вӗреннӗ, культурӑллӑ ҫамрӑк пулинччӗ хуть,— хӗрӗн ҫӳхе куҫ харшийӗсем пӗркеленчӗҫ, савӑк пичӗ-куҫӗ тӗксӗмленчӗ.— Никампа чун-чӗререн калаҫма ҫук.

— Ҫывӑх юлташ пулмасан, тунсӑх ӗнтӗ. Эсир килнӗшӗн эпӗ те питӗ хавас. Тавтапуҫ сире.

— Чӑнах-и?

Ира каллех хавасланчӗ. Кӗскен хӑй ҫинчен каласа пачӗ. Пуҫламӑш классенчи учительница иккен вӑл. Ҫак ялтах ҫуралса ӳснӗ. Ҫемьере пӗр хӗр, урӑх ача-пӑча ҫук. Ашшӗ колхозра ветеринарта ӗҫлет.

Тепӗр кунне Нина библиотекӑра шкул программине кӗртнӗ кӗнекесене пӑхса ларчӗ. Кӑнтӑрла иртсен, Ира пырса кӗчӗ.

— Авӑ ӑҫта иккен эсир. Сире шыраса, эпӗ хваттере кайса килтӗм, шкулта кашни класа кӗрсе пӑхрӑм. Мӗнлеха сирӗн кунӗ-кунӗпех библиотекӑра йӳҫсе ларас килет?— пырса тӑчӗ вӑл Нина ҫывӑхне.

— Крылов юптарӑвӗнчи шӑрчӑк пек сиккелесе ҫӳриччен, кӗнеке вулани ҫӗр хут усӑллӑрах пулӗччӗ,— сӑмах хушрӗ сӗтел хушшинче тем ҫырса ларакан Анна Ивановна.

— И-и! Кӗнеке тесе, халех ватӑ карчӑк пек, пӳртре хупӑнса лармалла-и? Кайран та вулӑпӑр-ха.

Кӗнекесене ачаранах юратма, хаклама хӑнӑхнӑ Нина хитре хӗр ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗ. Лешӗ, ҫакна курса, куҫне чеен хӗссе илчӗ те, Анна Ивановна еннелле пуҫне вӑрттӑн сулчӗ. Кӑштах вӑрҫтарам-ха тесшӗн пулчӗ-ши вӑл. Анчах библиотекарь урӑх чӗнмерӗ, тӑчӗ те хӗрсем патӗнчен пӑрӑнса утрӗ.

— Тата миҫе сехет ларас тетӗр-ха кунта? — шӳтлесе ыйтрӗ Ира.

— Юрӗ. Паянхи ӗҫ кунӗ вӗҫленчӗ тейӗпӗр.

— Апла пулсан, пирӗн пата кайӑпӑр.

Ира пурӑнакан пӳрт ӑшчикӗ, хуҫи пекех, тирпейлӗ, таса. Чӳречесем ҫинче чечексем. Хитре ӳкерчӗксемпе илемлетсе тӗрленӗ кантӑк каррисем, тӗрлӗрен ҫивиттисем, палассем, пӗчӗк кавирсем.

— Лайӑх сирӗн кунта,— терӗ Нина, йӗри-тавра пӑхса.— Пурте килӗшӳллӗ, кӑмӑла каймалла.

— Тавтапуҫ. Эсир, институт пӗтернӗ ҫын, илемлӗхе, килӗшӳлӗхе лайӑх ӑнланатӑр ӗнтӗ. Ман ӗҫе ҫапла хак панӑшӑн чӗре питӗ савӑнать.

— Йӑпӑлти чӗлхеллӗ эсир, Ира.

— Çук-çке. Тĕрĕссине çеç каларăм.

Халапланса ларнă вăхăтра Ира темиçе хутчен те урамалла пăха-пăха илчĕ.

— Эсир такама кĕтетĕр пулас?

— Кĕтетĕп,— терĕ хĕр, чеен кулкаласа.— Кĕçех кунта кӳршĕ ялтан икĕ каччă килмелле... Вĕсенчен пĕри мана санпа паллаштарма ыйтрĕ. Килĕшнĕ эсĕ ăна. Пĕрре курсах юратса пăрахнă вăл.

— Эсир ăçтан пĕлетĕр? Каччи хăй каларĕ-и?

— Çу-ук. Вăл ун пек шăпăл-шапăл çын мар. Толя каласа пачĕ.

— Кам вăл Толя?

— Манăн тусăм. Çав тери чипер, лайăх каччă. Эпĕ ăна питĕ юрататăп.

— Вăл вара Тольăна мана «юратса пăрахрăм» тесе каланă-и?

— Ăна пĕлместĕп. Эпĕ шӳт турăм çеç. Эсĕ мĕн, кӳренмерĕн пулĕ те? Каччи юратать тени сана савăнтармасть-и-мĕн?

— Каччи чипер, йĕркеллĕ тата чăннипех юратать пулсан, паллах...

— Ку шăп та шай çавăн пек каччă ĕнтĕ. Толя пулман пулсан, эпĕ ăна никама та парас çук та... Авă, килеççĕ!— терĕ Ира, чӳречерен кармашса пăхса. Хĕрĕн кăвак куçĕсем телейлĕн ялкăшрĕç, хĕрлĕ тути ачашшăн кулчĕ. Тĕкĕр умне тăрса, Ира унталла-кунталла пăркаланчĕ, кĕпине юсанçи турĕ, çӳçне тураса кăпкалатрĕ. Нина та хăй çине пăхса илчĕ.

Çенĕк алăкĕ уçăлса хупăнчĕ. Пӳрт умĕнче ура сассисем илтĕнчĕç.

— Кĕме юрать-и?

— Юрать-çке, юрать. Кĕрĕр, тархасшăн,— ачаш кулăпа çиçсе, Ира хăнасене хирĕç утрĕ. Пӳрте, Нина шухăшланă пекех, ĕнер лавккара курнă çамрăксем кĕрсе тăчĕç.

— Паллашăр,— терĕ Ира,— манăн çĕнĕ хĕр-тантăшăм. Нинăна «манăн хĕр-тантăшăм» тени килĕшмерĕ. «Паллашни те талăк çитмест вĕт-ха»,— шухăшласа илчĕ вăл.

— Кусем пулас тухтăрсем....

— Анатолий,— çырă çӳçлĕ, çӳллĕ çамрăк, шӳтлесе, аллине кăкăрĕ çине хучĕ те сăпайлăн пуç тайрĕ.

— Эпĕ Виктор,— вăтам пӳллĕ чипер каччă пысăк хура куçĕпе Нина çине хăюллăн пăхрĕ.

Çамрăксем хушшинче хавасла, çăмăл калаçу пуçланчĕ. Ытларах Ирăпа Анатолий пакăлтатрĕç. Халĕ кăна йăлкăшса кулакан хитре хĕр сасартăках тутине тăсрĕ.

— Кĕтсе ывăнтăмăр сире,— терĕ вăл.— Çур сехет кайса юлса килтĕр. Мĕн пирки? Халех каласа панă пултăр.

Виктор чĕнмерĕ. Анатолий, айăпа кĕнĕ ача евĕр, пуçне усса, хĕр умне пырса тăчĕ, куçĕсене мăч-мăч хупкаларĕ, сăмсине турткаласа илчĕ.

— Каçарсам,— мăкăртатрĕ вăл.— Эпĕ урăх апла тумăп.

— Лайăхрах ӳкĕн. Чĕркуççи çине тăр. Унсăрăн каçармастăп,— хушрĕ Ира, урайне кăтартса.

— Итлетĕп, пăхăнатăп... Анчах малтан,— Толя Ирăна ярса тытса чуптума пикенчĕ. Лешĕ, хавассăн ахăлтатса, каччă ытамĕнчен çăлăнма хăтланчĕ.

— Намăс мар-и? Нинăран кăштах вăтанасчĕ хăть.

Анатолий аллисене хĕр пилĕкĕнчен вĕçертрĕ, ним ăнланман пек, пĕрре Виктор, унтан Ира çине пăхкаласа илчĕ.

— Намăс? — ыйтрĕ вăл тĕлĕннĕн.— Хĕрпе вылянăшăн-и? Нинăпа каччăсем пĕрре те выляман-ши?

Анатолий сăмахĕсем, пуринчен ытла унăн чăрсăр куçĕсем хăйне уççăнах сăнаса пăхни Нинăн кăмăлне хуçрĕç. Ун çумне темле таса мар япала пырса перĕннĕн туйăнчĕ. Вăл тăруках аванмарланса, хĕрелсе кайрĕ.

— Ай-яй-яй! Çаплах-и вара? — шӳтлесе пуçне сулкаларĕ Анатолий, çакна асăрхасан.— Каçару ыйтатăп,— вара Ира хыççăн кухньăнаваскарĕ.

Пĕр вăхăт пӳлĕмре шăп пулчĕ. Мĕн калас-ши сире тенĕн Виктор хĕр çине пăхса илчĕ.

— Ĕçлеме тытăнтăр пулĕ ĕнтĕ? — терĕ вăл юлашкинчен.— Ну, мĕнле? Килĕшет-и сире пирĕн шкул?

Нина хулпуççине хускатса илчĕ.

— Килĕшсен те, килĕшмесен те... Мĕн тăвăн? Ĕçлес пулать,— кĕскен хуравларĕ вăл.

Анатолий сăмахĕсем хыççăн Нинăн ун юлташĕпе те кăмăллăн калаçас килмерĕ.

— Ансăртран персе янă сăмахшăн ан пăшăрханăр ĕнтĕ. Мана та çаплах ан çилленĕр,— йăл кулчĕ каччă, Нинăн шухăш-кăмăлне тавçăрса.

— Çилленес марччĕ.

— Аван апла. Кичем пулас сире халĕ, пĕлмен вырăнта, палламан çынсем хушшинче.

Виктор хĕре сăнать. Ун çинчен куçне те илмест.

— Кичеммине халлĕхе туймарăм-ха. Телее, килнĕ-килменех Ирăпа паллашма тӳр килчĕ. Вăл тунсăхлама памасть.

— Ира — хаваслă хĕр. Савăнса курас тесен, тем те шутласа кăларать.

— Мĕн ман ята асăнтăн эсĕ? Мĕн каласа паратăн-ха?—

вирхӗнсе тухрӗ Ира кухньӑран. Виктора хирӗҫ тӑрса, вӑл ун ҫине илӗртӳллӗн йӑлкӑшса пӑхрӗ.

— Ира вӑтам шкулта вӗреннӗ чухне артистка пулатӑп тетчӗ. Темшӗн пулаймарӗ тетӗп-ҫке,— шӳтлерӗ каччӑ.

— А-а-а! Ӗмӗтленеттӗм те ҫав... Чӑнах та, ӑсталӑх пур тетчӗҫ мана. Эпӗ спектакльсенче выляниине мухтаса пӗр ача сӑвӑ та ҫырнӑччӗ.

— Кам? — сӑмах хушрӗ ушкӑна пырса тӑнӑ Анатолий.— Сергей-и? Вӑл санпа ҫӳресшӗн ҫунатчӗ те. Ҫавӑнпа йӑпӑлтатнӑ ӗнтӗ.

— Эсӗ те ҫӳресшӗнччӗ.

— Пулнӑ пулӗ. Анчах ун чух эсӗ пирӗн пеккисене сӑмса шыв типмен-ха теттӗн кӑна. Учительсене илӗртеттӗн. Андрей Михайловича куҫран вӗҫӗмсӗр пӑхаттӑн.

— Уншӑн вӑл сана, пӗлсен-пӗлмесен те, «4» та «5» лартса паратчӗ,— хушса хучӗ Виктор та.

— Эй, хӑҫанхине аса илчӗҫ! Халӗ мӗн асӑнмалли пур ӗнтӗ ӑна? Тӗрӗссипе каласан, Андрей Михалч килӗшетчӗ мана. Ача пулнӑ ҫав ун чух. Юратасса та ӑна ачалла... Ну, тӑвана савнӑ пек саваттӑм.

— Тӑвана... юлташа... Пӗлетпӗр эпир ун пек тӑван-юлташсене. Куркаланӑ... Шел, ӗлӗкхи пек дуэле чӗнме ҫук.

Ҫаксене Анатолий пӗтӗмпех шӳтлесе, кулкаласа каларӗ пулин те, ун сӑмахӗсенче темле кӳренӳ палӑрчӗ. Анчах каччӑ сӑмахӗсен чӑн-чӑн пӗлтерӗшне Нина каярахпа тин ӑнланчӗ.

Киле кайма пуҫтарӑнсан, хӗр вӑхӑт нумай иртнине асӑрхарӗ.

— Пирӗн те каймалла. Пӗрлех тухар,— терӗ Виктор, ун хыҫҫӑнах алӑк патнелле утса.— Толя, илтетӗн-и?

— Юрать, юрать. Халех.

Виктор Нинӑран юлмарӗ.

— Урама тухмастӑр-и кӗҫӗр? — ыйтрӗ вӑл, хӗре куҫран тинкерсе.

— Эпӗ Ирӑпа пулатӑп.

— Апла курнӑҫасса шанатӑп.

Виктор, карта умне тайӑнса, хӗр хыҫҫӑн пӑхса юлчӗ. Нина, тарӑн шухӑша путса, хваттерӗ еннелле васкамасӑр утрӗ.

Ҫулсем иртеҫҫӗ. Нина тантӑшӗсенчен нумайӑшӗ ӗнтӗ качча кайрӗ, хӑшӗ-пӗри ача-пӑчаллӑ та пулчӗ, унӑн вара юратнӑ каччи те ҫук. Ҫывӑхрах паллашас, туслашас тенсем, паллах, пулнӑ. Унсӑрӑн епле-ха. Анчах темшӗнҫке вӗсенчен пӗри те хӗр чӗрине хумхантарса савӑнтарман... Ни тунсӑхламасть вӑл, ни тӗл пуласшӑн ҫунмасть.

Ăçта çӳрет-ши унăн шăпи? Тĕл пулĕ-ши вăл, ĕмĕтри пек таса, пысăк, хĕрӳллĕ юратăва? Е пурнăç ыттисен телейне курнипех иртсе кайĕ-ши? Виктор... Лайăх каччă пек туйăнать вăл. Нина ассăн сывласа ячĕ.

Пĕррехинче, ĕçе пырсан, сĕтел хушшинче хаçатсем пăхкаласа ларакан Ира Нинăна хăй патне чĕнсе илчĕ.

— Кил-ха кунта. Лар. Район хаçатне пăхса тухмарăн-и?

— Çук. Мĕн вара унта?

— Вула эппин. Ак çакăнта.

Нина куçĕсем Ира кăтартнă статья çийĕн хăвăрт шуса иртрĕç. Ача амăшĕ çырать. Унăн пилĕк çулхи ывăлĕ ял хыçĕнчи вăрманта вылянă чухне темле тимĕр çине пырса тăрăннă, ура хырăмне çурса пăрахнă. Юн нумай юхнипе вăйсăрланса вилес патнех çитнĕ. Çавăнта ăнсăртран пырса тухнă В. Игнатьев ăна пĕрремĕш пулăшу панă, килне илсе таврăнса, сиплеме тытăннă. Малтанхи каçсенче, ачана йывăр вăхăтра, ун çумĕнчех ларнă. «Мединститут студентне Виктор Игнатьева, пирĕн ачана инкекрен çăлса хăварнăшăн, эпир çемйипех чĕререн тав тăватпăр»,—тенĕ статьяра ачап ашшĕпе-амăшĕ.

— Мединститут студенчĕ... Виктор! — тавçăрса илчĕ Нина.

— Пĕлетĕн-и, мĕнле каччăпа паллаштартăм эпĕ сана? Ун çинчен авă хаçатсенче çыраççĕ,— терĕ Ира.— Анчах, тĕрĕсрех каласан, мĕнех вара унта? Виктор вырăнĕнче такам та çапла тунă пулĕччĕ. Вăл — пулас тухтăр.

Нина тантăшĕ çине кулкаласа пăхрĕ.

— Толя пулнă пулсан, ун пек калас çук-ха эсĕ,— хаваслăн шӳтлерĕ вăл.

— Чăнах-и? — илемлĕ куççем самантрах тĕксĕмленчĕç Ирăн.— Эсĕ мĕн, ман Толя Виктортан начар тесшĕн-и?

— Пуçра та çук ун пек шухăш. Анчах Виктор чăннипех питĕ ырă, пархатарлă ĕç тунă. Мĕнле тав тăвать ăна ачан ашшĕ-амăшĕ.

— Каччи питĕ йĕркеллĕ, аван тесе малтанах каларăмçке... Анчах хĕре савма, йăпатма пĕлет-ши вăл?—кулкаларĕ Ира каллех. — Çӳрекелерĕç-ха вĕсем пĕр хĕрпе. Лешĕ Виктора юратсах каймастчĕ пулас çав. «Унпа кичем»,—тетчĕ.

Йăпăлти чĕлхе... Час-часах вăл чее, сивĕ чуна пытаракан пĕркенчĕк кăна. Нина та ĕненчĕ ачаш кулăллă, çу пек яка чĕлхеллĕ Ирăна. Çавăнпа ĕнтĕ, тем шутпа-çке Ира каллех Виктора хур тăвасшăн пулнине шута илмерĕ.

«Кичем? Мана пĕрре те кичем мар. Виктор, ытти хăш-

пĕр каччăсем пек, хĕре килĕшес тесе, кирлĕ-кирлĕ мара пакăлтатмасть. Тем ҫинчен калаҫсан та, ăна итлеме интереслĕ. Хăй те ҫынна тимлĕн итлеме пĕлет!» — шухăшларĕ Нина.

Нинăпа Виктор кашни каҫах тĕл пулма пуҫларĕҫ. Вĕсем пӳрт умĕнчи тенкел ҫинче калаҫса ларатчĕҫ, тепĕр чухне ҫывăхри пĕчĕк кĕпер ҫинче тăратчĕҫ. Ҫав ĕмĕрлĕхех асра юлнă каҫ та вĕсем малтан кĕпер карлăкĕ ҫине тайăнса, умри тĕттĕмелле чĕнмесĕр пăхса тăчĕҫ. Август уйăхĕн вĕҫĕ пулин те, каҫĕ ăшă. Ҫăнтăр енчен ҫил хуллен вăркăшать. Йĕри-тавра ӳсекен йăмра ҫулҫисем тем ҫинчен вĕҫĕмсĕр пăшăлтатаҫҫĕ. Шăнкăртатакан юханшыв ҫинче ҫăлтăр ҫутисем выляҫҫĕ. Аякра йытă харкашни, урама пуҫтарăннă ҫамрăксен хаваслă шавĕ илтĕнет.

— Енер мĕншĕн килмерĕн, Виктор? — ыйтрĕ хĕр, каччă сăмах чĕнмесĕр тăнине кура.

— Хăнана каймалла пулчĕ... Эсĕ кĕтрĕн-и мана, Нина? Ҫук пулĕ... Тен, эсĕ мана аса та илмен? — Виктор, пуҫне ҫĕклесе, Нина ҫине пăхрĕ.

— Паллах. Епле аса илмĕн-ха?

— Эпĕ вара... Эпĕ кунĕн-ҫĕрĕн сан ҫинчен шухăшлатăп. Уйрăлатпăр ҫеҫ, каллех курас килет... Мĕншĕн чĕнместĕн, Нина? Каласам мĕн те пулин... Пĕр сăмах та пулин,— каччăн хĕрӳ куҫĕсем хĕр куҫĕсене шырарĕҫ, аллисем ун ҫинҫе пилĕкне ҫепĕҫҫĕн ыталарĕҫ.

Нина ассăн сывларĕ. Паллах, Виктор лайăх юлташ. Нина ăна хисеплет, вăл уншăн тăван пекех ҫывăх. Каччă ытамĕнчен ҫăлăнас тесе, хĕр каялла туртăнчĕ, анчах унăн аллисене сирсе яма вăй-хал ҫитереймерĕ. Халиччен пĕлмен, сăмахпа каласа пама ҫук темле ырă, вăйлă туйăм сасартăках пĕтĕм чун-чĕрене ҫавăрса илчĕ. Хĕрĕн аллисем сисмесĕрех каччă мăйĕ тавра явăнчĕҫ.

— Юрататăп... Юрататăп сана,— пӳлĕне-пӳлĕне пăшăлтатрĕ вăл.

Вĕҫĕмсĕр чуптăвакан каччăн питне ҫемҫен сирсе, Нина пуҫне унăн хулпуҫҫийĕ ҫине хучĕ. Ах, мĕн тери илемлĕн йăлтăртатаҫҫĕ пĕлĕт ҫинчи ҫăлтăрсем! Юханшывĕ тата епле ачашшăн шăнкăртатать!

Ҫурхи шыв пек, хăвăрт иртсе кайрĕҫ шутлă кунсем. Каникула таврăннă Викторпа Тольăн хулана вĕренме каймалла. Акă ĕнтĕ юлашки сехет те пĕр шеллемесĕр килсе ҫитрĕ.

— Манмăн-и мана эпĕ кайсан? — терĕ сывпуллашма килнĕ Виктор, тунсăхпа тулнă куҫĕсене Нина ҫинчен илмесĕр.

— Çук.
— Эпĕ аякра чух урăххине юратсан?
— Ан кӳрентер. Мана никам та кирлĕ мар.

Кайрĕ Виктор. Ялтан хăйне ăсатма тухнă Нина çине вăл минутсерен çаврăнса пăхать. Унăн кашни утăмĕ халĕ ăна юратнă хĕртен нумай вăхăта инçете илсе каять. Акă вăл курăнми те пулчĕ. Салхуланнă Нина пĕрремĕш хут юратнă çынран уйрăлма мĕн тери йывăррине туйса илчĕ. Хура пĕлĕт хыçне пытаннă сарă хĕвел, çул тăрăх пĕр-пĕччен пуçне чиксе утакан хĕре йăпатас тенĕ пекех, кăвак тӳпене шуса тухрĕ те тавралăха хаваслăн çутатса ячĕ.

Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Пĕрремĕш урок, кун иртрĕ. Нина уроксене тăрăшса, тĕплĕн хатĕрленет. Çапах та йĕрке çителĕксĕр, ачасем итлесе лармаççĕ, шавлаççĕ. Чунтан пăшăрханать уншăн çамрăк учительница. Çырусенче Виктор час-часах ĕçсем мĕнле пыни çинчен ыйтать. Пĕлес пулсан Нина урокĕсенче дисциплина çуккине? Мĕн тейĕ вăл? Мĕнле намăс? Вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш кунĕсенчех Нина урокне завуч пырса итлерĕ. Хăй пурнăçĕн иккĕ-виççĕмĕш пайне шкул ачисене вĕрентес ĕçе панă хĕрарăм çамрăк учительница урокне хурламарĕ.

— Материала аван пĕлетĕр. Интереслĕ, ăнланмалла каласа патăр. Ачасем тимлĕ итлерĕç,— терĕ вăл, Нина Николаевна çине кăмăллăн пăхса.— Анчах опыт сахалли тӳрех сисĕнет. Пĕр вĕренскенпе ĕçленĕ чух, ыттисем çинчен кĕске самантлăха та манма юрамасть. Класри çирĕп дисциплина çавăнтан нумай килет. Пирĕн лайăх вĕрентекенсем сахал мар,— завуч темиçе учитель ятне асăнчĕ.— Вĕсен урокĕсене итлени сирĕншĕн питех те усăллă пулнă пулĕччĕ.

Çапла лайăх педагог пулас ăсталăха çамрăк учительница ерипен ăнланса, вĕренсе пычĕ.

Икĕ хĕр, икĕ çамрăк учительница çаплах пĕр-пĕрин патне çӳрерĕç, пушă вăхăта пĕрле ирттерчĕç. Анчах вĕсен хушшинчи туслăх сивĕнме пуçларĕ. Пурнăç, ĕç çине икĕ хĕр икĕ тĕрлĕ пăхни кунран-кун сисĕнмеллех палăрса пычĕ.

— Атя кĕçĕр улаха каятпăр. Унта каччăсем нумай пыраççĕ. Кулкалар, шӳт тăвар, кĕвĕçтерер ял пикисене. Юрататăп эпĕ хĕрсене вăрçтарма,— терĕ Ира кулкаласа. Вăл, яланхи пекех, тĕкĕр умĕнче çаврăнкаларĕ, вĕçĕмсĕр хăй çине пăхса савăнчĕ.

— Пĕрре кайса килĕпĕр-ха. Анчах паян пыраймастăп. Ĕç темĕн чухлех.

— Тем тумалла ĕнтĕ.

— Ыранхи уроксем валли тетрадьсем тӗрӗслемен-ха эпӗ.

— Э-э, пӗрреллӗхе тӗрӗслеменнисем ҫине те ҫыраҫҫӗ. Мӗн пулать уншӑн. Никам та пӗлмест.

— Пӗлнӗшӗн мар, Ира. Ҫапла хама вӗрепекенсем умӗнче аван мар-ҫке. Хӑй ӗҫне вӑхӑтра тӑвайман учительрен мӗнле тӗслӗх пулӗ шкул ачисене? Епле хисеп пулӗ ӑна?

— Миҫемӗш класс-ха? Пиллӗкмӗш? — Ира кулса ячӗ.— Ҫав сӑмса шывӗсенчен хӑратӑн апла. Аслӑ классенчисем пулсан, тата та юрӗччӗ... Эх, Нина! — хушса хучӗ хитре хӗр, тантӑшӗ ҫине ӳпкелесе пӑхса.— Ӗҫ вӑл вилсен те виҫ куна юлать тенӗ. Ҫамрӑк ӗмӗр вара ҫурхи шыв пек хӑвӑрт иртсе каять. Халӗ ҫӳресе юлмасан, хӑҫан савӑнас тетӗн?

Ҫук, хаклӑ вӑхӑта ҫапла кунран-кун пӗр усӑсӑр ирттерме Нинӑн чунӗ туртмасть. Чӑнах та, ӗҫӗ те сахал мар ҫамрӑк учительницӑн. Уроксене хатӗрленсе, кашнин валли плансем ҫырмалла, тетрадьсем тӗрӗслемелле, программӑра кӑтартнӑ произведенисене тӗплӗн тишкерсе вуласа тухмалла, вӗренӳре ӗлкӗрсе пырайман ачасемпе уроксем хыҫҫӑн юлса ӗҫлемелле. Класс руководителӗн ӗҫӗ те пайтах вӑхӑта илет. Илемлӗ литература та, хаҫат-журнал та вулас килет.

Ҫамрӑк учительница тантӑшӗпе улаха кайма килӗшмерӗ. Ира кӑмӑлсӑрланса тухса кайрӗ. Кӗҫех вӗсем чӑннипех хирӗҫсе кайрӗҫ.

— Нина, ӗнер эпӗ ҫав тери чипер каччӑпа тӗл пултӑм, киле отпуска килнӗ,— терӗ Ира, хӗр-тусне хулпуҫҫийӗнчен ыталаса.— Эпир вӑтам шкул пӗрле пӗтертӗмӗр. Ун чух вӑл пӗчӗк, имшеркке ача ҫеҫчӗ. Эх, мӗн тери чиперленсе кайнӑ халӗ вӑл! Ҫӳллӗ пӳллӗ, сарлака хулпуҫҫиллӗ. Лейтенант. Ҫӗркаҫ эпир нумайччен урам тӑрӑх уткаласа ҫӳрерӗмӗр. Ах, Нина, курасчӗ санӑн, мӗн тери чипер вӑл!

— Юратса пӑрахмарӑн пулӗ те? — кулса ыйтрӗ Нина.

— Пӗлместӗп. Тен, юратрӑм та пулӗ. Ӑна юратмасӑр тӑма май ҫук.

— Тольӑна тата?

— Паллах, Толя та аван каччӑ. Анчах вӑл аякра пурӑннишӗн эпӗ айӑплӑ мар-ҫке. Вӑл яла ҫулталӑкра та пӗр-икӗ уйӑха ҫеҫ килсе каять. Кӗтсе лар-ха ӑна,— терӗ Ира кӑмӑлсӑррӑн.

Нина чӗри ыратса кайрӗ.

— Ира, эсӗ вара Тольӑна юратмастӑн-и?

— Эпӗ юратмастӑп темерӗм. Анчах, ӑна кӗтсе, хӗр ӗмӗрне карчӑк пек, пӑчӑхса ларса иртterme шутламастӑп. Кайран та лармалли нумай пулӗ.

— Епле-ха апла? — тĕлĕнчĕ Нина.— Пĕр вăхăтра икĕ каччă... Иккĕшне те юрататăп тетĕн...

— Мĕн пулать кăштах тĕл пулкаласа, вăхăта пĕрле ирттернĕшĕн? Эпир юлташла çеç çӳретпĕр вĕт...

«Пĕлетпĕр эпир ун пек юлташсене... Куркаланă»,— тăруках аса илчĕ Нина Анатолий сăмахĕсене. Авă мĕне пĕлтернĕ иккен вĕсем!

— Çук, Ира, эсĕ Тольăна юратмастăн. Унсăрăн... Чăннипе юратнă чух пĕртен-пĕр çын çинчен кăна шухăшлатăн, вăл кăна хăй патне туртать, чĕрене савăнтарать,— Нина хыçлă пукан çине тайăнчĕ те унăн хавраслă ĕмĕтпе тулнă хура куçĕ таçта инçете тинкерчĕ.

— Эх, пĕлесчĕ санăн, мĕнле лайăх çырусем çырать ман пата Виктор! Епле телейлĕ эпĕ!

Ирăн ачашшăн ялкăшакан хитре куçĕсем самантрах сӳрĕкленчĕç. Вăл тантăшĕ çине чалăшшăн пăхса илчĕ те тутине илемсĕррĕн пăрчĕ.

— Ну, кĕтсе лар эппин Викторна. Курăпăр, мĕн пулĕ... Эпĕ кайрăм. Мана каччă кĕтет,— урăх вăл пĕр сăмах та каламарĕ, тумланчĕ те сывпуллашмасăрах тухса кайрĕ. Нина ун хыççăн тĕлĕнсе пăхса юлчĕ.

— Тем тутине тăсса тухса кайрĕ ĕнтĕ? Мĕн килĕшмерĕ-ха çав йăлт-ялт качакана? — ыйтрĕ пӳрте кĕрсе тăнă Анна Ивановна, Нинăн пăшăрханнă пит-куçне курса.

— Пĕлместĕп. Темшĕн кӳренчĕ. Епле пĕр вăхăтра икĕ каччăна юратма пултаратăн терĕм çеç.

Анна Ивановна Нина çине ăшшăн тинкерчĕ.

— Пĕр шухăшлă пулманшăн тарăхать пулĕ-и-ха?.. Е ăмсанать? Хăйне таврари чи чаплă хĕр тесе шутлать-çке. Вăл çеç юратăва тивĕçлĕ иккен. Çăмăлттай! Пур каччăн та ун хыççăн чупмалла, ăна çеç пуç таймалла. Такампа та япăлтатать. Хăй вара никама та юратмасть. Ах-ха-хай! — хаштах сыйларĕ хĕрарăм.— Амăшĕ çавăн пек пăхса ӳстернĕ ăна. Ачаранах мĕнпур калаçăвĕ те «ман Ирочка» çеçчĕ. Эсĕ ун сăмахĕсене йывăра ан ил. Кĕçех чупса килет акă. Ун пеккисем йĕркеллĕ юратма та, кӳренме те пĕлмеççĕ.

Анна Ивановна асăрхаттарса каланине хĕр урăхла ăнланчĕ.

Мĕншĕн ăмсанмалла ăна Ирăн? Викторпа хăй паллаштарчĕ. Кунсăр пуçне унăн палланă каччă темĕн чухлех. Пур çĕртен те çыраççĕ, юратни çинчен пĕлтереççĕ, туслашма сĕнеççĕ, çавăнпа та Нинăна халĕ пурпăçа лайăх пĕлекен хĕрарăм калани мар, ытларах Ира сăмахĕсем шухăшлаттарчĕç: «Кĕтех Викторна. Курăпăр». Мĕн каласшăн пулчĕ вăл? Пĕлмест-ши Ира ун çинчен мĕн те пулин? Викто-

рăн урăх хĕр пулсан? Хулара, пĕрле вĕреннĕ çĕрте, чипер хĕр сахал-и? Пĕр вăхăт Нина чĕрине иккĕлентерекен шухăшсем çавăрса илчĕç. Анчах унран ĕнер çеç çыру килчĕ-çке. Мĕн тери ырă, çепĕç сăмахсем унта! Нина Виктор çырăвне тепĕр хут вуласа тухрĕ.

«Темле пулсан та, эпĕ сана никампа та улăштармастăп. Эсĕ савнă чух, манăн урăххи çинчен шухăшлама вăй-хал та çитес çук»,— пăшăлтатрĕ хĕр, савнийĕн сăнӳкерчĕкĕ çине пăхса.

Анна Ивановна асăрхаттарни тĕрĕсех пулчĕ. Тепĕр кун ирхине учительсен пӳлĕмне кĕрсенех, Нина патне Ира айăплăн кулкаласа пырса тăчĕ.

— Хаклă тантăшăм, каçар ĕнерхишĕн,— пăшăлтатрĕ вăл хăлхаран.— Тем пулчĕ мана, хам та ăнланмастăп. Сана кӳрентертĕм пулĕ тесе, ăшчик вăрканипе çĕрĕпех йĕркеллĕ çывăраймарăм.

Кунсем пĕрин хыççăн тепри ирте-ирте пычĕç. Виктор хĕллехи каникула çеç килсе кайма пултарчĕ. Нина ялан ун çинчен шухăшларĕ, тĕл пулас ĕмĕтсемпе пурăнчĕ.

Çуллахи отпуска вăл килĕнче иртерме шутларĕ. Юлашки вăхăтра ашшĕ-амăшĕ, ялйыш час-часах аса килме пуçларĕç. Çуралса ӳснĕ вырăнсене курманни пумай пулать. Июнь уйăхĕн варринче Нина васкасах тăван ялне тухса кайрĕ.

Тепĕр виçĕ-тăватă эрнерен Виктор каникула таврăнать. Отпуска маларах илни унпа хăвăртрах тĕл пулма май парать.

Килти хуçалăхра, колхозра ĕçлесе отпуск кунĕсем хăвăрт иртсе кайрĕç. Виктор çырăвĕсенче тунсăхлани çинчен çыратчĕ, Нинăна хăвăртрах пыма йăлăнатчĕ. Акă хĕр хăçан пырасси çинчен çыру çырса ячĕ. Анчах каяс кун сасартăках Нинăн амăшĕ чирлесе ӳкрĕ. Ашă кăмăллă, хура куçĕсем вăйсăрланса тĕксĕмленчĕç.

— Хăрушах мар. Иртет,— хăраса ӳкнĕ килйыша лăплантарчĕ фельдшер. Вăл темиçе хутчен укол турĕ, эмелсем пачĕ. Çак сăлтава пула Нина хăй ĕçлекен яла виçĕ кун кая юлса таврăнчĕ.

Чи малтан ун патне Ира чупса пычĕ.

— Çитрĕн-и? — хитре аллисене илемлĕн малалла тăсса, вăл Нина патне ыткăнчĕ, ыталаса илсе, темиçе хутчен чуптурĕ.— Кĕтсе ывăнтăмăр сана. Мĕншĕн вăхăтра килеймерĕн? Пĕтĕмпех тунсăхласа çитрĕм. Виктор икĕ хут та килсе кайрĕ ĕнтĕ,— пĕлтерчĕ Ира.— Сана хирĕç те тухнă вăл аслă çул çине.

Нина пичĕ-куçĕ телейлĕн çуталчĕ. Тути ирĕксĕрех ачаш-

шăн кулса илчĕ. Виктор! Кĕтет вăл ăна! Яланхи пекех капăр тумланнă Ира çăвăнакан Нина тавра чупкаларĕ, пĕр вĕçĕмсĕр калаçрĕ. Тантăшĕ кайнăранпа шкулти, ялти, улшăнусем çинчен пĕлтерчĕ.

Хаваслăн чĕвĕлтетекен хĕре итлесе, унăн савăк питкуçне курса, епле ĕненмĕн вăл Нинăна кĕтсе чăннипех тунсăхласа çитнине, ăна чунтан килĕштернине?

Пĕрре Ира шкулта вĕреннĕ чухнех спектакльсенче лайăх выляннине аса илсе мухтаннăччĕ. Анчах кулленхи пурнăçра та вăл çав «пултарулăхпа» питĕ ăста усă курса выляссине Нина нихăçан та шухăшламан. Çавăнпа ĕнтĕ пĕр чарăнмасăр чĕвĕлтетекен тантăшĕн сăмахĕсене вăл ĕненсех итлерĕ.

— Виктор кĕтет сана, питĕ кĕтет,— терĕ Ира. Анчах унăн куçĕсем кулма чарăнчĕç. Вăл Нина çине, темрен вăтаннă пекрех, именсе пăхса илчĕ.

— Нина,— терĕ вăл хăюсăррăн, вара тăруках пӳлĕнсе, пĕр вăхăт чĕнмесĕр тăчĕ.

— Эсĕ темĕн каласшăн пулас? — ыйтрĕ лешĕ, телейлĕ куллине ниепле те пытараймасăр.

— Эпĕ... эпĕ сана хамăн çывăх тантăшăм пулнăран çеç калатăп... Юлашки кунсенче Виктора эпĕ час-часах ялхуçалăх институтĕнчен практикăна килнĕ студенткăпа пĕрле куркалатăп. Пĕлместĕп, те юлташла кăна çӳреççĕ вĕсем, те... Çынсем пакăлтатнине ĕненес килмест. Виктор пĕр сана çеç юратать-çке. Мĕн тери лайăх çырусем çыратчĕ вăл сан патна...

Ытла та йывăр пулчĕ Нинăна çак хыпара илтме. Çапах вăл хăйне алла илчĕ, çăмăл шухăшлă хĕр умĕнче хаваслă кăмăлĕ тăруках улшăннине палăртмарĕ.

— Халлĕхе эпĕ никам сăмахне те ĕненместĕп.

Ира ачашшăн кулса ячĕ, хăвăрт утса пырса, Нинăна ыталаса илчĕ.

— Мĕн тери таса чĕреллĕ эсĕ, Нина. Чăн та çаплах шанатăн-и Виктора? Ĕненекенсем телейлĕ, теççĕ. Эпĕ те сан пек пулăттăм та, анчах пултараймастăп. Лайăх пĕлетĕп çав эпĕ вĕсене, арçынсене,— терĕ вăл, каллех тем çинчен систерсе.

Нина пуçĕнчи шухăшсем, çиппи татăлнипе юхса тухнă шăрçасем пек, тĕрлĕ еннелле сапаланса кайрĕç. Хаваслăх сӳнчĕ.

Чăнах каларĕ-ши Ира? Урăх хĕрпе çӳренĕ пулсан, мĕншĕн Виктор унччен пекех ăшă çырусем çырса тăчĕ-ха? Нивушлĕ улталать вăл Нинăна? Виктор та çавăн пек çын пулчĕ-ши? Теп, Ира, хирĕçтерес тесе, юриех суйрĕ. Анчах

мĕн шутпа?.. Виктортан тӳрех ыйтса пĕлсен? Çук, васкама кирлĕ мар...

Çав кун Виктор Нина хваттерне хĕвел аниччен çитрĕ.

— Тинех,— терĕ каччă, крыльца çине хирĕç тухнă хĕре ыталаса. Вăл Нина питне икĕ аллипе çупăрларĕ те ăна куçран тинкерсе пăхрĕ.— Кĕтсе илессĕн туйăнмарĕ. Тĕрлĕ шухăшсем пуçа пăтратма тытăнчĕç. Канлĕхе çухатрăм, ыйхă килми пулчĕ. Виçĕ кун виçĕ çул пек туйăнчĕ...

Çак каç Виктор Нина çине вĕçĕмсĕр юратса пăхрĕ, каллех пĕрле пулнăшăн чунтан савăнчĕ, хаваслăн шӳтлерĕ, тĕрлĕ çепĕç сăмахсем каласа ачашларĕ.

Анчах телей нумая пымарĕ. Каччă хăвăрт улшăнчĕ, сăлтавсăрах сивĕнчĕ. Вăл текех пĕрле пуласшăн çунмарĕ, юнашар ларнă чухне те, куçĕсене пĕр çĕрелле тинкерсе, тем çинчен шухăшларĕ. Тепĕр чухне тата пĕр-пĕр сăлтав тупса, пачах та килмерĕ...

Нина Николаевна чӳрече патне пычĕ, çамкине кăмăлсăррăн картлантарса, пĕр хушă урамалла пăхса тăчĕ, унтан сĕтел çинче выртакан çырăва тепĕр хут аллине илчĕ.

«Санăн чăн-чăн туйăмусене ăнланас тесе, улталанса юласран хăраса, эпĕ хама ытла та айванла тыткаларăм»,— тепĕр хут вуларĕ вăл унти йĕркесене.

Айван çамрăклăх! Хаклă юратăва çухатасран хăраса, мĕн тĕрлĕ йăнăш тумастăн-ши эсĕ тепĕр чух...

Пуçра канăçсăр асаилӳ çăмхари çип пек çаврăнать. Тепĕр чух вăл кĕске вăхăта татăлать, унтан, каллех сыпăнса, малалла чупать...

Каччă тăруках çапла улшăннине кура Нина пăшăрханма, кулянма пуçларĕ. Унăн асапĕсене тарăнлатма Ира та нумай пулăшрĕ. Хăй ăшĕнче нихăçан та усал шухăш тытман Нина Ира çапла чее те путсĕр çын пулнине каярахпа тин ăнланчĕ.

Пĕррехинче кĕркуннене хăварнă ачасене экзамен тыттарнă хыççăн Нина шкултан тухрĕ те хваттерне утрĕ.

— Эсĕ ĕçрен тин таврăнатăн. Эпĕ вара паянхи куна ахалех ларса ирттертĕм,— терĕ тантăшне курса, картишĕнчен урама тухнă Ира.— Леш, ялхуçалăх институтĕнчен практикăна килнĕ студентка Зина килчĕ те... Унтан Викторпа Анатолий кĕчĕç... Нумайччен шавласа лартăмăр. Çур кун иртсе кайрĕ... Виктор кайран кĕмерĕ-и сан патна? — ыйтрĕ Ира, Нина çине сăнаса пăхса.

— Çук, курман. Эпĕ шкулта пулнă,— тавăрчĕ хĕр.

— А-а, чăнах-çке.

Ира пĕр вăхăт чĕнмерĕ, илемлĕ куçĕсене кăшт хĕстерсе, умри пĕве çийĕн выляса вĕçекен чĕкеçсене сăнарĕ.

— Зини вара Виктора чăннипех юратать-ши, ун çинчен куçне те илмест мĕскĕн. Кунта унăн урăх хĕр пуррине пĕлмест-ха вăл,— Ира кулса ячĕ.— Викторĕ те хаваслă, шӳт тăвать, култарать. Зина паян пире хăй патне пыма чĕнчĕ-ха. Унта пулатăп кĕçĕр.

Хваттере çитсен, хĕр чăтаймарĕ, сĕтел умне ларчĕ те питне аллисемпе хупларĕ. Шăпăртатса юхакан вĕри куç-çулĕ, алă тупанĕсене йĕпетсе, сĕтел çине тумларĕ.

Юрату! Мĕн чухлĕ телей, савăнăç, хаваслăх илсе кил-мест-ши вăл çамрăк чĕресем валли! Мĕн тери вăй-хал, ыра шанчăк, çутă ĕмĕт памасть пулĕ вĕсене! Анчах тем-шĕн-çке çак хĕрӳ туйăм хăйĕнчен асапне те, хуйхине те хăварасшăн мар. Чăн-чăн юрату телейне пĕлнĕ çынсенчен кам та пулин пур-ши унăн йӳçĕ тертне тутанса курманни? Çапах çамрăк пурнăçра телейсĕр юратăва тӳссе ирттер-нинчен асаплăраххи урăх нимĕн те çук пулĕ. Хаваслăх, савăнăç, телей ун пек чух, тăм тивнĕ чечексем пек, шанса типеççĕ. Улталаннă ĕмĕтсем, ыра шанчăксем хăйсем шы-ранине тупайманнипе, чĕрере куççулĕ, хуйхă кăна çуратаç-çĕ. Çав куççуле нимĕнпе йăпанса та типĕтеймĕн, ыратакан сурансем валли те эмел çук. Вĕсене ерипен иртекен вăхăт çеç майĕпен лăплантарма пултарать.

«Тĕплĕн калаçас Викторпа,— шухăшларĕ хĕр, куçĕсене шăлса типĕтсе.— Юратмасть пулсан, тĕрĕссине калатăр».

— Эсир ĕнер Ира патĕнче пултăр-и? — ыйтрĕ вăл, те-пĕр каçхине каччăпа тĕл пулсан.

— Çапла, килсе кайрăмăр.

— Мĕнле хĕр вăл Зина?

Виктор куçĕсенче хаваслă çутăсем выляса илчĕç.

— Питĕ лайăх хĕр.

— Эсĕ ăна юра... килĕштеретĕн-и?

— Килĕштеретĕп.

«Апла килĕштерет... Юратать... Пытармасть те. Апла ман пата вăхăт ирттĕр тесе çеç çӳрет»,— хĕр пуçĕ ирĕксĕ-рех çĕрелле усăнчĕ.

Ах, епле йывăр чĕрене! Мĕн тери ыратать вăл. Йĕрсе ярас марччĕ кăна!

— Мĕн пулнă сана, Ниночка? Мĕншĕн салхуллă эсĕ?— ыйтрĕ Виктор. Пысăк хура куçсем хĕр çине çав тери ăш-шăн, çав тери ачашшăн тинкерсе пăхрĕç. Ах, çав куçсем!.. Вĕсем мĕнпур çирĕп шухăш-кăмăла пăлхатса салатса ячĕç. Калас тенĕ сăмахсем таçта кайса çухалчĕç.

— Юратмастăн эсĕ мана, Витя! — тăвăнса тухрĕ хĕр чĕринчен. Çакна çеç калама пултарчĕ Нина. Унăн куçĕсем куççульпе тулчĕç, шултра тумламсем пит тăрăх пĕрин хыç-

çăн тепри юхса анчĕç... Йĕрсе янишĕн аванмарланнă хĕр пуçне çĕрелле пĕкрĕ, тепĕр самантран каллех çĕклерĕ те савнă каччи çине хăюсăррăн пăхса илчĕ... Вара Виктор нитĕнче хаваслă кулă выляса тăнине курчĕ. Такам питрен çупса янă пек, Нина шартах сикрĕ. Кӳренӳ чĕрене вут пек çунтарса ыраттарчĕ. Каччă Нинăна ыталама тăчĕ, анчах хĕр унăн аллисене сирсе ячĕ те, Виктор пĕр сăмах калама ĕлкĕриччен, алăка шартлаттарса хупса, картишне кĕрсе çухалчĕ. «Юратмасть вăл мана. Манмаллах ăна манăн. Манмалла!»,— вĕçĕмсĕр пăшăлтатрĕ хĕр тĕттĕмре.

Август уйăхĕ вĕçленсе пычĕ. Ыран Нинăн виçĕ кунлăха район центрне учительсен конференцине каймалла. Виктор пĕлет куп çинчен. Пĕрле пулма шутлă кунсем çеç юлчĕç. Кĕçех Викторăн та института таврăнмалла. Çапах та мĕншĕн килмест-ха вăл? Мĕншĕн вăрах кĕттерет? Çилленчех-ши е чăннипех манчĕ-ши Нинăна?

Нумайччен кĕтрĕ хĕр Виктора çак каç. Тĕттĕм урамалла вăл вĕçĕмсĕр пăхрĕ. Каччă килмерĕ.

* * *

Каç пулчĕ. Яла çĕр тĕттĕмĕ хупăрларĕ. Тӳпе çийĕн хупхура пĕлĕт татăкĕсем шурĕç. «Çук, ăна кĕтсе, унăн юратăвне ĕненсе, тек хама хам улталас мар. Вĕçлентĕр апла çак телейсĕр юрату»,— шухăшларĕ халь çеç конференцинчен таврăннă Нина. Анна Ивановна апат çиме чĕннине илтмесĕрех, вăл, çутă сӳнтерсе, вырăн çине выртрĕ. Виктор килес пулсан та, унпа калаçас темерĕ. Анчах çук, шухăшсем канăç памарĕç. Акă урам алăкĕ уçăлса хупăнчĕ... Ура сассисем илтĕнчĕç...

— Кĕме юрать-и? — илтĕнчĕ Виктор сасси.

— Юрать, юрать,— терĕ кăмака умĕнче хыпкаланакан Анна Ивановна.— Нина, çывăратăн-и эсĕ? Илтетĕн-и? Хăна килчĕ,— пӳлĕм алăкне хуллен шаккарĕ хĕрарăм.

Хĕр тăрса тумланчĕ, çутă çутса, каччăна кĕме чĕнчĕ.

— Ирех выртнă-çке. Кĕтместĕн апла,— терĕ Виктор кӳреннĕ сасăпа.

— Эсĕ килессе пĕлмерĕм,— кĕскен хуравларĕ хĕр.

Каччă куçĕпе тĕл пулас мар тесе, вăл чӳрече каррисене антарчĕ, сĕтел çинчи кĕнекесене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарчĕ. Виктор хĕр енне туртăнчĕ, анчах Нина сĕтел тепĕр енне кайса тăчĕ.

— Мĕншĕн таратăн, Нина? Эрне ĕнтĕ пĕрне-пĕри курманни. Пĕтĕмпех тунсăхласа çитрĕм,— терĕ Виктор шăппăн, хĕре аллинчен тытса. Хĕр çавăнтах аллине каялла туртса илчĕ.

— Эпе ыран каятăп. Кĕçĕр юлашки каç. Каллех пĕрне-пĕри темиçе уйăх кураймастпăр. Тухса ларар-и кăштах? Калаçмалли нумай.

— Тавтапуç ырă сăмахсемшĕн. Калаçмасăрах пĕтĕмпех ăнланатăп,— терĕ Нина, хăйне лăпкăрах тытма тăрăшса.— Суйма, улталама кирлĕ мар мана. Чăрмантарас теместĕп. Аçта каяс килет — кай, чармастăп. Кĕçĕртен пуçласа эпĕ сана юратнине ман. Санăнни пек юрату мана кирлĕ мар.

— Нина! Тăхта! — Виктор хĕр патне ыткăнчĕ, анчах лешĕ вăртах пăрăнчĕ те Анна Ивановна ларакан пӳлĕме тухрĕ. Чылайччен кĕтрĕ ăна каччă, кĕтсе илеймерĕ.

Виктор кайрĕ. Хĕр ăна ăсатмарĕ, унпа калаçасшăн та пулмарĕ. Чăлха çыхса ларакан Анна Ивановна пĕр вырăнта юпа пек хытса тăракан Нина çине шеллесе пăхрĕ те хăяр тăварлама катка илеймесĕр юлни çинчен сăмах хускатрĕ. Хĕр ăна, çавăншăн, нимĕн çинчен те ыйтманшăн тав туса, пӳлĕмне кĕрсе çухалчĕ.

* * *

Кунсем ерипен иртеççĕ. Çук, юрату вилесшĕн мар. Йывăр аманнă, анчах тапаланать, кăшкăрать, пулăшу ыйтать, шанать, ĕненет. Мĕнле пулăшмалла-ши ăна? Нина Виктортан çыру кĕтет. Юрататъ пулсан, вăл пĕтĕмпех çырса пĕлтерме кирлĕ. Акă килчĕ кĕтнĕ хут. Анчах унта, Нинăна айăпланисĕр, ӳпкеленисĕр пуçне, урăх сăмах та çук. «Эсĕ манпа калаçасшăн та пулмарăн. Тен, урăххине, манран лайăххине тупрăн. Çырса пĕлтер. Ан асаплантар мана кăлăхах».

Çак çыру хĕре кӳрентерчĕ. Авă епле! Хăйĕн йăнăшĕсене шута илсе каçару ыйтас вырăнне Виктор пулни-иртнишĕн пĕтĕмпех, пĕр сăлтавсăрах Нинăна айăплать иккен!.

Пĕррехинче уроксем хыççăн киле таврăнсан, хĕр чӳрече умне пырса ларчĕ. Йывăр тунсăх чĕрене хĕсет.

Акă чӳрече умĕнчен колхоз бригадирĕ васкаса иртрĕ. Тем çинчен систернĕ пек, учительница çине йăлт пăхса илчĕ. «Хире, тырă выракансем патне каймалла-çке паян,— аса илчĕ Нина ăна курсан.— Анчах пĕрре те кăмăл çук. Ыран та кун пур. Кăштах кая юлнăшăн темех пулмĕ».

Нумай та вăхăт иртмерĕ, бригадир каллех курăнчĕ, каллех хĕр çине пăхса илчĕ.

«Мĕн тăтăшах пирĕн пӳрт умĕнче утать вăл? Хăйне кăтартма тухнă çăмăлттай хĕр пекех»,— тарăхса шухăшларĕ Нина. Хĕрӳ ĕçре чупса çӳрекен бригадир хăйне ĕççĕр ларнине курнăшăн хĕр аванмарланнă пек пулчĕ. Вăл, тăрса,

кухньăна кĕчĕ, чей вĕретме лартрĕ. «Çук, тем пулсан та, апла алă усса ларма юрамасть»,—шухăшларĕ вăл, пĕтĕм шăмшака эрешмен карти пек яваласа илекен сӳрĕклĕхрен çăлăнма тăрăшса.— Хуйхă пусарать, ĕç çĕклет тенĕ. Тĕрĕсех каланă». Нина хаçатсем пăхса тухрĕ, хăшпĕр статьясене паллă турĕ,васкасах çырĕ. Вăл агитатор-çке. Паянхи кун унăн хирте пулмалла.

Пĕр çĕре пуçтарăнса, халĕ кăна вырнă кĕлтесем çинче ларакан колхозниксене Нина тĕнчери лару-тăрупа паллаштарчĕ, унтан палăртнă статьясене вуласа пачĕ... Вара пуçне çĕклерĕ те колхозниксем хушшинче ларакан палламан çамрăка курах кайрĕ. Каччă тимлĕн итлет, хĕр çине ăшшăн тинкерсе пăхать. «Кам-ши ку? Хăш вăхăтра килнĕ вăл? — шухăшласа илчĕ хĕр.— А-а, агроном пулĕ-ха? Килмелле тенине илтнĕччĕ... Паллах, çавă».

Ыйтусем çине ответлесе пĕтерсен, Нина ĕçленĕ çĕрте тытăнса тăмарĕ, кукăр-макăр ансăр сукмакпа утса, кĕçех аслă çул çине тухрĕ те ялалла васкамасăр утрĕ.

Шăнкăрр! турĕ хыçрах. Тарăн шухăша путнă хĕр шартах сикрĕ. Велосипедпа пыракан çамрăк ун тĕлне çитсен, сиксе анчĕ.

Вĕсем яла çитичченех юнашар утса калаçса пычĕç. Агроном сăмах ваклама юратаканскер пулчĕ. Нина ăна килĕшни çинчен вăл тӳрех, уççăнах систерчĕ.

— Сире эпĕ яла килнĕ кунах куртăм. Колхоз правленийĕнче председателе кĕтсе лараттăм. Эсир çывăхранах иртсе кайрăр. Çавăн чухнех паллашма шут тытрăм. Анчах паянччен те тĕл пулма май килмерĕ. Темшĕн эсир каçсерен урама тухмастăр. Хваттере пыма хăяймарăм. Хуса ярасран шиклентĕм. Шкул ачисем: «Эпир Нина Николаевна урокĕсенче хускалма та хăратпăр»,— теççĕ те,— шӳтлерех каларĕ каччă.

— Çавăн пекех усал, хаяр-ши эпĕ?

— Çу-ук. Юратаççĕ вĕсем сире.

Чĕрене урăххи асаплантарса çунтарать пулин те, каччă хăйĕнпе çапла интересленни Нинăн кăмăлне сисĕнмеллех хăпартрĕ.

— Эсир ман ята та пĕлетĕр иккен. Эпĕ вара...

— Каçарăр. Григорий. Гриша тесен те юрать.

— Эсир кăнтăртан мар пулĕ те? Питĕ хĕвелпе писнĕ-çке.

— Уй-хирсем тăрăх нумай çӳретĕп эпĕ. Манăн ĕçĕ çапла. Çутçанталăка та питĕ юрататăп. Эсир вара ниçта та тухмастăр пулас. Учителĕн ĕçĕ пайтах ĕнтĕ. Çĕрле те нумай ларатăр. Сирĕн чӳречере çутă темчченех çунать.

— Ёҫӗ сахал мар. Тата эпе каҫсерен ытларах кӗнеке вулама юрататӑп.

— Библиотекӑра кирлӗ кӗнекесем пур-и?

— Сахалтарах ҫав. Ҫапах шкул библиотекине чухӑн теме ҫук.

— Манӑн лайӑх кӗнекесем пур. Кӑмӑл пулсан, пырса ларӑр.

Ҫав каҫ клубра кино пулать терӗҫ. Уроксене хатӗрленсе пӗтерсен, Нина, сӗтел ҫинчи тетрадьсемпе кӗнекесене вӑрт-варт пуҫтарса хучӗ те, ҫутта сӳнтерсе, урама тухрӗ. Кӗрхи каҫ уяр, ҫӑлтӑрлӑ пулин те, тӗттӗм. Нина картишӗнчен тухрӗ кӑна, ҫывӑхри пысӑк йӑмра айӗнчен ҫын мӗлки уйрӑлчӗ, тепӗр самантран хӗр патне Григорий кулкаласа утса пычӗ.

— Сире ҫур сехет кӗтетӗп ӗнтӗ, Нина Николаевна. Кино курма каяс терӗм те, урасем темшӗн клуба мар, ҫакӑнталла, эсир пурӑнакан ҫурт патнелле, илсе килчӗҫ,— шӳтлерӗ вӑл, хӗре куҫран тинкерсе.

«Урӑххипе паллашсан, юрату асапӗсене тӳссе ирттерме ҫӑмӑлтарах теҫҫӗ,— шухӑшларӗ хӗр, ӑна Гриша киноран ӑсатса ярсан.— Мӗншӗн ӑша ҫунтарас? Иртнине каялла тавӑраймӑн. Григорий вара пӗрре те тиркемелле каччӑ мар. Авӑ Ира епле авкаланчӗ кӗҫӗр ун умӗнче. Мӗн пек хӑй енне ҫавӑрма тӑрӑшрӗ».

Лайӑх каччӑ тӗл пулчӗ Нинӑна. Гришӑна темле хӗр те савмалла... Нумай пӗлет, сӑпайлӑ, чипер.

Анчах чӗрене хушса итлеттерме ҫук-ҫке... Малтанхи юрату инепле те ӑшран тухмарӗ, хӗр кӑмӑлӗ урӑх ҫынна йышӑнма килӗшмерӗ. Гришӑпа курнӑҫма Нинӑшӑн кунран-кун йывӑрланса пычӗ. Унӑн ачаш сӑмахӗсем ӑна хумхантармарӗҫ, савӑнтармарӗҫ. Тунсӑх вара тата вӑйланчӗ. Каччӑ ӳкӗтленине пӑхмасӑрах, Нина ялан унран хӑвӑртрах уйрӑлма васкарӗ, ӗҫ нумай тесе, унпа сайра хутра ҫеҫ тӗл пулкаларӗ. Пӗрне тунсӑхласа кӗтнӗ чух теприппе юнашар пулма питех те йывӑр иккен.

* * *

Кӗрхи каҫ тӗттӗм. Таврара ҫил канӑҫсӑр шавлать, уласа йӗрет. Пӳрт умӗнчи шурӑ хурӑн айӗнче хӗрпе каччӑ тараҫҫӗ.

— Урӑххипе телей тупӑп тесе ӗмӗтленни пушӑ шухӑш ҫеҫ пулнине ӑнлантӑм ӗнтӗ,— тет хӗр, пуҫланӑ сӑмахне малалла тӑсса.— Унсӑр пуҫне никама та савас ҫук эпӗ. Ӑна ҫеҫ юрататӑп. Каҫарӑр,— пыра тӑруках тем капланчӗ.

Пёрсе ярасран хăраса, вăл тутине çыртрĕ, хăрах аллипе хурăна çатăрласа тытрĕ.

Гриша портсигарĕнчен пирус кăларчĕ, анчах туртмарĕ, лутăркаса пăрахрĕ. Пĕр хушă, пуçне чиксе, шухăша кайса тăчĕ. Унтан пушмак пуçĕпе сарă хурăн çулçисене пĕр çĕре пуçтарчĕ.

— Эсир кӳршĕ ял каччипе тĕл пулкалани çинчен илтнĕ-ха эпĕ,— терĕ вăл вăрахран.— Анчах хĕр чух хĕрĕх тенĕрен шантăм-ши. Шутламан капла пуласса... Ну, юрĕ-çке... Сывă пулăр, Нина Николаевна. Телей сунатăп сире.

Вăл кайма тăчĕ, çапах, хĕр тем каласса кĕтнĕ пек, хускалмарĕ. Çакна туйса, Нина хăй ăшĕнче ăна лăплантарма кирлĕ сăмахсем шырарĕ. Анчах пуçра пĕр вырăнлă сăмах та тупăнмарĕ.

* * *

Çав кунсенчех вĕсем тата тепĕр хут, юлашки хут, тĕл пулчĕç. Шкулта уроксем пĕтмен-ха. Пушă урокпа усă курса, Нина тетрадьсем тĕрĕслесе ларатчĕ. Алăк уçăлчĕ те, учительсен пӳлĕмне Виктор кĕрсе тăчĕ. Хĕр чĕри хаваслăн тапма пуçларĕ, унтан йынăшса ыратса кайрĕ. Алли чĕтренипе ручки тухса ӳкрĕ, умри тетраде вараласа хучĕ. Виктор, сывлăх сунса, пурне те алă пачĕ. Нина тĕлĕнче вăл чарăнса тăмарĕ, тишкерсе пăхрĕ кăна, сĕтел çинчен хаçат илчĕ те çывăхри диван çине кайса ларчĕ.

— Мĕнле килсе лекрĕр эсир кунта вĕренниĕ вăхăтра?— ыйтрĕ унран пĕр учитель.

— Килте ĕçсем пур-ха, çавăнпа таврăнтăм. Çула май шкула кĕрсе курас терĕм.

— А-а! — терĕ унпа калаçаканĕ, Нина Николаевна çине куç хĕррипе пăхса илсе.

Нина умĕнчи йĕркесем тĕксĕмленчĕç, саспаллисем пĕрпĕрипе пĕрлешсе кайрĕç. Сăмахсене темиçе хут вуласа та, вăл унта мĕн çырнине ăнланаймарĕ.

«Мĕн тесе çав териех пăлханатăп-ха эпĕ? Ман пата килмен вăл. Унăн урăххи пур. Ăна юратать вăл»,— шухăшларĕ хĕр, хăйне лăплантарма тăрăшса.

Чăнах та, Виктор Нина çине пĕрре те пăхмарĕ. Малтан вăл хаçатсем вуласа ларчĕ, каярахпа, пĕр учительпе калаçакансккер, Нина урока тухса кайнине те асăрхамарĕ пулас. Анчах мĕн тăвăн айван чĕрепе? Вăл ăстăн хушнине итлемест. Шанать, йĕрет, асапланать. Акă юлашки урок та вĕçленчĕ. Виктор çаплах ларать-ха. «Такампа калаçасшăн пулас, такама кĕтет»,— шухăшларĕ Нина, киле кайма

пуçтарăпса. Анчах Виктор аллинчи хаçатне аяккалла хучĕ те, тăрса, ун патне пычĕ.

— Сирĕнпе пĕрле пыма юрать-и?

— Юрать,— терĕ хĕр шăппăн.

Шкулпа хваттер хушши икçĕр-виççĕр утăм кăна. Çумаçумăн тăрса юлашки хут утасса, кĕçех пĕр-пĕринчен ĕмĕрлĕхех уйрăласса сиснĕн, урасем васкамаççĕ.

— Пурнăçсем мĕнле, Нина Николаевна? — ыйтрĕ Виктор пĕр вăхăт чĕнмесĕр пынă хыççăн.

— Аван,— терĕ Нина кĕскен.

Икĕ савни, икĕ юратакан чĕре. Анчах çав юратăва халĕ хĕвел пек çутă телей ăшăтса савăнтармасть, ăна сивĕ, тĕксĕм иккĕленӳ хупăрланă. Икĕ савни, икĕ юратакан чĕре... Куçсем пĕр-пĕрне шыраççĕ, сăнаса пăхаççĕ, анчах вĕсенче унчченхи хаваслăх курăнмасть. Ĕненӳ те, шанăçу та çук. Акă Нина хваттерĕ. Картиш алăкĕ хурлăхлăн чĕриклетсе уçăлчĕ. Хĕр, маларах утса, крыльца çине хăпарчĕ.

— Тăхта, Нина. Кĕрсе ларма вăхăт çук. Васкатăп эпĕ, ыран каялла каймалла, — терĕ каччă, алăк хăлăпĕнчен тытнă хĕре чарса.— Манăн санпа калаçмалли пур.

— Итлетĕп.

— Эпĕ пирĕн хушша виççĕмĕш çын килсе тухнă тенине илтрĕм. Тĕрĕс-и вăл?

— Тĕрĕс.

— Тĕрĕс апла... Эпĕ ĕненмерĕм... — Виктор кулса ячĕ.

Халĕ ун кулли пĕрре те хĕр темиçе эрне каялла уйăхлă каç куççулĕ витĕр курнă кулă пек пулмарĕ. Çак кулăра хыпса çунакан чĕрери асап палăрчĕ. Анчах Нина ăна ĕненмерĕ. Виктора кăлăхах кĕтсе асапланнă каççем ăшран тухмарĕç.

— Эсĕ ăна юрататăн-и? — ыйтрĕ Виктор салхуллăн.

Ах, каласчĕ, каласа парасчĕ Виктора хăй пĕр уншăн асапланнине, ăна çеç юратнине, унсăр пуçне тĕнчере урăх никам та кирлĕ маррине! Анчах темшĕн-çке чĕлхе çине пачах урăхла, кӳрентерекен сивĕ сăмахсем килеççĕ.

— Мĕн тума кирлĕ вăл сана?

— Ку чăнах ĕнтĕ. Капла ыйтни нитех те айванла пулса тухрĕ. Унсăрăн та пĕтĕмпех паллă,— Нинăна хирĕç тăракан Виктор пăрăнчĕ, унăн хура куçĕсем тĕксĕмленчĕç.— Манăн каймалла,— терĕ вăл кĕскен.— Каçар, чăрмантарнăшăн. Сывă пул.

Хăй мĕн тунине лайăххăн ăнланмасăр, Нина Виктора алă пачĕ. «Каять, халĕ ĕнтĕ яланлăхах каять!» — таттисыпписĕр янăрать пуçра пĕртен-пĕр шухăш. Тытса чарас, пĕтĕмпех каласа парас. Анчах çак сасса тепĕр шухăш пу-

тарса лартать: «Мĕн тума? Вăл пурпĕрех мана юратмасть». Акă каччă пĕр утăм туре. Крыльца ҫинчен ерипен анса, картиш алăкĕ еннелле утрĕ. Кăшкăрса йĕрекен чĕре сассине пытарса, Нина ун хыҫҫăн пăхса юлчĕ. Юлашки утăм. Виктор алăк хăлăпĕнчен тытрĕ. Тухса кайиччен чупа ыраттаракан куҫĕпе тепĕр хут савниййĕ ҫине пăхрĕ. Те пăлханнипе, те майне пĕлменнипе, алăк хăлăпĕ ниепле те ҫакланмасть.

— Хам хупăп,— терĕ Нина, алăк патнелле пырса. Ҫав самантрах алăк хупăнчĕ. Урам енче сас-чĕвĕ илтĕнмерĕ. «Кайрĕ... Кайрĕ!» — мăлатук пекех шаккаса ыраттарать чĕрене пĕртен-пĕр шухăш. Нина хуллен пӳртелле утрĕ. Крыльца патне ҫитсен, юпана ыталаса илчĕ, вара сасăпах макăрса ячĕ.

— Мĕн пулчĕ! Мĕншĕн каплах йĕретĕн? — ыйтрĕ тин ҫеҫ картишне кĕнĕ Анна Ивановна.

Куҫҫулĕпе пӳлĕннĕ Нина тăруках сăмах хушаймарĕ.

— Атя-ха ларар. Мĕн пулчĕ? Каласа парсам.

— Виктор килсе кайрĕ,— терĕ хĕр юлашкинчен.

— Мĕн, кӳрентермерĕ пулĕ вĕт?

— Ҫук, вăл... вăл нимĕн те... эпĕ ăна хам кӳрентертĕм пулас,— хĕр каллех хыттăн ĕсĕклеме пуҫларĕ.— Ах, Анна Ивановна, юратмасть вăл мана.

Ҫак ырă кăмăллă хĕрарăма Нина куҫҫулĕ витĕр тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕ. Анна Ивановна ăна чĕтрекен хулпуҫҫийĕнчен, пуҫĕнчен ҫупăрласа ачашларĕ, лăпланса ҫитессе кĕтрĕ.

— Кун пек юрату вăл ҫын ĕмĕрĕнче пĕрре пулать. Ҫавăнпа ăна упрама пĕлмелле. Ахалех ĕненнĕ эсĕ Ирăна, Викторпа хăвăн калаҫмалла пулнă.

Анна Ивановна кăкри ҫине пуҫне хунă хĕр унăн ӳт-пĕвĕн ăшшине туять, чĕри васкамасăр тапнине, ӳпкисем хашлатса сывланине илтет. Кушăрханă алăсем ҫепĕҫҫĕн, ăшшăн ачашлаҫҫĕ.

— Мĕншĕн килнĕ-ха вăл?

— Пĕлместĕп. Тĕрлĕрен ĕҫсем пур тет. Ҫула май кĕтĕм тет.

— Ăна юри калать-ха. Мăн кăмăллă вăл. Эпĕ ăна ачаранах пĕлетĕп. Мĕн ĕҫĕ пултăр халĕ унăн кунта? Сан пата килнĕ вăл. Ан йĕр. Пĕрне-пĕри иксĕр те юрататăр пулсан, каллех йĕркеленĕ акă. Ҫыру ҫырса яр эсĕ ун патне. Пĕтĕмпех ҫыр, нимĕн те ан пытар. Виктор ăнланĕ. Григорий Степановичпа юлташла тĕл пулкаланăшăн айăпламĕ вăл сана...

Ыратнипе асапланакан ҫынна пĕрремĕш пулăшу парса

лăпланпарнă пек, Анна Ивановна сăмахĕсем татăлса йĕрекен Нинăна йăпатрĕç, шанчăк пачĕç.

* * *

Темиçе çыру та çырчĕ вăл, анчах, вуласа тухсанах, çура-çура пăрахрĕ. Темшĕн пĕрре те кирлĕ сăмахсем тупăнмаççĕ.

Шак! Шак! Шак! хыттăн шаккарĕ тахăшĕ картиш алăкне. Сиксе тăрса Нина чӳречерен пăхрĕ. Почтальон хаçатсем хурса хăварнă иккен. Çыру та пур. Виктор çырăвĕ! Ырă пулас çуккине туйса, хĕр хăвăртрах пӳрте чупса кĕчĕ, чĕтрекен аллипе конверта çурса уçрĕ. Тăваткалласа хуçлатнă хут листи ăшĕнче икĕ сăнӳкерчĕк курăнчĕ... Нина сăнӳкерчĕкĕсем. Вĕсене вăл Виктора асăнмалăх парнеленĕччĕ. Куççем алăри çыру тăрăх чупса кайрĕç. Унти кашни сăмах хĕр чĕрине хĕскĕч пекех хĕстерсе ыраттарчĕ. «Сывă пул. Эсĕ шутланă пек пултăр. Эпĕ тек сана çырса та, пырса та чăрмантармăп. Сăнӳкерчĕкӳсене каялла тавăрса паратăп, эсĕ те ярса пар».

Нина пукан çине тĕшĕрĕлчĕ. Чи таса, чи ырă туйăмсемпе хавхаланса парнеленĕ сăнӳкерчĕксем. Апла вĕсем ăна текех кирлĕ мар. Тăруках вăйсăрланса çĕрелле усăннă алăран вĕсем пĕрин хыççăн тепри тухса ӳкрĕç, ура айне пулса лутăрканчĕç. Пĕр самант хĕр хускалмарĕ, вара унăн чул пек хытса ларнă пичĕ-куçĕ асаплăн туртăланса илчĕ, хыткан хулпуççийĕсем чĕтреме тытăнчĕç.

Эх, мăнтарăн хĕр кăмăлĕ! Мĕншĕн çакăн пекех хуçăлатăн-ши? Е саншăн тĕнчере каччă пĕтнĕ-и?

Нина пуçне сĕтел çине хучĕ. Пĕтĕм шăмшак вăйсăрланса сӳрĕклене кайрĕ. Мĕнпур шухăша, ăшри мĕнпур туйăма йывăр хуйхă пусса, путарса лартрĕ. Нимĕн те тăвас килмест. Нимĕн те интереслентермест. Пурăнас та килмест...

— Мĕн эсĕ сĕтел умĕнчех çывăрса кайрăн-и? — хăлха патĕнчех янрарĕ Ирăн хаваслă сасси. Нина пуçне çĕклерĕ те йăл-йăл кулса тăракан хĕр çине кăмăлсăррăн пăхса илчĕ. Куççулĕпе хĕрелсе шыçнă куççене курсан, Ира, тĕлĕнсе, куç харшисене хăпартрĕ.

— Нина, мĕн эсĕ?

Анчах вăл самантрах пӳлĕнчĕ. Ун куçĕсем сĕтел çинче выртакан тăватă йĕркеллĕ çыру çине ӳкрĕç, чарăнса тăчĕç (Ира вуларĕ пулас), унтан урайĕнче выртакан сăнӳкерчĕксене курчĕç. Хĕрĕн хаваслă пичĕ-куçĕ тĕксĕмленчĕ, хăй сисмесĕрех, вăл икĕ утăм каялла чакрĕ.

— Нина,— терĕ вăл шăппăн, юлташĕ çине хăюсăррăн

пăхса. Анчах пĕр вырăнта юпа пек хускалмасăр ларакан хĕр чĕнменнине кура, пĕр ури çинчен теприн çине пускаласа илчĕ. Вара, ним калаçмасăрах, каялла шăппăн тухрĕ.

Умра икĕ сăнÿкерчĕк... Икĕ пĕчĕк сăнÿкерчĕк кăна. Анчах ытла йывăр-çке çак хут таткисене конверт ăшне илсе чикме. Куççулĕ витĕр чуптуса сывпуллашрĕ хĕр юратнă çыннăн сăнĕпе. «Сывă пул. Тек эпĕ нихçан та санăн ачаш сăмахусене илтес çук, сан куçусем юратса пăхнине курас çук». Ах, вăй-хал çитмест вĕсемпе уйрăлма. Анчах ямалла. Виктор кĕтет...

* * *

Пĕррехинче хĕр пÿлĕмне Анна Ивановна кĕрсе ларчĕ.

— Григорий Степановича куртăм почтăра, çыру вуласа тăрать. Хăй вĕреннĕ института ĕçлеме чĕнеççĕ тет. Пултаруллă çын пулас. Унта та хакласçĕ ăна,— Анна Ивановна хĕре куçран тинкерсе пăхрĕ.— Мĕнле пурăнатăр тесе ыйтать.

Хĕрарăм каланине итлесе, Нина çамрăк агрономпа мĕнле паллашнине, хиртен юнашар утса таврăннине аса илчĕ. Анчах, çав асилÿсене самантрах хупласа, куç умне Виктор сăнĕ тухса тăчĕ.

Юрату асапĕсене тÿссе ирттерме Нинăна çăмăл пулмарĕ. Вăл начарланса кайрĕ, пичĕ-куçĕ чирлĕ çыннăнни пек шурăхса ларчĕ, апат анми пулчĕ. Анчах йывăр хуйхă хер вăй-халне хуçаймарĕ. Яланхи пекех вăл уроксене тимлĕн хатĕрленчĕ, хăй класĕпе нумай ĕçлерĕ, шкулта та, ялта та обществăллă ĕçе хутшăнчĕ.

Вăхăт иртсе пычĕ. Çапла пулнă хыççăн Виктора Нина пĕр-икĕ хут кăна курчĕ, анчах аякран çеç пăрăнса утрĕ. Каччă та хĕрпе тĕл пулса калаçма кăмăл тумарĕ. Институт пĕтерсен Нина ăна урăх района ĕçлеме яни çинчен пĕлчĕ.

* * *

Пурнăç хăй çулĕпех шурĕ. Вăхăт иртнĕ май чĕрери сурансем хуллен сывалса пычĕç. Аша çунтаракан хуйхă-суйхă майĕпен йăвашланчĕ.

Пĕрре район конференцине кайсан, учительсен ячĕпе йĕркеленĕ вечерта Нина умне йăрăс пÿллĕ каччă пырса тăчĕ, ташлама чĕнсе, пуçне сăпайлăн пĕкрĕ.

— Палланă пит-куç, анчах ăçта курнине аса илейместӗп,— терĕ вăл.— Эсир пединститут Шупашкарта пĕтернĕ-и?

— Ара. Эпĕ те курнă сире унта.

Вĕсем калаçса кайрĕç, студент пурнăçне, паллану çынсене аса илчĕç.

Çав каç Гена Нинăпа кăна ташларĕ, вечер хыççăн хăна çуртне ăсатса яма ирĕк ыйтрĕ. Шăпланнă каçхи урампа вĕсем васкамасăр утрĕç.

— Геннадий Васильевич,— чарăнса тăчĕ хирĕç пыракан хĕрарăм,— Костьăран çыру килчĕ. Вĕренме кĕнĕ, Мускавра, университетра,— савăнăçлăн пĕлтерчĕ вăл.— Сире пысăк салам ярать. Тавтапуç, Геннадий Васильевич. Пĕтĕм чĕререн. Пирĕн çемьерен... Эсир пулман пулсан...

— Питĕ хавас ыра хыпар илтме, Ольга Петровна. Маттур Костя. Ывăлăрпа тивĕçлипех савăнма пултаратăр. Лайăх математик пулать,— терĕ Гена хаваслăн.— Ку Константин Гурьев амăшĕ,— ăнлантарчĕ вăл Нинăна малалла утнă май,— ывăлĕ кăçал вăтам шкул пĕтерчĕ. Питĕ пултаруллă, ĕçчен ача.— Йĕлтĕрпе ярăннă чух ăнсăртран урине амантса, виçĕ уйăх шкула пыраймарĕ. Килне çӳрерĕм,— унтан сăмаха тăруках урăх енне пăрчĕ.— Нина, шутлăрха эсир. Ялта вĕреннĕ чăваш ачи çĕршыври чи лайăх аслă шкулсенчен пĕрне, Мускав университетне, вĕренме кĕнĕ. Вăт епле пулса кайрĕ халĕ пирĕн пурнăç! Тăрăш, вĕрен, ĕçле. Пур çĕрте те çул уçă...

Гостиницăра Нина патне çулланнă хĕрарăм пырса ларчĕ.

— Эпĕ те тин кăна вечертан таврăнтăм. Çамрăксем савăннине пăхса лартăм. Лайăх каччăпа ташларăр эсир,— терĕ вăл, хĕр çине кăмăллăн пăхса.— Пĕрле ĕçлетпĕр эпир. Чăн-чăн учитель. Ача-пăчана питĕ юратать. Пĕлӳ парасшăн хăйне те, вăхăтне те шеллемест. Килте те йĕркеллĕ пурăнать.

Çав çул Гена Нина ĕçленĕ яла темиçе хут та пырса кайре, каярахпа юратни çинчен пĕлтерсе, пĕрле пурăнма сĕнчĕ...

Унтанпа виçĕ çул иртрĕ... Халĕ акă çыру... Пĕр шутламан, кĕтмен çĕртен... «Икĕ уйăх каярах курса каласман пулсан, пулни-иртнине манаттăм-и, тен»,— аса илчĕ Нина çырури сăмахсене. Чăнах та, тĕл пулма кирлĕ марччĕ вĕсен. Анчах пурнăçра мĕн пуласса пĕлместĕн-çке...

Çав кун чугун çул станцине Нина пуйăс кайиччен çур сехет малтан çитрĕ. Çул çинче вулама пĕр-пĕр кĕнеке е хаçат илес тесе, вокзала кĕчĕ, киоск умне пырса тăчĕ. Кĕтмен çĕртен умра тăракан çӳллĕ арçын вăштах çаврăнчĕ те çамрăк хĕрарăм çине тинкерсе пăхрĕ.

— Паллану сасă,— терĕ вăл.— Нина... Нина Николаевна, чăнах эсир-и ку? Хавас, питĕ хавас сире курма.

— Анатолий! — тĕлĕнчĕ Нина та, темшĕн сасартăках хĕпĕртесе.— Акă кĕтмен тĕлпулу! Эсир каятăр-и е кама та пулин ăсататăр?

— Киле каятăп. Отпускра ырă куратăп халĕ. Тĕп хулана килсе курас терĕм. Сарă хĕр пекех, хăй патне туртать.

— Инçетре ĕçлетĕр пулас?

— Инçетре, Нина Николаевна. Аякри Çурçĕрте.

— Мĕнле пурăнаççĕ унта, ялта?

— Пысăк улшăнусемех çук пулас. Илтмен.

— Анна Ивановнăна курмарăр-и? Халĕ те пĕчченех-и? Ывăлĕ таврăнасса кĕтетчĕ вăл.

— Курса калаçман, Нина Николаевна. Килмен пулĕ, унсăрăн илтмелле.

— Ира тата?

— Ира...

Мĕн калас-ха ун çинчен тенĕн Анатолий хулпуççине хускатса илчĕ.

— Пурăнать. Çавăнтах. Качча кайнине пĕлетĕр пулĕ-ха. Икĕ ача терĕç. Самăрланса, сарăлса кайнă, якалма, капăрланма пăрахнă, анчах ĕлĕкхи пекех йăпăлти чĕлхеллĕ, илĕртӳллĕ куçлă,— Толя сӳрĕккĕн кулса илчĕ.

— Курсан, Анна Ивановнăна салам калăр,— терĕ Нина.— Кайма вăхăт çывхарать. Перрон çине тухар-ха. Вагонра ман валли вырăн юлмарĕ пулĕ ĕнтĕ.

— Пĕрреллĕхе тăрса та кайăр-ха. Ватă мар,— шӳтлерĕ Анатолий. Çумри хĕрарăм çине çӳлтен аялалла, чеен кулкаласа пăхса.— Пуйăс тапраниччен пурпĕр вагона кĕрейместĕр эсир.

— Епле апла?

— Çаплах. Манăн сире валли сюрприз пур.

— Ак тата! Мĕнле сюрприз-ши?

— Тухсан куратăр.

Перрон çинче çын нумаях мар. Вагонсен кашни чӳречинчен тĕрлĕ пит-куç пăхать, калаçать, кулать, сăнать.

— Ну, Толя, ăçта, мĕнле сюрприз кĕтет мана?

— Авă,— пуçĕпе сĕлтсе кăтартрĕ Анатолий,— уткаласа çӳрет.

Нина çаврăнса пăхрĕ. Ытти çынсем хушшинче çамрăк хĕрарăмăн куçĕсем вăтам пӳллĕ арçынна асăрхарĕç. Çурăмне çеç курчĕ пулин те, Нина ăна тӳрех палласа илчĕ. Пит-куç самантрах пĕçерсе хĕрелчĕ, пӳрнесем ывăç тупанне шăтарас пек пăчăртанчĕç.

— Виктор! — чĕнчĕ Анатолий.

Хăй ятне илтсен, лешĕ васкамасăр çаврăнчĕ. Унăн куç

харшийёсем ҫӳлелле ҫӗкленчӗҫ, тути кулса ячӗ, сӑнӗ-пичӗ хаваслӑн йӑлкӑшса ҫутӑлчӗ.

— Нина! — терӗ вӑл, хӗрарӑмӑн аллине хӗрӳллӗн чӑмӑртаса.— Аҫтан сиксе тухрӑн... тухрӑр эсир капла? Мӗн тери ӑнӑҫлӑ пулчӗ паян маншӑн ку ир!

Кӗҫех Виктор Нинӑна хӑй Шупашкара халӗ ҫеҫ килсе ҫитни, ӑнсӑртран кунта Анатолипе тӗл пулни, вара ӑна ӑсатса яма шутлани ҫинчен каласа пачӗ. Кӗске вӑхӑт вӗсем, тӗрлӗ ыйтусем парса, пӗр-пӗрни ҫинчен ыйтса пӗлчӗҫ. Калаҫнӑ май Нина Виктора сӑнарӗ. Улшӑннӑ вӑл. Куҫӗсем тавра кӑшт палӑрмалла пӗчӗк пӗркеленчӗксем пуҫтарӑннӑ. Ачанни пек кӑпӑш хӗрлӗ тути ҫӳхелсе тӗксӗмленнӗ. Хура ӑслӑ куҫӗсем ҫеҫ яланхи пекех лӑпкӑ, анчах вӗсем халӗ тарӑнрах, тинкеререх пӑхаҫҫӗ.

— Мӗншӗн васкасах каятӑр? — ыйтрӗ Виктор, Нина хулана пӗр кунлӑха кӑна килнине пӗлсен.

— Кӗтеҫҫӗ килте.

— Тата тунсӑхлаҫҫӗ,— хушса хучӗ Анатолий.

— Тен, тунсӑхлаҫҫӗ те пулӗ,— хуравларӗ Нина пӗр кулмасӑр.

— Ну, эпӗ каям-ха. Вӑхӑт нумай юлмарӗ,— терӗ Анатолий, вокзал умӗнчи пысӑк сехет ҫине пӑхса.— Тен, сирӗн вӑрттӑн калаҫмаллисем пур. Эсир тахҫанхи туссем-ҫке.

Вырӑнсӑр шӳтленишӗн Нина ун ҫине ӳпкевлӗн пӑхса илчӗ. Толя хӑй ытлашши персе янине ҫав самантрах ӑнланчӗ.

— Нина Николаевна, тархасшӑн, йывӑра ан илӗр ман сӑмаха. Эпӗ сире кӳрентерес теменччӗ. Чӑматан, япаласем унта. Паллакансем ҫук,— ӑнлантарчӗ вӑл.

— Улшӑнман вӑл пӗрре те. Яланхи пекех нумай калаҫать. Час-часах ытлашши те шӳтлекелет,— сӑмах хушрӗ хӗрарӑм, Анатолий вагон алӑкӗнчен кӗрсе ҫухалсан.

— Аван юлташ вӑл.

Вӗсем перрон тӑрӑх васкамасӑр утрӗҫ.

— Час-часах килсе ҫӳретӗр-и хулана? — ыйтрӗ Виктор.

— Килӗттӗм, анчах ӗҫлени чух пушӑ вӑхӑт пачах ҫук.

— Халӗ отпускра пулӗ ӗнтӗ. Мӗншӗн васкасах каятӑр апла?

— Мӗншӗнне каларӑм ӗнтӗ.

Виктор пӗр вӑхӑт чӗнмерӗ...

— Аван, тӗнчере сана кам та пулин кӗтсе тунсӑхлать пулсан. Ӑмсанатӑп ҫавӑн пек ҫынсене пурнӑҫне,— терӗ вӑл.

— Сире никам та кӗтмест-и?

— Ҫук.

— Ҫемье?

— Çук.

Нина ăшĕнче темле ăнланмалла мар туйăм хускалчĕ. Çав туйăмра савăнни те, чĕре йынăшса ыратни те палăрчĕ.

— Мĕнле апла?

— Ватăлсан, çемье çавăрма йывăртарах теççĕ.

— Çапла, ватă каччăсем хытă тиркеççĕ, тет, хĕр суйлана чух.

— Çук, пачах урăхла,— терĕ Виктор пĕр кулмасăр.— Мĕнле калас? Çамрăккисем валли çамрăксем нумай. Пĕр çулхисем, эпĕ саваканнисем, качча тухса пĕтнĕ.

Тахçан тӳрленнĕ сурансем çанталăк пăсăласса туйнă евĕр, Нина чĕри ыратса кайрĕ. Мĕншĕн тӳрех çапла калаçма тытăнчĕç-ха вĕсем? Е урăх нимĕн çинчен те пуплеме çук-и? Виктор та çакна ăнланчĕ пулас, сăмаха урăх енне пăрчĕ.

— Мĕнле пурăнатăн, Нина? Телейлĕ-и эсĕ?

— Пĕрре те ӳпкелешместĕп хамăн пурнăçа. Ывăл ӳсет манăн,— терĕ Нина, кăмăллăн кулкаласа.

— Çав тери лайăх каччă пулĕ ĕнтĕ.

— Амăшĕшĕн хăй ачинчен лайăххи тĕнчере урăх пур-ши?

— Çапла,— Виктор пуçне усрĕ те чĕнмерĕ.

Нина та сăмах васкатасшăн хыпăнмарĕ.

Виктор Нинăна пĕр кунлăха та пулин хулара юлма сенет. Çук... Çук! Мĕнле куçпа пăхĕ Нина кун хыççăн упăшки куçĕнчен. Гена лайăх, тӳрĕ кăмăллă çын. Нинăна та, ывăлне те юратать. Иртнине каялла кӳреймĕн. Паллах, Виктора манман Нина. Час-часах аса илнĕ. Тунсăхланă та. Пĕрре те пулин курса калаçас ĕмĕт те çамрăк хĕрарăм чĕрине ирĕксĕрех пыра-пыра кĕнĕ. Акă ĕнтĕ тĕл пулчĕç. Анчах ют çынсем тек вĕсем. Юратаççĕ пулин те, ют...

Юлашки минутсем çывхарчĕç. Ларас пулать, кĕçех пуйăс тапранмалла. Хăй вагонĕпе танлашсан, Нина чарăнчĕ. Виктор, ыйхăран вăраннă пек, пуçне ялтах çĕклерĕ те юнашар тăракан хĕрарăм çине пăхса илчĕ.

— Каятăн апла. Юлма килĕшмерĕн,— терĕ вăл, салхуллăн кулкаласа.

— Сывă пулăр, Виктор. Телей сунатăп сире,— Нина вагон пусми çине хăпарчĕ.

— Виктор! Виктор! — илтĕнчĕ сасă.

— Анатолипе сывпуллашман-çке эпĕ,— терĕ каччă.— Чипер çит,— вăл Нина аллине чăмăртарĕ те, чупнă пекех, малалла васкарĕ. Хĕрарăм вагона кĕрсе вырнаçрĕ кăна — пуйăс хускалчĕ. Нина чӳрече патне пычĕ. Куç умĕнче — вокзалăн пысăк çурчĕ. Перрон çинче çынсем алă сулаççĕ,

тем калаçаççĕ, кулаççĕ, йĕреççĕ. Акă Виктор. Вăл вагон чӳречисем çине тинкерсе пăхать, такама шырать. Шыраса тупрĕ, аллипе сулчĕ, Нина çинчен куçне илмесĕр, малаллах шăвакан вагонпа юнашар утрĕ.

— Сывă пул! Сывă пул! — терĕç унăн куçĕсем.

— Сывă пул. Телей сунатăп,— пăшăлтатрĕ хĕрарăм, ерипен-ерипен юлса пыракан çамрăк арçын çине пăхса...

* * *

Картиш алăкĕ чĕриклетсе уçăлни асанлӳсене татрĕ. Хĕрарăм сехечĕ çине пăхса илчĕ те умри çырăва хуçлатса, халат кĕсйине чикрĕ... Анчах мĕншĕн пытарасшăн-ха вăл çак хута упăшкинчен? Çук, вуласа тухтăр. Пĕр самант хĕрарăм, иккĕленнĕн, тăхтаса тăчĕ, унтан конверта каллех сĕтел çине хучĕ. Хăй тĕпеле кайса, апат ăшăтма лартрĕ. Çенĕкре ура сассисем илтĕнчĕç. Славик хаваслăн кулса ячĕ. Алăк уçăлса кайрĕ те, пĕчĕк ывăлне çĕкленĕ çамрăк арçын курăнчĕ.

— Нина! Мĕн калать Славик, итле-ха,— чĕнчĕ вăл арăмне кĕнĕ-кĕменех.— Ну, мĕн терĕн-ха урамра? — ыйтрĕ вăл ачи çинчен телейлĕ куçне илмесĕр.

— Атте! — терĕ ача уççăнах.

— Атте! Атте! Пĕлетĕн калама! Халĕ ĕнтĕ атте теме те пĕлетĕн. Маттур, ывăлăм!

Ахăлтатса кулакан ачана ашшĕ вăйлă аллисемпе çӳлелле çĕклерĕ. Вĕсем выляса тĕрмешнине Нина хаваслăн йăлкăшса пăхса тăчĕ. «Мĕнле юратать вăл ывăлне! Епле телейлĕ çак самантра! Унăн хĕвел пек çутă кăмăлне, мĕн тума тĕксĕмлетес çак çырăва кăтартса. Хĕрарăм сĕтел çинче выртакан конверта илчĕ те, портфеле чикрĕ, унтан каллех упăшкипе ывăлĕ патне пычĕ. Славик амăшĕ енелле сулăнчĕ, ăна мăйĕнчен ыталаса илчĕ.

— Анне!

— Атте, анне тетĕн, пĕчĕк пепкем,— телейлĕн пăшăлтатрĕ Нина, юратпă ывăлне ачашшăн çупăрласа.

# ВĔРЕÇĔЛЕН

Пуç тăрринче йывăç çулçисем çинчен çумăр тумламĕсем шăпăртатма пуçларĕç. Шăпăр-шăпăр, шăпăр-шăпăр, вĕçĕ-хĕррисĕр тăкăнать. Йăлăхтарса çитерне усăсăр ĕçе такам хушнипе ирĕксĕрех тума тивнĕ пек, тахçанах шӳсе çитнĕ çĕре юлхавлăн, васкамасăр шăварать.

Вăрман хĕрринче, сарлака ватă юмансен турачĕсем айĕнче, тахăшĕ çумăртан пытанмалли çӳлĕк пекки тунă. Типĕ çатрака майлаштарса хунă, ун çине курăк сарнă. Темех мар пулин те, лăпкă çумăртан хӳтĕлет.

Акă çак çӳлĕк айне карçинккасем, витресем йăтнă виçĕ çын пырса тăчĕ. Кусем кăмпа пуçтаракансем.

— Каллех телей пулмарĕ,— терĕ ватă хĕрарăм.— Иккĕ килсе те çумăр айне пултăм. Ну, эсрел çанталăкĕ! Ни ĕçлеме, ни йĕркеллĕ канма памасть.

Çапла хăй тĕллĕн мăкăртатса, вăл йĕпеннĕ пиншакне хывса силлерĕ, ватăлнипе тĕссĕрленнĕ куçне хĕссе, хура куçлă сарă хĕр çине тинкерсе пăхрĕ.

— Эс хăш ялсем пултăн-çак? — ыйтрĕ хĕрарăм.— Камсен?.. Э-э, Антусь Микулайĕн-и? Пĕлетĕп, пĕлетĕп. Хăшĕ? Таня тетĕн? Леш инçутра вĕренекенни-и? Э-э, апла... Аннӳне салам кала. Варук аппаран те. Фермăра пăрусем пăхнă çĕртех ĕçлет те... Аннӳ пĕлет мана... Курсан, питĕ калаçатпăр... Ку акă Çтаппан Йăванч. Пĕр ялтанах эпир,— сăмах ваклама ӳркенмен хĕрарăм кăшт аяккарах чĕлĕм туртса тăракан аллă çулсене çывхарнă вăйпитти арçын енне пуçне сулчĕ.— Трактăрпа ĕçлет те... Катăршнăй çумăрĕ памасть вĕт кăçал машинăна хире кĕме... Тата тепĕр çын килет. Кам-ши ку? Эсĕ палламастăн-и? — вĕçĕ-хĕррисĕр тăкать сăмахне Варук аппа.

— Пирĕн ялсем вăл. Николай Михайлович. Хуларан пиччĕшĕ патне отпуска килнĕ. Кӳршĕллех пурăнатпăр эпир,— кĕскен пĕлтерчĕ Таня.

— Э-э, леш Курак Михаля ывăлĕ-и? Пĕлетĕп, ара. Чăнах çав-иç! Курманни нумай пулать те, вăр-варах паллаймерĕм. Тухтăрччĕ пуль вăл?

— Ара. Профессор. Университетра вӗрентет,— килекен ҫын илтесрен, ҫурма сасӑпа каларӗ хӗр.

— Э-э, апла. Инҫут пӗтерсен, кӳршӗ районта чылай ӗҫлерӗ-ха вӑл. Хӗрӗм унта пурӑннӑран кайкалаттӑм та. Ах, юрататчӗҫ ӑна! Питӗ лайӑх ҫын тетчӗҫ.

Николай Михайлович, вӑтам ҫулсене ҫывхарнӑ патвар пӳллӗ, сарлака ҫамкаллӑ хура арҫын, кӳршӗ ял ҫыннисене алӑ тытсах саламларӗ.

— У-у, эс чылай пухнӑ-ҫке,— терӗ Варук аппа, лешӗ пырса тӑнӑ-тӑманах.— Ирех килтӗн-им?.. Пӑхӑр-ха, кам мекӗлтетет ҫавӑнта, Ҫӑва ту ҫинче? Ҫын купталла утать мар-и? Хура киремет тӑвайккинчен аннӑ чухнех асӑрхарӑм. Кам-ши ку? Мӗн тесе ҫумӑр витӗрех пылчӑк ҫӑрса ҫӳрет-ши?.. Сылтӑмалла пӑрӑнчӗ. Района каякансҝер пулӗ.

Аякри ҫынна палласа илес пек, Варук аппа, алӑ тупанне ҫамки тӗлне тытса, малалла тинкерсе пӑхрӗ.

Умра уптан та, куптан та темиҫе тип ҫырма вакланӑ тикӗс мар уй-хир тӑсӑлса выртать. Талккишпех пиҫсе сарӑлнӑ ыраш пусси. Тырри, тулли йывӑр пучахӗсене ҫӗклеймесӗр, аялалла усӑннӑ. «Хӑҫан пуҫтарӗҫ-ши пире?»— тесе, тарӑн шухӑша кайнӑн туйӑнать. Тырӑ тунисем, пучахсем ҫине вӗтӗ шӑрҫа евӗр ҫутӑ ҫумӑр пӗрчисем ҫакӑннӑ. Шурӑхнӑ хӑмӑл хушшинче тӗллӗн-тӗллӗн курӑнакан кӑн-кӑвак утмӑлтурат чечекӗсем кӑна тӗксӗм тавралӑха кӑштах савӑклатаҫҫӗ.

— Ҫӑва ту, Хура киремет, Йӗрӗх ҫырми,— терӗ Таня, Варук аппа шӑплансиипе усӑ курса.— Интереслӗ, мӗншӗн ҫавӑн пек ят панӑ-ши ҫакӑнти вырӑнсене?

— Ҫӑва ту тени ӗнтӗ... Вӑл, эпӗ астӑвасса, пӗчӗк ту пек ҫӳлелле мӑкӑрӑлса ларатчӗ. Авалхи чӑвашсен масарӗ пулнӑ ҫав вырӑнта,— ӑнлантарчӗ Варук аппа.— Хура киремет ҫырми вӑл усал вырӑн. Хӑратнӑ унта ӗлӗкрех. Старик каласа паратчӗ... Ҫамрӑк пулнӑ-ха вӑл ун чух. Ҫӗрле таҫтан таврӑннӑ-ҫке утпа. Сиккипе пыракан лаша Хура киремет кӗперӗ патне ҫитсен тӑпах чарӑнчӗ, тет, тем тусан та малалла каясшӑн мар, тет...

— Вара? — хӑлхине чӑнках тӑратрӗ ҫинҫешке пӳллӗ ҫамрӑк Таня.

— Туртса патӑм, тет, вара пӗтӗм вӑйран нухайккапа. Хайхи лаша кӗпер урлӑ вӗҫнӗ пек сирпӗнсе каҫрӗ, тет те, ҫӳллӗ тӑвайккинчен пӗр канмасӑр сиккипе чупса хӑпарчӗ, тет... Хура киремет ҫынна та тытнӑ вӑл.

— Епле тытнӑ? — каллех ыйтрӗ Таня.

— Ну, чирлеттернӗ эппин... Пирӗн ял хӗрарӑмӗ пӗрре хиниче алӑ ҫума аннӑ та ҫав ҫырма тӗпне ӑнсӑртран та-

кӑнса ӳкнӗ... Хӗпе кайса чутах вилетчӗ вӗт. Аран-аран сывалчӗ... Хура киремет ҫавнашкал мыскарасем кӑтартнине ӗлӗк нумай калатчӗҫ...

— М-да! — терӗ Николай Михайлович, шухӑша кайса.

— Нимӗн те ҫук унта,— сӑмах хушрӗ Степан Иванович, ҫаплах чӗлӗмне мӑкӑрлантарса.— Эпӗ тракторпа та ҫӗрӗҫӗрӗпе сухаланӑ, пӗччен те выртса ҫывӑрнӑ. Мана никам та хӑратман. Ни шуйттанне, ни туррине курман. Тӗшмӗш хӗрарӑм сӑмахӗ вал. Пустуй халап.

Варук аппа кӳренчӗ пулӗ-и, хирӗҫ нимӗн те шарламарӗ.

— Тата мӗн те пулин каласа парӑр-ха, Варук аппа,— ыйтрӗ Таня.— Питӗ итлеме юрататӑп эпӗ ҫавӑн евӗрлӗ тӗлӗнмелле япаласем ҫинчен. Ӗлӗк тем тӗрлӗ усал-тӗсел: арҫурисем, хӗртсуртсем, киреметсем нумай пулнӑ теҫҫӗ.

— И-и, хальхи ҫамрӑксем уи пеккине ӗненеҫҫӗ-и?.. Вӗсемшӗн вӑл шӳт туса кулмалли анчах,— терӗ хӗрарӑм кӑмӑлсӑртарах сасӑпа.

— Вӗреҫӗлен ҫинчен каласа парас мар-и? — ыйтрӗ Николай Михайлович, Таня ҫине пӑхса.— Темиҫе ҫул каялла тӗл пулса ҫапӑҫма лекрӗ мана ҫав усалпа.

Пурте уи ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗҫ.

— Ай, каласа парӑр, Николай Михайлович, каласа парӑр! — хавхаланчӗ Таня.

— Кай, мӗн вӗреҫӗленӗ пултӑр хальхи вӑхӑтра! Ӗлӗк пулнӑ вӗсем. Халӗ пӗтнӗ, ҫук. Юпасем ҫине карса тухнӑ электрица пралукӗ пӗтернӗ теҫҫӗ вӗсене,— кулкаласа хирӗҫлерӗ ватӑ хӗрарӑм. Хӑй, итлеме хатӗрленсе, хӑлха урлӑ ҫыхнӑ тутрине пушатрӗ те Николай Михайлович ҫывӑхнерех пырса тӑчӗ.

— Хама тӗл пулма тӳр килмен пулсан, эпӗ те ӗненмӗттӗм,— пӗр кулмасӑр каларӗ профессор.— Вунсакӑр ҫул иртрӗ ӗнтӗ унтанпа. Пӗр хӗре ҫулӑхнӑ ҫав усал. Пайтах тӗрмешме лекрӗ ҫӑлас тесе...

— Юмахри Иван-паттӑр пек-и? — кулчӗ Степан Иванович.

— Ну... Иван-паттӑр пекех мар пулӗ те... Ҫапах... — хӑй ҫине ҫумӑр шывӗ йӑпӑртатса аннине туйса, Николай Михайлович ҫӳлелле пӑхса илчӗ те тепӗр вырӑна куҫрӗ.

— Уи чух эпӗ врача тин ҫеҫ вӗренсе тухнӑччӗ-ха. Ялта ӗҫлетӗп. Чирлисене йышӑнатӑп, больницӑра пулатӑп. Ҫав кун та ӗҫ яланхи пекех амбулаторинче пуҫланчӗ. Кӑнтӑрла иртсен ҫынсем сахалланчӗҫ, коридорта шӑв-шав лӑпланчӗ. Акӑ алӑк уҫӑлчӗ те, кабинета пӗр хӗрарӑм кӗчӗ. Йӑмӑкне илсе килнӗ вӑл. Лешӗ коридорта кӗтсе ларать. Аппӑшӗ малтан манпа калаҫса илесшӗн иккен.

— Итлетӗп сире,— тетӗп хайхискер ҫакна.

— Ыйхи ҫук, ҫывӑрмасть. Йӗрет. Вилесчӗ манӑн тет,— хӗрарӑм шывланнӑ куҫне аллинчи пӗчӗк тутрипе шӑлса типӗтрӗ.— Пулӑшма пултараймӑр-ши? Юлашки вӑхӑтра... мӗн,— пуҫне чиксе, аллари тутрине йӑвалама тытӑнчӗ хӗрарӑм.— Юлашки вӑхӑтра таврана... Марине... мӗн... вӗреҫӗленипе пурӑнать тесе сӑмах сарӑлнӑ,— хумханнипе чыхӑна-чыхӑна аран-аран каларӗ вӑл.— Эпӗ ӑна-кӑна нимӗн те пӗлмен. Малтан, паллах, ӗненмерӗм. Халӗ, акӑ, ыйтсан, хӑй те тунмарӗ... Хальхи вӑхӑтра уп пеккине ӗненме те йывӑр ӗнтӗ. Анчах мӗн тӑвӑн?

— Миҫе ҫулта йӑмӑку?

— Ҫирӗм тӑххӑрта.

— Ҫемйи пур-и?

— Ҫук. Качча каяймарӗ ҫав. Вунпилӗк ҫулта чир хыҫҫӑн хӑлхасӑр пулса юлчӗ те... Эпӗ хам ҫак ялтанах. Качча килнӗ кунта. Вӗсем аннепе вунникӗ ҫухрӑмра пурӑнатчӗҫ. Анне чӗрӗ чух чиперехчӗ...

— Нумай пулать-и аннӳ вилни?

— Виҫӗ ҫул иртрӗ.

— Йӑмӑку халӗ пӗчченех пурӑнать-и?

— Паллах. Унта пӳрт-ҫурт, пахча, хуҫалӑх... Сиренпе канашласа пӑхас терӗм,— хӗрарӑм каллех йывӑррӑн сывласа ячӗ те хуйхӑллӑ куҫӗпе умри кӗтеселле тинкерчӗ.

— Эх, шалккӑ хӗре! — терӗ Варук аппа, пуҫне сулкаласа.— Пӗччен юлсан, хытӑ куляннӑ ӗнтӗ вӑл. Шӑп ҫавӑн пек чух ҫулӑхать теҫҫӗ ҫав ӑна, вӗреҫӗлене. Пытарма юрамасть теҫҫӗ уп пеккине. Ҫынсене калама вӑтансан, вӑрмана кайса, йывӑҫсене те пулин кӑшкӑрса пӗлтермелле, теҫҫӗ. Хӑпать, тет, вара...

— Тӑхта-ха, Варук инке,— чарчӗ ӑна Степан Иванович.— Эсӗ каллех асаннесен ҫӗрнӗ юмахне пакӑлтатма тытӑнтӑн. Ан пӳл-ха, калама пар ҫынна...

— Эсӗ, Ҫтаппан, ман ҫӑвара ан хупла,— ҫилленчӗ хӗрарӑм.— Эсӗ ҫытмапа чупнӑ чухнех эпӗ качча кайса ачапӑчаллӑ пулнӑ. Кӑштах намӑса пӗлесчӗ манпа, ватӑ ҫынпа, ҫапла каласма. Пӑх-ха, сӑмах хушма памасть. Усал хунеме пекех, лӑркать те лӑркать... Мӗн чаратӑн эс мана? Санпа пуплеместӗп вӗт...

— Умра ларакан хӗрарӑм сӑмахӗсем мана ҫавӑн чух тарӑн шухӑша ячӗҫ,— пуҫланӑ калавне малалла тӑсрӗ профессор.— Пӗр енчен илсен, чирлӗ ҫынна пулӑшу парасси, сиплесси, сывалма пулӑшасси врач тивӗҫӗ. Анчах эпӗ хирург. Пуҫ мимипе ҫыхӑннӑ чир-чӗрпе кӗрешме уйрӑммӑн вӗренмен. Пӗлсе, ӑнӑҫлӑ сиплеме тытӑнсан та, ӗҫӗ

темиçе уйăха тăсăлма пултарать. Кунта, ялта, уп пек чире сиплеме услови те çук. Çавăнпа та эпĕ пĕр иккĕленмесĕрех: «Сирĕн урăх тухтăр патне каяс пулать»,— теме пултарнă. Анчах вăл вăхăтра çывăхра уп пек чирпе ĕçлекен специалистсем çукчĕ. Хĕре те шел. Хуйхăрать, асапланать. Пулăшу памасан, ухмаха тухма та пултарать... Апла пулин те, çак кăткăс, йывăр чирпе кĕрешме хам çине илес тенĕ шухăш мана пăшăрхантармарĕ кăна мар, хавхалантарчĕ те...

Николай Михайловичан куçĕнче кăмăллă кулă ялкăшса илчĕ те сӳнчĕ.

— Эпĕ ялта ӳснĕ,— терĕ вăл уиччснхи пекех лăпкă сасăпа.— Хăратакан тĕрлĕ усал-тĕселсем çинчен те, хӳреллĕ çăлтăр свĕр çĕрлехи пĕлĕт çийĕн вĕçсе кăмака мăрйинчен кĕрсе çухалакан вĕреçĕленсем çинчен каланине те пайтах илтнĕ. Халиччен вĕсем маншăн пурте «тет» сăмахлă халлапсем кăначчĕ. «Çапла, тет», «çавăнта çапла пулнă, тет». Паллах, ĕненме йывăр уп евĕрлĕ сăмахюмаха. Анчах нумайăшĕ авă, Таня евĕр, итлеме юратаççĕ. Ĕненмесен те интереслĕ, чуна кăтăклать, тепĕр чух шухăшлаттарать те...

Хальхинче вара çав халап хăйĕн яланхи тĕтренчĕклĕ тумне хывса пăрахрĕ те ман ума пурнăçра тĕл пулакан чăн-чăн япала пек тухса тăчĕ. Вĕреçĕлен çыпçăннă хĕр кунта, коридорта, эпĕ чĕнессе кĕтсе ларать... Çавăнпа ку мана питĕ интереслентерсе ячĕ. Чăнах та, мĕн вăл вĕреçĕлен? Халăх шухăш-кăмăлĕнче çуралнă пустуй халап-и? Е чăннипех темле ăнланмалла мар вăрттăн вăй? Чир пулсан, ăçтан, мĕншĕн, мĕнрен пуçланать? Пуçра çавăн евĕрлĕ тĕрлĕ ыйту хĕрарăма итленĕ чухнех çаврăнма пуçларĕ. Тĕпчес, тĕрĕслес, пĕлес килчĕ. «Ну, Николай Михайлович,— терĕм хама хам,— кун пек ăнăçу, тен, урăх нихăçан та тĕл пулмĕ, çавăнпа ăна аларан вĕçертме юрамасть. Паллах, çăмăл пулмасть. Тăшман усал, чее. Вăл çынна асаплантарать, сывлăха кăшлать, пĕтĕмпех пĕтересшĕн тĕрмешет. Анчах хăйĕн хура ĕçне вăл, наука ĕненмен тешмĕш пĕркенчĕкĕпе витĕнсе, куçа курăнмасăр, вăрттăн тăвать. Ăна тытса арестлеймĕн, суда парса айăплама, тăрă шыв çине кăларма май çук. Апла пулин те, маншăн вăл чăнчăн преступник. Çавăнпа унпа тытăçса илмеллех. Кам кама çентерĕ».

Тимлесех итлекен Варук аппа тем калама тăчĕ, çăварне те уçрĕ, анчах хуллен кăна ӳсĕрсе илчĕ те шарламарĕ. Калавçă янахĕ çине ларнă вăрăмтунапа çапса вĕлерчĕ те сăмахне каллех малалла тăсрĕ.

— Ман умра çамрăк хĕр ларать. Амбулаторинче урăх никам та çук. Чирлисем кайса пĕтрĕç. Санитарка та тасатса тухса кайрĕ... Эпĕ пациентка çине вăрттăн сăнаса пăхатăп. Пичĕ шуранка, анчах чипер, килĕшӳллĕ. Йăрăс пӳллĕ, пысăк хура куçлă. Чечеклĕ тутăрĕ айĕнчен яп-яка çамки çине кăтра çӳç пайăркисем усăннă. Лăпкă мар хăй. Пăлханать. Темрен хăрать, хутран-ситрен карт сикет, алăк çине шикленсе пăха-пăха илет... Ыйтатăп:

— Эсир мана илтетĕр-и?

— Çук. Анчах эпĕ тута çине пăхса ăнланатăп. Халлĕхе ерипентерех калăр çеç. Каярахпа хăнăхатăп акă.

Каласнă май, сăмах йĕркине хама кирлĕ пек темĕн тĕрлĕ те çавăркаласа, пĕр-пĕр япала çинчен темиçе хут ыйтатăп. Чиперех калаçать. Асран тайăлнă çын темелле мар. Анчах вăтанать. Çавăнпа малтан асăрхаттарма шутлатăп.

— Инкекрен çăлăнас тесен, эпĕ хушнине пĕтĕмпех тумалла, ыйтнине тĕпĕ-йĕрĕпе, пĕр пытармасăр каласа памалла,— тетĕп çирĕп сасăпа.— Унсăрăн вăхăта пустуй ирттерни кăна пулать.

— Паллах. Ăнланатăп,— пуçне сулать Марине.

— Сире мĕн кансĕрлет?

— Эпĕ сасă илтетĕп.

— Мĕнле сасă?

— Арçын сасси.

— Хăйне те куратăр-и?

— Пĕрре те курман. Анчах пуррине туятăп,— Марине каллех алăк çине шиклĕн пăхса илчĕ.— Халĕ те кунтах вăл. Алăк хыçĕнче итлесе тăрать,— пăшăлтатрĕ вăл.

Эпĕ тĕшмĕш çын мар, апла пулин те, çакна илтсен, çанçурăм тăрăх сивĕ чупса кайрĕ.

— Ăçтан пĕлетĕр вăл кунтине?

— Туятăп. Вăл çывхарнине эпĕ яланах туятăп.

— Мĕнле майпа?

Хĕр, ăçтан пĕлем ăна тенĕ евĕр, хулпуççине хускатса илчĕ.

— Хăçантанпа илтĕнме тытăнчĕ сире çав сасă?

— Кĕçех виçĕ çул çитет.

— Мĕншĕн тӳрех тухтăрсем патне кайма шутламарăр?

— Хушмарĕ. «Никама та ман пирки шăл шурри ан кăтарт. Унсăрăн ӳкĕнмелле пулать»,— терĕ. Хăрарăм...

— Вăт-вăт,— васкасах сăмах хушрĕ Варук аппа, шывланнă куçне шăлкаласа илсе.— Вĕреçсĕлен пĕлтерме хушмасть, тет, çав вăл хăй çинчен. Эпĕ илтнĕ ăна.

— Çапла пулĕ,— терĕ Николай Михайлович.— Анчах

ку çулталăк иртсен чармарĕ, тет. «Ĕнтĕ пире никам та уйăраймасть. Халĕ эсĕ ĕмĕрлĕхех манăн»,— тесе каларĕ, тет.

— Ай-яй-яй! Пăх-ха эсĕ ăна,— аллипе шарт çапрĕ Варук аппа.— Мĕнле, каларăм тет-и кама та пулин?

— Тантăшĕ пулнă унăн. Кӳршĕ хĕрарăмĕ. Çавна шанса каласа панă. Анчах çăвартан тухсан хапхана, теççĕ. Ят сарăлнă. Çынран çынна, килтен киле, ялтан яла... Çапла аппăшĕ патне çитнĕ.

— Усал хыпар утпа чупать, теççĕ çав,— хаш сывласа ячĕ Варук аппа.

— Маринене малтанхи кун нумай тытас темерĕм,— Николай Михайлович сарлака юман çумне таянчĕ.— Куратăп, йывăр ăна пачах палламан çынна (çамрăк арçынна тесен, тата та тĕрĕсрех пулĕ) мĕн пулни-иртни çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пама. Пăлханать, хĕрелет, ирĕксĕр калать, хăшпĕр чух ыйтсан та чĕнмест. Çавăнпа тек асаплантарас темерĕм. Чи малтан шанчăк парас пулать. Кăшт та пулин лăплантăр... Иртмен чир мар тетĕп, анчах врач тăрăшни сахал... Маринен хăйĕн çине тăни кирлĕ. Сиплесси вăраха тăсăлма пултарать. Çавăнпа чăтăмлăн кĕтес пулать, иккĕленме, кулянма кирлĕ мар. Врач хушнине пурне те вăхăтра туса пырсан, пĕр-икĕ эрнерен çăмăллăх пулатех... Унтан ыран хăш вăхăтра килмелли çинчен пĕлтерсе, çĕнĕ пациентка валли эмелсем илме рецепт çырма лартăм.

Тепĕр кунне каллех ĕнерхи евĕр калаçу пуçланчĕ.

— Мĕнле çывăртăр?

— Начар.

— Чылайранпа ыйхăсăр аптратăр-и?.. Мĕн пирки?.. Мĕн кансĕрлет?..

Сасă канăç памасть иккен. Тепĕр чух çĕрĕпех пакăлтатать. Çывăрса кайсан та вăратать. Куносăр пуçне, юлашки вăхăтра тĕрлĕ шухăш пуçа пăтратать. Асаплантарса, хĕн кăтартса вĕлерет теççĕ те... Апат анми пулчĕ...

— Кӳрентерет-и вăл сире?

Марине шухăша кайрĕ.

— Темле те пулать,— терĕ вăл вăрахран.— Хăш чух питĕ лайăх, кăмăллă. Йăпатать, ачаш сăмахсем калать. Ĕмĕрне те никамран та илтмен эпĕ çавăн пек илемлĕ, чуна пырса тивекен сăмахсем... Пĕлтĕр хулана кайса килмелле пулчĕ. Хăратăп. Халиччен ниçта та тухса курман вĕт. Тата хăлха илтмест. «Ан шиклен, Марина, чиперех кайса килетпĕр. Эсĕ пĕччен мар, манпа. Тем-мĕн пулас пулсан, систеретĕп»,— тет. Чăнах та. Пыратăп хула ура-

мене. «Ќăштах пăрăн. Хыçра сылтăмра машина»,— тет. Пĕр-икĕ утăм аяккалла пусма ĕлкĕртĕм кăна, машина çумрапах иртсе кайрĕ. Темиçе хут та çапла асăрхаттарчĕ... Анчах пур чухне те ун пек мар çав... Тепĕр чух вăрçма тытăнать. Мĕн каламасть пулĕ. Итлеме намăс...

— Мĕншĕн вăрçать вара?

— Хăйне хирĕçленине юратмасть. Хушнине тумасан, çав тери çилленет. Пăвать ун пек чух...

— Мĕнле майпа? Эсир ун аллисем мăйран пăчăртанине туятăр-и?

— Темле,— терĕ Марине кăштах шухăшланă хыççăн.— Пыр питĕрĕнсе ларать. Сывлайми пулатăп.

Хуллен кулкаласа, Николай Михайлович итлесе тăракансем çине сăнаса пăхрĕ.

— Ĕненмен çыншăн чăн-чăн юмах. Çапла вĕт? — ыйтрĕ вăл витринчи кăмписене çӳп-çапран пĕрерĕн-пĕрерĕн илсе тасатакан Степан Ивановичран.— Анчах авалтанпах халăх хушшинче çӳрекен сăмах-юмаха аса илсен, чăннипех усал çулăхнă хĕрарăма.

Механизатор, пуçне сулкаласа, хуллен кулса илчĕ.

— Эсир пуш параппана çапса çӳрекен шăпăл-шапăл çын мар ĕнтĕ,— терĕ вăл.— Çапах ĕненме йывăр... Тен, хĕр суйнă сире?..

— Çу-ук! — хирĕçлерĕ Николай Михайлович.— Мĕне кура? Сăлтавĕ çук апла хăтланма. Артист та мар вăл мана икĕ уйăх çавăн евĕр ăста улталама.

— Эй, тур-тур! Усал-тĕселрен турă сыхлатăрах. Хама та, ачасене те,— мăкăртатса илчĕ Варук аппа.

Çамки çине усăнса аннă çӳç пайăркине Николай Михайлович карттус айне пытарчĕ. Итлекенсем, вăл малалла каласса кĕтсе, чĕнмерĕç.

— Час-часах хирĕлетĕр-и? — тесе ыйтатăп хĕртен.

— Пулкалать.

— Юлашки хирĕлӳ мĕн сăлтава пула сиксе тухрĕ?

— Ывăнтăм çавăн пек пурнăçпа,— терĕ Марине, пуçне хурлăхлăн усса.— Йăлăхтарса çитерчĕ. Пачах канлĕх çук. Вилем пĕрех хутчен тесе шутларăм. Пирĕн ял хыçĕнче Çавал юхать, иçех мар тарăн авăр пур. Унта вырăх та путать, шыва кĕрекен ачасем вилни те пулнă. Тухрăм килтен. Хуса çитрĕ. «Ан ăссăрлан. Çаврăн каялла»,—тет. Эпĕ итлеместĕп, малаллах васкатăп. «Темиçе хут ан калаттар! Пурпĕр вилме памастăп»,— тет. Эпĕ çаплах утатăп. Ĕнтĕ çыран та иçе мар. «Виççĕмĕш хут калатăп. Хальхинче те итлемесен...» Темиçе утăм çеç юлнăччĕ. Чупса çитме кĕске самант кăна кирлĕ. Сасартăк мăйран çав тери хыттăн пă-

чăртарĕ. Куç хуралса килчĕ. Сывлăш пигĕрĕнипе çĕре тĕшĕрĕлсе антăм... «Каларăм вĕт вилме памастăп тесе,— илтрĕм тăна кĕрсе куçа уçсанах.— Нихăçан та ан хирĕл манпа. Пурпĕрех эсĕ шутланă пек пулмасть».

Николай Михайлович хуллен ўсĕрсе илчĕ.

— Малтанхи вăхăтра Марине кашни кунах пырса çўрерĕ. Лайăх, йĕркеллĕ пациентка пулчĕ вăл. Пĕрре те пăшăрхантармарĕ. Хушсан, пĕр хирĕçлемесĕр итлерĕ, ыйтнине пурне те каланă пекех туса пычĕ. Хуллен-хуллен хăнăхрĕ, вăтанма пăрахрĕ. Виçĕ çул хушши ăшра пытарса усранă хуйха-суйха пĕр пытармасăр каласа пама тўр килни те хĕре чылаях лăплантарчĕ пулас. Икĕ эрнерен Марине ыйхи йĕркеленчĕ терĕ, эмелсĕрех çывăрма пуçларĕ.

— Шухăша ăна ăшра пĕччен йăтса çўреме кансĕр çав,— каллех сăмах хушрĕ Варук аппа.— Савăнмалли пулсан та, çын патне каятăн, йывăр хуйхă чĕрене çунтарнă чух та кама та пулин каласа парас килет. Унсăрăн ăш лăпланмасть.

Таçта йытă вĕрсе ячĕ. Йывăççем хушшипе çывăхранах вăрман хуралçи иртсе кайрĕ. Ку калава кĕске вăхăта татрĕ.

— Николай Михайлович, итлетпĕр,— систерчĕ Таня.

— Марине чылай лăпланчĕ, хăюлланчĕ терĕм-çке. Çавăнпа эпĕ унран тўрĕнех ыйтма шутларăм,— Николай Михайлович хуллен йăлкăшса илчĕ.

— Марина, тетĕп, эсир унпа... çывăх пулнă-и?

Калама кăмăлĕ пулман пулсан, эпĕ, паллах, çине тăрсах ыйтмастăмччĕ ĕнтĕ, анчах хĕр манран çакна та пытарас темерĕ пулас.

— Каç пулсан, вăл ман çума выртать. Ыталать, чуптăвать, ачашлать.

— Эсир мĕнле... чăннипех туятăр-и вăл ачашланине?

— Сăмахпа каласа пама йывăр ăна... Вăркăшса кĕрекен ăшă çил пăчăхнă шăмшака уçăлтарать-çке... Вăл ачашлани те çавăн евĕрлĕ... Тутана, пит-куçа перĕнет, кĕлетке тăрăх чупса каять. Питĕ лайăх, савăк туйăм. Пĕтĕм кĕлетке-çурăма уçăлтарса, çăмăллатса ярать...

— Ман çинчен каласатăр-и? Мĕн тет?

Марине пуçне усрĕ те нимĕн те шарламарĕ.

— Вăрçать, темтепĕр калать пулĕ ĕнтĕ. Çапла-и? Ма чĕнместĕн?

— Çук, тăрăхлать вăл сирĕнтен,— терĕ хĕр шăппăн.— «Сўпелти, мухтанчăк»,— тет. «Кала эсĕ ăна, ахалех тĕрмешет, халĕ сана манран никам та туртса илеймест»,— тет.

Николай Михайлович кичеммĕн кулса илчĕ.

— Усал сывлăш çеç пулин те, ман ĕçе çапла хак панине итлеме кăмăллах пулмарĕ,— терĕ вăл.

— Эсĕ, Марина, мĕнле?.. Эсĕ те çавнашкалах шухăшлатăн-и ман çинчен? — ыйтрăм эпĕ çакна илтсен, хĕре куçран тинкерсе пăхса.

— Эпĕ-и? — тĕлĕннипе хĕр куç харшийĕсем самантрах çӳлелле ывтăнчĕç.— Эпĕ çавăн пек шухăшлатăп-и?.. Мĕншĕн апла ыйтатăр? — хумханса каларĕ вăл.

Эпĕ çăмăллăн сывласа ятăм.

«Апла кулать манран вĕреçĕлен? Шиклениме шухăшламасть те. Вăйлă пулас, шуйттан йăхĕ. Анчах эпĕ те имшеркке мар... Çапăçу тин кăна пуçланнă-ха»,— çапла хама хам хавхалантарса илтĕм те тăшманна уççăнах тытăçса илме хатĕрлентĕм.

Йывăр инкеке пула сакăр çул çеç вĕреннĕ пулин те, Марине пайтах вуланă. Кĕнекесене юратать, нумай япалапа интересленет. Эпĕ ăна гипноз çинчен, хăшпĕр чух пуç мими çын шухăшне улăштарса, ĕненме йывăр тĕрлĕ мыскарасем кăтартма пултарни çинчен каласа кăтартрăм. В. Леви, А. Васильев профессор кĕнекисене вуласа пăхма патăм.

— Марина,— ыйтрăм çак калаçусем хыççăн пĕррехинче,— пивушлĕ çав сасса эсĕ халĕ те леш тĕнчерен килнĕ усал вăй тесе шутлатăн?

— Эсир вара ĕненместĕр-и? — ыйтрĕ вăл, ман çине сăнаса пăхса.

— Ĕненместĕп,— çирĕппĕн каласа хутăм эпĕ.— Кĕнекесем вуласа та психика фокусĕсене ăнланса илеймерĕн-и вара?

— Эсир манăн та шухăш улшăннă, çавăнпа сасă илтекен пулнă тесшĕн-и? Хаваслансах ĕненĕттĕм, анчах...

— Мĕн анчах?..

Марине йывăррăн сывласа ячĕ.

— Итлĕр эппин... Вăл камне-мĕнне, ăçтан тупăннине эпĕ пĕлместĕп,— терĕ вăл, пуçне салхуллăн усса.— Анчах çав сасă ман улшăннă шухăш мар. Çук. Мĕншĕн апла шутлатăп тесе ыйтасшăн халĕ эсир... Эпĕ кĕнекесем вулама юрататăп. Чылай вуланă. Анчах çав сасă манран икĕ хут ытларах пĕлет. Вăл мана час-часах эпĕ халиччен илтмен, пĕлмен япаласем çинчен каласа парать. Ăçтан ман пăсăлнă шухăш пултăр вăл апла?.. Пĕрре çапла чей ĕçме лартăмăр...

— Мĕн! — ыйтрăм эпĕ тăруках пĕтĕм кĕлеткепе малалла ӳпĕнсе.

Çав таçти çăва патĕнчен килнĕ шуйттан йăхĕ хăйне яланах чăн-чăн çын евĕр тыткалани çинчен тĕлĕнмесĕр итлеме хăнăхрăм пулин те, хальхинче хама лăпкăн тытма пултараймарăм. Вăт усал сывлăш те ăна! Апла вăл, çĕр çинчи мĕнпур чĕрĕ чун пекех, ĕçет те, çиет те!

— Çапла,— терĕ Марине, салхуллăн кулса.— Унсăр сĕтел хушшине ларсан, çилленет. Чĕнмелле, ăна валли савăт-сапа лартмалла... Пĕрре чей ĕçме лартăмăр... «Тутлă мар,— терĕ вăл кăмăлсăр сасăпа.— Супăнь шăрши кĕрет. Мĕншĕн чей банкине эсĕ уçă тăрататăн? Ма супăньпе юнашар лартатăн? Нивушлĕ халиччен те чей, тĕрлĕ шăрша туртса илсе, тутине çухатнине пĕлместĕн? Хĕрарăм вĕт эсĕ»,— терĕ. Эпĕ, чăнах та, вăл каличчен, илтмен те, пĕлмен те ун çинчен,— терĕ Марине, ман çине айăплăн пăхкаласа.— Тепĕр тĕслĕх... Пĕрре хур какайĕ çиес килсе кайрĕ. «Пăх-ха чӳречерен»,— тет. Уçрăм та... хур тăрать! «Атя пусатпăр»,— тет. Эпĕ килĕшмерĕм. Вăл вара сăмах майăн Гавай утравĕнче пурăнакан нене текен тĕнчери чи пысăк хур çинчен каласа кăтартрĕ. Каллех кун çинчен никамран та илтмен, ниçта та вуламан эпĕ. Темĕн чухлĕ çавăн пек тĕслĕх.

— Çак хыпар мана шухăшламаллипех шухăшлаттарчĕ,— терĕ Николай Михайлович, каллех хуллен ӳсĕрсе илсе.— Тӳррĕн тапăнса çĕнтеретĕп тени пурнăçа кĕмерĕ. Чее тăшман атакăна çăмăллăнах сирсе ывăтрĕ. Апла урăхла май шырас пулать...

— Марина,— терĕм эпĕ хĕре çакăн хыççăн,— тĕл пуласчĕ манăн унпа. Калаçмалли, ыйтса пĕлмелли пур. Мĕн вăхăтра, хăш вырăна пымаллине хăй калатăр. Эпĕ малтанах пуринпе те килĕшетĕп.

Ответне интересленсех кĕтетĕп. Мĕн тейĕ-ши? Ăçта тĕл пулма сĕнĕ? Сĕм-çĕрле масар çине пыма хушĕ-ши? Е пĕрпĕр никам пурăнман тĕттĕм, пушă пӳрте чĕнĕ?

Анчах пăлханни ахалех пулчĕ. Вĕреçĕленĕн курнăçма кăмăлĕ пулмарĕ. Манăн унпа калаçмалли çук. Çавăнпа тĕл пулма та кирлĕ мар теме хушнă вăл Маринене.

Чее шуйттан йăхĕ. Тупса калама пĕлет. Анчах эпĕ парăнмастăп-ха, татах атакăлатăп.

— Марина, эсĕ унран вăл камне е мĕнне нихăçан та ыйтман-и?

— Çук,— пуçне сулкаларĕ хĕр.

— Пĕлме интереслĕ вĕт. Мĕн тейĕ-ши,— тетĕп хĕре.

— Кунсăр пуçне,— Николай Михайлович чеен кулкаласа илчĕ,— эпĕ унăн пĕлĕвне тĕрĕслеме шут тытрăм. Сахал çын пĕлекен пĕр-пер пăтăрмах ыйту парсан... Мана

çав вăхăтра Реклингаузен чирĕ* интереслентеретчĕ. Вара çав чир пирки Маринене вĕреçĕленрен ыйтса пĕлме хушрăм.

Тепĕр куне Марине ответ илсе килчĕ.

«Эпĕ камне пĕлесшĕн пулсан, кала: мана врачсем нерва теççĕ, анчах эпĕ—пурпĕрех эпĕ...Чир пирки академиксенчен, профессорсенчен ыйттăр. Ăна, ялта ĕçлекен врача, вĕсенчен нумай пĕлме кирлĕ мар»,— çапла калама хушнă мана хайхи усал-тĕсел.

— Интереслĕ вĕт? — шурă шăлĕсене кăтартса, хаваслăн кулса илчĕ Николай Михайлович,— лайăхрах, ăслăрах калаймăн... Анчах асăрхарăр пулĕ. Вĕреçĕлен халĕ мана сÿпĕлти, мухтанчăк тесе кÿрентермест. Эпĕ ыйтнине хисеплет, ответ парать. Тен, кăштах шикленет те... Апла пулин те, хĕртен хăпма шутламасть-ха. Унччен пекех час-часах пĕрле. Каласать, йăпатать, юнать, ачашлать. Мана та чăрмантарма пăхать.

Пĕрре кабинета сестра пăлханса чупса пычĕ.

— Николай Михайлович, укол тăваймастăп,— терĕ вăл.— Венăри юн шприцра курăнсанах çывăрса ларать. Миçе çул ĕçлетĕп — кун пеккине курман. Мĕнле япала вара вăл? Аптранипе тата икĕ сестрана чĕнтĕм. Вĕсем те нимĕн тăваймаççĕ.

Эпĕ процедура пÿлĕмне кĕтĕм. Маринене глюкоза яма тĕрмешеççĕ иккен. Асаплanса пĕтнĕ пурте. Хĕр ман çине йăлăнса пăхрĕ. Шурса кайнă хăй, йывăррăн сывлать.

— Николай Михайлович,— хумханса пăшăлтатрĕ Марине хăлхаран.— Вăл каллех кунта. Пуç вĕçĕнчех тăрать. Укол тутарма килĕшместĕп тесе калама хушать...

Эпĕ, пукан илсе, пациентка çывăхне лартăм.

— Марина, лăплан,— терĕм, аллинчен хуллен сăтăрса.— Тăтăр, тăрас килет пулсан. Эсĕ пĕлетĕн вĕт, эпир унпа пĕр-пĕрне яланах ăнланнă, нихăçан та хирĕçмен. Халĕ те калаçса татăлатпăр. Шухăшлать те акă, килĕшет, чармасть... Ывăнтăн-и? Кан кăштах...

Хĕр ерипен лăпланчĕ. Пĕркеллех сывлама пуçларĕ. Сăнĕ-пичĕ те çуталчĕ. Калаçма чарăнмасăр, эпĕ йĕппе венăна тиртĕм... Юн улшăнмарĕ. Хĕр çăмăллăн сывласа ячĕ. Ман çине пăхакан куççем ăшăнса çемçелчĕç. Кĕтмен çĕртен алла ярса тытрĕ те тути çумне пăчăртарĕ. Ку асапран çăлнăшăн, хăратакан вăя итлеттерме пултарнăшăн тав туни пулчĕ пулас...

* Сайра тĕл пулакан шăмă чирĕ. Чирлĕ çыннăн патракланнă шăммисем кăшт хускалнипех е çăмăл япала çĕкленипех хуçăла-хуçăла каяççĕ.

— Лариса Григорьевна — пирĕн чи лайăх сестра,— терĕм эпĕ çирĕп сасăпа, çумрах тăракан шурă халатлă хĕрарăм енне пуçа сĕлтсе.— Нумайранпа ĕçлет. Хăй ĕçне манран та лайăхрах пĕлет. Глюкозăпа укол туни сан сывлăхна çирĕплетет кăна. Çавăнпа тек чăрмантаракан пулмĕ тетĕп...

Çак кунран вĕреçĕлен парăнчĕ. Унччепхи вăй-хăватне çухатрĕ вăл. Халĕ ĕнтĕ ăна хуса яма йывăр мар. Хĕпĕртенипе манăн кăшкăрас, юрлас, ташлас килсе кайрĕ. Çапла хавасланса, кабинета таврăнтăм,— тăсрĕ Николай Михайлович калавне.— Чăнах та, савăнни ахаль пулмарĕ. Çак кунран усал сывлăш тек сĕмсĕрленме хăяймарĕ, йăвашланса начарлансах пычĕ. Марине унран хăрама пăрахрĕ. Юлашки вăхăтра эрнере пĕр-икĕ хут кăна кĕрсе тухакан пулчĕ. «Тата мĕн чул пурăнмалла-ши? Киле каяс килет-çке»,— текелеме пуçларĕ.

— Тăхта. Халĕ нумай кĕтмелле мар ĕнтĕ,— лăплантаратăп хĕре кашниччех, хам ăшра вара вĕреçĕленпе кӳлешетĕп: «Намăссăр эсĕ. Кĕççе пит. Икĕ уйăх хушши кашни кун хăвалатăп сана. Хăçанччен çапла сĕмсĕрленсе пурăнас тетĕн-ха?»

Темĕн чухлĕ хирĕлчĕ пулин те, юлашкинчен, пурпĕр тухса сĕтĕрĕнме тиврĕ ăна. Анчах шуйттан йăхĕ темерĕн! Тухса тасаличчен ман савăнăça кĕске вăхăта та пулин пăсрĕ-пăсрех... Çав кун Марине ман кабинета ирех кĕчĕ.

— Ну, мĕнле? Халĕ те илтĕнет-и? — ыйтатăп хĕртен.

— Николай Михайлович,— терĕ вăл, ман çине унччепхи пекех шиклепсе пăхса.— Икĕ сасă. Иккĕн калаççĕ.

Тĕлĕннипе, хăранипе эпĕ кăшт çеç пукан çинчен персе анмарăм. Ак тамаша! Вăт кĕтмен япала! Нивушлĕ çакăн чухлĕ тăрăшни ахалех пулчĕ? Пĕрреччĕ, халĕ иккĕ...

— Ăçтан килсе çакланчĕ вара вăл? Хăçантанпа? — ыйтрăм эпĕ, çав тери ывăннине туйса.

— Паян иртенпех. Сакăр сехете укола килмелле. «Ан кай, çитет çӳресе»,— тет. Унтан тепĕр сасă илтетĕп. «Врач хушнине тăвас пулать. Тăр хăвăртрах. Пуçтарăн, кай»,— тет. Килĕштермеççĕ пĕрне-пĕри. Иккĕмĕш сасă вĕçĕмсĕр пĕрремĕшне хирĕç... Кам сасси-ши вăл? — хĕр ман çине тинкерсе пăхрĕ.

Эпĕ тăруках тавçăрса илтĕм те хавасланса кайрăм.

— Манăн сасă вăл, Марина!

— Сирĕн? — тĕлĕнче хĕр.— Мĕнле майпа илтĕнме пултарать вăл мана?

Сĕтел сунтăхĕнчен кĕнеке кăларса, эпĕ ăна хĕр умне хутăм. Кирлĕ пулма пултарĕ тесе, пĕркунах илсе килнĕччĕ.

— Вула-ха...
— Л. Васильев. «Внушение на расстоянии»,— тутине хускатса, çурма сасăпа вуласа тухрĕ хĕр, унтан каллех мана куçран тинкерчĕ.
— Мĕншĕн тĕлĕнетĕн? Эпĕ кунĕн-çĕрĕн сана сыватассн çиччен шутланине пĕлетĕн вĕт... Ăнланатăн-и халĕ?
Марине, шухăша кайса, тăруках чĕнмерĕ.
— Çаплах пулĕ,— килĕшрĕ вăл юлашкинчен.— Урăх кам сасси хирĕçлетĕр ĕнтĕ ăна?.. Нумая пырать-и вăл, сирĕн сасă?
— Пĕрремĕш сасă шăпланиччен. Вара çухалать...
— Вăт çапла,— вĕçлерĕ Николай Михайлович калавне.— Ку юлашки татăклă çапăçу пулчĕ. Тарчĕ усал. Вăй çитерейМерĕ наукăпа кĕрешме.
— Пурăнать-и вăл халĕ? — ыйтрĕ Таня. Хăй кăмпа пуçтарса вараланнă аллине çулçăсем çиччен шăпăртатса юхакан шултра тумламсемпе çуса тасатрĕ.
— Ырах, сывах. Колхозра бухгалтерта ĕçлет. Качча кайнă. Икĕ ача ӳстерет.
— Чим-ха... Эсĕ ăна хăлхасăр терĕн мар-и? — калаçăва хутшăнчĕ Варук аппа.
— Çав инкекрен те пулăшрăмăр,— хуравларĕ профессор.— Сывалса кайсан, уйăх иртрĕ-и, иртмерĕ-и, Марине каллех пычĕ. «Хăлхана юсасчĕ»,— тет. Эпĕ Хусана хама вĕрентнĕ преподаватель патне çырса ятăм. Хăлха чирĕпе ĕçлетчĕ. Илсе килĕр тесе пĕлтерчĕ. Аппăшĕпе кайрĕç. «Сыватма май çук. Илтӳ нервисем пĕтĕмпех юрăхсăра тухнă. Анчах инкекрен пулăшма пулать. Юлашки вăхăтра çавăн пек аманса юлнисем валли аппаратсем кăларма пуçларĕç»,— тесе çырса ячĕ. Кĕçех аппаратне те илтĕмĕр. Пĕчĕкскер кăна. Çӳç айне пытарса лартать те курăнмасть...
— Чим-ха, Николай Михалч,— хыпкаланчĕ Варук аппа.— Тем, ăнлансах çитерейМерĕм-çке. Вăл вара, Марине текенни, сан патна чирлесе пынă-и? Эсĕ вĕреçĕлен ернĕ терĕн мар-и?
— Тен, кăна Таня ăнлантарса парĕ? — ыйтрĕ Николай Михайлович, çаплах аллине çуса тасатакан хĕр çине пăхса.— Шăп çавăн евĕр тĕрлĕ усал-тĕселпе çапăçакан врач пулма ĕмĕтленет вăл.
Таня хаваслăн кулса ячĕ.
— Психологи вĕренетĕр пулĕ-ха?
— Вĕреннĕ. «Пиллĕк» илнĕ-ха унна,— терĕ хĕр.
— Вăт-вăт. Каласа пар. Ăнлантар.
Хĕр йĕпеннĕ аллисене силлесе илчĕ те кĕсйинчен шурă тутăр кăларса типĕтрĕ.

— Мĕншĕн Марине çумне çавăн пек чир çулăхнă-ха?— терĕ хĕр, сурчăкне лăнкăрт çăтса.— Чи малтан çак ыйтăва çутатса памалла пуле тетĕп... Ман шутпа, акă мĕншĕн... Пĕрремĕшĕ, Маринене хăлхасăр пулни çапса хуçнă. Вунпилĕк çулта чăлах, мĕскĕн çынсен шутне кĕрсе юлнине ăнлании — калама çук йывăр хуйхă. Шухăшлăр-ха эсир: пурнăç тин çеç пуçланать. Умра темĕн чухлĕ çутă ĕмĕт. Шкул, хаваслă тантăшсем, вăйă-кулă. Юратнă каччи те пулнă-и, тен. Вĕренме те ĕмĕтленнĕ пулĕ. Сасартăк çак çутă хаваслăх, хăнăхнă пурнăç, хаклă ĕмĕтсем — мĕн пурри пĕтĕмпех ишĕлет, арканать, пĕтет. Йывăр ун пеккине тўссе ирттерме... Ухмаха тухма пулать... Уптан амăшĕ вилет. Пĕртен-пĕр çывăх çын... Хуйхă-суйхă тата та тăрăнланать... Умра нимĕнле шанчăк та çук. Пĕр-пĕччен тăрса юлнă хăлхасăр хĕр... Çав вĕçĕмсĕр тăсăлакан йывăр хуйхăпа... ну, мĕнле каламалла ĕнтĕ,— кирлĕ сăмах тупаймасăр, Таня шĕвèр пўрнине сывлăшра çавăрса илчĕ,— хуйхăпа... ну, ывăннă е пусăрăннă тейĕпĕр, пуç мими çынна сывлăха çиекен йывăр шухăшран хăтарма хăтланать, пурнăçа унччен хăнăхнă йĕркепе янă пек тăвать.

— Пуç мими çавăн пек хăтланать-и вара? Ай тур-тур!— терĕ Варук аппа.

— Çапла, пуç мими, — çирĕплетрĕ сăмахне Таня.— Марине хăлхасăр — илтмест, акă вăл сасă илтме тытăнать; пĕр-пĕччен, тунсăхлать, ăна çывăх тус кирлĕ — акă сана çывăх тус. Вăл калаçать, йăпатать, пĕрле пурăнма сĕнет, инкек-синкекрен сыхлать... Çапла вĕт, Николай Михайлович? — ыйтрĕ Таня, йăл кулса.

— Тĕрĕс. Маттур. Экзаменри пекех каласа патăн.

— Вара чăн-чăн вĕреçĕлен пулман-и вăл? — ыйтрĕ Варук аппа.

— Илтмерĕн-им? Каларĕ вĕт Таня, пуç мими çавăн пек пăтраштарнă тесе,— хутшăнчĕ калаçăва Степан Иванович.

— Илтў галлюцинацийĕ, ăнланмалларах каласан, илтнĕ пек туйăнни теççĕ ун евĕр чире наукăра,— хушса хучĕ студентка, хăй пĕлнипе хăпартланса.

— И-и, эпĕ чăнлипех вĕреçĕлен çиччен каласа патăн тесе... Шалтах ĕненсе лартрăм,— кулчĕ Варук аппа.— Апла шухăш пăсăлни çеç пулчĕ-и?

— Тĕрĕс,— хавхаланчĕ Таня.— Тĕттĕм халăх ĕлĕк, паллах, çавна пĕлмен, пĕлме те пултарайман.

— Э-э-э, пăхăр-ха, çанталăк çуталса килет. Пушă карçинккасемпе ярас мар тет апла пире килс,— терĕ Николай Михайлович, тăруках хаваслашнă сасăпа.

— Вĕреçĕлене ăна çĕрле пырать теççĕ те,— çаплах ик-кĕленсе мăкăртатрĕ Варук аппа.

— Қама мĕн... Хăшне-пĕрне çĕрле тӳрех вырăн çине кĕрсе выртаканĕ кирлĕ, теприне,— шăлне йĕрчĕ тракторист.—Николай Михайлович, пĕр вырăна ăнланаймарăм,— профессор енне пуçне пăрчĕ вăл.— Çав сасă нерва кăна пулсан, мĕнле майпа Маринене халиччен пĕлмен-илтмен япаласем çинчен каласа пама пултарнă?

— Çав кунсенчех манăн Марине пурăнакан яла кайса килмелле пулчĕ. Халĕ пĕлместĕп, анчах çавăн чух унта лайăх библиотека пурччĕ. Юрием тĕрĕслерĕм. Питĕ нумай вуланă иккен вăл. Хăшпĕр кĕнекисене интересленсех пăх-са тухрăм. Пĕринче чей çинчен çырнине тупрăм. Қăтарт-рăм та, тĕлĕнсех кайрĕ... Сасă хăйне каласа панă япала-сем çинчен вăл, паллах, вуланă, анчах е маннă, е астума-сăр юлнă. Қайран, кирлĕ вăхăтра, пуç мими пĕлтернĕ уи çинчен ăстăна. Хур пирки те çавăн пекех. Куç тĕлне пул-нă вăл, анчах ăна Марине асăрхаман...

Çумăр чарăнчĕ. Аялтанах шуса иртекен йывăр йĕпе пĕлĕтсем, темрен хăранă пек, тăруках çӳлелле çĕкленчĕç, сайраланса çуталчĕç. Лачакаланнă çĕр çийĕн ăшă çил вăр-кăшса иртрĕ, йĕри-тавра хупăрласа илнĕ тĕксĕм çумăр çивиттине лăскама тытăнчĕ, пĕр шеллемесĕр çура-çура ячĕ, унтан, нумай татăксем çине пайласа, тӳпе çийĕн хă-валаса салатрĕ. Хитре пурçăн пек йăлкăшакан кăн-кăвак пĕлĕт çинче йăлтăр хĕвел ялкăшса пăхрĕ.

Салхуллăн тĕлĕрекен тавралăх вăранчĕ. Йывăç тăрри-сем, хаваслăн шавласа, унталла-кунталла сулкаланчĕç, çулçăсем çине пухăннă çумăр шывпе шăпăр та шăпăр тăк-рĕç. Ыраш пучахĕсем, пĕр-пĕрин çумне сĕртĕнсе, тем çин-чен хуллен пăшăлтатса калаçрĕç.

— Эх, лайăх та! — терĕ Варук аппа, йĕри-тавра пăх-каласа.

— Кун пек пулсан, ыран хире тухатпăр,— хаваслăн са-сă пачĕ тракторист.

— Ну, тепре çаврăнкаласа çӳрер-ха,— Варук аппа кар-çинккине çĕклерĕ.— Яла кайсан каласа паратăп ĕнтĕ эсĕ вĕреçĕлене мĕнле çĕнтерни çинчен. Халлĕхе сывă пулăр-ха. Пирĕн яла пырсан, кĕрсе тухăр калаçса ларма.

— Сывă пулăр.

Кăмпа пуçтаракансем вăрмана кĕрсе курăнми пулчĕç.

## ТУПМАЛЛИ

Тавăл килсе çапсан (повесть) . . . . . 4
Ылтăн пĕрчисем (повесть) . . . . . . . 121
Кĕтмен çыру (калав) . . . . . . . . 210
Вĕреçĕлен (калав) . . . . . . . . . 240

Для детей старшего школьного возраста

Зоя Алексеевна НЕСТЕРОВА

ЫЛТĂН ПĔРЧИСЕМ

ЗОЛОТЫЕ РОССЫПИ

Повести и рассказы

На чувашском языке

Редактор А. А. Васильева
Художник М. А. Андреева
Художественный редактор М. Д. Давлятшин
Технический редактор Н. В. Васильева
Корректор Н. П. Печникова

ИБ 2504

Сдано в набор 19.03.90. Подписано в печать 09.01.91. Формат 84×108$^{1}/_{32}$. Бумага офс. № 2 кн.-журн. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 13, 44. Усл. кр. отг. 13,65. Уч. изд. л. 15,02. Тираж 10000 экз. Заказ № 1111. Изд. № 45. Цена 2 руб. 20 коп.

Чувашское книжное издательство.
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской ССР по делам издательств, полиграфий и книжной торговли.
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.

2 т. 20 пус

ЧӐВАШ КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ